ТĂВАН ЛИТЕРАТУРА

Вĕренӳпе вулав кĕнеки
10-мĕш класс валли

Чăваш Республикин
Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма сĕннĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2021

УДК
ББК
Т

А.Ф. Мышкина
çырса-пухса хатĕрленĕ

Р е ц е н з е н т с е м:
***И.В. Софронова**, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ*
***О.В. Скворцова**, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ*
***Г.Л. Никифоров**, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ*

ЙЫШĂННĂ ПАЛЛĂСЕМ

! *–вĕреннине аса илетпĕр*
* *–вуланине сӳтсеяватпăр*
¤ *–пултарулăх ĕçне тăватпăр*
●*–çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*
♪ *– астăвăма тĕрĕслетпĕр*
♣ *– вулама сĕнетпĕр*
♦*–литература тĕпчевĕнчи пĕрремĕш утăм*
☼ *–сочинени темисем*
◊*– реферат теми*
♫ *– проект (пĕччен çын тĕпчевĕ /ушкăнла тĕпчев)*
Δ*– литература хайлавĕн чĕлхи*
Ω *– пăхмасăр вĕренетпĕр*

Т.. **Тăван литература**: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 10-мĕш класс валли / А.Ф. Мышкина çырса-пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2021. – 448. с.

ISBN

Вĕренӳпе вулав кĕнекине пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче усă курма Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе тата «Тăван литература. Тĕслĕх программа: 10-11 классем валли» программăпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ.

УДК ...
ББК ….
©Мышкина А.Ф., 2021
©Чăваш кĕнеке издательстви, 2021

ISBN

Хисеплĕ вуннăмĕшсем!

Илемлĕ литература вăл – иксĕлми çăлкуç – кăмăл-туйăм, кăмăл-сипет, пĕлӳ çăлкуççĕ. Анчах та илемлĕ хайлав ăслăлăх ĕçĕ мар. Çавăнпа та унта уйрăм çын (çыравçăн) шăпи, тавракурăмĕ, ĕмĕчĕ-нуши, пурнăç принципĕ яланах мала тухать.

Тепĕр енчен илемлĕ литература вăл – чăн пурнăçа тĕрĕс сăнарлакан тĕкĕр. Çавăнпа та нумай чухне кунти проблемăсем, хирĕç-тăрусем чăн пурнăçран илнĕ, хайлава çырнă вăхăта (саманана) тивĕçтерекен пулăмсем пулса тăраççĕ. Паллах, вĕсенчен нумайăшĕ самана картинчен тухса ĕмĕрхи пулăмсем пулса каяççĕ. Тĕслĕхрен, юратури виçкĕтеслĕх, ашшĕ-амăшĕсемпе ачисем, ăрусен хушшинчи хирĕç-тăру, курайманлăхпа каçару, паттăрлăхпа сутăнчăклăх пур ĕмĕрти хайлавшăн та актуаллă.

Çакна пăхмасăрах илемлĕ литература вăл – çыравçă шухăшласа кăларнă тĕнче. Вăл пĕр хăйне çеç тивĕçтерекен саккунсене пăханса тăрать. Çавăнпа та илемлĕ хайлава тишкернĕ чухне унăн тĕнчине яланах чăн пурнăçран уйăрма пĕлмелле.

Вăтам классенче Эсир тăван (чăваш) литературăна тĕрлĕ енчен (хайлавра хускатнă темăсене кура, литература аталанăвĕн тапхăрĕсем тăрăх) тĕпчесе вĕреннĕ ĕнтĕ. Çĕнĕ вĕренӳ ӳсĕмĕнче Эсир хăвăр пĕлĕве тарăнлатас тата анлăлатас тĕлĕшĕнчен майсем илетĕр. Çак ĕçре алăри кĕнеке Сире пысăк пулăшу парĕ.

Кĕнеке тытăмне çĕнĕлле, Эсир халиччен хăнăхнă евĕрле мар, йĕркеленĕ. Пĕрремĕшĕнчен, пĕтĕм материала чи малтанах хускатакан проблемăна мала кăларса вырнаçтарнă. Çавăнпа та, сăмахран, ача-пăча литературине тишкерекен пайра 1930-çулсенче ача литературине тарăннăн аталантарнă çыравçăсене те (М. Трубина, Уйăп Мишши), XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче пысăк витĕм кӳнĕ автора та (Н. Ишентей), паянхи кун, XXI ĕмĕрте, малалла аталантаракан çамрăк тата вăтам çулхи çырвçăсене те пĕр çыхăра пăхса тухнă. Иккĕмĕшĕнчен, уйрăм авторсен (чăваш литература классикĕсемпе XX ĕмĕрхи литературăра пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнакан çыравçăсен) пултарулăхне пĕтĕмĕшле нумай енлĕн çутатса панă. Виççĕмĕшĕнчен, кĕнекене Сире валли хăвăр тĕллĕн вĕренмелли ыйтусем, çыравçă ĕçĕнчи пултарулăха аталантармалли ĕçсем кĕртнĕ. Çакă пĕтĕмпех Сире тăван литература сĕткенлĕхне туйма, тишкерекен хайлава шалтан курма вĕренме пулăшасса шанатпăр.



Илемлĕ литература аталанăвĕн историйĕнчен

Кӳртĕм сăмах вырăнне

Чăваш литературин 1945-1965 çулсенчи аталану çул-йĕрĕ

Сăмахлă культура пурнăçран, обществори тĕрлĕ событисенчен уйрăм аталанаймасть. Çапах илемлĕ (художествăллă) тĕрлĕ юхăма истории пĕр-пĕр конкретлă тапхăрĕпе тӳреммĕн çураçтарма май çук. Кун сăлтавĕсем уçăмлă: истори процесĕ пĕр саккунсене пăхăнать, илемлĕ юхăмсен таппи вара урăхла çулпа пырать. Пĕр çирĕм çул каярах кăна-ха ĕлĕкхилле йăласене пăрахăç турăмăр. Унччен сăнарлă юхăмсене тӳррĕнех политикăллă событисемпе çыхăнтараттăмăр, истори çулĕпе сăлтавлаттăмăр. Вăл кăна та мар, литература аталанăвне тапхăрланă чух «граждан вăрçи вăхăтĕнчи проза», «колхозсем йĕркеленĕ тапхăрти литература» йышши çаврăмсене хута яраттăмăр. Поэтикăпа илемлĕх палăрăмĕсем вара ялан хыçа тăрса юлатчĕç. Паян ларутăру улшăнчĕ. Хамăр сăмахлăхăн хăйне евĕрлĕхне вырăс культурин витĕмĕпе кăна хаклани те çырлахтарми пулчĕ. Пур халăхăн литератури те пĕр пек халпа, пĕр пек çулпа кăна пымасть иккен, нациллĕ кашни культурăн хăйле саккунĕсем хывăнаççĕ.

Чылай чухне чăнласах ăста çыравçă е сăвăç пурнăçăн пулас улшăнăвĕсене никамран малтан туйса илет. Илĕпĕр акă тĕслĕхе Хв. Уяр пултарулăхнех. Ун илемлĕх принципĕсем 30-мĕш çулсенче тĕвĕленеççĕ: писатель çавăнпа приключенипе пăтăрмах (авантюрлăх), публицистика мелĕ-мехелĕ енне туртăнать. И. Тукташ, К. Турхан та çак тапхăртах çырма пуçлаççĕ, анчах вĕсен прози очеркларах, конфликчĕ – çиелте: эмпирикăллă (пурнăçран тӳрех илнĕ) хирĕç тăру. Уяр вара (каярах М. Илпек те) çынсен социаллă психологине тишкерме кирлине ăнкарать. Вăхăчĕпе ку традици нумай томлă е пысăк формăллă романсенче тымарланасса сиссе илет. Урăхла каласан, Уярăн 30-мĕш çулсенче хывăннă 3 туртăмĕсем 1945-1985 çулсенче те парка та çирĕп юлаççĕ. Тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Уяртан нумай вĕреннĕ Ю. Скворцов пултарулăхне. 1945-1965 çулсенче чăваш литературинче лирикăллă, героикăллă стиль мала тухать, паттăр фронтовиксен таса чунлă монологĕ, новеллăсем хайласси, романтикăллă повеçсем ăсталасси тĕпе ӳкет. Ю. Скворцов вара 50-мĕш çулсенчех урăх сывлăша, 70-мĕш çулсенче хăватлăн аталана пуçлас философилле туртăмсене туйса илет.

Истори аталанăвĕ вара çак (икĕ писатель никамран малтан асăрханă, сиснĕ) юхăмсем патне чылай каярах çеç çитсе тăрать. Сăнаса пăхар-ха çак пулăма тимлĕрех.

20-30-мĕш çулсенчи аталану уйрăмлăхĕсем уйрăм тапхăр картинче питĕрĕнсе юлман. Çав çулсенче хывăннă юхăмсем малаш вунăçуллăхсемшĕн питĕ кирлĕ. Çак лару-тăру XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи илемлĕ юхăмсем ăçтан шăтса тухнине ăнкарса илме аван пулăшать.

Г.И. Федоров, филологи докторĕ,
«Чăваш литератури (1945-1985 çулсем)» кĕнеке сыпăкĕ.

Илемлĕ идейăпа сюжет

К.В. Ивановран вăл «Нарспи» сюжетне ăçтан тупни пирки ыйтсан, сăваç çакă ниме те пĕлтермест тесе хуравланă иккен. Тĕрĕс хурав: поэт сюжета хăйĕн пурнăç позицийĕ, концепцийĕ, тĕнче курăмĕ, ăнланăвĕ, илемлĕх ăнĕ витĕр «аласа» кăларать. Çавăнпа та хайлава мĕнле пур, çавăн пек пăхса хакламалла. К.В. Иванов шайĕнчи çыравçă юмаха сăвăланипех çырлахма пултарайман. Ку пĕтĕмпех тĕрĕс.

Çапах та тĕпчевçĕшĕн тепĕр тĕрĕслĕх те пур. Çыравçăн пурнăç концепцине тĕрĕс палăртма, автор позицине пĕлме çăмăлах мар. Кунта хайлава пур енчен те пăхса тухни, тĕпчевçĕн субъектлăхĕнчен хăтăлма пултарни питех те кирлĕ. «Нарспи» хайлава тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен хак панине аса илер-ха: мĕн кăна каламан-ши ун çинчен юлашки 80 çулта!

Ман шутпа, çак çитменлĕхсем (чи малтан тĕпчевçĕн субъектлăхĕ, вăл хайĕн курăмне хайлав авторĕн тесе шухăшлани) çыракансен тĕпчев инструментарийĕ чухăн пулнăран, вĕсен ĕçĕсем наука статйинчен ытларах эссене çывăхран килеççĕ. Унтан та кунтан тăпăлтарса илнĕ йĕркесене цитатăласа çырни, хайлава пĕр пĕтĕмĕшле ытамласа курма пĕлменни – çакă поэтăмăр пултарулăхне тĕпчекенсен тарăна кайнă чирĕ. Пĕри тепринчен иртсе каяс ĕмĕтлĕ, çавна май çĕклемне пысăкран-пысăк йăтма хăтланаççĕ. Малта К.В. Иванов мар, тĕпчевçĕ хăй тăрать. Вăл юлашки çулсенче мĕнле кĕнекесем вулани, кам çырнисене мала лартни витĕр курăнать. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, мода текенни литература тĕпчевçисен хушшинче те лайăх палăрать.

Мĕншĕн палăртсах çыртăм-ха çак йĕркесене? Пирĕн классикăлла литература кăна мар, классикăлла литературоведени те пур тесшĕн. Çав тĕпчев шкулĕ шăпах та классикăна тарăннăн тĕпченĕ майăн çирĕпленнĕ. Эпĕ кунта вырăс классикине нумай томсемпе пичетлесе кăларнă май ирттернĕ тĕпчевсем пирки калатăп.

Сăмах хайлавсен пултарулăхлă историне тĕпчес ыйтусем патне илсе çитерчĕ. Çыравçă мĕн калас тенине унăн ал çыравĕсемпе, хайлав

вариантĕсемпе ĕçлекен ытларах та тĕрĕсрех пĕлме пултарать. Кунта тĕпчевçĕ субъектлăхĕ мар, ал çырури факт малта пырать, ĕнентермелли сăлтав шутланать. Хăйĕн çинчен хайлав авторĕ хăех каласа пырать ун йышши тĕпчевре.

Илемлĕ идея чи малтан хайлав авторĕн курăмĕпе, унăн ăнĕпе, вăл пурнăçри пулăмсене хак панипе çыхăннă. Çыравçăн ăн айĕнчине (подсознательное) мала лартса тĕпчени, В.Е. Хализев (вырăс литература тĕпчевçи) шухăшĕпе, хайлава ăнланма пулăшмасть. «Творческая воля, сознательные намерения, духовная активность художника обходятся молчанием, недооцениваются, либо игнорируются по существу» – тесе çырать тĕпчевçĕ. Вăл, чех филологĕ Я. Мукоржовский каланипе килĕшсе, çапла пĕтĕмлетет: «основной фактор впечатлений, вызываемого художественным произведением, – это авторская *преднамеренность* (курсив автора – В.Р.), что именно она соединяет воедино отдельные части произведения и придает смысл сотворенному».

Автор шухăшне, унăн кăмăлне тĕрĕс палăртма, каларăм ĕнтĕ, хайлавăн пултарулăхла историне туллин тĕпчени пулăшать. Кунта тĕпчевçĕн субъектлăхне минимума çитиччен чакарма май килет.

Илемлĕ идейăна тарăннăн ăнланма автор концепцийĕпе пурнăç çине пăхни пулăшать тенĕччĕ. Юлашкине пĕлме авторăн хавхине (пафосне), унăн хайлаври сăнарне палăртни питех те кирлĕ.

Автор конрцепцийĕ еплерех пулнинчен сюжет аталанăвĕ хăш йĕрпе (çулпа) каясси килет. Эппин, кунта пĕрремĕшĕ иккĕмĕшне пăхăнтарса çураçăнтарать. Енчен те тĕпчевçĕ автор малтан сюжет никĕсне мĕнле материала (пурнăçра чăн пулнине, халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă сюжета тата ыт.те.) хунине пĕлет пулсассăн, уншăн авторăн пултарулăхри кăмăлĕпе шухăшне пĕлесси йывăр ĕçех мар.

В.Г. Родионов, филологи докторĕ,
«К.В. Иванов хайлавĕсен пултарулăхла историйĕ» кĕнеке сыпăкĕ.

Çеçпĕл Мишшин революциллĕ романтизмĕ

Революцичченхи чăваш литературинче, уйрăмах 1905-1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче, К.В. Иванов пултарулăхĕнче романтизм искусствин уйрăмлăхĕсем палăрса çитнĕ. Романтизм туртăмĕсем çак вăхăтрах Тайăр Тимкки, Н. Шелепи, Н. Шупуççынни пултарулăхĕнче те вăйлă сисĕнеççĕ. Асăннă художниксен произведенийĕсене ирĕклĕхпе телей патне талпăнакан кăвар чĕреллĕ геройсем революцин тăвăллă хумĕсем патша саманин никĕсне тĕпĕ-йĕрĕпе кисрентернĕ чухне кĕреççĕ. Тăван литературăмăр аталанса, вăй илсе пынă май, çак романтизм юхăмĕ те уççăнрах та витĕмлĕрех палăрать, хăватланать.

Октябрьти аслă революци чуралăхран хăтăлнă, кăкăр тулли ирĕккĕн сывлама пуçланă çĕнĕ совет çыннин характерне анлăлатать, унăн чун-хавалĕпе шухăш-кăмăлне пуянлатать. Хăватлă тăвăл хыççăнхи саманана тата кивĕ обществăна тĕпĕ-йĕрĕпе çĕнетсе улăштаракан çыннăн характерне анлăн çутатса парасси чăваш çыравçисем умĕнчи пысăк та пархатарлă тĕллев пулса тăрать. Анчах та чăваш литературин авалхи традицийĕсем çителĕксĕртерех пулнă пирки çакна пурнăçлама çăмăл пулман. Ку çеç те мар. Çĕнĕ саманари çĕнĕ çыннăн характерĕ пĕр вырăнта (статикăлла) хытса ларман-çке-ха. Вăл пĕр вĕçĕмсĕр, кунран-кун аталанса, çĕнелсе, пуянланса пынă. Çавăнпа та этем характерĕн аталану логикине, унăн паха та халиччен палăрман енĕсене тĕпчесе тупса, çĕнĕлле тарăнрах уçса пама питех те йывăр пулнă. Тӳрех каламалла, çак тĕллеве пурнăçлама нумай çыравçăн пултарулăх опычĕ те, таланчĕ те çителĕксĕртереххи палăрать. Кивĕ общество тытăмĕ тĕпренех арканнă тапхăрта, революцин тăвăллă кунĕсем ахаль те романтикăна вăйлăн çĕкленме лайăх май панă вăхăтра, литература çулĕ çине Çеçпĕл Мишши, Хумма Çеменĕ, Г. Тал-Мăрса (Зайцев), Ахах Иванĕ тата ыт. те тăраççĕ. Вĕсен произведенийĕсенче пуринче те тенĕ пекех çав вăхăтри романтика сывлăшĕ вăйла сисĕнет. Çапах та романтизмлă искусствăн уйрăмлăхĕсем Çеçпĕл ноэзийĕнче пуринчен те туллирех, нумай енлĕрех курăнаççĕ. Революцин тăвăллă кунĕсем ахаль те романтикăлла кĕвĕ-çемĕпе тулса, кĕрлесе тăнă терĕмĕр пулсассăн, кунсар пуçне, Çеçпĕл романтизмне чĕрĕ вăй паракан тепĕр çăлкуç вăл – сăвăçăн субъективлă-романтикăллă кăмăл-туйăмĕ, вăл тĕнчене хăйне майлă туйса ăнланни. Сăвăç пурнăçри нумай пулăмсене, хăйĕн чун-чĕри витĕр кăларса, хăй мĕнле курса ăнланнă пек кăтартса парать. Анчах та вăл çак субъективлăха пула пушă ĕмĕтсен тĕнчине кĕрсе ӳкмест тата хăйĕн общество умĕнчи тивĕçне пĕр самантлăха та манмасть.

Ю.М. Артемьев, филологи докторĕ,
«Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн» кĕнеке сыпăкĕ.

XX ЁМЁРЧЧЕНХИ ИЛЕМЛЁ САМАХ ПУЛТАРУЛĂХЁ



Чăваш халăх сăмахлăхё

Ăслăлăх анинчен

«Чăваш мифологийёпе, улăп, истори, топонимика халапёсемпе интересленме XVIII ёмёрён 30-40 çулёсенче тытăннă; ăна Раççёри халăхсен историйёпе культурине тёпчес ёçе явăçнă вырăс е урăх çёршыв историкёсем пуçарнă. Вёсен ёçё вак халăхсене вырăслантарас, православипе феодалла йёркесене пăхăнтарас политикăпах çыхăннă. XIX ёмёр çурринче чăваш халăх пурнăçёпе культурине, çаплах сăмахлăха та, сăнас ёçе вырăссемпе пёрле чăваш çыравçисем, урăх çёршывсен (Венгри, Германи, Финлянди) этнографёсем хутшăнсах пыраççё» (*И.И. Одюков, филологи кандидачё*).

«Ваттисен сăмахёсемпе каларăшсем авалах пулса кайнă. Вёсенче халăх историйё, ёçё-хёлё, пурнăç йăли-йёрки сăнарланса юлнă. Ваттисен сăмахёсемпе каларăшсенчен хăшё хăçан пулса кайнине вёсен содержанийё тăрăх пёлме май пур. Ёç çинчен калакан ваттисен сăмахёсем çынсем çёр ёçёпе пурăнма тытăнсанах çуралнă, выльăх-чёрлёх çинчен калаканнисем тата маларах тымарланнă» (*Е.С. Сидорова, филологи кандидачё*).

«Чăвашсем ёлёк ача-пăчана килйышра туса ирттерекен йăлана та хутшăнтарнă. Туйра, сăмахран, ача туй пуçёпе çён кёрёве хапха уçса кёртет (лешсем укçа тӳлесе кёреççё), ăна хёр япали çине лартаççё, тӳлемесёр вăл каллех япала памасть; кин кертес чух, Н.М. Охотников каланă тăрăх, тăнлă-пуçлă ачана хёр пăхма та илсе каяççё (хёр улахра мёнле тыткаланине сăнама кирлё иккен вăл!); çёнё çын ача-пăчаллă пултăр тесе, ун чёрçине пёчёк ача лартаççё е çав шухăшпах хёве хупас умён ача вырăнё çине выртараççё; кин пёçернё салма яшкине çинё вăхăтра арçын ача ташă пуçарса ярать, çёнё çынсене тырăпа малтан сапаканё те вăлах» (*В.Я. Канюков, филологи кандидачё*).

Литература пёлёвён йышăвёсем

Халăх сăмахлăхё этем пурнăçёнче пысăк вырăн йышăнать. Авалхи вăхăтсенчен пуçласа шăпах сăмахлăхра уйрăм халăхăн чёлхипе ӳнер ӳсёмёсем, тёнчекурăмё, пурнăç опычё, историйё, кăмăл-туйăмё ӳкерённё. Çырулăх йёркелечченхи тата ун никёсё çинче литература

çураличченхи тапхăрта сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăх халăхăн илемлĕх туйăмне те (эстетикине) палăртма пулăшнă.

Чăваш халăхĕн «чăваш кĕнекине хĕрлĕ ĕне çинĕ» текен каларăш пур. Çакă вăл чăвашăн кĕнекеллĕ çырулăхĕ Атăлçи Пăлхар вăхăтĕнче «пушарта çунса кайнине», çухалнине пĕлтерет пулĕ. Пирĕн тăван литература Яковлев йĕркеленĕ çĕнĕ çырулăхпа пĕрле, ун çине никĕсленсе XIX ĕмĕр вĕçĕнчен вăйлăн аталанса кайнă. Унăн çирĕп никĕсĕ вара чăваш халăх сăмахлăхĕ пулса тăнă.

Литературăра та, халăх сăмахлăхĕнче те тĕпчевçĕсем жанрсен виçĕ пысăк ушкăнне палăртаççĕ: эпика / эпос (калав / юмах, халап); лирика (сăвă / юрă); драма (пьеса, камит / туй йăли-йĕрки). Паллах, литературăпа фольклор жанрĕсен ушкăнĕсем пур енчен те пĕрпек мар. Çапла, тĕслĕхрен, халăх сăмахлăхĕнче роман жанрĕ пулма пултараймасть, çавăн пекех литературăшăн та фольклорти ăрăм (заклинание, заговор) жанрĕ ют.

Фольклорăн тĕрлĕ жанрĕсем халăх историйĕн тĕрлĕ тапхăрĕнче çуралнă. Вĕсенчен чи авалхисен шутне йывăç-курăк, чĕр-чунсем пирки калакан юмахсем кĕреççĕ. Чи кайран çуралнисен шутĕнче – хĕвел тĕнчи (хĕвел, уйăх, çăлтăрсем), Турăсем, этем пулса кайни пирки калакан мифсемпе истори халапĕсем. Кунта çакна палăртмалла: фольклор жанрĕсенчен хăшĕ-пĕрисем истори аталанăвĕн пĕр-пĕр тапхăрĕнче пачах аталанма пăрахнă, «хупăнса» ларнă, теприсем анлăн аталаннă, «уçă» пулнă. Çакă халăх культуринче «хупăнса» ларнă жанрсен пĕлтерĕшĕ чылай чакнипе çыхăннă, сăмахран, ăслăлăх пĕлĕвĕн е илемлĕ сăмахлăх аталанăвĕн витĕмĕпе.

Чăваш халăхĕн историллĕ кун-çулĕ, шел пулин те, паянхи кун та туллин çырăнман-ха, историксем чăваш çынни ăçтан çуралса тухса, мĕнле çулпа паянхи вырăна çаврăнса çитнине татăклăн сăмахне каламан. Çапах та халăх сăмахлăхĕнче чăваш историйĕ хăйне евĕрлĕ тарăн çырăнса юлнă. Паллах, истори халапĕсем истори документчĕсем мар, вĕсем халăх пурнăçĕнчи чăн пулнă, вал хăй куçĕпе курнă, хăй тӳссе ирттернĕ пулăмсене сăнласа паракан хайлавсем. Вĕсенче çын пурнăçĕн хăш-пĕр енĕсене фантастикăлла мелсемпе ӳкерсе пама та пултарнă, анчах вăл яланах пурнăçра пулса иртнĕ ĕç-хĕл, факт çинче никĕсленет.

Чăваш истори халапĕсене тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен ушкăнлаççĕ: историлле ĕçсемпе историре палăрнă çынсем çинчен хывнисем; историпе çыхăннă топонимика халапĕсем; сюжетлă е сюжетсăр халап, асаилӳпе халап, легендăллă е чăнлăхлă халап тата ыт. те. Анчах та пĕтĕмĕшле ăнлантарнă чух вĕсене пурне те истори тапхăрĕсемпе çыхантараççĕ. Çавăнпа та истори халапĕсен ушкăнĕсене палартнă чух

вĕсене халăх кунçулĕпе çыхăнтарни вырăнлăрах (И.И. Одюков, Е.С. Сидорова): I-XIII ĕмĕрсем (Авалхи саманапа Пăлхар тапхăрĕ); XIII-XVI ĕмĕрсем (Ылтăн Уртапа Хусан ханлăхĕн тапхăрĕ); XVI-XX ĕмĕр пуçламăшĕ (Раççейпе пĕрлешнĕ хыççăнхи тапхăр).

Тема тĕлĕшĕнчен истори халапĕсем чăваш халăх пурнăçĕн çак енĕсене сăнлаççĕ: халăхпа унăн ячĕ пулса кайни; вăл Алтай тăрăхĕнчен Кавказа, унтан Атăлпа Шурă Атăл тăрăхне, каярахпа халĕ пурăнакан вырăна куçса пурăнни; монголсемпе Хусан феодалĕсене хирĕç кĕрешни; хăй ирĕкĕпе Раççее кĕни, вырăс халăхĕпе пĕрле Раççей патшалăхĕн шалти тата тулашри тăшманĕсемпе кĕрешни, Октябрьти революцие хутшăнса Совет влаçне йĕркелени.

Паянхи куна чăваш сăмахлăх жанрĕсен ушкăнĕсене ăсчахсем (Г.И. Комиссаров, И. Тукташ, Е.С. Сидорова, В.П. Станьял, Н.И. Егоров, Г.Г. Ильина) йĕркелесе çитернĕ. Çапла чăваш фольклористикин историйĕнче халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене темиçе тĕрлĕ ушкăнлани паллă. Чи пĕрремĕш классификацисем шутĕнче вара Г.И. Комиссаровпа И. Тукташ хатĕрленĕ ушкăнлавсене асăнмалла.

Г.И. Комиссаров шучĕпе халăх халаплăхĕнче çакнашкал **халапсем** тăраççĕ (1926 çул): 1) <u>юрăсем</u>: ĕç, вăйă, ташă юррисем (сăвăсем), çут çанталăкри япаласене, чĕр чунсене евĕрлесе каланă сăмахсем-сăвăсем, тĕрлĕ праçник, истори, кĕлмĕç, пĕччен çын юррисем; 2) чĕлхе сăмахĕсем; 3) кĕлĕсем; 4) пилĕ сăмахĕсем; 5) ылхан сăмахĕсем; 6) тупăшу сăмахĕсем; 7) халапсем (юмахсем); 8) авалхи халапсем (преданисем); 9) легендăсем; 10) историлле халапсем; 11) кулăшла халапсем (анекдотсем); 12) виртлемелли сăвăсем; 13) тупмалли юмахсем; 14) юптаруллă сăмахсем; 15) тĕлĕк уççисем; 16) тĕшмĕшле сăмахсем (приметы-суеверия); 17) çанталăк сăнавĕсем; 18) юптаруллă халапсем (притчи).

Илле Тукташ хăй классификацине çапла йĕркеленĕ (1941 çул): 1) <u>Октябрьчченхи фольклор</u>; 2) <u>ĕç юррисем</u>: сăвай çапакансен, кĕпер хывакансен, канат юрри, нимене чĕнмелли юрă, чăпта çапакансен, пир çапакансен юрри; 3) <u>вĕрӳ-суру чĕлхисем</u>: хаяр чĕлхи, усал чĕлхи, вăрах хаяр хĕн чĕлхи, пуç çавăран чĕлхи; 4) <u>йăлана кĕнĕ уяв юррисем</u>: сурхури, хĕр сăри юррисем, хĕр сăри такмакĕсем, çăварни, улах, сĕрен юррисем, сĕрен такмакĕсем, чӳк, пумилкке юррисем, çурхи уяв, авалхи туй юррисем, сутмалли юмахсем, преданисем, легендăсем, историри паллă çынсем çинчен çӳрекен хыпарсем, кĕреке, хăна, удел хресченсен юррисем, шӳтлĕ юрăсем, салтак юррисем, 1905 çулхи юрăсем, сăпка юррисемпе ача-пăча сăввисем, ваттисен сăмахĕсем, юмахсем, граждан

вăрçи, заем такмакĕсем, ваттисен сăмахĕсем, Ленинпа Сталин çинчен хунă юрăсемпе такмаксем.

1978-1987 çулсенче пухса хатĕрленĕ «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» 6 томлăхри классификаци йĕркинче çак ушкăнсене палăртнă: 1. Юмахсем: чĕр чунсем çинчен калакан, асамлă юмахсем, йăла юмахĕсемпе шÿтсем. 2. Юрăсем: истори, социаллă танмарлăх, удел хресченĕсен, çĕнĕ çĕр, салтак, тăлăх, хусах-таркăн, ямшăк, бурлаксен, рабочи юррисем. 3. Тĕрме, каторга, ссылка тата революци юррисем. 4. Ĕç юррисемпе такмакĕсем: ака-суха, ниме, авăн çапакансен, сÿс тыллакансен, сÿс шăртлакансен, йĕке çавăракансен, çăм тапакансен, пир çапакансен, тăла пусакансен, чăпта çапакансен, канат туртакансен, сăвай çапакансен, каска татакансен, катка-пичке тăвакан, тимĕрçĕ, сурхури, çăварни юррисем, сĕрен юррисемпе такмакĕсем, вăйă юррисемпе ташă такмакĕсем, хĕр сăри юррисемпе такмакĕсем, улах юррисемпе такмакĕсем. 5. Туй юррисем: 1) ар туйĕ (туй халăхĕ хĕр илме каяс умĕн юрлакан юрăсем, мăн кĕрÿ, кĕçĕн кĕрÿ такмакĕсем, кĕрнекÿрсен, туй арăмĕсен, хăйматлăх юррисем), 2) хĕр туйĕ (туй арăмĕсен, хĕр çумсен юррисем, хĕр йĕррисем, туй халăхĕ хĕр япалипе кайсан юрлакан юрăсем, çĕнĕ хăта юррисем, ытти юрăсем[1] - хăна юррисемпе ташă такмакĕсем, вилле çинчи, юпа (асăну), сюжетлă юрăсем, Совет тапхăрĕнчи юрăсемпе такмаксем). 6. Вак жанрсем: 1) ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем (çут çанталăк, хуçалăх, обществăри хутшăнусем, ăс-кăмăл, çĕнĕ самана); 2) сăнавсемпе паллăсем (çанталăк çинчен, ял-хуçалăх ĕçĕсем çинчен); 3) тупмалли юмахсем (çут çанталăкри пулăмсем, йывăç-курăк, пахча-çимĕç, тыр-пул, тискер чĕр-чунсем, кайăк-кĕшĕкпе шыври чĕр чунсем, хурт-кăпшанкă, килти чĕр чунсем, этем, çи-пуç, ĕçме-çиме, çурт-йĕр, хуçалăхри хатĕр-хĕтĕр, ĕç-хĕл, тĕрлĕрен). 7. Ача-пăча сăмахлăхĕ: 1) сăпка çулĕсенчисен поэзийĕ (сăпка юррисем, йăпатмалли сăвă-такмак, ыйхăран вăраннă ачана ачашламаллисем, йĕрекене йăпатмаллисем, çитернĕ чух илĕртмеллисем, утьăкка сиктермеллисем, уттармалли такмаксем, кăтăк, мунча, пÿрне вăййи такмакĕсем, кун ячĕсем çинчен хывнă сăвăсем); 2) календарь поэзийĕ (сурхури, çăварни, сĕрен юррисем); 3) чĕнÿ-йыхрав сăвви-юррисем (çут çанталăкпа чĕр чунсем, йыхрав юррисем); 4) кулленхи сăвă-юрă (сыпăнуллă, пÿплешÿллĕ сăвă-юрă, вĕçсĕр такамак, пулмасла халап-такмак, ташă сăввисем); 5) вăйă юррисем (ансат вăйăсем, вăйă пуçламăш, шăп-шăпăрин сăввисем, шÿт такмакĕсемпе шăпа сăввисем, шăпа ямалли, сюжетлă вăйăсем, вăйă

[1] «Чăваш халăх сăмахлахĕ» ярăмра çак хайлавсене уйăрса хăй тĕллĕн ушкăнсем пек паман пирки эпир те вĕсене ярăмри евĕр кăтартатпăр.

картинче, ытти вăййăсем); 6) витлешӳ такмакĕсем; 7) шӳтсем; 8) хăвăрт сăмах (сăмаха хуçкаламасăр, пĕр сăмаха тĕрлĕ майлă хуçкаласа каламаллисем, вăрăмлатса каланă йывăр сăмах); 9) вăрттăн чĕлхе; 10) юмах-халап (пулмасла халапсем, вĕçсĕр юмахсем, чĕр чун юмахĕсем); 11) калавсемпе юптарусем. 8. Мифсемпе халапсем: 1) мифсем (тĕнче тытăмĕ, йывăç-курăк, чĕр чунсем, кайăк-кĕшĕкпе хурт-кăпшанкă, этемпе халăх, этем ĕмĕрĕ, вилĕм, леш тĕнче, ĕçпе культура, çӳлти хăватсем, çĕр çинчи ыр-хаярсем); 2) улăп халапĕсем; 3) истори халапĕсем (I-XIII ĕмĕрсем (Авалхи саманапа пăлхар тапхăрĕ), XIII-XVI ĕмĕрсем (Ылтăн Уртапа Хусан ханлăхĕ тапхăрĕ), XVI-XX ĕмĕр пуçламăшĕ (Раççейпе пĕрлешнĕ хыççăнхи тапхăр)).

В.П. Станьялăн классификацийĕпе килĕшӳллĕн чăваш халăх сăмахлăхне **рет** (калану, выляну, çуйлану) принципне тĕпе хурса ушкăнлама пулать. Çапла, ***калану (эпика) ретне*** çаксем кĕреççĕ: 1) хайла (миф, легенда) – тĕнче тытăмĕ, турăсем, ыр-хаяр, усал-тĕсĕл çинчен хывнă хайлавсем; 2) халап (предание) – аваллăх, паттăрлăх (улăп), пулни-иртни, вырăн ячĕсем çинчен калакан халапсем; 3) уйланăш (баллада) – кил-йыш, юрату, авалхи ĕç-тăрăм, танмарлăх, кĕрешӳ çинчен сăвăланă уйланăш; 4) юмах (сказка) – чĕр чунсем çинчен, асамлă, шаймăклă, паттăрлăх, пурнăçпа йăла юмахĕсем; 5) кĕске каланăш (малые жанры) – ваттисен сăмахĕ, каларăш, сăнав, туптармăш, тупăшмак, виртлешӳ тата ыт. каланăшсем. ***Выляну (драма) ретне*** вăййăри, туйри, уяври выляну сăмахлăхĕ кĕрет. Виççĕмĕш, ***çуйлану (лирика) ретне*** кĕрекеннисем шутĕнче: 1) ăрăмлă сăмахлăх (магическая поэзия) – чĕлхесем, ылхан, кĕлĕ, пил (пехил, халал) сăмахлăхĕ; 2) кун тăрăм йăлисен сăмахлăхĕ (календарные обряды) – сурхури, нартукан, хĕр сăри, çăварни, сĕрĕн, çимĕк, кĕр сăри, юпа, улах сăвви-юри; 3) этем ĕмĕрĕн сăмахлăхĕ (семейно–бытовые обряды) – ачапăча сăвви-юрри, яшлăхри сăмахлăх, кил-йыш сăмахлăхĕ, пытару юррисем; 4) кулленхи сăвă-юрă (песни) – историллĕ кĕрешӳ, ĕç, ниме, шăпа, кун-çул, мухтав, хӳхлев, юрату юррисем; 5) кулленхи такмак-шӳт (частушки, шутки) – такмак, шӳтпе шӳткĕч, ятлав-питлев, вăлтни-шăхвăртни тата ыт. кăмăл-туйăм палăртăвĕ.

Е.С. Сидорова ăсчахăн классификаци никĕсĕнче **çыру-калу мелĕн** (сăвăлла (поэзи), калуллă (проза)) принципĕ выртать. Ку классификаци литература жанрĕсен ушкăнлавне питĕ çывăх. Çапла **поэзи** ушкăнне вăл çапла пайланать: 1. ***Лирика***: йăла-йĕркепе çыхăннă юрăсем: 1) календарлă йăла-йĕркепе çыхăннă (сурхури, хĕр сăри, улах, çăварни, юпа, сĕрĕн, уяв, вăйă юррисем), 2) яланхи (çемьери) йăла-йĕркепе çыхăннă (хăна, туй, салтак (рекут), пумилкке юррисем); йăла-

йĕркепе çыхăнман юрăсем: 1) ĕç юрисем, 2) социаллă йăла юрисем (удел, бурлак, ямшăк, çĕнçĕр, тĕрме, каторга), 3) истори юррисем, 4) балладăсем (социаллă йăла, çемьери йăла). 2. ***Магилле сăмахсем***: этемпе çутçанталăк çыхăнăвĕ: 1) чĕлхесем, 2) кĕлĕсем; обществăри çыхăнусем: 1) пил, 2) ылхану. **Проза** ушкăнĕнче: 1. ***Мифологи***: мифсем, ĕненӳсем: 1) космогониллĕ, 2) этиологиллĕ; легендăсем: 1) демонологиллĕ, 2) Улăп халапĕсем, 3) этиологиллĕ,4) топонимикăлла. 2. ***Юмахсем***: асамлă юмахсем: 1) çурма мифла, 2) паттăрсем çинчен; чĕрчунсем çинчен: 1) чĕрчунпа этем, 2) аллегориллĕ; йăла юмахĕсем: 1) социаллă йăла, 2) кулленхи йăла. 3. ***Историллĕ проза***: истори халапĕсем: 1) паллă çынсем çинчен, 2) паллă событисем çинчен; топонимика халапĕсем: 1) ял ячĕсем пулни, 2) вырăнсен ячĕсем пулни, 3) хушаматсем пулса кайни. 4. ***Вак жанрсем***: ваттисен сăмахĕсем: 1) истори, 2) общество пурнăçĕ, 3) куленхи пурнăç, 4) ĕçхĕл, 5) мораль çинчен; тупмалли юмахсем: 1) историпе общество пурнăçĕ, 2) ĕçхĕл, ĕç хатĕрĕ, 3) этем, 4) пурнăç çинчен; сăнавсем, паллăсем: 1) çанталăк сăнавĕсем, 2) ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен, 3) ĕненӳсем, паллăсем, тĕлĕксем.

Çавăн пекех кунта Г.Г. Ильинан чăваш халăх сăмахлăхĕн проза жанрĕсен ушкăнлавне палăртни те вырăнлă. Унăн классификацийĕ çапларах: 1. Мифсем: 1) космогини халапĕсемпе космогини ăнлавĕсем; 2) этимологи халапĕсем; 3) çĕр-шыв (географии объекчĕсемпе ландшафт) пулса кайни çинчен калакан халапсем; 4) астрологи халапĕсем; 5) ӳсен-тăран тĕнчи пулса кайни; 6) чĕр чун тĕнчи пулса кайни; 7) этем пулса кайни; 8) культура объекчĕсем пулса кайни; 9) эсхатологии халапĕсем; 10) теологи халамĕсем; 11) турă, турă умĕнче тăракансем, ыр-хаярсем, усал-тĕселсем çинчен калакан халапсем; 12) авалхи чăваш пантеонĕпе пандемониумĕ. 2. Улăп халапĕсем: 1) Улăп сăнарĕ; 2) Улăп ĕçĕ-хĕлĕ; 3) Улăп кĕрешĕвĕ. 3. Аваллăх халапĕсем: 1) аваллăхри паллă пулăмсем (событисем); 2) авалхи паллă çынсем; 3) авалхи пăлхарсемпе çыхăннă халапсем; 4) атăлçи пăлхарсем монгол-тутарсене хирĕç кĕрешни; 5) чăвашсем вырăс çарĕсене Хусан ханлăхне çĕнсе илме пулăшни; 6) чăваш халăхĕн вырăс патшалăхĕнчи пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ; 7) С. Разинпа унăн çыннисем çинчен калакан халапсем; 8) чăваш халăхĕ Е. Пугачев ертсе пыракан хресчен вăрçине хутшăнни; 9) чăваш халăхĕн XIV-XV ĕмĕрĕсенчи пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ; 10) чăваш халăхĕнXVI-XX ĕмĕрĕсенчи пурнăçĕ. 4. Тавралăх халапĕсем: 1) ял-хуласем пуçланса кайни çинчен калакан халапсем; 2) вырăнти географии объекчĕсем (урам, шыв-шур, вăрман, çул, кĕпер, арман халапĕсем, сăрт-ту, масар ячĕсем çинчен калакан халапсем). 5. Тĕшмĕш

халапĕсем: 1) çӳлти тĕнче çинчен; 2) çут тĕнче çинчен; 3) аялти тĕнче çинчен; 4) этем кун-çулĕпе шăпи çинчен калакан халапсем. 6. Юмахсем: 1) январ юмахĕсем; 2) паттăр юмахĕсем; 3) нараста юмахĕсем; 4) шаймăк (йăла) юмахĕсем. 7. Месек (анекдот).

Куратпăр ĕнтĕ, чăваш халăх сăмахлăхĕ жанр тĕлĕшĕнчен питех те пуян. Илсе кăтартнă ушкăнсене тимлĕрех пăхсан сăмахлăхпа литература хушшинчи тачă çыхăнăвне те курма пулать. Малтанхи самантра (чăваш литературишĕн XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри – ХХĕмĕр пуçламăшĕ) çак çыхăну татах та çирĕп пулнă: пĕрремĕш чăваш çыравçисем хăйсен хайлавĕсене фольклор тексчĕ пек калăплама тăрăшнă е халăхра çӳрекен халап-юмаха, сăвă-юрра сюжет никĕсне хывнă. Кунашкал тĕслĕхсем çак истори тапхăрĕнче сахал мар. Тĕслĕхе, К. Иванов, Н. Шупуççынни, И. Юркин тата ыттисен хайлавĕсене аса илме юрать.

XIX ĕмĕр вĕçĕ – XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи литература пултарулăхĕ çине халăх сăмахлăхĕ мĕн таран вăйлă витĕм кӳнине **Иван Юркин** (*Юркин Иван Николаевич, 1863-1943*) пултарулăхĕ лайăх кăтартать. Çапла литературăри хăйĕн пĕрремĕш утăмĕсене вăл этнографи ĕçĕсем, анатрипе тури чăвашсен чĕлхе уйрăмлăхĕ пирки калакан «Чăвашсем мĕншĕн тĕрлĕ тĕлте тĕрлĕ калаçаççĕ» ятлă статья, «Толчокра» калав, «Илле паттăр» юмах çырса тунă. Çыравçăн литература историйĕшĕн пĕлтерĕшлĕ хайлавĕсем шутĕнче «Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă» тата «Мул» повеçĕсене асăнмалла. Çавăн пекех çак хайлавсем чăваш повесть жанрĕн пĕрремĕш тĕслĕхĕсем пулнине те палăртмалла.

Иван Юркин хайлавĕсенче хăй курнă-илтнĕ ĕçсемпе пулăмсене çырса кăтартасси, натурализмла туртăм вăйлă пулнă. Жанр тĕлĕшĕнчен çыравçăн пултарулăхĕ халăх юррисемпе юмахĕсенчен йĕркеленĕ хайлавсенчен, фольклортан илнĕ сюжетсемпе усă курса çырнă йăла повеçĕсемпе калавĕсенчен тата очерксенчен тăрать. Тĕпчевçĕсем (А.В. Васильев) асăрханă тăрăх, писатель кашни фактпа пулăм çинче тĕплĕн чарăнса тăрать, вак-тĕвĕк детальсене те кăмăлласа çырса кăтартать. Унăн хайлавĕсенче автор ыррине кăмăлланине, тĕрĕслĕх çиеле тухасса шаннине курма пулать. Çавăнпа та çыравçă пурнăçри тĕрĕсмарлăха, ытти çитменлĕхе сивлесе, лайăххине сарма та çирĕплетме, вулакана ырра вĕрентме тăрăшать. Хăйĕн тĕнчекурăмĕпе ĕненĕвне вара вăл нумай чухне хайлавăн калу йĕркипе сюжетĕнче чăваш халăхĕн каларăшĕсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе усă курнипе çирĕплетет.

Халăх сăмахлăхĕнчи сăнарсене, сюжетсене, кĕвĕсене (мотивсене), мифологемасене, мифсен композицийĕсемпе хронотопне илемлĕ хайлава кĕртесси чăваш литературинче каярахри тапхăрта та (XX

ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче) сыхланса юлать. Çакна В. Митта, П. Хусанкай, Ю. Скворцов, Х. Уяр, М. Юхма, Д. Гордеев тата ыттисен пултарулăхĕнче аван курма пулать. Паллах, çак вăхăтри литературăра кашни çыравçă фольклор сăнарлăхĕпе тĕрлĕ тĕллевпе усă курать: хайлавăн философиллĕ туртăмне вăйлатса тарăнлатма е хайлаври историллĕ пулăма, сăнара ĕнентерме.

Ĕçсемпе ыйтусем.

***** ***Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Сăмахлăх хайлавĕсем хăçан, мĕнле тата мĕншĕн çуралнă? Этемлĕх культуринче вĕсем мĕнле сыхланса юлнă?
2. Чăвашсем мĕнле чĕрчуна халăха сыхлакан (тотемла чĕрчун) тесе йышăнаççĕ? Мĕншĕн?
3. Фольклор халапĕсенчен хăш ушкăнĕ чи авалхи шутланать?
4. Чăваш халăх тĕнĕ тата турăсем пирки калакан мифсем хушшинчи çыхăнăва мĕнре курма пулать?
5. Чăваш истори халапĕсенче халăх историйĕн хăш тапхăрĕсем тата ĕç-пуçĕсем çырăнса юлнă?
6. Чăваш халăх сăмахлăхне çырса илсе сыхласа хăварнă тĕпчевçĕсенчен камсене пĕлетĕр?

¤ ***Пултарулăх ĕçне тăватпăр***

1. Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхне (жанр ушкăнне хăвăр суйласа илĕр) пăхса хайлав (юмах, халап, легенда тата ыт.те) çырăр.
2. Тупмалли юмахсемпе усă курса сăмах каçмăш хайлăр.

♣ ***Вулама сĕнетпĕр***

Метин П. Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: шкул словарĕ. Шупашкар: Чăв. Респ. вĕрентӳ ин-чĕн изд-ви, 1997. 76 с.



XX ĕмĕрчченхи чăваш литературин ум историйĕ

Ĕçсемпе ыйтусем.

♪ ***Астăвăма тĕрĕслетпĕр***

1. Авалхи тĕрĕк культури чăвашсен йала-йĕркинче те, сăмахлăхра та, сăнарлă шухăшлавра та, тĕнче курăмра та хăйĕн йĕрне хăварнă.
2. Кайăк хур (акăш, хур кайăк) тĕрĕк халăхĕсен чи авалхи тотемĕсенчен пĕри шутланать. Вăл чылай юмахра, каярахри тапхăрта литература хайлавĕсенче пĕлтерĕшлĕ сăнар пулса тăрать.
3. Чăваш халăхĕ – Атăл тăрăхĕнчи Пăлхар патшалăх культурин еткерçи (тĕпкĕчи).

4. Чăвашсен пирĕн эрăри VI-VII ĕмĕрсенчех çыру тĕсĕ пулнă. Вăл чул юпасем çине çырса хăварнă халăх эпосĕн тĕслĕхĕсенче сыхланса юлнă. Каярах «Шăпа кĕнекине» кĕртнĕ тĕрĕксен мифĕсемпе юмахĕсен сюжечĕсенче тата Кашкар Махмучĕн «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххине» кĕнĕ пăлхар-сăварсен сăмахлăх тĕслĕхĕсенче палăрăннă.

5. XVIII ĕмĕртен пуçласа – чăваш халăхне Христос тĕнне йышăнтара пуçланă самантран – пирĕн культура Европа халăхĕсен культурисемпе çывăхланать. Вырăс çутлăхĕн витĕмĕпе чăвашсен кириллица çинче никĕсленнĕ çырулăх çуралать. Çутлăх идейисем çине тайăнса мухтав сăмахĕсемпе сăввисем, ăслăлăхпа вĕрентӳ ĕçĕсем (грамматика, словарь) çыраççĕ.

6. XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче ӳкĕт, сăваплă юмах, вĕрентсе калани, очерк, юрă-такмак, сăвă, калав, калаçу (инсценировка) тата ытти жанрсем çирĕпленсе çитеççĕ. Литературăра автор ăнĕ, харкамлăх вăй илет. Çыравçăн ăнĕпе хăй евĕрлĕхĕ малти вырăна тухаççĕ.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

1. **Ковалевский А. П.** Чуваши и булгары по данным Ахмеда Ибн-Фадлана. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1954. 64 с.

2. **Волков Г.Н.** Судьба патриарха: роман-эссе. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. 350 с.

3. **Димитриев В.Д.** О чувашском ученом, писателе середины XIX века С. М. Михайлове и его сочинениях о чувашах, марийцах и русских Волжско–Сурского края. Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2003. 217 с.

4. **Юмарт Г.** Манăн Бичурин: статьясем, сăвăсем, куçарусем. Шупашкар: Чăв. патш. гуманитари ăсл. ин-чĕ, 2007. 31 с.

5. **Ашмарин Н.И.** Болгары и чуваши: очерк. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2012. 143 с.

6. **Родионов В.Г.**Ермей Рожанский: жизнь и творчество. Чебоксары: ЧГИГН, 2012. 148 с.

♦ *Литература тĕпчевĕнчи пĕрремĕш утăм*

Родионов В.Г. литература тĕпчевçин «Чувашское и тюркское стихосложение» (Шупашкар, 1986) ĕçĕпе паллашăр, «Особенности устного стиха и проблемы его ритмической организации» (12-15 С.) пайне конспект тăвăр.

◊ *Реферат теми*

Руна çырăвĕ тĕрлĕ халăхсен культуринче.

♫ *Проект*

Чăваш тата тĕрĕк (авалхи тĕрĕк) халăхĕсен хушшинчи çыхăнусем: йăла-йĕрке, сăмахлăх, чĕлхе *(ушкăнла тĕпчев).*

ЧĂВАШСЕН ПРОФЕССИЛЛĔ ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРИ ЙĔРКЕЛЕННИ


1906 çул. С.

ХЫПАР

ЕРНЕРЕ ПĔРРЕ ТУХАКАН ХАСЕТ.

Хасет усен

1906 с. № 1.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи литература пултарулăхĕнчи илемлĕх шыравĕсем

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури мĕнле çулпа аталана пуçланине курас тесен çак тапхăрта Раççейре обществăпа культурăра пулса иртнĕ пулăмсемпе улшăнусене аса илмелле. Вырăс историпе культура пурнăçĕнчи çĕнĕ тапхăр 1881 çултан пуçланать. Çак çул II Александр патшана вĕлерсе III Александра лартнă, хурлăхлă вăхăт пуçланнă. Çавна пула çĕршывра пăлхавлă кăмăл-туйăм вăйланать, çĕнĕ ĕмĕр пуçламăшĕче виçĕ вырăс революцийĕ (1905-1907 çç., 1917 çулхи нарăс тата юпа уйăхĕсем) пулса иртет. Çĕршывăн капитализм йĕрки империализм тапхăрне кĕрет.

Обществăри шухăш-кăмăлсем çак вăхăтра питĕ тĕрлĕ енлĕ пулнă. Раççей çĕршывĕн политика сцени çине кадетсем, эсерсем, социал-демократсем (вĕсем каярах – большевиксемпе меньшевиксем) тухаççĕ. Православипе католицизм ĕненĕвне пĕрлештерсе тунă христианство мар текен юхăм çуралать. Çĕнĕ ренессанс текен литература стилĕ аталана пуçлать. Çак юхăма çĕнĕ вырăс философине никĕсленĕ В. Соловьев, Н. Бердяев, П. Струве, П. Флоренский, Вяч. Иванов кĕреççĕ.

Вырăс литература классиккинчен çĕнĕ литература вăхăтне куçасси пачах та лăпкăн пулса иртмен. Вăл пĕтĕмĕшле культурăн тата литературăн шалти пурнăçĕнчи улшăнусемпе, илемлĕх мелĕсем пуçĕпех çĕнелнипе, эстетика паллисем кĕтмен çĕртен хăвăрт ылмашнипе палăрса тăнă. Вырăс поэзийĕ çак вăхăтра уйрăмах кăтартуллă аталаннă. Каярах ăна «ренессанс поэзийĕ» е «кĕмĕл ĕмĕр поэзийĕ» тесе ят панă. Çак термина Пушкин вăхăтне палăртакан «ылтăн ĕмĕр» ăнлавпа пĕрешкеллĕх курса тунă. Малтанхи вăхăтра вăл 25 çула тăсăлнă пĕтĕм тапхăра пĕлтернĕ. Çапах каярах ерипен «кĕмĕл ĕмĕр» терминпа («модернизм» ăнлавăн синонимĕ) Раççейри XIX ĕмĕр вĕçĕ – XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пĕтĕм илемлĕ культурăн символизмпа, акмеизмпа, «çĕнĕ хресчен» тата футуристла литературăпа çыхăннă пайне çеç палăрта пуçланă. Вырăс модернизмĕн тĕп сăвăçĕсем шутĕнче Андрей Белыя тата Анна Ахматовăна палăртаççĕ.

Раççей шайĕнче пулса иртекен обществăри тата литературăри улшăнусем чăваш культурине те витĕм кÿнĕ. Кунта çак вăхăтшăн

пĕлтерĕшлĕ икĕ пулăма палăртса хăвармалла: пĕрремĕшĕнчен, чăваш хресченĕсем, чăваш интеллигенцийĕ (Хусан учителĕсен институчĕн студенчĕсем (А. Анисимов, С. Игнатьев), Чĕмпĕр тĕн семинарийĕнче вĕренекен чăваш ачисем, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем) патшана хирĕç хастар пăлхана пуçлаççĕ; иккĕмĕшĕнчен, чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ «Хыпар» (1906) пичетлене пуçлать. Чăвашсем хушшинчи çакнашкал кăмăл-туйăм, паллах, Чĕмпĕр чăваш шкулĕн хÿттипе анлăн аталана пуçланă чăваш литературин çул-йĕрне те палăртать.

ХХ ĕмĕр пуçламăшĕн пĕрремĕш çулĕсенче, сăмахран, чăваш прозинче икĕ курăмлă юхăм палăрать. Пĕрисемшĕн халăх прозине пухса пичетлесси (И. Юркин), вырăс тата тĕнче литературине чăвашла куçарасси (Э. Турхан, Д. Демидов, И. Степанов, Е. Пименова) пĕлтерĕшлĕ. Теприсем ытларах публицистикăлла калавсемпе новеллăсем, очерксемпе статьясем çырма талпăнаççĕ (Тайăр Тимкки). Иккĕмĕш ушкăнри çыравçăсем ытларах «Хыпар» хаçатпа çыхăннă, çавăнпа та вĕсен хайлавĕсенче чĕнÿ стилĕ, тиркевлĕ тишкерÿ малти вырăнта. Илемлĕх тĕлĕшĕнчен пахалăхĕ пĕчĕкрех вĕсен, анчах социаллă ыйтусене хускатса çутатни халăх кăмăл-туйăмĕпе тÿр килет. Çакнашкал калав-статьясенче чăваш литературишĕн халлĕхе ют сăнар – кĕрешÿçĕ сăнарĕ – калăпланать.

Чăваш поэзийĕ те ĕмĕр пуçламăшĕнче уйрăмах хăвăрт аталанса каять, жанр тĕсĕсемпе пуянланать, социаллăхпа харкамлăх енне сулăнать. Поэма жанрĕ уйрăмах тухăçлă ĕçле пуçлать (К. Иванов «Нарспи», Турхан Яккăвĕ «Варуççи», П. Орлов «Уравăш», Н. Полоруссов (Шелепи) «Çарăмсанпа Хăнтăрçа», Т. Кириллов «Тырă пулнă çул», «Пулăшăр» тата ыт. те).

Тăван (чăваш) литературăри драма жанрĕ чăваш халăх театрĕнче çуралнă тесен йăнăшах та пулмĕ. В.Г. Родионов ăсчах шучĕпе, театр элеменчĕсем чăваш туйĕнче питех те йышлă. Çавăнпа та ăна халăх театрĕн тĕп тĕсĕ шутне кĕртмелле. Унран та ытларах чăваш драматургийĕ хăй те малтанхи тапхăрта халăх йăлисене сцена çинче лартма хатĕрленĕ пек йĕркеленет. Çак туртăм, сăмахран, Г. Комиссаров пултарулăхĕнче уçăмлăн курăнать («Чăваш туйĕ», «Авлану» пьесăсем).

Пĕтĕмĕшле каласан вара, ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури вырăс традицийĕсемпе анлă усă курасси, нацишĕн пĕлтерĕшлĕ темăсене çутатасси, çын пурнăçĕн пĕлтерĕшне ăнлантарса парасси патне туртăнать.

Ĕçсемпе ыйтусем

● ***Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ***

Модернизм юхăмĕн тĕрлĕрен стилĕсем тата мелĕсем:
символизм
экспрессионизм
экзистенциализм

♣ ***Вулама сĕнетпĕр***

Вартаньянц А.Д. Поэтика: комплексный анализ художественного текста. М.: Аспект Пресс, 1994. 240 с.

Анализ художественного текста. Эпическая проза. М.: Издат. центр РГГУ, 2005. 442 с.

Тюпа В.И. Анализ художественного текста. М.: Академия, 2009. 332 с.

Гуляев Н.А. Литературные направления и методы в русской и зарубежной литературе XVII-XIX веков. М.: Просвещение, 1983. 144 с.

Ладыгин М.Б. Литературные направления. М.: Поляр. звезда, 2000. 67 с.

♫ ***Проектсем***

1. Илле Тăхтин литература портречĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.
2. Мĕтри Юман çыравçăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.



XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи литература çитĕнĕвĕсемпе çĕнĕлĕхĕсем

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Тăван (чăваш) литературăра гражданла поэзи çурални пĕрремĕш вырăс революци юхăмĕпе (1905-1907) тачă çыхăннă. Чăваш халăхĕ XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи çĕршывăн социаллă тата политика тытăмĕнче нимĕнле вырăн йышăнманине шута илсен пирĕн литературăри гражданла поэзи те хăйне ĕвĕрлĕ аталаннине палăртмалла. Вăл чи малтанах çĕршывра пулса иртекен пăлхавсен сывлăшĕпе тулнă. Кунта революциллĕ чĕнӳпе хавхалану (риторика) вăйлă пулнă. Çавăнпа пĕрлех историллĕ вăхăт çыравçăсем умне икĕ пĕлтерĕшлĕ ыйту лартнă: пĕрремĕшĕнчен, вĕсен хăйсен тĕнче туйăмĕпе курăмне уçăмлатса гражданла позицине çирĕплĕтмелле пулнă; иккĕмĕшĕнчен, чăваш халăхĕн малашлăхри аталанăвĕ пирки, унăн культурипе чĕлхи, йăли-йĕрки пирки шухăша кайма тивнĕ. Çакă вара пĕтĕмпех чăваш литературинчи гражданла поэзин никĕсне выртнă.

ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литературинче революциллĕ хавхаланупа сывлакан гражданла поэзин паллисем **Тайăр Тимкки** (*Семенов Тимофей Семеневич, 1889-1917*) пултарулăхĕнче лайăх палăрнă. Тайăр литература çулĕ çине тăнин сăлтавĕ вăл 1906 çулта «Хыпар» хаçатра ĕçле пуçланипе (тĕрĕсрех вăл типографире наборщик пулса ĕçле пуçлать) çыхăннă. Шăпах çак самантран сăвăç революци ĕçне те хутшăнать, сăвăсем те çыра пуçлать. 1906 çулта вăл «Чаплă вилĕм юри», «Çĕнĕ çул», «Шухăш», «Çăлăнăç» сăвăсем шăрçаланă.

Илемлĕх мелĕсем тĕлĕшĕнчен Тайăр Тимккин хайлавĕсем ытла оригиналлах мар. Акă, «Çĕнĕ çул» сăвăра вăл тӳремĕнех патша влаçне хирĕç чĕнсе калаçать. Ăна вăл «кивĕ ĕç», «кивĕ йĕрке», «тимĕр сăнчăр», «усал» ăнлавсемпе палăртать. Сăвăра антитеза мелĕ мала тухнă. Çавăнпа та кунта çĕнĕ, телейлĕ пурнăçа сăнарлакан сăмахсемпе сăмах çаврăнăшсем речĕ çуралать: «çĕнĕ шухăш», «ырă çын», «вĕри юн», «ырă», «ĕçе тытăнас», «аван пурăнĕç», «чунтан савăнĕç». Çакă вара сăвăçа чи малтанах патша влаçĕпе çĕнĕ пурнăçа сăнарлакан сăмахсемпе ăнлавсен хирĕç тăрăвне йĕркелеме кирлĕ.

«Вут куçĕ» тата «Тĕлĕнмелле» прозăлла хайлавсем ытларах хаçат валли çырнă статьясене аса илтереççĕ. «Вут куçĕ» хайлавра сюжет палли пур пулсассăн, «Тĕлĕнмелле» хайлав вара пĕтĕмпех публицистикăлла чĕнӳпе витĕрĕннĕ. Ку хайлавсенче ĕлĕкхи пурнăçа, тĕрĕсмарлăха хирĕç тăни вăйлă.

Тайăр Тимкки хайлавĕсене тĕрĕс хакласа ăланас тесен пĕр япалана аспа тытмалла: вăл çырнă хайлавсем пурте пĕрремĕш хут «Хыпар» хаçатра пичетленĕ. Хаçат хăйне евĕрлĕхĕ вара чи малтанах публицистикăллăх ыйтать. Революци çулăмĕпе çунса тăракан сăвăç хăй те лирикăлла е романтикăлла сывлăшпа пурăнман, халăх пурнăçĕшĕн çак самантра пĕлтерĕшлĕ ыйтусене çĕклеме тăрăшнă ĕнтĕ. Çавăнпа та кунта, паллах, кĕрешӳ, ирĕклĕх проблеми мала тухать, революциллĕ чĕнӳ вăйлă янăрать.

Тайăр Тимкки сăвăç чăваш литературипе обществăлла пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнакан çынсенчен пĕри. ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче вăл К. Иванов, И. Юркин, Н. Полоруссов (Шелепи), Н. Шупуççынни, М. Акимов çыравçăсемпе пĕрле профессиллĕ чăваш литературине аталантарнă. Асăннă çыравçăсен тăван литература кашнин хăйĕн тӳпи. Тайăр Тимкки ячĕ вара гражданла поэзи çуралнипе çыхăннă.

Тайăр Тимкки тăван (чăваш) литературăра нумай çул хушши ĕçлесе нумай сăвă-калав çырнă автор мар. Çапах та ăна литературăна

юратакан кашни çын пĕлет. Ытларахăшĕ ун пурнăçĕпе К. Петров çырнă «Тайăр» роман-хроникăри тĕп сăнар урлă паллашнă.

Асăннă жанр ку вăл уйрăм çын пурнăçне çутатса паракан хайлав пулнине кăтартать. Хайлавăн илемлĕх тĕчине уçса пама автор хăй каласа пани лайăх пулăшать. Акă мĕн çырать вăл роман мĕнле хайланни пирки: «Тайăр çинчен материалсем пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса пытăм. Архивсенче нумай ларма тиврĕ. Унта сăвăçăн сăнӳкерчĕкне, пичетленмен алçырăвĕсене, пулас поэма планне, уйрăм çырăвĕсене тупрăм. Каярах Тайăр йĕрĕпе таçти-таçти çĕрсене те çитсе курма тӳр килчĕ. Атăл тăрăхĕчи хуласемпе ялсенче тимлесе тĕпчесе çӳренисĕр пуçне, Урал тăвĕ урлă каçса, Çĕпĕр çĕрĕ çине пусрăм, унтан Кавказра, Донбасра пултăм. Романа çырнă чухне «Хыпар» хаçат редакторĕсен Н.В. Никольскипе С.К. Кириллов аса илĕвĕсем маншăн паха материалсем пулса тăчĕç. Пĕрремĕш революци вăхăтĕнчи Хусанти ĕç-пуç çинчен Н.Н. Накоряков большевик питĕ тĕплĕн каласа та, çырса та пачĕ. Вăл Тайăр Тимккипе Тимофей Николаева (Хурие) лайăх астăвать. Кунсăр пуçне эпĕ Тăхăръял çыннисем Тайăр çинчен каласа панисене пĕр сăмах хăварми çырса пынăччĕ».

Чăн та хайлава вуланă май автор пурнăçа илемлетмесĕр, тӳреммĕн кăтартасси (документаллăх) патне туртăннине курма пулать. Кунта историре хăйсен ятне хăварнă çынсем (И.Я. Яковлев, К. Иванов, И. Юркин тата ыт.те), пĕтĕм чăваш культуришĕн сăваплă вырăнсем (Чĕмпĕр чăваш шкулĕ, «Хыпар» хаçатăн Хусанти редакцийĕ) сăнарланнă. Çакă пĕтĕмпех çыравçăна XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш тĕнчин панорамлă ӳкерчĕкне калăплама майсем туса парать. Çавăнпа та эпир кунта чăваш шкулĕ, литературипе пичечĕ, çĕнĕ тĕнче курăмĕ (политикăлла тата обществăлла шухăшлав) çуралса вăй илнине куратпăр.

Литература теорийĕ

Гражданла поэзи ăнлав хайлавра хускатнă темăпа çыхăннă. Кунта пĕтĕм халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене хускатни тата вĕсене хӳтĕлени малта тăрать. Çакнашкал сăвăсем çыракан сăвăç чи малтанах халăх кăмăлĕпе туйăмне хӳтĕлет, обществăна вăратса унăн ĕçĕ-хĕлне хастаррăн хутшăнма чĕнет. Çавăнпа та вĕсенче публицистикăлла туртăм вăйлă.

Гражданла поэзине сăвăлла илемлĕ публицистика теме те юрать. Çакăнта унăн вăйлă çав вăхатрах хавшак енĕ. Унăн хăй вăхăчĕ çине ӳкекен витĕмĕ вăйлă пулни тата малашнехи тапхăрта хăй пĕлтерĕшне хăвăрт çухатни те çак сăлтавпах çыхăннă. Гражданла сăвăç халăх пурнăçĕнчи ыйтусене мĕн таран анлăрах хускатать, çав таран вăл пĕр-

пĕр истори тапхăрĕн чун хавалĕпе туртăнăвне çутатакан пĕтĕм халăх сăвăçи патне çывăхрах.

Гражданла поэзи политикăлла тата халăх поэзийĕсенчен уйăрăлса тăрать. Политикăлла поэзи пĕтĕмĕшле патшалăх пурнăçĕнчи уйрăм ĕç-пулăмсемпе çыхăнать. Гражданла поэзи вара социаллă ĕмĕтленнĕ тĕллев тĕлĕшĕнчен пурнăçăн тулли ӳкерчĕкне кăтартать. Халăх поэзийĕпе танлаштарсан гражданла поэзи хăйĕн тытăмне кура йышлă халăха ăнланмалла мар пулма пултарать. Унăн тĕп паллине Н. Некрасов калани – «…Эс поэт пулмасан та пултаратăн, анчах гражданин пулмашкăн тивĕç» – лайăх уçса парать. Гражданла поэзин уйрăм хайлавĕсем нумай вырăс сăвăçисен пултарулăхĕнче тĕл пулаççĕ. Унăн пуçламăшĕнче вара Г. Державинăн «Властителям и судиям» ятлă питлевлĕ мухтав сăвви тăрать. Каярах ăна декабрист-сăвăçсем, А. Пушкин, М. Лермонтов, Ф. Тютчев тата ыт. аталантарнă.

Тăван (чăваш) литературăра гражданла поэзийĕн пĕрремĕш «папкисем» Тайăр Тимкки пултарулăхĕнче вăй илнĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Константин Петров

ТАЙĂР

Роман-хроника (сыпăк)

Чарталаннă хуркайăксем ял-ял çийĕн вĕçсе иртеççĕ. Тӳпене çав тери çӳле хăпарнă вĕсем. Сăпайлăн та кăмăллăн сас параççĕ, кăринклетеççĕ...

Чăвашсем хушшинче çакăн пек сăмах çӳрет: «Çĕр çине вилĕмсĕр ĕç туса хăварнă çын чĕри, халăхшăн чунтанах тăрăшнă, çуннă хастар чĕре, хуркайăка çаврăнать».

Епле йĕркеленсе вĕçеççĕ вĕсем. Малта – чи вăйли, çивĕч куçли, чи хăюлли. Вăл хăйăн хăватлă çуначĕсемпе çирĕп сывлăша çурса пырать, йĕр хывать. Ыттисем вăл кăтартнă çулпа малалла каяççĕ. Ваттисем каланă тăрăх, «кайри – мала, малти – кая» теме юрамасть хуркайăксене.

ПĔРРЕМĔШ СЫПĂК

1

Çĕрлехи Хусан çине Атăл енчен чуна уçакан çурхи çил кассăн–кассăн вĕрет. Урамра çынсем хĕвĕшме чарăнчĕç ĕнтĕ. Унта–кунта хунар çунать. Тайăр Тимкки Марусьăпа пĕрле вăрттăн типографирен листовкăсем пичетлесе тухрĕ. Паян, вăл хĕре тахçанах палăртса хунă шухăшне уçса парасшăнччĕ, пĕрлешесси пирки калаçасшăнччĕ, хыçалта хура мĕлке курăнса кайрĕ. Чун савнине хулĕнчен тытрĕ йĕкĕт.

– Пире йĕрлеççĕ, – систерчĕ вăл шăппăн.

Хĕрпе качча вара, йĕрленине сисмен пек пулса, пĕр пысăк картишне кĕрсе кайрĕç, мĕлке теçавăнта кĕчĕ, тепĕр енчи алăкран пысăк урама тухрĕç, лешĕ те вĕсенчен юлмарĕ, çирĕм-вăтăр утăмран йĕрлесе пычĕ, тĕттĕм тăкăрлăкра çеç ытла çывăхра пыма шикленчĕ.

Хыççăн йĕрлекен çынна çĕрлехи хупах патĕнче аран аташтарса хăварчĕç вĕсем. Чылай пысăк çаврăнăç туса, хĕре хăвăрт ăсатрĕ те хваттере пырса çитрĕ Тишка. Пӳлĕме кĕрсен, ассăн сывласа ячĕ, васкамасăр салтăнма пуçларĕ.

Хăрушлăх иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Тимкка пилĕк таранах хывăнса сивĕ шывпа çăвăнчĕ. Вăтам пӳ-силлĕ, çирĕп хул-çурăмлă вăйлă качча ӳтне алшăллипе чылайччен сăтăрчĕ. Шурă кĕпе тăхăнса ячĕ. Çăвăнса тасалнипе пичĕ, сарлака çамки, çĕмĕрт пек хура та хĕвел шевли пек чĕрĕ куçĕ илемлĕн ялкăшать.

Кĕçĕр вăл икĕ ĕç тума палăртрĕ: пĕрремĕшĕ – ялсенчи агитаторсем патне шифрланă çыру хатĕрлемелле, иккĕмĕшĕ – сăвă çырмалла.

Хусанти большевиксем пиллĕкмĕш съезда кайнă хăйсен делегачĕсене Лондонран таврăнасса куç пекех кĕтсе тăратчĕç. Анчах та кунта полици çав делегатсене арестлеме документ хатĕрлесе хуни паллă пулчĕ. Большевиксен центрĕ вара вĕсене ытти хуласене вăрттăн ĕçе ямалла турĕ.

Социал-демократла организацин чăвашсем хушшинче ĕçлекен агитаторĕсемпе Тайăр Тимкки çыхăну тытать. Тĕрлĕ цифрăсем, саспаллисем паллă турĕ хут çине, каллех саспаллисемпе цифрăсем çырчĕ вăл. Шифрланă çыру çапла пулса тăчĕ: «Съезд ăнăçлă иртнĕ. Пĕлетпĕр, эсир халĕ ун материалĕсене – çĕнĕ литературăна питĕ кĕтетĕр. Анчах халех ярса параймастпăр. Умран хура кушак каçса кайрĕ. Питех те, питех те сыхлануллă пулăр. 29.V.07».

Çак çырăва Тайăр ыран ир-ирех темиçе хут куçарса çырмалла та таçти-таçти чăваш ялĕсене ярса памалла.

Унтан иккĕмĕш ĕçне пикенчĕ. Сĕтел умĕнче тарăн шухăша путса ларчĕ Тимкка. Вăхăт нумай та иртмерĕ, çĕрлехи шăплăха çурса, сехет вуниккĕ çапрĕ.

– Талăк вĕçленчĕ! – хаваслăн сиксе тăчĕ вăл. – Çĕнĕ кун çуралать!

Лутра та пĕчĕк пӳлĕмре çăмăллăн уткаласа çӳренĕ хыççăя сĕтел çинчи çиччĕллĕ лампăла шурă хута куç айĕн пăхса тăчĕ, пулас сăввине вăйлăрах çырасси пирки шухăшларĕ.

– Вăран, çĕклен, хĕн-хурлă хура халăх. Ĕçе тытăнма вăхăт çитрĕ! – Сылтăм аллине вăйлăран вăйлă чăмăртарĕ сăвăç, унтан ăна хыттăн

сулса ячĕ. – Ирĕке тухма та вăхăт çывхарать. Çитĕ, çитĕ çывăрса выртма!.. Пире патша та, турă та çăлăнăç кӳмĕ: пурте пире асап кăтартаççĕ, пирĕн ĕнсе çинче лараççĕ. Никам та пире хăтармĕ. Ырлăха вăрçса илер!

Ку сăвва унăн паян çырса пĕтерсе ыран Хусанти чăваш рабочийĕсем патне çитермелле, çырупа ялсене ярса памалла.

Сĕтел умне ларса, сăввине хăвăрт çырса кайрĕ Тимкка. Тĕллĕн-тĕллĕн хуратрĕ, юсарĕ, унтан каллех çырчĕ...

Пĕтĕм Раççейри ĕççыннисемпе пĕрле чăваш ялĕ те ĕмĕрхи тарăн ыйхăран вăранма пуçланине лайăх курать Тайăр. Вăл патша тытăмне хирĕç чăвашсем те хаяр кĕрешĕве çĕкленнине кăтартса чылай сăвă çырнă ĕнтĕ, тăван халăха чуралăхла пусмăр тĕнчинчен ирĕке тухма чĕнсе уйрăм листовкăсем сахал мар кăларнă.

Халĕ поэт çакна ăнлантарса парасшăн: чăвашсем çеç мар, пĕтĕм тĕнчери ĕçлекен халăх хĕн-хур айĕнче, тимĕр сăнчăр танатинче пурăнать. Нимрен те хăраса тăмалла мар, çав сăнчăра татса ывăтмалла, танатана сирсе пăрахмалла. Ĕççыннисем ырă пурнăçа çапăçура кĕрешсе илме тивĕçлĕ. Тархасласа ыйтни нимех те памасть, пуласси çине çирĕп шанса, пусмăр йĕркине хирĕç хĕçпăшаллă вăйпа тухмалла.

Пуçа килнĕ сăмахсене хут çине ӳкерчĕ те каллех сĕтелтен аякка кайса тăчĕ сăвăç. Çамкине картлантарса, куç айĕн шурă хут листисем çине пăхрĕ: «Мĕнле асамлă вăй унра, сăмахра! Витĕмлĕ вăл, хăватлă! Сăмах тĕнче касать! Шурă хут, ăна тытса илсе, çӳле çĕклет, пĕтĕм халăх умне çитерет».

Çапла шухăшланă май пектографпа пичетленĕ листасене аллине тытрĕ Тимкка. «Коммунистсен партийĕн манифесчĕ»! Ăна вăл, хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле, чăвашла куçарнăччĕ, марксистла кружоксенче вĕренме тесе, халăх хушшине сарнăччĕ.

Манифестри шухăшсене хăйĕн сăввине кĕртесшĕн пулчĕ Тимкка. Лампа çутине ӳстерсе, çак йĕркесене вуларĕ: «Коммунистсем хăйсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене пытарнине, киревсĕр ĕç тесе шутлаççĕ. Вĕсем, хальхи пĕтĕм общество йĕркине вăйпа сирпĕтсе антарсан кăна хамăр тĕллевсене пурнăçа кĕртме пултаратпăр, тесе уççăнах калаççĕ. Пуç пулса тăракан классем Коммунизмла Революци умĕнче чĕтресе тăччăр. Пролетарисен унта хăйсен сăнчăрĕсене çухатнисĕр пуçне çухатмалли урăх нимĕн те çук. Анчах туянасса вĕсем пĕтĕм тĕнчене туянĕç. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!»

Çак сăмахсем сăвăçа хавхалантарса ячĕç. «Туянасса вара пĕтĕм тăнчене туянăпăр!» – терĕ Тайăр тепĕр хут, çав тери çĕкленсе. Революци ĕçне хăй мĕнле парăннине те сăвăра тупа тусах каласшăн

пулчĕ.

Сĕтел сунтăхне хыçал енчен вăрттăн уçăлмалла тунă. Унта Тимккан кружăкра çырса пынă конспекчĕсем, хăш-пĕр кĕнекесем сыхланса выртаççĕ. Вĕсене тыта-тыта тимлерĕ сăвăç. Тупа сăмахĕсене хастарлăн каларĕ:

– Чуралăх сăнчăрне чăл-пар çапса çĕмĕрессишĕн юнăма та, пуçăма та шеллемĕп. Ирĕклĕхшĕн, çутă пурнăçшăн пĕтĕм вăй-хăвата парса кĕрешĕп. Патша влаçне хирĕç эпир сăваплă вăрçă пуçласа ятăмăр. Революци ĕçĕшĕн хамăн пурнăçа та, кунçулăма та хĕрхенмĕп.

Сĕтел çине ӳпĕнчĕ сăвăç, ручкине тытрĕ. Пĕр хушă шухăша путса ларчĕ-ха, унтан çырма пуçларĕ.

Анчах шурă хута хуратса çырасси пулмарĕ. Шухăшсем аякка-аякка вĕçрĕç, ниепле те пĕр çĕре пухăнасшăн пулмарĕç.

Хваттерĕ ун – тирпейлĕ, пысăках мар пӳлĕм. Çӳлĕкĕ тăп-туллиех кĕнекепе тулнă. Стена çинче сĕрме купăс çакăнса тăрать. Çакăнтах Пушкинпа Лермонтов портречĕсем. Пĕр кĕтесре – камин-кăмака, тепĕр енче тăрăхла койка, ăна лайăх пухса хунă. Ун умĕнче – сак, сĕтел, тумбочка.

Пӳлĕмре пăчă. Шурă кĕпе çухине вĕçертсе ячĕ Тимкка, шалпар çаннине тавăрчĕ, форточкăна уçрĕ. Çăмăл пушмакне те хыврĕ, тĕксĕм хĕрлĕ сăрла пĕветнĕ тап-таса урайĕнче çарран уткаласа çӳрерĕ. Унтан, сĕтел çине таянтарнă Маруся сăнӳкерчĕкне илсе, чылайччен йăпанса тăчĕ: «Епле хитре хĕр. Чăнчăн пирĕшти...» Куçкĕски çине пăхсан, пăшăрханса илчĕ: «Эпĕ хитре мар. Пит çăмарти кăтрам-кăтрам, куçсем ăшшăн пăхма пĕлмеççĕ».

Вунтăххăрпа пыракан Тимкка хĕре юратма пуçланăранпа пачах улшăнчĕ: чиперленсе, маттурланса кайрĕ, чĕри палăрмаллах çемçелчĕ, питне-куçне хитре сăн çапрĕ, пит çăмартисем якалса çуталчĕç. Анчах вăл хăйне çаплах хитре мар тесе шутлать.

Юлташĕсенчен пĕри: «Революционерсене авланма юрамасть», тенине халĕ Тайăр пачах хирĕçлет. Революционер – çын, вăл çын пек пурăнмалла. Юратупа революци пĕрле пулмалла.

Алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çӳресен, стена çинчен сĕрме купăс илчĕ те, ăна янахĕ айне хĕстерсе, чăвашла юрă кĕввине ĕнерме пуçларĕ Тимкка. Купăсне ерипен калать пулин те, ырă кĕвĕ чӳречерен тухса каçхи шăплăха чун кĕртет. Мăнаçлă музыка хĕлĕхрен мар, илемлĕн чĕтренекен пӳрне вĕçĕнчен тухса тăнă пекех туйăнать...

Пăчă пӳлĕме форточкăран уçă сывлăш самантрах кĕрсе тулчĕ. Çакă Тайăра та уçăлтарса ячĕ. Çырма пикеннĕ сăвăçăн халĕ сăмахсем тупăнса çеç тăчĕç. Шурă хут тĕрленсе, хуралса пырать...

Каярах çав сăвва, темнçе хут куçарса çырса, тивĕçлĕ çĕре çитерчĕ, чăвашсем хушшине сарчĕ. Шифрланă çырусене те ăнăçлах ăсатрĕ.

2

...Хăйне вара кĕтмен çĕртен тĕрмене тытса хупрĕç. Çĕр тĕпне анса кайнă пекех туйрĕ Тайăр. Ăна, государствăн хăрушă преступникĕ тесе, уйрăм камерăра тытаççĕ, уçăлма талăкне çирĕм минута çеç кăлараççĕ.

Хĕвел ăшăтса, илемлетсе тăракан çĕр çинче ирĕклĕн утса çӳрĕччĕ вăл. Çӳреймест. Типографие кайса чун савăнинченех ĕçлĕччĕ. Ĕçлеймест. Хавхаланса кайса сăвă çырĕччĕ. Çыраймасть. Халăх умне тухса хĕрӳллĕ сăмах калĕччĕ. Калаймасть. Тĕнче тепĕр майлă çаврăнса тăнă пекех пулчĕ уншăн...

Тăватă çĕр каçрĕ ĕнтĕ вăл тĕрмере. Тăватă çулталăкран ытла пек туйăнчĕ çав вăхăт. Çур çĕр çитнĕ тĕле кăшт тĕлĕрсе илнĕ хыççăн урăх çывăраймарĕ, алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çӳрерĕ.

Тарăхать Тайăр, пăшăрханать.

Ирĕкре чухне мĕнле пысăк ĕмĕтсемччĕ ун пуçĕнче. Хусанти мĕнпур рабочисемпе пĕрле кĕрешме çĕкленнĕччĕ вăл. Тĕттĕм чăваш халăхĕ хушшине кăшт та пулин çутă кĕртесшĕнччĕ. Халĕ унăн çуначĕсене çапса хуçрĕç. Патша тĕрмин хăрушă стенисем хĕссе тăраççĕ ăна. Аркатса тăкĕччĕ вăл вĕсене, анчах... мĕнле? Мĕнпе? Ним тума май çуккине пула чĕри унăн сиксе тухасла тапать. Вăхăт-вăхăт – чунĕ кӳтсе çитнипе – пурнăç тăп! чарăнса ларнă пек те туйăнса каять. Анчах ку самантлăха çеç.

Халапри Даяко пек пуласси килсе кайрĕ сасартăк Тимккан. Акă, чăнах та, ун куçĕ умне ытарлă ӳкерчĕк тухса тăчĕ. Аслати авăтать, çиçĕм çиçет, çумăр çăвать. «Çынсем валли мĕн турăм-ха эпĕ?!» –аслати авăтнинчен те хăватлăрах калать пек Тимкка. Акă, вăл икĕ аллипе тытса кăкăрне икĕ енелле çурса ярать, хăйĕн хăватлă тапакан чĕрине кăларса çӳлелле çĕклет. Тĕттĕм чăваш ялĕнче ун чĕри хĕвел пекех ялкăшĕ, хĕвелтен те .вăйлăрах çутатĕ. Хĕмленсе çунакан чĕрине çӳле тытса, умри такăр мар çула яр-уççăн çутатса, чăвашсене малалла илсе кайĕ вăл хăйпе пĕрле. Çынсемшĕн тĕттĕм çула çутма панă хастар Чĕре вут-хĕлхемĕ халăха çĕклентерсе ярĕ...

Ку вăл – ĕмĕт. Тепĕр майлă та шухăшларĕ Тимкка: «Пурнăçра, тен, урăхла пулĕ. Тен,манăн халăхшăн çунакан хастар чĕрем харама кайĕ, çак тĕрмерех хур курĕ, манăçа юлĕ».

Тайăр канма ларчĕ. Анчах нумайлăха мар.

– Çук! – каллех ура çине çĕкленчĕ вăл. – Сӳнмĕ ман чĕре кăварĕ. Халиччен çынсем валли, чăнах та, сахал турăм пулсан, манăн ĕçлемеллисем малта-ха! Тĕрмерен тухсан, хăватлăн тапакан чĕремĕн

мĕнпур вăйне пĕтĕмпех халăха парăп.

Каллех ăна Максим Горький хывнă юрă сăмахĕсем аса килчĕç: «Çил улать. Кĕрлет аслати. Тăвăл! Час ак çапĕ тăвăл! Вăйлăнрах çаптăр тăвăл!»

Çав сăмахсем-çке, Горький юррисем-çке кĕрешĕве çĕкленме пулăшсаччĕç ăна. Кăйкăр çинчен хывнă юрра. чăвашла та куçарнăччĕ вăл. Çавна хавхалансах аса илсе ларчĕ: «Харсăррисен чăрсăрлăхĕ – çапла вăл пурнăç ăслăхĕ! О, харсăр Кăйкăр! Тăшмансемпе кĕрешнĕ чух юн юхтарса халран эс кайрăн... Анчах та пулĕ, çитĕ вăхăт, – эс халь юхтарнă хĕрӳ юнăн кашни тумламĕ, пурнăç тĕттĕмлĕхне çурса, вут-хĕм пек çиçĕ, çиçĕ те тем чул хастар чĕресенче çутăпала ирĕклĕхĕн вĕри вутне чĕртсе те ярĕ!»

Унтан вăл пĕтĕм чун хавалĕпе çапла каларĕ:

– Вăйлăнрах кĕрлетĕр тăвăл!

6

Тĕлĕнмелле лайăх вырăнта ларать Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Умĕнчех Сĕве юхса выртать. Хĕвел çуттине вăл юриех кунталла тапса янă пек туйăнать – шкул çинче шевле вылять, куçа йăмăхтарать.

Анлă картишне кĕрсен, хĕрлĕ чултан тунă икĕ хутлă илемлĕ çуртсем, сад пахчи, мăнаçлăн ларакан ватă хурамасем чуна илĕртеççĕ. Садра вĕçен кайăксем хаваслă юрă кĕвĕлеççĕ.

Кĕр пуçланас умĕн шкул картишĕнче ачасем уйрăмах йышлăн вара, вĕлле хурчĕсем евĕр сĕрлесе тăраççĕ. Тĕрлĕ енчен килнĕскерсем, кашниех харпăр хăйле тумланнă. Шурă, хĕрлĕ, симĕс, кăвак çитсăран е килти пиртен çĕленĕ кĕпесем тăхăннă, урисенче нумайăшсен – çăпата, хăшпĕрисен çеç – атăсемпе пушмаксем. Çутă калуш тăхăннă тирпейлĕ хĕрсем те курăнкалаççĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕнхи кунсем уяв пекех капăр. Йĕри-тавра хаваслăн калаçни-кулни илтĕнсе тăрать. Хăшпĕрисем тинех кăна килеççĕ-ха, кутамккисене хывса малтан ăçта каймаллине ыйтаççĕ. Кунти йĕркесемпе паллашма ĕлкĕрнисем вĕсене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Теприсем лашасемпех килсе чарăнаççĕ, урапиçинчен анса, никамран нимĕн ыйтмасăр, тӳрех Иван Яковлевич патне каяççĕ.

Кивĕ сăхман тăхăннă, çăпата сырнă Тимкка хăй те чăваш шкулĕнче питех те хаваслă туять. Кунта ăна апат çитереççĕ, выртса тăма вырăн пур. Куллен кун çĕнĕрен те çĕнĕ япала çинчен каласа параççĕ. Çутта тухатех вăл кунта. Чĕмпĕре вĕренме килни уншăн çав тери пысăк телей.

Яштака тирексемпе лапсăркка хурамасем айĕнче тĕрленĕ шур кĕпе, хура шăлавар, йăлтăркка кунчаллă атă тăхăннă пĕр ача утса çӳрет.

Пуçне пĕкнĕ, аллине сăхсăхнă чухнехи пек умĕнче тытса, тем пăшăлтатать хăй.

Картишĕнчи шăв–шавран уйрăлса, Тимкка çав ача енелле утрĕ. Самантлăха ăна йывăçсем хушшинчен сăнарĕ.

– Пĕлетĕп, эсĕ сăвă вулатăн, – терĕ вара Тимкка, вăрттăн итлесе тăнишĕн аван мар пек туйса.

Вĕсем паллашрĕç.

– Айта хамăр сăвă çырни çинчен никама та каламастпăр, – сĕнет Кĕçтенттин, килтен парса янă мăйăрне кĕсйинчен кăларса.

– Юрĕ, вăхăт çитмесĕр каламăпăр, – килĕшет Тимкка, юлташĕ панă тутлă мăйăра катса çинĕ май.

Часах вĕсем çирĕп туслашрĕç, шкулта пĕр партă хушшинче ларса вĕренме пуçларĕç.

Кĕçтенттин çав тери лăпкă, тӳлек кăмăллă ача. Яланах тирпейлĕ тумланса çӳрет. Вăл пĕрченлĕхе ытларах кăмăллать, нумай вулать. Ирирех тăрса ларса, шкулта урок пуçланиччен, хăш чухне –переменăсенче те, кĕнеке вулать. Тимкка вара ытти ачасемпе хутшăнса калаçма, кулма, юрлама юратать.

Яковлев шкулĕнче вăренесси Тимккана халиччен нимĕн курмасăр пурăннă çĕртен çутă çĕре тухнă пекех туйăнать. Шкул пĕтерсе хăвăртрах ыттисене çутă курма вĕрентес пархатарлă ĕмĕт тытать вăл.

Шкул библиотеки пуян. Унта кайсах тăчĕ Тимкка, вулав залĕнчен тухма та пĕлмерĕ темелле. Кунсăр пуçне, укçи-тенки питĕ хĕсĕк пулнине пăхмасăр, кирлĕ кĕнекесене хăй те туянсах пычĕ.

Çапла пикенсе вĕреннĕ вăхăтрах тăван ялĕ те час-часах киле-киле тухрĕ ун куçĕ умне. Вăл акă пĕлӳ илет, çав вăхăтра нумай-нумай ăслă ачасемех шкула çӳреймеççĕ. Кун йышши туйăмсем çине-çинех йĕкĕлтеме пуçларĕç ăна. Вĕренеслĕхре пурне те тан тăвас килет унăн.

– Тăван ялах каятăп, Шемекпе Пимĕрсел ачисене вĕрентме тытăнатăп, – ĕмĕтленчĕ Тимкка.

Хăйĕн учительне Михаил Демьяновича аса илчĕ те халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ун пекех тăрăшма сăмах пачĕ.

Çулталăк çурă сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ.Хĕллехи каникул пуçлансан, раштав уйăхĕнче, Тимкка Тăхăръял енне хăйпе пĕрле Кĕçтенттин Иванова та ертсе килчĕ.

– Иксĕмĕр пĕрле вĕренетпĕр, – терĕ ун пирки йыснăшĕпе аппăшне. – Вăл пирĕн таврари чăвашсен сăвви-юррисемпе паллашасшăн.

Икĕ çул каялла тăван мар амăшĕ – йывăр чир пуснă Настиççи – ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Унтан сасартăк Тӳре Тихăнĕ те вилсе кайрĕ. Каллех хăр-тăлăха тăрса юлнă Тимкка вара Кивĕ Мертле качча тухнă тăван аппăшĕ – Натали – патĕнче пурăнма пуçларĕ. Йыснăшĕ, Уçăп Кĕркурийĕ, унпа питĕ тарават.

Кĕçтенттин Тимккапа пĕрле чылай ялсене çитсе курчĕ. Ку енче хресченсем еплерех пурăннине пĕлесшĕн пулчĕ вăл: мĕн акаççĕ, мĕн вираççĕ, мĕн çиеççĕ, хĕл вăхăтĕнче мĕн ĕçлеççĕ. Икĕ çамрăк хавхалансах ваттисен сăмахĕсем, халапсем пухрĕç. Эльшелĕнче вăйлă туй курма тĕл килнишĕн питех те савăнчĕç.

Хĕллехи каникул вĕçленсен, Кĕркури йыснăшĕ Тимккапа юлташне Чĕмпĕре çитиех лавпа леçме кайрĕ. «Манăн лаша тытса пымалла, шăнмăп» тесе, хăй чаппан çеç тăхăнчĕ. Çамрăксем кӳршĕсенчен тупкаланă тăлăпсемпе чĕркенсе ларчĕç.

Янкăр уçă хĕл кунĕ тăрать. Сивĕ. Ялтан тухнă-тухманах Тимкка «Эх ты, зимушка-зима» юрра янраттарса ячĕ. Унтан Кĕçтенттин те юрла пуçларĕ. Çул тăршшĕпех çапла хавхаланса пычĕç çамрăксем. Хирĕç тĕл пулакан лавçăсем тĕлĕнсе пăхса ирте-ирте кайрĕç вĕсенчен.

Каникул хыççăн – каллех вĕренӳ. Пĕррехинче çапла Василий Иванович Иванов учитель класа кĕчĕ те:

– Пĕлетĕр-и эсир, ачасем, Российăра революци пуçланă, – терĕ.

– Хăçан? Ăçта? Мĕнле революци?

– Шăпах ултă кун каялла, кăрлачăн 9-мĕшĕнче, Питĕрте пуçланă вăл, – ăнлантарчĕ учитель. Унтан революци хумĕ ытти хуласене те сарăлма пуçлани çинчен пĕлтерчĕ, каçалапа тĕплĕнрех каласа пама пулчĕ.

Учитель алăкпа хуплансан, ун вырăнне Кĕçтенттин тăчĕ.

– Российăра революци пуçланнине пĕлтĕмĕр ĕнтĕ, – терĕ вăл, лăпкă пулма тăрăшса. – Халĕ эпĕ сире тепĕр çĕнĕ хыпар пĕлтересшĕн. Паян пирĕн тусăмăр Тимкка вунулттă тултарать.

– Ну?.. Чăнах-и?.. Вăт хыпарсем!.. Чăн-чăн хыпарсем!.. – хавасланса кайрĕç ачасем. Вĕсем çавăнтах Тимккана çуралнă кун ячĕпе саламлама тытăнчĕç, хăшĕсем ăна йăтса илсе, çӳлелле те çĕклесшĕн пулчĕç.

Вунулттă тултарнă ятпа Тимкка çĕнĕ хушамат-псевдоним тупни çинчен пĕлтерчĕ.

– Сывă пултăр Тайăр Тимкки!

– Революци пуçланчĕ – Тайăр Тимкки çуралчĕ, – шӳтлешрĕç ачасем.

Вĕсен шӳчĕпе кăмăллă пулчĕ Тимкка.

– Çапла, – терĕ вăл. – Вунçиччĕ çине Тайăр Тимкки пулса пусатăп. Тайăр – ман асатте хушамачĕ.

Çак кун вăл ачасем умĕнче пуçласа хăйĕн сăввисене вуласа пачĕ.

Вунçичче кайнă Тимкка ăс-тăн енчен çеç мар, – пӳ-си тĕлĕшпе те ӳсни палăрать. Каччă ĕнтĕ вăл халь. Ытла çӳлех мар пулин те, кĕрнеклĕ курăнать, сăн-пичĕ хитре, куçĕ çĕмĕрт пекех тĕм-хура, çӳçĕ çăра, тути çийĕнче тĕк мăйăх палăрать.

Сивĕ хĕл иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Çуркунне çитрĕ. Хатĕрлӳ класĕнче икĕ çул вĕренсен, К.В. Ивановпа Т.С. Семенова иккĕшне те 1905 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче, ытти вун-вун виçĕ ача шутĕнче, учительсем хатĕрлекен шкулăн пĕрремĕш класне куçарчĕç. Питĕ савăнчĕ Тимкка. Хаваслăн кулса, ăшĕнче юрă ĕнерсе çеç çӳрет вăл. Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухса учительте ĕçлес кăмăлĕ пушшех те ӳссе кайрĕ унăн.

Занятисем вĕçленсен, ачасем Атăл хĕррине пăр кайнине курма чупрĕç. Вĕсемпе пĕрле Тайăр та пурччĕ. Анчах пăр тапранман–ха. Чăнкă çыранта тумтире касса çил вĕрет. Нумай тăма шутламарĕ Тимкка, каялла шкула кайрĕ. Юлашки пăхăр укçисене пухса, çула май кĕнеке туянчĕ: А.С. Пушкин сăввисем.

Шкул садне кĕрсе тăчĕ Тайăр. Кунта лăпкă. Йывăç турачĕсем чĕрĕлме пуçланă, кăчкă кăларма хатĕрленеççĕ. Акацие, ав, симĕс сăн çапнă та ĕнтĕ. Ватă хурамасем мăнаçлăн лараççĕ. Яштака йăмрасем вăштăр-вăштăр çил вĕрнипе çӳлте тем шавлаççĕ. Шурă хурăн та кĕренрех турачĕсемпе сулкаланса йăлтăрти хĕвеле саламлать.

Юпа çинчи шăнкăрч йăвине асăрхаса пăхрĕ Тимкка. Унта пурнăç тени вăйпах тапса тăнă пек туйăнчĕ ăна. Икĕ кайăк, хĕрпе каччă пек, чĕвĕлтетсех тем калаçаççĕ, сăмсисемпе пĕр-пĕрне тивертсе «чуптăваççĕ». Унтан вĕсем ăмăртмаллах хитре юрă шăрантарма пуçларĕç. Шкулта ирттерекен концертри пекех. Шăнкăрчсем, юрласа пĕтерсен, пăр! вĕçсе хăпарчĕç те, тӳпере ярпайса ярăнса, инçетреçухалчĕç.

Садра лармалли саксем пур. Пĕр кĕтесре хĕрпе каччă калаçса тăни курăнать. Каччи çара пуçăн, хура сăхманпа, çăпата сырнă. Хĕрĕ шурă шупăр тăхăннă, çӳлĕ кунчаллă пушмакпа. Тимкка вĕсене курмăш пулчĕ. Сак çине ларчĕ те уçнă кĕнекине малалла вуларĕ.

– Ытла та лайăх çырать-çке Пушкин! Питĕ вăйлă! – хăйпе хăй калаçрĕ вăл. – Чăвашла çавăн пек хăватлă çырма пулаять-ши? Пулать те пулĕ, чăваш чĕлхи те чухăн мар вĕт-ха. Ай, савă, сăвă, пĕрре те канăç памастăн-çке эсĕ мана…

Малалла сасăпах вуларĕ вăл, кăмăлĕ çĕкленнĕçем çĕкленсе пынине туйрĕ:

Пока свободою горим,
Пока сердца для чести живы,
Мой друг, отчизне посвятим
Души прекрасные порывы!

– Халăхшăн, çуралнă çĕршывшăн пĕтĕм чуна парасси çинчен мĕнле хăватлă каланă!..

Тарăн шухăша путса, уткаласа çӳрерĕ Тимкка. «Мой друг» сăмахсенчен пуçласа икĕ йĕркине тепĕр хут, тата тепĕр хут та вуларĕ.

Сада кĕнĕ Иванов, сăвă калакан юлташне курсан, чарăнса, сăнаса тăчĕ. Урине çутă пушмак, çине тĕрленĕ шурă кĕпе тăхăннă вăл, пилĕкне сап-сарă пиçиххи çыхнă. Шупкарах питлĕ Тимкка – çăпатапа, тĕссĕр пиншакпа.

– Салам, Кĕçтенттин! – терĕ вăл, тусне асăрхаса. – Мĕн эс тăлăх пек тăратăн унта? Кил. Лар.

Вĕсем сарлаках мар сак çине ларчĕç.

– Сывлăш епле уçă та канлĕ кунта, – хавхаланса каларĕ Тамкка. – Ирĕксĕрех музăсем çинчен шухăшлас килет.

– Пушкина вулатăн? – ыйтрĕ Иванов.

– Пушкина вулатăн та сăвă кĕвĕлетĕп, сăвă кĕвĕлетĕп те Пушкина вулатăп, – йăл кулчĕ Тимкка.

– Эпĕ ак Лермонтова кăмăлларăм, – кĕнекине кăтартрĕ Кĕçтенттин. – Чăвашла куçарасчĕ...

Тимкка ыйтнипе Иванов хăйĕн сăввисене вулама килĕшрĕ. Вĕсене пурне те пăхмасăр калать вăл. Вăхăт-вăхăт çеç, такăннă чух, хут çине куç ывăтса илет.

– Сан сăввусем, Кĕçтенттин, мана питĕ килĕшеççĕ, – терĕ Тимкка, ним пытармасăр. – Çав чипер хĕр çинчен поэму. Мĕнлерех, çыратăн-и эсĕ ăна?

– Пуçламăш пур ĕнтĕ. Вĕçĕ те пулĕ тетĕп.

Тимкка юлташĕн сăввине аса илме тăрăшрĕ:

– «Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса». Çапла пуçланатчĕ-и-ха?

– Çапла, Тимкка, çуркуннепе пуçланать. Итле, эппин. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса, Силпи чăваш ялĕнче юр ирĕлчĕ васкаса...

– Тусем-сăртсем хуп-хура, – сăвва тытса илсе, авторне пӳлсе, малалла вуларĕ Тимкка, – юрĕ кайса пĕтнĕрен, тухать курăк çăп-çăра хĕвел хытă хĕртнĕрен... Сан сăввусем яка тухаççĕ, Кĕçтенттин. Манăн кăнттамрах.

– Ун вырăнне санăн чĕнĕвĕпе вăйлă. Урăхла каласан, йыхравлă.

Сад хĕррипе иртсе тыракан Яковлев, чарăнса, икĕ çамрăк калаçнине шăппăн итлесе тăчĕ. Вăрăмрах çăмăл пальто тăхăннă вăл, пуçĕнче хура шлепке, уринче шĕвĕр пуçлă çутă пушмак. Аллине якалса кайнă туя тытнă.

– Тимкка, итле, – терĕ Иванов хавассăн. – Нарспи çинчен çырмалли поэмăра манăн акă мĕнлерех ярăм пулать. – Куçĕ унăн хĕмленсе тăрать, хăй инçете-инçете пăхнă. – Ешĕл курăк хушшинче сап-сарă чечен ӳсет, Аслă Силпи ялĕнче Нарспи ятлă хĕр ӳсет. Пичĕ-куçĕ пит хӳхем, хирти сарă чечек тек, икĕ куçĕ хуп-хура, икĕ хура шăрçа пек. Явăнаççĕ хыçалта çивĕт вĕçĕ кăтрисем, утса-утса пынă чух шăнкăртатать тенкисем.

Вăрттăн итлесе тăракан Яковлев чăтаймарĕ, çамрăксем патне хăвăрттăн утса пычĕ.

– Чăваш чĕлхи, пăх-ха, епле хăватлă янăрать, – терĕ вăл, сăвăçа çурăмĕнчен çупăрласа. Кăмăлне хытарма тăрăшрĕ, çапах та хумханнине пытараймарĕ.

– Иван Яковлевич, итлесемĕр. – Шкул пуçлăхĕ мухтанипе савăннăскер, вара хавхалансах вуларĕ Иванов сăввине малалла:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать...

Тимкка Яковлева куçĕнчен пăхрĕ. Тăван халăха çутта кăларассишĕн пĕтĕм чунне паракан çак çын пушшех те пысăккăн курăнать ăна. «Лайăх çын Иван Яковлевич. – шухăшларĕ Тимкка. – Сăвăсене те хаклама пĕлет. Хамăн çырнисене те ăна кăтартсан пăсмĕччĕ».

Пĕтĕмпех лăпланса çитнĕ Яковлев пĕрре Кĕçтенттин, тепре Тимкка çине пăхса илчĕ.

– Часах вырăсла кĕнекесене чăвашла куçарма тытăнатпăр, – терĕ вăл. – Сана, Иванов, тăлмачă тăвасшăн эпĕ.

– Пултарайăп-ши?

– Палтаратăн, Иванов, пултаратăп, – шантарса каларĕ Яковлев, унтан Тимкка енелле çаврăнчĕ. – Семеновăн сăввисем вара хăй пекех чăрсăр.

«Мĕнле пурне те пĕлме ĕлкерет вăл?» – шухăшларĕ Тимкка. Хытă сăмах каласа ярасран шикленсе, чĕнмесĕр тăчĕ. «Çапла-и? Мĕншĕн чĕнместĕн?» – тесен çеç, кулам пекки туса, çепĕççĕн хуравларĕ:

– Ирĕклĕхе кăна чĕнесшĕн эпĕ, Иван Яковлевич...

– Вăн, куртăн-и? – кăмăлсăрланчĕ Яковлев. – Хальхи пурнăçтăкăскă-им, тăвăр-им вара сана?

«Калама çук тăвăр, тӳсме çук тăкăскă!» – тесе каласшăнччĕ Тимкка, каламарĕ, «Тăкăскăрах çав», – тесе çеç хучĕ.

– Эсĕ, Семенов, путлĕнрех калаç! – хытарса хуравларĕ Яковлев.

– Иван Яковлевич, Семенов ашшĕ-амăшсĕр асап тӳссе ӳснĕ, çавăнпа çапларах каласать, – юлташĕн хутне кĕме тăрăшрĕ Иванов.

– Пĕлетĕп эпĕ, – хальхинче шкул пуçлăхĕ Тимкка çине хĕрхенсерех пăхрĕ. – Тăлăх ӳснине те, Пимĕрсел пупне хирĕç тăнине, Кӳрен пупне кӳрентернине те пĕлетĕп. Веçех пĕлетĕп.

Яковлев Тимккана татах тем каласшăнччĕ, çав вăхăтра сада ытти ачасем шавласа килсе кĕчĕç, вĕрентекене хисеплесе пуç тайрĕç, сывлăх сунчĕç.

– Килĕрех, килĕрех, ачасем, – терĕ Яковлев хаваслăн, пăчăраллă сехечĕ çине пăхса илчĕ. – Халĕ уроксем вĕçленнĕ. Уçăлмалла.

– Пикенсех вĕреннĕ хыççăн кăшт канса илес терĕмĕр çав, Иван Яковлевич. – Вĕренекенсем хăйсен учительне юратса, хисеплесе йĕри-тавра сăрса илчĕç. – Сирĕн канашăрсене эпир нихçан та манмăпăр.

Хăшĕсем ăна хăйĕн ашшĕ вырăннех хураççĕ иккен.Çакна ним пытармасăр, уççăнах калаççĕ.

– Çитĕ мухтаса, – ачасене чарасшăн пулчĕ Яковлев. – Капла эсир мана пĕлĕтех хăпартса ярăр тата. Мана мухтама кирлĕ мар. Ун вырăнне эсир хытă тăрăшса вĕренĕр. Çакă вара маншăн питĕ пысăк савăнăç пулĕччĕ.

7

Çу уйăхĕ шăрăх килчĕ. Уй-хире тухсан, ытла аплах мар та, хулара вара чăтма çук пăчă. Тӳпери хĕвелĕ тăпрана пĕçерекен тăвать, çĕнĕ хапха çинчи тураткуçсенчен сухăр тумлатать, илемлĕ чечексенех пуçĕсене çĕрелле пĕктерет.

Тимкка мĕн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ юлташĕ – Кĕçтен патне кайса килме шутларĕ. Тусĕ халĕ Чĕмпĕрти пĕр купса патĕнче пулăçра тăрать, ыттисемпе пĕрле Атăл хĕрринчи пĕчĕк пӳртре пурăнать. Ăна пӳрт теме те май çук: питĕ лутра, урайĕ çĕр... Шалта çав тари тăвăр, сывлама сывлăш çитмест, йывăр шăршă пуçа хĕсет. Çуллахи шăрăхра тин «хваттер» кăшт анлăланать – пулăçсенчен чылайăшĕ çыран хĕррине ӳпĕнтернĕ пысăк кимĕ айĕнче пурăнма пуçлать.

Темиçе хут та пулса курнă Тимкка пулăçсем патĕнче. Хальхинче пĕччен мар, юлташпа килчĕ.

– Чăваш шкулĕнче пĕрле вĕренетпĕр, – терĕ вăл, Кĕçтене хăйĕн çĕнĕ тусĕпе паллаштарса. – Ячĕ те унăн санăнни пекех, янăрама çеç

кăшт урăхларах янăрать – Кĕçтенттин.

Аташлă çамрăксен сăмах часах килĕшрĕ.

– Чăвашсем тата пур-и кунта? – ыйтрĕ Иванов, чылайччен калаçса ларнă хыççăн.

– Кунта эпĕ çеç, анатарахри промыслара тата иккĕн ĕçлеççĕ, – хуравларĕ Кĕçтен.

– Хăш енчисем-ши вĕсем?

– Улхаш енчисем, ашшĕпе ывăлĕ, ялти выçлăхран тарсакилнĕ.

Ивановăн аташĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлес килчĕ, çавăнпа ыйту хыççăн ыйту пачĕ вăл.

– Эпĕ те, Тимкка пекех, чухăн хресчен çемйинче çуралнă, – каласа кăтартма пуçларĕ Кĕçтен. – Хура пӳртре пурăнаттăмăр. Вучах урай варринчеччĕ. Эпир, пĕчĕк ачасем, хуран тавра кĕпĕрленсе, тĕтĕмне чыхăна-чыхăна лараттăмăр, куçа та тĕтĕм çиетчĕ...

– Ĕç йывăр мар-и? – кăсăкланчĕ çĕнĕ тус.

– Çăмăлах мар, Кĕçтенттин, – хуравларĕ Кĕçтен; сăмахĕсене шухăшласа, васкамасăр каларĕ. – Шыва май кимĕпе юхса анса, Атăла çилĕм-сĕреке пăрахатпăр. Унтан, вĕсене туртса кăларса, пулла баржа çине тиетпĕр те çав пысăк кимме юхăма хирĕç хамăр стана çитиччен сĕтĕретпĕр. Çыран хĕрринчи вак чулсем çинчен çурран утса пыратпăр.

– Кимĕ сĕтĕретĕр, хăвăр «Дубинушка» юрра юрлатăр, çапла-и? – сăмах хушрĕ Тимкка.

– Çапла. Юрăсăр юрамасть. Вăл çапах та вăй хушать.

Çав вăхăтра Иванов шалти кĕсйинчен хут кăларчĕ.

– Акă, – терĕ, ăна Кĕçтен енелле тăсса, – çав юрра эпĕ чăвашла куçартăм. Кунта килессине пĕлсе, çĕркаç аппалантăм.

Кĕçтен малтан ăшĕнче çеç вуларĕ, унтан «Эй, ухнем!» кĕввипе юрлама тытăнчĕ:

Юрăсем нумай илтнĕ эп хам çĕршывра,
Сăвăç мар, усал хуйхă çинчен вăл.
Çавсенчен пĕр юрри тăрса юлчĕ пуçра
Ĕçлекен хура халăх юрри вăл.
Эх, чукмарăм та, ух тер!
Эх, ешĕлĕм те хăех кайĕ...

Темиçен пысăк кимме, шывран сĕтĕрсе кăларса, юпаран кăкаратчĕç. Чăвашла юрра илтсен, пуçĕсене Кĕçтен енелле çавăрчĕç вĕсем.

– Эпир рабочисемпе калаçса пăхасшăнччĕ, – терĕ Тимкка. – Асли кам сирĕн кунта?

– Ак, хура сухалли, – пĕлтерчĕ Кĕçтен.

«Студентсем килнĕ, вĕсем рабочисемпе калаçасшăн» тенине

илтсенех, асли бурлаксене: «Шабаш, ребята!» – терĕ. Ку ĕнтĕ пулăçсен чĕлхипе ĕçлеме пурте чарăнмалла тенине пĕлтерет.

Пулăçсен тепĕр ушкăнĕ, сĕрекесене сăмалапа çыпăçтарса, çĕнĕрен çилĕм тăватчĕ. Хăйсем пĕтĕмпех сăмала айне путнă, хуп-хура. Асли сăмахне илтсен, вĕсем самантрах ĕçне пăрахрĕç.Кимĕ кăкаракансем те, пулă вăлчи кăларакансем те пĕр çĕре пухăнчĕç. Кĕçех Тимккапа юлташĕ тавра ункăланса тăчĕç. Ыйтусем параççĕ. Студентсем ытла çамрăкран, хăшпĕрисем иккĕленсе пăхаççĕ. Калаçасса Тимкка нумайрах калаçрĕ. Иванов хутран-ситрен çеç сăмах хушса пычĕ, рабочисем калаçнине тимлерĕ.

– Эсир пурсăр та купса валли ĕçлетĕр, – терĕ Тимкка, ыйтусем пама чарăнсан. – Хăвăр сăмала айне путнă пулин те, тăранмалăх укçа ĕçлесе илейместĕр. Çитĕ вĕсемшĕн тартăкмашкăн. Çитĕ вĕсене юна ĕçтерме...

– Тĕрĕс! Тĕрĕс! – илтĕнчĕç сасăсем.

Халĕ ĕнтĕ маларах иккĕленсе тăнисем те Тимкка сăмахне тимлесех итлеççĕ. Ăна ырласа, хаваслăн шавлакалани те пулчĕ.

– Ку хакпа ĕçлеме чарăнăр, хуçаран ĕç укçи ӳстерме ыйтăр, – малалла калаçрĕ Тимкка. – Çакăн пирки ытти рабочисене те калăр. Хамăр мăйри хăмăта хывса пăрахма пирĕн пурте пĕрле пĕрлешмелле...

– Вăт ку чăн-чăн çын, пирĕншĕн, рабочисемшĕн, тăрăшать, – калаçкаларĕç пулăçсем.

Ăнăçлă сăмахланинчен Тимкка хăй те тĕлĕнчĕ. Вĕренекенсен пухăвĕсенче те калаçнă вăл, сцена çине тухса юрланă, ташланă, сăвă каланă, анчах хăйне çапла ыррăн-ыррăн туйман. Паян кăмăллă пулчĕ. Ĕçлекенре чăнах та вăй пуррине ытларах та ытларах туйма пуçларĕ. Ялти учителе Демьянов вулаттарнă «Манифестра» пролетариата мĕншĕн çав тери пысăк хак панине ăнланса илме тăрăшрĕ.

Тата кăшт калаçкаласа ларсан, Тимкка тăчĕ, каймалли çинчен пĕлтерчĕ. Вĕсене Кĕçтен ăсатса ячĕ.

– Эсĕ, Тимкка, пирĕн бурлаксене питĕ килĕшнĕ, – терĕ вăл тусне хавассăн. – Чăн-чăн студент-агитатор теççĕ сана.

– Çаплах калаççĕ-и?

– Çаплах калаççĕ.

– Маншăн ку пысăк чыс.

Тимкка савăнăçлăн кулса илчĕ. Унăн икĕ рет шурă шăлĕсем илемлĕн курăнчĕç. Çавна май сулахай питçăмарти çинчи хура тĕвви те, турпаллийĕ, тăсăлса пысăкланнă пек туйăнчĕ.

– Ыранах бастовкă тăватпăр, – пĕлтерчĕ Кĕçтен. – Çапла килĕшрĕмĕр. Хуçаран ĕç укçине ӳстерме ыйтатпăр.

8

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсе çитеспе, ачасем каникула каяс умĕн, Иван Яковлевич литературăпа интересленекенсене пухма шутларĕ. Тĕллевне тӳрех каларĕ: тепĕр виçĕ çултан Чăваш шкулĕ хĕрĕх çул тултарать, çав вăхăт тĕлне илемлĕ литература кĕнеки кăларасшăн вăл.

Çамрăк çыравçăсем пысăках мар пӳлĕме палăртнинчен çур сехет маларах пырса ларчĕç. Тимккапа Иванов чӳрече патĕнче пĕр-пĕрин сăввисене вулаççĕ. Ыттисем те хăйсен япалисене вулама хатĕрленеççĕ. Пӳлĕме Иван Юркинпа Тăванялсем Сергей хĕрӳллĕн калаçса килсе кĕчĕç. Юркин, Тимккана курсан, пырса алă пачĕ.

– Ялта мĕнле пурăнаççĕ? Пӳркелĕнче пулкалатăн-и? – çине-çинех ыйту пачĕ вăл. – Эпĕ çурла уйăхĕнче çитсе курасшăн-ха. Пĕлетĕн-и, эпĕ те, сан пекех, Пимĕрсел ялĕнчи пуçламăш шкула пĕтернĕ вĕт. Демьянов мĕнле пурăнать унта? – Унтан хăлхаран çеç пăшăлтатса:

– Çаплах Маркса вĕренет-и? – терĕ.

– Вĕренет, – хытах каларĕ Тимкка.

Юркин, ун-кун пăхкаласа илчĕ те, каллех Сергей Сорокинпа калаçма тытăнчĕ.

Эльшелĕнче ĕçлекен Григорий Тимофеев та килнĕ. Тимкка ун пирки: «Тăхăръял çинчен кĕнеке çырать», – тенине илтнĕччĕ.

Чи хыçалти сĕтел хушшинче Михаил Акимов çумĕнчи юлташне тем каласа парать, хăй вара каçса кайсах кулать.

Часах Яковлев та килсе çитрĕ. Пӳлĕм алăкне хупма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, ун патне виçĕ-тăватă хĕрача пырса тăчĕ.

– Пире кĕме юрать-и, Иван Яковлевич? – ыйтрĕ вĕсенчен пĕри.

– Тархасшăн, Марфа, –çепĕççĕн каларĕ Яковлев.

– Сăвă çырмастпăр пулсан та-и?

– Сăвă çырмастăр пулсан та, – терĕ Яковлев, хĕрачасене çул пачĕ, лешсем пӳлĕме кĕрсен, çапла хушса хучĕ. – Кунта килме шутланă пулсан, сăвăсем çыратăрах ĕнтĕ, каламастăр çеç. Е çырма шутлатăр. Çырăр, çырăр! Чăвашсен хĕрарăм-çыравçисем те пулмалла.

Малтан Тимофеев сăмах илчĕ. Чĕмпĕрти шкултан учитель пулса тухнăранпа хăй мĕн-мĕн туни çинчен каласа пачĕ. Вăл Эльшелĕнче тăхăр çул хушши пурăнса, халăх юрри-сăввисене, халлап-юмахĕсене, йăла йĕркисене сăнанă, «Тăхăръял» ятлă этнографиллĕ пысăк очерк çырнă. Çавна Тимофеев кĕнекене кĕртме сĕнчĕ. Анчах Яковлев унпа урăх çĕрте усă курасшăн. Мĕншĕн?

– Мĕншĕн тесен палăртнă кĕнекере илемлĕ литература произведенийĕсем пулмалла, – тĕплĕн ăнлантарма тăрăшрĕ Яковлев. – Эсир пухнă юрă-сăвăсене «Образцы мотивов чувашских народных

песен и тексты к ним» ятлӑ кӗнекере пичетлӗпӗр.

Илемлӗ литература кӗнекине Яковлев «Чӑваш халлапӗсемпе юмахӗсем» е «Чӑваш халлапӗсем» тесе ят парасшӑн иккен.

– Иванов поэма хатӗрлет, – пӗлтерчӗ Иван Яковлевич. – Тен, халӗ пӗр-пӗр сыпӑкне вуласа паратӑн?

Кӗҫтенттин хӗрелсе кайрӗ, Яковлев патне васкамасӑр тухса тӑчӗ. Малтан маччаналла, унтан урайне пӑхса илчӗ. Вара, куҫӗсемпе Тимкка ҫинче чарӑнса, вулама тытӑнчӗ:

Шавлать, кашлать сӗм вӑрман,
Вӗҫӗ хӗрри курӑнмасть...

Ҫак сӑвӑ пирки Иванов, Атӑл хӗрринчен, бурлаксем патӗнчен таврӑнсан, Тайӑра ҫапла каласаччӗ: «Революци хӗмӗпех ӗнтӗ эпӗ сӗм вӑрман ҫинчен япӑх мар сӑвӑ ҫыртӑм. Ӑна пӗр улӑштармасӑрах «Нарспи» поэмӑна кӗртме пулать».

Сӑмахне вӗҫлерӗ те Иванов хӑй вырӑнне ларма васкарӗ. Ӑна пурте тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗҫ.

– Юлашки куплетне татах та вӑйлатмалла санӑн, – пӑшӑлтатрӗ Тимкка. – Революци шухӑшне ытларах кӗртмелле.

Иванов нимех те чӗнмерӗ.

Хатӗрлекен ҫав кӗнекене сӑвӑлла юмахсем те, Михаил Федоровӑн чӗрӗк ӗмӗр хушши халӑхра алҫыравӗ халлӗн ҫӳрекен «Арҫури» балладине те кӗртесси пирки каларӗ Яковлев.

Меллӗ вӑхӑт тупса, Юркин чӑвашла хаҫат уҫасси пирки сӑмах тапратрӗ.

– Эсир пӗлетӗр-и, – терӗ вӑл, ура ҫине сиксе тӑрса, – Хусанта халӗ чӑвашла хаҫат кӑларасси пирки сӑмах-юмах ҫӳрет. Ӑна духовнӑй семинарин ҫамрӑк преподавателӗ Никольский хускатса янӑ.

Ыйту Яковлева та тиврӗ, анчах вӑл нимех те шарламарӗ. Ыттисем: «Пӗлместпӗр», – терӗҫ, тӗплӗнрех каласа пама ыйтрӗҫ. Юркин хӑй те такамран ҫеҫ илтнӗ-мӗн, тӗплӗн пӗлеймест.

Пуху вӗҫленсен, Яковлев сывпуллашса, пӳлӗмрен тухрӗ. Коридорта такампа калаҫма пуҫлани илтӗнчӗ. Тимкка чухларӗ: Кӗҫтен сасси ку.

– Чим-ха, чим-ха, – терӗ Яковлев, шухӑша кайса, – санӑн хушамат – Петров? Ӑҫтан килсе тухрӑн? Килтех пурӑнатӑн-и? Эсӗ Семеновпа пӗр ялтанччӗ пулас-ха? Ҫур ҫул вӗренсен пирӗн шкула пӑрахрӑн.

– Эпӗ халӗ, Иван Яковлевич, пулӑ промыслинче ӗҫлетӗп. Рабочи.

– Семенов патне килтӗн-и?.. Чим-ха, хаҫатра пулӑҫсен пӑлханӑвӗ ҫинчен ҫырнӑччӗ, эсир мар-и вӑл? Федоров хуҫа патӗнче ӗҫлетӗн-и?

– Ҫапла.

Яковлев урăх калаçмарĕ, шухăша путса, килнелле утрĕ.

Тата тепĕр икĕ кунтан юлташĕ яла каяссине пĕлет Кĕçтен. Çавăнпа пиччĕшĕпе йăмăкĕ валли парнелĕхсем парса яма илсе килнĕ вăл: типĕтнĕ пулă, кĕпелĕх çитсă,икĕ кĕрепенкке пек сахăр.

– Юрĕ, леççе паратăпах, Кĕçтен тусăм, – терĕ Тимкка. – Пимĕрселне каймалли «çăмăл» пур-ха манăн.

Палăртнă кун, Тимккана илме, Уçăп Кĕркурийĕ лавпах килчĕ. Шкул картишне кĕрсе чарăнса, лашине апат пачĕ, шăварчĕ. Хăй те апатланчĕ: çулă пулăпа çăкăр çирĕ, кухньăна кайса крушкăпа вĕри шыв илсе килчĕ, вĕре-вĕре сыпрĕ.

Кайма тесе урапа кӳлсе тăнă вăхăтра Кĕçтенттин Иванов пырса алă пачĕ.

– Атя, пĕрле каятпăр, – терĕ ăна Осипов. – Пирĕн ялта эсĕ хĕлле пултăн. Çулла вара пирĕн тавралăх пушшех илемлĕ.

– Халĕ киле васкамалла. Эпĕ хам Тимккана Слакпуçне чĕнсеттĕм. Пыраймастăп, тет, ав, – кăмăллăн калаçрĕ Иванов. – Мертлĕ çыннисене манран салам кала. Çаплах пӳркелсене, эльшелсене, пимĕрселсене те.

– Юрĕ, калăп.

Уçăп Кĕркурийĕ шухăша кайрĕ, çур çул каялла, раштав уйăхĕнче, Тимкка хăйпе пĕрле çак юлташне яла ертсе пынине аса илчĕ.

– Кайрăмăр-и, йысна?

Иванов çине пăхса, унăн ырă ĕçĕсене аса илсе тарăн шухăша путнă Кĕркури пултăрĕн сăмахне илтмерĕ. Чылай вăхăт иртсен хăй ыйтрĕ:

– Мĕнле, Тимкка, каятпăр-и?

Уçăп Кĕркурийĕ, тилхепене тытса, лашана утма хистерĕ. Карташĕпе иртсе, хапха патнех çитрĕç ĕнтĕ вĕсем. «Килнĕ-килнĕ, Иван Яковлевич патне те кĕрсе тухам-ха», – тесе лашине чарчĕ Кĕркури.

Ытти çынсем те килĕсене кайма васкамаççĕ-ха. Шкул картишĕнче ялтан килнĕ лавсем нумай. Чылайăшĕ лашине тăварнă та урапа çине утă панă е лаша пуçне сĕлĕ тултарнă пĕчĕк хутаç çакса янă. Иван Яковлевичпа курса калаçмасăр пĕри те каясшăн мар. Шкул килкарти пасар пекех кĕрлесе тăрать.

Яковлев патĕнчен кăмăлсăр килчĕ Кĕркури. Хуларан тухиччен Тимккапа пĕр сăмах та калаçмарĕ. Вăхăт-вăхăтăн пултăрне вăрçса тăкасси те килчĕ унăн. Уçă уя тухсан, кăмăлĕ уçăлчĕ. Хаваслăн калаçма тытăнчĕ, хулара вăхăта мĕнле ирттерни çинчен ыйтса пĕлчĕ.

– Халĕ ялта та пăлханаççĕ, – терĕ, пултăрĕ хулара ĕçлекенсен забастовкисем çинчен каласа парсан.

– Халăх ĕмĕрхи ыйхăран вăранать, – çĕкленсе-хавасланса кайрĕ Тимкка. – Халĕ Раççейре революци çулăмĕ хăватлăн ялкăшать.

Уçăп Кĕркурийĕн ыйтса пĕлмеллисем татах та пулчĕç. Çапла вара çул та сисĕнмесĕрех кĕскелсе пычĕ.

Демьянов вĕсем таврăнасса Мертлĕре куç пекех кĕтсе тăратчĕ ĕнтĕ.

– Аван-и, тусăм? – терĕ вăл, Тимккана çурăмĕнчен çупăрласа, – Курманни чылай пулать. Епле ӳссе-чиперленсе кайнă эсĕ! Палламалла мар.

Учитель хăй те палăрмаллах улшăннă. Çирĕпленнĕ. Бакенбардне хырса пăрахнă та хитре тути çине пысăк мар мăйăх ӳстерсе янă.

Вĕсем çав кунах ялсене тухса кайрĕç.

Каникул вăхăчĕ ăнăçлă пуçланнишĕн савăнчĕ Тимкка. Икĕ-виçĕ эрнерех вăл нумай ĕç тума ĕлкĕрчĕ. Çырусем çырчĕ. Кĕркури пĕлмен вăрттăн ĕçпе Пăвана кайса килчĕ. Сӳнтĕк тутарĕсем патне çитрĕ. Тăхăръял таврашĕнче пулман кĕтес те юлмарĕ вара.

Çав вăхăтрах йыснăшне хуçалăхра нумай пулăшрĕ вăл: хыт суха турĕ, утă çулчĕ, вăрманта вутă хатĕрлерĕ...

ТĂВАТТĂМĔШ СЫПĂК

1

Тимĕрленĕ алăк «куçĕ» витĕр чылайччен пăхса тăчĕ тĕрме хуралçи.

Тайăр Тимкки сăвă çырать. Ун аллинче пĕчĕк кăранташ, умĕнче ĕнер типĕ пулă чăркаса панă сарă хут. Çырать-çырать те вăл ура çине сиксе тăрать, пĕчĕк камарăра алăкăн-тĕпелĕн утса çӳрет, унтан каллех хăвăрт ларса çырма пикенет.

Хуралçă Малинин патне пĕлтерме чупрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, вĕсем иккĕш Тайăр пӳлĕмне вăркăнса кĕрсе тăчĕç.

– Вырăнтан ан хускал! – кăшкăрчĕ Малинин.

Вăл хушнă тăрăх тĕрме хуралçи пӳлĕме ухтарма тытăнчĕ. Матрац айĕнчен сарă, кăвак, шурă хут листисем чылай тупрĕ.

– Сăвă çыратăн?! – хут листисене аллине тытрĕ ротмистр, поэт çине йĕрĕнсе пăхрĕ. – Халех тупса пар хăвăн мĕнпур çырнисене!

Тайăр хĕвĕнче Марусьăна памалли шифрланă çыру пурччĕ. «Çавна илме пуçласан, çăвара хыпса çăтса яратăп», – тесе тăчĕ вăл тĕрме хуралçи хăйне йĕри-тавра хыпашланă чухне. Çырăва тупаймарĕç.

Малинин хаваслансах тухса кайрĕ Тайăр пӳлĕмĕнчен. Вырăсла çырнă хутсене пĕтĕмпех хăй патне илчĕ. Чăвашла сăвăсене куçарма

Ашмарина парасшăнччĕ, анчах лешĕ, çуллахи каникул тесе, хуларан яла канма кайнă иккен.

Тимкка сăввисене вырăсла куçарма Анчиков илчĕ.

Малтанхи вăхăтра Тайăр хăйне тĕрмере çав тери хытă тытни, çырма та ирĕк паманни çинчен «Хыпар» урлă пĕтĕм чăваш халăхне пĕлтересшĕнччĕ. Халăхра хŭтĕ тупасшăнччĕ вăл. Иртнĕ тĕлпулура Маруся ăна чăвашла хаçат тухма чарăнни çинчен пĕлтерчĕ.

«Халĕ тухать-ши ĕнтĕ хаçат? – шухăшларĕ Тимкка. – Нимех те пĕлме çук-çке çак тĕрме шăтăкĕнче. Çапах та, «Хыпар» редакцийĕнче ĕçлени маншăн чăн-чăн институт пулчĕ».

Унтан вăл «Хыпар» епле вăрахăн çуралнине аса илчĕ. «Хаçата ăна хупма çеç çăмăл, уçма çав тери йывăр», – терĕ вара, ассăн сывласа.

Чăвашла хаçат тăвассишĕн çунса çŭрекен Николай Васильевич Никольский 1905 çулхи декабрь вĕçĕнче Хусан губернаторĕ патне тăваттăмĕш хут çапла ыйтса çырчĕ: «Покорнейше прошу, Ваше превосходительство, разрешить мне издавать газету на чувашском языке под заглавием «Хыпар» (Весть)».

«Кирек мĕн те йывăрпа çуралать, тем чуль асап тŭсме тивет, ăнсăртран ним те пулмасть, – шухăшларĕ Никольский чăваш хаçачĕ пирки. – Мĕн чухлĕ вăй, ăс-хакăл, вăхăт кирлĕ тата?!»

Чăваш алфавитне тунăранпа вăтăр çул ытла иртнĕ ĕнтĕ, унтанпа тăван чĕлхепе вулама кĕнекесем те чылай кăларнă, анчах чăвашла хаçат халиччен пичетленсе тухни пулман-ха.

«Кирек мĕн те вăхăтсăр çуралмасть, – шухăшне малалла тăсрĕ Никольский, – çуралсан та виле пулать ун пекки. Калăпăр, вăтар çул каялла хаçат кăларакан мар, вулакан та пулман темелле. Халĕ – пур. Çаплах халĕ пичет ирĕклĕхне кăшт çемçетни те пулăшать. Ара, иртнĕ хĕлле пуçланнă революци патша тытăмне вăйлах пырса çапрĕ-çке».

Çĕнĕ çул умĕн, декабрĕн юлашки кунĕсенчен пĕринче, Наколай Васильевич питĕ хаваслă хыпар илсе килчĕ: ăна чăвашла хаçат кăларма ирĕк панă.

– Савăн, Тимкка! – терĕ вăл, питĕ хĕпĕртенĕскер. – Çĕнĕ çултан пуçласа хаçат кăларма тытăнатпăр. Каялла Чĕмпĕре каясси пирки ан та шутла ĕнтĕ.

1906 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче Н.В. Никольский «Хыпар» хаçат кăларма юрани çинчен пĕлтерекен свидетельство илчĕ.

Вăхăт иумай та иртмерĕ, редактор хаçатра ĕçлеме чĕнсе янă тăрăх, Чĕмпĕрте вĕреннĕ Михаил Акимовпа Ефим Трофимов килсе

çитрĕç.

– Астăвăр, тусăмсем, – терĕ Никольский çамрăксене. – Асăрханса ĕçлĕр. Политикăран аяккарах тăма тăрăшăр, мĕншĕн тесен мана: «Политика ыйтăвĕсемпе çырнă статьясене пичетлетĕр пулсан, пирвайхи номер тухсассăнах хаçата хупатпăр», – тесе асăрхаттарчĕç.

– Юрĕ, асăрханăпăр, Николай Васильевич, – тупа тунă пекех каларĕ Тимкка. – Хаçата çуралнă-çуралман вĕлерес марччĕ.

Вăл хавасланса, çĕкленсе ĕçлеме пуçларĕ. Хусана нумай пулмасть килнĕ чăваш ачи Василий Волков саспаллисене хăвăрт пухаймасть-ха. Халлĕхе унран усси вырăнне чăрмавĕ çеç. Çапах та Тимкка тиркешмест, вăхăт хĕсĕккине пăхмасăр, вăл ăна тăтăшах кăтартса, вĕрентсе пырать. Хăй те çакнашкал пуçланă-çке.

Ун вырăнне вара «Хыпар» редакцине Маруся нумай пулăшать. Ют чĕлхе тесе, Тимкка ăна малтан пĕчĕкрех материалсене кăна пама тăрăшрĕ, пухнине тимлĕн вуласа, тĕрĕслесе пычĕ. Маруся чăвашла чип-чиперех пухни палăрчĕ. Йăнăшсем çукпа пĕрех.

Тимкка аллинче пысăк статья, вунă страница та ытла. Хăвăрттăн ĕçлет вăл. Пухать-пухать те, тĕлĕ-тĕлĕпе чарăнса тăрсах шухăша путать. «Ара, редактор пире политикăран аяккарах тăма хушсаччĕ-çке, сыхланас пулать, тесеччĕ, – тĕлĕнсе илет Тимкка, – хăй çавăнтах акă мĕнле пуплев наборлаттарать: «Патшалăха пĕр çын тытса тăрасси пĕттĕр!»

Çук, ку начар мар-ха, ку аван. Малашне те çапла пултăрччĕ. Вăл, пушшех хавхаланнăскер, тата хăвăртраххăн тухса каять: «Пĕтĕм улпут çĕрĕсем, хысна çĕрĕ пурте ĕçлекен халăха пултăр. Çĕре никам та алăпа туман, çавăнпа ăна никам та йышăнма пултараймасть... Пĕтĕм Россия çĕрĕ хура халăха пулмалла. Кам çĕре хăй аллипе, хăй килйышпе, тара тытмасăр, сухалать – çĕр çавна пулмалла».

Кун хыççăн рабочисем пирки калани патне çитрĕ Тимкка. «Хулара ĕçлесе пурăнакансене пурне те: 1) кунне сакăр сехет ĕçлемелле, кашни вырсарникун канмалла, 2) ĕçленĕшĕн лайăх шалу тӳлесе çынсем пек пурăнмалла тăвас пулать», – тенĕ унта.

– Çапла, политикăран аяккарах тăратпăр иккен, – куçĕпе çеç кулса илчĕ Тимкка. – Политика айккинче тăма май çук çав!

«Хыпарăн» пĕрремĕш номерĕ хатĕр ĕнтĕ. Ăна пин те пилĕкçĕр экземпляр пичетлерĕç. Наборщиксемпе редакци сотрудникĕсем хаçата хĕрсе кайсах ялсене ярса пама хатĕрлеççĕ, адрессем çыпăçтараççĕ.

Халь çеç пичетленĕ хаçатран темле çĕнĕ шăршă кĕрет. Вĕр-çĕнĕ шăршă. Тимкка чăтаймарĕ, çыхса хунă тĕркене йăтса илчĕ те ытакласах

чуптурĕ.

– Юратнă халăхăм, – шăппăн та чĕтревлĕн пăшăлтатрĕ вăл. – Эсĕ те тăван чĕлхепе хаçат вулама пуçлатăн иккен.

Хаçат çыххисене хатĕрлесе çитерсен, редакцире ĕçлекенсем, тиипографипе юнашар иртсе каякан трамвай çине ларса, вĕсене почтăна леçсе пачĕç.

– Паллă кун паян пирĕн, ăна уявлас пулать, – терĕ Никольский, сотрудникĕсем çине ăшшăн пăхса. Вăл вара вĕсене Пĕчĕк Проломнăй урамри Назарыч хуçан ресторанне ертсе кайрĕ, кашнинех пĕрер курка сăра илсе пачĕ, ĕçме юратмасть пулин те, савăнăçне ниçта хурăйманскер, кăпăклă сăрана хăй те самаях сыпрĕ.

– «Хыпар» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухни, – каласçрĕ вăл, – чăваш халăхĕн пысăк уявĕ пек, культурăллă çĕнĕ пурнăçăн çуркунни евĕр туйăнчĕ маншăн.

Каçхине киле таврăнсан та чылай каласçрĕ Николай Васильевич Никольский. Хăйĕн сотрудникĕсене çакăн пек канаш пачĕ:

– Пирĕн пĕтĕм вăй-халран хаçата лайăх кăларма тăрăшмалла. Тумхахлă чĕлхепе çырнине хресчен юратсах каймĕ, тем аташать ку çын, теме пултарĕ. Аслă Ватьясемпе паллашсан вара авторне мухтаса тăранаймĕ, вăт ларать, вăт шăлать, тесе çех хĕпĕртĕ.

Пит кирлĕ, пит вырăнлă каласçу хускалса кайнине кура, Тимкка хăйĕн сăввипе калавĕ çинчен асăнтарчĕ.

– Калавна иккĕмĕш номере яратпăр, – терĕ Никольский. – Анчах та хыçала пĕр пуплев хушмалла.

– Хушрăм эпĕ ăна, Николай Васильевич.

Редактор Тимккаина «Çутта тухасчĕ!» калавне ыран наборлама тытăнма хушрĕ.

Тепĕр кун ирхине те Никольский хаçата лайăхрах тăвасси пирки чылай каласçрĕ.

– Хресчен-вулакан кĕскен, ăнланмалла чĕлхепе çырнине хисеплет, – терĕ вăл чей ĕçсе ларнă хушăра, – манăçа юлнă е никам илтмен çĕнĕ сăмахсем кĕртсе, тăсса çырса кайнине килĕштермест. Хресчен тĕплĕн пĕлсе хак паракан вулавçă иккенне яланах асра тытăр, тусăмсем. Хаçата вулакан хисеплетĕр тесен, пирĕн нумай ĕçлемелле.

Типографине ĕçе пычĕ те Тимкка хăй калавне пухса та хучĕ. «Çăлăнăç» сăвви çапăнса тухасси пирки те иккĕленмест вăл. Анчах та малашне революци шухăшлă япаласем мĕнлерех кĕртсе ямалла пулать-ха хаçатра? Çакă канăç памасть ăна. Çав вăхăтрах хăй вăрттăн типографи валли пĕчĕкçĕн-пĕчĕкçĕн чăвашла саспаллисем кулленех иле-иле тухать.

Хусанта чăвашла хаçат уçасси пирки сăмах хускалсанах, Новиков Тимккана çапла асăрхаттарчĕ: «Çак хаçатпа усă курмаллах пирĕн, ун урлă революци идейисене сарма тăрăшмалла». Çавăн чухне вăл «Новая жизнь» хаçатри «Парти организацийĕпе парти литератури» ятлă статьяна тепĕр хут аса илтернĕччĕ. Литература пролетариатăн пĕтĕмĕшле ĕçĕнчен уйрăлса тăма пултарайманни çинчен каланă унта. Çав сăмахсене яланлăхах асра хăварчĕ Тимкка. «Хама сăвăç тесе шутлатăп пулсан, эпĕ халăх ĕçĕнчен уйрăлса тăма пултараймастăп, – терĕ вăл. – Литература ĕçĕ маншăн уйрăм çын ĕçĕ пулма пултараймасть».

Халлĕхе кивĕ йĕркесене хытă питленĕ сăвăсемпе калавсене «Хыпарта» пичетлеме май çукрах. Çаплах тата Тимкка кивĕ тĕнче йĕркине питленипе çеç те çырлахасшăн мар-ха, вăл патша тытăмне аркатма чĕнекен сăвăсемпе калавсем çырасшăн, хăйĕн произведенийĕсенче, статьяра каланă пекех, партилле литературăн принципĕсене çирĕп тытса пырасшăн, вĕсене мĕн пултарнă таран уçса парасшăн.

Çавна май «Коммунистсен партийĕн манифестне» аса илчĕ Тайăр. Пуринчен ытла унăн пуçламăшне: «Европа тăрăх мĕлке çӳрет, коммунизм мĕлки...» Çав «мĕлке» шухăшлаттарать ăна. Ун çинчен вăл калав çырасшăн. Ячĕ те пур ĕнтĕ – «Пурнăç çутти».

«Европа тăрăх мĕлке çӳрет...» Нумайччен шухăшласа ларчĕ-ларчĕ те, хăй те сисмерĕ, ручка ярса тытрĕ, çырма пуçларĕ: «Инçетре-инçетре, эпир курман-илтмен çĕрсем, тинĕссем, пушă хирсем урлă, ирхине шурăмлпуç çутти тĕттĕм çĕрте кăшт палăрнă пек, пирĕн пата çĕнĕ пурăнăç çутти çутатса килет. Хăш чух çав çутă тĕнчене паллах сарăлать, хăш чух, пĕр енчен кăшт начарланса, тепĕр енелле куçать».

Тимкка çапла палăртрĕ: «Тавçăруллă вулакан кунта сăмах марксизм идейисем мĕнле сарăлни çннчен пынине çийĕнчех ăнланать. Пурнăç çутти çутатса килни – Российăна марксизм сарăлни, тĕрĕслĕх хĕвелĕ – большевиксен партийĕ».

Анчах коммунизм хăй тĕллĕн килсе çитеймест. Уншăн кĕрешмелле. Хăватлăн, алла хĕçпăшал тытса кĕрешмелле. Çакна иртнĕ çулхи октябрь, ноябрь, декабрь уйăхĕсенчи ĕç-пуçсем лайăх кăтартса пачĕç. Тĕрĕс, Хусан урамĕсенче ун чух юн нумай юхрĕ. Апла пулин те рабочисем Хула коммунине туса хума пултарчĕç. Шĕнерпуçĕнче те коммуна çуралчĕ.

Тимкка революци юхăмне кăтартса парасшăн. Çапла çырчĕ вара вăл малалла: «Çил вĕрет... Хĕвеланăç-тинĕс нумай енчен хăрушă хура пĕлĕтсем шăваççĕ. Хăрушă... вăйлă çумăр килет... Çăвать... Ах, епле

хăрушă!.. Çумăр тумламĕсем çĕре ӳкнипе çемçе-хура тăпрана шăтара-шăтара кĕреççĕ. Çумăр çăвать, шавласа шыв юхать. Çĕр çинче тĕрексĕр тăракан япаласем вăйлă шывпа юхса каяççĕ...»

Пурнăç çуттине нимле хура пĕлĕт те хуплама пултарайманнине, вăл çĕнтереccе çирĕп шанать Тимкка.

«Вăхăт çитет. Çумăр чарăнчĕ. Ушкăн-ушкăн çумăр пĕлĕчĕсем, тĕрлĕ енне сарăлса, пĕртте юлмарĕç. Пĕлĕт таса... Çĕнĕ пурăнăç çутти пĕлĕт çинче малтанхинчен те çутăрах çутăлса тухрĕ. Акă, кăшт вăхăт иртсен, вăл пĕлĕт çинче çап-çутă çутăлса тăчĕ... Çĕнĕ пурăнăç çутти пĕтĕм тĕнчене çутатрĕ. Акă пурнăç çутти хыççăн тĕнчене ăс парса çутатакан тĕрĕслĕх хĕвелĕ килчĕ. Тĕрĕслĕх хĕвелĕпе пурăнăç çутти иккĕш пĕрле пулчĕç».

Тимкка кунта «коммунизм» сăмаха çырасшăнччĕ. Анчах хаçатра ăна асăнма юрамасть-çке. Асăн çеç, хаçата вара пичетлемеççĕ. Кайран çав сăмаха кăларса пăрахатăп тени те пулăшаймĕ, санпа текех калаçмĕç те. Çĕнĕ пурнăçăн хăватлă çутти тискерлĕхе çĕнтерни, пĕтĕм таврана çутатни хăех ăнлануллă. Тавçăракан çын ăна çийĕнчех туйса, ăнланса илме пултарать.

«Революци çĕнтерсен...» – чĕлхи çинчех çаврăнкалать Тимккан çак сăмах. Анчах ун пек çырма юрамасть. Çавах та унăн тĕрĕслĕх хĕвелне калаçтарас, шухăшлаттарас килет. Çапла çырса кайрĕ вара вăл: «Тĕрĕслĕх хĕвелĕ хытă сасăпа калать: «Килĕр ман патна, пурте! Аллăра сăнчăрласа, çуралнă çĕршывăрта чунăра хаклă çынсемпе уйăрăлса, инçете хурлăх курма янă çынсем... Эсир маншăн нумай асап курмалла пулнă... Эсир маншăн хăвăра хăвăр шеллемесĕр, сивĕре те, çумăрта та начар тумтирпе чăтса çӳрерĕр. Тĕнче пулнăранпа сирĕн юлташăрсен, эсир пыракан çулпа пырса, мĕн шыранине тупас тесе тăкнă юна пурне те пĕр çĕре пухсан, сирĕн юнăра çĕр çĕклесе тăраймĕ. Тăрăр ĕнтĕ, килĕр кунта, пĕр çĕре пухăнса савăнăр!.. Пирĕн çĕр çинче халиччен пулман савăнăç пулĕ». Çапла çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ нумайччен калаçса тăчĕ. Ун йĕри-тавра тĕнчери мĕнпур çынсем пухăнчĕç...»

Халĕ ĕнтĕ калава вĕçлемелле. Лайăх вĕçлемелле. Ĕçсыннисем хăватлă кĕрешĕве тухса, хăйсен партийĕ ертсе пынипе, марксизм идейисене пурнăçласа, социализм обществи тăвасси çинчен каламалла кунта. Анчах тӳррĕн мар, малтанхи пекех, ытарлăн, юптарса.

«Çапла ĕнтĕ хĕн-хур курса пурăнакансем пурнăç çутти хушнипе телей тупĕç, – çырчĕ Тимкка, унтан хушса хучĕ, – вĕсене хирĕç тăракансем ĕмĕрхи хурлăха кĕрĕç».

Мĕн çырнине темиçе хут тĕрĕсленĕ хыççăн Никольские пачĕ.

Калав редактора килĕшрĕ. Ик-виçĕ тĕлте сăмах хушмаллисем пур иккен. Асли каланине Тимкка йышăнчĕ, калава юсаса çитерчĕ, пичете юрăхлă туса хучĕ.

Çырнисем самаях пухăнчĕç ĕнтĕ унăн. Тепĕр чух шухăшсем капланса килеççĕ те, çĕр çывăрмасăр ĕçлет Тайăр, юлташĕсем ыйха путсанах тăрса ларать те ручкине мĕн ирччен те пăрахмасть вара.

Хавхалану ӳссе, амалансах пычĕ, малашне революционерсен сăнарĕсене анлăнрах уçса парас килет унăн. «Çапах та, – шухăшларĕ пĕр ирхине Тимкка, – çырасса те çăмăлах мар та, çапса кăларасси вара çав тери йывăр».

Ырă та телейлĕ пурнăçа вăрçса, кĕрешсе илме кирли çинчен çырсаччĕ вăл, çав пĕчĕк сăвва чăваш рабочийĕсене те вуласа парсаччĕ. Çавна, пысăклатса, хаçат валли хатĕрлесшĕн Тайăр. Анчах çапса кăларма килĕшĕç-ши? Сăвăç куçĕ умĕнче тахçантанпах ĕнтĕ хăватлă ӳкерчĕк çӳрет: революционерсен пĕр ушкăнне çакса вĕлермелли такан умне тăратнă, йĕри-тавра пуххăннă çынсем çине вĕсем хăюллăн пăхаççĕ. Çавăнтах палачсем пурттисене ялтăртаттарса тăраççĕ. Улăп пек паттăр пĕр революционер ним хăрамасăр, хавхаланса, хĕрӳллĕн юлашки сăмах калать.

Шухăшсем çине-çине капланса килеççĕ, йĕркесем хут çине пĕрин хыççăн тепри шăрçалана-шăрçалана ӳкеççĕ: «Халăх куçĕ умĕнче çук çынсемшĕн вилетпĕр. Сыв пул ĕнтĕ, çут тĕнче, юлашкине паратпăр. Йĕри-тавра халăхсем пире курсан хĕрхенчĕç, анчах вăйлă улпутсем: – Çакăр! – тесе кăшкăрчĕç».

Революционерăн юлашки сăмахĕ хатĕр, ăна Тимкка кĕркуннех çырса хунă. Халĕ вăл ун умне пĕр пуплев çеç хушрĕ, сăвă çакăн пек сыпăнса кайрĕ вара: «Ман юлашки сăмахсем: «Пуласси çине шанса, хытă тăрăр, халăхсем, ан чарăнăр хăраса!»

Революционер каланине халăх тимлесех итлет. Вăл йĕри-тавра пухăнса тăнă çынсен шухăш-кăмăлне çĕклентерекен, кĕрешӳри хастарлăхне вăйлатакан сăмахне каласа пĕтерет çеç, ырлăха вăрçса илме чĕнет çеç, ăна чул чĕреллĕ тискер палачсем çавăнтах çавăрса илеççĕ. Вăй халлĕхе вĕсенче, патша йыттисенче, ытларах çав-ха. Апла пулин те паттăрсем парăнмаççĕ, халăх телейĕшĕн вĕсем пурнăçĕсене те шеллемеççĕ.

Сăвва Тимкка «Чаплă вилĕм юрри» ят пачĕ. Вăл çапла шутларĕ: çак сăвă, таçта-таçта вырнаçнă чăваш ялĕсене саланса, «хура» халăха революцилле юхăма çĕклĕ, хресченсене ыйхăран вăранма пулăшĕ, ирĕклĕхшĕн пыракан татăклă кĕрешӳре пурнăçа та хĕрхенме кирлĕ марри çинчен асăрхаттарĕ.

– Ун пек вилĕм пулмĕ тек, – пăшăлтатрĕ хăй. – Ырлăха вăрçса илнĕ хыççăн çынсем ирĕклĕн, телейлĕн пурăнма пуçлĕç.

Çак вăхăтра малти пӳлĕмрен тухса тăнă Никольский ун çине сăнавлăн пăхатчĕ ĕнтĕ. Килĕшет ăна Тимкка. Ăслă та пултаруллă пулнăран килĕшет. Сăввисемпе калавĕсене те лайăх çырать. Халĕ те авă пĕчĕк сĕтел хушшине пĕшкĕнсе ларнă та пикенсех ĕçлет. Хулăн çӳç пайăркийĕ хăйĕн, сарлака çамки урлă каçса, куçĕ çинех усăнса аннă.

Ытти сотрудниксем çывăраççĕ-ха. Тимкка, яланхи йăлипе, ирирех тăрса ларнă. Каннă пуçпа çырма лайăхрах, çитменине халь никам чăрмантаракан та çук.

Никольские асăрхасан, ура çине тăрсах пуç тайрĕ Тимкка, именнĕ пек пулчĕ.

– Маттур, Тимофей, маттур, – лăплантарма тăрăшрĕ ăна редактор. – Ир тăракан кайăк хитре юрлать, теççĕ.

– Николай Василеьвич, ирхине çырмасан, урăх чух ман вăхăт та çук вĕт, – айăпа кĕнĕ çын пек каласа хучĕ Тимкка. – Ак, часах типографие каймалла, ĕç кунĕ пуçланать.

– Маттур, маттур Тимофей. Тăрăш.

Никольский çапла каланă вăхăтра малти пӳлĕмре ача йĕрмĕшнĕ сасă илтĕнчĕ. Ку вăл – Тарас Кирилловичăн пĕчĕк ывăлĕ. Çак Тарас Никольский аппăшне, Елизавета Васильевнăна, качча илнĕ. Халь вĕсем малти пӳлĕмре тăваттăш пурăнаççĕ.

Николай Васильевичăн «прихожий» текен пӳлĕмĕ вара «Хыпар» хаçат редакцийĕ пулса тăнă. Редакцире ĕçлекенсем те çавăнтах пурăнаççĕ. Ав, халĕ урайĕнче тăваттăн выртаççĕ, пиллĕкмĕшĕ, Тимкка, сăвă çырма тăрса ларнă.

Сергей Кириллов, пуçне йăтса, Тимккапа Никольский енелле пăхрĕ. Михаил Акимов та вăранчĕ. Лаврин ывăлĕ Тимахвипе Ефим Трофимов харăлтаттарсах çывăраççĕ.

– Пирĕн Тимккан çавă ĕнтĕ, сăввисем ыйхăпа вĕçсе кайса çухаласран шикленет вăл, – вăраннă-вăранман шӳтлешме пăхрĕ Акимов. – Хăвăртрах çунатĕнчен ярса илсе, хут çине ӳкересшĕн.

Акимов ыйхă тĕлĕшпе Никольские асăрхаман та иккен, сăмахне каласа пĕтерсен тин курчĕ ăна, аванмарланса кайрĕ. «Эпĕ Тимкка пĕчченех çырса ларать пуль тесе», – пăшăлтатрĕ вăл Кирилловпа.

Никольский Тимккана çурăмĕнчен лăпкарĕ те вырăн çинче выртакан сотрудникĕсем çине ăшшăн пăхрĕ.

– Эсир кунĕпех хут çинче ларатăр. Сирĕн валли çырмашкăн кун та çителĕклĕ. Унăн апла мар, – Тимкка хутне кĕчĕ редактор. – Унăн ирхи апат хыççăн эсир çырнине наборлама каймалла.

Пурте ура çинче ĕнтĕ. Кил тирпейлекен карчăк семинари кухнинчен ирхи апат илсе килнĕ, ларма ӳкĕтлет, унсăрăн сивĕнсе кайма пултарать, тет.

– Эсĕ вара лайăхрах çи, – хистет вăл Тимккана. – Санăн унта вăйпа ĕçлемелле. Çакна эпĕ, сирĕн хаçатăра вулама пĕлместĕп пулин те, лайăх ăнланатăп.

Апат хыççăн Никольский Тайăра çитес номерте çапмалли материалсене пачĕ. Анчах «Пурнăç çуттине» наборлама тăхтама хушрĕ. «Хаçат революци çулĕ çине шанчăклăн пусаймасть çав-ха, – шухăшларĕ Тимкка. – Çураласса çуралчĕ, хăй çаплах сăпкара выртать...»

Ĕçре те унăн кăмăлĕ уçăлаймарĕ, ĕç вĕçленсен те. Салхускере Михаил Акимов хаваслăн кĕтсе илчĕ.

– Ташла, Тимкка, сана çыру! – терĕ вăл, çул çинче самаях хуралма ĕлкĕрнĕ конверта çӳлелле çĕклесе.

«Çыру» сăмаха илтсен, тӳрех Яковлева аса илчĕ Тайăр. «Мĕнле, вĕренме илет-ши элле? – шухăш вĕçрĕ пуçĕнче. – Йыхравлать пулсан, мĕн тумалла-ши? Каймалла е каймала мар? Халĕ хăрушлăх иртсе кайрĕ пек ĕнтĕ. Çапах та, шкула илеççĕ пулсан, каясах, вĕренесех. Тăван халăха çутта кăларас ĕçре мĕнпур вăйпа тăрăшасчĕ».

Ĕмĕтсем çунатла вĕçрĕç те, Тимкка Хусанти университет пирки те шутламасăр хăварма пултараймарĕ.

«Тен, илмеççĕ? Тен, хурлăхлă хурав çеç?» – Урисем хăйĕн пурпĕрех тапăртатрĕç, алли те пĕççине çапа–çапа илчĕ.

– Пĕшкĕнсе мар, пилĕкне тӳрĕ тытса ташла эс, – шӳтлешрĕ Акимов, – хĕç çăтса янă салтак пек пулни кирлĕ пире.

Çыру Чĕмпĕртен. Анчах Яковлевран мар, Кĕçтенрен. Тăхăръял хыпарĕсене пĕлтерет вăл. Тимккан халĕ Демьяновпа уçăмлă çыхăну тытма юрамасть. Хирти Кушкăри учителĕн кашни утăмне сăнаса тăраççĕ, хыçĕнчен йĕрлеççĕ, çырăвĕсене уçса вулаççĕ. Кĕçтен час-часах ялта пулать, çав-çавах «Пӳркел уллахне» – Демьяновăн вăрттăн кружокне – çӳрет. «Хыпарăн» çĕнĕ номерĕсене ярса пама ыйтать, Атăл çинче ĕçлекен чăвашсем çав хаçата çырăнса илесшĕн пулнине пĕлтерет.

Кружок ăнăçлă ĕçлени савăнтарса ячĕ Тимккана. Унта халĕ çĕнĕ çынсем те хушăннă иккен. Лекци хыççăн Демьянов калаçусем ирттерет. «Çапла, халăха ăнлануллă кĕрешĕве хатĕрлесе çитермелле пирĕн».

Çав кунах вăл, каçхине, çыру çырчĕ, «Хыпар» хаçатăн юлашки номерĕсене ярса пама хатĕрлесе хучĕ.

1976.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Тайăр Тимкки хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001371.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. «Гражданла поэзи», «революциллĕ риторика» ăнлавсене литература ăслăлăхĕнче мĕнле ăнлантараççĕ?
2. Тайăр Тимкки хаçатра ĕçлени унăн илемлĕ хайлавĕсене витĕм кӳнĕ-и? Хурава тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
3. Тайăр Тимкки хăйĕн хайлавĕсенче «кивĕ пурнăç» (патша саманинчи вăхăта) тата «çĕнĕ пурнăç» (пулас ирĕк те телейлĕ вăхăта) ăнлавсене мĕнле сăмах е сăмах çаврăнăшĕсемпе (эпитетсемпе) уçса парать.
4. Тайăр Тимккин «Тĕлĕнмелле» хайлавĕн публицистикăлла туртăмне тĕслĕхсемпе ăнлантарса парăр.
5. XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литературин аталанăвне пĕтĕмĕшле хак парăр. Çак тапхăрта хайлавсем çырнă çыравçăсене тата вĕсен сăвă-калавĕсене аса илĕр.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Петров К.К. Поэт-революционер // Тайăр Тимкки. Шухăш. Шупашкар, 1989. С. 52-68.

Семенов Тимофей Семенович (Таэр Тимкки) // Энциклопедия чувашской журналистики и печати. Чебоксары, 2014. С. 391

История чувашской литературы XX века. Часть первая (1900-1955 гг.): коллективная монография. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2015. 431 с.


◊ *Реферат теми*

Н. Шупуççинни пултарулăхĕнче çут çанталăк, юрату, философиллĕ, гражданла лирика тата романтизм мелĕ çирĕпленни.

♫ *Проектсем*

1. Тайăр Тимкки пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.
2. Константин Петров – чăваш журналистикипе чăваш çыравçисен пултарулăхне тĕпчекенĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

ЁМЁР УЛШĂНĂВЁН ЛИТЕРАТУРИ



Константин ИВАНОВ
(1890–1915)

Кĕске биографи справки

1890 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕ – Слакпуç (Ĕпхӳ кĕпĕрни Пелепей уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Пушкăрт республикин Пишпӳлек районĕ).

1898-1902 çулсем – ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ.

1902 çул – Пелепей хула шкулне вĕренме кĕнĕ.

1903 çул – учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕр чăваш шкулĕ çумĕнчи хатĕрленӳ класне куçнă.

1905 çул – Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пĕрремĕш класĕнче вĕрене пуçланă.

1906 çул – «чăваш марсельезне» – «Вăранăр, тапранăр!» ятлă сăвă çырнă.

1907 çул – Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчи шовенизмла кăмăл-туйăмлă Д.И. Кочуров вĕрентекене хирĕç çырнă петицие алă пуснă. Шкултан кăларса янă хыççăн тăван ялне Салакпуçне таврăннă.

1907-1908 çулсем – «Шуйттан чури» трагеди, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» балладăсем çырнă, «Нарспи» поэмăна вĕçленĕ.

1908 çул – Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕ 40 çул тултарнине халалласа «Хальхи самана» сăвă çырнă.

1908 çул – Чĕмпĕрте «Чăваш халапĕсем» кĕнеке тухнă, унта поэтăн «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Нарспи» хайлавĕсем кĕнĕ.

1909 çул – Чĕмпĕрти классикăлла гимназире экстерн йĕркипе экзамен тытса икĕ класлă шкул учителĕ ятне илнĕ.

1911 çул – Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕ çумĕнчи Хĕрачасен шкулĕнче рисовани вĕрентекенĕ пулса тăрать.

1913 çул – Чĕмпĕр тĕн училищинче черченипе вĕрентме тытăннă.

1914 çулхи кĕркунне – туберкулез чирĕпе чирленĕ пирки шкулта ĕçлеме пăрахса тăван ялне таврăннă.

1915 çулхи пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ – тăван килĕнче Слакпуç ялĕнче вилнĕ.

Астăвăм

Константин Иванова хисеплесе Шупашкар хулин пĕр урамне тата скверне ун ятне панă.

Шупашкарти Чăваш патшалăх академи драма театрĕ, литература музейĕ, хула библиотеки К.В. Иванов ячĕпе хисепленсе тăрать.

Слакпуç ялĕнче поэтăн мемориаллă музейне уçнă.

1966-1992 çулсенче К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССРăн патшалăх премийĕ пулнă.

1990 çула ЮНЕСКО йышăнăвĕпе Константин Васильевич Иванов çулĕ туса хунă.

1991 çулта К.В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа тимĕр укçа (1 тенкĕ) кăларнă.

2015 çула Чăваш Республикинче К.В. Иванов çулĕ туса хунă.

Ăслăлăх анинчен

«Çамрăк чăваш интеллигенцийĕшĕн Яковлев шкулĕ чăн Альма матер – аслă шкул – пулса тăнă, шăпах вăл «Европăналла каснă чăваш чӳречи» пулнă. Хăйĕн вĕренекенĕсене вăл вырăс культури пирки пĕлӳ панисĕр пуçне, Европăн анлă вĕрентĕвне панă, çапла майпа пĕлӳпе тĕнчери илемлĕх шухăшлавĕн тӳпине явăçтарма майсем туса панă» (*С.А. Александров, филологи кандидачĕ*).

«К.В. Ивановăн «Нарспи» поэминчи тĕп шухăша, унти синкерлĕх (трагеди) сăлтавĕсене ку таранччен тĕрлĕрен ăнлантаракансем пулчĕç. Çакă йĕркеллĕ япала, мĕншĕн тесен кашни вăхăт, самана хайлав çине çĕнĕ куçпа пăхма ыйтать. Çапах та хайлавăн илемлĕ идейине Пысăк вăхăтпа (вăл çĕр-çĕр çула ытамлать) пăхса хаклани тĕрĕсрех пек» (*В.Г. Родионов, филологи докторĕ*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

«Эс пирĕнтен те çамрăкрах,
чăваш поэзин чаплă ашшĕ.
Эс – иртнĕ кун. Çав вăхăтрах –
эс халăх кăмăлĕн малашĕ.
Эс – пирĕн аслă çĕнтерӳ:
эс – пĕтĕм çутçанталăк панă
асамлă вăй, тĕлĕнтерӳ,
Çĕршыв хăйне санра упранă.
Эс, çӳллĕ пăнчă пек, – пĕрре.
Çĕршер çĕрте асра тытмалăх
сан сассупа историре
ялан калаçĕ пирĕн халăх»

(Г. Айхи, «Константин Иванов», 1962).

Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕнче вĕренсе тухса литература ĕçĕнче çунат сарнă çыравçăсенчен XIX ĕмĕр вĕçĕнчи – XX ĕмĕр

пуçламăшĕнчи чи ялтăркка çăлтăрĕ **Константин Иванов** *(Иванов Константин Васильевич)* пулса тăнă. Çак тапхăрти чăваш культурине вăл пултаруллă сăвăç пек çеç мар, ӳнерçĕ, куçаруçă, халăх сăмахлăхне пухакан çын пек те кĕнĕ.

Константин Ивановăн илемлĕх тĕнчекурăмĕн йĕркеленĕвĕ çине вăл сăрăллă ӳнерпе (живописьпе) кăсăкланни нумай витĕм кӳнĕ. Çак туртăм унăн питĕ вăйлă пулнăран çамрăк сăвăç ӳнер академине вĕренме кĕме те хатĕрлене пуçланă. Унсăр пуçне, Ивановăн сăн ӳкерес, йывăçран касса кăларас ăсталăхĕ те пысăк пулнă. Сăмаха май, унăн Чĕмпĕр чăваш шкулĕн кулленхи пурнăçне кăтартакан сăн ӳкерĕкĕсем паян кун та упранаççĕ, пире çак шкулăн йăли-йĕркипе паллашма, сăвăçăн илемлĕх туйăмĕн тарăнлăхне курма пулăшаççĕ.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Ивановпа пĕр вăхăталла вĕреннĕ Трубина Мархви çыравçă аса илĕвĕсенче пулас сăвăçăн çухалнă ӳкерчĕксен альбомне сăнласа пани пур. «Альбомĕ яка, хулăн хутран тунăскер, пичĕ çине кистьсем чикнĕ палитра ӳкерсе хунă, – тесе çырать вăл. – Малтанхи страницăра Пушкинăн ача чухнехи сăнӳкерчĕкĕ курăнса кайрĕ. Вăл, кăтра пуçлăскер, пысăк та ăслă куçĕсемпе салхуллăн пăхса ларать. Ытти страницăсем çинче Лермонтов, Гончаров, Кольцов, Некрасов, Никитин, Гоголь сăнĕсем, Тургенев вилĕм вырăнĕ çинче выртнине кăтартакан ӳкерчĕк те пур унта. Ку ӳкерчĕке туса пĕтереймен иккен. Страницăсене уçнăçемĕн тĕрлĕрен паллă çынсен сăнĕсем курăна пуçларĕç: Коперник, Суворов, Владимир Мономах, Петр I, Венера Милосская тата Леонардо да Винчи сăнĕсем. Юлашки страницăсенче лăпсăркка йăмра айĕнче шыва кĕрекен ачасене, чăхсене апат парса тăракан хĕрачана, сăпка çине хурлăхлăн пăхса тăракан чăваш хĕрарăмне кăтартакан ӳкерчĕксем пурччĕ. Ӳкерчĕксем çав тери аван». Питех те шел, чăваш ӳнер культурин аталану çулĕнчи мухтава тивĕçлĕ палăкĕ пулса сыхланса юлайман çак ӳкерчĕксем.

Çапах та пултаруллă çамрăкăн илемлĕ сăмах ăсталăхне чи малтанах вырăс тата тĕнче литературине нумай вулани аталантарнă. «Кĕçтенпе калаçнă чух эпир пуринчен ытла тĕнче литератури çинчен калаçаттăмăр. Çапла Дантен «Тамăкĕ», унтан Гетен «Фаусчĕ» çинчен унпа тавлашкаласа калаçнине аса илетĕп, – тет каярах çак вăхăтсем пирки чăваш прозаикĕ Мĕтри Юман. – Çитĕнерехпе Кĕçтен ытларах тĕнче поэчĕсемпе интересленнĕ пулас. Çамрăкрах чухне вăл Пушкинпа, ытларах Лермонтовпа интересленнĕ. Пĕрре хамăр хваттерте эпĕ ăна Байронăн «Чайльд-Гарольдне» вуласа панине астăватăп. Пĕрре тата вăл хăй ман патăма Пыпинăн «Славян литературисен историне» илсе пынине астăватăп. Çав кĕнекене Иван Якăлчă хăй панă, вăл пурне те

ăна вулама сĕнетчĕ, мана та ĕлĕк хушаканччĕ. Тĕлĕкри пек сĕмленетĕп: Кĕçтен вырăс декаденчĕсене юратса каймастчĕ: «Вĕсен поэзин илемлĕхне, пылакне сисейместĕп», – тетчĕ…»

Сăмах илемне туйма вĕренес ĕçре К. Иванова вырăс тата тĕнче литературине, паллах, нумай пулăшнă. Вăл юратса вуланă çыравçăсемпе кĕнекесем хушшинче, маларах асăннисемсĕр пуçне, Н. Гоголь, Генрих Гейне, Жюль Верн («Дети капитана Гранта»), Майн Рид, Виктор Гюго («Отверженные»), Ф. Достоевский, Г. Данилевский («Девятый вал»), Н. Лесков, И. Гончаров тата ыттисен ячĕсем пулнине палăртмалла. Тепĕр енчен К. Иванов çыравçăн илемлĕх тĕнчине чăваш халăх сăмахлăхĕ те тарăн витĕм кӳнĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтра каникула тăван яла таврăнсан вăл хăйсен Пăртта йăхĕ пирки калакан халапсене, ялти ватăсен аса илĕвĕсене, вĕрӳ-суру тата кĕл сăмахĕсене çыра-çыра илнĕ. Çак текстсем пулас сăвăçа, чи малтанах, халăхăн нациллĕ харпăр ăнланăвне курма, чăваш чĕлхин сăнарлăхĕпе илемне туйма вĕрентнĕ.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕсемпе тăванĕсем аса илнĕ тăрăх, К. Иванов хатĕрлев класĕнчех, 1903-1904 çулсенче, çыра пуçланă. Паллах, çак тапхăрта унăн пултарулăх йĕрĕсем ытларах чăваш юррисем тăрăх пысăках мар сăвăсем сăвăланинче, ирĕклĕ темăпа çырнă сочиненисенче тăван енри çутçанталăк илемне тата кулленхи пурнăçа ытарлăн сăнласа панинче палăрăннă. К. Иванов тата çак шкулта вĕреннĕ ытти ачасем (сăмахран, Тайăр Тимкки) литература хайлавĕсем çырас çул çине тăнин сăлтавне чăваш литература историйĕн тĕпчевçи М.Я. Сироткин, сăмахран, вĕсем алçыру вĕççĕн çӳрекен М. Федоров, Игн. Иванов, Я. Турхан, Ив. Юркин, Г. Тимофеев сăвă-калавĕсене, халăх юррисемпе юмахĕсене вуласа паллашнинче курать. Çакăнпа килĕшмесĕр тăма çук.

Сăвăçăн пĕрремĕш хайлавĕсем шутне кĕрекен вырăс юррисем тăрăх çырнă «Вăранăр, тапранăр!» сăвва 1906 çулпа палăртнă. Çак çулах вăл йăх халапĕсем тăрăх хайланă калавсен ярăмне пĕтĕмĕшле «Икĕ ăру» («Кашкăрсем», «Пăртта карчăк» тата ыт. те) ятпа çыра пуçлать. Пултарулăх тĕлĕшĕнчен чи тухăçлă тапхăр вара К. Ивановшăн 1907-1908 çулсем пулса тăраççĕ. Тĕлĕнмелле, анчах 17-18 çулхи çамрăк хăйĕн ӳсĕмне пăхмасăрах пĕтĕм этемлĕхшĕн пĕлтерĕшлĕ çивĕч ыйтусене туйса илсе илемлĕ сăмах урлă çутатса пама пултарнă.

Çак çулсенчех сăвăç редактор ĕçĕнче те вăй хурать, уйрăмах кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли кĕнекесем хатĕрленĕ чух. Вĕсен хушшинче «Первая книга после букваря», «Образцы мотивов чувашских народных песен», Л.Н. Толстойăн «Первая и вторая книги

для чтения», С.Т. Аксаковăн «Аленький цветочек», Г.Х. Андерсенăн «Дикие лебеди» кĕнекисем.

1907 çул вĕçĕнче Константин Иванов М. Лермонтовăн («Тĕрме çынни», «Хумсемпе çынсем», «Парăс», «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă», «Чул ту», «Тусен тăррисем», «Пурнăç курки»), А. Кольцовăн, Н. Некрасовăн, Н. Огаревăн, А. Майковăн, К. Бальмонтăн хайлавĕсене илемлĕ куçару тăвать. Çавăн пекех çак çул «Шкулта вуламалли кĕнекере» Л. Толстойăн сăвăç куçарнă «Кавказра тыткăнра пурăннă çын» повеçĕ пичетленет. Хăйĕн куçарăвĕсенче К. Иванов ытларах халăх сăввиюррин виçипе усă курать, анчах Лермонтовăн «Парăс» сăввине куçару тунă чух вăл силлабика-тоника виçине тĕпе хурать. Тĕпчевçĕсем асăрханă тăрăх чăваш поэзийĕнче шăпах Константин Иванов пуринчен малтан силлабика-тоника виçине алла илнĕ.

1907 çулта çамрăк сăвăç оригиналлă хайлавсем те сахал мар хайлать. Вĕсен шутĕнче «Икĕ хĕр» юмах, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» балладăсем, «Выçăпа аптранăскерсем» сăвă, «Ватă вăрман шухăшĕ» легенда сыпăкĕ, «Шуйттан чури» виçĕ пайлă трагедин сыпăкĕ, «Нарспи» поэмăн пĕрремĕш вариантĕ.

Константин Иванов пултарулăхĕнчи чи паллă тата анлă сарăлнă хайлав вăл – «Нарспи» поэма. Паянхи куна ăна 16 халăх чĕлхи çине куçарнă: 1940-2018 çулсенче хамăр çĕршыври – вырăс, ирçе-мордва, пушкăрт, тутар, çармăс, удмурт, якут; чикĕ леш енчи – украин, болгар, азербайджан, венгр, нимĕç, таджик, туркка, итальян, акăлчан чĕлхисем çине. Унсăр пуçне чăваш театрпа кино ӳнерĕнче литература хайлавĕ тăрăх сцена çинче «Нарспи» драма (пурĕ çичĕ лартăм, юлашки хут 1989 çулта), «Нарспи» опера (1967 çулта), «Нарспи» мюзикл (2008 çулта) лартнă, «Нарспи» музыкăллă кинофильм (2014 çулта) ӳкернĕ.

Чăваш литература пĕлĕвĕнче те вилĕмсĕр хайлава паян кунччен те тишкерсе хаклама пăрахмаççĕ. Тӳрех палăртмалла: литература тĕпчевçисен кашни çĕнĕ ăрăвĕ «Нарспи» пирки хăй курăмне палăртма тăрăшать. К. Иванов пултарулăхне тарăннăн тишкернĕ ăсчахсем хушшинче М.Я. Сироткина, Г.Я. Хлебникова, Г.И. Федорова, В.Г. Родионова, Ю.М. Артемьева, С.А. Александрова (С. Убассине), В.А. Абрамова тата ыт. те асăнмалла. Çак ушкăнра В.А. Абрамовăн ХХ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче каланă шухăшĕсем ыттисенчен уйрăлса тăраççĕ. «Нарспине халиччен яланах ырă сăнарсен шутне кĕртнĕ (литературăри идеализациленĕ пурнăçа çапла хаклатпăр-çке!) – тесе çырать вăл. – Анчах манар мар, пурнăç йĕркине хирĕç тăрса, ăна пăсакан герой та – Нарспиех. Христиан тĕнĕн канонĕсене те, чăвашсен

авалтан килекен йăлисене те ним шелсĕр аркатать вăл. Акă вĕсем, Нарспин çынлăх философийĕ умĕнчи çылăхĕсем: 1. Нарспи ашшĕ-амăшне итлемест, вĕсен ирĕкĕнчен тухать. 2. Вăл саккунлă упăшкине, Тăхтамана, вĕлерет. Çакна вăл ăнсăртран мар, малтанах хатĕрленсе тăвать. 3. Халăх йăли-йĕркине хирĕç пырать, туй умĕнхи каç вăрмана тарса каять. 4. Туй тумасăр Сетнерпе çылăха кĕрет. 5. Хăй çине алă хурать».

В.А. Абрамов шухăш-тĕпчевĕсенче тĕрĕслĕх, паллах, пур. Çапах та Нарспине çын вĕлерекен тата иртĕхнĕ хĕр тесе те хаклама юрамасть. Кунта чи малтанах илемлĕ литература хайлавĕ вăл хăй саккунĕсемпе пурăннине асра тытмалла. Кунта чăн пурнăçри пекех пĕр инкек теприне, чăрмав чăрмава çуратать, кашни тунă утăм (йăнăшши те, тĕрĕсси те) тепĕр утăмне палăртать. Çавăнпа та Нарспи сăнарне тĕрĕс хаклас тесен пĕтĕм япала аталанăвне илемлĕ хайлав тексчĕнче курма пĕлмелле. Чи малтанах вара Нарспин çамрăк çулне шута илмелле. 16-17 çулхи çамрăк хĕрĕн кăмăл-туйăмĕ, ĕмĕчĕсем мĕнлерех-ши вĕсем?

В.А. Абрамов хăйĕн ĕçĕсенче Нарспи пирки хытă калать пулин те, ăна айăпласа çапса хуçас тĕллев лартмасть. Вăл çак поэмăра пулса иртекен ĕç-пуç мĕншĕн çапла çаврăнса тухнине те ăнлантарса пама тăрăшать. Çакăн пирки ăсчах çапларах калать: «Тĕнче литератури юратăвăн этем пурнăçĕнчи вырăнне икĕ оппозиципе хаклать: Ирĕклĕ юрату – Юрату ирĕклĕхĕ. «Ирĕклĕ юрату» позицире мораль çук, вăл ытларах физиологи енне туртать (вырăсла ăна «свободная любовь» теме хăнăхнă). «Юрату ирĕклĕхĕ» позицире вара çынлăх, этем туйăмĕн пысăк шайĕ, кĕрешӳ мотивĕ палăрать («Свобода любви»). Чăваш поэзийĕн генийĕ шăпах юрату ирĕклĕхĕн ыйтăвĕ тавра шăрçалать поэмăри шухăш-пулăма. Ирĕксĕрех К. Ивановăн тĕнче философийĕн икĕ юппинчен пĕрин никĕсĕ çине тăма лекет. Тухăç философийĕ хĕрарăм ирĕклĕхĕ çине çирĕпрех, юнасарах, асăрхаттарарах пăхать, авалхи традицисене тытса пыма чĕнет. Анăç философийĕ вара рационаллăрах, социаллă сăлтавсене шута илсе этеме, хĕрарăма ирĕклĕх пама та юрать. К. Иванов поэмăра Анăç менталитетне суйласа илет, Нарспи юрату ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме пуçлать, авалхи чăваш традицийĕсене аркатса харкам телейĕшĕн вăй хурать». Çакнашкал шухăш ытти тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче те курăнать.

К. Иванов пултарулăхĕнче халăх сăмахлăхĕ питĕ пысăк вырăн йышăнать. Сăмахран, «Тимĕр тылă» баллада, «Шуйттан чури» сăвăлла трагеди сюжечĕсен никĕсенче чăваш халăхĕ хушшинче çӳрекен халапсем выртаççĕ. Çапла «Тимĕр тылă» баллада сюжечĕ Г.Т. Тимофеев этнограф халăхран çырса илнĕ «Лăпăр» юмаха çывăх.

«Шуйттан чури» сăвăлла трагедире вара сăвăç хăйех «халăх калавне улăштарса çырнă» тесе палăртнă.

«Тимĕр тылă» баллада сюжечĕ ансат: тăванĕсене нумай вăхăт курмасăр тунсăхласа çитнĕ кин хунямăшне вĕсене кайса курма ирĕк ыйтса тилмĕрет. Хунямăшĕ – ват тухатмăш – ирĕк пама парать, анчах кинĕн пуçне çиме шутлать, ун хыçĕнченех тимĕр тылă кăларса ярать. Ăслă кинĕ çула тухиччен усал-тĕсĕлрен сыхланма сĕтпе çăрнă виçĕ юсман пĕçерет, вĕсене хăйпе илет. Юсман çамрăк инкене тимĕр тылăран виçĕ хутчен сыхласа хăварать, анчах икĕ аппăшĕпе пиччĕшĕ ăна ют çын тесе кĕртменрен – аслăк çинчи улăм ăшĕнче вăл пурпĕрех вилет. Тимĕр тылă тухатмăш карчăк чĕннине итлесе ун патне таврăннă чух хуçине те вĕлерет, лешĕ куçĕ лайăх курманран пăрăнса ĕлкреймест имĕш.

Балладăра халăх юмахĕн паллисем çителĕклех: усал сăнарĕ – тухатмăш карчăк; асамлă япала – сĕтпе çăрса пĕçернĕ юсман; ĕçĕн виçĕ çаврăмĕ – тимĕр тылă çамрăк инкене виçĕ хутчен хуса çитĕт, карчăк тимĕр тылăна виçĕ хут чĕнсе каялла йыхарать, виçĕ тăван – икĕ аппăшĕпе пиччĕшĕн санарĕ. Тухатмăш карчăк пуçне тимĕр тылă касни те юмах палли – усал сăнар хăй вилĕмне ялан тупать. Çапах та çамрăк инке аслăк тăрринче вилни юмах картинчен тухать.

«Шуйттан чури» сăвăлла трагедире вара автор сăнарĕн шухăшлавĕ тарăнрах. Кунта икĕ сий – халăхăн мифологиллĕ тĕнче курăмĕ тата чăн пурнăç. Мифологиллĕ тĕнче сийне «шуйттан», «пирĕшти» сăнарĕсем калăплаççĕ. Чăн пурнăçа, историллĕ вăхăта вăрçă хирĕнчи вилĕсем, вĕсене пытарни пирки калакан картинăсем кăтартаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне хирĕçлемеççĕ, мĕншĕн тесен хайлавра çак икĕ сий унăн тĕп шухăшне – «Пиччĕш хăйĕн шăллĕне / Чиксе хучĕ укçашăн» – тарăнлатассишĕн ĕçлеççĕ.

Литература теорийĕ

Куçса çӳрекен сюжет тесе сăмах вĕççĕн çӳрекен е çырулла хайлавра çирĕпленнĕ пĕр культурăран тепĕр культурăна куçакан сюжетпа фабула тĕсĕсене калаççĕ. Куçса çӳрекен сюжетсем чи малтанах халăх сăмахлăхĕнче сарăлнă. Тĕслĕхрен, темиçе пуçлă çĕленсем, ама çури амăшĕпе хĕрĕ, хĕр вăрласа кайни, вилĕме пытарни пирки калакан юмахсем. Çакнашкал сюжетсем ĕмĕрсем хушши хăйсен шăнăрне улăштармасăр çĕнĕрен те çĕнĕ вариантсемпе пуянланаççĕ. Тĕрлĕ халăхсен культурин, чĕлхин, йăли-йĕркин, тĕн хăйне евĕрлĕхĕ те куçса çӳрекен сюжета витĕм кӳрет, анчах пĕтĕмĕшле урăхланмасть.

Чăваш илемлĕ литературинче те куçса çӳрекен сюжетсемпе усă курасси анлă сарăлнă. К. Иванов пултарулăхĕнче, сăмахран, ватă

тухатмăш карчăкпа тимĕр тылă («Тимĕр тылă» баллада), çичĕ паттăр пиччĕшĕ («Тăлăх арăм» баллада), ăслă тата ухмах хĕрĕ («Икĕ хĕр» юмах) пирки калакан куçса çӳрекен сюжет тĕсĕсем пур. «Нарспи» поэма фабулин никĕсĕнче те юрату темине çутатакан ĕмĕрхи сюжет вырать. Вăл хĕвел тухăç фольклорĕнчи арабсен авалхи халапĕ тăрăх çырнă «Лейли тата Меджнун» ятлă поэмăсемпе (Низами, Физули тата ыт. авторсем) тата хĕвел анăç европăри «Ромеопа Джульета» (У. Шекспир) трагедипе тӳр килет.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

[Ш У Й Т Т А Н Ч У Р И]

Виçĕ пайлă трагеди
Халăх калавне улăштарса çырнă
Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ.

[П ĕ р р е м ĕ ш п а й ĕ]

Чул çумĕнче пĕр этем
Ларать хытă йăнăшса.

Ш ă л л ĕ
Апла пулсан, кай кунтан,
Эпĕ сана тăван мар!
Тăшман çынна нихçан та
Памăп турă панине.

П и ч ч ĕ ш ĕ
Вĕлеретĕп! Парсан пар!

Ш ă л л ĕ
Вĕлер, чуну çитейсен.

Ватă юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет:

Ш у й т т а н
Ил укçине, ил туртса!

Ылттăн-кĕмĕл çап-çутă,
Хутаç тулли ялтăрать.

Ш у й т т а н
Ил укçине – вăл санăн.

Ухмах çыннăн куçĕсем
Йăлтăр – ялтăр çунаççĕ.
Хутаç çине пăхнă та,
Хутаç патне туртăнать..
Анчах шăллĕ укçине
Хăйĕн айне хурса ларнă.
Ик аллинче ик çĕçĕ –
Йăлтăртатса тăраççĕ..

Ш ă л л ĕ
Вилсен вилĕп, чĕрĕлле
Памăп турă парнине.

Ватă юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет:

Ш у й т т а н
Ил, ил, ухмах, мĕн тата
Каллĕ-маллĕ пусатăн?

Акă тăр-тăр чĕтресе
Сăнă çӳле çĕкленчĕ,

Анчах чунĕ çитмесĕр
Татах аяла анчĕ.
Ватă юман хыçĕнчен.
Шуйттан [татах?] хĕтĕртрĕ.
Сăнă татах çӳлелле
Яр улăхса кайрĕ те,
Пиччĕш хăйĕн шăллĕне
Чиксе хучĕ укçашăн.
Çӳлтен кĕр-кĕр аслати
Кĕрлет, вĕркет хаяррăн.
Хура пĕлĕт куçхарши
Тата хытă пĕрĕннĕ.
Ухмах этем, шăллĕне
Сăнăпала чиксенех,
Укçа патне сикрĕ те
Илчĕ укçа хутаçне,
Ташша ячĕ савăнса.

П и ч ч ĕ ш ĕ
Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укçа, укçа,– акă вăл!
Укçа пулсан, мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылттăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ял ти пуян эпĕ вăл!
Кайăп киле ыранах,
Çитĕп киле каçченех,
Ылттăн-кĕмĕл çурт лартăп,
Выльăх тытăп пинĕпе.
Ирттерĕп çав пурнăçа
Савăнса çеç, кулса çеç.
Текех канăçсăр çынсем
Вăрçăсенче çӳреччĕр.
Мана тата мĕн çитмен?
Манăн акă пурте пур.
Ылттăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл,
Укçа пулсан, мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ!

Шуйттан юман хыçĕнчен
Сиксе тухрĕ ахăрса:
Этем хыççăн шуйттан та
Ташша ячĕ савăнса.
Ухмах çынна курăнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптăвать тутипе,
Шуйттан чури тиейсе.
Этем укçа хутаçне
Хăрах алăпа йăтнă.
Тепĕр аллинчи хĕçпе
Шаккать укçа хутаçне,
Хутаç ăшĕнчи укçи
Шанкăртатать илĕртсе,
Ылттăн-кĕмĕл кĕввипе
Çын такмаклать ташласа.

П и ч ч ĕ ш ĕ
Мĕншĕн кунта кăлăх
Манăн пуçа çухатас?

Этем çапла шухăшлать
Хă й ăшĕнче савăнса.
Çӳлтен, çӳлтен çавăнтах
Темле сасă илтĕнет:

П и р ĕ ш т и
Мĕскĕн этем, мĕн турăн?
Куçна уçса пăх, мĕскĕн,
Ухмах ĕçӳ çинелле.

Тăпра çине çавăнтах
Кайрĕ этем йăванса,
Ăнĕ тухса кайнипе
Ури анчĕ хуçăлса.
Сасартăках çил тухать,
Тухса кĕрлесе каять,
Пĕтĕм çĕре кисретсе
Аça шартлатса ярать.
Шуйттан юман хыçĕнче

Ахăлтатать хăрушшăн,
Ансăр этем патнелле
Аллисене вăл тăсать,
Ватă юман хыçĕнчех
Ахăлтатни илтĕнет:
Шуйттан çăварне карса
Ахăлтатать савăнса.
Ансăр этем, вилнĕ пек,
Кăвакарса кайнă хăй,
Шуйттан ăна пăхать те
Ахăлтатать хăрушшăн,
Тĕнче тĕпне хускатса
Çут тĕнчене ишес пек,
Аслă тăват кĕтеслĕ
Çутçанталăка илес пек...

Чул çумĕнче пĕр этем
Пуçне çĕклет йăнăшса.

Ш ă л л ĕ

Асапланса выртатăп,
Сăнă тухрĕ витĕрех
Кăкăрăма шăтарса.
Мана хамăн айăпшăн
Турă асап ячĕ пуль.
Эй турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ,
Усал ĕçне тăвиччен
Унăн ăсне çутатсам;
Тăвансемшĕн çапăçма
Тасат унăн кăмăлне;
Вăрçă хушшине кӳртсе
Вĕрилентер чĕрине,
Тăвансемшĕн çапăçса
Тасатсамччĕ айăпне.
Вăл та çаплах, ман пекех,
Шуйттан чури пулминччĕ.
Пиччем, пиччем! Эсĕ те
Суккăр ан юл ман пекех.
Куçна уçса пăх, пиччем,
Мĕнле эпир çынсемччĕ?!
Укçашăнах çунтăмăр,
Ылттăн-кĕмĕлшĕн çунса,
Çынна тĕрлĕ хĕстерсе,
Çынна йĕртсе-макăртса
Пуçтартăмăр пуянлăх.
Пуçтартăмăр пуянлăх
Хамă р ырă курасшăн,
Анчах пухнă мулпала
Эпир тăранмарăмăр.
Вăрçă тухрĕ... Вăрçăра
Вилнисене çаратса
Укçа тупма, пуçтарма
Эпир вăрçа килтĕмĕр.
Анне ячĕ ӳлесе
Пирĕн шухăша сиссе,
Урайĕнче йăваланчĕ
Мĕскĕн анне ман умра:
«Ан кай, ачам, ан кайсам,
Хăвăн пуçна пĕтерĕн,
Ан ухмахлан укçашăн,
Мĕн пурри те çитĕ-çке...»
Анчах пирĕн чĕресем
Хускалмарĕç çапах та.
Арăм ячĕ ӳлесе
Тăлăх юласне сиссе:
«Ан кай, ан кай, пĕтетĕн,
Чуну ӳкĕ тамăка...»
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йăлтăртатса тăратчĕ.
Хăрамасăр-тумасăр
Тухрăмăр та килтĕмĕр.
Анне юлчĕ ылханса,
Арăм юлчĕ макăрса.
Анчах çӳлтен, эй турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Хамăн усал шухăшшăн
Эсĕ мана тавăртăн:

Вăрçа кĕнĕ-кĕменех
Сăнă чикрĕç кăкăра;
Ансăр пулса, йăванса
Юлтăм эпĕ хир варне
Пĕр-пĕчченех çакăнта.
Хамăн айăпа курса,
Ирсĕр ĕçĕме пĕлсе
Пăшăрханса çунмашкăн,
Пĕр-пĕчченех выçăхса
Асапланса вилмешкĕн
Тискер пушă хир варне,
Туррăм, мана пăрахрăн.
Ирсĕр чунлă усала
Тивĕçлипе тавăртăн...
Вăйăм пĕтрĕ, ӳт сивĕ,
Чĕрем ăшне хурт çиет.
Эй турă! Айăпăмшăн
Чунтан-вартан ӳкĕнсе,
Чунтан-вартан йăлăнса
Санран çăлăнăç ыйтатăп!
Сĕм пĕлĕтсем юхаççĕ
Çут тĕнчене хуплас пек.
Тамăк тĕпĕ уçăлать
Ман чунăма çăтас пек.
Шуйттан тухать тамăкран
Ман чунăма илесшĕн.
Вилĕм, вилĕм килет ав,
Тăсать хăйĕн аллине.
Тамăк çунать ман айра,
Ав шуйттансем килеççĕ.
Эй турăçăм, çăл мана,
Пĕтме ан пар чунăма!..

Вăйĕ пĕтсе çитнипе
Унăн чĕлхи чарăнчĕ.
Унăн чĕлхи чарăнчĕ.
Куçĕсемпе анчах вăл
Çӳле пăхса кĕлтăвать.
Татах вăйне пуçтарса:
«Эй турăçăм», терĕ те
Ăнсăр пулчĕ çавăнтах
Вăйран-халран кайнипе.

Тĕттĕмленчĕ, каç пулчĕ,
Çил-тăвăл та лăпланчĕ,
Пĕчĕк ушкăн çар килет
Вилнисене пуçтарма.
Вилнисене пуçтарчĕç,
Шăтăк чавма тытăнчĕç.
Сăнăсемпе, хĕçсемпе
Аслă шăтăк тăваççĕ.
Улăп юман айĕнче,
Аслă чулăн çумĕнче
Вилнисене юрăпа
Шăтăк ăшне антарчĕç.
Ĕречĕпе выртарса
Виççĕ ӳксе пуççапрĕç,
Ура çине тăчĕç те
Виçĕ хутчен пуç тайрĕç.
«Тăпра ыран ярăпăр,
Чӳкне ыран чӳклĕпĕр»,
Тесе вĕсем уттарчĕç,
Тĕттĕм çĕрте çухалчĕç.
1907

Ирĕклĕ хушма вулав

1. К. Ивановăн «Тимĕр тылă» поэмине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000076/index.html

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Константин Иванов йăхĕ пирки эсир мĕн пĕлетĕр?
2. К. Ивановăн хăш хайлавĕсенче халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ пысăк?
3. Мархва Трубина аса илĕвĕнче палăртнă ӳкерчĕксенче К. Иванов камсен сăнĕсене ӳкернĕ? Вĕсем пирĕн çĕршыв тата тĕнче культурин историйĕнче мĕнле ĕçсемпе чапа тухнине кĕскен каласа парăр.
4. Мĕншĕн Нарспи сăнарне истори аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕнче тĕрлĕрен хак панă? Çак хаклавсемпе эсир килĕшетĕр-и?
5. К. Ивановăн «Нарспи» поэмипе У. Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедийĕ хушшинчи сюжет, сăнарсен, конфликт пĕрпеклĕхне тупса палăртăр. Çакă мĕнпе çыхăннине ăнлантарса парăр.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Константин Иванова аса илеççĕ. Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1990. 271 с.
Артемьев Ю.М. Константин Иванов: Жизнь. Судьба. Бессмертие. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2013. 256 с.
Харитонов В.Е. Константин Иванов тата музыка. Шупашкар: Чăв. АССР кĕн. изд-ви, 1971. 40 с.
Родионов В.Г. К.В. Иванов хайлавĕсен пултарулăхла историйĕ. Шупашкар: ЧувГУ, 2000. 36 с.

♦ *Литература тĕпчевĕнчи пĕрремĕш утăм*

1. К. Иванов – поэт, К. Иванов – прозаик, К. Иванов – художник хушшинчи çыхăнăва палăртăр. Поэзи мелĕсем прозăра, ӳнерçĕ тĕнче туйăмĕ поэзинче сăнарланнине мĕнпе çирĕплетме пулать?
2. К. Ивановăн хайлавĕсене филологи тишкерĕвĕ тунă литература тĕпчевçисен ĕçĕсене тупса палăртăр. Çак ĕçсенче эсир хăвăра валли мĕн çĕнни тупрăр?

☼ *Сочинени темисем*

1. Паянхи Нарспи – мĕнле-ши вăл?
2. Эпĕ мухтанатăп хамăр Ивановпа!
3. «Шуйттан чури» сăвăлла трагедине вуланă хыççăн пуçа килнĕ шухăшсем.

◊ *Реферат теми*

К. Иванов пултарулăхĕнчи чăваш халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ.

♫ *Проект*

Константин Ивановăн куçару ĕçĕнчи пултарулăхĕ*(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Δ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

1. К. Ивановăн хăйне евĕрлĕ литература стилĕ пирки мĕн калама пулать? Хурава тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
2. «Шуйттан чури» сăвăлла трагедири çĕнĕ сăмахсене (неологизмсене) тата кивĕ сăмахсене (архаизмсене) тупса палăртăр. Вĕсен хайлаври пĕлтерĕшне ăнлантарăр.



ÇЕÇПЁЛ Мишши
(1899–1922)

Кĕске биографи справки

1899 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ – Касаккасси Шĕкĕр (Хусан кĕпĕрни Çĕрпӳ уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Чăваш Республикин Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕ).

1907-1911 çулсем – Шăхасанти иккĕмĕш класлă шкул çумĕнчи пуçламăш шкулта вĕреннĕ.

1911-1914 çулсем – Шăхасанти вулăс кантурĕнче çыруçă-ача пулса ĕçленĕ.

1914-1917 çулсем – Шăхасанти учительсем хатĕрлекен иккĕмĕш класлă шкулта вĕреннĕ.

1916 çул – фронта кайса килнĕ (Минск кĕпĕрнинче пулнă). Империализм вăрçи çине тарăхса «Скоро» ятлă вырăсла сăвă çырнă.

1917 çул – Теччĕри учительсен семинарине вĕренме кĕнĕ.

1918 çул – «Хыпар» хаçатра сăвăçăн «Çапла пулăшатăр-и?», «Пирĕн вăй» статйисем пичетленнĕ. «Вăрман ачисем» калава çырса пĕтернĕ.

1918 çул – Хĕрлĕ Çарта пулнă (штабра ĕçленĕ). Раççейри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн ретне кĕнĕ.

1918-1919 çулсем – Мускаври ВЦИК çумĕнчи инструктор-агитаторсен курсĕнче вĕреннĕ.

1919 çул – «Канаш» хаçатра сăвăçăн «Иртнĕ самана», «Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ...» сăввисем пичетленнĕ.

1919 çул – Теччĕри судпа следстви комиссийĕнче (малтан следователь, кайран председатель пулса) ĕçленĕ.

1920 çул – Хусанта йĕркеленĕ Раççейри чăваш комсомолецĕсен пĕрремĕш съездне хутшăннă.

1920 çул – Шупашкара куçса килнĕ. Чăваш автономи облаçĕнчи Ревтрибунал председательне ларнă.

1920 çул – «Канаш» хаçатра «Сăвă çырассипе ударени правилисем» статья, «Чăваш чĕлхи», «Пурнăçпа вилĕм» сăвăсем пичетленнĕ, «Чăваш ачине», «Чăваш арăмне» сăвăсем çырнă.

1920 çул – Юстици çуртне вут тĕртме хĕтĕртнĕ тенĕ суя сăмахпа арестленĕ.

1921 çул – шăмă туберкулезĕ пирки сывлăхĕ начарланнипе Евпатори курортне кайнă.

1921 çул – «Катаран каç килсен», «Шăршлă каç йăвăрри», «Чăваш! Чăваш!», «Çĕн Кун аки», «Тинĕсе», «Инçе çинçе уйра уяр...», «Хурçă шанчăк», «Выç псалом», «Юлашки чĕл алра, юллашки чĕл...», «Кĕпер хывăр!» сăвăсем çырнă.

1922 çул – Остĕр уесĕнчи çĕрĕç пайĕнче делопроизводительре тата çĕнĕ çĕре куçакансен комисси инструкторĕнче ĕçленĕ.

1922 çул – «Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăнсем...», «Паянтан», «На дне дня», «Жизнь моя, за какими холмами...», «Выдуманным глазам» сăвăсем çырнă.

1922 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕ – сăвăç Остĕр хули çывăхĕнчи Кивĕ Хула (Старогородка) ятлă ялта çакăнса вилнĕ. Çакăнтах пытарнă (1954 çулта сăвăç ӳтне Остĕр хулинчи парка куçарнă, тăпри çине гранит палăк лартна).

Астăвăм

Сăвăçа халалласа Çеçпĕл ялĕнче (Чăваш Республикин Канаш районĕ), Шупашкар хулинче (Юстици çурчĕ пулнă вырăнта) музей уçнă.

Шупашкар хулин Ленин проспекчĕнче Çеçпĕл Мишши бюстне лартнă.

Тутарстанри Тетюшри педтехникум краеведени музейĕнче Çеçпĕл кĕтесне йĕркеленĕ.

Украина çĕршывĕнчи Остĕр хулин краеведени музейĕнче савăçа халаллană пай йĕркеленĕ, çак хуларах унăн вил тăпри упранать.

Остĕр хулинчи 1-мĕш № гимназине Çеçпĕл ятне панă, кунта ăна халаллană музей уçнă.

Шупашкар тата Остĕр хулисенче сăвăçа халалласа урамсене ят панă.

Остĕр хулинче Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа парк лартнă.

Шупашкарти Чăваш патшалăх çамраксен театрне Çеçпĕл Мишши ятне панă.

Сăвăçа хисеплесе Атăл тăрăх çӳрекен теплохода «Михаил Сеспель» ят панă.

1967-1991 çулсенче Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен Чăваш Ен Комсомолăн премийĕ пулнă.

Ăслăлăх аниичен

«Вăл чăваш сăввине çĕнĕ сывлăш (*Çĕн сывлăш, вĕр!)* панă, чăваш сăмахĕн пĕлтерĕшне тискер идеологи палăрăмне (акцентне) кĕртнĕ,

çапла майпа европăлла пултарулăхăн илемлĕх тĕнчине кĕпер хывнă» (*А.П. Хузангай, филологи кандидачĕ*).

«Çеçпĕл, пĕтĕмĕшле каласан, «чикĕлле лару-тăрура» пурăннă тата сăвă-калавне çырнă: чир-чĕр, телейсĕр юрату, коммунизм идеалĕсем арканни…» (*В.Г. Родионов, филологи докторĕ*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пирĕн çĕршывра пулса иртнĕ политикăпа социаллă пурнăç улшăнăвĕсен хумĕ çинче çуралса çунат сарнă чăваш çыравçисенчен пĕри вăл – **Çеçпĕл Мишши** (*Кузьмин Михаил Кузьмич*). Унăн пĕтĕм пултарулăхĕ революциллĕ чĕнӳпе, Ирĕклĕх, Танлăх, Чăвашлăх символĕсемпе сывлать. Сăвăçăн пурнăç çулĕ питех те кĕске пулнине пăхмасăрах (пĕтĕмпе те тулли 22 çул та 8 уйăх) пултарулăх эткерĕ унăн пысăк. Паллах, вăхат тата самана улшăнса пынăçемĕн илемлĕ хайлав пĕлтерĕшĕ те улшăнса пырать. Нумай хайлавсен янравĕ те паян пачах та урăхла.

Çеçпĕл Мишши пултарулăх çулĕ çине Шăхасанти учительсем хатĕрлекен иккĕмĕш класлă шкулта вĕреннĕ вăхăтра тăнă. Ку вăл ун пултарулăхĕнчи пĕрремĕш тапхăр. Поэзипе кăсăкланни вара Çеçпĕлĕн Шахасанти пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех палăрнă: унăн илемлĕ тĕнчекурăмĕн аталанăвĕ çине вырăс поэзийĕ витĕм кӳнĕ, уйрăмах И. Никитин, М. Лермонтов, Н. Некрасов сăввисем. Çак çулсенчех çамрăк Мишша çине тăрсах пуçламăш шкулта ал вĕççĕн кăларса тăракан «Çăлтарчăк» ятлă журнала çырса тăнă.

Шăхасан тапхăрĕнче çырнă сăвăсенчен «Судьба солдата» (1916), «Скоро…» (1916) ятлă вырăсла сăвăсем сыхланса юлнă. Пĕтĕмешле илсен вара Çеçпĕлĕн 1916-1922 çулсенче вырăсла çырнă 26 хайлав – çырса пĕтернĕ сăвă е сыпăкĕ – упранса юлнă.

Чăваш классикĕн пултарулăх тапхăрĕсем пурте унăн пурнăç çулйĕрĕпе çыхăннă: Теччĕри учительсен семинарине вĕренме кĕрсен сăвăçăн Теччĕ тапхăрĕ пуçланать (малтанхи – 1917-1919 çулсем, кайранхи – 1919-1920 çулсем), Шупашкара таврăнсан – Шупашкар тапхăрĕ (1920-1921 çулсем). Çавăн пекех сăвăç пултарулăхĕнчи Крым (1921 çулхи çулла), Киев (1921-1922), Остер (1922 çулхи пуш-çĕртме уйăхĕсем) тапхăрĕсем те унăн пурнăç çулĕпе çыхăннă. Кунта çакна палăртса хăвармалла: уйрăм çыравçăн пултарулăхне пĕчĕкрех тапхăрсем çине пайласа тата унăн пурнăçĕпе çыхăнтарса тĕпчени чи малтанах унăн хайлавне тарăнрах ăнланма, хайлавăн литературăри тата халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕпе вырăнне курма пулăшать. Сăмаха май, Çеçпĕл пултарулăхне пуренлĕн тĕпченĕ В.Г. Родионов ăсчах палăртнă тăрăх, шăпах Теччĕре вĕреннĕ вăхăтра вăл сăвăç пек «калăпланать».

Унсăр пуçне сăвăç пурнăçĕпе пултарулăхĕнче 1918 çул питĕ пĕлтерĕшлĕ çул пулса тăрать: кăрлач уйăхĕче унăн «Çапла пулăшатăр-и?» ятлă статйи пичетленсе тухать, кунта сăвăç хăйне Çеçпĕл тесе палăртать; раштав уйăхĕнче вăл большевиксен партине кĕрет, Теччĕ хулинчи обществăпа политика пурнăçне харсăр хутшăна пуçлать. Çакă пĕтĕмпех, паллах, сăвăç тĕнчекурăмĕн никĕсĕ пулса тăрать, унăн пултарулăхĕнчи кăмăл çĕкленĕвне (пафосне) ăнлантарать.

Çеçпĕл Мишшин сăвă-калавĕсен илемĕпе хăйне евĕрлĕхне пур енлĕн курас тесен унăн тĕнчекурăмне, кăмăлĕпе темпераментне те тарăнрах тишкермелле. Сăвăç ултавпа тĕрĕсмарлăха чăтма пултарайманнине, хăвăрт хĕрсе кайнине унпа хутшăннă нумай çынсем хăйсен аса илĕвĕсенче палăртаççĕ. Унтан та ытларах Çеçпĕл поэтăн трагедиллĕ шăпипе синкерлĕ вилĕмĕ пирки калаçни те кирлĕ. Кашни çынăннах пурнăçра хăйĕн хуйхи-нуши, анчах пултарулăх çыннисен çак пулăмсене туяс, чăтса ирттерес туйăмлăхĕ тарăнрах та трагедиллĕрех.

Пулас сăвăçшăн пурнăçри пĕрремĕш пысăк хуйхă – юратнă ашшĕне ӳсĕрле çын вĕлернĕшĕн тĕмене лартни пулнă. Тен, шăпах çак самантра унăн чĕри çине пĕрремĕш çĕвĕ выртнă пулĕ. Шăпинчи чи пысăк трагедисенчен пĕри вара Çеçпĕлшĕн çĕнĕ пурнăç идеалĕсем (революци идеалĕсем) пурнăçа кĕменни пулса тăнă. Революци сăвăçшăн чи малтанах кăмăл-сипетри çĕнĕллĕх – харпăр хăйне мар ыттисене юратни – пулнă. Сăвăç хăй çырнă тăрăх, унăн çын чунĕсен пĕрлĕхлĕ çепĕç юхăмне курас килнĕ. В.Г. Родионов çак идеал Çеçпĕл чунĕче христианство тĕнĕн вĕрентĕвĕ урлă çуралнă тесе палăртать. Анчах та ăна пурнăçри революциллĕ ирĕксĕрлӳ тата йĕри-таври партипе совет ĕçченĕсен эгоистла хăтланăшне курса тăни аркатнă.

1920 çулхи кĕркунне Çеçпĕл чăваш сăввин тытăмне тĕпрен çĕнетес ыйтупа ĕçле пуçланă. Хăйĕн курăмне вăл «Канаш» хаçатра пичетленсе тухнă «Сăвă çырассипе ударени правилисем» статйинче палăртнă. Çак ĕçе тишкерсен Çеçпĕлĕн чĕлхе туртăмĕ питĕ тарăн пулнине курма пулать. Вăл тĕрлĕ тăрăхра пурăнакан чăвашсем калаçăвĕ пĕр пĕринчен уйрăлса тăнине лайăх курать. Сăвăç палăртнă тăрăх, «тĕп чăвашсем пирĕн, Шупашкар, Етĕрне, Çĕрпӳ, Чикме уесĕсенче. Кунти чăваш чĕлхи ют чĕлхесемпе хутăшман, çавăнпа чăваш чĕлхин тĕрĕслĕхĕ çакăнта пулма кирлĕ». Чăваш чĕлхинчи пусăм йĕркине (ударени правилине) сăвăç асăннă районсенче пурăнакан чăвашсен калаçăвĕнчен кăларать. Вĕсем паянхи чăваш чĕлхин пусăм йĕркипе тӳр килеççĕ. Çавăнпа пĕрлех çакнашкал пуплев пуриншĕн те пĕр марине те асăнать. «Калаçнă чух ударенисене сăмах вĕçне тăвас йĕрке тутарсем çывăхĕнче е тутарсем хушшинче пурăнакан чăвашсем калаçăвĕнче анчах палăрать

(Тетĕç, Пăва уесĕсенче). Паллах, çак йĕрке тутарсен чĕлхи майĕ кайнипе тухса кайнă», – тесе çырать вăл.

Чĕлхери пусăм йĕркине пĕтĕм чăвашсемшĕн пĕрешкел тунинче Çеçпĕл сăвă ĕçĕн техникине аталантарнине çеç мар, халăха пĕрлештермелли май та курать. «Ĕлĕк чăвашсем таçта тухса çÿремен: вăрмансем хушшинче пурăннипе, чукун çул таврашĕ çуккипе аякри чăвашсемпе пĕрлешмен, çавăнпа та чăваш пек пĕчĕк халăх хушшинче çакăн пек уйрăм тухса кайнă. Малашне пĕр-пĕринпе хутшăнма аванланса пырать. Пĕр енчи чăвашсем тепĕр енчи чашсемпе час-часах курăшса хутшăнмалли пулĕ – вара ун чух пĕр енчи чăвашсен чĕлхипе тепĕр утăмри чăваш чĕлхин нимле уйрăм та пулмĕ, пĕр тĕп чăваш чĕлхи пулĕ», – тесе вĕçлет вăл хăйĕн статйине.

Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе пултарулăхĕнче юратнă хĕрарăмĕ Анастасия Червякова патне янă çырусем пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Çак çырусене сăвăç 1919 çулхи çĕртме уйăхĕнчен пуçласа 1921 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕччен çырнă. Литература пĕлĕвĕче вĕсене тĕрлĕрен хак параççĕ: пĕрисем – «çыру евĕрлĕ роман», «литература хайлавĕ» (П. Бекшанский, Ю. Яковлев), теприсем – «эпистолярлă роман» (çыру роман) (Ю. Орлицкий), виççĕмĕшсем «прозăлла çырнă лирика поэми» (В. Родионов) теççĕ. Паллах, кашни тĕпчевçех кунта тĕрĕс калать. Паянхи куна çак çырусен чăваш литература анинчи вырăнне никам та татса каламан-ха. Çапах та вĕсене çыру жанрĕ урлă пăхакансем тĕрĕслĕх патне çывăхрах пулĕ. Унран та ытларах, чăваш литературинчи çак жанра шăпах Çеçпĕл çырăвĕсем урлă курма май пуррине палăртмалла.

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, Çеçпĕл пурнăçĕнче хăй çине хăй алă хуни патне илсе çитернĕ синкерлĕ пулăмсем темиçе пулнă. Тĕпчевçĕсем вĕсен шутне телейсĕр юратăва та кĕртеççĕ. Сăвăçăн юратăвĕ вара шăпах унăн çырăвĕсенче лайăх курăнать. Çавна май кунта çакна та татса памалла: асăннă çырусенче Çеçпĕл вăл сăвăç е ахаль çын – хаяр шăпаллă çирĕм çулхи каччă? Тата анлăрах – ку вăл сăвăçăн литературăри пултарулăхĕ е унăн кулленхи пурнăçне уçса паракан документ? Каллех татăклăн калама йывăр. Пĕр енчен, çырусене Çеçпĕл вулакан халăх валли мар, пĕртен пĕр юратнă çынни валли çырнă. Çавăнпа та кунта чи малта çамрăк каччă туйăмĕсемпе ĕмĕчĕсем, шухăшĕсем, иккеленĕвĕсемпе ыратăвĕ. Тепĕр енчен, Çеçпĕл Мишши сăвăçăн тĕнче курăмне шăпах поэзи тата кулленхи пурнăç никĕслесе тăрать. Апла пулсан çак çырусенче те поэт чунĕ пачах çухалма пултарайман. Çавăнпа та çырусен авторне поэзи чунлă чăваш çынни

тесе каламалла, çырăвĕсене хăйсене вара илемлĕ литература еннелле туртăнакан пурнăç документчĕ темелле.

Çакна та палăртмалла: Анастасия Червякова патне янă çырусенче сăвăç хăй сăнарне (хăйне хăй хак парса) калăплать. Çырусенче пачах та урăх Çеçпĕл куç умне тухать: кунта вăл кăвар чĕреллĕ кĕрешӳçĕ мар, ачаш та черчен чунлă, йĕри-тавра пулса иртнине чĕре патне çывăха илекен, юрату кăварĕпе çунакан тата асапланакан çамрăк. Акă илер-ха темиçе тĕслĕх: «…пĕлетĕп, эпĕ сăнсăр, мана художник, çыравçă тесе, сударыня, шӳтлесе чĕннине те пĕлетĕп»; «Эсир – чаплă, чипер, тĕлĕнтермĕш, хĕвеллĕ, эпĕ вара… Эпĕ ниме тăман,курăмсăр, пулăхсăр…»; «Мĕн тери тертлĕ… пурăнма, мĕн тери йывăр хăвна пулăхсăр çын пек туйса пурăнма»; «…мĕн таран тунсăх халĕ. Мĕнле хавшак эпĕ. Мĕнле япăх, илемсĕр манăн харпăрпурнăç»; «Сирĕн çумра пуласси – маншăн телей, анчах эпĕ нихăçан та хамăн телее парти ĕçне сиен кӳсе илме шутламан»; «эпĕ хам валли ним ыйтмасăр юратнă Сире. Çакнашкал юрату нихăçан та тепре пулмĕ»; «халĕ манра яшлăх, пурнăç хаваслăхĕ, çамрăлăх çук, яшлăхри чун вăйĕ çук».

Çак йĕркесене пĕр енлĕн çеç хаклама юрамасть. «Çеçпĕл хăйĕн çитменлĕхĕсене хаярăн питлени пачах вăл хăйне мĕскĕнлетнине пĕлтермест, – асăрхаттарать, тĕслĕхрен, В.Г. Родионов ăсчах. – Çапла майпа вăл хăйне çирĕплетсе те аталантарса пынă. Çакă вара унăн таса идеалне – пĕртанлăх тата ирĕклĕх шухăшĕсене – упраса хăварма пулăшнă». Çавăнпа пĕрлех сăвăç çырăвĕсенчен илнĕ йĕркесем XX ĕмĕр пуçламăшĕчи чăваш халăхĕн тĕнчекурăмне те уçса параççĕ темелле. Кунта эпир чăваш çыни ытти халăхсем (вырăссем) умĕнче именерех тăнине, хăйĕн пултарулăхĕпе вăйне шанманнине куратпăр.

1920 çулта сăвăç «Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Чăваш арăмне» сăвăсем çырнă. Ку хайлавсем ун пултарулăхĕче программăллă (пĕтĕм пултарулăхĕ витĕр тухакан шухăша кăтартакан) сăвăсем пулса тăнă. Çак тапхăрта Çеçпĕл чăваш халăх ирĕклĕхĕпе мăнаçланать, халăх чĕлхи, культури аталанассине тата вĕсен малашлăхĕ пулассине шанать. «Чăваш чĕлхи» сăвăра, тĕслĕхрен, вăл çак шанăça çапларах палăртать:

Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм! *Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,*
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху: *Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.*

Чăваш чĕлхине кунта «хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă», «çунтаракан çиçĕм», «вĕри вутлă çулăм» эпитетсемпе танлаштарни сăвăç туякан, ĕненекен вăя, чĕлхе вăйне кăтартать.

Шел пулин те, сăвăсене çĕр çул каялла çырнине пăхмасăрах, Çеçпĕл йĕркисем паян та çивĕч те вырăнлă янăраççĕ. Çавăнпа та «Чăваш арăмне» сăвă йĕркисем XXI ĕмĕрте пурăнакан чăвашсене каланăнах туйăнать:

Ачăрсене вĕрентме те
Эсĕр ан ӳркенĕр:
Чăваш çĕрне юратмашкăн
Вĕсене вĕрентĕр.

Ачăрсем чăваш чĕлхишĕн
Тăма хатĕр пулччăр,
Ют халăхсем ĕлĕкхин пек
Чăвашран ан кулччăр.

Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕнче халăхпа чĕлхен вăйне, лайăх пуласлăхĕпе шăпине шанни çеç мар, халăхăн тата уйрăм çыннăн ирĕклĕхĕ, пĕртанлăхĕ тата тăванлăхĕ тĕп мотивĕсем пулса тăнă. Сăмахран, «Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути» сăвăра ирĕклĕх ăнлав хăй тĕллĕн çӳрекен уйрăм сăнар пулса тăнă. «Ирĕклĕх» кунта тӳреммĕнех «хĕрлĕ ялав» ăнлавпа – революци, çĕнĕ пурнăç палли–символĕпе çыхăннă. Çавăнпа пĕрлех, сăвăç «Ирĕклĕхе» «тĕрĕслех, ыр ĕç», «чăн телей» ăнлавсемпе пĕр рете лартать. Паллах, кунта вăхăт палли – пуян, чиркӳ таврашĕнчи çынсемпе чухăн çынсен, ĕç халăхĕн хушшинчи хирĕçӳ, хаяр кĕрешӳ пыни тĕп вырăнта тăрать. Халăх ирĕклĕхне пусарма тăрăшакан вăйсене сăвăра «йытă», «çăлен-калта», «ылтăн тумлă эшкер», «харам пыр», «тискер кайăк», «вупăр тавраш», «хура хаяр» сăнарлă танлаштарусемпе палăртнă. Сăвăри ырă вăйсем – «йăмăх хĕрлĕ ялав», «таса Ирĕк ялавĕ» – тăшмансене çĕнтерессе иккеленмест лирика геройĕ. Çавăнпа та сăвăра революциллĕ хавха та вăйлă янăрать.

«Йывăр шухăшсем» сăвă хавхи вара пачах урăхла. Ку хайлаври лирика геройĕ пуласлăх ĕмĕчĕпе мар, сӳннĕ ĕмĕтсен тунсăхĕпе пурăнать. Сăвă ячĕ хăйех çакна систерет. Çавăнпа та кунта «ĕмĕт сӳнчĕ», «сивĕ çапрĕ», «вăйăм чакрĕ» сăмах çаврăнăшĕсем мала тухаççĕ. Анчах лирика геройĕ çакăнпа килĕшесшĕн мар, вăл чăваш çынни, чăваш чĕлхи пĕтессине хирĕç тăрать, вĕсемшĕн вилме те хатĕр. Сăвăри «чĕрем хыпса çунтăр», «сив кĕл пултăр», «хаяр çилпе вĕçсе пĕттĕр», «чуна вилĕм кĕтĕр», «масар çине кайса чиктĕр», «ĕмĕр çил улатăр», «йăвăçсене суллатăр», «вĕлтĕрен тăхăнтăр», «çĕлен шăхăртăр» текен йĕкесем вĕрӳ-суру чĕлхинчи ылхан сăмахĕсем пекех янăраççĕ. Сăвăç хăйне те, тăван чĕлхене сутакансене те ылханать тейĕн çав.

1921 çул çырнă «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăввăн жанрĕ кăсăк. Çеçпĕл ăна «ирĕклĕ çырнă сăвăсем» тесе палăртнă. «Ирĕклĕ çырнă сăвăсем тесе стих тăршшĕнче (метр) умлă-хыçлă ударенисем пур çĕрте те пĕр пек пыманнине калаççĕ, – тесе ăнлантарать жанр хăйне евĕрлĕхне сăвăç. – Çавăн пек сăвăсен стих тăршшĕ те пĕр пек мар. Вĕсем ытла кĕвĕллех мар вара». В.Г. Родионов ăсчах асăрханă тăрăх, çак шухăша каланă чух Çеçпĕл хăй сăввин кĕвĕлĕхне силлабика-тоникăпа танлаштарать тата В. Брюсов вырăс сăвăçин вĕрентĕвĕ çине тайăнать: йĕркесерен тĕрлĕ картсем улшăнса пыракан, вĕсен шучĕ йĕркесенче тĕрлĕрен килекен сăвăсене вырăс теоретикĕ «свободный стих» тесе палăртать. «Чăн

чĕрĕлнĕ!» сăвва Çеçпĕл шăпах çак кӳлепене тĕпе хурса хайланă, вырăн-вырăнпа силлабика-тоникăн таса виçисене те кĕртнĕ. Сăввăн аяларах илсе панă тĕслĕхĕнче, сăмахран, шăпах силлабика-тоникăри ямб виçи ирĕклĕ виçепе улшăнса тăнине курма пулать:

Чăваш çынни авал чухне	— ˊ– — ˊ– — ˊ– — ˊ–	ямб виçи
Пуçне чиксе шăппăн çӳренĕ,	— –ˊ — –ˊ –ˊ– — — ˊ— —	ирĕклĕ виçе
Тункатаран та шикленнĕ...	— ˊ— — ˊ— –ˊ– — ˊ— —	ирĕклĕ виçе
Чăваш чĕлхи асап айне	— –ˊ — –ˊ — –ˊ– — –ˊ	ямб виçи
Путарăннăччĕ ун чухне...	— –ˊ — — — –ˊ– — —	ирĕклĕ виçе

«Чăн чĕрĕлнĕ!» сăвă Çеçпĕл пултарулăхĕнчи ирĕклĕ виçепе çырнă пĕртен пĕр хайлав мар, «Кĕпер хывăр!» сăвăра та сăвăç французсен верлибрĕпе (ирĕклĕ сăввăн тепĕр тĕсĕ) усă курать.

Çеçпĕл Мишши чăваш литературинче пултаруллă сăвăç, унран та ытларах гениллĕ сăвăç, пулса çырăнса юлнă. Çакăнпа пĕрлех вăл илемлĕ литературăн ытти жанрĕсенче те хăйĕн ятне палăртнă. Сăмахран, 1918 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленсе тухнă статьясенчех («Çапла пулăшатăр-и?», «Пирĕн вăй», «Чăваш пурнăçĕ») публицистикăлăхпа пĕрле сăнар тăвас ăсталăхĕ те вăйлă унăн. Сăвăçăн прозăлла çырнă «Вăрман ачисем», «Юншăх» калавĕсене, «Упик» пьесине уйрăммăн асăнни вырăнлă.

«Вăрман ачисем» калавăн сюжечĕ питех те ансат: «пуйма каякан вилсе таврăннă» текен халăх каларăшне аса илтерет вăл. Хайлав шухăшĕ вара тарăн – автор кунта чăваш çыннин çут тĕнчери вырăнне палăртма ăнтăлать. Çавна май икĕ тĕнче сăнарне калăплать çыравçă. Пĕр енче – ĕлĕкхи чăваш йăли-йĕрки, тĕнчекурăмĕ, тепĕр енче вырăссемпе çыхăннă ют тĕнче тăрать. Чăваш тĕнчине Ухилле мучи сăнарĕ урлă уçса кăтартать автор. Ку вăл ĕмĕртен килекен йĕркепе пурăнма тăрăшакан ватă. Уншăн «ваттисем сывлăх пани», «ваттисен йăлине пăрахманни», «аслă Киремет» ăнлавсем пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та чăн чăваш тĕнчи те кунта вăрман варинче ларакан Ухилле мучи ялĕ пулса тăнă.

Вырăс тĕчи вара чăвашсемшĕн хаяр. Микур илĕртнипе чугун çул çине ĕçлеме тухса кайнă вунă арçынран иккĕшĕ çеç каялла çаврăнса, тĕрĕсрех каласан, нуша курса тарса килеççĕ: «Шăнкăрча вырăссем шыва сĕтĕрсе кĕрсе вĕлернĕ. Çеçпĕле вырăссем çапса вĕлернĕ. Микур тарнă. Паккая, Тяккана, Тăмпана тата Маккана вырăссем пăшалпа персе вĕлернĕ. Сӳхепия вырăссем пăшалпа пенĕ те, Сӳхепи Сăрă шывне путнă!..».

Паллах, ку калавра Çеçпĕл вырăссене хирĕç çĕкленме чĕнмест: вăл чăвашăн хăйĕн тĕнчинче, хăйĕн йăли-йĕркине хисеплесе пурăнмалли пирки калаçать. Кунтан та ытларах, «çыравçă кунта

чăвашăн ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă мифологилле тĕнчине ӳкерсе кăтартнă, – çакăн пирки шухăшласа çырать В.Г. Родионов. – Хайлав ятĕнче палăртнă вăрман ачисем – сăрт айĕнчи çырма хĕрринче пурăнакан чăвашсем. Вĕсем ку таранччен сăрт çинчи киремет хӳттинче пурăннă, халĕ вара ăна мана пуçланă иккен».

Литература теорийĕ

Силлабика-тоника сăвă хывăмĕ тесе пусăм ӳкекен сыпăксемпе пусăм ӳкмен сыпăксем черетленсе тата ушкăнланса пынине пула йĕркеленекен сăвă çырас виçене калаççĕ. Пусăм ӳкекен сыпăксемпе пусăм ӳкмен сыпăксен шутне кура силлабика-тоника виçин икĕ тĕсне уйăраççĕ: икĕ сыпăкли тата виçĕ сыпăкли. Икĕ сыпăклисен шутне ямбпа хорей, виçĕ сыпăклисен шутне дактиль, анапест, амфибрахий кĕреççĕ.

Силлабика-тоника сăвă хывăмĕ европа поэзийĕнче çуралнă. Çакă роман чĕлхиллĕ литературăсенчи силлабика сăввипе герман чĕлхиллĕ литературăсенчи аллитерациллĕ тоника сăвви пĕрлешнипе пулнă. Тĕрлĕ çĕршывсенче çак пулăм тĕрлĕ вăхăтра пулса иртнĕ: Англинче XV ĕмĕртех (Дж. Чосер тивĕçĕпе), Германинче XVII ĕмĕрте (М. Опица реформи хыççăн). Вырăс литературинчи сăвă виçине çĕнетес ĕçре М.В. Ломоносовпа В.К. Тредиаковский тӳпи пысăк.

Чăваш литературинчи силлабика-тоника сăвă хывăмĕ нумай тĕпчевçĕсен шучĕпе Çеçпĕл Мишшинчен пуçланать. Çакна сăвăçăн пĕтĕм пултарулăхĕ те çирĕплетет. Çапах та Çеçпĕл умĕнхи тапхăрта та силлабика-тоника виçипе сăвă хывни тĕл пулать.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш поэзийĕнче вырăс тата Европа литературинчи сăнарсемпе шухăшсем çеç мар, вĕсен сăвă виçийĕ те сарăлать. Уйрăмах куçарусенче. Çавăнпа та чăваш сăвăçисемшĕн тоника (силлабика-тоника) сăвă хывăмне алла илесси пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çак çĕнĕллехпе çунатланнă сăвăçсем (Г. Комиссаров, Энтри Турхан) пĕтĕмĕшле сăвă çырас ĕçĕн теорийĕпе те кăсăклана пуçлаççĕ.

Чăваш сăвăçисем ытларах ямб виçипе усă кураççĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

* * *

Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути –
Эй эс, Ирĕклĕх, хĕрлĕ ялавçăм!
Пухура, чиркӳре халь сана пур йытти
Вăрçăпа пĕтерме шав шавлаççĕ.

Ак çĕкленчĕ, çĕлен-калта пек чашкăрса,
Ылтăн тумлă эшкер сана хирĕç;
Урса кайрĕ, ылханчĕ, шăлне хăйраса,
Пуп таврашĕ, мĕнпур харам пырĕ.

Чухăнсем вăй илнишĕн вĕсем халь хаяр, –
Кăмăл çук-çке влаça вĕçертмешкĕн.
Халăх юнĕ юхать çĕр çинче тин çеç мар
Çав тискер кайăк пек ирсĕрсемшĕн.

Урччăрах! Халăх тусĕ нумай пирĕнпе,

Витмен мар вĕсене те куççулĕ.
Аслă ĕçшĕн вĕсем шав тăрсан пĕр çын пек, –
Пирĕн хĕрлĕ ялав çӳлте пулĕ!

Таса Ирĕк юрри чĕререн янрама,
Вĕсем сывă пулсассăн, пăрахмĕ;
Тĕрлĕ вупăр тавраш хăйсене пуйтарма
Чухăна-мĕскĕне тек пăваймĕ.

Тăвансен çапăçса пуç хумашкăн тивсен,
Вĕсем Ирĕклех, тĕрĕслех, ыр ĕç
Пур хура хаяра çĕнтерсе килессе
Ĕненсе те шанса çĕре кĕрĕç.

Пĕрисем, ылтăн тинĕсĕнче чӳхенсе,
Ĕççĕрех савăнса ыр куратчĕç;
Теприсем, ĕмĕрех çăкăршăн тертленсе,
Асаппа нушаран тухаймастчĕç.

Иртĕ çав самана: Ирĕкпе чăн телей
Чурасен ӳплине те çутатĕ;
Хурлă, сӳрĕк куна кивĕ ĕмĕрпеле
Таврăнми аякка кунтан тартĕ.

Халь эпир, пур вăя халăха пиллесе,
Выçă халăхшăн хатĕр вилмешкĕн;
Тавтапуç калĕç час çĕтĕк-çатăк çынсем
Пирĕн паттăр та ырă ĕçсемшĕн.

Чухăн çыннăн хӳтти – йăмăх хĕрлĕ ялав!
Ташмансем умĕнче пуç усмастпăр.
Варкашсем, таса Ирĕк ялавĕ, эс шав,
Чи çӳлте парăнми варкăшса тăр!
1918.

Йывăр шухăшсем

Шупашкартан тухрăм, тӳрех утрăм,
Атăл тăвайккийĕ çине ухрăм.

Акă куçăм умĕнче чăваш çĕрĕ...
Тăван çĕршыв тавра чунăм вĕçрĕ.

Атăл шавланине итлерĕм:
Чуна лăплантарса пули терĕм.

Анчах канăççăр чунăм лăпланмарĕ,
Пуçран йăвăр шухăш каймарĕ.

Тăван çĕршыв, сана ĕненеттĕм,
Пулас мухтавлăхна сиселтĕм...

Халиччен шанчăкпа чĕре çунчĕ...
Паян теме сиссе ĕмĕт сӳнчĕ.

Шанчăксăр чунăма сивĕ çапрĕ,
Сивĕннĕ чĕрере вăйăм чакрĕ.

* * *

– Килсем часрах, чăваш поэчĕ! –
Тесе яланах чун чĕнетчĕ.

Шухăшлаттăм: акă талан килĕ –
Тăван çĕршыв чĕлхине илем килĕ.

Çырулăхăн пулĕ тĕрĕс çулĕ,
Кĕнеке те пулĕ çĕршыв мулĕ...

Анчах кунсем, çулсем иртсе кайрĕç,
Чăваш поэчĕсем сас памарĕç.

Хальччен шанчăкпала чĕрем çунчĕ,
Паян кун чĕрере ĕмĕт сӳнчĕ.

Шанчăксăр чунăма сивĕ çапрĕ,
Хуйхăллă чĕрере вăйăм чакрĕ...

* * *

Тăван çĕршыв, е сан та вăю пĕтрĕ?
Е чăваш чĕлхин хăват çĕтрĕ?

Е ют чĕлхесем ӳснĕ майĕ
Чăваш чĕлхи çĕтсе, пĕтсе кайĕ?

Е чăваш çынни, чăваш ялĕ
Сарлака çĕр çинчен çухалĕ?..

Алла пулсан... чĕрем хыпса çунтăр.
Чĕрем хыпса çунса сив кĕл пултăр

Сив кĕл хаяр çилпе вĕçсе пĕттĕр,
Сивĕ çапнă чуна вилĕм кĕтĕр.

Ват асатте çиллĕ тăвăл витĕр
Мана масар çине кайса чиктĕр.

Тăпрам çинче ĕмĕр çил улатăр,
Ватă йăвăçсене суллатăр.

Вил тăпри вĕлтĕрен тăхăнтăр,
Пуçăм çинче çĕлен шăхăртăр.

1921.

Чăн чĕрелнĕ

Ирĕклĕ çырнă сăвăсем

Эй, ваттисем! Иртнĕ ĕмĕрĕре
Асап чăтса ирттернисем!
Мĕн авалтан чăваш чĕлхи
Асап чăтни аса килет-и сире?
Сире аса килет-и авалхи?
Шухăшлăр-ха! Астăвăр, ваттисем!

Чăваш çынни авал чухне
Пуçне чиксе шăппăн çӳренĕ,
Тункатаран та шикленнĕ...
Чăваш чĕлхи асап айне
Путарăннăччĕ ун чухне...

Эй, ваттисем!
Эй, ват çынсем!
Авал чăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр:
Тăван çĕршывăн капăр чĕлхине
Ялан савма хушса хăварăр.
Эй, ваттисем! Пĕтĕм чĕререн
Сире пиллетпĕр ыр пилпе:
Эпир асапсене парăнманнипе
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен.

Кăвак хуппи пĕлĕт тăрĕнчен
Чăваш çĕрне çутатса ячĕ.
Тăван çĕршыв чĕлхи хăвачĕ
Чĕрĕлсе тăчĕ вилĕмрен.
Чăваш чĕлхи текех чухăн мар!
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен.
Эй, чăвашсем! Пĕтĕм чĕререн:
– Чăн чĕрĕлчĕ! – тесе кăшкăрар.

Эсир тата, вĕри чунсем!
Кăвар чунсем, яшсем, хĕрсем!
Каç-кăç урамсене тухса,
Кĕвĕллĕ юрăсем хурса,
Тăван çĕршывăн чĕлхине
Мухтав тума манса кайман-и?
Чăваш чĕлхин хĕвеллĕ илемне
Чунтан савса тăма манман-и?

Пур çамрăксем! Çунат хушар:
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен!
Эй, çамрăксем! Пĕтĕм чĕререн:
– Чăн чĕрĕлнĕ! – тесе кăшкăрар.

Тăван çĕршыв вăрманĕсем!
Чечек çеçки тăхăннă улăхсем!
Чăваш чĕлхи хăвачĕ кăмăлне
Мухтав юрри шавласа янрăр:
– Авал асап чăтнă вырăнне
Чăваш чĕлхи хăватлăлантăр!

Сĕм вăрмансем, шавласа ларăр:
– Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен! –
Уйсем, варсем! Вĕçе-вĕçĕмрен:
– Чăн чĕрĕлнĕ! – тесе ян ярăр.
Чăваш чĕлхи текех чухăн мар!
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен.
Эй, чăвашсем! Пĕтĕм чĕререн:
– Чăн чĕрĕлчĕ! – тесе кăшкăрар.
1921.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Çеçпĕл Мишшин «Вăрман ачисем» калавне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: https://chuvash.org/lib/haylav/252.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе явatпăр*

1. Çеçпĕлĕн тĕнче курăмĕ мĕнле улшнăса пынă? Çак улшăну унăн хайлавĕсенче палăрăнать-и?
2. Сăвăçăн поэзинчи новаторлăхĕ мĕнре курăнать? «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статйине мĕнле хак пама пултаратăр? Пĕлтерĕшне палăртăр.
3. Çеçпĕлĕн çыру жанрĕ мĕнпе палăрăнса тăрать? Çырусенчи Çеçпĕл сăнарĕ сăвăсенчи Çеçпĕл сăнарĕпе тӳр килет-и? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
4. Çырусенче Çеçпĕл хăйне хăй сăнлакан сăмахсене (тĕслĕхрен, «самолюбив», «заурядный человек», «безобразен», «ничтожен», «невзрачен», «никчемен» тата ыт. те) тупса палăртса чăвашла куçарăр. Вĕсем вырăсла тата чăвашла пĕрешкел пĕлтерĕшпех çӳреççĕ-и? Сăвăç хăй вĕсене мĕнле пĕлтерĕшпе усă курать? Чăваш çыннин менталитет уйрăмлăхне шута илсен çакнашкал хаклава мĕнле ăнлантарма пулать?
5. Çеçпĕл Мишши хайлавĕсенче мĕнле мотивсем тĕп, мĕнлисем хушма?
6. Сăвăçăн синкерлĕ вилĕмĕн сăлтавĕсем мĕнре-ши?
7. «Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути», «Йăвăр шухăшсем», «Чăн чĕрĕлнĕ! Ирĕклĕ çырнă сăвăсем» сăвăсенчи лирика геройĕсене мĕнле сăнарлама пулать?

¤ *Пултарулăх ĕçне тăватпăр*

Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе çыхăннă тĕрлĕ пулăмсене аса илсе поэтăн «çул çӳрев картине» ӳкерĕр.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Родионов В.Г. Сеспель – цветок Земли и Неба. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2014. 271 с.

Кăвар чĕре: поэт çинчен аса илнисем / В.А. Долгов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. 180 с.

Сеспель М. К. Собрание сочинений. Чебоксары, 1999. 384 с.

Наш Сеспель: стихи, проза, статьи и письма М.К. Сеспеля. Воспоминания о поэте. Посвящения. Чебоксары: ЧГИГН, 1999. 260 с.

Ермакова Г.А. Сакральное в лирике М. Сеспеля и Г. Айги. Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2007. 59 с.

☼ *Сочинени темисем*

1. «Кăвар чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар!»

2. Мĕн калĕччĕ-ши Çеçпĕл паянхи çамрăксене?

♫ *Проектсем*

1. Çеçпĕл паянхи чăваш (Раççей) культуринче (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).
2. Çĕнĕлле вулатпăр Çеçпĕл сăввине... (*ушкăнла тĕпчев*).
3. Çеçпĕл Мишшин пултарулăхĕнчи пăлхавçă сăнарĕ (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).

Δ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Çеçпĕл Мишшин «Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути», «Йăвăр шухăшсем», «Чăн чĕрĕлнĕ! Ирĕклĕ çырнă сăвăсем» сăввисенчи символсене тупса палăртăр. Вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарăр. Пĕлтерĕшне кура ушкăнлăр.

Ω *Пăхмасăр вĕренетпĕр*

Çеçпĕл Мишшин «Йăвăр шухăшсем» сăвви.

ЧĂВАШ ДРАМАТУРГИЙĔН МАЛТАНХИ УТĂМĔСЕМ



Ăслăлăх анинчен

«"Атăл кĕввисем" маншăн – режиссершăн та, драматургшăн та пит пĕлтерĕшлĕ спектакль пулчĕ: кинора ĕçленĕ вăхăтра, уйрăмах Мускавра ĕçленĕ чух, эпĕ тăван театрăн чĕри тапнине – актерсемпе актрисасен халне, пултарулăхне курман. Ку спектакльте театр сăн-пичĕ уççăн курăнчĕ. Çав çулхи хĕллехи сезона уçма «Çĕр çĕкленет» драмăна кашни артистăн пултарулăхне, ăсталăхне асра тытса, произведени пулас сăнарĕсене сцена çинче курса çыртăм. «Сатурпа Илем» драмăри, «Кĕпер» комедири рольсене те выляс актерсен пултарулăхĕсене курса çыртăм. Пит ăнăçлă çырăнаççĕ пьесасем çав меслетпе ĕçлесен» (*И.С. Максимов-Кошкинский, çыравçă*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

XX ĕмĕрти чăваш драматургийĕ, пĕтĕм литератури пекех, халăх сăмахлăхĕ тата XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи çырулла культури çине тайăнса аталаннă. Çапла чăваш халăх сăмахлăхĕнче, сăмахран, притча евĕрлĕ юрăсемпе каланисем анлă сарăлнă. Чăваш культуринче чăнласах та çакнашкал текстсем пурри пирки вара 1850-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех С. Михайлов-Янтуш çырса хăварнă.

Шăпах çакăн евĕр фольклор хайлавĕсенчен чăваш драматургийĕ текста калаçу пек йĕркелес хăнăхăва, илемлĕх мелĕсене (сасăсене, сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене тата предложенисене темиçе хут калани, сăмах пĕлтерĕшне юри пăсни, стиль йĕркелекен ытти хатĕрсене) илнĕ. Вĕсемпе ытларах камит жанрĕнче усă курнă.

Фольклор хайлавĕсемпе пĕр шайрах чăваш драматургийĕ çине историпе этнографи очеркĕсем те витĕм кӳнĕ. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх (В.Г. Родионов) вĕсене питĕ çăмăллăн сцена çинче лартма пулать, уйрăмах çак текстсенче ку е леш йăлана сăнласа панă пулсан. Акă, С. Михайлов-Янтуш çырнă «Чăваш туйĕ» очеркра пĕрешкел персонажсен калаçăвне илсе панă, вĕсенчен хăшĕ пĕрне персонифицилене те. Персонажсем тăвакан ĕç-пуçа çырса панине те анлă ремаркăсемпе танлаштарма пулать.

Пирĕн ăслăлăхра чăваш драматургийĕ театртан çуралса тухнă текен шухăш пур. Тĕрĕс сăмах. Аса илер-ха хамăр Аслă Çутта кăлараканăмăра И.Я. Яковлева тата унăн Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулне. Шăпах çак вĕренӳ учрежденийĕн сцени çинче малтан музыка хайлавĕсене (сăмахран, М. Глинкан «Иван Сусанин» оперин сыпăкĕсене), каярах шкул спектаклĕсем ларта пуçланă. Çав вăхăтра пурăннă çынсем аса илнĕ тăрăх, И.Я. Яковлев пĕтĕм театр искусствисенчен ытларах оперăна кăмăллана. Çапах та Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем 1903 çулта шкул сцени çинче Н. Гогольăн «Женитьба» тата Д. Фонвизинăн «Недоросль» камичĕсене кăтартнă. Çак çулах Г. Комиссаров «Выртмара» ятлă пьесине çырса пĕтернĕ, ытти вĕренекенсем ăна сцена çинче кăтартас тесе ĕçле пуçланă. Çавăн пекех кунта унăн çак çулсенчех çырнă «Чăваш туйĕ (Ваçук авланни)» тата «Авлану» пьесисене те асăнмалла.

Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă çынсенчен нумайăшĕ вĕреннĕ вăхăтра çеç мар, хăйсен малашнехи пурнăçĕнче те чăваш драматургийĕн аталанăвĕ çине витĕм кӳнĕ. Акă, сăмахран, 1917 çулта Типнер ялĕнчи халăх театрĕн ертӳçи Ф. Павловпулса тăрать. Хăйĕн паллă «Сутра» камитне те пĕрремĕш хут шăпах çак ял театрĕн сцени çинче 1917 çулта кăтартать вăл.

Чăвашсен профессиллĕ театрĕн тата литературăри драматурги жанрĕн аталану çул-йĕрĕ тӳреммĕнех **Иоаким Максимов-Кошкинскийĕн** (*Максимов-Кошкинский Иоаким Степанович, 1893-1975*) ячĕпе çыхăннă. Хусан художество шкулĕнче вĕреннĕ çулсенчех вăл театрпа çыхăну тытнă, хула театрĕнче статист пулнă. Çавăнпа пĕрлех ултă çула яхăн çак театрта кăтартнă пĕтĕм спектакльсене пăхса тишкернĕ.

И. Максимов-Кошкинский яланах сцена çинче чăваш спектакльне лартма ĕмĕтленнĕ. Çак ĕмĕт ăна хăйпе пĕрле вĕренекен тата икĕ чăвашпа пĕрле (К. Васильев, П. Федоров) чăваш спектакльне лартма ушкăн пуçтарма пулăшать. М. Максимов-Кошкинский хăй аса илнĕ тăрăх çак ушкăна – чăвашсен малтанхи драмкружокне – 50 яхăн çын çырăнать. Çак вăхăталла чăваш литературинче хăй евĕрлĕ пьеса пĕрре çеç пулман пулсан та (К. Иванов трагедийĕ, Ф. Павловпа Н. Шупуççынни камичĕсем, М. Акимов социаллă драми тата ыт. те) чăваш режиссерĕ А. Островскийĕн «Ху пурăнас тенĕ пек ан пурăн» ятлă драми тăрăх спектакль лартма йышăнать. Çак спектакле пĕрремĕш хут 1918 çулхи кăрлач уйăхĕ 27-мĕшĕнче купцасен клубĕ пулнă çуртра выляса панă.

Пĕрремĕш куçарăвĕпе пĕрле Максимов-Кошкинский хăй те драма хайлавĕсем çыра пуçлать. Çапла, 1924 çулта унăн малтанхи икĕ пысăках мар пьеси пичетленсе тухать: 1905 çулхи революцине çутатса паракан «Хум» тата граждан вăрçине сăнарлакан «Шăпăрлансем» ятлă хайлавсем. 1925 çулта вара çĕнĕ совет ялĕн кĕрешĕвне кăтартакан «Хĕрлĕ шуйтан» ятлă пысăках мар драма пичетленет.

Хăй каланă тăрăх, И. Максимов-Кошкинскийĕн литературăри пĕтĕм ĕçĕ Чăваш театрĕн тата «Чăвашкино» кунçулĕпе çыхăнса пынă. Хăйĕн асаилĕвĕсенче вăл çапла çырать: «Хам ĕмĕрте эпĕ 40-е яхăн пьеса куçарнă, вĕсенчен 6-не чăвашлатнă, оригиналлă пьесасем, киносценарисем, операпа оперетта, балет либреттисем – 30, калавсемпе асаилӳсем – 20 ытла çырнă; сцена çинче 64 роль, кинора 10 роль выляннă». Чăнласах та драматург-режиссерăн пĕтĕм хайлавĕ хăй вырăнне чи малтанах театр сцени çинче тупнă. Вĕсен шутĕнче 1940-мĕш çулсенче çырнă «Пугачев парни» («Ăру вĕçĕ») драмăна, вăрçă çулĕсене çутатса паракан «Савнисем», «Сенкер двойка», «Ачамăрсем», «Телейлĕ çуркунне» пьесăсене, «Тăвăл хыççăн тăвăл» («Константин Иванов») драмăпа «Савăнăç хуçисем» камите, 1960-мĕш çулсенче Тани Юнпа пĕрле çырнă «Эх, Иван», «Чĕре хушнипе», «Аптаранă кăвакалсем» ятлă камитсене асăнмалла.

ХХ ĕмĕрти чăваш культуринче И. Максимов-Кошкинский ячĕ чăваш таетрĕпе киноне пуçарса яраканĕ пек çырăнса юлнă. Чăвашла вылявлă илемлĕ фильм ӳкерессипе драматург 1925 çулта интереслене пуçлать, 1926 çулта вара «Чăвашкино» студи йĕркелет. Çак тапхăра режиссер акă мĕнле аса илет: «Ку ĕçре мана хавхалантараканĕ те, пулăшаканĕ те чăвашсен малтанхи киноактриси Тани Юн пулчĕ. «Чăнах та, украинецсем, грузинсем, армянсем, Вăтам Азири хăшпĕр халăхсем хăйсен пурнăçĕ çинчен фильмсем ӳкереççĕ, мĕншĕн-ха эпир,

чăвашсем, ӳкерместпĕр?» – терĕмĕр те, эпĕ Чăваш обкомĕпе, облаç пуçлăхĕсемпе калаçса татăлтăм та, «Атăл пăлхавçисем» ятлă киносценари çыртăм, Ленинградри «Севзайкино» ятлă киностудипе пĕрле фильм ӳкертĕмĕр. Çапла пуçланса кайрĕ «Чăвашкино». Ултă çул хушшинче эпир «Сарпике», «Хура юпа», «Ял», «Киремет кати» ятлă фильмсем, «Чăваш çĕршывĕ», «Октябрь тивлечĕпе», «Чăваш çырулăхĕ пуçланни 60 çул» ятлă документлă фильмсем ӳкертĕмĕр. Сценарисене пурне те тенĕ пек хам çыртăм. «Киремет катипе», «Асту» сценарисене çеç А. Чистяковпа Н. Мранька писательсемпе пĕрле çыртăм». Асăннă мĕн пур илемлĕ фильмсенче тĕп хĕрарăм рольне режиссер мăшăрĕ Тани Юн (Татьяна Степановна Бурашникова) актриса выляннă. 1931 çулта «Чăвашкино» Мускаври «Востоккино» студипе пĕрлешет, 1932 çулта «Асту» фильм тухнă хыççăн вара пуçĕпех хупăнать. Çакăн сăлтавĕ чи малтанах сасăллă кино çуралнипе çыхăннă. Ăна ӳкерме хаклă техника кирлĕ пулнă. Кун пек укçа–тенкĕ «Чăвашкино» студин пулман. Чăваш илемлĕ фильмĕсем пурте сасăсăр картинăсем пулнă.

Шел пулин те, 1930-мĕш çулсен «хаяр сывлăшĕ» – репрессипе айăпсăр айăплас вăхăт сывлăшĕ – И. Максимов-Кошкинскийпе Тани Юн мăшăрĕ çумĕпе иртсе кайман. 1937 çулта драматурга «халăх тăшманĕ» тесе айăпласа тĕрмене лартаççĕ, Тани Юна вара «халăх тăшманĕн» арăмĕ тесе Чăваш патшалăх академи театрĕнчен, пурăннă хваттерĕнчен кăларса яраççĕ. Çав çулах актрисăна «яппун разведки» çине ĕçлекен шпион тесе айăпласа 8 çуллăха Казахстанри Караганда облаçĕчи Долинка ялне ĕçпе юсантару лагерне ăсатаççĕ. Тани Юна арестленĕ хыççăн вăл ӳкерĕннĕ пĕтĕм илемлĕ фильмсене тĕп тăваççĕ. 1940 çулхи кăрлач уйăхĕнче кăна И. Максимов-Кошкинскийпе Тани Юна, вĕсем ыйтса çырнине пăхса тухнă хыççăн, тĕрмерен хăтараççĕ, судпа айăпланине пăрахăçлаççĕ. 1956 çулта вара вĕсене пĕтĕмпех тӳрре кăлараççĕ.

«Хура юпа» илемлĕ фильм пĕрремĕш хут экрансем çине 1928 çулхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕнче тухнă. Жанр тĕлĕшĕчен ку вăл драма. Кунта революцичченхи чăваш ялĕн пурнăçне ӳкерсе панă. К. Фельдман кинокритик хаклавĕче палăртнă тăрăх («Советский экран», 1928 ç., 7 №), «Хура юпа» фильмра япăх сценари режиссер ĕçне чăмав кӳрет. И. Максимов-Кошкинский сценарийĕнче тӳрех темиçе тема аталанать: кунта лаша вăрлани те, патша вăхăтĕче вăрттă ĕçлени те, тĕрмерен тарни те, хĕрарăм вăрлани те, телейсĕр юрату та, ялти социаллă хутшăнусем те пур. Çак темăсенчен кашнинех хăйне уйрăм фильм шайĕнче уçса пама пулать. Тĕслĕхрен, илемлĕ фильмăн пĕрремĕш пайĕнче тĕрмерен тарнине кăтартнă, çакă куракана тӳрех çавăрса илсе

интереслентерсе ярать, анчах малашнехи ĕç-пуҫсем çак сыпăка пачах та кирлĕ мар туса хураççĕ. Çавăн пекех илемлĕ фильмра Атăл сăнарне, ял пурнăçĕн вак-тĕвĕкĕсене, пушар хăрушлăхне питĕ аван уҫса паракан кадрсем пур. Анчах пĕтĕмĕшле илсен сценаринче материал нумай пулнăран фильм лайăх пулса тухайман. К. Фельдман палăртнă тăрăх, çакна чăннипех те пултаруллă актерсен Максимов-Кошкинскипе Тани Юн ĕçĕ те улăштарайман.

«Хура юпа» илемлĕ фильм паянхи куна сыхланса юлман. Çавăнпа та эпир критик сăмахне хирĕçлесе хамăр шухăша калама пултараймастпăр.

1927 çул пуш уйăхĕнче Мускавра пĕремĕш хут экрансем çине тухнă «Сарпике» илемлĕ фильм та пирĕн пата сыхланса çитеймен. Унăн сценарине Н. Гарин-Михайловскийĕн «Зора» ятлă повеçĕ тăрăх çырнă. Кунта чăваш хресченĕсем çĕр улпучĕсене хирĕç кĕрешнине кăтартнă. Фильма ӳкернĕ чухне ватă çынсем чăвашсен йăли-йĕрки, чӳкĕ пирки каласа панисене нумай шута илнĕ, çавăнпа «Сарпике» те халăх каласа панă кино пулса тăнă. Илемлĕ фильмра икĕ тĕп сăнар: Атăл тата чăваш хĕрĕ Зора. Малтан Зора «ирĕклĕ çыран», хăй халăхĕн уйрăлми пайĕ. Анчах «урăх пурнăç шыраса» вăл халăхран уйрăлать, çак самантран вара унăн пурнăç синкерлĕхĕ пуҫланать.

И. Максимов-Кошкинский хутшăнса (актер, сценарист, режиссер пек) ӳкернĕ илемлĕ чăваш фильмĕсене пĕтĕмĕшле хак парас пулсан, çакна палăртмалла: вĕсенче халăхăн кулленхи пурнăçне, йăли-йĕркине тата чăн пурнăçа кăтартнă чухне натурализм пысăк.

Вăхăт хăйне евĕрлĕхĕпе истории улшăнăвĕсене пула «Константин Иванов» драмăна И. Максимов-Кошкинский виçĕ хутчен улăштарса тӳрлетнĕ. Çакă драма çырнă çулсенче историре йĕр хăварнă çынсене хаклас тĕлешрен пĕр шухăшпа курăм пулманнипе, çак курăм вăхăт-вăхăтпа улшăнса тăнипе те çыхăннă. Çапла, акă, Октябрь революцийĕ тата Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăнхи тапхăрсенче Иван Яковлевич Яковлева миссионерла (чиркӳ вĕрентĕвне сарас) тата чăвашсене вырăслатас ĕç тунă тесе айăпланă. Унран та ытларах, Яковлева Константин Иванов сăвăç вилĕмĕшĕн те айăпланă, Яковлев ăна Библи куçарма кĕртсе лартнă, имĕш, çак куçару ĕçне пула вара сăвăçăн ахаль те япăх сывлăхĕ пачах арканнă, имĕш. Çакнашкал курăм, шел пулин те, çав вăхăтра чăвашсем хушшинче çирĕп пулнă, нумай чăваш хайлавĕсен никĕсне выртнă (П. Хусанкайăн «Поэтпа миссионер» поэми, Я. Ухсайăн «Хура элчел» трагедийĕ). Обществăн çак юхăмне кĕрсе ӳкнĕ И. Максимов-Кошкинский те «Константин Иванов» драмăн пĕрремĕш

вариançĕнче К. Иванов чăваш поэзийĕн классикĕпе И.Я. Яковулев чăваш патриархĕн хушшинчи хаяр хирĕç тăрăвне сăнласа панă.

Драмăн пĕрремĕш вариançĕнче К. Иванова тĕрĕслĕхшĕн тăракан çын пек сăнарласа кăтартнă, çавăнпа та вăл чухăнсене çаратакан çĕртме пуян ашшĕне те, хăйне вĕрентекен И. Яковлева та хирĕç тăрать. Анчах çакă пĕтĕмпех вăхăт палли çеç пулнă, мĕншĕн тесен К. Иванова пĕлекенсем аса илнĕ тăрах, сăвăç политикăран та, революци юхăмĕнчен те аякра тăнă.

Сталин вилнĕ хыççăн чăваш литературинче, вырăс культуринчи пекех, «ăшăту» («оттепель») тапхăрĕ пуçланать. Çак çулсенче И.Я. Яковлев ырă ятне те тинех тавăраççĕ. 1968 çулта Чăваш республикинче Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулне уçнăранпа 100 çул, И.Я. Яковлев çуралнăранпа 120 çул çитнине паллă тунă. Çак ĕç-пуçсене халалласа И. Максимов-Кошкинский пьесăн виççĕмĕш вариантне çырать, ăна тӳрех Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Тăвăл хыççăн тăвăл» ятпа лартаççĕ. Кунта К. Ивановпа И.Я. Яковлев хушшинчи хирĕç тăрăва автор нумай çемçерех кăтартнă, патриарх ĕç-пуçне патша вăхăтĕнчи йывăр пурнăçпа тӳрре кăларнă.

Наци литературинче яланах уйрăм халăхан тĕнче курамĕ, илемлĕх туйăмĕ, йăли-йĕрки, кулленхи пурнăçĕ, шухăш-ĕмĕчĕ, ыратăвĕ тĕкĕр витĕр курăннă евĕр курăнать. Çак хăйне евĕрлĕхе хайлавра халăх чĕлхи, сăнарсен характерĕпе тыткаларăшĕ калаплать. Чăваш литератури профессиллĕ çул çине тăнă вăхăтра илемлĕ хайлавсен нациллĕх никĕсĕ уйрăмах курăмлă.

Çакăн пек хайлавсен авторĕсенчен пĕри **Федор Павлов** (*Павлов Федор Павлович, 1892-1931*) пулнă. Унăн «Сутра» камитне чăваш тĕнчине тата чăваш çыннин наци характерне ăнланса илме пулăшакан хайлав теме пулать. Çак камите тарăннăн туйса илес тесен «лару-тăру камичĕ» тата «характер камичĕ» текен ăнлавсене мала кăлармалла.

Çапла, лару-тăру камичĕ кунта пурнăç тата халăх йăли-йĕркипе çыхăннă. Мăшăрĕсене çухатнă Ухтерккепе Сăпани кинĕ тахçанах пĕр çемье пулма пăрахнă. Вĕсем хăйсем валли чун варлисем те тупнă. Анчах ял йăли-йĕрки вĕсене çемье çыхăнăвне татма чарса тăрать. Çак лару-тăру вара вĕсене сут сакки çине илсе çитерет. Сăнарсем хушшинчи хирĕç-тăру – Сăпани кинĕ Ухтерккене апат çитерменни тата ун çине алă çĕклени – хăйех камитле, мĕншĕн тесен вăл вăхатри, ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи, чăвашсен хушшинче ваттисене (ашшĕ-амăшне) хисеплеменни, вĕсен сăмахĕнчен тухни пулма пултарайман пулăм пулнă. Сăпанишĕн Ухтеркке вăрçăра вилнĕ упăшкин ашшĕ, апла пулсан вăл тăван ашшĕ вырăнĕнчех. Сюжет аталаннăçемĕн çак хирĕç-тăру

хăйне хăйех татăлать – Сăпани Ухтерккен çăкăрне (кукăльне) те туртса илмен, алă та çĕклемен (килтен хăваласа кăларса ярса хыçран типнĕ навуспа пемен) иккен.

«Сутра» пьесăра Ухтеркке сăнарĕн характер камитлĕхĕ хайлавăн кулăш тарăнлăхне уçăмлатать. Ухтеркке вăл чăваш çыннин типлă сăнарĕ. Унăн тĕнче курăмĕ, уйрăмах чĕлхи, тĕрĕсрех каласа манерĕ – чăн чăвашла. Ухтеркке кашни чăваш çынни пекех сăмаха тӳртен мар, аякран çавăрттарса, йĕплесе, вăрттăн пĕлтерĕшне систерсе калать. Çавăнпа та камитре Миравайăн (судьян) тӳрĕ ыйтăвĕ çине Ухтеркке панă хуравсем питех те кулăшла пулса тухаççĕ. Акă, тĕслĕхрен:

«М и р а в а й. Каçармастăн пулсан, судне тăвăпăр.

У х т е р к к е. Ара! Сутне ту çав, сутне ту. Ăçтан каçарас ман ăна, хăспатин миравай! Вăл мана çăкăр та памасть. Пĕлтĕр пĕрре çăкăра алранах туртса илчĕ...

М и р а в а й. Катаналла ан кай!

У х т е р к к е. Катара мар, хăспатин миравай, хамăр килтех туртса илчĕ».

Е тата:

«М и р а в а й. Калатăп сана, Ухтеркке, аяккалла ан пăрăн. Эсĕ мана ĕç çинчен кала!

У х т е р к к е. Çаплах, ара, çаплах, аяккалла пăрăнмастăп, ĕç çинченех калатăп. Пăрăнсан, май килмерĕ вара вăл. Астумастăн-и, хăспатин миравай. Çавал арманче пĕлтĕр хуçа мелникĕ пăрăс çинчен аяккалла пăрăннă та...

Миравай аллипе сулать.

У х т е р к к е. Чим-ха, каласа пĕтерем-ха. Пăрăс çинчен аяккалла пăрăннă та арман хыçне шампăлт! чăмнă. Вăт, хăспатин миравай, çапла вăл аяккалла пăрăнсан».

Паллах, илсе панă тĕслĕхсенче уйрăм çыннăн (Ухтерккен) калаçу хăйне евĕрлĕхĕ те пысăк. Вăл шухăша айккинелле пăрса яма, кирлĕ кирлĕ мар çĕрте пурнăçри тĕслĕхе илсе пама юратать.

Чăваш драматургийĕнче классика шайне çĕкленнĕ хайлавсенчен пĕри Ф. Павловăн «Ялта» драми пулса тăнă. Драматург çак пьесăна çырма Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче шут тытнă, пĕрремĕш çырса хунисем 1916 çул çине килеççĕ. Ку вăхăтра вăл Етĕрне уесчĕнче ял учителĕ пулса ĕçле пуçланă. Шăпах çакăнта драматург вăрçă çулĕсенчи ял мĕнле юхăнса арканнине хăй куçĕпе хăй курнă. Çапах та драмăна тĕплĕн çырма Ф. Павлов 1920 çулхи кĕркуннерен маларах ларайман, тепĕр çулталăк хушшинче вара пĕтĕмпех çырса пĕтернĕ. Уйрăм кĕнекепе вăл пĕрремĕш хут 1922 çулта Шупашкарта пичетленсе тухнă.

Драматургăн драмăна улăштарас кăмăл пулнă, анчах çакна тума ĕлкереймен вăл. Çав вăхăтрах «Ялта» драмăна театрта лартнă режиссерсемпе пичете хатĕрленĕ редакторсем пĕрре мар улăштарнă.

Драмăна тишкерсе хак парас ĕç нумай çулсем хушши тĕрлĕ енлĕ пулман, уйрăмах совет литературин тапхăрĕнче (1918-1991 çç.). Çак тапхăрта хайлавăн социаллă хирĕç-тăрăвне (конфликтне) мала кăларас туртăм вăйлă пулнă. Çав вăхăтрах кунта юрату конфликчĕ те тарăн пулнине палăртмалла, тĕнчекурăм хирĕç-тăрăвĕ те анлă.

Çак тĕлĕшрен уйрăмах Елюк сăнарĕ курăмлă. Унăн шăпи революцичченхи пиншер чăваш хĕр – хĕр арăмĕн шăпипе тӳр килет. Юратнă Ванюкне качча тухнине пăхмасăрах, хăй чăн телейне тупаймасть вăл. «Юрату виçкĕтеслĕхĕ» унăн пĕтĕм пурнăçне аркатать, вилĕм патне илсе çитерет. Драмăна вуланăçемĕн кам – Ванюк е Çтаппан – вăйлăрах юратать-ши ăна текен ыйту çуралать. Пĕр енчен пăхсан, иккĕшĕ те юратаççĕ пек. Анчах иккĕшĕ те Елюк çине хăйсен харпăрлăхĕ пек пăхаççĕ. Пушар хыççăн ывăлĕ вилни, юратнă Ванюкĕ вилни пирки хут илни, шыва путса вилме хăтланни хĕр арăмăн чунне те, пуçне те сĕрĕмлетнĕ. Паллах, çак инкексемшĕн пĕтĕмпех Çтаппан айăплă. Анчах Ванюк та арăмне пачах та хĕрхенмест. Пĕрремĕш хут çак хаярлăх салтака кайнă чух çиеле тухать: пӳрт алăкне вăхатра уçманшăн мĕнле кăна усал сăмах каламасть вăл? Драма вĕçĕнче Елюка перçе пăрахни те çак хаярлăх палăрăмĕ. Ванюк та, Çтаппан та чи малтанах хăйсем пирки шутлаççĕ, Елюк кăмăлĕ вара вĕсемшĕн пĕлтерĕшлех мар.

Драмăн наци хăйне евĕрлĕхне тарăнлатма Ф. Павлов халăх юррисăввипе анлă усă курать. Пĕтĕмĕшле хайлаврa 10 юрă: кулленхи лирикăлла, вăйă, йăла-йĕрке юррисем. Вĕсене хайлава кĕртсе драматург çавăн пекех курăмлă музыка фонĕ те тăвать. Сюжет аталанăвĕнче трагедиллĕх ӳссе пынине кăтартма, сăмахран, туй юррисем пулăшаççĕ. Вĕсем пĕтĕмĕшле хайлавăн 4 курăнăвĕн никĕсне выртнă, хăйсен пĕлтерĕшĕпе çак юрăсем сăнарсен калаçăвне те иккĕмĕш плана куçараççĕ.

Литература теорийĕ

Йăла-йĕрке сăмахлăхĕ тесе тĕрлĕ йăла-йĕкере (календарлă уявсенче (сурхури, улах, çăварни тата ыт. те), туйра, çын пытарнинче, салтак ăсатнинче тата ыт. те) çеç уçăмланакан халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсене калаççĕ. Вĕсем икĕ тĕлĕ пулаççĕ: сăвă-юрăлла тата прозăлла. Прозăлла йăла-йĕрке сăмахлăхĕ шутне вĕрӳ-сурупа ылхану, кĕлĕсемпе чĕлхесем, тупмалли юмахсем, ырă сунусемпе пилсем, пĕр çын (монолог) тата ушкăн (диалог) калаçăвĕсем кĕреççĕ.

Чăваш драматургийĕ хăйĕн пĕрремĕш хайлавĕнченех йăла-йĕрке сăмахлăхĕпе анлă усă курнă. Çакă çыравçăсене малтанхи тапхăрта çĕнĕ жанра алла илме кирлĕ пулнă. Кунта уйрăмах туй йăла-йĕрки сăмахлăхĕн тӳпи пысăк (Г. Комиссаров «Чăваш туйĕ (Ваçук авланни)», «Авлану»). Каярахри вăхăтра вара вĕсемпе чăваш тĕчине калăплама, характерсене тарăнлатма, сăнарсен хăйне евĕрлĕхне палăртма усă курнă (Ф. Павлов «Ялта», П. Осипов «Айтар»).

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Иоаким Максимов-Кошкинский

САТУРПА ИЛЕМ

4 актлă, 6 картинăллă драма (сыпăк)

ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

Сатур – художник.
Илем – музыкант.
Хĕлип – редакци секретарĕ.
Кавĕрле – учредительнăй пуху членĕ.
Лена – редакцире ĕçлекен хĕр.
Праски – редакци технички.
Таня – кĕпе-йĕм çуса пурăнакан.
Асамат – корректор.
Иван Васильевич – рабочи.
Громов – матрос.
Васильев, Закиров – рабочисем.
Антонов – офицер.
Иванов – губком секретарĕ.
Шакмак – шуррисен офицерĕ.
Сармантей – хуçа ачи.
Клавдюша – гимназистка.
Кил хуçи арăмĕ.
Капитан.
Штабри салтак.
Часовой.
Дозорнăй.
Хĕрлĕ армеец.
Почтальон.
Рабочисем, хĕрлĕ армеецсем, матроссем, шуррисен салтакĕсем.
Драмăри ĕç 1918 çулта, Атăл хĕрринчи пĕр хулара пулса иртет.

ПĔРРЕМĔШ АКТ

Пĕрремĕш картина

Редакци. Икĕ алăк, балкон. Виçĕ сĕтел, пукансем. Стена çумĕнче телефон. Чаршав уçăличченех корнетпа чăваш кĕвви калани илтĕнет. Чаршав ерипен уçăлать.

П р а с к и пӳлĕме пуçтарать. Урайĕнчи хут татакĕсене пухать те балкон алăкне уçса ярать. Параппан сасси çывхарать.

П р а с к и (*балкон çинчен урамалла пăхса*). Илем! Илем!

Корнет сасси чарăнать, И л е м кĕрет. Аллинче корнет.

И л е м. Мĕн кăшкăратăн, Праски?

П р а с к и. Кил-ха кунта. Куратăн-и, кам пырать?

И л е м (*балкон çине тухса*). Куратăп. Хĕрлĕ гвардеецсем килеççĕ.

П р а с к и. Лайăхрах пăх... Малта, малта кам пырать? Сăран пиншакли çумĕнче...

И л е м. Ăçта?

Пауза. Параппан сасси çывхарать.

Чим, ман пӳлĕмрен куçлăх илсе килччĕ. Сĕтел çинче выртать.

П р а с к и каять. И л е м параппан çапнă майăн корнетпа марш калать.

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц васкаса кĕрет.

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц. Юлташ! Хаçат парсамччĕ, тархасшăн.

И л е м (*выляма чарăнса*). Вулама-и?

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц. Çук, чикарккă чĕркеме. Сирĕн хаçата ăнланма хĕн: пĕрре пĕр майлă çыратăр, тепĕр чух – урăх майлă. Пуçа пăтрататăр çеç...

И л е м хаçат илсе парать.

Тавтапуç, юлташ. (*Хăвăрт каять*.)

И л е м. Пуçа пăтрататăр çеç... Ăслă каланă! (*Балкон çине тухать*.)

Параппан сасси аяккарах илтĕнме пуçлать. Пауза.

П р а с к и куçлăх илсе килет.

П р а с к и (*Илеме куçлăх парса*). Ме, тыт хăвăртрах куçлăхна. Çамрăклах суккăрланнă.

И л е м. Выртса вуланăран вăл, Праски. Çывăхрине эп аванах куратăп. Аякри çеç тĕтреллĕ курăнать.

П р а с к и (*урамалла пăхса*). Иртсе кайрĕç. Куçлăхупа аппаланса кураймасăрах юлтăн.

И л е м (*куçлăхне тăхăнса*). Куçлăхпа пăхсан та, куçлăхсăр пăхсан та, урамра хĕрлĕ гвардеецсемсĕр пуçне урăх никам та курăнмасть.

П р а с к и. Эх, Николай Петрович. Хăвăн юлташна та палламарăн. Хĕрлĕ гвардеецсемпе Сатур пырать.

И л е м. Сатур? Хĕрлĕ гвардеецсемпе? Ан палка.

Праски урай çума пуçлать. Илем чаршав уçăличчен выляннă чăваш кĕввисен вариацийĕсене калать. П о ч т а л ь о н кĕрет.

П о ч т а л ь о н. Салам, юлташсем! Перасковья, почта йышăн. Заказной çырусем пур.

П р а с к и. Илем, алă пусса пар-ха...

И л е м (*корнет калама чарăнса*). Итлетĕп, чипер Праски. (*Почтальон патне пырса, кĕнеки çине алă пусать*.)

П о ч т а л ь о н. Фронтри ĕçсем мĕнле, юлташ?

И л е м. Паян сводка илмен-ха.

П о ч т а л ь о н. Хулара ырă мар хыпар çӳрет: шуррисем çывхараççĕ, теççĕ.

И л е м (*алă пусса*). Шуррисем... Хĕрлисем... Охо, мана та çыру пур иккен...

П о ч т а л ь о н. Суяççĕ пулĕ... Сыв пулăр. (*Каять.*)

И л е м (*çырусене сĕтел çине хурать, пĕр конвертне уçса вулать*). «Сирĕн сонатăна консерваторинчи профессор...» (*Кăшкарса.*) Ура! Праски, ман сонатăна Мускавра ырланă. (*Ассăн сывласа.*) Ух! (*Пауза.*) Праски!

П р а с к и (*урай çума чарăнса*). Мĕн?

И л е м (*хутне кăтартса*). Вула... Ăнланатăн-и? Эх! (*Праские ыталать.*)

П р а с к и. Ой, хытă ан чăмăрта-ха.

И л е м (*Праские тытса*). Праски! Мана консерватории илеççĕ.

П р а с к и. Чăнах-и?

И л е м. Эпĕ композитор пулатăп... Опера çыратăп... Оперетта... (*Телефон шăнкаравĕ. Илем телефон патне пырать. Телефон трубкине илсе.*) Итлетĕп... Редакци... Салам... Çук, килмен-ха... Килмен тетĕп!..

Х ĕ л и п кĕрет.

Х ĕ л и п. Сывă-и, Илем?

И л е м. Акă, Филипп Степанович хăй çитрĕ... Хĕлип, сана Асамат чĕнет. (*Трубкине Хĕлипе парать, хăй сĕтел хушшине кайса ларать.*)

Х ĕ л и п (*телефонпа*). Сывă-и?.. Мĕн-мĕн? Хытăрах кала. Ну, итлетĕп. Сатур? Мĕн Сатур? Какое имеешь право Сатура корректурăсене кăтартма? Мĕн? Кавĕрле статйине кĕртрĕн-и? Вырнаçаймарĕ-им? Мĕн? Сатур кăларса пăрахрĕ? Кам вăл? Редактор-им? Большевик, большевик! Эсĕ ху та большевикланса кайнă пулас. Хаçата наборласа пĕтернĕ-и? Оттисксене хăвăртрах илсе кил... Юрĕ, кунта калаçăпар. (*Телефон трубкине çакать.*) Праски, мĕншĕн урайне иртерех çумарăн?

П р а с к и. Ĕлкĕреймерĕм, Филипп Степанович.

Х ĕ л и п. Çĕрле пухусем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳретĕр те кăнтăрлаччен ыйхă туртатăр. Пăрах çума...

П р а с к и витрине йăтса каять.

(*Хĕлип сĕтел хушшине ларать.*) Илем, çак статьяна куçар-ха.

И л е м (*Хĕлип патне пырса, хаçата илсе*). Ĕнер большевиксен хаçачĕ çинчен куçарттаратăр, паян меньшевиксен хаçатĕнчен... Халăх пуçне пăтрататăр çеç... (*Хăй вырăнне ларать.*)

Х ĕ л и п. Пирĕн хаçат беспартийнăй.

И л е м. Эсир акă мĕнле тăвăр: Ленăна меньшевиксенне куçарттарăр, мана – большевиксенне. Апла тусан, пирĕн пуç пăтранмĕ хăть.

Х ĕ л и п. Эсĕ те, хăвăн тусу пек, большевиксен енне сулăнтăним?

И л е м. Манăн туссем – художниксем, артистсем.

Х ĕ л и п. Авă, Сатур... Большевиксен партине çырăннă, тет.

И л е м. Сатур – большевик? Художник партие çырăннă-и?..

Л е н а кĕрет.

Л е н а. Салам, юлташсем!

И л е м. А, Елена Васильевна та çитрĕ. Аван çывăртăн-и? Тĕлĕкре кама куртăн?

Л е н а. Сана.

И л е м. Апла пулсан, çумăр е çил-тăвăл пулать.

Х ĕ л и п. Безобрази, Елена Васильевна, вунă сехет, эсир тин килетĕр.

И л е м. Савнипе бульварта çӳрерĕ пулĕ, çапла-и, Елена Васильевна? (*Каять.*)

Х ĕ л и п (*хут парса*). Çакна хăвăртрах пăхса тухăр та тӳрлетĕр. Ыранхи номере кĕртмелле.

Л е н а (*вуласа*). «Сулахай социалист-революционерсем...» (*Хĕлипе.*) Кама кирлĕ кунашкал палкав?

Х ĕ л и п. Сире паян мĕн пулнă?

Л е н а. Кам çырнă кăна?

Х ĕ л и п. Кирек кам пултăр, сирĕн ĕç мар.

Л е н а. Епле пирĕн ĕç мар? Куншăн хаçата хупма пултараççĕ.

Х ĕ л и п. Хаçат паян тухмасть, ыран.

Л е н а. Ыран та хупĕç.

Х ĕ л и п. Ку ыйту, Асамат калашле, дискуссионнăй. Паян пур, ыран çук.

Л е н а. Мĕн çук?

Х ĕ л и п. Совет влаçĕ.

Л е н а. Ахальтен мар сире Сатур эсерсен йытти тет.

Х ĕ л и п. Чăнах-и?

Л е н а. Редакцинчен тахçанах ĕнселесе кăлармалла, тет.

Х ĕ л и п. Кам кама ĕнселесси малашне курăнĕ. Чим, эсир Сатурпа туслашнă, темеççĕ-и?

Л е н а. Кам каларĕ?

Х ĕ л и п. Иртнĕ каç бульварта иксĕр çӳреттĕр-çке.

Л е н а. Пухура пултăмăр та, ăсатса ячĕ.

Х ĕ л и п. Пăрахăр çав шăпăрлан Сатура.

Л е н а. Мĕншĕн пăрахас? Сатур – ăслă çын. Ăна халĕ комиссар тăвасшăн, тет.

Х ĕ л и п. Астăвăр, Елена Васильевна, сыхланăр Сатуртан. Вăл сире аташтарма пултарать.

Л е н а. Мĕн тавас? Юрататăп Сатур пеккисене.

С а т у р кĕрет.

С а т у р. Сывă-и, юлташсем. Аван çывăртăн-и, Елена Васильевна? (*Алă парать, унтан Хĕлип патне пырать.*) Акă мĕн, Хĕлип... çакăн пек статьяна хаçата тата кĕртсен...

Х ĕ л и п. Эсĕ кам? Редактор-и? Кам сана хаçатран статьясене кăларса пăрахма ирĕк пачĕ?

С а т у р. Авторĕ кам?

Х ĕ л и п. Редакци хăйĕн сотрудникĕсен псевдонимĕсене кашни иртсе çӳрекене уçса памасть.

С а т у р. Эх, тытса лăскаттăм та сана пĕрре...

Х ĕ л и п. Аллу кĕске.

Л е н а. Сатур, çакна хаçата кĕртме юрать-и?

Х ĕ л и п. Сатур редактор мар!

С а т у р (*Лена патне пырса, статьяна вулать*). Ак ун выраннĕ. (*Статьяна çурса пăрахать.*)

Х ĕ л и п (*кăшкăрса*). Какое имеешь право?

С а т у р. Лăплан, Хĕлип. (*Хĕлип патне пырса.*) Ыранхи номере çакна кĕрт.

Х ĕ л и п (*вуласа*). Редакторсăр кунашкал япалана кĕртме пултараймастăп.

С а т у р. Редактор ăçта?

Х ĕ л и п. Командировкăра.

С а т у р. Вăл тавранасса кĕтмелле-и?

Х ĕ л и п. Мĕн тăван, кĕтес пулать. Тепĕр тесен, кĕтни те ахалех. Эпир кунашкал япалана пичетлеме пултараймастпăр. Пирĕн хаçат...

С а т у р. Беспартийнăй тесшĕн-и? Акă мĕн: чĕнсе каланине ыранхи номере кĕртнĕ пултăр. Илтрĕн-и?

И л е м кĕрет.

И л е м. Кам çухăрать, тетĕп... Сатур килнĕ иккен. Сывă-и? (*Алă парать.*) Мĕн харкашатăн?

С а т у р. Хĕлипе ятлатăп. Чĕнсе каланине хаçата кĕртесшĕн мар.

И л е м. Япăх çырнă пулĕ. Сан чăвашла яках тухмасть. Кăтарт-ха. (*Сатур хутне парать, Илем вулать.*) «Чухăнсемпе батраксене тата вăтам хресченсене... Контрреволюци пуçне çĕклерĕ... Самарпа Чĕмпĕр шуррисен аллинче... Вĕсем йышăннă выранта çĕр каллех улпутсен аллине куçнă... » (*Чарăнать.*) Аха, ăнлантăм... Хĕлипĕн ашшĕ пуян пулнă. Вăл ашшĕ çĕрне туртса илнĕшĕн кунашкал чĕнсе каланине пичетлесшĕн мар.

Х ĕ л и п. Санăн аçу чухăн-им?

И л е м. Чухăн мар, анчах...

С а т у р. Анчах чухансен çĕрне тара илсе акман. Çапла-и, Илем?

И л е м. Тĕрĕс. Хĕлипсен яланлăха илнĕ çĕр мĕн чухлĕччĕ?

Х ĕ л и п. Охо, искусство мĕнле калаçа пуçларĕ?

С а т у р. Эсĕ чĕнсе каланин вĕçне вула.

И л е м. (*вуласа*). Октябрь революци тивлетне упрар. Кам çĕнĕрен улпутсемпе пуянсен чури пулас мар тет, пурте Хĕрлĕ Çара, тăшманпа çапăçма». (*Чарăнать.*)

С а т у р. Ну, мĕнле?

И л е м. Ăнланмалла çырнă.

С а т у р. Ху ăнлантăн-и?

И л е м. Мĕн каласшăн эс?

С а т у р. Çавна çеç, ăнлантăн-и тесе çеç ыйтрăм.

И л е м. Итле-ха, Сатур...

С а т у р. Итлетĕп, тусăм.

И л е м. Пăрах ман пуçа пăтратма. Эп политика ĕçне хутшăнман, хутшăнас та çук. Эпĕ артист.

С а т у р. Ку япăх хŭтлĕх, тусăм...

Х ĕ л и п. Итле-ха, Сатур. Кунта парти комитечĕ мар, редакци...

С а т у р (*Хĕлипе*). Ну – мĕнле?

Х ĕ л и п. Чĕнсе калани пирки-и?

С а т у р. Кĕртетĕн-и хаçата?

Х ĕ л и п. Кĕртместĕп!

С а т у р (*телефон патне пырса*). 22-53... Реввоенсовет? Кам калаçать? Иван Васильевич, чĕнсе каланине хаçата кĕртесшĕн мар... Редакторĕ çук, секретарĕ çеç. Капла хăтланаççĕ пулсан, ку хаçата хупса, урăх кăларма пуçламалла маар-и?

Х ĕ л и п. Итле-ха, Сатур...

С а т у р. Юрĕ, редакторне-и? Тупăпăр... Фронта-и? Паян, каçхи пăрахутпа... (*Трубкине çакать.*) Акă мĕн, Хĕлип... Икĕ сехетре политотдела пыр.

Х ĕ л и п. Чĕнсе каланине ыранхи номерĕ кĕртмелле-и?

С а т у р. Унта калаçăпар. Ну, сыв пулăр, юлташсем. Елена Васильевна, мана ăсатма пыратăн-и?

Л е н а. Юрĕ, пырап.

К а в ĕ р л е кĕрет.

К а в ĕ р л е. Сывă-и, тăвансем. (*Сатур кайма тăрать.*) Чим-ха, Сатур... (*Сатур чарăнать.*) Эсĕ чăнах Хĕрлĕ Çара ху ирĕкпе çырăннă-и?

С а т у р. Ну?

К а в ĕ р л е. Тĕлĕнмелле. Художник – хĕрлĕ салтак. Художник – большевик!

С а т у р. Эсир, Гаврил Иванович, медицина факультетĕнче вĕреннĕччĕ-и çак?

К а в ĕ р л е. Çук, юридическинче.

С а т у р. Шел. Кĕçĕ чирĕ çинчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Кĕçĕ çын чĕлхи çине тухать, теççĕ. Чăнах-ши?

Л е н а. Тухмасть пулĕ, Сатур.

С а т у р (*Кавĕрле çине пăхса*). Хăшин чĕлхи ытшашши кĕçтет те, çавăнпа каларăм... (*Илем умне чарăнса.*) Эс галстукна ытла пăвса çыхнă, Илем тусăм... Пырна ыраттармасть-и?

И л е м. Галстук? Аванах çыхнă-çке.

С а т у р. Хĕлип, ан ман, икĕ сехетре штаба. (*Каять.*)

К а в ĕ р л е. Штаба? Мĕн тума?

Х ĕ л и п. Пĕлместĕп.

Л е н а. Хаçата хупасшăн пулас.

К а в ĕ р л е. Мĕншĕн?

Л е н а. Сирĕн статьясене пичетленĕшĕн пулĕ.

К а в ĕ р л е. Филипп Степанович, ман статьяна набора ятăр-и?

Х ĕ л и п. Ленăна пăхса тухма патăм та, Сатур çурса пăрахрĕ.

К а в ĕ р л е. Сатур пеккисене ирĕк пама юрамасть. Илем, хут парха... Çĕнĕрен çырам.

Л е н а. Ан тăрăшăр, Гаврил Иванович. Сирĕн статья пурпĕр хаçата кĕмест.

Х ĕ л и п. Сирĕн ĕç мар. Çырăр, Гаврил Иванович, çырăр.

Л е н а. Тĕрмене лекес килсен, кĕрт.

Х ĕ л и п (*кăшкарса*). Çитет!

К а в ĕ р л е. Шуйттан самани! Ирĕклĕх... Социализм... (*Хутне çурса пăрахать.*)

И л е м. Диктатура...

К а в ĕ р л е. Мĕн?

И л е м. Диктатура тетĕп. Пролетари диктатури урлă çеç этем социализм çулĕ çине тухĕ, теççĕ большевиксем...

К а в ĕ р л е. Филипп Степанович, хаçата епле те пулин хŭтĕлемелле.

Х ĕ л и п. Тăрăшăпăр.

И л е м. Гаврил Иванович, каçарăр, тархасшăн... Сирĕн фрака вăхăтра леçсе параймарăм... Паян татах концертра каламалла та... Тăхăнма те юрать ĕнтĕ...

К а в ĕ р л е. Тăхăнах, Илем.

Х ĕ л и п. Гаврил Иванович, эсир хăвăртрах çырса пĕтерĕр.

И л е м. Тата пĕр ыйту пурччĕ, Гаврил Иванович...

Х ĕ л и п. Ан кансĕрле, тархасшăн.

К а в ĕ р л е. Мĕн çинчен, Илем?

И л е м. Акă шуррисем Самара илнĕ, теççĕ. Унта Учредилка комитечĕ пуçлăх, теççĕ... Мĕнле власть вăл?

К а в ĕ р л е. Ку влаç Учредительный пуху пухăниччен çеç. Учредилка Российăра мĕнле власть пулмаллине сӳтсе явĕ.

Л е н а. Учредилка та Совет влаçех пултăр тесен?..

К а в ĕ р л е. Апла пулмĕ. (*Çырать.*)

Л е н а. Çаплах пулсан?

К а в ĕ р л е. Эпир Совет влаçне хирĕç мар, анчах власть большевиксен аллинче ан пултăр. Ăнлантăр-и?

Л е н а. Ăнланма хĕн...

И л е м. Ăнлантăм... Совет ятне çеç хăварасшăн, эппин. Мĕнле каламалла...

Л е н а. Интереслĕ... Анчах халăх сире каллех отставка парсан?

Х ĕ л и п. Мĕн эсир? Ĕçлеме килнĕ-и кунта е дискусси тума-и?

Т а н я кĕпе йатса кĕрет.

И л е м. Э, Таня! Илсе килтĕн-им? Аван, питĕ вăхăтлă. Паян мунчана каяс тенĕччĕ.

Т а н я (*шутласа*). Алшăлли пĕрре. (*Хурать.*) Кĕпи иккĕ... (*Хурать.*) Чăлха... Анчах санăн йĕмӳ çук, Илем. Йĕмсĕр епле мунчана кайăн?

И л е м. Епле çук? (*Хутне пăхса.*) Кунта пĕрре тесе çырнă-çке.

Т а н я (*йĕмне кăтартса*). Ун ячĕ çеç. Саплама та май çук.

И л е м (*йĕмне лучĕркесе*). Çынна ан кăтарт, Таня.

Т а н я. Пурте-и?

И л е м. Пурте. Мĕн чухлĕ тӳлемелле?

Т а н я. Эпĕ тӳлесе хăвартăм.

И л е м. Эккей, укçа та çумра пулмарĕ. Хĕлип, сан пур-и? Гонорар иличчен парсамччĕ.

Т а н я. Ан кивçенлен. Илместĕп. (*Шăппăн.*) Эпĕ статья çыртăм. Те юрăхлă пулчĕ. Тӳрлетме май пулсан, хаçата кĕрт-ха.

И л е м (*кăшт пăхса*). Юрĕ, пăхса тухăп.

Т а н я. Каçхине ман пата пыр.

И л е м. Паян концерт.

Т а н я. Пĕрле кайăпăр. Юрать-и?

И л е м. Юрать.

Т а н я каять, И л е м, кĕпе-йĕмне йăтса, сулахайри алăкран тухать.

А с а м а т (*сцена хыçĕнче*). Салам, Татьяна!

А с а м а т кĕрет.

Салам, юлташсем!

Х ĕ л и п. Итле-ха, Асамат... Мĕншĕн Сатура корректурасене кăтартатăн?

А с а м а т. Унăн, Хĕлип Степанча, мандат пур.

Х ĕ л и п. Мандат?

А с а м а т (*шăппăн*). Реввоенсовет панă. Эпĕ Гаврил Иванович статйи вырăнне хамăн сăвва кĕртрĕм.

Х ĕ л и п. Кам ирĕк пачĕ сана çапла хăтланма?

А с а м а т. Пушă вырăн юлать терĕм те.

Х ĕ л и п. Безобрази!

А с а м а т. Сатур ырларĕ. Эпĕ ăна вуласа патăм...

К а в ĕ р л е. Сатур, Сатур. Шуйттан! (*Хутне çурса тăкать.*)

Л е н а. Сăввуна вуласа пар-ха, Асамат.

А с а м а т (*вуласа*).

Сана, сана, Хĕрлĕ Çар!
Пехиллетĕп сăввăма...

И л е м кĕрет.

Аркат, салат контăра!

К а в ĕ р л е. Кама?

А с а м а т. Контăра!.. Итлĕр малалла (*вуласа*).

Аркат, салат контăра!
Иртсе кайĕ тискер çĕр...
Хĕвел тухĕ, йал кулĕ,
Ешĕл çерем çĕнĕрен...

Тупă сасси, кантăк кĕленчи ванни илтĕнет.

Л е н а. Ай! (*Пауза.*) Ку мĕне пĕлтерет?

К а в ĕ р л е. Большевиксен ĕмĕрĕ кĕскелнине. (*Тупă сасси.*) Охо, лайăх кĕмсĕртеттереççĕ.

И л е м. Гаврил Иванович, камсем переççĕ?

К а в ĕ р л е. Камсене переççĕ тесе ыйт, Илем.

И л е м. Ну, камсене переççĕ, тейĕпĕр.

К а в ĕ р л е. Сатур пеккисене çĕр çинчен тасатаççĕ.

И л е м. Камсем?

К а в ĕ р л е. Чăн-чăн революционерсем. Ну, Филипп Степанович, икĕ сехетре штаба кайма кирлĕ мар. Ун вырăнне ыран пирĕн штаба пырăр. (*Балкон çине тухса.*) Епле тараççĕ. Асамат, кил кунта. Çак уяв çинчен сăвă çыр.

Тупă сасси.

Л е н а. Ай! Ăçта пытанас?

К а в ĕ р л е. Пытанма кирлĕ мар. Алă çуп, Елена Васильевна. Илем, кала корнетна. Савăнăçлă кĕвĕ кала!

А с а м а т. Атя тарар, Илем...

И л е м. Ăçта?

Т а н я чупса кĕрет.

Т а н я (*Илем патне пырса*). Илем... Урампа шуррисем килеççĕ...

И л е м. Каяр ман пӳлĕме. (*Таньăпа пĕрле каять.*)

К а в ĕ р л е. Епле утаççĕ пирĕн салтаксем!

Тупă сасси. С а т у р кĕрет, телефон патне пырать.

С а т у р. 22-53. Штаб... Сатур калаçать... Кам? Акă мĕн... Мускав урамĕнче шуррисем... Хăвăртрах хĕрлĕ армеецсене ярăр. Пĕр пулеметпа та чарма пулать.

К а в ĕ р л е С а т у р калаçнине итлесе тăрать.

Унтан, ун патне пырса, телефон трубкине туртса илет.

К а в ĕ р л е. Пăрах калаçма!

С а т у р (*трубкине туртса илсе*). Ан кансĕрлĕр. (*Калаçма пуçлать.*) Шуррисем штаб еннелле кайрĕç.

К а в ĕ р л е (*трубкăна çĕнĕрен илсе, Сатура тĕртсе ярать*). Сирĕл телефон патĕнчен.

С а т у р. Аха... Акă.. мĕн... (*Револьвер кăларса.*) Ну?

И л е м кĕрет.

И л е м. Сатур тусăм, ан пер, тархасшăн... (*Кавĕрлене.*) Кайăр телефон патĕнчен. Мĕн, чавка пек, çăвара карса тăратăр?

К а в ĕ р л е телефон патĕнчен каять.

С а т у р (*телефонпа*). Штаб. Штаб...

П р а с к и чупса кĕрет.

П р а с к и. Кунта офицерпа салтаксем кĕреççĕ.

И л е м. Сатур, хăвăртрах тар.

С а т у р хыçалти алăкпа каять.

О ф и ц е р п а и к ĕ с а л т а к кĕреççĕ.

О ф и ц е р. Ку большевиксен редакцийĕ-и?

К а в ĕ р л е. Çук, ку чăваш хаçачĕн редакцийĕ.

О ф и ц е р. Кунта пĕр большевик кĕчĕ, терĕç.

К а в ĕ р л е. Тĕрĕс, анчах вăл тарчĕ.

С а т у р каялла кĕрет. Ун хыççăн тата и к ĕ с а л т а к кĕреççĕ.

К а в ĕ р л е. Акă вăл. Тытса кайăр.

О ф и ц е р (*Сатур патне пырать*). Учредительной пуху комитечĕ ячĕпе сире арестлетпĕр.

И л е м (*офицер патне пырса*). Ваше благороди, ку çын... (*Кавĕрле çине кăтартса*) суять. Кунта большевик çук.

О ф и ц е р. Эсир кам пулатăр? (*Илем кĕсйинчен документ кăларса кăтартать.*) Каçарăр, тархасшăн, кансĕрленĕшĕн. (*Честь парать.*) Сыв пулăр, господа. (*Каять.*)

Салтаксем офицер хыççăн утаççĕ.

К а в ĕ р л е. Ку мĕне пĕлтерет? Мĕнле документ кăтартрăн офицера?

И л е м (*документне пăхса*). Хам документ вырăнне сирĕнне – учредительной пуху членĕн мандатне тыттарнă... Мана панă фрак

кĕсйинчеччĕ те... Сире парас тесе кĕсъене чикнĕччĕ... Каçарăр, Гаврил Иванович, вăхăтра параймарăм. (*Мандатне парать.)*

С а т у р (*Илеме алă парса*). Сыв пул, Илем... Лена! (*Алă парать.*)

Л е н а. Ăçта каятăн? Урамра шуррисем.

С а т у р. Кунта та шуррисем. (*Каять.*)

Л е н а. Мĕн тăвас? Сатура вĕлерме пултараççĕ. (*Балкон çине тухать.*)

К а в ĕ р л е. Ан хурланăр, Сатур пĕтнĕ çын.

И л е м (*балкон çинче*). Сатур, сулахай еннелле ан кай. Шуррисем килеççĕ. Сылтăмалла, сылтăмалла!

Пăшал сасси.

Л е н а. Ай, вĕлерчĕç Сатура.

К а в ĕ р л е. Çавă кирлĕ. (*Пауза*.)

И л е м. Тивмерĕ. Тарчĕ. Хăтăлчĕ Сатур!

Л е н а. Шурри ăна курчĕ... Хăвалать. Сатур чарăнчĕ.

Пăшал сасси.

И л е м. Сатур печĕ... Леш ӳкрĕ.

Л е н а. Маттур, Сатур!

Х у ç а а р ă м ĕ кĕрет.

Х у ç а а р ă м ĕ. Редактор ăçта? Ăçта редактор?

Х ĕ л и п. Мĕн тума кирлĕ сире редактор?

Х у ç а а р ă м ĕ. Хваттертен халех тасалăр. Большевиксем хуларан кайнă.

К а в ĕ р л е. Анчах хваттертен каймастпăр. Кунта урăх редакци пулать.

Х у ç а а р ă м ĕ. Нимĕнле редакци те кирлĕ мар. Пурпĕр укçа тӳлемеççĕ. Халех тасалăр.

К а в ĕ р л е. Учредительной пуху ячĕпе калатăп...

Х у ç а а р ă м ĕ. Кам эсир?

К а в ĕ р л е (*мандат кăтартса*). Вулăр.

Х у ç а а р ă м ĕ. Каçарăр, тархасшăн, чăрмантарнăшăн... Апла кунта...

К а в ĕ р л е. Пирĕн редакци пулать.

Ч а р ш а в

ВИÇÇĔМĔШ АКТ

Тăваттăмĕш картина

Пĕрремĕш актри декораци. Лена сĕтелĕ çук. Кун каçа сулăннă. Х ĕ л и п телефон патĕнче. И л е м сĕтел хушшинче пуçне чиксе ларать.

Х ĕ л и п. Типографи-и? Асамата телефон патне чĕнĕр-ха. (*Илеме*.) Мĕнле, Илем, Таньăна тĕрмерен хăтартăн-и? Мĕншĕн чĕнместĕн? Кавĕрлепе калаçса пăх, тен, пулăшĕ.

И л е м. Кавĕрле кам, пĕлетĕн-и?

Х ĕ л и п. Пысăк çын, Комуч уполпомоченнăйĕн помощникĕ.

И л е м. Çавă çав, Комуч уполномоченнăйĕн помощникĕ.

Х ĕ л и п. Эсĕ те... Большевичкăпа çыхланнă. Урăххине тупаймарăн-им? Çитменнине, кĕпе-йĕм çăвакан.

И л е м. Кĕпе-йĕм çăвакан çын мар-и?

Х ĕ л и п (*телефонпа*). Алло! Кам? Аха, эсĕ-и? Кала-ха, тархасшăн, мĕншĕн халиччен те хаçат тухмасть? Ĕнер тухмалли хаçат халĕ те çук. Мĕн? Наборщиксем çук... Ăçта кайнă?Пурте харăс чирленĕ-и? Хунар юпи çине çакмалла вĕсене! Юрĕ, ыран кăларăпăр. (*Трубкине çакать.*) Çапла, Илем тус. Большевик арăмран хăтăлтăн пулать.

И л е м. Таня ман арăм мар.

Х ĕ л и п. Кавча илетĕп теместĕнччĕ-и?

И л е м. Илетĕп.

Х ĕ л и п. Çук хĕре епле кавча илĕн-ха?

И л е м. Епле çук хĕре?

Х ĕ л и п. Персе вĕлернĕ пулсан?

И л е м (*сиксе тăрса*). Мĕн? Персе вĕлернĕ? Хăçан?

Х ĕ л и п. Ан кăшкар. Эпĕ «вĕлернĕ» темерĕм, «вĕлернĕ пулсан» терĕм. Мĕншĕн тесен большевиксене пурне те персе вĕлереççĕ е хунар юпи çине çакаççĕ.

И л е м. Таня большевик мар.

Х ĕ л и п. Большевиксемпе пĕр майлисене те çакаççĕ.

И л е м. Пĕтĕм халăха вĕлерсе пĕтереймĕç.

Х ĕ л и п. Мĕншĕн пĕтĕм халаха?

И л е м. Большевиксем майлă, çавăнпа.

Х ĕ л и п. Пурте вĕсем майлă мар.

И л е м. Пуянсемпе ăнланайманнисем çеç хирĕç.

П р а с к и кĕрет.

П р а с к и. Илем, сана çыру. (*Парать те каять.*)

И л е м (*çырăва уçса вулать*). «Лашасене шуррисен çарне илсе кайрĕç... Пиччусем, шуррисен çарне каяс мар тесе, вăрманта пытанса пурăнатчĕç... Анчах Хĕлип ашшĕ вĕсене тытса пачĕ... Ял варрине кашта турĕç те халăх умĕнче çакса вĕлерчĕç»... (*Кăшкăрса.*) Йĕксĕк!

Х ĕ л и п. Кама вăрçатăн?

И л е м. Сан аçуна. Миçе çынна çакса вĕлерттернĕ-ши?

Х ĕ л и п. Э, леш дезертнрсене çакни çинчен калатăн-и? Пĕлетĕп. Çирĕм çынна. Ыранхи номерте ун çинчен хроника тухать.

И л е м. Пĕр хĕрхенмесĕр калаçатăн... Эсĕ чул чĕреллĕ пулас.

Х ĕ л и п. Мĕншĕн хĕрхенмелле вĕсене? Çапла кирлĕ.

И л е м (*вулать*). «Туртса илнĕ çĕрĕсене Хĕлип ашшĕне каялла партарчĕç». Савăн, Хĕлип!.. Сирĕн çĕре каялла панă...

Х ĕ л и п. Пит аван.

С а р м а н т е й йывăç пăшал сĕтĕрсе кĕрет.

Х ĕ л и п. Э, Сармантей çитрĕ. «Сармантейĕн сар чăххи сар çăмарта тунă, тет. Сармантей те йĕрет, тет, сар чăххи те какалать, тет...» Ну, ĕçсем мĕнле, Митрахван?

С а р м а н т е й. Сармантейĕнни пекех... Йĕресси çеç юлчĕ. (*Илеме алă парса.*) Сывă-и, артист? (*Хĕлипе алă парса.*) Чипер çӳретĕн-и, Хĕлип?

Х ĕ л и п. Мĕн эс пит шурса кайнă?

С а р м а н т е й. Пилĕк сехетрен пуçласа çак вăхăта çитиччен уттарса çӳретрĕç. Канма памасть, шăпăрлан унтерĕ.

Х ĕ л и п. Эсĕ те шуррисене вăрçа пуçламан-и?

С а р м а н т е й. Вуникĕ сехет, аптранă йытă пек, чĕлхене кăларса çӳре-ха, эсĕ те урăхла юрлăн. Пăрăç тăваççĕ тата, мурсем. Çук, хĕрлисемех аванччĕ: вĕсем пирĕн пеккисене салтака илместчĕç.

Х ĕ л и п. Тăм пуç! Ху купса ывăлĕ, хĕрлисене мухтатăн. Сан хĕрлисене хирĕç çапăçмалла.

С а р м а н т е й. Э, пирĕн пеккисемпе хĕрлисене çапăçса çĕнтереймĕн. Виçĕ кун йываç пăшал йаттарса çӳретрĕç те, ыран фронта ямалла, теççĕ.

Х ĕ л и п. Хăвăн пурлăхна та сыхласшăн мар-и?

С а р м а н т е й. Авал пирĕн пурлăха ыттисем сыхланă.

Х ĕ л и п. Халĕ «ыттисем» пит сыхласшăнах мар çав. Мобилизациленĕ салтаксем фронтран тарни çинчен илтнĕ-и?

С а р м а н т е й. Эпĕ те таратăп.

Х ĕ л и п. Доброволеца кунашкал калаçни килĕшмест.

С а р м а н т е й. Доброволец. Ĕнсерен парсах çырчĕç те, доброволец. (*Шыв ĕçет*.) Хĕлип Степанча, Елена Васильевнана курман-и?

Х ĕ л и п. Роман сирĕн мĕнле пырать? Вĕçне çитмен-и? Пичете пама вăхăт мар-и?

С а р м а н т е й. Ăнăçлă пулмарĕ ман роман. Укçа тăкни çеç пулчĕ. Эсĕ те ун çумне çыпçăнса пăхрăн пулас? Мĕнле? Сана та сирпĕтрĕ-и? (*Илем патне пырса.*) Илем, эсĕ артист ăрăвĕ... Елена Васильевнана курман-и?

И л е м. Ан çыпçăн.

С а р м а н т е й. Ма шăртланатăн?

Х ĕ л и п. Ун савнине тĕрмене хупнă.

С а р м а н т е й. Тĕрмене хупни туртса илни мар. Халĕ çур хула тĕрмере ларать. Ан хурлан. Хĕрлисем хулана каялла илсен, кăларĕç ак.

Х ĕ л и п. Чим, чим, эсĕ хĕрлисем килессе кĕтетĕн пулас?

С а р м а н т е й. Килеççĕ пулĕ. Хулара çапла калаçаççĕ. Хĕлип Степанча, эсĕ Кавĕрлепе пĕлĕш. Фронта яриччен штаба хĕсĕнсе юласчĕ. Протекци ту-ха.

Автомобиль сасси.

Х ĕ л и п. Акă вăл хăй те сăмах çинех çитрĕ.

С а р м а н т е й. Кам, Лена-и?

Х ĕ л и п. Çук, Кавĕрле.

К а в ĕ р л е п е Ш а к м а к хыпăнса кĕреççĕ.

К а в ĕ р л е. Филипп Степанович, экстренней выпуск кăлармалла.

Х ĕ л и п. Мĕнле хулана илнĕ? Шупашкара маар-и?

К а в ĕ р л е. Хуларан пысăкраххине лектернĕ. Ак вула. (*Хут парать.*)

Х ĕ л и п (*вулать, унтан ыйтать*). Вилнĕ-и?

К а в ĕ р л е. Вилнĕ.

Х ĕ л и п (*телефонпа*). Центральной. 22-45. Типографии? Асамата чĕнĕр. Хăвăртрах... Васкавлă ĕç. (*Кавĕрлепе.*) Ленин вилнĕ пулсан...

И л е м (*сиксе тăрса, Хĕлипе пӳлсе*). Кам вилнĕ тетĕн?

К а в ĕ р л е. Ленин вилнĕ, Илем, Ленин!

И л е м. Суя пулĕ...

К а в ĕ р л е. Пăшалпа персе вĕлернĕ.

И л е м. Кам пенĕ?

К а в ĕ р л е. Пирĕн парти членĕ, Каплан.

И л е м кăшт çеç кайса ӳкмест. Аллипе сĕтелтен тĕрĕнсе тăрать.

К а в ĕ р л е. Сана мĕн пулчĕ, Илем? Шуралса кайрăн...

И л е м. Нимĕн те пулман... «Савăнăçлă» хыпар илтнипе пулĕ...

Телефон шăнкăравĕ. И л е м хăвăрт тухса каять.

Х ĕ л и п (*телефонпа*). Асамат-и? Халех сана материал парса яратăп. Васкавлă хыпар кăлармалла. Ара, пĕр енне çеç çапмалла... Наборщиксем çук? Леш... хушамачĕ мĕнле-ха çавăн?.. Меньшевик... Вара, Богоявленский... Çавăнпа калаçса пăх... Текстчĕ нумай мар... Вăл хаваласнсах ĕçлĕ. Хыпарĕ çавнашкал... Халех Праские яратăп. Праски!

П р а с к и кĕрет.

Типографине чуп... Асамата çакна пар.. Хăвăртрах çаврăнкала!

П р а с к и каять.

Ш а к м а к. Çапла, коммунистсен геннийĕ стройран тухрĕ.

К а в ĕ р л е. Ку хыпар пирĕн енчисене чылаях хавхалантарĕ.

Ш а к м а к. Анчах фронт леш енчисем тата çирĕпрех çапăçма пуçлĕç.

Х ĕ л и п. Капла Совет влаçĕ хăех арканать пулĕ ĕнтĕ.

Ш а к м а к. Кĕтсех тăр арканасса... Ленинăн парти пур, çакна ан ман! Унашкал çирĕп парти хальччен тĕнчере те пулман.

К а в ĕ р л е. Филипп Степанович, паян ĕлкĕрейместпĕр пулĕ... Ыран чăвашсене пуме, çак хыпарпа çыхăнтарса доклад тăвас. Докладне хам тăвап.

Х ĕ л и п. Юрĕ, эпĕ хаçатра пĕлтерӳ кăларăп.

К а в ĕ р л е. Ну, каяр, Дмитрий Иванович. (*Тăраççĕ.*)

С а р м а н т е й (*Кавĕрле патне пырса*). Гаврил Иванович... Ман сирĕнпе калаçмалли пурччĕ.

К а в ĕ р л е. Мĕн çинчен?

С а р м а н т е й. Мана салтака илчĕç те... Ăçта та пулин штаба вырнаçма пулмасть-и?

К а в ĕ р л е. Фронта каяс килмест-им? Ай, ай, намăс! Илтмерĕн-им, мĕнле хыпарсем? Хавасланса çапаçмалла хĕрлисемпе.

Ш а к м а к. Сирĕн хушаматăр мĕнле?

С а р м а т е й. Сармантей.

Ш а к м а к. Акă мĕн, господин Сармантей. Казармăна кайăр та отделĕннайне хăвăра пилĕк талăклăха арестлеме ыйтăр.

С а р м а н т е й. Мĕншĕн?

Ш а к м а к. Винтовкапа учрежденисем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳренĕшĕн.

С а р м а н т е й (*пăшалне кăтартса*). Ку бутафори.

Ш а к м а к. Пурпĕр.

С а р м а н т е й. Тупăннă власть.

Ш а к м а к. Хуп çăварна!.. Кругом... марш (*Сармантей каять.*) Ним йĕрки те çук. Совет влаçне пĕтересшĕн хăйсем, фронта каймалла чух, чăхамçă кĕсресем пек, сăмсисене каялла пăраççĕ.

Х у ç а а р ă м ĕ кĕрет.

Х у ç а а р ă м ĕ. Тăвансем, пирĕн çара пулăшсамăрччĕ, тархасшăн.

Ш а к м а к. Хăвăр мĕн чухлĕ патăр?

Х у ç а а р ă м ĕ. Эпĕ пухса çӳретĕп... Уншăн, укçа илместĕп.

Ш а к м а к. Пухса çӳренĕшĕн тӳлемелле мар-и тата? Сире фронта ярасчĕ. Пулемет шăтăртаттарма пуçласан, вĕренĕттĕр калаçма.

Х у ç а а р ă м ĕ. Эпĕ шуррисене пулăшатăп. Ак, ку хваттере те йун хакпа патăм.

Х ĕ л и п. Совет чухне сире нимĕн те тӳлемен.

Х у ç а а р ă м ĕ. Вĕсем турра маннă çынсем... Çурта туртса илчĕç. Пирĕн çара пулăшсамăрччĕ, тархасшăн.

Никам та укçа памасть, Х у ç а а р ă м ĕ тухса каять.

Ш а к м а к. Куратăр-и? Малтан пулăшкаларĕç, хĕрлисем пире хĕсĕрлеме пуçласан, урăхла юрла пуçларĕç. Çук, çакăн пеккисем валли урăхла власть кирлĕ.

К а в ĕ р л е. Мĕнли?

Ш а к м а к. Влаça çар аллине памалла... Çар диктатор пулмалла.

К а в ĕ р л е. Эсир Корнилов шухăшлă пулас, Дмитрий Иванович? Ку демократие хирĕç шухăш.

Ш а к м а к. Хамăр хушăмăрта ку сăмаха асанмасанта юрамалла. Йăлăхтарчĕ. Демократи, демократи тетĕр. Нимĕнле демократи те çук сирĕн. Ман шутпа, маскăна хывма вăхăт. Маска ĕçе кансĕрле пуçларĕ. Каяр.

Телефон шăнкăравĕ.

Х ĕ л и п (*телефонпа*). Редакци. Кунта. Гаврил Иванович, сире чĕнеççĕ.

К а в ĕ р л е (*телефон патне пырса*). Итлетĕп... Эпĕ. Мĕн? Мĕн? Юрĕ, халех пыратăп. (*Трубкине çакать.*) Дмитрий Иванович, хăвăртрах арпиллери казармине отряд ярăр.

Ш а к м а к. Мĕн пулнă?

К а в ĕ р л е. Салтаксем фронта каясшăн мар. Пăлхав пуçланă. Офицерсене гауптвахтăна хупнă.

Ш а к м а к. Аван ĕçлет Иванов!

К а в ĕ р л е. Мĕншĕн тытса çакмастăр çавна?

Ш а к м а к. Шыратпăр та, тупаймастпăр.

К а в ĕ р л е. Лайăхрах йĕрлемелле. Хулара пĕр большевик та ан пултăр. Пурне те. Кашни хунар юпи çинче большевик çакăнса тăтăр. Кашни хунар юпи çинче.

Ш а к м а к. Хулара хунар юпи, ялта йăмра çитмĕ.

К а в ĕ р л е. Филипп Степанович, эсир йываç казармăна кайар. Унта чăвашсем нумай. Митинг тăвăр. Ман машинăпа леçсе ярĕç. Каяр.

К а в ĕ р л е п е Ш а к м а к каяççĕ. А с а м а т кĕрет.

А с а м а т. Хĕлип Степанча, васкавлă хыпар тухмасть.

Х ĕ л и п. Мĕншĕн?

А с а м а т. Леш, Богоявленский наборлама пуçларĕ те, рабочисем пырса набора салатрĕç.

К а в ĕ р л е с а с с и (*сцена хыçĕнче*). Филипп Степанович!

Х ĕ л и п. Ман вăхăт çук. Илемпе калаç. Васкавлă хыпар кăлармалла. Илтрĕн-и? Кавĕрле хушрĕ. (*Каять.*)

А с а м а т (*пукан çине ларать*). Кăлармалла... Кавĕрлене хушма çăмăл. Унăн ман вырăнта пуласчĕ. Пĕр енчен кусем хĕсеççĕ, тепĕр енчен рабочисен сăмахне те итлес килет. Темĕн тумалла ĕнтĕ?

И л е м кĕрет.

А с а м а т. Мĕн пуçна усрăн, Илем? Чирлерĕн-им?

И л е м. Васкавлă хыпар кăлартăн-и?

А с а м а т. Тухмасть. Рабочисем наборласшăн мар. (*Илем патне пырса шăппăн.*) Ленин вилмен, тет.

И л е м. Вилмен? Чăнах-и?

А с а м а т. Рабочисем çапла каларĕç. Вĕсем пĕлеççĕ.

И л е м (*савăнăçлăн*). Эх, Асамат!

А с а м а т. Мĕн?

И л е м (*балкон патнелле утса*). Çанталăк пит аван. Пăх-ха, хĕвел епле хĕртет... Атăл... Атăл мĕнле илемлĕ!

А с а м а т (*аллине сулса*). Шуррисем килнĕренпе Атăла та курман ĕнтĕ. Темĕнле, çут тĕнче тĕксĕмленнĕ пек туйăнать.

И л е м. Кала-ха, Асамат: кам енче эс?

А с а м а т. Епле кам енче?

И л е м. Хĕрлисем кăмăллăрах пек-и сана, шуррисем-и?

А с а м а т. Ăнланаймарăм-ха сана...

И л е м. Качча та икĕ хĕре пĕр пек юратмасть. Пĕри кăмăллăрах пек туйăнать.

А с а м а т. Эс аташа пуçларăн пулас, тусăм.

И л е м. Мĕншĕн?

А с а м а т. Мĕншĕн тесен, хĕрлисене чипер хĕрпе танлаштаратăн пулсан, шуррисене курпун юмăç карчăкĕпе те танлаштарма юрамасть...

И л е м. Тĕрĕс!.. Акă мĕн, Асамат. Эсĕ Таня хваттерĕ тĕлне пĕлетĕн-и?

А с а м а т. Пĕлетĕп.

И л е м. Паян 11 сехетре çавăнта пыр. Юрать-и?

А с а м а т. Юрать. Леш, васкавлă хыпар пирки мĕн тăвас? Çăва тĕпне-и?

И л е м (*хаваслăн*). Çăва тĕпне!

П р а с к и чăматан йăтса кĕрет.

А с а м а т. Эсĕ ăçта пуçтарăннă, Праски?

П р а с к и. Çĕнĕ хваттере куçатăп.

А с а м а т. Уявлама пырас-и?

П р а с к и. Пыр. (*Илеме шăппăн.*) Сана пĕр çын курасшăн.

И л е м. Кам?

П р а с к и. Хушаматне каламарĕ.

И л е м. Асамата ăсат.

А с а м а т. Праски, тӳррипе кала-ха, кам енче эс? Хĕрлисем енче-и е шуррисем енче?

П р а с к и. Пĕлместĕп.

А с а м а т. Калăпăр, эсĕ икĕ качча юрататăн. Ну, Илемпе мана тейĕпĕр... Хăшĕ кăмăллăрах пек?

П р а с к и. Иксĕр те кăмăллă.

А с а м а т. Суятăн. Илеме хытăрах юрататă пулĕ?

П р а с к и. Сухална хыр, вара сана ытларах юратăп. Ну, каяр, редакцие хупмалла.

А с а м а т. Хĕрлисемпе шуррисем çинчен тĕплĕрех шухăшласа пăх, Праски. Ку ыйту – пурнăç ыйтăвĕ.

П р а с к и. Ху мĕнле шухăшлан?

А с а м а т. Кăна вăрттăн çеç калама пултаратăп. (*Шăппăн калать.*)

П р а с к и. Эпĕ те сан пекех шухăшлатăп.

А с а м а т. Маттур хĕр эс, Праски. Кур-ха пĕрре чуптăвам.

П р а с к и. Малтан сухална хыр.

А с а м а т. Халех парикмахерскине каятăп. Илем, пĕр керенка кĕтмелле парччĕ.

П р а с к и. Атя хăвăртрах... Укçине хам парап. (*Асамата аллинчен тытса хыçалти алăк еннелле утать.*)

А с а м а т. Çулталăка яхăн сан хыççăн çӳретĕп, сухал кансĕрленине пĕлмен. Ну, 11 сехетре, Илем.

Каяççĕ. И в а н В а с и л ь е в и ч кĕрет.

И л е м. Иван Васильевич.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Калаçма юратать пулас сирĕн юлташăр. Алăк хыçĕнче кĕтсе ывăнтăм. (*Алă парса.*) Сывă-и, Илем?

И л е м. Сывă-ха, Иван Васильевич. Чим, параднай алăка питĕрем-ха.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ăна хам питĕртĕм. Хыçалтине питĕрме хушăр.

И л е м (*алăк патне пырса*). Праски, алăка питĕр. Никама та ан кĕрт.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ку хĕртен пуçне кунта никам та çук-и?

И л е м. Çук.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Шанчăклăскер-и?

И л е м. Хамăр çын.

И в а н В а с и л ь е в и ч (*балкон çине кайса пăхать*). Лараp. (*Лараççĕ*). Эсир тăшмансем мĕн туни çинчен илтмен пулĕ?

И л е м. Илтнĕ, Иван Васильевич. Анчах Ленин вилмен, тет...

И в а н В а с и л ь е в и ч. Вилмен... Шуррисем юри вилнĕ тесе хыпар сараççĕ... Халăх халне пусарасшăн.

И л е м. Пит савăннă.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Савăнччăр. Анчах пирĕн Ленина вĕлерме тапăннă тăшмансемпе тата вăйлăрах кĕрешмелле. Эсир, Илем, кĕрешĕве хутшаннă теме пулать, анчах сирĕн Ленинпа çыхăну тытмалла. Унсăрăн йăнăшма пултаратăр.

И л е м. Темскер, ăнланаймарăм-ха сире, Иван Васильевич...

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ленин партийĕ пур. Çав партипе çыхăнмалла.

И л е м. Эпĕ партире ĕçлеме пултараймастăп пулĕ.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Парти вĕрентĕ. Партие сирĕн пек çынсем кирлĕ. (*Пауза.*) Ну, мĕнле, Илем тус?

И л е м. Рекомендаци кам парĕ?

И в а н В а с и л ь е в и ч. Пĕрне Васильев пама пулчĕ, тепĕрне хам парăп.

И л е м (*алă парса*). Тавтапуç, Иван Васильевич... (*Пауза.*) Çапах кăшт шикленетĕп...

И в а н В а с и л ь е в и ч. Мĕншĕн?

И л е м. Пултараймасран хăратăп.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Татьяна Алексеевна, сахал вĕреннĕ пулсан та, епле ĕçлетчĕ... Малтан сире сочувствующине çырапăр, кайран члена илĕпĕр...

И л е м (*çăмăллăн сывласа*). Сочувствующине пулсан, юрать. (*Телефон шăнкăртаттарать, трубкăна илсе.*) Алло. Эпĕ. Кам калаçать? Аха... Сывă-ха. Паянхи концерта-и? Кала директора... Илем пыраймасть, чирленĕ, те.

И в а н В а с и л ь е в и ч (*Илем патне пырса, трубкине аллипе хупласа*). Çук, капла юрамасть... Килĕшĕр.

И л е м (*телефонпа*). Чим... Кала, Илем пырать, те. Анчах малтанхи отделенине кĕртĕр. Ман тепĕр çĕрте каламалла. (*Телефон трубкине çакать.*) Ăнланаймарăм, Иван Васильевич... Концерт офицерсен пухăвĕнче пулать.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Чеерех пулмалла, Илем тус. Эпир шуррисен тылĕнче... Çакна манма юрамасть. Тата мĕн ыйтас тенĕччĕ çак? Паян икĕ концертра пулмалла-çке сирĕн...

И л е м. Юри каларăм. Паян ман пĕр чăваш поэчĕпе курнăçмалла. Сăвă лайăх çырать, анчах манашкал аташкаласа пурăнчĕ. Халĕ ăнлана пуçларĕ пулас.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Пит аван... Пире поэт та усăллă пулĕ. Ну, сывă пулăр, Илем... Ыран ирхине Кузнецов патне пырăр. Пароль – «Кама». (*Алă парать.*)

И л е м. Иван пичче... Каçарăр пичче тенĕшĕн...

И в а н В а с и л ь е в и ч. Юрать. Мана нумайăшĕ çапла чĕнеççĕ. Ну, мĕн калас тетĕр, Илем тус?

И л е м. Эпĕ чăваш салтакĕсем хушшинче сарма тесе чĕнсе каланисене пичетлеттертĕм те... Салатма те юрать... (*Чăматанран пĕр листине илсе парать.*)

И в а н В а с и л ь е в и ч. Чăвашла мана пуçларăм-çке, Илем. (*Вулать.*) Кăна вырăслинчен куçартăр-и?

И л е м. Леш, политотдел кăларнинчен куçартăм... Вĕçне шуррисен салтакĕсем валли хам хушса çыртăм. Акă вал. (*Кăтартать.*)

И в а н В а с и л ь е в и ч (*вуласа*). «Хамăрăннисемпе çапăçас выранне»... Чим, ку сăмаха ăнланаймарăм...

И л е м. «Куçар».

И в а н о в. Аха... «хĕрлисем енне куçар». Пит аван. Хăвăртрах салатăр.

Шăнкăрав.

И л е м (*балкон çине тухса*). Кам унта?

Х ĕ л и п с а с с и. Эпĕ. Уç.

П р а с к и кĕрет.

И л е м. Праски, Хĕлип таврăннă. Параднăйне уç.

П р а с к и каять.

Сире, Иван Васильевич, хыçалти алăкпа ăсатса ярап.

Каяççĕ.

Х ĕ л и п п е П р а с к и кĕреççĕ. Хĕлип пуçне шурă тутăрпа çыхнă. Ахлатать, чăматан çине ларать.

П р а с к и. Сире мĕн пулнă, Хĕлип Степанча?

Х ĕ л и п. Салтаксем хĕнерĕç. Сăмах калама тытантам çеç, таçтан хамăр тарçă пулнăскер сиксе тухрĕ те янахран яра пачĕ. Ун хыççăн теприсем... Аран тарса ӳкрĕм. Вĕлереççĕ пулĕ тенĕччĕ. (*Чăматана асăрхаса.*) Ку мĕнле чăматан? Санăн-и, Праски?

П р а с к и. Манăн мар.

Х ĕ л и п (*çĕклесе пăхать, чăматан уçăлать, чĕнсе каланисем тухса ӳкеççĕ*). Э, Асаматăн пулĕ. Пит васкавлă кăларăм. Маттур, Асамат!.. (*Пĕрне илсе вулать.*) «Пĕтĕм тĕнчери... Эсерсемпе буржуйсем... халăх ташманĕсем...» Пĕтрĕмĕр. Ку большевиксем чĕнсе калани! Кам илсе килнĕ кусене?

П р а с к и. Пĕлместĕп.

Х ĕ л и п. Епле пĕлместĕн? Кунта ют çын пулман пуль?

П р а с к и. Курман... Эпĕ типографинчен халĕ çеç таврăнтăм...

Тупă сасси. Кантăк кĕленче çĕмрĕлет.

Х ĕ л и п (*сиксе тăрса*). Праски, кусене кăмакана пăрах... Эпĕ кайрăм. (*Хăвăрт каять.*)

Тупă сасси. И л е м кĕрет.

И л е м. Чăматана кам уçрĕ?

П р а с к и. Хĕлип.

И л е м. Сисмерĕ-и?

П р а с к и. Çук.

И л е м. Хăвăртрах пуçтар та казармăна кайса пиччӳне пар.

Ч а р ш а в

ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

Улттăмĕш картина

Атăл çинчи пристань. Пристань çумĕнче пĕчĕк буксир-парахут. Пристань çинче пĕр хунар çунать. Пăрахут çинче шалти çутă çеç курăнать. Чӳречесем тĕттĕм. Аякра тупă сасси илтĕнкелет. Тул çутăлас умĕн. Трап патĕнче ч а с о в о й.

С а р м а н т е й с а с с и. Аха... Пристань... Халех. (*«Касса» тесе çырнă алăка уççа.*) Господин поручик! Сире телефон патне чĕнеççĕ. (*Курăнми пулать.*) Халех килет!

Ш а к м а к, пăрахут çинчен тухса, кассăна кĕрсе каять.

С а р м а н т е й тухать.

Ш а к м а к с а с с и. Кам калаçать? Туран хĕрлисен пăрахучĕсем анаççĕ тенĕ хыпарсем пур... (*Касса алăкне хупать.*)

С а р м а н т е й. Эх, мĕншĕн çыхлантăм çаксемпе? Эпĕ мĕн те пулин пулать тесе... Мускава илетпĕр, Питĕре... Ак сире Мускав. Кăна пĕлнĕ пулсан, тахçанах тармаллаччĕ. (*Ассăн сывласа.*) Халĕ ак тарма та май çук ĕнтĕ.

Х ĕ л и п кĕрет. Аллинче чăматан.

Х ĕ л и п. Сывă-и, Митрофан Клементьевич? Ĕçсем мĕнле?

С а р м а н т е й. Ĕçсем калама çук лайăх. Ыран Мускава çитетпĕр, виçмине Питĕре... унтан... Парижа, Мадрида, Сингапура, Шайтанбурга...

Х ĕ л и п. Мĕн эс? Ухмахланнă-им?

С а р м а н т е й. Ăслăлантăм.

Ш а к м а к тухать.

Ш а к м а к. Сармантей, телефон патне кай.

С а р м а н т е й. Итлетĕп, господин поручик. (*Кассăна кĕрет.*)

Х ĕ л и п. Сывă-и, Дмитрий Иванович?

Ш а к м а к. Эсир штабран-и?

Х ĕ л и п. Çавăнтан.

Ш а к м а к. Кавĕрлене курмарăр-и?

Х ĕ л и п. Вăл штабран хăйĕн машинипе тухса кайрĕ. Халĕ те çитмен-и?

Ш а к м а к. Темшĕн килеймерĕ-ха. Хулара хĕрлисем çук-и?

Х ĕ л и п. Çук.

Ш а к м а к. Штаб кайнă-и?

Х ĕ л и п. Кайнă.

Ш а к м а к. Пит аван. Каяр.

Иккĕшĕ те пăрахут çине каяççĕ. Х у ç а а р ă м ĕ япаласем йăтса кĕрет. Тӳрех пăрахут çине утать. Ч а с о в о й винтовкăпа чарать.

Ч а с о в о й. Пропуск пур-и?

Х у ç а а р ă м ĕ. Мĕнле пропуск, мĕн тума?

Ч а с о в о й. Хуларан тарма.

Х у ç а а р ă м ĕ. Тарма та пропуск кирлĕ-и?

Ч а с о в о й. Пропусксăр юрамасть.

Телефон шăнкăравĕ.

С а р м а н т е й (*пуçне алăкран каларса*). Господин поручик!

Ш а к м а к пăрахут çинчен тухать.

Х у ç а а р а м ĕ (*Шакмак хыççăн утса*). Ваше благороди, пропуск парсамăрччĕ.

Ш а к м а к. Мĕнле пропуск?

Х у ç а а р ă м ĕ. Хуларан тарма.

Ш а к м а к. Тарма пропуск кирлĕ мар.

Х у ç а а р ă м ĕ. Салтак кирлĕ тет.

Ш а к м а к. А-а, пăрахутпа-и? Тĕрĕс. Анчах эпир ют çынна пăрахут çине кĕртместпĕр.

Х у ç а а р ă м ĕ. Эпĕ ют çын мар. Эпĕ шуррисем майлă. Сирĕн çар валли укçа та пуçтартăм. Ачасем те мана «буржуйка» тесе витлеççĕ...

Телефон шăнкăравĕ.

С а р м а н т е й с а с с и. Халех килет. (*Пуçне кăларса.*) Господин поручик!

Ш а к м а к. Çапла, ырă çыннăм, Атăл хĕррипе пропусксăрах тарма пултаратăр. (*Касса пӳлĕмне кĕрет. Унтан хăварт тухать.*)

Х у ç а а р ă м ĕ. Митрофан Клементьевич, пăрахут çине кĕртсе ярсамăрччĕ. Эпĕ ахаль тумăп.

С а р м а н т е й (*аяккалла çавăтса*). Ну?

Х у ç а а р ă м ĕ. Мĕн чухлĕ?

С а р м а н т е й. Пилĕк пин.

Х у ç а а р ă м ĕ. Ой, пит нумай ыйтатăр.

С а р м а н т е й. Ну, пилĕкçĕр.

Х у ç а а р ă м ĕ (*укçа парса*). Илĕр, тархасшăн.

С а р м а н т е й. Михĕсем хушшине хĕсĕнсе выртăр. (*Хуçа арăмне пăрахут çине кĕртсе ярать. Укçа шутлать.*) Икçĕр, виççĕр. Шуйттан карчăкĕ! Улталарĕ... Пилĕкçĕр вырăнне тăватçĕр çеç тыттарнă. (*Пăрахут çине кĕме тытăнать.*)

К л а в д ю ш а кĕрет.

К л а в д ю ш а. Митроша!

С а р м а н т е й чарăнать.

Эсир çак пăрахутпа таратăр-и?

С а р м а н т е й. Çак кимĕпе таратпăр.

К л а в д ю ш а. Ай-юй... Пит начар пăрахут хăварнă сире валли.

С а р м а н т е й. Лайăххисемпе пуçлăхсем тарнă. Эпир хӳрешкисем çеç. Тав турра, кунашкаллине хăварнă, унсăрăн Кавĕрлепе Шакмакăн çуран тарма тиветчĕ.

К л а в д ю ш а. Мана та хăвăрпа лартса кайăр-ха.

С а р м а н т е й. Эс мĕншĕн таратăн?

К л а в д ю ш а. Буржуйсем пурте хуларан тараççĕ.

С а р м а н т е й. Буржуйсем, буржуйсем... Эс шуррисен çарĕнче пулман. Эп, ак ухмах...

К л а в д ю ш а. Хĕрлисенчен хăратăп.

С а р м а н т е й. Сан пеккисемпе темĕн тăваççĕ пулĕ вĕсем...

К л а в д ю ш а. Апла пулсан, хамăр пристань патне çитиччен лартса кайăр.

С а р м а н т е й (*Клавдюшана пăрахут çине кĕртсе ярасшăн*).

Ч а с о в о й чарать.

Ку ман арăм. (*Часовой Клавдюшана кĕртсе ярать.*)

Ш а к м а к васкаса кĕрет.

Ш а к м а к. Сармантей! Капитана ман пата яр.

С а р м а н т е й. Итлетĕп, господин поручик.

С а р м а н т е й каять. О ф и ц е р Т а н ь ă н а çавăтса кĕрет.

Ш а к м а к. Татьяна Алексеевна! Каллех пирĕн алла лекрĕр-и? Алексеевана мĕншĕн ертсе килтĕр, господин подпоручик?

О ф и ц е р. Чугун çул кĕперне сирпĕнтерме кансĕрлерĕ.

Ш а к м а к. Епле?

О ф и ц е р. Çунакан шнура пырса сӳнтерчĕ. Шнура сӳнтермен пулсан, кĕперпе пĕрле хĕрлисен бронепоезчĕ те сывлăша ыткăнатчĕ.

Ш а к м а к. Тепĕр шашка хутăр-и?

О ф и ц е р. Ĕлкĕреймерĕмĕр. Рабочисен отрячĕ кĕпере сыхлама пырса çитрĕ.

Ш а к м а к. Хĕрлисем хулана кĕчĕç-и?

О ф и ц е р. Бронепоезд халь çеç вокзал патне кайрĕ.

И л е м кĕрет. Аллинче чăматан, корнет футлярĕ.

Ш а к м а к. О, Николай Петрович! Эсир те пирĕнпе каяс тетĕр-и?

И л е м. Сирĕнпе тарас терĕм, Дмитрий Иванович.

Т а н я. Илем!

Ш а к м а к (*Таня çине кăтартса*). Кăна ман каютăна.

О ф и ц е р (*Таньăна*). Утăр.

Т а н я. Эх, Илем. (*Хăвăрт пăрахут çине кĕрсе каять.*)

О ф и ц е р Таня хыççăн утать.

Ш а к м а к. Большевиксен сĕрĕмĕ сирĕлчĕ эппин?

И л е м. Сирĕлчĕ, Дмитрий Иванович.

Ш а к м а к. Пит аван!

Г р о м о в кĕрет.

Ш а к м а к (*Громова, Илем çине кăтартса*). Çак çынна каюта парăр.

Г р о м о в. Итлетĕп, господин поручик.

Ш а к м а к пăрахут çине каять.

И л е м. Калăр-ха, гражданин, ку пристань çинче ман пĕлĕш матрос пулмалла...

Г р о м о в. Хушамачĕ мĕнле унăн?

И л е м. Громов.

Г р о м о в. Ветлуга.

И л е м. Кама.

Г р о м о в. Ку сирĕн чăматан-и? (*Чăматан йăтма хатĕрленет.*)

И л е м. Чимĕр-ха, ун çăри пăсăлнă. (*Çăрине çаклатма пĕшкĕнет те, чăматанĕ уçăлса каять.*)

Чăматанран япаласем тухса ӳкеççĕ.

Эккей... (*Пуçтарма пĕшкĕнет. Шăппăн.*) Пăрахут пристань çумĕнчен хускалмалла мар. Иванов çапла хушрĕ.

Г р о м о в. Тăрăшăпăр.

И л е м. Капитан хамăр çын-и?

Г р о м о в. Хамăр çын.

Ш а к м а к с а с с и. Каласшăн мар-и? Ак сана! Ак сана!

Г р о м о в. Алексеевана хĕнет. Ирсĕр!

Ш а к м а к с а с с и. Трюма пăрахăр!

И л е м (*хытă сасăпа*). Чăматана йăтăр, гражданин.

Г р о м о в (*хытă сасăпа*). Итлетĕп.

Г р о м о в чăматан йăтса пăрахут çине каять, И л е м ун хыççăн утать. Пăрахут çине Ш а к м а к хăпарать, аллине шурă тутăрпа шăлать.

Ш а к м а к. Сармантей! (*Сармантей кассăран тухать.*) Çырана улăхса пăх. Кавĕрле килни курăнмасть-и?

С а р м а н т е й. Халех, господин поручик.

Ш а к м а к пăрахут çине каять. С а р м а н т е й ун хыççăн пăхса тăрать те сăхсăхса илет.

Тав турра. Халĕ тартăм ĕнтĕ. (*Погонĕсене татса пăрахать, кайма тытăнать. Чарăнса, погонĕсене илсе, атă кунчине чикет. Тарма тытăнать, анчах сасартăк чарăнать.*)

Л е н ă п а К а в ĕ р л е кĕреççĕ.

К а в ĕ р л е. Чăматана каютăна леçсе хурăр. (*Чăматанне Сармантее парать.*)

С а р м а н т е й пăрахут çине каять.

Л е н а. Гаврил Иванович, тархаслатăп, хăварăр мана кунта.

К а в ĕ р л е. Турткаланса ан тăрăр. Пурпĕр ямастăп.

К а п и т а н п а И л е м пăрахут çине хăпараççĕ.

Л е н а. Илем! Эсĕ те кунта-и?

И л е м. Кунта, Елена Васильевна. Эпĕ те хĕрлисенчен таратăп.

Л е н а хăвăрт пăрахут çине каять.

К а в ĕ р л е. Господин капитан, пăрахута ăсатăр.

К а п и т а н. Пăрахутăн рулĕ пăсăлнă та, çавна тӳрлетсенех каятпăр.

К а в ĕ р л е. Васкатăр! (*Пăрахут еннелле утать.*)

О ф и ц е р пăрахут çине хăпарать. Бинокльпе тăвалла пăхать.

О ф и ц е р. Господин капитан, пăхар-ха, туран пăрахутсем анаççĕ-и?

К а п и т а н (*бинокльпе пăхса*). Тĕрĕс, пăрахутсем килеççĕ.

О ф и ц е р. Пирĕннисем-и?

К а п и т а н. Пĕлме хĕн. Тен, пирĕннисем пулĕ.

О ф и ц е р (*аяккалла пăхса*). Господин поручик, туран пăрахутсем анаççĕ.

Ш а к м а к чупса тухать.

Ш а к м а к (*бинокльпе пăхса*). Хĕрлисем. Господин капитан, пăрахута ăсатăр.

К а п и т а н. Ан хăрăр. Вĕсем пире хăваласа çитеймĕç.

Ш а к м а к. Мĕншĕн пăрахута чарса тăратăр?

К а п и т а н. Руль пăсăлнă. (*Аяккалла.*) Братва! Час юсаса пĕтертĕр-и?

М а т р о с с а с с и. Халех пĕтет.

Ш а к м а к. Урăх кĕтме юрамасть...

К а п и т а н. Рульсăр пăрахут каяймасть, господин поручик.

О ф и ц е р. Господин поручик, васкас пулать. Пăрахутсем çывхараççĕ. (*Каять.*)

Ш а к м а к. Господин капитан, ăсатăр пăрахута.

К а п и т а н. Господин поручик, пăрахут çинче эп хуçа. Ман ĕçе ан хутшăнăр.

Пристань çине д о з о р н ă й хашкаса кĕрет.

Д о з о р н ă й. Ваше благороди, хула енчен хĕрлисем килеççĕ.

Ш а к м а к. Чалки!

К а п и т а н. Братва! Ют çын командине ан итлĕр.

Ш а к м а к. Юлашки хут калатăп: ăсатăр пăрахута!

К а п и т а н. Юсаса пĕтермесĕр пăрахут вырăнтан хускалмасть.

Ш а к м а к (*револьвер кăларса).* Эп сана, большевиксен... (*Револьверпа капитана тĕллет.*)

И л е м браунинг кăларса перет, Ш а к м а к ӳкет.

С а т у р с а с с и. Маттур, Илем!

И л е м. Сатур! Çитрĕр-им?

С а т у р с а с с и. Çитрĕмĕр, Илем тус!

К а в ĕ р л е пăрахут çине хăпарать.

К а в ĕ р л е. Кам печĕ? *(Шакмак виллине курса.*) Дмитрий Ивановича кам вĕлерчĕ?

Пристане С а т у р п а х ĕ р л ĕ а р м е е ц с е м кĕреççĕ.

Сатур салтак тумĕпе.

К а в ĕ р л е. А-а, çитрĕр-и? (*Пăшалне кăларать, Сатура тĕллет.*)

И л е м ăна аллинчен ярса тытать. Г р о м о в тухать, пулăшать.

К а в ĕ р л е. Господин капитан, ăсатăр пăрахута.

С а т у р. Капитан юлташ, пăрахута эп хушмасăр вырăнтан ан хускатăр.

К а п и т а н. Итлетĕп, командир юлташ.

И л е м. Комучан особоуполномоченной помощникĕпе мĕн тумалла, Сатур?

С а т у р. Трюма хупăр.

Матроссем К а в ĕ р л е н е тытса чараççĕ.

К а в ĕр л е (*Илем çине пăхса*). Сутăнчăк!

И л е м. Кам сутăнчăкки халĕ паллă ĕнтĕ, Гаврил Иванович. Ку ыйту пирки дискусси тумăпăр.

К а в ĕ р л е н е матроссем çавăтса каяççĕ.

И л е м. Сатур, трюмра пирĕннисем.

С а т у р (*кăшкарса)*. Юлташсем! Пăрахут çине!

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц с е м пăрахут çине хăпараççĕ.

Л е н а чупса кĕрет.

Л е н а (*Сатур умне ыткăнса*). Сатур!

С а т у р. Лена! Епле лекрĕн кунта?

Л е н а. Кайран, кайран, Сатур.

А с а м а т кĕрет.

С а т у р. Асамат! Эс ăçта пулнă?

А с а м а т. Трюмра... Салам! (*Сатура алă парать.*)

И л е м Т а н ь ă н а çавăтса тухать.

Л е н а. Таня!

С а т у р (*Таня патне чупса пырать, хулĕнчен тытать*). Кам хĕнерĕ сана?

Т а н я. Шакмак.

Л е н а. Ирсĕр!

С а т у р. Илем персе вĕлерчĕ ăна.

Л е н а. Илем? Эсĕ кунта тарма килмен-им?

А с а м а т. Мĕн? Илем шуррисемпе тарма? Пулма пултараймасть.

И л е м. Çук, эпĕ кунта губком хушнипе пăрахута чарса тăма килтĕм.

Т а н я (*Илем патнелле ыткăнса*). Илем! (*Ăнран кайса ӳкме тытăнать.*)

С а т у р. Илем, Лена... Таньăна халех больницăна леçĕр.

К а п и т а н. Пирĕн пăрахутсем çывхараççĕ.

Пăрахут кăшкăртать.

Пăрахут хамăрăннисене кĕтсе илме каять. Кам пырас тет, пăрахут çине!

И л е м. Таня, больницăна каяр-и?

Т а н я. Малтан хамăр пăрахутсене кĕтсе илер.

Пăрахутсем кăшкăртаççĕ. Малтан пĕри, унтан тепри... Арестленисем пăрахут çине тухаççĕ. Пристаньрисем те пăрахут çине каяççĕ. Пăрахут сассисем çывхараççĕ. Мачта çинчи шурă ялав анать.

К а п и т а н (*пăрахута юлашки хут кăшкăртса, хăй кĕперĕ çине хăпарать*). Чалки!

Г р о м о в трап илет, пристань карлакне хупать.

С а т у р. Илем тус, кала ĕнтĕ хăвăн корнетна!

И л е м корнетне кăларать те марш калама пуçлать.

К а п и т а н. (*рупорпа*). Каялла...

Пăрахут пристань çумĕнчен уйрăлать.

Малалла! Яра пар!

И л е м корнечĕ çумне оркестр хутшăнать. Мачта тăррине хĕрлĕ ялав хăпарать, пăрахут çинчи çынсене ирхи хĕвел пайăрки çутатать.

Ч а р ш а в

1933.

Федор Павлов

ЯЛТА

Тăвтă пайлă драма (сыпăк)

ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

Пăрчкан.
Елюк, унăн амаçури хĕрĕ.
Ванюк, каччă.
Çтаппан, авланнă çын.
Йăскар, карчăк.
Муççа, унăн упăшки.
Палля, салтак.
Старостă.
Çамрăк ача.
Ватă çын.
Туй пуçĕ.
Хăйматлăх.
Кĕреке пуçĕн юлташĕ.
Пĕрремĕш туй ачи.
Иккĕмĕш туй ачи.
Пĕрремĕш туй арăмĕ.
Иккĕмĕш туй арăмĕ.
Хĕрсем, ачасем, каччăсем, хĕрçумсем, туй халăхсем, туй ачисем, туй арăмĕсем тата ыттисем те.
Драмăри ĕç Германи вăрçи вăхăтĕнче, 1914-1916 çç. пулнă.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Пăрчкан пӳртĕнче

1-мĕш курăнни

П ă р ч к а н канса выртать.

Е л ю к (*кĕрет*). Ĕнтĕ сурăхсене хупрăм.

П ă р ч к а н. Купăста шăвартăн-и?

Е л ю к. Шăвартăм.

П ă р ч к а н. Ĕнисене мĕн патăн?

Е л ю к. Пахчаран курăк çулса патăм.

П ă р ч к ан. Лашасене тата?

Е л ю к. Лашисене те шăвартăм, апат патăм.

П ă р ч к а н. Мĕн патăн?

Е л ю к. Сĕлĕ.

П ă р ч к а н. Юрĕ, апла пулсан. Ĕнтĕ кайса çывăрах.

Е л ю к. Анне, ман пĕртте ыйăх килмест.

П ă р ч к а н. Мĕн тата?

Е л ю к. Эпĕ урама каятăп...

П ă р ч к а н (*тăрса ларать*). Мĕн? Ан чупса çӳренĕ пултăр!

Е л ю к. Анне, хĕрсем пурте урамра, юрăсем юрлаççĕ, епле манăн пĕчченех кайса çывăрас?

П ă р ч к а н. Ан пелке, чупкăн! Пĕрре-пĕрре асăнмалăх тупăн-ха хуна валли.

Е л ю к. Анне, мĕншĕн апла калатăн?

П ă р ч к а н. Эпĕ санран аслăрах-и, аслăрах мар-и? (Ӳ*пкелесе*.) Итлеха. Ма эсĕ ман сăмахран тухатăн? Эпĕ хуна çуратнă аннӳ мар пулсан та, ман саншăн чĕре ыратать.

Е л ю к. Анне, эсĕ планах çапла калатăн.

П ă р ч к а н. Эх, Елюк. Вилсе кайăп та, кураймăп çав. «Ĕлĕк анне çапла калатчĕ», – тесе сахал мар астăвăн вара.

Е л ю к. Анне, темскер çинчен кала çат ăн эсĕ, эпĕ ăнланмастăп.

П ă р ч к а н. Тĕрĕс каларăн. Чăнах та ним те пĕлместĕн эсĕ. Çипуç ырă, хырăм тутă, тата мĕн кирлĕ?

Е л ю к. Мана ним те кирлĕ мар.

П ă р ч к а н. Ухмах! Аçупа аннӳ камшăн тăрăшнă тата? Пирĕн пуянлăх юр пек çӳлтен çуса пулман. Ĕлĕкренпе çĕр тара илсе пухнă ăна. Эсĕ вăл хурапа шурăна тĕлĕкре те курман. Аçу вилсен пĕтĕмпех хам пуç çине юлчĕ те çурăма лайăх тарлаттарчĕ.

Е л ю к. Анне, мĕншĕн-ха çилленетĕн? Эпĕ сан сăмахран пĕртте тухмастăп-çке? Эпĕ хĕрсемпе выляма анчах каятăп.

П ă р ч к а н. Эх, ачам, эпĕ сана хуна юратса калатăп. Ман шухăшпа, санăн çав çара çипуçлă ушкăнпа çӳреме питех килĕшмест. Асту, эсĕ пуян хĕрĕ, çавна ан ман.

Е л ю к. Анне, эпир вылятпăр анчах. Каятăп, анне?

П ă р ч к а н. (*Елюк тухса кайма тăрсан.*) Каях, эппин. Чармастăп. Елюк! Асту, Ванюкран аяккалларах пăрăн.

Е л ю к . Мĕншĕн, анне? Ванюк питĕ ырă каччă-ске?

П ă р ч к а н. Юратмастăп эпĕ сан Ванюкна.

5-мĕш курăнни

Й ă с к а р. П ă р ч к а н кĕрет.

П ă р ч к а н. Акă эпĕ килтĕм те.

Й ă с к а р. Ма чăрманатăнах. Ман пĕртте ĕçес килмест.

П ă р ч к а н. Ай, мĕн каласатăн, Йăскар акай. Епле вара эпĕ сана хам пӳртрен хăна тумасăр кăларса ярăп? (*Сăра тултарать. Малтан хăй ĕçет, унтан Йăскара парать*.)

Й ă с к а р. И, Пăрчкан йăмăк, кăçал ĕçни... Çăвар ăшĕ те шăршланса карĕ пулĕ. Ĕçетпĕр, ĕçетпĕр – таçта каять, тепле хырăм чăтать. (*Ĕçет*.)

П ă р ч к а н. Сăри сивĕрех пулмарĕ-ши?

Й ă с к а р. Ман хырăм ăна тиркемест. Ман хăвăлĕ асланнă мар-и? (*Ĕçет*.) Сăри... Питĕ тутлă... Пыл пекех. Тав сана, Пăрчкан йăмăк!

П ă р ч к а н. Тавах-ха, кăçал кăтартсах та кайман-ха. Сана пĕрре питĕ хытă ĕçтерес тенĕччĕ.

Й ă с к а р. Сисетĕп. Мĕн тумаллине туса парăп.

П й р ч к а н. Йăскар акай, эсĕ хăçан ман ăша кĕрсе тухнă?

Й ă с к а р. Манран ним те пытараймăн.

П ă р ч к а н. Çтаппан арăмĕ мĕнле?

Й ă с к а р. Тирĕпе шăмми анчах юлнă. Нумая пултараймасть. Чĕм татăлнă.

П ă р ч к а н. Мĕнле чир унăн?

Й ă с к а р. Хĕрарăмăн телейĕ çавнашкал ĕнтĕ. Ачана чипер çуратма пултараймасан... (*ĕçет*) вара этем пĕтĕмпех пăрахăçа тухать.

П ă р ч к а н. Çтаппанĕ хăй мĕн?

Й ă с к а р. Çтаппанĕ-и?

П ă р ч к а н. Э-э...

Й ă с к а р. Çтаппан вăл урăх арăм шырать.

П ă р ч к а н. Чăнах-и?

Й ă с к а р. Суймастăп.

П ă р ч к а н. Ĕç-ха... Эпĕ сана тахçанах пĕр сăмах калас тенĕччĕ.

Й ă с к а р. Калах, пĕр сăмах пулсан. Эпĕ никама та калас çук.

П ă р ч к а н. Мĕн. Çтаппан мана килĕштермĕ-ши?

Й ă с к а р. Ха... Акă мĕн! Ай, тата шухăш кĕчĕ?

П ă р ч к а н. Темскер. Шухăш кĕчĕ пек çав.

Й ă с к а р. Мм... апла. Анчах...

П ӑ р ч к а н. Мĕн тата?

Й ӑ с к а р. Карт тухмасть.

П ӑ р ч к а н. Эпĕ сана ахаль тумӑп, Йӑскар акай.

Й ӑ с к а р. Ан çиллен, сар çу катса çитерсен те пулмасть. Ху шухӑшла: эсĕ тепĕр пилĕк çултан ватӑлса ларатӑн. Çтаппан халех ватӑлас çук. Сана урӑх тупса парӑп. Кама килĕштеретĕн?

П ӑ р ч к а н. Çтаппан мар пулсан, мана ытти кĕрик хӑшĕ те юрать. Пуянлӑх, тепĕр тесен, хамӑн та çитет.

Й ӑ с к а р. Пĕлетĕп. Ах, тыт-ха, ĕçрĕм ĕнтĕ. Урамра юрлани илтĕнет.

П ӑ р ч к а н. И, ĕç-ха, ĕç! Паллах, пирĕн Елюксем кĕртленсе çӳреççĕ. Ванюк çыпӑçнӑ та уйрӑлма та пĕлмест. Ăçта Елюк – унталла. Те качча илесшĕн тата хӑйĕн ухмах ăсĕпе?

Й ӑ с к а р. И, Ванюк Елюка тĕлĕкре те кураймĕ. Çавах та эсĕ вĕсене сыхла. Каччӑпа хĕр вӑл – кушакпа çу, тенĕ. Тавара пăссан, илекен пулмĕ.

П ӑ р ч к а н. Эпĕ те çапла шухӑшлатӑп çав: хĕр ятне пăсасси ним те мар, тетĕп. Чӑнах та, кайса сыхлас пулĕ. Эсĕ, акай, мана ан пăх: хăвах тултарса ĕç.

Й ӑ с к а р. Тытах.. Мана çитрĕ, ĕнтĕ кăштах выртса канасчĕ. Ватӑ шăмшак мар-и? Йĕпене сиссенех туртма пуçлать.

П ӑ р ч к а н. Канах, канах. Эпĕ Елюка кайса шырам-ха. (*Тухса каять.*)

6-мĕш курăнни

Й ӑ с к а р пĕчченех.

Й ӑ с к а р. Каях, ара. Канма ăна эпир сансăр пуçсăр та пĕлетпĕр. (*Сăра тултарса ĕçет. ĕçсе ярсан, витри тĕпне пăхса.*) Якалчĕ! Урамра юрлани илтĕнет. Юрлăрах, юрлăрах. Ана эпĕ те юрлатăп. (*Хуллен юрлать.Унтан, сулкаланса, тĕпел кукринче пĕр-иккĕ çаврăнать те сак çине выртса çывăрса каять. Ыйăхра пĕр-иккĕ юрласа илет.*)

7-мĕш курăнни

Е л ю к кĕрет. Й ӑ с к а р выртать.

Е л ю к (*урлă-пирлĕ пăхкалать*). Епле никам та çук вара? (*Каялла алăк патне чупса пырса.*) Ванюк, Ванюк! Ан кай, ан кай! Кĕр пӳрте, пӳртре никам та çук.

8-мĕш курăнни

Е л ю к. Й ӑ с к а р выртать. В а н ю к кĕрет.

В а н ю к. Чӑнах никам та çук-и?

Е л ю к. Никам та.

В а н ю к. Тусăм! (*Елюка ыталать.*)

Е л ю к. Ай, намăс...

В а н ю к. Эпĕ сана юрататăп.

Е л ю к. Ванюк, эсĕ мана манмăн-и?

В а н ю к. Açтан манас ман сана? Эсĕ манăн çутă хĕвелĕм-çке.

Е л ю к. Чăнах-и?

В а н ю к. Уйăхшăн та, хĕвелшĕн те.

Йăскар вăранса пуçне çĕклет.

Елюк!

Е л ю к. М?..

В а н ю к. Чуптутар?

Е л ю к. Ай! (*Вăтанса, Ванюк кăкăрĕ çине пуçне пикет.*)

В а н ю к. Елюк... Елюк...

Е л ю к (*пуçне ерипен çĕклесе, Ванюка куçран пăхать*).

Ванюк Елюка чуптуса хытса каять.

Й ă с к а р. А... Эпĕ мĕн тетĕп. Вăкăр пăрăва çуллать-мĕн?

В а н ю к (*пуçне хăвăрт çĕклет*). Кам пур кунта? Мана темскерле сасă илтĕнчĕ.

Е л ю к. Эсĕ йăнăшрăн. Пӳртре никам та çук. Ларар-и?

В а н ю к. Ларар.

Лараççĕ.

Елюк, эсĕ хитре.

Е л ю к. Эсĕ эпĕ хитрине тин куратăн-и?

В а н ю к. Тин мар. Эпĕ сана пĕчĕкренех юрататăп. Эсĕ маншăн питĕ хитре.

Е л ю к. Эсĕ те маншăн питĕ хитре.

В а н ю к. Ĕлĕк атте калатчĕ: «Çынна тӳрех куçран пăх, – тетчĕ, – куçĕ санран тарса кушаккайăк пек пытанмасть пулсан, вăл вара сан çын», – тетчĕ.

Е л ю к. Ха-ха-ха! Епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Ванюк? Ман куçăмсем камăн пек тата?

В а н ю к. Санăн – çутă çăлтăр пек. Эпĕ кунĕн-çĕрĕн сана куçран пăхса ларăттăмччĕ: вĕсем çăл пек тарăн. (*Чуптуса хытса каять.*) А!..

Е л ю к. Ванюк, Ванюк, мĕн пулчĕ сана? Çиллентĕн-им?

Ванюк чĕнмест.

Е л ю к (*Ванюка куçĕнчен пăхса*). Ванюк, эсĕ ӳсĕрĕлсе кайнă пек пултăн.

В а н ю к. Санăн çӳхе туту ӳсĕртсе ячĕ мана. Эх, Елюк! Сана çилленме манăн вăйăм çитмест. Эпĕ сана акă çапла ал çине çĕклĕттĕм те пĕтĕм тĕнчене кăтартăттăм: «Çакă манăн!» – тейĕттĕм. Ах, савнă Елюк, питĕ хытă юрататăп-çке эпĕ сана!

Е л ю к. Хăçан качча илĕн эсĕ мана?

В а н ю к. Хăçан?.. Кĕçĕрех! Пĕлтĕн-и?

Е л ю к. Кĕçĕрех ытла хăвăрт. Эпĕ хатĕрленмен.

В а н ю к. Мĕн хатĕрленмелли пур! Пурпĕр сана аннӳ туй туса качча парас çук мана. Вăрттăн тухас пулать.

Е л ю к. Чăнах та, мана анне сана качча парас çук. Юрĕ. Хĕр вăрланă тăвăпăр. Анчах хăçан тухас? Кĕçĕрех ытла хăвăрт маар-и?

В а н ю к. Кĕçĕрех, чунăм, кĕçĕрех.

Е л ю к (*Ванюка ыталаса илет*). Юрĕ, апла пулсан.

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Ванюк пӳрчĕ.

1-мĕш курăнни

Е л ю к сăпка сиктерет.

Е л ю к (*юрлать*).

Нянине-тунине,
Ачине-урине –
Тăппи-таппи çӳреме,
Кăрăс-кăрăс тутарма...

(*Малалли та çав кĕвĕпех*).

Амăшне – пуçне,
Ачине – çунатне –
Вăштăн-вăштăн вĕçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме...

2-мĕш курăнни

Е л ю к. В а н ю к кĕрет.

В а н ю к. Тулта шакăртах пуçтартăм ĕнтĕ ирхи апат çиме те юрать. Елюк, хатĕрле апат. Ачийĕ унччен эпĕ хам та сиктерĕп.

Е л ю к. Юрĕ, Ванюк, пăх-ха: вăл пĕртте çывăрмасть, куçне уçнă та пăхса выртать.

В а н ю к. Ăçта-ха вăл?

Ванюкпа Елюк иккĕшĕ сăпка ăшне пĕшкĕнсе пăхаççĕ.

Ха, чăнах: епле вăл чăрлаттарса пăхса выртать. А, Елюк, эсĕ апат хатĕрле-ха, хатĕрле.

Е л ю к. Халех. Апачĕ те ним те çук та, мĕнех хатĕрлес-ши?

В а н ю к. Кăвас пĕтни-ха вара?

Е л ю к. Пур кăштах.

В а н ю к. Кăвас çине сухан яр. А ку шăхличи валли качака суса кĕр. Вара çитрĕ те пире.

Е л ю к. Юрĕ, çапла тăвăпăр. (*Качака сума тухса каять.*)

3-мĕш курăнни

В а н ю к пĕчченех.

В а н ю к (*ачине*). Мĕн туса выртатăн-ха эсĕ, улпут? Ха, аллине тăсать тата. Маттур, маттур. Çывăрах, ывăлăм, çывăрах.

4-мĕш курăнни

В а н ю к. П ă р ч к а н кĕрет.

П ă р ч к а н. Ман килес, ан ятлăр. Пурăнаççĕ-и?

В а н ю к. Вилме шухăшламан-ха. Ху мĕнле пурăнатăн?

П ă р ч к а н. Пурăнкалас пулать ирĕксĕр, мĕн тăвас тетĕн?

В а н ю к (*пуçне çĕклет*). Мĕнле ирĕксĕр? Пуçна ма çыхрăн?

П ă р ч к а н. Ах, ан калах, Ванюк. Çтаппан çапса шăтарчĕ.

В а н ю к. Эхе. Тыткалама пĕлет çулас, мур, пĕрре алла лексен. Астăватни, пĕрре сан пўртре мана тытса хĕнеме тăчĕ? Анчах ури чĕтрерĕ пулмалла – çыхланмарĕ. Çавах эпĕ ăна маттур пулĕ тесе шухăшлатăп.

П ă р ч к а н. Мĕн пулнине каçарах, Ванюк кĕрўˆ. Мана, ухмах хĕрарăма, улталарĕ вăл, усал. Ман пĕтĕм пуянлăха хăй аллипе пуçтарса илчĕ.

В а н ю к. Ан тив, ăна пуянлăх чăрмантарас çук. Арăмĕ ĕçлемест, тарçă тытас пулать.

П ă р ч к а н. И, арăмне çаплах çĕмĕрет. Вырăнтан тăма та памасть. Кăшт ура çине тăрса çўреме пуçласанах хĕнеме тытăнать.

В а н ю к. Ха, упа хăраххи.

П ă р ч к а н. Каяс пуль.

В а н ю к. Ма лармастăн?

П ă р ч к а н. Çтаппана шыратăп та... Сирĕн пата килсе ларманши, терĕм, çавăнпа килсе пăхас, терĕм.

В а н ю к. Çук. Çтаппан пирĕн пата килмен. Мĕн-ма кунта килес унăн?

П ă р ч к а н. Елюк пуçне çавăратăп тесе мухтанать, тет.

В а н ю к. Ха-ха-ха! Çавăрттарăп эпĕ ăна лайăх, пĕрре ярса илсен.

П ă р ч к а н. Тен, хăвăн салтака каймалла пулсан, йытăланĕ те вăл, ăна никам та чараймĕ.

Ку сăмахсене каланă чух Е л ю к алăкран кĕрет.

5-мĕш курăнни

В а н ю к. П ă р ч к а н, Е л ю к кĕрет.

Е л ю к. Ачи çывăрать-и?

В а н ю к. Çывăрать.

Е л ю к. Анне, мĕнле салтака каймалли пулсан, тетĕн эсĕ?

П ă р ч к а н. Паян кантурсем килнĕ. Ванюкпа тансене чĕнеççĕ, тет.

В а н ю к. Килсе чĕнмен халь, унччен апат çиер.

П ă р ч к а н. Каяс-ха, сывă пулăр.

Е л ю к. Анне, апат çиме юл.

В а н ю к. Апат çиме лар. Çитĕ ĕнтĕ, малашне пĕр-пĕрне çилленмесĕр пурăнăпăр.

П ă р ч к а н. Ларса çиес-им апла?

В а н ю к п а Е л ю к. Ларса çи. Ларса çи.

Е л ю к. Çимесĕр...

Апат çиме ларaççĕ. Е л ю к, çимесĕр, В а н ю к çине пăхса ларать.

В а н ю к. Ма çиместĕн эсĕ?

Е л ю к. Сана салтака илсе каясран хăратăп.

В а н ю к. Ан хăра, эпир кайсан вăрçи те пĕтет.

П ă р ч к а н. Пĕттĕрччĕ вăл, вăрçи. Вара, кайсан та, пуç пĕтмĕччĕ.

Шаккаççĕ.

С а с ă. Килте-и?

В а н ю к (*тăрса чӳречерен пăхать*). Килте. Кам вăл? Çитăр мучей, эсĕ мар-и?

С а с ă. Эпĕ.

В а н ю к. Кĕр пӳрте.

С а с ă. Кĕрес те пулĕ.

Е л ю к. Ванюк, мĕншĕн килнĕ вăл?

В а н ю к (*шухăша кайса*). Темме...

Е л ю к. Ах, турă, старостă!..

Пурте сĕтел хушшинчен тухаççĕ.

П ă р ч к а н апат пуçтарма тытăнать.

6-мĕш курăнни

Е л ю к. В а н ю к. П ă р ч к а н. С т а р о с т ă кĕрет.

С т а р о с т ă. Ман килес, вăй патăр.

В а н ю к. Килех, маларах ирт.

С т а р о с т ă (*ал парать*). Лайăх пурăнаççи ушкăнпе?

В а н ю к. Тавтапуç! Пурăнатпăр-ха хуллен. Ху лайăх-и?

С т а р о с т ă. Çӳретпĕр. Пирĕн ĕçĕ çавнашкал та...

Е л ю к. Мĕн тата?

С т а р о с т ă. Çавнашкал ĕнтĕ. Паян кантура каяс пулать, ыран приюма...

Е л ю к (*йĕрет*). Ах...

В а н ю к. Елюк, ан макăр-ха, тархасшăн... (*Сăпка çине кăтартса.*) Авă сан... выртать. Эсĕ çавна пăх... Эпир ĕщĕ... карăмăр...

Питне аллипе хуплать. Урамра салтак юрри илтĕнет.
Юрлакансем Ванюк пӳрчĕ патнелле килеççĕ.

С т а р о с т ă. Ăна ĕнтĕ, Ванюк шăллăм, макăрса та ним те тăвас çук, ĕçĕ çапла та... Ну, эпĕ каям-ха... Ман тата ик-виç çĕре çитес пулать. Сывă пулăр. (*Тухса каять.*)

В а н ю к. Сывă пул, мучей!

Урамра: «Тпру!» тенĕ сасă илтĕнет.

7-мĕш курăнни

В а н ю к. Е л ю к. П ă р ч к а н. С а л т а к а ч и с е м кĕреççĕ.

С а л т а к а ч и с е м. Сывă-и ушкăнпе?

В а н ю к. Сывах-ха, юлташсем! Елюк, сăра тултар.

П а л л я. Сăрапа тăрса нумай пулать, Ванюк. Эпир кайма тухнă. Сана лартса каяс, терĕмĕр.

В а н ю к. Епле ман пӳртрен виç курка ĕçмесĕрех тухăпăр?

Е л ю к В а н ю к а сăра тултарса парать. В а н ю к ĕçет те,
тата тултарса, с а л т а к а ч и с е н е ĕçтерет.

С а л т а к а ч и с е м (*юрлаççĕ*).

Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Эпир каяс çул пуль çав,
Эпир каяс çул пуль çав.

Уйăх витĕр çул курăнать,
Уйăх витĕр çул курăнать,
Эпир çӳрес çул пуль çав,
Эпир çӳрес çул пуль çав.

В а н ю к. Ан макăр-ха, Елюк чунăм. Кантур инçех мар, каçчен кайса килĕпĕр...

П а л л я. Арахмат ырă хуçасем, ĕçрĕмĕр, хăна пултăмăр, ĕнтĕ каяс та пулать.

В а н ю к. Кайăпăр, Елюк, тумтир пар...

Е л ю к (*сăхманпа карттус парать*). Ванюк, часрах таврăн...

В а н ю к. Эх, карăмăр! (*Ванюк салтак ачисемпе пĕрле*)

Мăн çул урлă каçнă чух,
Мăн çул урлă каçнă чух
Яштак хурăн хуçăлчĕ,
Симĕс çулçи тăкăнчĕ.

Тăвансенчен уйрăлнă чух,
Тăвансенчен уйрăлнă чух
Яштак пĕвĕм авăнчĕ,
Çемçе кăмăл хуçăлчĕ.

Хыççăн тухать.

Тухса каяççĕ. Е л ю к ăсатма ыталанса юрласа тухса каять.
Пăрчкан сăпка патĕнче.

8-мĕш курăнни

П ă р ч к а н пĕчченех. Урамра П а л л я сасси: «Эй, малти!» Хункăрма сасси илтĕнми пулать. Е л ю к макăрса кĕрет.

Е л ю к. Карĕç!..

П ă р ч к а н. Макăрса та ним тăвас çук.

Е л ю к. Сана апла калама ним те мар. Ман мĕнле чăтас?

П ӑ р ч к а н. Эпĕ каям-ха. Сывӑ пул. Ан макӑр. Макӑрса та ним тӑвас çук. (*Тухса каять.*)

Е л ю к. Сыв пул.

9-мĕш курӑнни

Е л ю к пĕрченех.

Е л ю к. Чĕре паçӑрах сисрĕ. Турӑ çавӑрса килтĕрех. Пĕччен пулсан тата тепĕр мӑйлӑччĕ. (*Сӑпка çине пăхса.*) Çакӑншӑн чун хӑрать. (*Сӑпка юррине хуллен юрлать.*) Нянине-тунине, Ачине-урине... Юмӑç ярам-ха, мĕн тухать. (*Çатма аври тӑрӑшне аллипе тытса сӑвать.*) Пĕрре... иккĕ... виççĕ... тӑваттӑ... пиллĕк... улттӑ... çиччĕ... Ах, ырӑ пулас çук! Алӑкран шаккаççĕ. Кам вӑл?

10-мĕш курӑнни

Е л ю к пĕрченех.

Ç т а п п а н (*алӑкран*). Кĕме юрать-и? (*Кĕрет.*)

Е л ю к. Ванюксем карĕç...

Ç т а п п а н. Килнĕ-килменех ан хӑваласам. Куртӑм кайнине. Çавӑнпа сана хĕрхенсе килтĕм.

Е л ю к. Мана хĕрхенекен сансӑрах пур.

Ç т а п п а н. Сӑмахсем хӑватлӑ. Эпĕ ун пеккине юрататӑп.

Е л ю к. Мĕн кирлĕ сана?

Ç т а п п а н. Ан ятла, Елюк. Нимĕн те кирлĕ мар. Сана анчах кĕрсе курас терĕм.

Е л ю к . Эсĕ ӳсĕр!

Ç т а п п а н. Пулĕ те пулĕ. Анчах ĕçнĕшĕн айӑп тӑвӑн-и мана?

Е л ю к. Санпа калаçса тӑма ман кӑмӑлӑм та çук. Кала мĕн кирлине?

Ç т а п п а н. Лӑплан, лӑплан, Елюк. Мана ытлашши нимĕн те кирлĕ мар. (*Ачаш сасӑпа.*) Эх, Елюк! Ниçта пырсан та эпĕ хам валли канӑçлӑх тупаймастӑп. Эсĕ хĕр чухне сана курсан, манӑн чун хĕпĕртетчĕ. Халĕ сана çын арӑмĕ вырӑнче куратӑп та, ман ӑш çурӑлсах тухать.

Е л ю к. Эй, путсĕр ултавçӑ! Тӑван арӑмна хĕне кĕртсе ятӑн, ман аннене çыпӑçса, ӑна намӑс кӑтартрӑн. Çитĕ сана, мана ан тив. Пӑрах хӑвӑн ӳсĕр шухӑшусене.

Ç т а п п а н. Эпĕ ӳсĕр мар, Елюк. ĕçнĕ пулсан та, ӳсĕр мар. Ман пуç урӑ чухнехинчен те урӑрах. Эпĕ хам кӑкӑра акӑ çапла уçса кӑтартма пултарсан, эсĕ мана кӑштах та пулсан хĕрхенĕттĕнччĕ. Эсĕ калатӑн: «араму», – тетĕн, «анне» – тетĕн. Ман арӑм ман каччӑ ĕмĕрне типĕтрĕ. Хĕне карĕ те, кӑмӑлĕ пăсӑлса карĕ. Вара пăчкăпа сĕрнĕ пек вăрçма

пуçларĕ. Мĕншĕн эпĕ айăплă вăл хĕне кайнăшăн? Вара, пурнăç ăнман пирки, эпĕ хам килтен хам сивĕнтĕм. Сан аннӳ çумне те çавăнпа пырса çыхлантăм. Ку вара тата арăмран та усалтарах пулчĕ. Хăй ватă пирки тытăнчĕ вара кĕвĕçме, аяккалла пăхма та памасть, кĕвĕçет. Эсĕ, тет, мĕн куçна чаркаласа пыратăн, тет, мăнтăр хĕрсене шыратăн-им, тет. Кайрантан-кайран çутçанталăкшăн кĕвĕçме пуçларĕ. «Мĕн тек урамалла пăхатăн?» – тет. Вара, чун тăвăрланса çитрĕ те, чăтаймарăм – тухса тартăм санăн аннӳ патĕнчен. Вара ман чĕре ытларах суранланса карĕ. Çав тĕлех тата пĕрре сана чиркӳре турра кĕлтунине куртăм. Эсĕ мана туррăн таса анкĕлĕ пек курăнса карăн. Çавăнтан пуçласа эсĕ ман чĕрене ăмăрткайак чĕрнисемпе чавса илнĕ пек (*аллипе туса кăтартать*) кĕрсе лартăн. Юрататăн-и эсĕ мана?

Е л ю к. Эсĕ хăрушă этем. Сан сăмаххусене итлесе сивĕсĕр шăнса каймалла. Эпир çакă начар пӳртре те телейлĕ пурăнатпăр. Упăшка мана юратать, манăн сăпкара пĕчĕкçеççĕ ача выртать – пурнăç нимрен те каях мар. Эсĕ хăвăн телейне халиччен тупаймарăн пулсан, – çакăнта ан шыра. Каях хăвăн çулупа – пулĕ ăçта та пулсан сан валли те тӳпе.

Ç т а п п а н (*чупса пырать*). А, кăмăлпа юратмастăн пулсан – эпĕ сана вăйпа илĕп.

Е л ю к. Ах! (*Сăпка хыçне тарса ӳкет.*) Мана илес тесен, сăпкана çĕмĕрсе, ман ача урлă пусса каç!

Ç т а п п а н (*чарăнса, пуçне икĕ аллипе хĕстерсе тытать*). Мĕн турăм эпĕ? Каçар мана тархасшăн, Елюк!

Е л ю к (*алăк патнелле кăтартса*). Тухса кай, çылăхлă чун!

Ç т а п п а н. Каçар, Елюк, каçар. (*Чĕркуççи çине тăрать.*)

Урамран салтак юрри илтĕнме пуçлать.

Е л ю к. Тухса кай часрах! Халех тухса каймасан, сана Ванюк килсен, йытта вĕлернĕ пек вĕлерĕ.

Ç т а п п а н. Вĕлертĕр! Эсĕ каçармасăр эпĕ вырăнтан тапранмастăп!

Урамра хункăрма сасси тата П а л л я сасси: «Тпру!..»

Е л ю к (*ăнтан кайса, Çтаппан патне чышкине чăмăртаса чупса пырать*). Тухса кай часрах, шуйттан! Эсĕ мана пĕтересшĕн-и? (*Ванюк кĕресрен хăраса, алăка çаклатса лартать.*)

Ç т а п п а н тухса тарма алăк патне чупса пырать. Тултан шаккаççĕ.

В а н ю к сасси: «Елюк, уç, эпир таврăнтăмăр!» Ç т а п п а н хăраса каялла чакать. Е л ю к чупса пырса чӳречĕ уçать, Ç т а п п а н а тухса кайма кăтартать.

Ç т а п п а н чӳречĕ витĕр сикет. В а н ю к тултан татах шаккать:

«Елюк, уç! Илтместĕн-им эсĕ? Уç!» Е л ю к уçать.

11-мĕш курăнни

Е л ю к. В а н ю к п а с а л т а к а ч и с е м кĕреççĕ.

В а н ю к. Мĕншĕн час уçмарăн?

Е л ю к (*хăраса*). Ванюк!..

В а н ю к (*пăлханса*). Елюк, мĕн пулчĕ сана? Эсĕ чĕтретĕн. Куçусем санăн саланса кайнă. Эсĕ ху та шап-шурă шуралса кайнă.

Е л ю к. Ах, Ванюк...

В а н ю к. Мĕн пулчĕ, кала часрах! Эсĕ мана уртарса яратăн! (*Чӳрече уççине курса.*) Ку чӳрече мĕншĕн уçă? (*Пĕлсе.*) А, сан пата çын килнĕ-и? Кала тӳррипе, унсăрăн пурпĕр чунна кăларса илĕп!

Е л ю к (*чĕркуçленсе*). Чунтан-вартан юратнă Ванюк, каçар мана, эпĕ айăплă мар.

В а н ю к. Мĕн тата, кала часрах!

Е л ю к. Эсир тухса кайсанах... эпĕ ача çывратма хатĕрлентĕм.

В а н ю к. Ну?

Е л ю к. Çав вăхăтра Çтаппан килсе кĕчĕ те мана пусмăрлама тытăнчĕ.

В а н ю к (*аллипе пуçне тытать; сывлăша туртса илсе, ухмаха ернĕ пек кулса ярать, унтан арăслан пек вăйлăн кăшкăрса калать*). Ăçта вăл халь? Парăр мана ăна çакăнта! Ăçта вăл, ăçта-а?

Е л ю к. Эсĕ вĕлересрен хăраса, эпĕ ăна чӳрече витĕр кăларса ятăм. Çавăнпа, вăл тухса сикиччен, эпĕ алăка уçмарăм.

В а н ю к (*Елюка çапма аллине çĕклет*). Эсĕ те мана улталас тетĕн-и, йытă ами?

Ванюка аллинчен тытса чараççĕ. Ванюк, çемĕçсе кайса, сак çине кайса ӳкет. Елюк ун çине чупса пырса ӳкет.

Е л ю к. Эпĕ айăплă мар, Ванюк, каçар мана!

В а н ю к (*хуллен, çемçе сасăпа*). Тупса килĕр кунта Çтаппана, тархасшăн, тупса килĕр, ман ăна курас килет.

П а л л я. Айтăр, ăна тытса килетпĕр!

С а л т а к а ч и с е м. Айтăр, айтăр!

Тухса каяççĕ.

13-мĕш курăнни

Е л ю к. В а н ю к. Ç т а п п а н п а с а л т а к а ч и с е м.

П а л л я. Акă, хайхи, упана тытрăмăр.

В а н ю к (*мăшкăлласа*). Кил, кил, Çтаппан. Мĕн-ма эсĕ пирĕн хушăмăра килесшĕн мар? Е пирĕнпе хутшăнма йĕрĕнетĕн-и? Ай, çын арăмĕсене чуптума анчах лайăх-и?

Ç т а п п а н. Каçар мана, ырă Ванюк! (*Чĕркуçленет*).

В а н ю к (*аслати пек кăшкăрса ярать*). А-ы, эсĕ каçар? Эсĕ каçар-и? (*Çтаппан патне чупса пырса урипе питĕнчен тапма тăрать.*)

Ç т а п п а н ура çине сиксе тăрать. В а н ю к Ç т а п п а н а пырса çапать, ăна юлташĕсем тытса чараççĕ. Е л ю к ачине тытать.

Ç т а п п а н. Каçар, Ванюк! Эпĕ ӳсĕр пулнă...

В а н ю к. Усĕр!.. Сана хăвăн арăму çитмест, мăнтăр! Тăлăх арăмсемпе пӳтсĕрленсе çӳрерĕн те, тата ман вырăна килсе вараласа каяс терĕн-и? Акă сана! Акă сана!..

П а л л я. Çитĕ ĕнтĕ, Ванюк, чарăн.

14-мĕш курăнни

Çавсемех. Й ă с к а р чупса кĕрет.

Й ă с к а р. Çтаппан кунта-и? (*Çтаппана курса.*) Çтаппан, айта часрах килне, арăму вилсе кайрĕ.

В а н ю к. Акă сана тепре арăмушăн (*çапать*).

Ç т а п п а н. Ан тив, Ванюк, йывăр суран ан ту.

В а н ю к. А-ы, йывăр суран? Чунна кăларса илем эпĕ санне! Чхву! Шуйттан аçи, тепĕр тесен... Намăссăр çын, тухса çухал ман куçăмран!..

Ç т а п п а н тухса каять.

С а л т а к а ч и с е м. Ха-ха-ха! Тупрĕ хăйĕн валли!

16-мĕш курăнни

В а н ю к п а Е л ю к.

В а н ю к (*кăштах тăрсан*). Ывăнтăм. Вăй лăштах карĕ.

Е л ю к. Ванюк, ман чĕре сиксех тухать. Ырă пулмасть пулĕ.

В а н ю к. Ним те мар. Эсĕ хăранă. Ашчик тапранчĕ пулмалла санăн. Ах, ывăнтăм. Сасартăк ыйхă пусса килчĕ. Çывăрас.

Е л ю к. Вырт, вырт, эпĕ те выртатăп.

В а н ю к çывăрма выртать. Е л ю к ачине пырса сиктерет. Хăйă сӳнтерет. Тултан уйăх çути кĕме пуçлать.Темме чĕре сиксех тухать.

Ку чĕре манăн ырра сисмест пулĕ.

В а н ю к (*ыйхăллă сасăпа*). Çывăр, Елюк. Шутлассине ыран та шутлăпăр.

Е л ю к. Юрĕ. Ача çывратам-ха. (*Сăпка юррине хуллен, сăмахсăр юрлать.*) Çывăрчĕ. (*Ванюк умне пырса ларать. Ванюк çине виçĕ хутчен хĕрес хурать. Унтан ачине илсе тĕпел кукрине çывăрма выртать.*)

Уйăх çути вăйланать. Кăшт вăхăт иртсен, чӳречерсн Ç т а п п а н мĕлки курăнать. Вăл чӳрече витĕр хуллен йăпшăнса кĕрет. Аллинче улăм кĕлти.

17-мĕш курăнни

В а н ю к п а Е л ю к. Ç т а п п а н кĕрет, сцена урлă каçса, алăкран тухать. Алăкне пĕтĕмпех хупмасть. Кĕлтине алăк хыçĕнче чĕртсе ярать. Çулăм тухсан, пӳртре хĕрлĕ çутă. Ç т а п п а н каялла кĕрсе, тепĕр хут чӳречерен тухса сикет. Пушар чанĕ çапма пуçласан, В а н ю к п а Е л ю к сиксе тăраççĕ.

18-мĕш курăнни

В а н ю к п а Е л ю к.

В а н ю к п а Е л ю к. Ах, ах! Пĕтрĕмĕр! Ах, пĕтрĕмĕр! Ах, пĕтрĕмĕр! (*Ванюк çенĕкелле чупса тухать те çулăмран каялла тарса кĕрет.*)

Е л ю к. Ванюк, ачана манса хăваратпăр! Ачана! Ачана!

В а н ю к п а Е л ю к сăпка çĕклесе чӳречерен тухса сикеççĕ.

Урамра халăх шавлама пуçлать.

Ч а р ш а в

ВИҪҪĔМĔШ ПАЙĔ

Урамра, Й ă с к а р пӳрчĕ умĕнче.

2-мĕш курăнни

Е л ю к. Й ă с к а р кĕрет.

Й ă с к а р. Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма эпир çĕрме пуян терĕн-им?

Е л ю к. Арласа ларнă çĕрте пуçа шухăшсем кĕчĕç те, шухăша карăм.

Й ă с к а р. Тыткалакан çук сана, пулсан – шухăша каймăттăн эсĕ.

Е л ю к. Ах, пур, Йăскар акай, пур...

Й ă с к а р (*мăшкăлласа*). Пур... Ман шухăшпа, сан ăна ĕнтĕ манас та пулать.

Е л ю к. Йăскар акай, мĕн кала çатăн эсĕ? Ăçтан эпĕ Ванюка манма пултаратăп? Вăл ман ăшран та тухмасть.

Й ă с к а р. Тек ăпла каланине ман итлес килми пулчĕ. Вăрçăри япала вăл икĕ телейлĕ. Те килет, те килмест.

Е л ю к. Вилмесен, хăçан та пулсан килĕ.

Й ă с к а р. Ухмах! (*Хĕрхеннĕ пек пулса.*) Елюк! Эпĕ сана хуна ырă тăвасшăн калатăп. Вилмесен килĕ, тетĕн, килсен те вăл ĕçе питех чăрмантармĕ. Эсĕ çамрăк, сăн-сăпатлă – епле хуна ху типсе пурăнас тетĕн?

Е л ю к. Ах, турă, епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Йăскар акай. Ун пек шухăш ман пуçа пĕртте кĕмест.

Й ă с к а р. Эпĕ сана уншăн каламастăп, хăвăншăн калатăп. Хăвăн ирĕк, кирек мĕн ту. Эсĕ хурапа шурăна курман-ха апла пулсан.

Е л ю к. Курнă та-çке. Йăскар акай, курнă. Пурăнăç шухăшĕ ман пуçа шăтарсах тухать. Эпĕ ăна эсĕ каламасăрах лайăх пĕлетĕп.

Й ă с к а р. Вара, вара. Акă хĕле кĕретпĕр, мĕн çиес тиетĕн? Мĕн тумланас тиетĕн? Ыйтк алама каяс тиетĕн-и? Çавна пĕл.

Е л ю к. Сана йĕрĕнтерсе пурăннине пĕтĕм чунтанах сисетĕп эпĕ. Анчах кĕлмĕçе каяс вырăнне, хапрăк-савăта ĕçлеме каям, пĕччен

хырăма тăрантарăп çавах. Ачи пурăннă пулсан, пурăнма кансĕртерех пулнă пулĕччĕ.

Й ă с к а р. Пирĕн хĕрупраçпала тем тумалла хапрăк-савăтра. Пĕлетĕн, хĕрарăмăн пĕр хак: май килчĕ – тутă, май килмерĕ – çакăнса та вилĕн.

Е л ю к. Сан сăмаххусем ман чĕре тĕпнех кĕрсе лараççĕ.

Й ă с к а р. Кĕччĕр çав, кĕччĕр. Шухăшлама пĕлместĕн. Çавăн пек кĕлеткепеле эпĕ сар çу çисе пурăнăп. Авă, Çтаппан миçе хут килсе карĕ кăçал? Мĕн тутуна пăратăн, тепĕр тесен.

Е л ю к. Ванюк киле таврăнсан, вăл манне чунăма кăларса илĕ.

Й ă с к а р. А тата, вилнĕ пулсан?

Е л ю к (*хăраса*). Ах! Вилнĕ пулсан? Вара ан тапрат, Йăскар акай, ман çӳçсем вирелле тăрса карĕç.

Й ă с к а р. Чăнах та вилнĕ пулсан? Мĕн? Кала-ха?

Е л ю к. Вилнĕ пулсан, вара эпĕ те вилетĕп.

Й ă с к а р. Чхву!

5-мĕш курăнни

Й ă с к а р. Ç т а п п а н тепĕр енчен кĕрет.

Ç т а п п а н. Пурăнать-и?

Й ă с к а р. Пурăнать.

Ç т а п п а н. Ма вилместĕн эсĕ?

Й ă с к а р. Тĕнче пушанса юлĕ, тетĕп.

Ç т а п п а н. Ман шухăшпа, эсĕ тĕнчене шăршлантарма анчах.

Й ă с к а р. Ху шăршлантар. Сан хырăм çӳхех мар.

Ç т а п п а н. Ман кĕсъе те çӳхех мар.

Й ă с к а р. Суятăн.

Ç т а п п а н. Мĕншĕн суяс? Эсĕ суйнишĕн укçа памастăн пулĕ?

Й ă с к а р. Кай! Урăх сана нихçан та ĕненместĕп.

Ç т а п п а н. Мĕншĕн, Йăскар акай?

Й ă с к а р. Э-э, Елюк кирлĕ пулсан, «Йăскар акай»? Миçе хутчен суйрăн? Тухъя тупса паратăп, тесе суять. Елюка мар сана – хĕрĕх çулхине те тупса памастăп.

Ç т а п п а н. Йăскар акай! Мĕншĕн çиллентĕн-ха?

Й ă с к а р. Кай ăçтан килнĕ çĕре.

Ç т а п п а н. Йăскар акай!

Й ă с к а р. Кай, кай, кай!

Ç т а п п а н (*аллине кĕсйине чикет те, Йăскар çине пăхса, укçине шăнкăртаттарать*).

Й ă с к а р (*Çтаппан çинелле çаврăнса пăхать*).

Ç т а п п а н (*татах шăнкăртаттарать*).

Й ă с к а р (*аллине тăсса*). Пар тата, мĕн йĕкĕлтетĕн?

Ç т а п п а н (*укçине кăларать*). Елюк хăçан ман пулать?

Й ă с к а р. Ы-ы... (*патне пырса*). Итле, чăтас пулать кăштах.

Ç т а п п а н. Урăх чăтăм çитмест.

Й ă с к а р. Хă-хă... Чăтăму çитмест пулсан, укçуна ан хĕрхен, хăвăртрах пулĕ.

Ç т а п п а н (*укçине парать*).

Й ă с к а р. Ах, турă!.. (*Укçине куçне чаркаласа пăхать, пăхсан, хĕвне чикет*.)

6-мĕш курăнни

Й ă с к а р п а Ç т а п п а н. П а л л я кĕрет.

П а л л я. Аван-и, ырă ялйышсем?

Ç т а п п а н. Палля-çке ку? Аван-и? Хăçан çитрĕн?

Ал параççĕ.

П а л л я. Халь анчах. Киле çитнĕренпе пĕр витре сăра ĕçрĕмĕр анчах. Эпĕ Елюк патне килтĕм. Вăл кунта пурăнать, терĕç те. Ванюк çинчен каласа пĕлтерес терĕм. Çавăнпа час васкаса тухрăм.

Й ă с к а р. Елюк халь анчах, эсĕ таврăннине илтсе, сан пата тухса чупрĕ. Мĕнле хирĕç пулмарăр вара?

П а л л я. Эпĕ, пахча витĕр тухса, тӳрех çырма урлă каçрăм. Елюк тата чылайранпа сирĕн патра пурăнать-и?

Й ă с к а р. Чылайранпах. Çын ĕçне тукаласа тăранса пурăнать.

П а л л я. Ха, апла.

Ç т а п п а н. Çапла. А Ванюк мĕнле?

П а л л я. Çавна калама пĕлместĕп. Вăрçа пĕрлех кĕтĕмĕр, Мана шрапнель пырса тивиччен эпир пĕрлехчĕ унпала. Хытă вăрçса пыратчĕ. Хăй те вĕри юнлă пулнă-мĕн... Кайран вара хам та астумастăп – пĕлми пулнă. Мана лазарета илсе кайнă. Лазаретра унта эпĕ виçĕ кун кĕтсе выртрăм Ванюка. «Ах, ку Ванюк килĕ-ши, килмĕ-ши?» – тесе кĕтсе выртатăп. Виçĕ кун кĕтрĕм – куçа курăнмарĕ. Вара вилнĕ пулĕ-и е тыткăна карĕ пулĕ-и, тесе шухăшларăм, мĕншĕн тесен пирĕн дивизирен пĕтĕмпе çирĕм салтак анчах çăлăнса юлнă. Унтан пире Мускаври лазарета куçарчĕç. Мускавра пĕтĕмпе виç эрне выртрăм. Халĕ малалла сывалма киле ячĕç.

Ç т а п п а н. Апла вара, Ванюк çинчен нимĕн те пĕлмерĕн-и?

П а л л я. Çук. Нимĕн те пĕлеймерĕм.

Ç т а п п а н. Сан шухăшпа, мĕнле пек? Вилнĕ-ши вăл е тыткăна кайнă-ши?

П а л л я. Çук. Пĕлместĕп.

Й ă с к а р. Вăрçă час чарăнать-и? Пирĕн çĕнтерет теççĕ пулас.

П а л л я. Кам калать?

Ç т а п п а н. Хаçат çине çыраççĕ.

П а л л я. Хаçат вăл суять. Эпир нихçан та хаçата ĕненместпĕр.

Ç т а п п а н. Патша калать, тет: «Этем виллинчен сăрт туса тултарам, çавах парăнмастăп», – тесе калать, тет.

П а л л я. Ăна калама лайăх: вăл хăйĕн юнне тăкмасть.

8-мĕш курăнни

Ç т а п п а н п а Й ă с к а р.

Ç т а п п а н (*хĕпĕртесе*). Мĕн калас тетĕн?

Й ă с к а р. Çын пĕтнипе хĕпĕртетĕн-им?

Ç т а п п а н. Мана мĕн? Ай, эпĕ пĕтес пулсан, маншăн кулянакан пулать тата?

Й ă с к а р. Пар тата укçуна – ку çынна макăртмалли ĕç.

Ç т а п п а н. Мĕскер каласатăн – камăн макăрмалла тата? Ман шухăшпа, Елюкăн, ман пуянлăха курса, хĕпĕртемелле анчах.

Й ă с к а р. Пар теççĕ сана. Мĕн, хĕрхенетĕн-им тата çĕрсе выртакан укçуна?

Ç т а п п а н. Парассине парăп та, анчах макăрмаллишĕн мар, савăнмаллишĕн паратăп.

Й ă с к а р. Йытă! Саншăн Елюка пăсма та шел.

Ç т а п п а н. Мĕн вара пăсмалла? Елюк хĕр мар-çке?

Й ă с к а р. Хĕре астарсан та çылăх мар. Елюк – арлă арăм.

Ç т а п п а н. Ман шухăшпа, арăма астарни ним те мар. Пурпĕр палăрмасть.

Й ă с к а р. Епле астарăн. Тĕлĕкĕнче те Ванюка кĕтсе пурăнать.

Ç т а п п а н. Эпир ăна кĕтмелле мар тăвăпăр. Авă, илтрĕн-и, Палля мĕн каласа хăварчĕ? Кун хыççăн пĕр çыру анчах кирлĕ...

Й ă с к а р. Мĕнле çыру, йытă?

Ç т а п п а н. Ванюк вилнĕ тесе...

Й ă с к а р. Чхву! Эсĕ шуйттан...

Ç т а п п а н. Эсĕ ухмах. Укçаран хăратăн.

Й ă с к а р. Мĕнле тумалла, кала. Пĕр кĕрĕшнĕскер, каялла чакмăп.

Ç т а п п а н (*кĕсйинчен хут кăларса пĕчĕк çыру çырать*). Акă, ме... Елюк килсен пар. (*Аяккалла пăхса.*) Авă, килет. (*Тухса пытанать.*)

9-мĕш курăнни

Й ă с к а р. Е л ю к кĕрет.

Й ă с к а р. Мĕншĕн пуçна чиксе таврăнатăн?

Е л ю к (*йĕрсе ярать*). Ванюк... вилнĕ... пулмалла... Пĕтрĕ ман пурăнăç ĕнтĕ.

Й ă с к а р. Ан макăр-ха часах. Тен, пурнать-и, тен? Çыру пур. Вуласа пăх-ха.

Е л ю к. Ăçта çыру, ăçта?

Й ă с к а р (*çырăва хĕвĕнчен кăларса парать*). Акă. Тен, Ванюк çырать-и, тен?

Е л ю к. Ах, чĕре сиксех тухать... (*Тĕлĕнсе пăхать.*) Çырни Ванюк алли пек мар... Ванюк вилнех пулĕ. Кама вулаттарас-ши? Палля патнех тепре каям-ха. (*Кайма тăрать.*)

10-мĕш курăнни

Е л ю к. Й ă с к а р. Ç т а п п а н васкаса кĕрет.

Ç т а п п а н. Мĕн вуламалла, кӳр хам вуласа парам...

Е л ю к. Нимех те мар. Палля патне каяс тенĕччĕ...

Ç т а п п а н. Эсĕ ун патне пĕрре кайса килнĕччĕ мар-и вара?

Й ă с к а р. Çыру вуланăшăн мĕн пулать, вулаттар ĕнтĕ? Унта кайса киличчен, халех пĕлетĕн.

Е л ю к. На, вуласа пар.

Ç т а п п а н. Хавас, питĕ хавас.

Е л ю к. Ах, Çтаппан, часрах вула.

Ç т а п п а н (*Елюк çине пăха-пăха вулать*). «Теревни Хыркассы. Елене Кутьрашевой. Сывă пурăнаттăр-и, Иван Кутьрашев сире нумай пурăнма хушса хăварчĕ».

Елюк шуралса каять.

Ç т а п п а н (*вулать*). «Шрапнель кăкăрне çĕмĕрсе кайсан, виçĕ сехет те пурăнмарĕ».

Е л ю к. А-а-а! Пĕтерчĕç! Пĕтерчĕç, шуйттансем! Ах, пĕтерчĕç, Ванюк, Ванюк!.. Ах, пĕтерчĕç! А-а-ах, ха-ха-ха! А-а-аа!.. (*Кайса ӳксе йынăшса выртать.*)

Й ă с к а р (*Çтаппана*). Шуйттан! Эсĕ турăн, çĕр çăтса антарасшĕ!

Ç т а п п а н (*аллипе Йăскар çăварне хуплать, çилленсе*). Ан кăшкăр, шапа çăварĕ!

Й ă с к а р. Кăшкăратăп!

Ç т а п п а н. Кай кунтан, эпĕ хам ах май кӳретĕп.

Й ă с к а р. Каймастăп.

Ç т а п п а н. Апла пулсан, тыт татах, выçлăх пыр! (*Укçа парать.*)

Й ă с к а р. Кирлĕ мар укçу!

Ç т а п п а н (*хушса парать*). На татах!

Й ă с к а р. Куçăнтан сурам!

Ç т а п п а н (*тата хушса парать*). Тыт, хампар айĕнчи!

Й ă с к а р. Халăха кăшкăратăп.

Ç т а п п а н. На пĕтĕмпех, тăранми хырăм!

Й ă с к а р (*илет*). Çылăхĕ сан çине пултăр! (*Тухса каять.*)

Ç т а п п а н. Чхву! Шуйттан хĕрарамĕ!

11-мĕш курăнни

Е л ю к. Ç т а п п а н Е л ю к çине пăхса тăрать. Хĕвел анать.

Е л ю к . А-а-а... Пĕтерчĕç! Ванюк, ах, Ванюк, йçта эсĕ? Ах, ăçта эсĕ, ăçта-а?

Ç т а п п а н (*Елюк çине пĕшкĕнсе*). Елюк!

Е л ю к. Кам эсĕ?

Ç т а п п а н (*аяккалла*). Тăнран тухса карĕ.

Е л ю к. Кам эсĕ?

Ç т а п п а н. Эпĕ... Е л ю к. Кам? Сана чунтан-вартан юратакан çын.

Е л ю к. Эсĕ Ванюк-и вара? (*Тăрса ларать.*)

Ç т а п п а н. Эпĕ сана çак çутă тĕнчерен ытларах юрататăп...

Е л ю к (*мăйне тăсса пăхать*). Эсĕ мана юрататăн-и? Эсĕ тăшман, ха-ха-ха...

Ç т а п п а н. Мĕн тăвасах, хама хам чиксе пăрахăттăм! Елюк, Ванюк вилнĕ...

Е л ю к. Ванюк вилнĕ?..

Ç т а п п а н. Ванюк вилнĕ... Эпĕ сана Ванюкран ытла юрататăп.

Е л ю к (*витĕр пăхса*). Çук... Эсĕ Ванюк мар.

Ç т а п п а н. Эпĕ чаплă пуян. Ман мулсем нумай.

Е л ю к. Эсĕ мана мулпа астарасшăн-и?

Ç т а п п а н. Итле, Елюк. Эпĕ Ванюк мар... Çавах, манăн чĕре вутчуль пек тивсе кайма пултараймасть-и в ара? Манран пĕтĕм ял хăраса тăма пултарать. Эпĕ сана хура çăкăр çитермĕп, хура ĕçпе санăн çинçе пилĕкне хытармăп...

Е л ю к. Кай ман çумран! Хăвар мана! Ман чĕрене вырăнтан ан хускат. Эпĕ ĕмĕрте те сан арăму пулас çук. Эсĕ çапатăн.

Ç т а п п а н. Сана-и? Ăçтан ман сана çапас? Арăма чун тарăхнипе хĕненĕ те пулĕ. Юратнă пулсан, эпĕ ун çине сивĕ куçпа та пăхас çук. Эх, мĕн калас, иртнĕ пурнăçшăн! Эпĕ сана ылтăн пек ачашласа пăхса пурăнăттăм...

Е л ю к. Ан тархасла. Санпа пĕтĕçсе пурăнăç суранне тин тӳрлетес çук.

Ç т а п п а н. Эх, Елюк! (*Елюк чĕркуççи çине аллисене хурса, ун умне чĕркуçленсе ларать.*) Хĕрхен мана... Халиччен мана никам та юратман. Е ман чĕрере çунакан вут ахалех сӳнсе ларĕ-ши? Сана юратма

пуçланăранпа эпĕ ухмаха ернĕ çын пек çӳретĕп. Ăçта кайсан та эсĕ ман куç умĕнче, ман çине пăхса ман чĕрене шăрататăн. Эпĕ, сан паталла аллăмсене тăсса, пĕчĕк ача пек йĕретĕп. Елюк, Елюк, юрат мана!

Е л ю к. Эй, телейсĕр чун. Хĕрхенетĕп эпĕ сана. Йывăр пулмалла сана та. Санран та ырă çын пулатчĕ-и, тен. Çавах та хăвар эсĕ мана. Эпĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук эсĕ манпала.

Ç т а п п а н. Савнă Елюк! Çӳлти çутă хĕвел те ман чуна сан чухлĕ савăнтараймасть. Эсĕ мана юрату сăмахĕ памастăн пулсан, эпĕ паянах хамăр пĕтĕм пуянлăха хĕм-кăвар туса салатса ярăп. Унтан вара хам кăкăра хам ах çĕçĕпе касса çурăп та, санăн уру умне килсе, ӳксе вилĕп.

Е л ю к. Ах, хăрушă-çке! Ахаль те пусăннă чуна эсĕ татах пăвса илес тетĕн-и? Темле пулсан та, кай, мана хама пĕччен пуçпа шухăшласа илме пар.

Ç т а п п а н. Елюк!..

Е л ю к. Кай часрах! Авă, каç пулать, ача-пăчасем выляма тухнă. Вĕсем халех кунта килеççĕ... Катара сăвă юрри илтĕнет.

Ç т а п п а н. Сывă пул, юратнă Елюк! (*Тухса каять.*)

15-мĕш курăнни

Ç т а п п а н шывран туртса кăларнă Е л ю ка йăтса кĕрет. Ун хыçĕнчен Й ă с к а р, П ă р ч к а н, М у ç ç а, в ă й ă а ч и с е м тата ытти çынсем те кĕреççĕ.

Ç т а п п а н. Елюк... Елюк...

Ç ы н с е м. Силлес ăна! Шăналăкпа силлес...

Ç т а п п а н. Памастăп! Елюк кӳпсе кайман. Эпĕ ăна шыва путăчченех туртса кăлартăм. Авă, куратăр, вăл ура çине тăма та пултарать.

Елюка ура çине тăратать.

Е л ю к. Хура халăх, каçарăр мана! (*Ывăннипе Çтаппан алли çине кайса ӳкет.*)

П ă р ч к а н п а М у ç ç а. Ах, Елюк! Кĕçех вилеттĕнччĕ-иç, ачам!

П ĕ р с т а р и к. А, Елюк, эсĕ ку шухăша хăçан тытрăн?

Е л ю к. Ванюк вилнĕ тесе çыру килчĕ. Вара ман куçăмра çутçанталăк тĕттĕмленсе çитрĕ те, чăтаймарăм...

П ĕ р с т а р и к. Ай-яй-яй! Ку вăрçăра нумай халăх вилчĕ те, анчах чĕрĕ пурăнакансем пурте вĕсен хыççăн каймĕç. Эпĕ те калатăп: ман тахçанах вилес пулать, тетĕп. Темме вилес килмест. Çутçанталăках паха пек туйăнать. Ах-ха-ха! Ватăлтăмăр ĕнтĕ...

Ç т а п п а н (*хуллен)*. Елюк, эпĕ сана чунтан-вартан калатăп: хĕрхенетĕн-и эсĕ мана?..

Е л ю к (*Çтаппан çине пăхса*). Ман пурнăçа çăлнăшăн – эпĕ санăн...

Ç т а п п а н. Манăн юратнă Елюк!.. (*Елюка аллинчен тытать.*) Ырă çынсем! Ваттисем, çамрăксем! Эпĕ Елюка качча илетĕп – çавăнпа çакă кунсенче сире туя пыма чĕнетĕп!..

Ç ы н с е м. А, юрать, юрать! Пырăпăр! Пырăпăр!

В ă й ă а ч и с е м (*хăвăрт чупса çаврăнса юрлаççĕ*).

Ай-хай пичче Çтаппан пур,
Елюк инкене юратать,
Юратать, юратать,
Чăнахах та юратать.

Ч а р ш а в

ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Й ă с к а р пӳрчĕ. Сцена сылтăм енче кĕреке сĕтелĕ. Сĕтел тавралла çăка çыхса тултарнă. Пӳрт туллиех хăнасем. Çаплах ĕçтереççĕ, çаплах çитереççĕ. Сулахайра, рампа çывăхнерех, икĕ пичке: пĕри сак çинче, тепри урайĕнче. Тулта туй сикет. Пӳртре ташлаççĕ, юрлаççĕ. Сĕтел хушшинче кĕрекеçĕсем лараççĕ. Тăваттăмĕш пай пĕтнĕ çĕре тул çутăлать.

6-мĕш курăнни

Й ă с к а р, М у ç ç а, х ă н а с е м.

Й ă с к а р. Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, ырă тăвансем!

Х ă н и с е м. Арахмат! Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

М у ç ç а. Карчăк! Эпир хĕр паратпăр-çке! Епле савăнса юрлас мар манăн?

Й ă с к а р. Юрлах ĕнтĕ.

Х ă н и с е м. Çаплах ĕнтĕ, юрлас пулать.

М у ç ç а (*юрлать*). Аян, аян, аян, аяй-ях та аяй-яй, я-ях...

Й ă с к а р. Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, савнă тăвансем!

Х ă н и с е м. Арахмат! Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те.

М у ç ç а. Карчăк! Эпир ывăл авлантаратпăр-çке? Мĕн-ма савăнса ташлас мар ман, Муççан?

Й ă с к а р. Ташлах ĕнтĕ.

Х ă н и с е м. Çаплах ĕнтĕ, ташлас пулать.

М у ç ç а (*ташлать.*)

Тиллит, тиллит тил ури;
Тил ури мар – хĕр ури,
Аяр, аяр, аяра...
Аяр, аяр, аяра...

(*Ташласа пырса, пичке çине кайса ӳкет.*)

7-мĕш курăнни

Çавсемех. П ă р ч к а н чупса кĕрет.

П ă р ч к а н (*Муççана*). Муççа, Муççа!

М у ç ç а. Мĕн?

П ă р ч к а н. Ванюк вăрçăран таврăннă...

М у ç ç а. Суятăн?..

П ă р ч к а н. Суймастăп. Авă, халь урамра вăльверпе çӳрет.

М у ç ç а (*урăлса кайса*). Э-э-тет-тет-те...

Тултан хĕр йĕрри музыкĕ илтĕнме пуçлать.

П ă р ч к а н. Килеççĕ! (*Çынсем хушшинелле пытанать.*)

8-мĕш курăнни

Çавсемех. Е л ю к п а Ç т а п п а н кĕреке умне пырса тăраççĕ. Туй халăхĕ.

К ĕ р е к е п у ç ĕ н ю л т а ш ĕ. Муççа шăллăма тăратăр.

Й ă с к а р. Муççа!

М у ç ç а. Мĕн?

Й ă с к а р. Сĕтел хушшине ларас пулать. Кĕçĕн çынсем умра тăраççĕ.

М у ç ç а. Кай!

Й ă с к а р. Яла ан култар!

М у ç ç а. И... Яла култарасси тин пуçланать, пĕлетĕн-и? (*Тăрса ларать.*)

К ĕ р е к е п у ç ĕ н ю л т а ш ĕ. Муççа шăллăм, тăрах часрах, çамрăксене пиллес пулать.

М у ç ç а. Пиллеместĕп эпĕ вĕсене!

Й ă с к а р. Чарăн, ял ухмаххи! Ларнă пултăр халех сĕтел хушшине.

М у ç ç а. Лармастăп та, пиллеместĕп те.

Й ă с к а р. Ах, турă, персе тултарнă та ним те пĕлмест тата.

Ç т а п п а н. Муççа пичей! Мĕншĕн эсĕ ман кăмăлăма хуçасшăн?

М у ç ç а. Эсĕ... кам пулатăн?

Ç т а п п а н. Муççа пичей!..

М у ç ç а. Ихи-хи-хи!..

Ç т а п п а н. Муççа пичей!

М у ç ç а. Эпĕ тахçанах Муççа пичей...

Ç т а п п а н. Муççа пичей! Хуна ху ытлашши ан ман. Эсĕ манăнне ĕçсе шутран тухса карай!

М у ç ç а. На, хăвăнне хăвах. Кирлĕ мар мана санăн ним те. (*Сĕтел çинчи эрех кĕленчине илсе, Çтаппан çине пеме тăрать.*)

Муççана алран тытаççĕ.

Ç т а п п а и. Чарăнатăн пулсан, чарăн, Муççа!

М у ç ç а. Эпĕ санран хăрамастăп!

Й ă с к а р. Çыхса пăрахас ăна, ухмаха!..

М у ç ç а. Эпĕ ухмах мар! Эпĕ хам пӳртре! Хурах!

9-мĕш курăнни

Çавсемех. В а н ю к кĕрет.

П у р т е. Ах!..

Пурте тĕлĕнсе хытса каяççĕ. Е л ю к В а н ю к еннелле пĕрре ура ярса пусать те ăнтан кайса ӳкме тăрать. Ç т а п п а н Е л ю к а çĕклесе тенкел çине лартать.

В а н ю к (*тăрсан-тăрсан*). Аван туй тăватăр-и?

М у ç ç а. Ванюк шăллăм! Ах, Ванюк шăллăм! Вĕсем мана кĕçех çыхса пăрахатчĕç!

В а н ю к. Камсем? (*Çтаппанпа Елюк çине кăтартса.*) Акă çахсем-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Иккĕшĕ те палланă çынсем... (*Йăскара.*) Эсĕ те хĕр паратăн-и-ха, йĕкехӳре?

Й ă с к а р. Манран ан мăшкăлла. Арăмна пĕл...

В а н ю к. Пĕлетпĕр. (*Елюк çине пăхса, хуллен кулса ярать.*) Хă-хă-хă... Чипер, чипер кĕçĕн çын! Кĕçĕн кĕрĕвĕ те чухăн мар пулас... Арăмне майра пекех тумлантарнă... Мĕн чухлĕ тӳлерĕн ку арăмшăн? Хулăм укçи кăштах та пулсан панă пулĕ?..

Ç т а п п а н. Сан укçу мар...

В а н ю к (*шăлне çыртса*). Сан укçу мар? Арăму камăн? Эпир вăрçăра юн тăкнă чух эсĕ кунта арăмсене пусмăрлатăн-и?..

Ç т а п п а н. Эпĕ сан арăмна сутăн илмен. Вăл хăех мана савса кайча пырать.

В а н ю к. А!.. Ăçта эпĕ? Камсем эсир? Виçĕ уйăх Австрире тыткăнра пурăннă чух эпĕ кун пек пуласса шухăшламанччĕ. Ах, килте мана юратакан юлташ кĕтсе пурăнать тесе, тыткăнран тухса тартăм. Хамăр яла курсан, чун хĕпĕртенипе чăтаймарăм – макăрса ятăм. Яла çитсен – ялĕпе туй сикет. Кам туйĕ ку, тетĕп... Пĕр сăмах та чĕнмеççĕ, йытăран тарнă пек хăраса тараççĕ. М-мх!.. Ман юн тăкăнни сан пуç çине килтĕр!

Ç т а п п а н. Эсĕ суятăн! Эсĕ тыткăнра пулман! Эсĕ тарса пурăннăскер! Эп сана халех тыттарса ярăп! Тытăр ăна! Тытăр!

Ç ы н с е м (*Ванюка тытма тăраççĕ*).

В а н ю к (*арăслан пек пуçне каçăртать*). Сирĕлĕр ман çумран, пыйтăсем!

Сирĕлеççĕ.

Эпĕ акă çакăнтан тепĕр сăмах ыйтам. (*Елюка.*) Савнă юлташăм! Паллатăн-и эсĕ мана?

Е л ю к (*чĕнмест*).

В а н ю к. Е çакă çурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тум-тирлĕ çынна йышăнас теместĕн-и?

Е л ю к (*чĕнмест*).

В а н ю к. Ма чĕнместĕн? Эпĕ окопра çĕрсе выртнă чухне те, тыткăнра выçăхса пурăннă чухне те сан çинчен анчах шухăшлаттăмччĕ. Манăн пысăк çунат ӳстерсе сан çумна вĕçсе килес килетчĕ. Эпĕ саншăн тыткăнран тухса тартăм. Австри аслă вăрманĕнче тискер кайăксемпе пĕрле пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса, аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каçрăм. Эпĕ санран пĕр виçĕ сăмах та пулин илтме тивĕçлĕ пулĕ тесе шаннăччĕ.

Е л ю к. Эй, телейсĕр Ванюк. Эпĕ те сана нумай кĕтрĕм. Анчах турă тепĕр тĕслĕ çырнă. Эпĕ ĕнтĕ тин сан пата пырсан та хам телее тупас çук. Каярах пултăн. Чăннипе каласан, эпĕ сана хĕрхенетĕп. Суд тăвас тетĕн пулсан, суд ту – санăн ирĕк.

В а н ю к. Эсĕ апла калатăн... Халь тата эсĕ юратса каятăн-и?

Е л ю к (*вилнĕ пек*). Юратса...

В а н ю к (*кăкăрне тытса)*. А!..

Ç т а п п а н. Тытăр çакă таркăна!

Ç ы н с е м тытма тăраççĕ.

В а н ю к (*револьвер кăларса*). Ан тапранăр вырăнтан! (*Çтаппан çине, аллине ерипен хăпартса, тĕллеме пуçлать.*) Эпĕ сана авлантарас тетĕп, Çтаппан...

Ç т а п п а н. М-мхм!.. (*Чавсине çĕклесе тытса, Ванюк çине кашкăр пек пăхса тăрать, унтан шуйттан пек кулса ярать*.)

М у ç ç а. Ванюк шăллăм, тархасшăн, ан пер!..

К ĕ р е к е п у ç ĕ н ю л т а ш ĕ. Юн ан тăк, Ванюк...

В а н ю к (*аллине усса*). А, Ванюк!.. Ванюкăн чĕри сӳнмен! (*Елюка.*) Ну? Пăрахатăн-и эсĕ çакă намăс тумтире?

Е л ю к (*чĕнмест*).

В а н ю к. Елюк?! (*Елюк патнелле ура ярса пусать.*)

Е л ю к (*чĕнмест*).

В а н ю к. Санпа венчетре тăнă упăшку, Ванюк, эпĕ сана калатăп: хывса пăрах халех çакă йĕрĕнчĕке, ай эпĕ хам тытса çурса пăрахасса кĕтетĕн-и?

Е л ю к. Чарăн, Ванюк! Эпĕ тин санăн арăму мар. Мĕн тăвас теннне ту...

В а н ю к. Юлашки хут калатăп эпĕ сана... Манăн çунса кайнă ăшчикшĕн кала: таврăнатăн-и эсĕ ман пата каяллах?

Е л ю к (*хытă*). Таврăнмастăп! Акă... на!.. Ку сан çумна çыхнă сăнчăр! Мана вăл урăх кирлĕ мар! (*Çĕррине хывса перет*.)

В а н ю к. Вил апла пулсассăн!.. (*Персе пăрахать*.)

Е л ю к (*аллисемпе вĕçнĕ пек туса илет те кайса ӳкет*).

В а н ю к (*револьверне пăрахать. Унтан ухмаха ерсе, чĕтресе сывлăша хăйĕн ăшне туртса илет.*) Юн! Юн! Каллех юн!.. Ах-ха-ха-ха! (*Чупса тухса каять.*)

Ç т а п п а н. Елюк!.. (*Елюк çине пырса ӳкет.*)

Халăх хăраса хытса каять.

Ч а р ш а в

1922.

Ирĕклĕ хушма вулав

1.И. Максимов-Кошкинскийĕн «Сатурпа Илем» драмине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000063.pdf

2. Ф. Павловăн «Сутра» камичĕпе «Ялта» драмине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000013/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

*** *Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Халăх сăмахлăхĕнчи выляну ретне кĕрекен сăмахлăха аса илĕр. Вĕсем чăваш драматургийĕ çине мĕнле витĕм кӳнине палăртăр.
2. Хусанти чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль мĕн ятлă пулнă? Сцена çинче лартнă хайлав пирки эсир мĕн пĕлетĕр?
3. И. Максимов-Кошкинскийĕн драмăлла хайлавĕсене асăнăр. Вĕсен темисене палăртăр. Çак пьесăсене мĕн çыхса тăрать?
4. «Сатурпа Илем» драмăра кăмăл-сипет çирĕплĕхĕпе хăш сăнарсем палăраççĕ? Вĕсене хирĕçле камсем тăраççĕ?
5. Тани Юн актриса пирки эсир мĕн пĕлетĕр? Ăна айăпланин сăлтавĕ мĕнре?
6. 1920-мĕш çулсенче мĕнле вылявлă фильмсем ӳкернĕ? Вĕсене пĕтĕмĕшле хак парăр?
7. Илемлĕ хайлавăн нацилĕх никĕсне палăртакан пулăмсене асăнăр?
8. Ф. Павловăн «Сутра» камитĕнчи сăнарсене хак парăр? Вĕсен характерĕ чăваш тĕнчекурăмĕпе (менталитечĕпе) çыхăннине ĕнентерĕр.
9. Ф. Павловăн «Ялта» драмăн тĕп тата хушма конфликчĕсене палăртăр. Кашни конфликта сюжет аталанăвĕнче мĕнле татса панине уçса парăр.
10. «Ялта» драмăри Елюк сăнарне пур енлĕн хак парăр.

● *Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Камит жанрĕн тĕсĕсем:

фарс (*çынсене култаракан çăмăл шухăшлă пьеса*)

водевиль (*пысăках мар кулăшла пьеса*)

интермеди (*драма пайĕсем хушшинче выляса кăтартакан кулăшла пьеса*)

скетч (*шӳтлĕ пĕчĕк пьеса*)

оперетта (*музыкăллă, юрăллă-ташăллă комеди*)

пароди (*кулăшла кăтартса тăрăхлани*)

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Кондратьев М.Г. «Гора золотая...» Федор Павлов и его время: монография. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2016. 399 с.

Тани Юн. Иртнĕ кунсем-çулсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2013.

♫ *Проектсем*

1. Чăваш илемлĕ фильм çăлтăрĕ – Тани Юн*(пĕччен çын тĕпчевĕ).*
2. И. Максимов-Кошкинский никĕсленĕ театр *(пĕччен çын тĕпчевĕ).*
3. Федор Павловăн нумай енлĕ пултарулăхĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ).*

∆ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

1. «Сатурпа Илем» драмăри вырăс чĕлхинчи сăмахсене автор мĕн тĕллевпе кĕртнĕ? Вĕсене чăваш сăмахĕсемпе улăштарма пулать-и? Вырăс е йышăннă сăмахсене чăвашла куçарса пăхăр.
2. «Ялта» драмăри халăх юррисен тĕслĕхĕсене тупаса палăртăр. Вĕсенчи архаизмсене ăнлантарăр.

ЛИТЕРАТУРĂРИ ИДЕЙĂПА ЭСТЕТИКА КĔРЕШĔВĔ



Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Чăваш çыравçисен тĕрлĕ пултарулăх пĕрлĕхĕсем Октябрь революцийĕччене, XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех, йĕркелене пуçланă. Çакăн пек пĕрлĕхсенчен пĕрине «Çамрăк пиитсен пĕрлĕхне» Чĕмпĕр учителĕсен чăваш шкулĕнче Г.А. Кореньков сăвăç 1901 çултах йĕркеленĕ, вĕсем ал вĕççĕн тухакан журнал та кăларса тăнă. 1906-1907 çулсенче тухса тăнă чăвашсен пĕрремĕш «Хыпар» хаçатне те чăваш çыравçисемпе журналисчĕсен хăйне евĕрлĕ пĕрлĕхĕ пек палăртмалла.

1920 çулта Чĕмпĕр хулинче çар гарнизонĕсенче, рабфаксенче, «Канаш» хаçат, Чĕмперти педагогика техникумĕн çумĕнче литература кружокĕсем ĕçле пуçлаççĕ. Шăпах çак кружоксенчен «Чăвашла çыракансен ушкăнĕ» пĕрлĕх йĕркеленет. Çак пĕрлĕхе пуçарса яраканĕ А.П. Милли пулса тăрать. Каярах, 1923 çулта, вăл Шупашкарта «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» ятпа ĕçле пуçланă. Унта Н. Шелепи, Ф. Павлов, Ç. Элкер, Н. Ваçанкка тата ытти паллă çыравçăсем кĕнĕ. Пĕрлĕхĕн тĕп тĕллевĕ чăваш литературине халăх сăмахлăхĕпе кăмăл-сипечĕ çинче никĕслентерсе ирĕклĕ аталантарасси пулса тăнă. Вĕсен эмблемине кĕслепе шăпăр ӳкерчĕкĕ илемлетнĕ.

Кунта чи малтанах çакна палăртса хăвармалла: 1920-мĕш çулсенче пултарулăх ĕçĕнче Раççей çыравçисем хăйсене ирĕклĕ туйнă. Вăл вăхăтра йĕркеленнĕ тĕрлĕ ушкăнсемпе пĕрлĕхсем пĕр-пĕринпе хирĕçлекеленине пăхмасăрах вĕсенчен нумайăшĕ совет влаçне йышăннă, унпа килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнă. Çак çулсенче пултарулăх меслечĕсене пĕрпеклетесси пирки калаçу пачах пулман. Çавăнпа А.П. Милли тавра пуçтарăннă çыравçăсем те хăйсен пултарулăхĕнче ирĕклĕ пулнă.

А.П. Милли çавăн пекех Шупашкарта Чăваш çĕршывне сăнакансен ушкăнне йĕркеленине те палăртмалла. Ку ушкăн питех те пысăк ĕçсем туса хăварнă: Чăваш наци музейне, Кĕнеке палатине, тĕпчев институтне тата ытти учрежденисене никĕслесе хăварнă.

«Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» пĕрлĕх 1923 çулхи çĕртме уйăхĕнче парти ĕçченĕсем йĕркеленĕ «Канаш» пĕрлĕх активисчĕсен (Д.С. Эльмен, Н.Я. Золотов) ĕç-хĕлне пула хупăннă. «Канаш» пĕрлĕхе Чăваш кĕнеке издательствипе «Канаш» хаçат ĕçченĕсем пуçарса янă. Кунта малтан 40 çын, 1924 çулта вара 107 çын тăнă. Унăн ячейкисем çĕршыври ытти хуласенче те уçăлнă. Пĕрлĕх ертӳçи Н. Золотов çине тăнипе «Сунтал» (1924), «Капкăн» (1925) журналсем пичетлене пуçланă.

«Канаш» пĕрлĕх каярах Чăвашсен пролетари писателĕсен ассоциацийĕ (ЧАПП) пулса тăрать, 1926 çулта вара Раççейри пролетари писателĕсен ассоциаци (РАПП) йышне кĕрет. Унăн ертӳçи пулса саланса каичченех А.И. Золотов ĕçлет. Пролетари писателĕсен ассоциацийĕ идеологиллĕ штампсене мала ларта пуçлать. Çакă, паллах, пултарулăх ĕçĕнче нумай чăрмав кӳрет, анчах чăваш литературин аталанăвне чарса лартмасть. Çак тапхăрта «Ĕç хĕрарăмĕ» (1928), «Хатĕр пул» (1929), «Трактор» (1931) журналсем уйрăмах анлă сарăлаççĕ. 1932 çулта Раççейри пролетари писателĕсен ассоциацине пĕтернĕ хыççăн Чăвашсен пролетари писателĕсен ассоциацийĕ те саланса каять.

1934 çулхи çĕртме уйăхĕнче Шупашкар хулинче Чăваш совет çыравçисен пĕрлĕхĕн 1-мĕш съезчĕ ĕçлет. Çĕнĕ пĕрлĕхе йĕркелесе яракансен хушшинче Н.В. Шупуççиннипе Н.Ф. Данилов пулнă. Пĕрлĕх вăйăпе «Ялав», «Тăван Атăл», «Хатĕр пул» журналсем, «Дружба» альманах кăларса тăнă. Ун çумĕнче библиотека, Литература фончĕ, Пултарулăх çурчĕ, тĕрлĕрен пултарулăх секцийĕсем ĕçленĕ. Ку пĕрлĕх паянхи кунченех чăваш çыравçисене пĕрлештерсе тăрать.

«Канаш» пĕрлĕх вырăнне Чăвашсен пролетари писателĕсен ассоциацийĕ йĕркеленнĕ хыççăн чăваш культуринче уйрăм çыравçăсене идеологи тĕлĕшĕнчен айăпласси вăйланать. Çак юхăм уйрăмах П.

Хусанкая, В. Рсая, В. Паймена, Г. Комиссарова (Вантер), Митта Ваҫлейне вăйлă пырса тивнĕ.

Акă, сăмахран, А. Золотовăн 1930 çулта пичетленĕ «Ӳсĕм çулĕ çинчи чăваш литературри» ятлă статйинче (Сунтал, 7-8 №) чăваш çыравҫисен хушшинчи «есенинлăхпа», «либераллă, земствăллă тата буржуазиллĕ национализмлă» шухăшсемпе кĕрешмелли пирки калаҫу çĕкленĕ. Çак çулах авăн уйăхĕнче Чăваш обкомĕн бюровĕнче Петĕр Хусанкайăн «Чăваш калавҫине – Петĕр ывăлĕ Мĕтри Юмана – «вак буржуаллă» сăвăҫран – Хусанкайран – Уҫ çыру» сăвăлла хайлавне сӳтсе яваççĕ. Кунта сăвăҫа парти политикин тĕп йĕрне тĕрĕс мар кăтартнă тесе айăплаççĕ.

Унтан та ытларах чăваш çыравҫисем хушшинче Хусанкая революцине хирĕçле ĕҫ тунишĕн айăплакансем те тупăнаççĕ. «Юлашки вăхăтра пичетленекен сăввисем урлă («Паянхи поэма», «Уҫ çыру») Хусанкай контрреволюцилле платформа çине икĕ урипех хăпарса тăни курăнать… Кулаксен идеологĕсем пĕр-пĕрин патне пĕр фронт тăвас тĕлĕшпе анчах çырма пултараççĕ. Кĕҫ ак Хусанкай Рсай патне çырĕ. Вара кулак писателĕсен чăн союзĕ пулса тăрать те. Çавăнпа та Хусанкайăн «Уҫ çырăвĕ» чăваш литературинче класс тăшманĕ пуçне çĕнĕрен çĕкленине кăтартать», – тесе çыраççĕ вĕсем.

Çакнашкал туртăм чăваш литературинчи çыравҫăсене икĕ ушкăна уйăрса пăхасси патне илсе çитерет. Пролетари литературине хирĕç пыракансен ретне В. Рсай, П. Хусанкай, Г. Комиссаров (Вантер), М. Юман, М. Юрьев, Хумма Çеменĕ лекеççĕ. Вĕсен хайлавĕсене сивлеклĕн йышăнасси, классикăна та вăрçасси йăлана кĕрет.

Чăваш совет çыравҫисен пĕрлĕхĕ Пĕтĕм Союзри писательсен союзĕн ячейкки пулса тăнă хыççăн (1934) чăваш литературинче соцреализм текен меслете пăхăнасси вăйланать. Ку мел çыравҫăн сăнарлă сăмахлăхпа усă курса çĕнĕ социаллă йĕркешĕн кĕрешмелли, сăнарсене революцилле аталанура кăтартасси çинче йĕркеленнĕ. Çавăнпа та çыравҫăн хайлав содержанине яланах класс кĕрешĕвĕпе (пуян тата чухăн çынсен хирĕç тăрăвĕпе) çыхăнтармалла пулнă. Унсăр пуçне историлле оптимизм, коммунизмла эстетика идеалĕ, партилĕх пĕлтерĕшлĕ пулнă.

1930 çулсенчи литературăшăн соцреализм мелне çирĕп пăхăнса тăни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ку вăл çак çулсенчи çĕршыври репресси юхăмĕпе те çыхăнă, паллах. ХХ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуринче литературăпа культурăри соцреализм меслечĕ чылай «çемçелет», 1985 çул хыççăн вара пачах çухалать.

Тăван (чăваш) литературăн аталану çул-йĕрĕ çине чăваш хаçат-журналĕсем нумай витĕм кӳнĕ. Вĕсен хушшинче уйрăмах çаксене асăмалла: революци хыççăнхи пĕрремĕш çулсенчех тухса тăнă «Çĕнĕ пурнăç», «Хресчен сăмахĕ» хаçатсемпе «Шурăмпуç», «Ана» журналсем, 1920 çулсенчен пичетлене пуçланă «Сунтал» (1924-1941), «Капкăн», «Халăха вĕрентес ĕç» (1926-1933), «Ĕç хĕрарăмĕ», «Ялкор» (1928-1931), «Хатĕр пул», «Ĕçлекенсен сасси» журналсем. Чăваш çыравçисенчен чылайăшĕ хăйсен пĕрремĕш хайлавĕсене тĕрлĕ хаçат-журналта пичетлесе тата çак изданисенче журналист, редактор пулса ĕçлесе литературăн пысăк çулĕ çине тухнă, шăпах çакăнта хăйсен ăсталăхне туптанă.

Ĕçсемпе ыйтусем

! *Вĕреннине аса илетпĕр*

1. Маларах вуланă хайлавсенчен хăшĕсем тĕлĕнмелле те хăйне евĕрлĕ илемлĕ чĕлхипе асра юлчĕç?
2. XIX-XX ĕмĕр пуçламăшĕнче (1917 çулччен) çырнă писательсен харпăр хăй стилĕ пирки мĕн калама пултаратăр? Хурава тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
3. XX ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче ĕçленĕ çыравçăсенчен хăшне литература чĕлхине кĕртнĕ çĕнĕлĕхĕсен авторĕ теме пултаратăр? Литература чĕлхине кĕнĕ неологизмсене аса илтерĕр.
4. Чăваш çыравçисенчен хăшĕсем хăйсен хайлавĕсенче халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе анлă усă кураççĕ? Тĕслĕхсем илсе парăр.

◊ *Реферат теми*

Алексей Прокопьевич Милли публицистăн, сăвăçăн,этнографăн, фольклористăн ĕçĕ-хĕлĕ.

♫ *Проектсем*

1. Сергей Ялавинăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ: критик, прозаик, драматург *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
2. Çемен Элкер пултарулăхĕнчи истори жанрĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
3. Нестĕр Янкас пурнăçĕпе пултарулăхĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
4. Кĕçтук Кольцовăн литература портречĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.

ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧАПА ÇАМРĂКСЕН ЛИТЕРАТУРИ ÇУРАЛСА АТАЛАННИ



Ăслăлăх анинчен

«Ача-пăча литературин çăлкуçĕсем шутне фольклор, куçару, классикăлла литература, архаика цивилизацийĕ, антика тапхăрĕ, ача-пăча сăмахлăхĕ кĕреççĕ. <…> Тĕнче литературинчи чи пирвайхи ача-пăча кĕнеки авалхи шумерсен «Эпос о Гильгемаше» хайлавĕ шутланать. 12 тăм кĕнеке çине 12 юрă-поэма çырса хунă пулнă. Вĕсен йĕки 12 зодиак черетленĕвĕпе тӳр килет. Ку хайлавра тĕл пулакан сюжет мотивĕсем, детальсем каярах ытти паллă хайлавсене куçаççĕ. Вĕсенчен пĕри – Турă ачи çинчен калакан миф» (*И.В. Софронова, филологи кандидачĕ).*

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Чăваш ача-пăча литератури XIX ĕмĕр вĕçĕнче кăна, И.Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлне пула, аталана пуçланă. Унчченхи тапхăрта вăл пĕтĕмпех фольклорăн пĕр пайĕ çеç пулнă. Чи малтан пичетленсе тухнă ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхне «Чи-чи кăсăя» юрра С.Михайлов (Янтуш) 1853 çулта çырса илнĕ.

1917 çулччен ятарласа чăваш ача-пăча сăмахлăхне пуçтарас ĕç И.Я. Яковлев йĕркеленипе Чĕмпĕти учительсен чăваш шкулĕнче пулса пырать. Ку ĕçе Г. Тимофеев, Ив. Юркин, К. Иванов, П. Пазухин тата ыт. те хутшăннă. Çак шкулта пĕлӳ пухнă М. Трубина юмах кĕнеки те пухса хатĕрленĕ, вăл икĕ хутчен пичетленнĕ. Ф. Павлов вара ача-пăчан вăйă юррисене пухса пичетленĕ.

Кунсăр пуçне И.Я. Яковлев ачасем валли ятарлă хайлавсем çыракан авторсенчен пĕри пулса тăнă. Хăйĕн букварĕсем валли вăл хăйех кĕске калавсем çырнă («Лаша шырани», «Пулă сĕрни», «Йăлăнтармăш», «Сармантей», «Кулачă», «Эпĕ ӳкĕнни», «Нуша», «Эпĕ сехет çĕмĕни», «Икĕ йĕке хӳре»). Вĕсене çырнă чухне И.Я. Яковлев халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене тĕпе хунă тата К. Ушинскийпе Л. Толстой вĕрентĕвĕсене шута илнĕ. Кунта таврапĕлĕве аталантарасси, кăмăл–сипет проблемисене хускатасси тĕпре, çавăнпа та вăл кулленхи пурнăçри ачасен тата аслисен ĕçĕ-хĕлĕ, çемье, этем тата çут çанталăк çинчен çырать.

XIX ӗмӗр вӗҫӗнчи – XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи чӑваш ача-пӑча литературине аталантарас ӗҫре К. Ивановӑн тӳпи те пысӑк. Вӑл халӑх сӑмахлӑхне пухнипе çеç çырлахман ачасем валли сӑвӑсем те çырнӑ («Ырӑ кун», «Урапа», «Хирте», «Сентти», «Çулталӑк хушши», «Кӗркунне», «Сӑпка юрри», «Икӗ хӗр»). Унсӑр пуçне сӑваç М. Лермонтов, А. Кольцов, Н. Некрасов, Н. Огарев, Л. Толстой, К. Ушинский ача-пӑча валли çырнӑ хайлавӗсене чӑвашла куçарнӑ. Çакӑ пӗтӗмпех чӑваш ача-пӑча литературине тепӗр ӳсӗм шайне хӑпарма пулӑшнӑ.

Литература пултарулӑхӗнче ача-пӑча валли хайлавсем çырасси чи кӑткӑс ӗç шутланать, мӗншӗн тесен кунта ӳсӗм психологийӗпе педагогика пӗлтерӗшӗсем уйрӑмах пысӑк: «Ача-пӑча литератури илемлӗ сӑмахлӑха тата вӗрентӳпе воспитани ӗçне пӗрлештерсе тӑрать, искусствӑн хӑйне уйрӑм пайӗ шутланать. Унӑн функцийӗ – ачан тавракурӑмне йӗркелеме пулӑшасси, ӑна эстетика киленӗвӗ кӳресси» (И.В. Софронова). Çавӑнпа пӗрлех çакнашкал хайлавсен хӑйне евӗрлӗхӗ ачан ӳсӗм уйрӑмлӑхне, истори тапхӑрне, социаллӑ пурнӑç условийӗсене кура улшӑнса тӑнине палӑртмалла.

Чӑваш ача-пӑча литературин анлӑ аталанӑвӗ 1917-мӗш çул хыççӑн пуçланать. Çак çулсенчи (1950 çулсем таранчченех) хайлавсен чи малтанах идейӑлла пахалӑхӗ улшӑнать. Унченхи литературӑра çут-ӗç тӗллевӗсемпе задачисем, çамрӑк ӑрӑва аслисене хисеплеме вӗрентесси, ӗçченлӗх туйӑмне аталантарасси, халӑх сӑмахлӑхӗн традицийӗсем урлӑ воспитани парасси тӗпре пулнӑ пулсан çӗнӗ саманара класс кӗрешӗвӗ мала тухать. Çыравçӑсен илемлӗ сӑмах урлӑ ачасен шухӑшлавне социализм еннелле çавӑрмалла пулнӑ, çавӑнпа та пачах та урӑх сӑнар çуралать – аслисене кулаксемпе кӗрешме пулӑшакан пионер.

Çапла вара çӗнӗ условисенчи литература истори чӑнлӑхне тата илемлӗхе пӗрлӗштерме тӑрӑшать. Кунта революцичченхи ачалӑха хальхипе танлаштарасси, революци, граждан вӑрçине хутшӑннӑ ачасене сӑнарласси вӑйланать (Хумма Çеменӗн «Çӗтӗк сӑхман», Исаев Мӗтрин «Лисук чӑптаçӑ», Марфа Трубинан «Марине» калавӗсем). Кунашкал хайлавсем чи малтанах шкул ӳсӗмӗнчи ачасем валли пулнӑ, кӗçӗн çулхисен, шкул çулне çитменнисен, литератури вара сисӗнмеллех чакса ларать, пачах çухалать тесен те йӑнӑш пулмасть.

Çак çулсенчи чӑваш ачисемпе çамрӑкӗсен литературинче ачалӑха аса илни илемлӗ хайлавӑн ӑса вӗрентмелли никӗсӗ пулса тӑрать. Çавӑнпа пирӗн литературӑра автобиографи жанрӗ уйрӑмах çирӗпленсе вӑй илет. Çапла литература аталанӑвӗн тӗрлӗ тапхӑрӗнче çуралнӑ Я.

Ухсайăн «Ача чухнехи çăлтăрăм», Хумма Çеменĕн «Ача чухнехи», М. Ухсайăн «Кăра çилсем», Уйăп Мишшин «Ачалăх кунĕсем», М. Трубинан «Ача чухнехи», Ç. Элкерĕн «Вутпа çулăм витĕр», Г. Харлампьевăн «Илемлĕ ир» повеçĕсем, тĕслĕхрен, чăваш автобиографи жанрне чылай пуянлатнă.

Автобиографиллĕ жанрпа çырнă хайлавсен тĕп сăнарĕ вăл – автор хăй. Калу йĕрки кунта пĕрремĕш сăпатран пырать, сюжечĕ автор пурнăçĕн чи пĕлтерĕшлĕ е пысăк сыпăкне илсе кăтартать. Автобиографиллĕ хайлавра икĕ вăхăт – «ун чухнехи» (ачалăх вăхăчĕ) тата «хальхи» (аса илӳсем çырнă вăхăт) – хирĕç тăрăвĕ йĕркеленет. Çакă иртнипе паянхине вăхăт тĕлĕшĕнчен уйăрма çеç мар, икĕ тĕнчене – ачан тата çитĕннĕ çын тĕнчине танлаштарма кирлĕ. Çак танлаштару урлă хайлавăн илемлĕх тĕнчинче ача чунне уçса паракан лирикăлăх, ырă чунлăх, илем калăпланать.

Октябрь революцийĕ хыççăнхи тапхăрта чăваш ача-пăча литературине çĕнĕ вăй паракансенчен пĕри **Марфа Трубина** (*Трубина Марфа Дмитриевна, 1888-1956*) пулнине каламалла. Илемлĕ сăмахлăх ĕçне вăл Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕнче вĕреннĕ чухнех явăçать: вырăс сăвăçисемпе кăсăкланать, фольклор пуçтарас ĕçе хутшăнать, вĕренекенсем хушшинче тухса тăракан литература журналне йĕркелес ĕçре тăрăшать.

Унăн малтанхи хайлавĕ учительте ĕçлеме пуçласан, 1914 çулта А.С. Пушкина халалласа кăларнă шкул ачисен алçыру хальлĕн тухакан журналĕнче пичетленнĕ. Калавĕ «Манăн вĕрентекенсене» ятлă, ăса вĕрентесси кунта мала тухнă. К.Д. Ушинскийпе Л.Н. Толстой традицийĕсене асра тытса çыравçă ачасене киревсĕр çум курăкĕ пек пуласран сыхланма, вĕренсе аталанма, пурнăçри вырăнне тупма чĕнет. Çак калавран пуçласа М. Трубина пурнăçĕнче вĕрентекен ĕçĕпе литература ĕçĕ тачă çыхăнса тăма пуçласçĕ. Вĕренӳ валли шкулта кĕнекесем çителĕксĕр пулнине пула вăл шкул ачисене вулама халăх юмахĕсене, сăвви-юррине пухма, хăй те пĕчĕк хайлавсем çырма тытăнать.

Чăваш халăх сăмахлăхне пухни М. Трубинан литература пултарулăхĕнче те тарăн йĕр хăварнă. Акă 1925 çулта пичетленсе тухнă «Ачасем валли çырнă юмахсем» кĕнекене унăн хăй çырнă литература юмахĕсем те кĕнĕ. Çыравçăн паллăрах юмахĕсем хушшинче «Вĕренепе куршанкă», «Ютран килнисем», «Шĕшкĕ», «Çерçипе шăнкăрч» хайлавсене палăртмалла. Вĕсем тытăмĕпе те, шухăшĕпе те халăх юмахĕсене çывăх. Унсăр пуçне юмах сюжетне илемлĕ хайлав тытăмне

кĕртни те тĕл пулать çыравçăн. Çак тĕлĕшрен унăн «Вупăр» калавĕ уйрăмах курăмлă.

Калав икĕ пайран тăрать: пĕрремĕш пайĕнче тĕп сăнар «пĕчĕккĕ, улттă-çиччĕре пур пулĕ», иккĕмĕшĕнче – «çитĕнсе вунпилĕк-вунултă çул учительте пурăнатăп». Çак икĕ пай пĕр-пĕринпе хирĕçÿре тăраççĕ, ĕлĕкхипе çĕннин хирĕçĕвĕнче. Çав вăхăтрах вĕсене чăваш халăхĕн вупăр пирки калакан юмахĕ çыхăнтарса тăрать. Хайлавра халăх тавракурăмĕ тата ĕненĕвĕ пысăк выран йышăнать. Калавăн тĕп шухăшне вара сăнарсенчен пĕрин, Микула пиччен сăмахĕсем питĕ аван уçса параççĕ: «Э-э-э! – терĕ Микула пичче, аллине сĕлтсе. – Акă тĕттĕмлĕх пĕтсех пырĕ, «вупăр» та çавнашкалах сирĕлĕ. Пурăннăçемĕн, çутталла тухнăçемĕн халăх вăранать, тасалать. Суя, кирлĕ мар япала пурнăçран майĕпе пăрахăçа тухать. Ĕлĕк кун пек пулăмсенчен халăх хăранă терĕмĕр. Халĕ пăхăр-ха! Уйăх тĕттĕмленнинчен кам хăракан пур? Вĕтĕр-шакăр ачи-пăчи те уйăха сăнаса пăхасшăн бинокльпе тăрмашать. Э-э-э! – терĕ Микула пичче, аллине сĕлтсе. – Акă тĕттĕмлĕх пĕтсех пырĕ, «вупăр» та çавнашкалах сирĕлĕ. Пурăннăçемĕн, çутталла тухнăçемĕн халăх вăранать, тасалать. Суя, кирлĕ мар япала пурнăçран майĕпе пăрахăçа тухать. Ĕлĕк кун пек пулăмсенчен халăх хăранă терĕмĕр. Халĕ пăхăр-ха! Уйăх тĕттĕмленнинчен кам хăракан пур? Вĕтĕр-шакăр ачи-пăчи те уйăха сăнаса пăхасшăн бинокльпе тăрмашать».

М. Трубина чăваш ача-пăча литературин пур тĕсĕнче те (поэзипе проза, драматуриги) тухăçлă ĕçленĕ, çапах та проза жанрĕ ăна çывăхрах пулнă. Унăн пĕтĕм хайлавĕсенче, аслисем валли çырнисенче те («Эрех çулĕ», «Хăнаран», «Пасар кунĕ»), дидактикăлăх тĕп вырăнта тăрать. Çыравçăн пултарулăх ÿсĕмне кăтартакан хайлавсем хушшинче «Ача чухнехи», «Мучар» тата «Анна Павловна» повеçсене асăнмалла. «Мучар» повеçре детектив стилĕн паллисем вăйлă пулнине, «Ача чухнехи», «Анна Павловна» повеçсенче вара автобиографилĕх тĕпре пулнине палăртмалла.

Çапла «Ача чухнехи» повеçĕн прологĕнче автор вулакансене хăй мĕнле çемьере, ăçта çурални пирки кĕскен каласа парать. Унтан хăй пĕчĕк пулнă пирки астуман çулсене сиктерсе хăварать те, тăват-пилĕк çултан пуçласа Чĕмпĕрти учительсен чăваш шкулне вĕренме тухса кайнă самантчен мĕн курни-илтнине, мĕнле пурăннине, мĕн-мĕн тÿснине йĕркипе çырса кăтартать. М. Трубина XIX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш ялĕн сăн-сăпатне тĕрĕс те чĕррĕн ÿкерсе пама пултарнă. Кунта ялăн социаллă пурнăçне те, йăли-йĕркисене те, этнографипе халăх

педагогикин тĕрлĕ енĕсене те, уйрам çын е социаллă сий чунĕ-кăмăлне те питĕ ĕнентерӳллĕ сăнласа панă.

Повесть кĕске сыпăксенчен тăрать. Кашни сыпăкĕ – уйрăмшар пĕчĕкçĕ ӳкерчĕк, кашни вăл е ку сăнара çĕнĕ сĕм кӳрет. Сюжет аталанса пынă май, сăнарсем те пирĕн умма туллин тухса тăраççĕ, вĕсен характерĕ аталанса пырать. Тĕп сăнарсем повеçре нумай мар. Çыравçă ача мĕн курма пултарнă пĕтĕм пулăма сăнламасть, ĕç-пуçсене тĕплĕн суйла-суйла илет. Çав вăхăтрах автор кашни сăнара лăпкăн, хăйне тивĕç сăнсемпе тарăн уçса парать. Çавăнпа та сăмахĕсем унăн çыпăçуллă, сăнлăхĕсем вичкĕн, сăнарĕсем куç умĕнче, калас тени уçăмлă.

М. Трубина пултарулăхĕнче, çав шутра ачасем валли çырнă хайлавĕсенче те, темиçе тĕп тема палăрса тăрать. Çапла малтанхи хайлавĕсенчен («Хĕрлĕ галстук», «Марине» калавсем) пуçласа пĕтĕм пултарулăх тăршшĕпе вăл совет саманинчи ачасем общество пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса парать. Колхоз çулĕ çине тухнă чухнехи ял пурнăçне сăнласа кăтартасси – унăн иккĕмĕш пĕлтерĕшлĕ тема («Мучар» повесть). Виççĕмĕш пысăк тема – хĕрарăм пурнăçĕпе унăн кунçулĕ. Унăн хайлавĕсенче Октябрьти революци хыççăн чăваш хĕрарăмĕ хăйĕн прависемшĕн кĕрешни, вăл обществăпа хуçалăх ĕçне активлăн хутшăнни, çĕнĕ йăлашăн, культурăшăн тăрăшни, çав шутра эрех-сăра этем сывлăхĕшĕн мĕн тери сиенлĕ пулни уйрăмах вăйлă палăрать.

Уйăп Мишши (*Шумилов Михаил Данилович, 1911-1970*) тăван (чăваш) литературăна 1930-мĕш çулсенче сăвăç пулса килнĕ. Унăн ку вăхăтри сăввисенче çамрăклăх теми тĕпре пулнă. Сăвăç ытларах комсомол ӳстернĕ маттур чăваш çамрăкĕсене кăтартать. Унăн лирика геройĕсем хăйсен шăписене пилĕкçуллăх стройкисемпе çыхăнтарнă, вĕсем мухтавлă ĕççемпе чапа тухнă: вĕсем Магниттура, Çĕпĕрте, Амур çинче, Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Канашра, Куславкара çĕнĕ заводсем лартас çĕре хутшăнаççĕ. Çавăн евĕр сăвăсем хушшинче «Манми çамрăклăх», «Пирĕн кун-çул», «Пурнăç таппи», «Çурхи ярăмран» сăвăсене асăнмалла.

М. Уйăп лирика хайлавĕсемпе пĕрле ачасем валли «Ачалăх кунĕсем» повесть, «Пирĕн юрă», «Телейлĕ ачасем» проза кĕнекисем пичетлесе кăларнă. М. Уйăп прозаикшăн патша саманинчи пурнăçа аса илсе çырасси характерлă. Çыравçă патша вăхăтĕнчи тата çĕнĕ пурнăçри ачасен кун-çулне танлаштарать, ют çĕршыври ачасен пурнăçне сăнлани те пур ун хайлавĕсенче.

«Ачалăх кунĕсем» хайлав жанрпа стиль тĕлĕшенчен автобиографиллĕ повесть шутланать. Хайлав пуçламăшĕнче тĕп

сăнарăн амăшĕ унăн ачалăхĕ пирки аса илет, вăл ăçта, хăçан, мĕнле çуралнине каласа парать. Пĕтĕмĕшле илсессĕн вара повеçре пурнăçра пулса иртнĕ ĕç-пуçа, истори собитийĕсене ача куçĕпе сăнласа парасси мала тухать. Çавăнпа сюжет аталанăвĕнче, пĕр енчен пĕтĕм халăхшăн, çĕршывшăн пĕлтерĕшлĕ улшăнусем – ял халăхĕ атă-пушмак çĕлес енĕпе ăста пулнăран станвуй салтакри арçынсем валли атăсем хатĕрлени, иккĕмĕш Микулай патшана престолран сирпĕтни, çĕнĕ самана пуçланни, совет влаçне йĕркелени, хресченсене çĕр валеçни, халăхăн кулленхи пурнăçне Интернационал юрă кĕни, выçлăх çулĕсен йывăрлахĕ, тепĕр енчен уйрăм çын (тĕп сăнар), пĕр çемьешĕн çеç пĕлтерĕшлĕ ĕçсем – çемье тĕп килтен уйрăлса тухни, ырă пурнăç шыраса Çĕпĕре куçса кайма шутлани.

Халахăн кулленхи йăлине, ĕçĕ-хĕлне сăнлать çыравçă, çак ĕçсене ача хутшăннине кăтартать. Çĕр сухалама вĕренни, пĕрремĕш çăпата тунине тата ытти ĕçсене сăнланă кунта. Шурă е хура тăла сырни çинчен калани урлă ача тĕрлĕ вырăнти чăвашсен тум-тирĕ улшăнса тăнине ăнланса илет. Ашшĕ-амăшĕ ачана тĕрлĕ ĕçе хутшăнтарни, киревсĕр ĕçе тума вăхăтра чарни (пĕррехинче вĕсем юлташĕпе чĕлĕм туртса пăхаççĕ), пултарулăха аталантарма майсем туса пани – пĕтĕмпех ачан тĕнче курăмĕн, пултарулăхĕн аталанăвне витĕм кӳреççĕ.

Хайлав тытăмĕнче халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ: рекрута каякансен салтак юррисем, ашшĕ-амăшĕн кулленхи юррисем, Лаçук мучи юмахĕсем тата ыт. те. Унсăр пуçне тĕп сăнар амăшĕн калаçăвĕ те ваттисен сăмахĕсемпе пуян. Чирленĕ Мишшана кукамăшĕ вĕрӳ-суру чĕлхи каласа сыватать.

Хăйĕн пултарулăх аталанăвне витĕм кӳнĕ пулăмсем пирки уйрăмах чарăнса тăрать автор. Ачан пултарулăх тавракурăмне аталантарас ĕçре пĕлтерĕшлĕ çынсем, ĕçсем кирлине, вăхăтпа самана витĕмĕ палăрнине асăрхать вăл. «Ачалăх кунĕсем» повеçĕн пĕр сыпăкĕнче, акă, Мишшана ашшĕ купăс илсе панине куратпăр. Купăс калама вĕренме ачана ашшĕ мунчана ăсатать, мĕншен тесен шăпах çакăнта шедеврсем çуралаççĕ, иккен (Мранька хăйĕн романне мунчара ларса çырнă теççĕ). Ачалăх çулĕсенче Мишша Н. Полоруссовпа (Шелепипе) тĕл пулни те унăн пуласлăхне витĕм кӳрет. Ватă сăвăç шкула килсе хăйĕн сăввисемпе юмахĕсене вуласа кăтартать. Çыравçă хăй ачалăхĕнчи ырă, хаклă, кулăшла самантсене аса илет.

Мария Ухсай (*Ухсай Мария Дмитриевна, 1908-1969*) – чăваш ача-пăча литературине аталантарас ĕçре нумай вăй хунă çыравçăсенчен пĕри, çакăншăн вăл Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне (1960) те тивĕçнĕ. Унăн

пĕрремĕш хайлавĕ, «Хĕрлĕ тутăр» сăвă, 1926 çулта «Канаш» хаçатра пичетленсе тухнă.

М. Ухсай пурнăç çулĕн пысăк пайĕ шкулпа çыхăннă, çавăнпа та ачасен пурнăçне витĕр курма, вĕсен ĕмĕт-туйăмне ăнланма пĕлнĕ вăл. Унăн хайлавĕсемшĕн ĕç урлă воспитани парасси характерлă. Çыннăн сăнĕ çеç мар, чунĕ, ăсĕ илемлĕ те таса пулмалли пирки калаçать çыравçă хăй калавĕсенче («Хăйă çути», «Типĕ çыран хĕрринче», «Ясмăк пĕрчи», «Уларçка», «Икĕ хĕрача», «Ирхи сывлăм»). Хайлав сюжетĕнче вăл ĕçе, туслăха, сăпайлăха вĕрентсе калакан ваттисен сăмахĕсен пĕлтерĕшне тӳрре кăларма тăрăшни сисĕнет. Çак тĕлĕшрен М. Ухсай калавĕсем ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи çыравçăсен хайлавĕсене (И. Иванов, И. Юркин, Н. Кедров) çывăх тăраççĕ.

Çыравçă ача-пăча драматургине аталантарас тĕлĕшпе те сахал мар вăй хунă. Истори тата камит жанрĕсемпе уйрăмах тахăçлă ĕçленĕ вăл. Вĕсен шутĕнче «Çу, çумăр çу!», «Çураçнă хĕр» историллĕ драмăсене (ку хайлавсене «Кăра çилсем» повесть тăрăх çырнă), «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă», «Виçĕ сукмак», «Шăпчăк-кĕслеçĕ», «Хĕветĕр тус – яка тус» камитсене палăртмалла. Çак хайлавĕсенче та вăл халăх сăмахлăхĕнчи халап-юмах традицийĕсемпе усă курама ăнтăлни курăнать.

М. Ухсай пултарулăхĕнчи пĕлтерĕшлĕ хайлавсенчен пĕри – «Кăра çилсем» виçĕ кĕнекерен тăракан повесть (ăна хăш-пĕр тĕпчевçĕсем роман та теççĕ) пулса тăрать. Ку автобиографи жанрĕпе çырнă хайлав. Кунта ĕмĕр чиккинчи (XIX-XX ĕмĕрсем) самана улшăнăвне, истори событийĕсене çивĕч ăс-тăнлă, нумай вак япалана асăрхама пĕлекен Иркка ятлă хĕрача куçĕпе сăнласа кăтартнă.

1920-мĕш çулсенче пирĕн çĕшывра пулса иртнĕ ĕç-пуçа М. Ухсай хăй те активлă хутшăннă. Кулаксене пĕтерес, хресченсен саманине çирĕплетес енĕпе кĕрĕшнĕ, кайран вара çак пулăмсене хăйĕн нумай илемлĕ хайлавĕсен сюжет никĕсне хывнă. «Кăра çилсем» повеçре те çакă малти вырăнта. Çавăнпа çыравçăн пурнăçĕ тата истори юхăмĕ кунта та çыпăçуллă пĕтĕçсе тăрать.

Вăрçă умĕнхи тапхăрта чăваш литературине кĕрсе чăваш ача-пăча литература аталанăвне витĕм кӳнĕ авторсем хушшинче **Александра Лазарева** (*Агакова Александра Назаровна, 1917-1978*) ятне те асăнмалла.

А. Лазареван пĕрремĕш калавĕ 1938 çулта «Çутă ĕмĕт» ятпа «Сунтал» журналта пичетленнĕ. Çак калавшăн автор илемлĕ хайлавсен конкурсĕнче преми илме тивĕç пулнă (1938). Кунта тĕп сăнар Санюк пурнăçĕнче тĕлĕнмелле ĕç пулса иртнине – ачаран ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ,

летчик пулас килни, пурнăçа кĕнине сăнласа панă. Летчиксен пурнăçне çыравçă темиçе калав халалланă: «Сывлăшра», «Иккĕмĕш тĕлпулу», «Телейлĕ вĕçев», «Çеçенхир çеçки».

Çыравçă ачасене интереслĕ темăсем тата сюжетсем тупма ăста. Уйрăмах туслăх çинчен нумай çырнине асăрхама пулать. Акă, «Çĕнĕ çул умĕн» калавра икĕ юлташ – Сашăпа Тимуш – туслăхне сăнласа парать автор. Вĕсем пĕр-пĕринсĕр пĕр кун та пурăнма пултараймаççĕ тейĕн çав. «Канав» хайлавра та калаçу туслăх вăйĕ пиркиех тăсăлать.

Александра Лазарева хайлавĕсен тĕп сăнарĕсем ăслă, ăнкăруллă, ĕçчен те тирпейлĕ. Сăмахран, «Çĕнĕ çул умĕн» калавра икĕ юлташ çĕнĕ çул валли хатĕрленĕ чăрăшсене турттаракан машинăна канавран кăларма пулăшаççĕ. «Улăхра» калаври Настя ал айĕнчи япаласемпе çырмара путма пуçланă пăрăва пĕчченех туртса кăларма вăй çитерет. «Юрать-ха тĕл пулнă» калаври Витя аташса кайнă пĕчĕк хĕрачана килне ăсатса ярать. Çавна май вĕсем хăйсен ăнкăруллăхне те, ăсне те, пысăк чунне те кăтартаççĕ.

Паллах, хайлавсенче пурте кунашкал сăнарсем мар. Пултаруллă сăнарсем хушшинче аслисене итлеменнисем, тирпейсĕррисем – «сивлек» сăнарсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, «Çĕнĕ çурт» калавра Ванюшпа Лева çĕнĕ çуртăн стенисене вараласа пĕтереççĕ. Калав сюжечĕ урлă çыравçă ачасен тирпейлĕ пулмаллине, çын ĕçне хисеплеме вĕренмеллине уйрăмах палăртса кăтартать. «Икĕ тĕл пулу» калаври Алик пĕчĕк ачаран велосипедăн шăнкăравне туртса илет те нумай вăхăт иртсен тин тавăрса парать. «Çĕнĕ хĕрача» калаври Неля амăшĕ киноактриса, ашшĕ Совет Союзĕн паттăрĕ тесе, хăй питĕ хитре тĕрлеме тата питĕ хăвăрт ишме пултарать тесе юлташĕсене суять.

Çав вăхăтрах Александра Лазарева геройĕсем патриотсем. Вĕсем мĕн пĕчĕкренех хăвăрт ӳссе çитĕнсе çĕршыва юрăхлă çын пуласчĕ тесе ĕмĕтленеççĕ. Çавăнпа «Тоня юрланă чух» калаври илемлĕ юрлакан пĕчĕк хĕр ача та çитĕнсе çитсессĕн çĕршыва чапа кăларакан юрăçă пуласси пĕртте иккĕлентермест. Тĕп сăнарсем пĕчĕк пулин те питĕ хăюллă. Акă, «Тĕттĕм каç» калаври Мишшăна пула ял пушартан сыхланса юлать. «Канмалли кун» калаври пĕчĕк ачасен тăрăшулăхне кура куккуруз ани кураксенчен сыхланса юлать. «Кĕсле янăрать...» калаври ачасем пысăккисене ялта клуб уçтараççĕ.

Нумай чухне Александра Лазарева ачасене ĕлĕкхи пурнăçпа паллаштарма тăрăшать. Сăмахран, «Тоня юрланă чух...» калаври Тоня амăшĕн калаçăвĕ урлă ĕлĕк çынсем вулама–çырма пĕлменни, «Ашшĕсен парни» калаври икĕ плотник калаçăвĕ урлă иртнĕ çулсенче пĕчĕк çуртсенче вĕренни пирки пĕлтерет автор.

Тăван (чăваш) литературăра ача-пăча хайлавĕсене пĕтĕм чăваш çыравçисем çырнă, çыраççĕ те. Паллах, вĕсенчен нумайăшĕ хăйсен хайлавĕсене шкул çулĕнчи ачасем е çамрăксем валли çырнă. XX ĕмĕрĕн вĕçĕнчи чăваш ача-пăча литературине çĕнĕ ӳсĕм шайне хăпартма пултарнă авторсенчен пĕри **Николай Ишентей** (*Петров Николай Петрович, 1953*) шутланать. Вăл шкул çулĕнчи ачасен юратнă авторĕ çеç мар, кĕçĕннисен юратнă юмахçи те. Тăван (чăваш) литературăна Н. Ишентей шавлăн – 1995 çулта «Ялав» журналта пичетленнĕ «Çуралман ача сасси» поэмипе кĕрсе кайнă. Хальччен тӳррĕн калайманнине куçран калама май тупнăран поэмăн кашни йĕркинчен сăрхăнса тухакан чун ыратăвĕ никама та пăшăрхантармасăр тăма пултарайман. Ăна чăвашсен паллă академикĕ Г.Н. Волков та пысăк хак панă.

Çыравçă шкулта ĕçленине пула паянхи ачасен пурнăçне те, кăмăл-туйăмне те, ĕмĕт-нушине те, вăл мĕнпе кăсăкланнине аван пĕлет. Çавăнпах пулĕ ун хайлавĕнчи сăнарсем чĕрĕ те ĕненмелле, пурне те пĕлме, таçта та çитсе курма ăнтăлаççĕ. Çавăн пекех çыравçă вĕсен ырă чунлăхне, пĕлӳ патне туртăннине, туслăхра çирĕп пулнине, çывăх çынсене пулăшма, ĕмĕте пурнăçа кĕртме, ырă ĕçсем тума тăрăшнине сăнласа парать. Çавăнпа та хайлаври сăнарсем йывăрлăха лекнĕ çынна хĕрхенме, ырăпа усал пĕлтерĕшне уйăрма, ĕмĕтленме пĕлнипе, тавçăруллă пулнипе палăрса тăраççĕ.

Çыравçă илемлĕ хайлавсенче ачалăх тĕнчин тĕрлĕ проблемисене çĕклет, вĕсен вăййи-куллине, пурнăçне сăнлани урлă халăх историйĕпе, йăла-йĕрке тата ĕненӳ пуянлăхне, çĕнĕ пĕлӳпе паллаштарать. Вăл ачасен пурнăçне, психологине шалтан пĕлсе тăни, илемлĕ сăмах урлă пурнăçа, ырра вĕрентни, ачалăх тĕнчине хаклани курăнать.

Н. Ишентейĕн хайлавĕсен чĕлхи сĕткен пулнине уйрамах палăртмалла. Çыравçă калуçă тата сăнарсен пуплевне рифмăланакан çаврăмсемпе, ача-пăча лексикинчи сăмахсемпе илемлетет, тĕрлĕ терминсемпе тата çĕнĕ сăмахсемпе анлă усă курать. Акă, тĕслĕхрен, сăнарсен е хуласен тĕлĕнтермĕш ячĕсене каялла вуласан пурте пĕлекен, паллакан сăмах пулнине курма пулать.

Хайлавсен сюжетне йĕркелесси те Н. Ишентейĕн хăйне майлă. Чи малтанах, ачасене кăсăклантарса ярас тĕллевпе, вăл детектив элеменчĕсемпе усă курать. Çакă ăна хайлав сюжетне хивререх йĕркелеме пулăшать. Çаванпа та хайлаври ĕç-пуç черетленĕвĕ те нумай чухне хăвăрт пулса иртет. Çакă вара пĕтĕмпех – хайлавăн чĕлхипе фабули – Н. Ишентейĕн ачасем валли çырнă хайлавĕсен чи паха енĕсем пулса тăраççĕ.

XX ĕмĕр вĕçĕнчи – XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш ача-пăча литературин тухăçлă аталанăвĕ çине чăвашла тухса тăракан хаçат-журналсем нумай витĕм кӳнĕ. Кунта чи малтанах кĕçĕн çулхи ачасем валли пичетленекен «Тетте» (1994) тата шкул çулĕнчи ачасем валли тухакан «Çилçунат» (1929-1991 çулсенче – «Хатĕр пул»; 2003 çултан – «Самант») журналсене палăртмалла.

Ача-пăчасемпе çамрăксем валли тухса тăракан хаçат-журналта аслă ăрури çыравçăсем те (Н. Ытарай, А. Тимофеев-Ыхра, П. Çăлкуç, Л. Сарине, М. Юхма, В. Тарават, Р. Сарпи, Л. Смолина тата ыт.те), литературăна XXI ĕмĕрте кĕнĕ çамрăк авторсем те (Л. Николаева, Д. Суслин, В. Николаев тата ыт.те) пичетленеççĕ.

Аслă ăрури çыравçăсенчен нумайăшĕ ачасем валли хайлавсене чун туртнипе, анчах вăхăтран-вăхăта çыраççĕ пулсан, çамрăк авторсем çак ĕçе ятарласа тунине асăрхама пулать. Хăш-пĕр çыравçăсемшĕн çак пултарулăх ĕçĕ вĕсен профессиллĕ ĕçĕпе тӳр килет. Акă, сăмахран, **Людмила Смолина** (*Смолина Людмила Валериановна, 1962*), **Людмила Николаева** (*Николаева Людмила Петровна, 1970*), **Владислав Николаев** (*Николаев Владислав Дмитриевич, 1974*) çыравçăсем кĕçĕн çулхи ачасем валли кĕске сăвăсем çырас ĕçре пултаруллă. Çав вăхăтрах вĕсем тĕрлĕ вăхăтра «Тетте», «Çилçунат» журнал редакцийĕсенче, кĕçĕн çулхи ачасемпе ача садĕнче тата пуçламăш класри ачасемпе шкулта ĕçленине палăртмалла.

Чăваш литературинче чи кĕçĕннисем валли çырнă хайлавсем питĕ сахал пулнине йышăнмасăр тăма çук. Пирĕн литературăра вĕсем çителĕксĕр аталаннă. Вырăс литературинчи пек К. Чуковский, А. Бартто евĕр авторсем илемлĕ сăмахлăх аталанăвĕнче пулман пирĕн. Çавăнпа та «Тетте» журналта пичетленме илемлĕ хайлавсем те, паллах, çукпа пĕрех. Тен, шăпах çак пулăм Л. Смолина, Л. Николаева, В. Николаев пек авторсене чи кĕçĕннисем валли сăвăсем çырма хистенĕ те. Сăмахсăрах, вĕсем пултаруллă сăвăççем. Вĕсем çырнă хайлавсем пур енчен те – чĕлхе, сăнарлăх, илем туртăмĕ – ача-пăча литературине тивĕçтереççĕ.

Литература теорийĕ

Ача-пăча литератури тесе хайне çеç тивĕçтерекен, çав вахăтрах илемлĕ сăмах пултарулăхĕн пĕтĕмĕшле саккунĕсене пăханса тăракан, сăмах ӳнерĕн хайлавĕсене калаççĕ. Вăл ачасен пĕлӳ, аталану тата хутшăну шайне, илемлĕх туртăмĕпе калаçу ăсталăхне ӳстерме пулăшать тата киленӳ кӳрет.

Ачасем валли çырнă хайлавсен сюжечĕ динамикăлăхпа, ĕç-пуç черетленĕвĕпе палăрса тăрать. Кунта, аслисем валли çырнă хайлавсенчи

пекех, шутласа кăларнипе чăн пулни уйрăлми пĕрлĕхре, анчах ĕмĕтленӳ тата юмахри пек шухăш вылявĕн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Кулăш-шӳтпе анлă усă курни те курăмлă. Ку вăл ачасен çитĕнӳ уйрăмлăхĕнчен килекен пулăм. Шӳт ачана пур енлĕн аталанма, пурнăçри тĕрлĕ вак-тĕвĕке, пăтăрмаха «çăмăлтарах» йышăнма пулăшать.

Ача-пăча литературинче илемлĕ сăнар калăпласси тĕпре. Ăна ахаль пурнăçран е юмахран илнĕ пулсан та вăл ĕнентерӳллĕ, чĕрĕ, ачана çывăх сăнар пулмалла. Унăн ачана хăй паллакан, пĕлекен çынсемпе пулăмсене аса илтермелле. Çакăн пек чухне кăна ача сăнарсем урлă ырăпа усала, тĕрĕслĕхпе суяна уйăрма вĕренет.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Уйăп Мишши

АЧАЛĂХ КУНĔСЕМ

Повесть (сыпăк)

Аннепе кукамай

Анне пир тĕртсе ларать. Аллинче якалса, çуталса кайнă ăса вылять унăн. Урисене ылмаштарса ура пускăчисем çине пуснă май кĕрĕсем шăлт-шалт! Шăлт-шалт! туса хăпара-хăпара анаççĕ. Вăр-вар куçкалакан аллисемпе вăл йĕркипе карăнса тăракан çип пĕрчисем хушшинчен ăсана пĕр еннелле ярса кăларать те хĕççе хăй çинелле туртса илет. Тепĕр еннелле ярать те каллех хĕçе туртать. Ун умĕнче карăнса туртăнан пир анĕ, пĕрер çип пĕрчин хушăнса, тĕртĕнсе пырать. Пирĕн валли кĕпелĕх, йĕмлĕх пулать.

Хăй ăшталанса ĕçлесе ларнă хушăрах анне эпир мĕн хăтланнисене те асăрхама ĕлкĕрет:

– Урине, ирех ан юрла! – астутарса илет Уринене. – Ир юрлакан каçхине макăрать, теççĕ.

Ах, анне сăмахĕ! Чĕренех кĕрсе вырнаçать-çке вăл, ĕмĕрлĕхе асра тăрса юлать. Паян кун та эпĕ ирхине кирек кам юрланине илтсен анне сăмахĕсене аса илетĕп. Ирех юрлакан çын каçхине чăнах та макăрассăн туйăнать мана. Е тата анне:

– Уруна сулласа ан лар, Мишша! – тесе асăрхаттарнине илтетĕн. – Ларнă чухне урана сулламаççĕ. Амăшĕ вилет, теççĕ...

Эпĕ çав самантрах урана суллама чарăнатăп. Анне те вĕлерес килмест манăн.

Пирĕн анне тĕлĕнмелле лайăх хĕрарăм. Пур ача та хăйĕн амăшĕ пирки çакăн пек шутлать-тăр. Ун пек хаклă, ун пек юратнă çын тĕнчипе те урăх çук. Ырă кăмăллă вăл, ырă чунлă. Хĕвел çинче ытларах пулнă çыннăнни пек сăнĕ тĕксĕм сарарах унăн, хăйне евĕрлĕ чипер. Сăмси вĕçĕ кăштах каçăрăлса тăрать. Тарăн хура куçĕсем çын çине ăшшăн та

йăвашшăн пăхаççĕ. Хура йăлтăркка çӳçне вăл, тӳп-тӳрĕ çӳç çулĕ туса, ик еннелле тураса уçать те, пĕр тачка вăрăм çивĕт явса, çурăм хыçнелле ярать. Пуçне шурă тутăр çыхать. Шурă кĕпепе, саппунпа çӳрет. Çипуç тĕлĕшпе ытлашши мухтанмалли нимех те çук унăн, анчах мĕн пурри пурте анне çийĕнче вăхăтлă, тирпейлĕ, таса. Пире те вăл çипуçран тирпейлĕ пулма вĕрентет.

Анне чухăн кнлйышра ӳснĕ. Аслашшĕ чухăнах пулман унăн. Хăй вăхăтĕнче стрелокра тăнă, хысна вăрманне хуралланă. Çĕрсем те тара илсе аккаланă пулать. Аннен асламăшĕ çинчен вара эпир нимĕн те илтмен, пĕлместпĕр.

Кукаçие, аннен ашшĕне, килйышра темшĕн юратман. Çитăрпа аслашшĕ пĕр шутлă пулса, ăна килтен хăваласа кăларса янă. Çакăн хыççăн кукаçи хăй валли пĕр пĕчĕкçеç пӳрт лартнă та кукамайпа унта пурăнмакуçнă. Часах вăл вилнĕ. Кукамайсен пĕчĕк пӳртне эпĕ лайăх астăватăп, унта сахал мар кайса çӳренĕ.

Анне çав пӳртре, чухăнлăхра, килти тиркешӳ-харкашăва курса, тӳссе пурăннă.

– Укçаран питĕ хĕсĕк пурăннипе аннӳ чипер хĕр пулнă вăхăтра пĕрре те пулин сăн ӳкерттерсĕ юлман, – каласа парать атте.

Анне вунтăватă çула çитсен, кукамай ăна Хусана ĕçлеме леçсе янă. Унта Иккассинчен, Вачалкассинчен, Кӳкеçрен пынă ытти чăваш хĕрĕсем те пулнă. Вĕсем прачечнăй тытакан пĕр нимĕç хуçа патĕнче тăватă çул хушши кĕпе çуса пурăннă.

– Майра кĕписене çума çăмăл мар, – тет анне. – Майрасем питĕ çӳхе çипуç тăхăнса çӳреççĕ. Пурçăнĕсем, шăтăклисем ытла та ачаш. Тем тĕрлĕ хутламсем, хуçланчăксем, пĕрмечесем туса тултарнă. Çавсене çума пĕлмелле. Пĕлсе ухас пулать, чӳхес пулать, питĕ таса тăвас пулать. Якатма та пĕлмелле тата. Таса çăваймасан е утюгпа якатнă чухне çунтарсан-тусан – пĕтрĕ пуç! Сана пĕр кун та ĕçре тытмаççе. Пăснă çипуç хакне тӳлеттереççĕ-ха çитменни çине. Çавăнпа та ĕçе эпĕ чунтанах тăрăшса, тирпейлĕ тăваттăмччĕ. Хуçа та мана яланах мухтатчĕ.

Анне Хусанти пурнăç çинчен, нимĕç хуçа çинчен каласа пама юратать. Питĕ таса пурăнаççĕ иккен нимĕçсем. Чăваш хĕрĕсене те таса пулма хушаççĕ, тирпейлĕхе вĕрентеççĕ. Анчах укçине çав тери сахал тӳлеççĕ. Хырăм тăрантарма кăна çитет. Нимĕçĕ калама çук хытă этем-мĕн. Çавăн патĕнче ĕçлесе пурăннă хушăра анне хăшпĕр сăмахсене нимĕçле калама та вĕренкеленĕ. Вырăсла каласа вара вăл самаях лайăх вĕренсе çитнĕ пулнă.

Анне юрлама питĕ юратать. Нумай юрă пĕлет. Килте кĕпе çĕлесе е тĕрĕ туса ларнă чухне, хăй те сисмесĕрех пулмалла, кĕçех юрласа ярать. Хăнана-мĕн кайсан, çынсем ун юррисене итлесе савăнаççĕ. Киле таврăнсан та вăл çаплах юрлать:

Чĕресси, чĕресси, чĕресси, чĕресси
Хăмла çырли,
Чĕресси, чĕресси, чĕресси, чĕресси
Хăмла çырли,
Хăмла çырли, хăмла çырли пулас марччĕ,
Çын шăл айне, çын шăл айне кĕрес марччĕ...

Вырăсла юрăсене эпир ăна аптратсах юрлаттаратпăр. Анне вара çинçе сассине илемлĕн янăратса юрласа ярать:

Сама садик я садила,
Сама буду поливать;
Сама милого любила,
Сама буду забывать...

Сăмахĕсене ăнланмастпăр эпир, анчах юрри илемлине туятпăр. Киленсе итлетпĕр. Тепĕр чухне аттепе иккĕшĕ вĕсем «Хаз-Булат удалой» юрра е «Шумел, горел пожар московский» юрра юрлама тытăнаççĕ. Аттен сасси хулăннăн, янăравлăн тухать. Анне ун хыççăн çинçен янкăштарать. Вĕсем çапла вырăсла юрлама пĕлнишĕн эпир тем пекех савăнатпăр. Хула пурнăçне курнăскер, пирĕн анне ялти ытти хĕрарăмсем хушшинче палăрмаллах уйрăлса тăрать. Тасалăха, тирпейлĕхе юратать вăл. Апат-çимĕçе хăй евĕрлĕ тутлă пĕçерме пĕлет. Кĕпе-йĕме таса çăвать. Анне çапла пултаруллă пулнинчен çынсем тĕлĕнеççĕ. Апла пулсан, пирĕн унпа епле мухтанас мар-ха? Епле вăл хăшĕ-пĕрисем кил-çурта, пӳрт ăшчиккине таса мар тытнине, çипуçран тирпейсĕр çӳренине тиркет. Çынсем, хĕрарăмсем ĕнтĕ, апата тутлă пĕçерме пĕлменни пирки те тиркесе калаçать.

Хусанта чухне анне лайăх ĕçленине нимĕç хуçа кайран та манман. Чулхула ярмăрккисем вăхăтĕнче вăл ярмăрккӑра çулленех прачечнăй уçнă. Пĕр хут кăна мар унта аннене ялтан чĕне-чĕне илнĕ. Анне вара Чулхулана кайса ĕçленĕ.

Ачасене пăхма аннене кукамай пулăшать. Вăл Платкаран килсех тăрать. Питĕ юратать пире. Килнĕ чухне пурин валли те мĕн те пулин тутли илсе килет.

Ватă кукамай табак тусанĕ шăршлама юратать. Шупăр кĕсйинчен çуталса кайнă ĕне мăйраки туртса кăларать. Шĕвĕр вĕçлĕ мăйракара табак тусанĕ тытать вăл. Пăккине уçса çав тусана типсе пĕркеленнĕ ывăç тупанĕ çине кăштах юхтарса кăларать те ăна, пӳрне вĕçĕпе чĕпĕтсе илсе, сăмса витĕр туртать. Пĕр-икĕ хутчен хыттăн апчхулатса илет. Унтан пĕркеленчĕк пичĕ-куçĕ, йăл кулса, çуталса каять:

– Ах, чун уçăлсах кайрĕ-çке! – тесе ярать вара кукамай, ăшне кантарса. – Кил-ха кунтарах, Мишша, – чĕнет мана. – Кукамун табакне шăршласа пăх-ха.

Кула-кулах мана табак тусанĕ шăршлаттарать. Эпĕ çавăнтах чыхăнса каятăп. Куççуль тухиччен апчхулататăп. Вăл лехлетсе кулса кăна ларать.

Кукамай пире тĕтĕрме питĕ юратать. Хăшĕн те пулин пуçĕ ыратнă тĕле пулать-и вăл, варĕ ыратни çинчен пĕлет-и е урăх амак çакланнине курать – унăн яланах пĕр сăмах:

– Куç ӳкнĕ санăн ачуна, Алтатти. Хаяр куç ӳкнĕ. Тĕтĕрсе ярас пулать. Вăштах иртсе каять.

Кĕçех хайхиçкер кăмакаран кĕл-кăвар кăлармалли шăвăç савука тытать. Ун çине амаланса тăракан кăвар, йывăç кăмпи татăкĕсем хурать. Çӳп шăтăкĕнчен çӳп-çап илет, таса мар шăпăр тăррине татать, темĕн те пĕр хурса тултарать. Савук çинчи пĕтĕм йăх-ях йăсăрланса çунма тытăнать те, калама çук усал шăршлă тĕтĕм мăкăрланса тухать. Кунпа пĕрлех кукамай куркапа шыв ăсать. Çав шывпа алăк хăлăпне, кантăк куçне чӳхесе илет тата темскер тăвать, унтан пĕр аллине урай шăпри, уçса хунă хачă тытать. Чирлĕ ачана савукран йăсăрланса тухакан шăршлă тĕтĕм çине тăратать. Лешĕ чыхăна-чыхăна каять. Çавах тӳсес пулать. Кукамай куркари хайхи таса мар шыва сыпса илет те сана шăпăр витĕр, хачă витĕр питрен пĕрĕхсе тĕтĕрме пуçлать:

– Атăл леш енчен, çичĕ тинĕс леш енчен çак ачана тĕтĕрме усал карчăк килнĕ. Вĕрет, сурать, тĕтĕрет вăл, пур усал-тĕселе хăвалать, чир-чĕртен, усал амакран хăтарать, хаяр куç ӳкнине сирет. Çак ача çине хăмăр куç, кăвак куç, чакăр куç, хура куç, çырă куç, хăнчăр куç, хĕрарăм куç, арçын куç, килти куç, тулти куç, ялйыш куç, килен-каян куç, вырăс куç, тутар куç, чăваш куç ӳкнĕ пулсан, шăм варрипе, сăс варрипе тухса кайтăр, тухса кайтăр! Тьфу! Тьфу! Тьфу! – аяккалла виçĕ хутчен сурать кукамай, унтан каллех темле-темле сăмахсем те каласа мăкăртатма тытăнать.

Акă, тинех тĕтĕрсе пĕтерчĕ. Савук çинчи йăсăрланчăк йăх-яха лаххана тăкрĕ. Лешĕ чăшăлтатса сӳнет. Эй, асаплă та иккен хăвна тĕтĕрттересси! Кукамай мана та, ыттисене те пĕрре кăна мар тĕтĕм сывлаттарса сипленĕ çапла, пĕрре кăна мар терт кăтартнă...

Тĕтĕрсе пĕтернĕ хыççăн анне пырса пуçран шăлать:

– Халĕ ĕнтĕ ирĕксĕрленни вăштах иртсе каять, – тесе лăплантарать. – Тĕтĕрнĕшĕн нимĕн те пулмасть. Ахалех турткаланатăн.

– Пире те ача чух çаплах тĕтĕрнĕ, – мăкăртатать кукамай, мала пĕксерех çыхнă кăвак тутăрне тӳрлетсе. – Ача-пăча тенине часах куç ӳкет.

Чипер хĕрача

Килте йыш пуçтарăнсан, кирек хăçан та пирĕн кил-çуртра мĕн-мĕн тумалли пирки сăмах тапранать, ялти хыпарсене сӳтсе яваççĕ. Çакăн пек калаçура пĕрре Натюк çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ:

– Ртиван Çтаппанĕсем усрав хĕр илсе килнĕ, теççĕ.

– Ăçтан-ши? – ыйтрĕ анне.

– Пĕлместĕп, тахăш ялтан.

– Вĕсен ачи çук çав. Çавăнпа илсе килнĕ ĕнтĕ. Ачасăр пурнăç пурнăç марах. Çтаппан арăмĕ питĕ кулянатчĕ. Ватлăх кунра хамăра пăхаканĕ те никам пулмĕ тетчĕ. Усрав хĕр тупнă, эппин.

– Хĕрачи тăлăхскер, тет, – хушса хучĕ Натюк. Темиçе кунтан çак хĕрачана эпĕ туйра куртăм. Çӳлти урамра Хлихвунсен Çтаппанĕ авланать. Килкарти тулли шап-шурă халăх хĕвĕшет. Кĕр-кĕрлесе туй сикет. Ача-пăча та унтах туй курса тăрать. Ачасем хушшинче пĕр пĕчĕкçеç палламан хĕрача курăнса кайрĕ. Хăй çич-сакăр çулсене çитнĕ пулмалла.

– Ртиван Çтаппанĕсен усрав хĕрачи, – пăшăлтатса ун çинелле кăтартаççĕ манăн юлташсем. – Таня ятлă.

Пĕчĕк Таня тĕрленĕ çухаллă шурă кĕпепе. Умне вĕтĕ-вĕтĕ хура тĕрленчĕклĕ шупка кăвак саппун çакнă. Тĕрленчĕкĕсем çĕнĕ уйăх касăкĕ евĕрлĕ. Пуçĕнче шурă тутăр. Урине пĕчĕк çăпата сырнă. Кăшт шуранкарах сăнĕ-пичĕ çав тери таса, чипер. Çӳçĕ сарă, кăн-кăвак куçĕсем çын çине ыррăн пăхаççĕ. Сăмси тăрри пăртак каçăрăлса тăрать. Йĕрĕлче пек пĕчĕк хĕрлĕ тутине чăпăрт тытнă. Хăй çине çынсем тăтăшах пăха-пăха илнине туймасăр, вăл тимлесех туй курать. Туй ачисем, туй арăмĕсем кулăшла каласа юрланисене илтсен, çĕр çĕмĕрсех тапăртатса ташланине курсан, ачаш питне-куçне çуталтарса йăл кулса илет. Унăн кулли те темле урăхла, уйрăмах илемлĕн тухать...

Çак хĕрачана куртăм та эпĕ вăл çапла чиперринчен тĕлĕнсе кайрăм. Халиччен ун пек чипере курманччĕ. Курнă пулĕ те, асăрхаман, асăрхама пĕлмен. Халь акă – манăн чĕрере темле чунах пырса тивен ăшă туйăм хускалчĕ. Ырă-ырă туйăм, илемлĕх туйăмĕ. Илем чуна илĕртет иккен. Ун çине пăхмасăр тăма çук. Пăхсан та пăхса тăранаймастăн. Ытараймастăн ăна.

Эпĕ пĕчĕк Таня çумнерех пырса тăтăм. Ун çинчен куçа илейместĕп. Вĕçĕмсĕрех пăхса тăратăп. Вăл кăшт хускалнине те сăнатăп. Хăй мана асăрхамасть. Умра туй. Туй мыскарисем. Вĕсем

хĕрачана пĕтĕмпех илĕртсе илнĕ. Эпĕ анчах туй çинчен те, мĕнпурри çинчен те манса кайнă. Çак ăнсăртран хам ума тухса тăнă тĕлĕнмелле илемлĕх тыткăнне килсе лекнĕ. Сывлама хăяймасăр, никамран вăрттăн Таня çине пăхатăп. Манăн çак асамлă вăрттăнлăха çын-мĕн курас пулсан е Таня хăй асăрхаса илес пулсан – эпĕ çĕр тĕпнех анса кайнă пулăттăм.

Чипер хĕрачана курнă хыççăн ытти хĕрачасем çине урăхла куçпа, танлаштаракан куçпа пăхма пуçларăм. Танлаштаратăп та, пĕри те ун пек мар. Таня маншăн пуринчен те чипертерех. Вăл мана килĕшет. Çавăнпа та эпĕ унран питĕ вăтанатăп. Унччен хĕрачасенчен вăтанасси асра та пулманччĕ. Çӳçрен те сахал мар тăпăлтарнă вĕсене, пуç çине тусан та ывăçласа яркаланă, такăнтарса ӳкернисем те пулкаланă. Анчах. Таньăна нихçан та ун пек кӳрентерессĕм çук. Кӳрентерме мар, унпа калаçма та хăяймастăп. Час-часах ача-пăча ушкăнĕнче, вăйăра тĕл пулатăп. Хăш чухне сăмах чĕнме те тӳрĕ килет. Çапах та вăтанса çеç сăмах хушатăп. Вăл тап-таса кăвак куçĕсемпе ман çине чăр! пăхсан, тӳрех хĕрелсе каятăп. Вăл пурри чун-чĕрене пăлхатать, вăйăра ал-урана çыхлантарать. Юрать-ха, çакăн çинчен никам та пĕлмест.

Çанталăк кĕр еннелле сулăнсан, пĕр кунхине эпир кил-йышĕпех вăрмана кăмпа татма кайрăмăр. Пĕлĕтлĕрех пулин те, кунĕ ăшă, лайăх. Вăрманта уçăлса, канса çӳреме аван. Аттепе анне пысăк карçинккасем йăтнă, Натюк, Урине, эпĕ витресемпе пураксем илнĕ, Саккасри Кăтра çаран таврашĕнче çӳретпĕр. Кунта, чăтлăх ăвăслăхра, шĕшкĕ тĕмисем хушшинче, шап-шурă кăрăç, хĕрлĕрех сарă хыр кăмпи, хĕррисем тĕклемес юманай, хуçăлсан шурă, йӳçек сĕт кăлараканскер, ăвăс кăмпи, хурăн кăмпи, хурарах йăлтăркка тӳпеллĕ масла кăмпи темĕн чухлех. Куçа илĕртсе кăна лараççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе вĕсем уйрăмах нумай тĕл пулаççĕ. Эпир савăнса кăмпа тататпăр, пĕр-пĕринпе ăмăртса витресене тултаратпăр.

Кун каçалана сулăннă. Киле таврăнма та вăхăт çитсе пырать. Эпĕ, йывăç тĕмисем хушшинче кăмпа шыраса çӳре-çӳре, аттепе аннерен те, Натюкпа Уринерен те аяккарах пăрăнса кайнă. Çакна хам та асăрхаман. Вĕсем патнелле таврăнас тенĕччĕ ĕнтĕ, çав вăхăтах пĕр шĕшкĕ тĕми айĕнче пĕчĕк Таня пĕшкĕнсе кăмпа татнине курах кайрăм.

– Эсĕ мĕн туса çӳретĕн кунта? – вăтана-вăтанах ыйтрăм çакăнтан.

– Кăмпа тататăп.

– Пĕчченех-и?

– Пĕччен мар-çке. Аттепе, аннепе килнĕ. Вĕсем те, авă, инçе мар çӳреççĕ.

– Эпир те килйышпах килнĕ, – пĕлтертĕм эпĕ. – Пирĕн карçинккасем те, витресем те тулнă ĕнтĕ. Аттепе иксĕмĕр кĕпесене хывса хутаç турăмăр. Вĕсене те кĕçех тултаратпăр. Акă, манăн витре халех тулать.

– Манăн тулаймасть-ха, – терĕ Таня.

– Атя, эппин, пĕрле тултарар!

Таньăпа иксĕмĕр пĕрле кăмпа татма тытăнтăмăр. Малтан унăн витрине тултартăмăр, унтан – манăнне. Ах, лайăх-çке çак килĕшӳллĕ хĕрачапа шăкăл-шăкăл калаçса кăмка татса çӳреме! Çывăхра никам та çук. Пĕр çын та курмасть пире. Вăл манпа пĕрле пулма хирĕç мар иккен. Епле ырă!

– Атте-аннерен инçе уйрăлса кайма юрамасть, – терĕ Таня кăштах çӳренĕ хыççăн. – Аташса кайăпăр тата.

– Çак вăрманта-и? – хамăн хăюлăха кăтартасшăн пултăм эпĕ. – Кунта эпĕ куçа хупса çӳреме пултаратăп. Пур вырăна та пĕлетĕп!

– Эпĕ пĕлейместĕп-ха...

Çапах та аттесене, аннесене чĕнсе кăшкăрса пăхрăмăр.

– Анне! Аçта эсир? Анне! – çинçен янăрать Таньăн сасси. Вăрман çак сасса таçталла илсе каять те каялла илсе килет.

– Анне! – кăшкăратăп эпĕ те.

Нихăш енчен те хирĕç сасă çук. Темиçе хут кăшкăрса пăхрăмăр çапла, хирĕç чĕннине илтеймерĕмĕр.

– Мĕн тăвар-ха ĕнтĕ? – шикленнĕ пек пулчĕ Таня.

– Хамăрах киле таврăнатпăр.

– Çулне пĕлетĕн-и?

– Эй, эп пĕлмен çул та çук кунта! – каллех мухтанса илтĕм хĕрача умĕнче.

– Каяр, эппин.

Тулли витресене йăтрăмăр та хамăр тĕллĕнех киле таврăнтăмăр. Таня хăйсен килнелле утрĕ, эпĕ çырмари урамалла анса кайрăм. Ман хыççăнах пирĕннисем те киле таврăнчĕç. Тăваттăшĕ тăват çĕклем кăмпа çĕкленĕ. Мана курсан, тĕлĕнсех кайрĕç.

– Эсĕ килте-çке? – ыйтать атте. – Хăш вăхăтра çитсе тăтăн?

– Халь анчах таврăнтăм.

– Вăрманта пиртен ăçта аташса юлтăн?

– Аташса юлман-çке... – хĕп-хĕрлех хĕрелсе кайрăм эпĕ. Тем айăп тунă пек вăтантăм.

– Шырарăмăр, шырарăмăр сана, кăшкăртăмăр, кăшкăртăмăр, ниçта та тупаймарăмăр. Вара, хырăмĕ выçса çитсен хăех таврăнĕ-ха,

çухалсах каяс çук тесе пăрахрăмăр та утрăмăр. Эсĕ таврăннă та авă. Пĕчченех килтĕн-и?

– Пĕччен мар... Таньăпа...

– Мĕнле Таньăпа?

– Çтаппан пиччесен усрав хĕрĕпе... Вăрманта тĕл пултăмăр...

– Илтетĕн-и, амăшĕ? – кулса ячĕ атте. – Пирĕн Мишша халех вăрманта хĕрсемпе çÿреме пуçланă.

– Чăнах-и? – тĕлĕнсе куçне-пуçне чарançи турĕ анне. – Мишша, илтрĕн-и, аçу мĕн калать?

Эпĕ хĕрелсе тăратăп. Шăпăрт та шарламастăп.

– Ма чĕнместĕн тата? – кула-кулах тĕпчет мана атте. – Авланма шутламастăн пулĕ те?

Эпĕ татах чĕнместĕп. Атте манран кулмаллипех кулать:

– Амăшĕ, куратăн-и, Мишша авланма шухăшлать. Чăнах та, авлантарса ярас маар-и çавна? Вара пирĕн килте пĕчĕк кин пулать.

Анне те атте майлах çаптарать:

– Авланасах тет пулсан, мĕн тăвăн, авлантармах тивет пулĕ, хĕрачи лайăхскер. Пукане пекех чипер. Юратмалла. Ан тив, пĕчĕк кин пултăр.

– Ну, мĕнле, Мишша? – шахвăртса ыйтать атте. – Аннÿ те хирĕç мар авă. Авланатăн-и?

– Те авланас?..

Çак айван сăмахăм çăвартан епле тухса кайнине хам та сиссе юлаймарăм. Кун пек сăмаха манран ниепле те кĕтме пултарайман, ытахальтен кăна шÿтлесе калаçакан аттепе анне сасартăк куçĕсене чарса пăрахрĕç. Унтан иккĕшĕ те пĕр харăсах пĕрĕхтерсе кулса ячĕç.

– Пĕтрĕмĕрех! – ик пĕççине шарт! çапать анне. – Пирĕн Мишша авланасшăн! Курăр-ха эсир ăна! «Те авланас?..» – тесе тăрать, мăнтарăн. Авлантарсан – авланать! Ай, Мишша! Шалт тĕлĕнтерсе пăрахрăн-çке пире. Тутинчен сĕт сарри кайман хăйĕн, ура сырма та пĕлмест-ха. Вăл пур, хĕр пăхма пуçланă, авланас шут тытнă! Мĕн тăвăн айван ачупа?

Эпĕ нихçан курманла намăсланса çунсах кайрăм. Кайран та аттепе аннене куçран пăхма вăтанакан пултăм. Çакăн хыççăн манран килте тахçанччченех кулса пурăнчĕç.

1962.

Александра Лазарева

САНĂН ÇИТМĔЛ ÇИЧĔ ТУС

Калав

Йăлăм!.. Вăл яланах – çуллахи шăрăхра та, хĕллехи шартлама сивĕ кусенче те чуна илĕртет. Ытармалла мар илемлĕх унта, шăплăх, канлĕх...

Хĕлле, Атăл ларсанах, канмалли кунсенче хулари йĕлтĕрçĕсем пурте, ватти-вĕттипех, йăлăмалла ыткăнаççĕ. Çав тери ирĕклĕ унта. Хуть те ăçталла чуп, хуть те хăш тĕлте ярăн. Сывлăшĕ кăкăра уçса ярать, кăмăла çĕклет...

Хулари пĕр мăн çуртра, пĕр подъездрах пурăнакан вуникĕ çулхи Андрюшпа вунпĕр çулхи Костя та пĕрмаях Атăл çине йĕлтĕрпе ярăнма çӳреççĕ.

Пĕрре, шăматкун ирхине, вĕсен çуртĕнчен чылайăшĕ йĕлтĕрсемпе кайрĕç. Андрюш ашшĕ ирхи апат хыççăнах килтен тухрĕ. Андрюш та унпа пĕрлех каясшăнччĕ, вăл ĕнтĕ хăйĕн йĕлтĕрĕсене тахçанах якатса хатĕрлесе хунăччĕ. Анчах ашшĕ ăна илсе каясшăн пулмарĕ.

– Эпир паян юлташсемпе питĕ инçе каятпăр, ывăлăм, – терĕ вăл. – Ăмăрту пулать йĕлтĕрçĕсен. Ырансăр та таврăнмастпăр. Санпа эпир тепĕр чух ярăнăпăр.

Ашшĕпе пĕрле кайма май килменнипе, Андрюш хăйĕн юлташне, кӳршĕре пурăнакан Костьăна, чĕнчĕ. Амăшĕ хирĕç пулмарĕ, анчах асăрхаттарчĕ:

– Эсир инçе ан кайăр, тата ытлашши нумай та ан çурĕр...

Кунтан тĕлĕнмелли çук-ха, вăл кашнинчех çавăн пек каласа ярать. Костя амăшĕпе ашшĕ те, вăл ăçта та пулин каяс пулсан, яланах çавăн пек асăрхаттараççĕ. Унăн ашшĕ, Андрюш ашшĕ пек, йĕлтĕрпе çӳреймест, вăл инвалид, уксахласа утать.

Ачасем килтен çав тери хаваслăн тухрĕç, кĕçех Атăл çине çитрĕç, ярăнма тытăнчĕç. Çанталăкĕ паян питĕ лăпкă, ним чухлĕ те сивĕ мар. Çынсем пурте, Атăл урлă каçса, йăлăм еннелле ярăнса каяççĕ.

– Атя, Костя, эпир те малалла каяр! – кăшкăрчĕ Андрюш.

– Атя, ара! Анчах нумай çӳремĕпĕр, килте пăшăрханĕç, – терĕ ăна хирĕç юлташĕ.

Ачасем Атăлăн леш енчи çыранĕ еннелле вĕçтерсе пычĕç. Кунта йĕлтĕр йĕрĕсем питĕ нумай-мĕн, малтан тунă йĕр тăрăх ыткăнса пыма та çăмăл.

Вĕсем умĕнче чуна илĕртекен вырăнсем. Акă, пĕр вăрмантан тухсанах, çӳллĕ, чалăш-тĕлĕш тăвайкки тĕл пулчĕ. Мĕн тери аван ярăнса анма! Акă, çĕнĕ йĕрсем пур. Тин çеç иккĕн ярăнса иртнĕ

курăнать. Андрюшпа Костьăн та çав йĕрсем тăрăх ма ярăнмалла марха? Ним шухăшласа тăмасăрах, туссем тăвайккинчен умлăн-хыçлăн вĕçтерчĕç. Кайран вара пĕри пуçхĕрлĕн, тепри хăяккăн йăванса кайса çырма тĕпĕнче тĕл пулчĕç. Инкек-синкек çук, хăйсем ахăлтатса кулаççĕ çеç...

Малта йĕрсем татах нумай, урлă та пирлĕ каяççĕ. Вĕсем тăрăх кайса та çитерес çук. Çавăнтах тата те йытă, те мулкач кĕрпе пек кăпăшка юра сирпĕнтерсех сике-сике кайнă. Ку та çĕнĕ йĕр, нумай пулмасть таçталла тарнă пулмалла.

– Атя, çак йĕрпе каятпăр: ăçта пытанса курăнать ку чĕрчун? – Андрюш, малта пырса, темле кайăк йĕрĕпе вăрманалла кĕчĕ. Костя та юлмарĕ унран.

Кукăр-макăр сиккелесе çӳренĕ эсрел мулкачи. Ачасем ун хыççăн пычĕç-пычĕç те унтан йĕрне те çухатрĕç. Таçта, пĕр-пĕр йывăç тăррине, улăхса ларнă тейĕн. Ăçтан тупатăн ăна? Вĕсем пĕр хушă унталла-кунталла пăхкаласа тăчĕç, çапах та урăх нимĕн те курăнмарĕ. Çав самантра хăйсем питĕ ывăнса çитнине туйрĕç.

– Атя каялла... – терĕ Андрюш, ассăн сывласа.

...Ак ĕнтĕ вĕсем, пĕр шарламасăр, каялла таврăнаççĕ. Кĕтмен çĕртен çил вĕре пуçларĕ, пит-куçа кастарса чалăшшăн тăман çавăрттарма тытăнчĕ.

Хĕллехи кĕске кун иртсе те кайнă иккен, тавралăха тĕксĕм сăн çапрĕ. Утса пынă çĕртех ачасем хăйсен йĕрĕсене те çухатрĕç. Те тăман шăлса лартрĕ, те куç курми пулчĕ. Вĕсем каялла кайма тухнăран вара самай вăхăт иртрĕ пулин те, хуралсах пыракан вăрман вĕçĕ те курăнмасть.

Ачасем унталла-кунталла пăхкаласа чарăнса тăчĕç. Ăçталла çул тытмаллине халь вĕсем пĕри те пĕлмерĕç. Андрюша сылтăм еннелле каймалла пек, Костьăна пачах урăх еннелле пек туйăнчĕ. Юрать-ха, çил-тăман ытлашши вăйлах пулмарĕ, вăл пĕр кассăн çавăрттарса çеç иртсе кайрĕ. Унтан çанталăк лăпланса та çитрĕ. Нимрен ытла туссене хăйсем ывăнни, хырăмĕсем выçни аптрата пуçларĕ.

Кăшт тăхтасан таçта, чылай аякра, йытă вĕрни илтĕнчĕ те, ачасем çав тери савăнса кайрĕç.

– Ав çав еннелле каймалла-иç!

Вĕсем тӳрех вырăнтан хускалчĕç. Шăп çав вăхăтра вĕсен тĕлĕпе, пĕр вăтăр-хĕрĕх метрта, йывăççем хушшипе иккĕн йĕлтĕрсемпе çăмăллăн чашлаттарса пыни курăнчĕ. Каччăпа хĕр пыраççĕ иккен. Вĕсем ачасене асăрхарĕç, анчах чарăнса тăмарĕç.

– Ырӑ çынсем! Калӑр-ха, тархасшӑн, хулана хӑш еннелле каймалла? – кӑшкӑрса ыйтрӗ Андрюш.

– Мӗн эсир вӑрманта çак таранччен çӳретӗр? Сирӗн тахçанах вырӑн çинче бай-бай тумалла! – терӗ арçынӗ.

Ку сасӑ Андрюша темшӗн ашшӗ сасси пекех туйӑнчӗ. Çавӑн пирки ун чӗринче самантлӑха савӑнӑç çиçсе илчӗ.

– Эй-эй! Атте-е! – кӑшкӑрчӗ Андрюш.

– Мӗн эсӗ, сивӗпе аташма пуçларӑн-им? Ăçтан аçу пултӑр кунта? – терӗ Костя.

– Атьӑр, вӗçтерӗр пирӗн хыççӑн, çухалса каймастӑр вара! – илтӗнчӗ çав вӑхӑтрах хӗр сасси.

Умри çынсем часах куçран çухалчӗç. Вӗсене хӑваласа çитес тесе, ачасем мӗн вӑй çитнӗ таран чупрӗç, – усси пулмарӗ, ывӑннӑскерсем часах пулӗнсе ларчӗç.

– Тек каймастпӑр, ют çынсем вӗсем. Таçталла-ха вӗсен çулӗ, кам пӗлет... – терӗ Андрюш, хашш! хуйхӑрса.

– Паллах, ют çынссем! Ют мар пулсан – чарӑнса тӑратчӗçех вӗсем, ăçталла каймаллине ăнлантарса паратчӗç!

– Эх, эпир те çав! Вӗсен пире çӗклесе каймаллаччӗ-им тата? Хамӑр утса çитеймерӗмӗр вӗт-ха?..

Сисмесӗрех çӗрле пулса ларчӗ. Тӳпере сиввӗн çутатакан çӑлтӑрсем те нумайланчӗç.

– Çӑлтӑрсен çутипех çитетпӗр, – терӗ Андрюш, хӑйне хӑй лӑплантарса.

– Çитме те пултаратпӑр пуль! Çынсем çӗрле сахал çӳреççӗ-и? Эпир те çынсемех, хӑрамалли нимӗн те çук, – ун майлӑ пулчӗ Костя.

Анчах вӗсен йӗлтӗрӗсем халь ӗнтӗ аран-аран шурӗç. Пӗчӗк туссем çав тери ывӑнса çитрӗç.

– Андрюш, кӑштах канса илес пулать пуль пирӗн, вӑй кӗтӗр, – терӗ Костя.

– Канатпӑр та – каллех утатпӑр, пурпӗрех кӗçӗр киле çитетпӗр...

Вӗсем, йӗлтӗрӗсене çавӑнтах пӗр лутрарах лӑпсӑркка йывăç айне юнашар пӑрахса, çурӑмӗсемпе пӗр-пӗрин çумне тайӑнса, юр çине ларчӗç те часах тӗлӗрсе кайнӑ пек пулчӗç.

Сӗм вӑрманта сивӗ шӑплăх тăрать. Ывӑннӑ ачасем хуллен хăрлаттарса çывăрни çеç кăшт хускатать çав шăплăха.

...Каç та пулчӗ, çӗр тӗ иртрӗ, ачасем киле таврăнмарӗç. Андрюш амӑшӗ те, Костя ашшӗпе амӑшӗ те, калама çук пăшăрханса, пăлханса, çӗрӗпех çывăраймарӗç. Ӗнтӗ хайсен çуртӗнче кӗрсе тухман хваттер те

юлмарĕ. Паян йĕлтĕрпе ярăнма кайнисенчен кам та пулин вĕсен ачисене курман-ши тесе шырарĕç вĕсем. Анчах кăлăхах пулчĕ – никам та курман, тĕл пулман...

Андрюш амăшĕ Агния Ивановна пĕтĕм чунтан кулянса çĕр каçрĕ, ăна никам та лăптантаракан пулмарĕ.

Ăшĕ хыпнипе, чунĕ ыратнипе ниçта кайса кĕреймерĕ вăл. Çапах та макăрса ларнипе çухалнă ача тупăнмасть вĕт-ха, ăна çине тăрсах шырас пулать! Кама шанатăн? Ашшĕ те килте çук халь. Халех, хăвăртрах мĕн те пулин тумалла!..

Вĕсен мăн çуртĕнчех Агния Ивановнăн куккăшĕ пурăнать. Иртнĕ вăрçăра нумай çапăçнă, партизансен командирĕ пулнă çын. Отставкăри полковник. Самаях ватăлнă ĕнтĕ, анчах çамрăк чухнехи пекех физкультурăна юратать, хĕл кунĕсенче час-часах йĕлтĕрпе те кайса çӳрет.

Агния Ивановна тумланмасăрах виççĕмĕш хута чупрĕ, çине-çинех хыттăн шăнкăравларĕ. Хуçисем алăк уçсан, вăл никам каличчен малтан сасăпах макăрса ячĕ. Куккăшĕ ăна хулĕнчен тытса диван çине лартрĕ, кăмăллăн ыйтрĕ:

– Мĕн пулнă капла, ма макăратăн?

– Пирĕн Андрюш ĕнертенпех çук, ирхине Софроновсен ачипе пĕрле йĕлтĕрпе ярăнма кайрĕç те... Иккĕшĕ те çук! Те шăнсах вилчĕç ĕнтĕ...

Иван Павловичпа унăн мăшăрĕ Гликерия Андреевна – питĕ кăмăллă хĕрарăм – ăна лăплантарма тăрĕшрĕç.

– Ашшĕ ăçта? Килтех-и?

– Вăл та çук çав. Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне иккĕ кунлăха тухса кайнă вăл.

Егоров полковник çын хуйхи-суйхи çине лăпкăн пăхма пултарайман. Вăрçă вăхăтĕнче те çынсен хурлăхне, асапне тем териех курнăскер, çынсене нумай пулăшнă, вилĕмрен те сахал мар хăтарнăскер, вăл халь те çынсемшĕн тăрăшма пăрахман.

– Пĕр тăхтамасăрах шырама тытăнас пулать, пĕр минут та сая яма юрамасть. Пурне те ура çине тăрататпăр, хам та каятăп, – терĕ вăл çирĕппĕн.

– Тĕрĕс, Ваня, шырас пулать, кай, – пуçĕпе сулчĕ арăмĕ.

Гликерия Андреевна упăшки мĕн шутланипе яланах килĕшнĕ, мĕншĕн тесен вăл нихçан та кирлĕ мар ĕç тумасть. Халĕ те тӳрех килĕшрĕ, упăшкин сывлăхĕ пирки çеç пăшăрханса илчĕ: сивĕ çанталăкра унăн сывлăшĕ пӳлĕне-пӳлĕне ларать. Çавăнпа та васкасах тепĕр пӳлĕмрен ăшă кĕрĕк илсе тухрĕ.

– Мĕн тума пулĕ-ши ĕнтĕ, Ваня? – пăлханарах ыйтрĕ вăл.

– Май пур, карчăк, май пур... Юрать-ха, паян канмалли кун. Отряд таранах пухаймăпăр, анчах пĕр отделени пулатех. Халех Генăпа Гаврик патне шăнкăравлатăп, йĕлтĕрсем илсе часрах кунта килччĕр. Эсĕ Павлика вăрат, – терĕ вăл арăмне.

Гена, Гаврик, Павлик – виççĕшĕ те Иван Павлович ывăлĕсем.

– Акă, çур отделени пулчĕ те пирĕн! Кӳршĕсене чĕнес тата...

Çавăнтах полковник хулари милици начальникне шăнкăравларĕ, мĕнле инкек пулнине ăнлантарчĕ. Леше мĕн тума кирлине халех тăвасси çинчен пĕлтерчĕ.

– Вунă çын йĕлтĕрсемпе кăларса яратăп...

Иван Павлович ывăлĕсене пушар чухнехи пекех васкатрĕ. Çарта пулса килнĕ маттур çамрăксем часах хатĕр пулчĕç. Хăйсемсĕр пуçне, вĕсем йĕлтĕрпе лайăх çӳрекен юлташĕсемпе çыхăнчĕç, халех Атăл хĕррине тухма хушрĕç. Çур сехетрен Иван Павлович çынсене икшерĕн-виçшерĕн, уйрăм-уйрăм маршрутсемпе, пур еннелле те сапаласа ячĕ. Кашни тĕме, кашни лупашкана тĕплĕн ухтарса тухма хушрĕ. Хăй, вăрман хĕрринче юлса, хăрăк туратсенчен кăвайт хучĕ.

Часах милици грузовикĕ çитсе чарăнчĕ. Ун çинчен вунă çын сиксе анчĕç, кашниннех йĕлтĕр. Иван Павлович вĕсене те ăçталла каймаллине кăтартса ячĕ.

Пĕр вунă сехетре хулари пур репродукторсем те кĕрлеме тытăнчĕç: радио хула çыннисене ĕнер йăлăмра икĕ ача çухални çинчен пĕлтерчĕ. Ачисем миçе çултине, мĕн тăхăннине ăнлантарсах пачĕ. Кам та пулин ăçта та пулин вĕсене курнă е вĕсем çинчен илтнĕ пулсан – халех милицие пĕлтермелле! Пĕр-ик сехет иртсен кун çинчен тепĕр хут каларĕç...

Пир-авăр фабрикинче ĕçлекен Нелли ятлă çамрăк хĕр, тин çеç ыйхăран вăраннăскер, радиопа çак хăрушă хыпара илтсен, тӳрех ĕнер вăрманта йĕлтĕрпе çӳренĕ чух 72-мĕш кварталта курнă ачасене аса илчĕ. Вăл, васкасах тумланса, телефон-автомат патне тухса чупрĕ.

– Малтан Анатолие пĕлтерес-ха кун çинчен... Вăл мĕн калĕ... – шухăшларĕ хăй.

Анатолий Утинов – Неллипе пĕр çĕртех ĕçлекен каччă, фабрикăри чи лайăх физкультурник. Ĕнер Атăл леш енче вĕсем пĕрле çӳренĕ, тĕттĕм пулсан тин таврăннă. Леш ачасене Анатолий те курнăçке, вĕсене вăл часрах киле таврăнма та хушрĕ: «Сирĕн бай-бай тумалла», – терĕ.

Каччӑ фабрика общежитийӗнче пурӑнать. Тултан кӗмелли алӑк патӗнче ларакан вахтер умӗнче телефон пур. Хытӑрах ыйтсан, чӗнекенччӗ-ха Анатолие...

Малтанах ответ пулмарӗ. Нелли автомата виççӗмӗш хут укҫа ярса общежитири телефон номерне тытсан тин трубкӑра çилӗллӗ сас илтӗнчӗ:

– Мӗн кирлӗ?

– Ухтинова чӗнӗр-ха, инҫетре мар вӑл, аялтах, улттӑмӗш пӳлӗмре...– васкаса каларӗ Нелли.

– Чӗнместӗп! – терӗ вахтер. – Лакей мар эпӗ сирӗншӗн каллӗ-маллӗ чупкалама!

– Питӗ кирлӗ вӑл мана... Ӗçпе, пысӑк ӗçпе!

– Мӗн ӗçӗ пултӑр канмалли кун?

– Эс паян радио итленӗ-и, Хумма мучи?

– Ма итлес маар-ха, репродукторӗ ман пуç çинчех янӑрать...

– Икӗ ача çухални çинчен илтрӗн-и?

– Илтрӗм çав. Шел ачасене. Шӑнса вилме те пулать кун пек çанталӑкра...

– Манӑн шӑп çав ачасем пирки калаçмалла Ухтиновпа. Эпир унпа иксӗмӗр ӗнер курнӑ вӗсене... Чӗн-ха ӑна часрах! Ниçта та тухса кайманши вӑл, пӗлтересчӗ ана часрах, Хумма мучи.

– Айван эсӗ, – терӗ вахтер, – сӑмахна тӳрех çавӑнтан пуçламаллаччӗ, чӗнеттӗм хальччен...

Тепӗр минутранах трубкӑра Ухтинов сасси илтӗнчӗ.

– Кама кирлӗ пултӑм-ши эпӗ?

– Мана, – терӗ Нелли. – Салам.

– Хӑвна та салам-ха, эппин. Мӗн каласшӑнччӗ-ши?

– Эсӗ радио итлерӗн-и?

– Эпӗ халь çеç тӑтӑм-ха. Канмалли кун васкамалли çук та. Мӗн вара?

Нелли радио мӗн çинчен калаçни, мӗн ыйтни çинчен пӗлтерчӗ.

– Астӑватӑн-и, каçхине 72-мӗш кварталпа пынӑ чух ик арçын ачана куртӑмӑр? Вӗсем пирӗнтен: «Хулана мӗнле каймалла?» – тесе ыйтрӗç... Шӑпах çавсем çухалнӑ пулмалла. Милицие пӗлтерер пуль эпир вӗсене ӑçтарах курнине. Шырама çӑмӑлрах пулӗ. Хӑвӑртрах тупӗç. Ачасем вӗт-ха, тем те пулӗ, хӑрамалла!

– Тӗрӗс сан шухӑшу, Нелли, халех шӑнкӑравласа каласа паратӑп, – терӗ ӑна хирӗç Ухтинов.

…Иван Павлович вăрман хĕрринче пĕрмай каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ. Пĕр-пĕр йĕлтĕрçĕ çаврăнса тухнине курсанах ун патнелле ыткăнчĕ. Анчах халлĕхе нимĕнле хыпар та пулмарĕ-ха. Ачасем тупăнмарĕç. Нивушлĕ пуçĕпех пĕтнĕ вĕсем?!

Милици машинин кабининче çав тери хуйхăрса кĕтсе ларакан Агния Ивановна та хăш енчен те пулин йĕлтĕрçĕ килни курăнсанах сиксе тухрĕ, ырă хыпар кĕтрĕ, анчах усси çав-çавах пулмарĕ-ха. Вара каллех макăрма тытăнчĕ вăл...

Сосновка поселокĕ енчен хуланалла, хуларан – унталла çынсем пĕр вĕçĕмсĕр утаççĕ. Ах, вĕсенчен хăшĕ те пулин Агния Ивановнăна ырă хыпар пĕлтересчĕ! Çук çав, никам та ним те каламасть... Вăл ĕнтĕ хуйхăрнипе халран кая пуçларĕ, пуçне те аран çĕклерĕ, унтан майĕпе тĕлĕрсе кайнă пек пулчĕ.

...Кабина алăкне такам хуллен тăкăртаттарнине илтсен, вăл карт! вăранса кайрĕ.

– Агния, паллаш, тав ту çак çынна, пирĕн турă вăл, – терĕ Иван Павлович, хăйĕнпе юнашар тăракая ваткăллă фуфайка тăхăннă çын çине кăтартса. – Алпатов унăн хушамачĕ, сĕтел-пукан фабрикинче ĕçлет...

Паян çак çын ир-ирех ухутана тухнă-мĕн, йĕлтĕр çине тăрса, Сосновкăран чылай аякка кайнă. Пĕр мулкач тĕмсем хыçнелле чупнине курсан пăшал персе янă. Çав самантрах ача сассине илтнĕ.

Алпатов сасă илтĕннĕ çĕрелле пынă. Вара хайхи икĕ ачана тупнă, ачисем шăнса хытмах пуçланă, утайми те пулнă. Алпатов ачасен йĕлтĕрĕсене пĕрлештерсе çыхнă та, вĕсене лартса тӳрех больницăна илсе кайнă. Халĕ ачасем иккĕшĕ те Сосновкăри больницăра иккен. Тухтăрсем вĕсене пăхнă хыççăн: «Ытла хăрамаллиех çук», – тенĕ...

Кун çинчен Иван Павлович ăнсăртран пĕлнĕ. Хула еннелле утакан çынран: «Çул çинче ачасене шыракан йĕлтĕрçĕсене тĕл пулмарăн-и?» – тесе ыйтсан, ку пĕтĕмпех каласа панă...

Агния Ивановна çак Алпатов хушаматлă çынна ыталаса илсех чуптурĕ.

– Ах, мĕнле тав тăвам-ши сире? – макăрса ячĕ вăл.

– Мĕнех тав тумалли пур уншăн? Хурлăха лекнĕ ачасене курсан, вĕсене пулăшмасăр тăма камăн чунĕ тӳстĕр? – терĕ Алпатов.

– Вăл тĕрĕс те-ха, анчах çăлаканни çапах та эсĕ пулнă-çке! – терĕ Агния Ивановна. – Санах тав тăвас пулать манăн, ĕмĕр-ĕмĕр телей пултăр сана куншăн, ырă çыннăм!

...Кайран, больницăра сывалнă хыççăн ачасене киле илсе пырсан, Иван Павлович полковник çапла каларĕ вĕсене:

– Эсир çухалнă кун сире шырама çитмĕл çичĕ çын тухрĕ. Çитмĕл çичĕ тус пулнă сирĕн вăл кун. Пирĕн пурнăç йĕрки çапла: кам та пулин йывăрлăха лексен, пурте ăна пулăшма тăрăшаççĕ. Ан манăр çавна. Хăвăр та яланах вăй çитнĕ таран çынна пулăшма тăрăшăр...

– Манмастпăр, – терĕç ачасем. – Нихçан та манмастпăр!..

1955.

Николай Ишентей

ШĂНКĂРЧ УРОКĔ

Калав

Петюк селĕп каласать. «Р» сасса ниепле те тĕрĕс калаймасть вăл. Пĕтĕм пăтăрмах та çавна пула сиксе тухрĕ ĕнер. Урамри ачасемпе суккăр упалла выляннă чух кăмăла килнĕ юрра чиперех юрлатчĕ вăл: «Асамат кĕпейĕ çӳлте, тӳпейе...»

Ачасем ăна селĕп пулнишĕн кӳрентерме пикенчĕç. «Чипейкке Петĕйкке», – тесе витлерĕç. Çавăнпа каçхине çывăрма выртнă чух Петюк çирĕп шухăш тытрĕ: «Урама урăх ура ярса пусмастăп. Вырăн çинчен те тăмастăп».

Выртать, хайхи, Петюк кравать çинче енчен енне çаврăнкаласа. Ир пулнă. Тăма та вăхăт ĕнтĕ. Анчах пĕр тытнă шухăша вĕçне çитересшĕн ача – вырăн çинчен тăмасть. Сăмах тени татăклă пултăр тет.

Акă тулта çумăр та шăпăртатса ячĕ пулас. Чăн та. Ав кантăк çумне йăлтăркка тумламсем çапăнаççĕ. Петюкăн та икĕ куçĕнчен ĕнчĕ пĕрчĕ шуса анчĕ. Тăма мар – çи виттине пуçĕ урлах витĕнсе выртрĕ вăл.

Сасартăк такам чĕвĕл-чĕвĕл сасăпа ачашшăн чĕнчĕ ăна. Ача утиялне сирчĕ, хăлхине чăнк тăратрĕ. Чуна уçăлтаракан кăмăллă сасă каллех илтĕнчĕ:

Чу! кайрăм, чу! килтĕм,
Чуман тулли çу илтĕм.
Пĕчĕк Петюк, Петĕркке, тăр-р!

«Кам-ши ку? Чечекпи мар-ха. Вăл манран «Петĕйкке» тесе тăрăхлать. Ку юрăçи вара йĕкĕлтешмест», – шухăшларĕ ача. Пăх-ха, Петюкăн мăрт-мăкăрчăк тути сисĕнмесĕрех йăл кулчĕ. Эреветлĕ сасă чĕмсĕре чĕм кĕртет-ши?

Петюк хăй те чĕлхи çине килнĕ юрра юрласа пăхрĕ. Мĕн тумалла-ха унăн, енчен те чĕлхи «р» сасса ниепле те çавăрттарса кăлараймасть пулсан... Юрлама та юрамасть-им вара? Кама мĕн ĕç? Тупăннă «ăй» купташкисем... «Ăй çук, вăй çук, тытса пăхма май çук. Э-э-э...» – чĕлхе кăларсах такама витлерĕ ача. Шăм картари тиха пек чĕлхи пулчĕ шăпăрттин, йĕкĕр мăйăр пек чăп тути чăмăртанчĕ чăпăрттин.

Сарпи те чипер – хайхи юрра юри ачасем илтмелле Петюк пек селĕппĕн юрлать тăрăхласа. «Тупăннă хĕй пĕйчи. Сайпи – сакăлти,

сайкаланчăк пакăлти», – такмакларĕ ача кӳренĕçлĕн. Каллех пуç урлă витĕнсе выртрĕ. Никам та пырса ан çулăхтăр. Шăна тивнипех у-у! уласа яма хатĕр вăл. Тивмен куштана тивме хушман. Ан тивĕрех...

Çав вăхăтра паçăрхи шăнкăрти сасă каллех уçă чӳречерен янăраса кĕчĕ:

У-ӳ! терĕм, ши! терĕм,
Йĕрмĕш пасар-ши терĕм.
Ыйхă купи, мăртăкки, тăр-р!

«Кам ăна «ыйхă купи» теме хăять-ха? Петюк çывăрмасть-çке. Юри çеç тăвать», – сăмсине нăш-нăш тутарса мăкăртатать ача. Анчах янкăс саслă палламан йыхравçă –хăлха çумĕнчи шăнкăрма пекех! – юнтармăш Петюкран хăпма шутламасть.

Уй урлă ут ятăм,
Ярăм пуçĕ, чу! ярăм.
Тăп-тăпăркка урхамах, тăр-р!

Петюкăн çав чаплă «тăп-тăпăркка урхамаха» курасси килчĕ. Вăл вырăн çинчен çĕкленчĕ те чӳречерен кармашса пăхрĕ. Акă мĕн асăрхарĕ ачан ĕнчĕ-пĕнчĕ йăлтăркка куçĕ.

Çумăр çума чарăннă ĕнтĕ. Пӳрт умĕнчи шелттĕм-шелттĕм йăмра урлă çичĕ тĕрлĕ хăйăклă асамат кĕперĕ карăннă, лапсăркка йăмра çав илем ытамĕнче мăнаçлăн саркаланать. Йăмран чи каçрашка турачĕ çинче йăм хура йăпăркка кайăк ларать. Палларĕ ăна ача, ятне кăна аса илеймерĕ. Кайăкĕ ку – вашават, саркаланчăк ик çунат. Юрлать канма пĕлмесĕр:

Чу! вĕçрĕм, чу! кĕтĕм,
Çунат вĕçĕпе çу сĕртĕм.
Урхамахĕ тăпăртик,
Уй-уй урлă тĕпĕлтик.
Пĕчĕк Петюк, Петĕркке, тăр-р!

Петюк хăйĕн чĕлхи-çăварĕ çемçелнине туйрĕ. Кайăк юрри, чăнах та, сар çу пулса тумларĕ-ши?

– Шăнкăрч! – кăшкăрса ячĕ ача. «Р» сасă та уçăмлăнах тухрĕ.

Пăх та кур, кăмăлĕ те, чĕлхи те уçăлчĕ унăн. Юратнă юррине тинех çăвар тулли юрласа ячĕ вăл:

Асамат кĕперĕ сар хĕр пек хитре-çке,
Юлчĕ ун чиперĕ пирĕн сăн-питре.

«Ур-р-ра! Текех мана никам та кӳрентереймĕ. Эпĕ селĕп мар. Тавах, шăнкăрти шăнкăрч, катертнĕ «р» сасса тавăрса панăшăн», – çакăн пек шухăш-туйăмпа Петюк вăр-вар тумланчĕ те урамалла вирхĕнчĕ. Ну, тĕлĕнтерĕ вăл паян çаврака çăмхаллă, мăшăр куç-хăлхаллă, шĕвик çăварлă çум çаккисене. Тĕлĕнтеретех...

2004.

Людмила Смолина

САПКА ЮРРИ

Канлĕ каç килет иккен
Çăлтăрсем çутса.
Çывăр, пĕчĕк чиперккем,
Çывăр, лăплансам.

Ыйхăлать лаштра йăмра,
Тĕлĕрет урам.
Кăтăш пулнă пур тавра, –
Çывăрсам, ачам.

Куçне хупрĕ ĕшенсе
Пукане пике.
Анаслаççĕ теттесем.
Çывăрах, пепкем.

Ыйха кайрĕ сар автан.
Ярăнсам, сăпка.
Çывăр эс те, маттурлан,
Çывăр, чĕппĕм, кан.

2015.

Людмила Николаева

СЫЛТĂМ ТАТА СУЛАХАЙ

Акă сылтăм, сулахай.
Сылтăм ал ĕçлет пĕрмай.
Сулахайĕ кахалрах,
Вăл канасшăн ытларах.
Сылтăм ал çырать, сăрлать,
Çул çине тух – сасăлать.
Итлеменнине юнать,
Ыр çынна, кур, ал парать.
Çавăнпа-ши сулахай
Кашăк тытма вăтанать?

2015.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. М. Трубинан «Ача чухнехи» повеçне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000045/index.html
2. М. Трубинан «Вупăр» калавне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: https://www.chuvash.org/lib/haylav/4858.html
3. М. Ухсайăн «Кăра çилсем» повеçне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать:

http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000059/index.html (1 кĕн.);
http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000060/index.html (2 кĕн);
http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000061/index.html (3кĕн).

Ĕçсемпе ыйтусем

! ***Вĕреннине аса илетпĕр***

«Литература юмахĕ» жанра ăнлантарса парăр. Литературăри тĕслĕхсене аса илĕр.

***** ***Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Чăваш литературинчи пĕрремĕш ача-пăча калавĕсен авторĕ тесе кама каламалла? Çав тапхăрта ĕçленĕ çыравçăсенчен тата хăшĕсене ача-пăча хайлавĕсен авторĕ теме пулать?
2. Ача-пăча литературинче мĕнле темăсем çивĕч? Мĕншĕн?

3. Ача-пăча литературин тĕп сăнарĕ кам пулса тăрать? Халиччен вуланă хайлавсене аса илсе вĕсене ушкăнлăр: ĕçченсем, кахалсем, тӳр кăмăллисем, ултавçăсем тата ыт.те.

4. М. Ухсайăн «Кăра çилсем», Уйăп Мишшин «Ачалăх кунĕсем», М. Трубинан «Ача чухнехи» повеçĕсене мĕн çыхăнтарса тăрать?

5. Трубина Мархвипе Уйăп Мишшин чăваш ача-пăча литературине аталантарас ĕçри тӳпине палăртăр.

6. А. Лазарева калавĕсен теми. Унăн хайлавĕсенче ачасен кулленхи пурнăçне сăнласа парас çыравçă ăсталăхĕ мĕнре курăнать?

7. Н. Ишентей хайлавĕсенчи ачалăх тĕнчине сăнарлакан мелсем.

8. «Çилçунат», «Тетте» журналсем хăш вăхăтран тухса тăраççĕ? Вĕсенче хăш ӳсĕмри ачасем валли хайлавсем пичетленеççĕ?

9. Л. Смолина, Л. Николаева, В. Николаев кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă сăввисене пĕтĕмĕшле мĕнле хаклама пулать? Мĕнле пĕрпеклĕх пур çак сăвăсенче? Уйрăмлăхĕ мĕнре?

10. В. Николаевăн ача-пăча прозинчи ĕçĕсем. Жанр хăйне евĕрлĕхĕ.

¤ *Пултарулăх ĕçне тăватпăр*

«Манăн пĕчĕк тус – Çăмха» ятпа кĕçĕн çулсенчи ачасем валли пĕчĕк калав е сăвă çырăр.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Мефодьев А.И. Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен ача-пăча литератури. Шупашкар: Чăваш патш. пед. ун-чĕ, 2002. 67 с.

Мефодьев А.И. Чăваш ача-пăча литератури 20-30-мĕш çулсем. Шупашкар: Чăваш патш. пед. ун-чĕ, 2010. 143 с.

Софронова И.В. Чăваш ача-пăча тата çамрăксен литератури. Шупашкар: Чăваш патш. ун-чĕ, 2012. 172 с.

♦ *Литература тĕпчевĕнчи пĕрремĕш утăм*

«Çилçунат», «Тетте» журналсен пĕр-пĕр номерне илсе хак парăр (рецензи çырăр).

♫ *Проектсем*

1. Чăваш литературинчи кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă хайлавсен пуххине (каталогне) йĕркелĕр (*ушкăнла тĕпчев*).

2. Чăваш ача-пăча литературинчи пĕрешкел идейăпа тема, конфликтпа сюжет, сăнарсемпе проблемăсем (Марфа Трубина, Хумма Çеменĕ, Александра Лазарева, Николай Ижентей, Ева Лисина) *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

3. Анатолий Ыхран ача-пăчасем валли çырнă хайлавĕсем *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

4. Мария Ухсай драматургийĕн хăйне евĕрлĕхĕ: тĕп шухăш, конфликт, сăнарсемпе сюжет *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

5. Геннадий Волков (Кашкăр Хуначи) хайлавĕсенчи ӳкĕт сăмахĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Ω *Пăхмасăр вĕренетпĕр*

Людмила Смолинан «Сăпка юрри» сăвви.



ЧĂВАШ КУЛĂШПА ПИТЛЕВ ПРОЗИН ХĂЙНЕ ЕВЁРЛЁХЁ

Ăслăлăх аниичен

«Кулăша, паллах, хăй тĕллĕн çеç тĕпчеме çук, ăна халăх ăс-хакăлĕпе культурин, сăнарлă шухăшĕн наци контексчĕ енчен те сăнамалла. Кашни халăхăн сăмах культури яланах хăйĕнле, ытти нацисен сăмахлăхĕнчен урăхла сăпатлă. <…> Чăваш цивилизацийĕ те шӳтрен-камитрен, юморпа сатирăран пăрăнман. Ытти халăхсем хушшинче хăйсене (наци представителĕсем пек курса), чăваш ятне-чысне упрама вĕсен ухмаха пенĕ пек тума тивнĕ, çапла çын хăйĕн этем сăвапне, халăх ятне çӳле çĕкленĕ, çав ятпа ĕмĕрсем витĕр тухнă. Çав камитлĕхре, мыскаралăхра, ухмаха пенинче мĕн паянччене-хех, чăваш халăхĕн историллĕ, политикăллă, (патшалăхлă) ăнĕ пытарăнса упранать. И. Тăхти хайлавĕсене тимлĕн, тарăннăн вулакан çакна асăрхĕ: чăвашсен историллĕ кун-çулĕ мĕнле философи хывнă-ши? Çакăн пирки пуç ватса писатель питĕ нумай шухăшлать. Мĕнле халăх-ши вăл чăвашсем? Историллĕ миссийĕ мĕнле вĕсен? Ытти халăхсем хушшинчи выранĕ епле? Халăхăн хăйĕн наци тивĕçне упрамалли мĕнле çул-йĕр пур?.. Вуншар ыйту хускатнă Тăхти хăй прозинче, вĕсен вăрттăне çине тăрса шыранă: ухмаха пенин философиллĕ пĕлтерĕшĕнче, халăх шӳчĕн вăлтмăшĕнче, Çул сăнарĕнче, камитлĕ лару-тăрура, тĕрлĕ культура, тĕрлĕ халăх çыннисене «мыскараллăн» шайлаштарнинче т. ыт. те.» *(Г.И. Федоров, филологи докторĕ).*

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Тăван (чăваш) литературăри камит жанрĕн хастар аталанăвĕ XX ĕмĕр пуçламăшĕ çине ӳкнĕ. Вăл халăх сăмахлăхĕпе вырăс литературин тухăçлă витĕмне пула чăннипех кулăшпа тăрăхлав литератури çуралнипе çыхăннă. Тĕрĕссипе вара ку вăл каçма вăхăт пулнă. Чăваш илемлĕ сăмахлăхĕнче камит пайрăмĕсем XIX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче Чăваш Хвети, Якур сăвăçсен, çак ĕмĕрĕн варринче С. Михайлов (Янтуш) пултарулăхĕнче тупăнаççĕ. С. Михайлов (Янтуш), тĕслĕхрен, ӳкĕт йĕплевĕпе тата социаллă тăрăхлавпа анлă усă курнă. XIX ĕмĕр вĕçĕнче вара камитпе тăрăхлав туртăмĕ М. Федоров, Г. Кореньков, Якурпа Хветĕр Турхансен, Г. Тал-Мăрса, И. Яковлев тата ыттисен хайлавĕсенче палăрăнать. Тĕпчевçĕсем (П.Н. Метин) асăннă тăрăх, çак

тапхăр чăваш пĕлӳлĕхĕ çуралнă, çĕнĕ культура аталанăвне йĕркеленĕ вăхăт пулнă.

Обществăра пулса иртекен социаллă тата политика ыйтăвĕсемпе хирĕç тăрăвĕсене тӳррĕн те уççăн калама май пулманнине кура сăвăçсен ытарлă сăмах формисене шырамалла пулнă. Çапла майпа кулăшпа тăрăхлав литературине тӳррĕн сивленисĕр пуçне юптарса каланипе символсем кĕнĕ. Çыравçăсем (И. Юркин, Н. Полоруссов (Шелепи), Тайăр Тимкки, Г. Кореньков, Якурпа Хветĕр Турхансем тата ыт. те) хăйсен пултарулăхĕнче вĕчĕх витлевпе тата чăваш халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă тăрăхлавпа тăтăш усă кура пуçланă.

Тăван (чăваш) литературăри кулăшпа питлев хайлавĕсен чăн ӳсĕмĕ вара ХХ ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри çине килет. Çак пулăм чи малтанах «Капкăн» журнал туха пуçланипе, Иван Мучи тата Илле Тăхти çыравçăсен пултарулăхĕпе çыхăннă.

Чăвашсен пĕрремĕш кулăшпа тăрăхлав журналĕ «Капкăн» 1925 çултан чăвашла, 1992 çултан чăвашла тата вырăсла тухса тăнă. Малтанхи вăхатра вăл «Канаш» хаçатăн хушма кăларăмĕ пулнă. Журнала йĕркелекенĕ Иван Мучи пулнă. Вăл çавăн пекех 15 çул хушши журналăн яваплă секретарĕ пулса ĕçленĕ. Тĕрлĕ çулсенче журналăн ятарлă хушма номерĕсем тухса тăраççĕ: 1933-1934 çулсенче ял-хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăннă кăларăмсем – «Капкăн акара», «Капкăн вырмара»; 1966-1992 çулсенче литература кăларăмĕ – «Капкăн библиотеки». 2017 çултан «Капкăн» журнал пачах тухма пăрахнă.

1920-1930 çулсенчи литературăра (И. Мучи, И. Тăхти, И. Ахах, Г. Тал-Мăрса, Хумма Çеменĕ, П. Митта тата ыт.) социализм тума чăрмантаракан пĕтĕм обществă шайĕнчи тата кулленхи пурнăçри пархатарсăр ĕçсене тăрăхласа куласси вăйланнă. Çак çулсенче çĕнĕ питлевлĕ сăнар – тĕрлĕ шайри совет чиновникĕсен хушшинчи бюрократ, пĕчĕк ăнлануллă тата хĕсĕк тĕнче курамлă çынсен сăнарĕ литературăна кĕнĕ. Хайлавсенчи сăнарсем – пурнăçри пĕр-пĕр çивĕч ыйтăва татса пама тăрăшса кĕтмен çĕртен кулăшла лару-тăрăва лекекен ялта е хулара пурăнакан уйрăм ушкăн çыннисем пулса тăнă. Ытларах чухне хайлавра кивĕ йăла-йĕркепе çĕннин хирĕçĕве ӳкерĕннĕ, çавна май йĕкĕлтевлĕ е хĕрхенĕçлĕ кулă çуратакан ăнлантарса пама йывăр лару-тăрусем, анекдотла пулăмсем çуралнă. Эрех-сăра сиенлĕхĕ мала тухнă.

Илемлĕх мелĕсене кура çак тапхăрти кулăшпа тăрăхлав калавĕсем ХХ ĕмĕрти чăваш литературин чи паха тĕслĕхĕсем пулнă. Вĕсем жанр йĕркелекен пулăмсен нумай енлĕхĕпе тата хăйне евĕрлĕ сюжет тăвассипе уйрăлса тăраççĕ. Хайлаври сăнарсен хăтланчăкне хăйне майлă та каварлăн кăтартма авторсем час-часах çыру, дневник, тухса

калаçни, пулмасла ĕç тата ыт. мелсемпе усă кураççĕ. Нумай çыравçăсен (çакă уйрăмах И. Мучи пултарулăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ) кулăш шыравĕ мыскара, фельетонла калу тата пароди çинче никĕсленет.

1941-1945 çулсенче чăваш сăвăçисемпе прозаикĕсен (И. Ивник, Я. Ухсай, П. Хусанкай, Уйăп Мишши, А. Эсхель тата ыт.) хайлавĕсенче камитлĕх чи малтанах фашистсене хирĕçле питлевре аталаннă. Ку вăхăтри литературăра тарăн патриотла туйăмсем, тарăху, курайманлăх тата нимĕç фашисчĕсем çине йĕрĕнсе пахни мала тухнă.

Чăваш илемлĕ сăмахлăхĕнчи кулăшпа питлев литературин аталанăвĕ XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çĕнĕрен амаланса каять. Ку тапхăрта пароди, эпиграмма, памфлет, фельетон, трагикомеди пек кулăш жанрĕсем вăй илет. Çыравçăсен (Л. Агаков, Н. Айзман, С. Шавли, А. Кăлкан) хайлавĕсен тематики кулăш объекчĕ истори тапхăрĕн пулăмĕсем пулса тăнине кăтартаççĕ. Эпикăлла хайлавсенчи кулăшпа камитлĕхе тăрăхлав, сăмах вăййи, кĕтмен çĕртен сиксе тухакан кулăшла лару-тăру е хайлав шăнăрĕнчи кулăшпа анекдот, такмак тата ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем, хире-хирĕçле сăнарсем, хушаматсемпе ятсен шӳтлĕ вылявĕ уçса параççĕ.

XX ĕмĕр вĕçĕнчи камит жанрĕсенче кăмăл-сипетпе социаллă экономика ыйтăвĕсем мала тухаççĕ. Политикăлла тăрăхлав хăйĕн çивĕч сăннине бюрократсене, йăпăлти тата наян, ĕçке ярăннă çынсене, обществăри ытти çитменлĕхĕсене хирĕç тĕллет. Вăл улталаса пысăклатса кăтартнине тата харампырлăха мăшкăласа кулать, тăван чĕлхе тасалăхĕшĕн кĕрĕшет.

Çак вăхăтри сăвăлла питлев тематики социаллă политика ыйтăвĕсемпе тачă çыхăнать, çавăнпа кунта публицистикăлăх вăйланать. Питлевлĕ сăвă тĕрлĕ стиль формисенче палăрăнать, тăрăхлав валли çĕнĕ майсем уçса парать. Акă, юптару жанрĕ, ăса вĕрентекен ӳкĕт йăлинчен тухса, ытарлă шухăш анлăшне сарать. Сюжечĕпе кĕске тата шухăшĕпе хĕсĕк пулнине пăхмасăрах юптару пурнăçри лайăх мар пулăмсене туллин кăтартма туртăнать, социаллă çивĕчлĕхпе палăрса тăрать.

Лашман Çтаппанĕ (*Авксентьев Степан Митрофанович, 1895-1986*) Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă çыравçăсен йышĕнче тăрать.Унăн пĕтĕм пурнăçĕ хаçат-журнал редакцийĕсенче, радиора ĕçлесе иртнĕ. Çав вăхăтрах чăваш литературине çĕнĕ хайлавсемпе пуянлатас тесе сахал мар тăрăшнă. Вăл çамрăк чухнех хăй нумай пурăнасса шанса хăйне валли Лашман текен хушма ят (псевдоним) илнĕ. «Петĕр патша валли карап йывăçĕ хатĕрлекен патвар чăвашсене лашман тенĕ. Эп çавсем пек пулма шутлаттăм. Тăван халăх

валли нумай ырă ĕç тăвас килетчĕ», – çапла каласа парать Лашман хăйĕн литературăри хушма ячĕ пирки.

Литература ĕçне пулас çыравçă шкулта вĕренĕ чухнех явăçма пăхать, сăвă çырса аппаланать. 1918 çулта Чĕмпĕр кĕпернинче туха пуçланă «Çĕнĕ пурнăç» чăваш хаçачĕн пĕрремĕш редакторĕ пулса тăрать вăл. 1920 çултан вара, Шупашкара килсен, «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме тытăнать. Çыравçăн пĕрремĕш хайлавĕ те – «Пирĕн çул» ятлă сăвви – 1921 çулта шăпах çак хаçатра пичетленет.

«Канаш» хаçатра Лашман тăлмач, пай заведующийĕ, редакци секретарĕ пулать. Пĕр тапхăр РОСТА тата ТАСС корреспонденчĕ, радиокомитетăн литературăпа музыка передачисен редакторĕ пулса ĕçлет. Аслă Тăван çĕршыв вăрçи хыççăн «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче тăрăшать.

1937 çулта ăна репрессиленĕ, 1948 çулччен вăл ГУЛАГ лагерĕнче пулнă, 1955 çулта вара айăпран тасалса тухнă.

Лашман Çтаппанĕн хайлавĕсен тĕп палли – кивĕ саманана çĕнни хăюллăн çĕнтернине, чăвашсем Октябрь революцине граждан вăрçине хутшăннине, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешнине сăнласа пани. Унăн паллăрах произведенисем шутне «Икĕ тĕнче», «Савни енчĕкĕ» поэмисем, «Хура çăхансем», «Тĕттĕм кĕтесре», «Тамаша», «Лешхайхисем», «Ылтăн хĕç» пьесисем, «Иван Космовский» повеçĕ кĕреççĕ.

Лашман чăваш культуринче прозаик, публицист тата драматург пек йĕр хăварнă. Хăй пултарулăхĕн пуçламăш тапхăрĕнче вăл куçару ĕçĕнче ăнăçлă тăрăшнă. Çыравçă М. Горький («Челкаш» калавне), А. Серафимович («Железный поток» романне), А. Блок («Двенадцать» поэмине), А. Чехов, М. Твен, Я. Гашек тата ыттисем çырнисене куçарнă. Унăн К. Иванов, Н. Шупуççынни, Ç. Элкер, И. Мучи пирки аса илсе çырнисем уйрăм чĕлхе илемĕпе тата сĕткенлĕхĕпе палăрса тăраççĕ.

Иван Мучи (*Илларионов Иван Иванович, 1895-1946*) чăвашсен профессионаллă театрне йĕркелесе яракансенчен пĕри. Вăл чăваш культурин нумай пайĕнче хăйĕн ятне хăварнă: актер, тĕпчевçĕ, литературăпа театр критикĕ, журналист пулнă. Тĕрлĕ вăхăтра «Чăваш ен», «Канаш» хаçатсенче вăй хунă. Çапах та пурте ăна «Капкăн» журналăн ылмашмасăр ĕçлекен секретарĕ тата редакторĕ пек пĕлеççĕ (1925-1940).

Чăваш литературинче И. Мучи историллĕ тата кулăшпа питлев прозин ăсти пек палăрăннă («Чышкă тытăмĕ», «Хурăнлă çул», «Турă ячĕпе, патша хушнипе» тата ыт. те). Вăл нумай камит жанрĕсемпе (кулăшпа питлев калавĕ, фельетон, юптару, анекдот, шӳт, памфлет),

очеркла публицистика прозинче (репортаж, очерк тата ыт. те) ăнăçлă ĕçленĕ. Унăн хайлавсенчи кулă мелĕсем питех те анлă: йĕплевлĕ тăрăхлавран пуçласа кăра сарказм таран. Пĕтĕмĕшле кунта килĕшӳсĕр сăнарсене акăш-макăш ӳстерсе кăтартасси мала тухать. Хăш-пĕр чух çакнашкал сăнарсем карикатура шайнех лараççĕ. Иван Мучин куçару ĕçĕнчи тӳпи те пĕчĕк мар, вăл вырăс литературин нумай классикĕсен (уйрăмах А. Чеховăн) хайлавĕсене чăвашла куçарнă.

Кулă ăстин пĕрремĕш ĕçĕ «Хыпар» хаçатра 1917 çулта пичетленсе тухнă. Литература анинчи пĕрремĕш хайлавĕ – «Юмăç карчăк» сăвă – 1922 çулта «Канаш» хаçатра пичетленнĕ. Сăвă çырассине И. Мучи каярах та хăварман, вĕсенчен ытларахăшĕ такмаксем пулнă. Çыравçăн пĕрремĕш кĕнеки вырăсла тухнă. Ку вăл «Комсомольская пасхальная заутреня» (1924) ятлă комсомол уявĕн инсценеровки пулнă.

Çыравçă хайлавĕсен пĕрремĕш чăвашла пуххи «Колхоз çулне тухнă чух» 1931 çулта пичетленнĕ. XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче пичетленнĕ (тĕслĕхрен, «Хĕрлĕ кулăш», «Йĕплĕ калавсем», «Кулă-юмах – çуллă çăмах», «Кулăшла калавсем») кĕнекесенче пуринче те çыравçă тăван халăхăн иртнĕ кунĕсенчи тĕттĕм енĕсене, кивĕ йăли-йĕркисене питлесе çĕнĕ, совет кăмăл-сипетне çирĕплетнĕ.

Кулăшпа питлев жанрĕ чи малтанах çыравçă пурăнакан самантри çитменлĕхсене асăрхаса питленине шута илсен çакнашкал хайлавсенче историллĕ вăхăт палли уйрамах вăйлă пулнине палăртмалла. Çавăнпах та пулĕ Иван Мучи хайлавĕсенче те хăй вăхăтĕнчи ыйтусем мала тухаççĕ. Вĕсен шутĕнче, сăмахран, колхоз йĕркелес ыйту. Çавăнпа та унăн 1930 çулсенчи хайлавĕсенче хресчене çĕнĕлле пурăнма вĕрентессин йывăрлăхĕсем, кулаксен сăтăрлăхĕ пирки калани нумай. Унсăр пуçне мещенлĕхе, бюрократийе тата ĕçе сăлтавсăрах вăраха тăсса пынине хирĕç кĕрĕшесси, культурăри улшăнусем, тĕне хирĕçлени те И. Мучи пултарулăхĕнче хăй вырăнне тупнă.

Кулă ăсти шӳтлĕ калавсем кăна мар, ытти литература стилĕсемпе те хайлавсем çырнă. Акă, Аттелĕх вăрçи вăхăтĕнчи калавсенче («Салтыков-Щедрин тата Вильгельм Эльман», «Фрицсен эрни» тата ыт. те), кăмăллă шӳтпе тăрăхлав пуррине пăхмасăрах, синкерлĕ вăхăт паллисем мала тухаççĕ, çавăнпа та кунта трагедилĕх пысăк. Пичетленмен «Ватă кушак» калавăн эпилогĕнче вара этем пурнăçĕн черченлĕхĕ пирки тарăн философиллĕ пĕтĕмлетӳ туни малта.

Иван Мучин чĕлхи хăйне евĕрлĕ пулнине уйрăммăн палăртмалла. Унăн хайлавĕсенчи кашни сăнарăн хăйне майлă, уйрăм чĕлхе. Çак чĕлхере чăваш сăмахĕсем вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсемпе, ĕç

хучĕсен, чиркӳн авалхи славян, ĕçлĕ, профессиллĕ тата политика лексикипе пĕрлешнĕ. Чи пĕлтерĕшли вара И. Мучи чĕлхинче тӳррĕн е тӳррĕн мар халăхăн тĕнчекурăмĕ, нацин темĕнле тĕнĕлĕ палăрать. Чи малтанах ку вăл – вăлтса, теме систерсе, ухмаха персе калаçни. Çавăнпа та пулĕ çыравçăн ытарлă, метафорăла сăмах çаврăнăшĕсемпе сăмах майлашăвĕсем чăваш халăх чĕлхишĕн кăтартуллă, çирĕпленсе ларнă чĕлхе мелĕсене аса илтереççĕ. Çав вăхăтрах унăн çыру манерĕ оригиналлă, ăна тӳрех палласа илме пулать.

Литература теорийĕ

Тĕнче тата вырăс литература пĕлĕвĕнче **питлев** (сатира) тата **кулăшпа шӳт** (юмор) терминсем – пĕр-пĕрне хирĕç тăракан ăнлавсем. Çапла, питлев вăл – обществăпа çынсен çитменлĕхĕсене хăйне майлă майсемпе (парадокс, гипербола, гротеск, пароди, сарказм, аллегори) сивлесе тата мăшкăласа кулса кăтартакан литература тĕсĕ. Кулăшпа шӳт вара – камитлĕх тĕсĕ, çитменлĕхсене кунта питлеври пек хаяррăн мăшкăласа кăтартмаççĕ, пулăмсен е çынсен çитменлĕхĕсене ăшшăн палăртса вĕсем нумай чух пирĕн лайăх енĕн тăсăмĕ е тӳнтер енĕ çеç пулнине аса илтереççĕ. Питлев жанрĕ авалхи рим литературинче çуралнă. «Сатира» сăмах латин сăмахĕ, мифологинчи «çурри турă-çурри чĕрчуна» пĕлтерекен сатир сăмахран пулса кайнă. Малтанхи тапхăрта питлев тесе пысăках мар сăвва каланă. Чи анлă сарăлнă питлев жанрĕ – политика питлевĕ. Питлев те, кулăшпа шӳт те кулăпа палăрса тăраççĕ. Анчах та çак кулă пĕлтерĕшĕ вĕсенче тĕрлĕрен: кулăшпа шӳтшĕн кулă – тĕллев, çыравçăн вулакана култарса савăнăç кӳмелле; питлевшĕн кулă çитменлĕхсене палăртмалли мел, çын кăлтăкĕсене тата социаллă усал курăнлăхне питлемелли хатĕр.

Чăваш литературинчи кулăшпа тăрăхлав хайлавĕсем халăхăн кулăш йăли-йĕрки çинче никĕсленеççĕ. Çапла халăх культуринче шӳт чылай чух трагедипе, нацин аптраманлăх философийĕпе çыхăннă. Чăваш çынни унпа (шӳтпе камитлĕхе) шӳтлĕ мар япаласем çинчен каланă чух та усă курать. Çавăнпа та халăх шӳчĕ нумай чухне йывăрлăха çĕнтермелли мел пулса тăрать. Шăпах çакна М. Федоров, И. Тăхти, И. Мучи хайлавĕсенче курма пулать. Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем палăртнă тарăх (Г.И. Федоров), çак пулăм К. Иванов пултарулăхĕнче те курăмлă. Акă, унăн «Тимĕр тыллинчи» тухатмăш карчăкăн гротескла сăнарĕ кăтартуллă: хитре те сăпайлă Чĕкеç пурнăçне пĕр шикленми пĕтерет вăл, çамрăк хĕр валли пĕр шанăç хăвармасть. «Нарспи» поэмăра та çак енчен тĕслĕхсем пур. Михетер килĕнчи хĕр туйне вилĕм туйĕ теме пулать. Çавăнпа та хăнасем «вăйран тухса сикеççĕ», çамрăк пуçне

çиекен усала çул парса ташлаççĕ. Ку та вăл, Г.И. Федоров ăнлантарнă тăрăх, – гротескланă «камитлĕх».

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Иван Мучи

КĂШКĂРУ ПАЛЛИ

Калав

Иван Петрович аллине ручка тытса çамки тирĕсене картлантарчĕ те умне сарса хунă шур хут çине çырма пуçларĕ.

«Хĕрарăмсен кунĕ» тесе васкамасăр пысăк саспаллисемпе йĕрлесе тухрĕ крахвит тунă хутăн малтанхи йĕрки çине.

Унтан «пот полька» каснă çӳçне пушă аллипе утюкласа илчĕ те, малалла мĕн çырас-ши тесе, чернил кĕленчи çине чылайччен пăхса тăчĕ.

«Аха!» Тупрĕ.

«Кашни çулах мартăн 8-мĕшĕнче эпĕр хĕрарăмсен кунне уявлатпăр. Хĕрарăмсене социализм тăвас ĕçе хутшăнтармалла... Ĕлĕк хĕрарăмсем капитализм пусмăрĕнче те, упăшки пусмăрĕнче те...» Малалла мĕн çырассн пуçран вĕçсе тарнă.

Иван Петрович сиксе тăчĕ те пирусне тивертрĕ васкаса, пӳлĕм тăрăх васкаса утса çӳреме тытăнчĕ шухăш шырама.

– Шуйттан председателĕ! Эсĕ, тет, профсоюз членĕ. Халăх ĕçне ермелле. Хĕрарăм кунĕ валли статья çырса пар-ха тет. Сан стена хаçату çине çырмасăрах, манăн ĕççем нумайййне пĕлмест. Хам партире те тăмастăп, çапах çыртарать...

Каллĕ-маллĕ уткаласа çӳресе, чӳрече патне пырса тăчĕ. Çат!.. Çат!... Çат!... тумла юхать чӳрече янаххи çинчен сăрланă урай хăми çине.

– Ма чӳрече çинчи тутăрна пăрмастăн! – тесе ура тапса пычĕ тĕпелте ача кĕписем çуса тăракан арăмĕ патне.

– Ерçеймерĕм-çке! Асаилтĕн пулсан, хăвăнах пăрмаллаччĕ, йывăр ĕçех мар, – терĕ арăмĕ çаннипе çамки çинчи тарне шăлса илсе.

– Хĕрарăм ĕçне ĕçлеме авланман эпĕ, – тесе хăтăрса тăкрĕ Иван Петрович.

Каллех сĕтел умне ларса çырма пуçларĕ:

«Хĕрарăма ирĕке кăларас тесен, кухньăран хăтармалла... пĕрлешӳллĕ пурнăçпа пурăнмалла: яçлĕсем уçмалла, пĕрле апатланмалли столовăйсем уçмалла, унсăрăн...»

Столовăй çинчен асаилнĕрен, апат çиес килсе кайнă Иван Петровичăн.

– Мĕн паян апат çитерместĕн! Кăнтăрла иртни пĕр сехет çитет. Ман канмалли кун тесе, ĕçлемелли кун мар тесе, апат çитересшĕн маар-и-ха мана эсĕ? – тесе кăшкăрчĕ арăмне.

Арăмĕ:

– Çитересчĕ те, пиçеймерĕ-çке! – терĕ йăвашшăн. – Ара, ирхине пульницана карăм та, кăнтăрла иртсен тин таврăнмалла пулчĕ, хăвах пĕлетĕн-çке.

– Çиес килет ман, çиес килет! – кăкăрне чышса пырать Иван Петрович арăмĕ патне.

– Ытла выçса карăн пулсан, столовăя кайса çи!

– Столовăйне çӳреме авланман эпĕ!

Каллех ларчĕ çырма. Аллине ручка тытнăччĕ, алăк сасси илтĕнчĕ. Письмоносцă килнĕ. «Известия» хаçат, «Красная Нива» журнал тата «Капкăн» тыттарчĕ. Тыттарчĕ те шухăша кайрĕ.

– Эсĕр «Работница» журнал çырăнса илтĕр-и çак? Манса карăм. Кунта пĕр номер пур, те сирĕнччĕ? – тесе ыйтрĕ письмоносцă.

– Пирĕн мар, – тесе ответлерĕ Иван Петрович.

– Çав журнала çырăнса илмеллеччĕ те, темшĕн илсе памастăн-çке, – терĕ письмоносцă кайсан Иван Петрович арăмĕ.

Иван Петрович нимĕн те чĕнмерĕ, сиввĕн çеç пăхса илчĕ.

«Хĕрарăма çутта кăлармалла», – çырать малалла, Иван Петрович. – «Хаçат-журналсем вулама вĕрентмелле...».

Тепĕр пӳлĕмре вылякан 5 çулхипе 3 çулхи ачисем юрлама тытăнчĕç. «Воспоти помело!» – тесе кăшкăраççĕ. – «Воспоти помело!...»

– Кам вĕрентрĕ сирĕ кун пек юрлама? – алăкне уçса хăтăрса тăкрĕ ачисене Иван Петрович.

– Кам вĕрентет вĕсене! – сассине парать кухньăран арăмĕ. – Хамăр килте çук чухне час-часах Матроня юлкалать. Çав вĕрентнĕ пуль. Ача площадкине янă пулсан, ун пек юрăсем илтес çукчĕ те, ямарăн та.

– Ачасене яслĕре усрама авланман эпĕ! – терĕ хирĕç Иван Петрович.

Каллех çырать:

«Хĕрарăмсене производствăна ертмелле. Хапрăк-савăтсенче ĕçлекен хĕрарăмсен процентне ӳстермелле...»

Кăна çырнă хыççăн малалла мĕн çырасси çинчен шухăшланă чухне, хăй арăмĕ кĕркунне «Труженица» эртеле çĕвĕçе кĕресшĕн пулнине асаилет. Шалуне те лайăх тӳлетчĕç. Ямарĕ ун чухне Иван Петрович арăмне çĕвĕçе. Килте кам ĕçлет терĕ.

– Чăнах та, ун чухне производствăна янă пулсан, халĕ килте кам ĕçлетчĕ-ха ĕнтĕ, – тесе шухăшлать Иван Петровичăн тăнлă пуçĕ халĕ те.

Çырчĕ, çырчĕ. Каллех шухăшĕсем сӳрĕлсе кайрĕç. Сӳннĕ пирусне тивертрĕ те, каллех каллĕ-маллĕ утса, çырмалли шухăшсем пӳлĕм тăрăх шыраса çӳреме тытăнчĕ. Ним ĕçсĕрех кухньăна тухса арăмĕ мĕн тунине пăхса тăчĕ пĕр самантлăха.

– Мĕн ку? – терĕ сĕтел çинче выртакан хута курса.

– Повестка. Ыран собрание чĕнеççĕ.

– Мĕнле собрание?

– Хĕрарăмсен собранине. Хĕрарăм кунĕ ячĕпе пулать, тет....

– Каймастăн ыран.

– Ма?

– Эпĕ кинона каятăп.

– Кинона кайма собрани пĕтсен те пултаратăн.

– Ачасене кам пăхать? – кăшкăрса тăкрĕ хисеплĕ Иван Петрович.

Аха, çырмалли шухăш тупăнчĕ. Тупăннă шухăшсене Иван Петронич каллех хут çине ӳкермĕ ларчĕ.

Ĕç малалла кайрĕ. Çур сехетрен статья хатĕр те. «Кухньăран хăтăлнă хĕрарăм сывă пултăр» тенипе пĕтрĕ Иван Петрович статйи. «Сывă пултăр» тенĕ хыççан кăшкăру палли (!) лартма ручкине чернил кĕленчи ăшне чиксе кăларнăскер çырма тытăн... пери вĕçне шăна вилли (çуллахиех пулмалла) тирĕннĕ те, чернилĕ сарăлса кайрĕ. Кăшкăру палли вырăнне кулакан пит–куçĕ пек картин пулса тăчĕ хут çинче.

Чернил сарăлса кайнă пирки пулнă пит-куç Иван Петровичран кулать. Эпĕр те кулар унтан. Сан пеккисемпе çĕнĕ пурнăç тума май пулмĕ теер пурте пĕр харăс.

1931.

Иван Мучи

КИЛТИ ЭКЗАМЕН

Калав

– Çук, ман ача мар пулĕ эсĕ, – тесе вăрçнă хăйĕн вĕренекен ачине ашшĕ. – Мĕн вĕренни пуçăнтан тухсах пырать.

Ачи, йĕпе пăру пек, ашшĕ çине пăхнă та нимĕн калама пĕлмесĕр çăварне карса хытсах кайнă. Мăч-мăч вылякан куçĕсем çеç вăл тăмран йăваланă кĕлетке маррине палăртса тăнă.

– Акă сана ыйтусем: çырсах хатĕрлерĕм. Тепĕр выходной кунччен вĕсем çине ответсем пама вĕренсе çитернĕ пултăр, – тенĕ ашшĕ ним айăпсăр ларакан сĕтеле ывăç тупанепе çапа-çапа илсе.

Ашшĕ панă ыйтусене хирĕç каламалли ответсене хут çине çырса илнĕ те ачи, шкултан таврăннă хыççăн кашни кунах вĕренсе ларнă.

– Раççейри пирвайхи революци пулнăранпа миçе çул иртнĕ? 29 çул. Иккĕмĕш пятилеткăна хăçан кĕтĕмĕр? Пĕлтĕр. Халĕ Германире фашистсен пуçлăхĕ пулса президентра кам ларать? Гитлер. Мĕншĕн кĕрешетпĕр эпир иккĕмĕш пятилеткăра? Классăр социализмла обществăна тăвассишĕн. Мĕншĕн империалистсем тĕнче вăрçине кăларса янă? Пĕрре валеççе пĕтернĕ çĕр чăмăрне тепĕр хут валеççе хăйсем аллине илессишĕн. Тĕнчери патшалăхсен столицисен ячĕсене кала. Лондон, Париж, Нью-Йорк, Мускав, Рим, Берлин, Токио... Мĕнле писательсене пĕлетĕн эсĕ чăвашсенчен? Шупуççынни, Хусанкай, Çеçпĕл Мишши, Элкер, Митта, Ваçанкка... Мĕнле шывсем юхаççĕ Чăваш республикинче? Атăл, Сăр, Çавал. Мĕнле планетăсем çаврăнаççĕ Хĕвел тавра? Меркури, Венера, Çĕр, Марс, Юпитер, Сатурн, Уран, Нептун. Кулаксем пур-и халĕ? Пур. Вĕсен класне тĕппипе илсен пĕтернĕ, çапах уйрăм кулаксем, подкулачниксем... Мĕн вăл трепел? Тăм пек япала, строительствăра кирлĕскер. Ленинăн халăх хуçалăх планĕнче мĕн паллă вырăн йышăнса тăрать? Электрификаци. Аш нумай тăвас тесен мĕнле выльăх нумайрах усрамалла? Сысна...

Тепĕр эрнерен ашшĕ ачине хăйĕн пӳлĕмне чĕнсе кĕртнĕ те сĕтел хушшине мăнаçлăн кĕрсе ларса, хăйне хăй таçти çичĕ ют пек тытса ыйтусем пама тытăннă.

– Кала-ха, Иванов, миçемĕш çул вĕрентĕн эсĕ?

– Çирĕм тăхăр çул, – тет вунпĕр çулхи ача паттăррăн.

– Апла пулсан, хăçан çуралнă-ха вара эсĕ?

– Пĕлтĕр.

– Ухмах! Аçу кам сан?

– Гитлер.

– Гитлер?! Хăм! Мĕнле шывсем юхаççĕ Чăваш республикинче?

– Лондон, Париж, Нью-Йорк, Берлин, Мускав.

– Империалистсем мĕншĕн тĕнче вăрçине пуçласа янă?

– Классăр социализмла общество тăвассишĕн.

– Мĕнле планетăсем çаврăнаççĕ Хĕвел тавра?

– Шупуççынни, Хусанкай, Çеçпĕл Мишши, Элкер, Ваçанкка, Митта.

– Тĕнчери столицăсен ячĕсне кала?

– Атăл, Çавал, Сăр.

– Мĕнле писательсене пĕлетĕн эсĕ чăвашсенчен?

– Меркури, Венера, Марс, Юпитер, Сатурн, Ыран, Платун...

– Ăнлантăн-и хăть мĕн каланине ху? – тет ашшĕ ик куçĕнчен вут–хĕм кăларса. – Тьфу. Пуçра мĕн те пулин пур-и сан?

– Пур.

– Мĕн пур?

– Тăм. Строительствăра кирлĕскер.

– Мĕнле-ха сана çавăн пек ухмаха аçу-аннӳ çуратса янă?

– Электрификацине.

– Çапла вĕренеççĕ-и? Вĕреннĕ чухне тăнпа-пуçпа пит тарăн ăнланса вĕренме кирлĕ. Ох!..

Чăтайман ашшĕ. Йĕрсе янă.

– Мĕнпур шанчăкăм сан çинчеччĕ. Кама хывнă-ши эс ухмах!

– Сыснана, – пулнă ачан юлашки отвечĕ.

1940.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Иван Мучи хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: https://chuvash.org/lib/author/20.html
2. Лашман Çтаппанĕн хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать:http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/chkd_0_0000010.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Чăваш литературинче кулăшпа тăрăхлав жанрĕсем миçемĕш çулта палăра пуçланă?
2. «Капкăн» журнал пирки эсир мĕн пĕлетĕр?
3. Чăвашсен паллă шӳт ăстисене палăртăр.
4. Литературăри кулăшпа тăрăхлав жанрĕсем халăхăн шӳт йăли-йĕркипе мĕнле çыхăннине уçса парăр.
5. Иван Мучи калавĕсенчи лару-тăру камичĕсене палăртăр. Вĕсен хайлаври илемлĕх пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

● *Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Кулăшпа шӳт тĕсĕсем:
ирони *(ытарлă тăрăхлани)*
пароди (*кулăшла кăтартса тăрăхлани*)
сатира (*тăрăхласа кулни*)
анекдот (*шухăшласа кăларнă кулăшла, мыскараллă, шӳтлĕ пĕчĕк халап*)
мыскара
каламбур (*пĕрешкел илтĕнекен сăмахсемпе шӳтлĕ усă курни*)

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Федоров Г.И. Иван Мучи пултарулăхĕ тата чăваш литературинчи кулăшăн илемлĕ хăйне евĕрлĕхĕ. Шупашкар: Чăваш патш. ун-чĕ, 2001. 58 с.

♫ *Проектсем*

1. Иван Мучин актер пултарулăхĕ (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).
2. Иван Мучи тата чăваш халăхĕн шӳт йăли-йĕрки (*ушкăнла тĕпчев*).
3. Çтаппан Лашманĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).

4. «Капкăн» журнал тата ăна йĕркелесе яраканĕ Иван Мучи (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).



1930-1950-мĕш çулсенчи драматургири идеологи витĕмĕн çитменлĕхĕсем

Ăслăлăх анинчен

«Çынсен пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвĕсен кăткăс тĕнчине тăнласси чăваш драматургийĕшĕн 1920-мĕш çулсенчех курăмлă пулнă. Ф. Павлов, М. Юман, Г. Тал-Мăрса, М. Юрьев çыравçăсемех саманан хирĕç-тăрăвне уйрăм çын обществă юхăмĕпе çыхăнура тăни, унăн шалти кăмăл-туйăмне уçса пани, мĕн пулса иртнине вăл мĕнле хаклани урлă тупса палăртматăрашнă.Чăваш драмине тĕпчекенĕ К.Д. Кириллов 1920-мĕш çулсенчи драматургине «илемпе эстетика матрици, малашнехи пĕтĕм чăваш драматургийĕн илемлĕх ориентирĕ» тесе питĕ тĕрĕс палăртать. Анчах та 1930-1940-мĕш çулсенчи политикăри лару-тăру хирĕç-тăрусăрлăх (конфликтсăрлăх) тата драма жанрĕ наци литературин аталану историйĕнче кая юлса пыни патне илсе çитерет» *(И.Ю. Кириллова, филологи кандидачĕ).*

«”Айтара” тĕпчекенсем пурте тенĕ пекех ун сăнарне пĕр пек хаклаççĕ. Вĕсен шучĕпе, Айтар вăл ”тискер феодал”, ”сĕлĕх, усламçă”, ”чарусăр чăваш улпучĕ”, ”мăкланса ларнă ватă юман”. Пьесăн малтанхи вариантĕнче Айтара сăнланă чухне историзм çитейменни те палăрнă иккен. Çакнашкал пĕтĕмлетӳсене мĕнле сценăсене тĕпчесе тăваççĕ-ха? Ку ыйтăва хуравличчен çакна палăртмалла: Айтарта хаярлăх çеç тупакансем, пирĕн шутпа, сăнара туллин пăхмаççĕ. Вăл ырă кулаçнисене ”чееленет” тесе йышăнаççĕ. Çапла сăнара пĕр енлĕн çеç ăнлантарса ун çынлăхне курасшăн та мар тĕпчевçĕсем» (*К.Д. Кириллов, филологи кандидачĕ*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Литературăри драма жанрне аталанма чăваш культуринче XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех тухăçлă майсем (театр çурални, куçару ĕçĕ) пулнине пăхмасăрах чăваш литературинче вăл – анлă сарăлман жанрсенчен пĕри. Ку пулăм Раççейри ытти наци литературисемшĕн те курăмлă. Çакă чи малтанах драматургийĕн шалти хăйне евĕрлĕхĕсемпе

çыхăннă, паллах. Сăвă-юрăпа, калав-повеçпе танлаштарсан драма хайлавĕнче курăну (действия) тата калаçу (диалог) мала тухать. Хайлавăн тĕп шухăшне, конфликтне, сюжет аталанăвне сăнарсен калаçăвĕ урлă уçса парасси пачах та çăмăл ĕç мар. Çавăнпа та пулĕ драматурги жанрĕнче ĕçлекен авторăн çыравçă çеç мар, режиссĕр тата актер та пулмалла. Унăн сăмах сĕткенлĕхне туйнисĕр пуçне хăй шухăшне вулакан патне калаçу урлă çитерме пултармалла.

1930-мĕш çулсенче пĕтĕм халăхсен литературисенче çĕнĕ пурнăç тăвакан ырă сăнара кăтартасси мала тухать. Çакă чи малтанах çак тапхăрта пĕтĕм совет литературинче çĕнĕ пултарулăх меслечĕ – соцреализм çирĕпленсе ларнипе çыхăннă. Вăл литературăн пĕтĕм жанрĕсене пырса тивнĕ, хăшпĕр чух сиен те кӳнĕ.

Паллах, соцреализм меслетне пĕр енлĕн – япăх енчен çеç хаклама юрамасть. Ытти меслетсем пекех унăн илемлĕх пултарулăхне аталанма пулăшакан майлă енсем пур. Анчах XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче вăл пĕртен пĕр канонизациленĕ меслет пулса тăнă, илемлĕ шухăшлавăн урăх мелĕсене пултарулăхран пуçĕпех тĕксе кăларнă, политика тĕллевĕсене пăхăннă. Шăпах çакă ĕнтĕ соцреализ меслечĕн чи сиенлĕ енĕ пулнă.

Паянхи кун хăш-пĕр тĕпчевçĕсем совет литератури текен тапхăрта илемлĕ литература сăмах ӳнерĕ пулма пăрахса ăс парса ӳстерес ĕçри кăтарту хатĕрĕ пулса тăнă теççĕ. Çавăнпа та хайлавсене сăмахлă кăтарту пек общество пĕлĕвĕнче, гражданла тата çар историйĕнче, психологипе этнографинче тата ыт. те усă курнă имĕш. Çакăнпа, паллах, килĕшме юрамасть, мĕншĕн тесен илемлĕ хайлавăн пахалăхĕ илемлĕх меслетĕнчен те, çыравçăн пултарулăхĕнчен те нумай килет. Соцреализм пултарулăхра чăрмавсем лартнине йышăнмасăр тăма юрамасть, анчах шăпах çак йывăрлăхсем чăн çыравçăсене сăмахăн шалти майĕсене, вăйне çиеле кăларма хистенĕ. Çавна пула, сăмахран, тăван (чăваш) литературăра (Х. Уяр, Илпек Микулайĕ, В. Паймен, П. Осипов, Митта Ваçлейĕ, П. Хусанкай) сăмахăн философиллĕ тарăнăшĕ, вăлтса каласси ӳсет.

Çавăнпа пĕрлех соцреализм меслечĕ пуç пулнă тапхăр çĕнĕ çыравçă-агитатора çуратнине курмасăр тăма çук. Çакнашкал çыравçă вара революци интересĕсене хӳтĕлесе обществăн политика ыйтăвĕсене мала хунă. Çакă, паллах, илемлĕ хайлавăн шăнăрне аркатнă, мĕншĕн тесен социаллă тата политикăлла шухăшсен трибуни пулса тăнă. Вĕсенче этем шăпин, унăн характерĕн, çитменлĕхĕсен – кăмăл-сипет тĕнчин илемлĕ тишкерĕвĕ тата кăтартăвĕ пулман. Телее, çакнашкал

хайлавсен ӗмӗрӗ вăрăма тăсăлман, соцреализм тапхăрӗпе пӗрле иртнӗ куна юлнă.

1930-1950 çулсенче пирӗн çӗршывпа илемлӗ пултарулăхра пулса иртнӗ улшăнусем чăваш литературине те, уйрăмах драматургине, витӗм кӳнӗ. Драматурги жанрӗшӗн чи пӗлтерӗшли вăл – хайлавра курăмлă та пӗлтерӗшлӗ хирӗç тăру пурри. Вӗсем шалти тата тулашри пулаççӗ. Тулашри хирӗç тăру икӗ сăнар е сăнарсен ушкăнӗсем хушшинче пулать. Шалти хирӗç тăру вара уйрăм сăнарăн чунӗнче аталанать, ку вăл пӗр çынри икӗ пулăм кӗрешӗвӗ. Çав вăхăтрах шалти тата тулашри хирӗç тăрусем уçă е вăрттăн калăплă пулма пултараççӗ. Уçă калăплă хирӗç тăрусем хăйсем çуралнă самантранах вулакансемшӗн паллă. Вăрттăн калăплă хирӗç тăрусем кӗтмен çӗртен уçăлса уçăмланаççӗ. Хайлавра çакнашкал хирӗç тăру пуррине вулакан самант çитмесӗр пӗлмест те, курмасть те. Драма жанрӗсенче хирӗç тăрусен пур тӗсӗсемпе те анлă усă кураççӗ. Вӗсем сăнарсен характерне уçса парса тарăнлатма, сюжета аталантарма пулăшаççӗ.

1930-мӗш çулсенче литературăра çуралнă «конфликтсăрлăх» теорийӗ драматурги аталанăвне нумай сиенлесе, аталанăвне чарса тăнă. Çавăнпа пӗрлех литературăри çак пулăм хайлавсен вариантлăх ыйтăвне те уçăмлату кӗртет.

Акă, сăмахран, 1920 çулсен варринчен пуçласа тăван (чăваш) литературăра халăх пурнăçӗн иртнӗ кун-çулӗпе кăсăкланасси ӳсет, çавăнпа та историллӗ драмăсем çуралаççӗ (М. Юрьев «Пулхăр патшалăхӗн юлашки кунӗсем» (1925), П. Осипов «Айтар» (1925) тата ыт. те). Сăмаха май, чăваш драматургийӗнче историллӗ жанра пуçарса яраканӗ Г. Тал-Мăрса шутланать. 1930 çулсенче вара, çӗршывра тоталитаризм йӗрки вăйланса пынă май, халăх историне тӗрӗс сăнарлакан хайлавсем юрăхсăр пулса тăраççӗ. Çыравçăсен хăйсен хайлавӗсене вăхăт ыйтнă пек урăхлатса çырма тивет, çапла майпа вӗсен вариançӗсем çуралаççӗ. Паллах, вăхăт ыйтни кунта пӗртен пӗр сăлтав мар. Нумай чухне çакна çыравçă хайлавăн пахалăхне ӳстерме тӗллевлӗ, никам хушмасăр тăвать.

Çак тапхăрти чăваш драматургийӗнчи вариантлăх ыйтăвне **Петр Осиповăн** *(Осипов Петр Николаевич, 1900-1987*) «Айтар» драмин шăпи лайăх уçса парать. Çак драмăн пӗрремӗш вариантне автор «Пирӗн пурнăç хăтлăхра» ятпа 1925 çулта çырнă. Унăн тӗп шухăшӗ – чăваш халăхне ирӗксӗрлесе Христос тӗнне йышăнтарнине, наци тата социаллă пусмăрçăсене хирӗç кӗрешни. 1934 çулта вара драматург пьесăна улăштарса, çӗнетсе «Айтар» ятпа пичетлесе кăларать. Кунта тӗп сăнара Айтара II Кӗтӗрне патшан хӳрешки, чăваш хресченӗсен класс тăшманӗ

пек кăтартнă. Ку вариантра чăваш халăх тĕнне тата хăйне евĕрлĕ йăли-йĕркине сыхласа хăварас тени çук. Автор хайлавăн пĕрремĕшле шухăшне те палăрмаллах улăштарнă, пăснă теме те юрать. Çакна вăл пĕтĕмпех политикăри лару-тăрăва пула тунă. Çав вăхăтрах, ытти драматургсем палăртнă тăрăх, П. Осиповăн чăваш çыннин характерне тата хăйне майлăхне уçса парас, халăхла калаçу йĕркелес ĕçре пысăк пултарулăх пулнă.

В.Г. Родионов тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, «Айтар» драмăра XVIII ĕмĕрĕн 30-40-мĕш çулĕсене сăнарласа панă. Çакă вара, тĕпчевçĕ шучĕпе, драмăна пачах урăхла вулама хистет. Сăмахран, «Айтарăн» пĕрремĕш вариантĕнчи тĕп сăнара историлле сăнар мар теме те юрать. Айтар мар пулсан, халăх йăли-йĕркине, «хамăр тĕне» сыхлама хатĕр чăваш улпучĕсем татах та пулма пултарнă. Унран та ытларах, П. Осипов хăй каланă тăрах, «пьесăн тĕп сюжечĕ Айтар çинчен хамăр енче çӳренĕ легенда» пулса тăнă. К.Д. Кириллов тĕпчевçĕ те çакна пĕтĕмпех шута илсе «тĕн йышăннă тапхăр хăйне май халăх халапĕсенче, легендăсенче ӳкерĕнсе юлнах ĕнтĕ» тесе пĕтĕмлетет.

ХХ ĕмĕрĕн варринче литература критикинче «конфликтсăрлăх» теорийĕ пуринчен ытла камит жанрне сиен кӳнĕ текен шухăш вăйлă аталанать. Çавна май литература тĕпчевçисем пĕр-пĕринпе ăмăртса тенĕ пек юратуллă йăла пьесисемпе камичĕсене сивле пуçлаççĕ. Вĕсен шутĕнче И. Максимов-Кошкинскийĕн «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», Н. Айзманăн «Ăмăртупа юрату», «Алла алă çунă чух», А. Эсхелĕн «Виçĕ туй», Г. Пласкинăн «Хӳри вĕçне туй килсен» тата ыт. хайлавсем. Çакнашкал пьесăсене çăмăллăн татăлакан, «аваннипе лайăххи» хушшинчи хирĕç тăру пурри, сюжет аталанăвĕ телейлĕ вĕçленни пĕрлештерсе тăрать. Сăнарсен характерĕсем вĕсенче схемăлла, тĕнче курăмне палăртмасăр калăпланнă. Критиксем палăртнă тăрăх, вĕсенче пурнăçра çук хирĕç тăрусем, чăн пурнăçа илемлетсе кăтартакан шаблонла сюжетсем аталанаççĕ. Çакă вара пĕтĕмпех драматурги саккунне хирĕçлет.

Чăнласах та, нумай чухне камит çыракансем чĕлхен шӳт мелĕсемпе, лару-тăрупа сăлтавсен камитлĕхĕпе, водевильри евĕр хаваслă юрăсемпе, япăх сăнарсене питлевлĕ пысăклатса кăтартнипе усă кураççĕ. Анчах шăпах çакă вĕсен курăмлăхне тата хаваслă кăмăл-туйăм кӳрессине вăйлатать. Чăваш литература тĕпчевçи П.Н. Метин палăртнă тăрăх, шăпах çак çулсенче камит хайлавĕ çыракансем (Н. Айзман, А. Кăлкан, Н. Терентьев, В. Ржанов, П. Емельянов) пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

1930-1950 çулсенчи камит хайлавĕсен тĕп авторĕ **Николай Айзман** *(Айзман Николай Спиридонович, 1905-1967*) пулса тăнă. Чăваш драматургине, çав вăхăтрах камит жанрне те, вăл хăйне евĕрлĕ те нумай енлĕ хайлавсемпе пуянлатнă («Тăшман çывăрмасть» драма, «Телейлĕкаç» водевиль, «Кама савать – çавна каять», «Кай, кай Ивана», «Мăшăр çулхи туй», «Хăрушă чир» камитсем тата ыт. те.). Унăн камичĕсем лирикăлла сĕмлĕх, музыка çеммин, кăмăллă шӳт тата çивĕч питлев пуянлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Уйрăмах çак автор камитле лару-тăру тума пĕлнине, халăх куллипе тата калаçу чĕлхин мелĕсемпе пĕлсе усă курнине, кăмăл-сипетпе мораль ыйтăвĕсене ăнăçлă татса панине палăртмалла. Пĕтĕмĕшле каласан вара, вăл Ф. Павлов çулĕпе кайса чăваш литературинчи камит жанрне анлăлатса тарăнлатнă.

XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче Н. Айзман çавăн пекех хăйне пĕр актлă камитсен пултаруллă авторĕ пек кăтартнă («Спирукпа Марук», «Йĕпе çине сапа», «Çӳпçипе хупăлчи», «Амлетпа Винигрет», «Шикли шикленнĕ, крĕк пĕркеннĕ», «Утне çитмен туртине...»). Çак хайлавсен тĕп палли халăхăн нациллĕ шухăшлавне лайăх пĕлсе çак уйрăмлăхсене пьесăри сăнарсен характерĕнче усă курни пулса тăнă.

Н. Айзман пултарулăхĕшĕн «калаçакан хушаматсем» те пĕлтерĕшлĕ. Унăн хăш-пĕр сăнарĕсем (Мольерăнни пекех) пĕр енлĕ, схемăлла. Драматург хатĕр характерсене тишкерме юратарах парать. Çакă уншăн социаллă питлевĕн пĕр мелĕ пулса тăрать.

Литература теорийĕ

«Конфликтсăрлăх» теорийĕ тесе совет литература критикипе литература пĕлĕвĕнчи калаçса килĕшсе йышăннă ăнлава калаççĕ. Вăл çав вăхăтри литературăпа ӳнер хайлавĕсенче пĕтĕм халăхшăн пĕлтерĕшлĕ хирĕç тăру çук текен курăма пĕлтерет. Çак теорине пысăка хуракан çыравçăсемпе тĕпчевçĕсем хайлаври хирĕç тăрăва пачах пăрахăçлама хистеççĕ е «лайăх» тата «питĕ лайăх» хирĕç тăрăва çеç йышăнаççĕ.

«Конфликтсăрлăх» теорийĕн (çак термин литература пĕлĕвĕнче 1950 çулсенче çеç çуралнă) чи вăйлă палăрăмĕ 1930-1950 çулсем çине килет. Çапла 1930 çулсен иккĕмĕш çурринче, колхоз тăвас ĕç çĕнтернĕ хыççăн, малтан философинче, кайран литература теорипе практикинче конфликтсăрлăх шухăшĕ сарăла пуçлать. Çавăнпа та хайлавсенче халăхăн йывăр та паттăрла кĕрешĕвне çиелтен, çăмăллатса, çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне пыракан уявла çӳрев пек кăтартасси, çитменлĕхсемсĕр сăнарсем калăпласси мала тухать. Вăл нумай çыравçăсен, çав шутра пысăк çыравçăсен пултарулăхĕнче те палăрăнать, хайлавсен илемлĕх пахалăхне чакарать. Уйрăмах драматургипе кинодраматургине пысăк

сиен кӳрет, мӗншӗн тесен кунта сӑнрасен хушшинчи, сюжетпа характер аталанӑвӗнчи хирӗҫ тӑру вӑл – хайлава калӑплакан пулӑм.

Илемлӗ хайлав вулавӗ

Петр Осипов

ПИРӖН ПУРНӐҪ ХӐТЛӐХРА (АЙТАР)

Тӑватӑ пайлӑ драма (сыпӑк)

Пьесӑри ҫынсем:

Ахтупай – авалхи пуянтарах чӑваш.
Пинерпи – унӑн чипер, хастар хӗрӗ.
Пинерпи шӑллӗ – пӗчӗк ача.
Сентиер – телейсӗр чухӑн каччӑ, амӑшӗн пӗртен-пӗр ывӑлӗ.
Сентиер амӑшӗ – хисеплӗ хӗрарӑм.
Улай – Сентиер юлташӗ.
Айтар – таврари ялмене хӑратса пурӑнакан чӑваш; вӑтам ҫулсенче, сухаллӑ.
Мӑн кӗрӳ – ватӑ ҫын, Айтара парӑнса пурӑнакансенчен пӗри.
Ҫамрӑкрахскер – Айтара килӗштермен ҫын.
Пристав – хаярскер.
Сернюк, Силтепи, Сехипи т. ыт. – ялти хӗрсем.
Вӑййа тухнӑ ачасем, туй халӑхӗ, салтаксем т. ыт.

ПӖРРЕМӖШ ПАЙӖ

Урам. Пӗр енче хӗрсем-хусахсем каска-пӗренесем ҫинче пуҫтарӑнса ларнӑ. Тепӗр енче – Ахтупай ҫурчӗ. Каҫхине. Уйӑх ҫути ял ҫине ӳкнӗ. Хыҫалта пӗчӗк ача юрлани илтӗнет.

1-мӗш курӑнни

Хӗрсемпе каччӑсем ҫӗрӗ памалла (тункӑсла) выляҫҫӗ. Мӑйӑр ҫиеҫҫӗ, ахӑлтатаҫҫӗ, пӗри ҫӗрӗ валеҫет.

С е р н ю к (*тункӑсра*). Камра-ши?..

С а с ӑ с е м. Акӑ кунта!.. Манра...

С е р н ю к. А, Сехипе пӑхмӑш пулса ларать, ҫавӑнта пулӗ-ха. Сехипе, тух! (*Сехипене туртса кӑларма тытӑнать, анчах ун выранне Сентиер тухать*).

С е н т и е р (*сиксе тухать, ҫӗрӗ валеҫекенӗ кайса ларать, пурте кулаҫҫӗ*). Ай, ай, Сернюк, питӗ чее-мӗн эсӗ. Шӑпах пӗлчӗ. (*Кулать.*)

С е р н ю к . Капла эпӗ ыранччен те тункӑсран тухаймӑп, хӑямат.

С е н т и е р. Качча кайиччен тухатӑн. (*Ҫӗрӗ парать.*)

С е р н ю к. Кунче пӗлеймесен, выляма пӑрахатӑп.

У л а й. Ӗлӗк-авал пӑрахнӑ, тет.

С е н т и е р. Ну, тункӑс, кала – камра ҫӗрӗ?

С е р н ю к. Улай, санра – тух!

У л а й . Манра ҫӗрӗ тавраш ҫук вара…

С е р н ю к. Куртăм, куртăм – пур. Кăтарт аллуна. (*Пырса пăхать.*)

У л а й. Акă пăх.

С е р н ю к. А… пур, пур!.. Тух часрах! (*Туртса кăларать.*)

У л а й. Хăрăк мăйăр тыттарса хăварнă та, çĕрĕ панă теççĕ. Ну-и самана!

С а с ă с е м. Аха! Сентиер хăй лекрĕ.

С е н т и е р. Чим-ха, выляма пăрахсан авантарах мар-ши?

С е р н ю к. Çапла пулĕ… Эпĕ тункăсра пулнă чух пăрахасшăн марччĕ, халь хăйне лекрĕ те – аванах та мар-и? Çук, тункăсран тух – вара пăрахатпăр.

У л а й. Тĕрĕс калатăн, Сернюк… (*Çĕрĕ парать.*) Ват хĕрсем калани тĕрĕс. (*Пурте кулаççĕ.*) Тьфу. Ваттисем калани тĕрĕс: аптранă кăвакал кутăн чамнă, тет, кулакана кутне çыпăçнă тет. (*Пурте кулаççĕ*)

С е н т и е р. Хăвăнне çыпăçмасан юрать... А ну, Силтепи, тух-ха кунта. (*Тӳрех пырса туртса кăларать.*)

С и л т е п и. Манра çук.

С е н т и е р. Парам сана çук! (*Ирĕксĕр туртса кăларать.*)

У л а й. Каларăм сире. Ваттисем калани тĕрĕс терĕм. (*Пурте ахăлтатса кулаççĕ.*)

С е н т и е р. Питĕ тĕрĕс, калама та çук!.. Шăп хăйне пырса çыпăçрĕ. Çта-ха, пăхар, нумай çыпăçнă-и? Ачасем, тытăр! (*Ачасем сиксе тăраççĕ, хĕрсем кăшт ларса юлаççĕ*).

У л а й (*тарать*). Елĕк-авал тытнă, тет… (*Аякран купарчине çапса кăшкăрать.*) Акă пăхăр! (*Пурте кула-кула хыçалтан чупаççĕ, хĕрсем хăйсем тĕллĕн сылтăм еннелле каяççĕ. Сентиер Юлать.)*

К а ч ч ă с е м. Эй, хĕрсем килелле тараççĕ. Ярас мар!.. (*Хĕрсем хыççăн каялла çаврăнса чупаççĕ.*)

С е н т и е р (*шухăшлă*). Темен чухлĕ манасчĕ тесен те пуçран шухăша кăларса ывăтаймастăп. Ах, Пинерпи! Камăн ячĕпе çуралнă-ши эсĕ? Камăн кичем пурнăçĕн шурăмпуç çăлтăрĕ пулса тăрăн-ши? Камшăнне пĕлместĕп, анчах маншăн маррине сисетĕп. (*Кантăк патне пырса вăрттăн пăхать, пӳртре хăй çути пур.*) Вăл пĕчченех… (*Шăппăн.*) Ашшĕсем пӳртре курăнмаççĕ. Кĕрсен мĕн тейĕ-ши? (*Кĕме тăрать, анчах чарăнать.*) Çук! Шур пӳрте кĕме пире Пӳлĕх хушман... Пирĕн пурнăç – хура пӳртре! Пирĕн ĕмĕр – хĕн-хур-асапра. (*Кăшт айккинелле кайса.*) Ах, мĕншĕн манăн чĕре сикет-ха? Мĕншĕн куçсем Пинерпинех курасшăн?.. (*Кайма тăрать, хыçалта юрлани илтĕнет.*) Çук! Манас, манас!.. Ав ачасем юрлаççĕ, çавăнта, тен, çăмăлтарах пулĕ! (*Каять.*)

2-мĕш курăнни

Пинерпи кăшт кантăка уçса пăхать те Сентиере курса шăппăн чĕнет. Пинерпи Сентиере хăйне Айтара ирĕксĕр кайча пани, туйĕ тепĕр эрнерен пуласси çинчен пĕлтерет.

С е н т и е р. Çук, Пинерпи, эсĕ мана юратмастăн. Юратас пулсассăн Айтара кайча каймастăнччĕ, аçуран та хăраса тăмастăн!

П и н е р п и. Эх, Сентиер, хăвăн савнин хуйхине пусарса йăпатас вырăнне çак сăмахсемпе тата ытларах хурлантаратăн-çке эс унăн мĕскĕн чĕрине. (*Хыттăн йĕрет.*)

С е н т и е р (*чупса пырса ыталать*). Пинерпи, ан çилленсем, сана эпĕ хурлантарас теменччĕ, анчах тулса çитнĕ ăшчикке нимĕн тума пĕлместĕп. Ман ăш çунать! Халь çакăнта Айтар тăрас пулсассăн, эпĕ ăна хамăн алăпа хам пăвса пăрахăттăм. Айтара мар, пĕтĕм таврари кичемлĕ пурнăçа çапса салатас килет! Ах, çут тĕнче! Мĕншĕн вĕçĕ-хĕрри курăнман çĕр çинче те пурăнма тăвăр-ши? Ăçта-ши ирĕк? (*Пинерпие ыталаса.*) Эх, Пинерпи!.. Çĕр çинче ирĕклĕ вырăн пулас пулсассăн е кайăк пек вĕçес пулсассăн – тухăттăмăр та кайăттăмăр çак усал тăшмансенчен хăтлăха.

П и н е р п и. Сентиер, шырамасассăн ăçта тупăпăр эпир хăтлăха?

С е н т и е р. Итле-ха, Пинерпи (*шăппăнтарах*), чăвашсемшĕн ĕлĕкреннех хăтлăх варманта пулнă… Тарар-и эпир те çавăнта?

П и н е р п и. Эп хатĕр, Сентиер. Манăн пурĕ пĕр пĕтес пулать: Айтара кайса пуçа çийиччен савнипе пĕрле пĕтем.

С е н т и е р. Çук, эпир пĕтместпĕр, Пинерпи: пирĕн тус – сĕм вăрман, пĕрĕн кил – тарăн çырма, пирĕн пурнăç – хăтлăхра! Васка, савни, çичĕ ют сисиччен – çичĕ лаппа ӳкетпĕр. Эсĕ кĕрсе хатĕрлен, автан пĕрре авăтсассăн анкартине чупса тух. Ну, каяр, çынсем куриччен уйрăлар.

П и н е р п и (*тăрса*). Ах, Сентиер, тупăпăр-ши хăтлăхне?

С е н т и е р. Çине тăрсан тупăпăр, савни! (*Ыткăнса утаççĕ*)

Пинерпи ашшĕ килнине курсан пӳртелле чупать;
Сентиер урам урлă каçса аять.

3-мĕш курăнни

Ахтупай чупса пырса Пинерпие ярса илет. Сентнер тепĕр енчен сăнаса тăрать.

А х т у п а й. Чим!.. Ăçта васкатан, Пинерпи? (*Аллинчен тытать.*) Кампа тухса ларнă эсĕ? Ашшĕ сăмахĕнчен иртес терĕн-и? Ых, йыт çиесшĕ пуçна! (*Сулса крыльца çинелле сирпĕтсе ярать.*) Час кĕрсе выртнă пултăр! Тепре каччăпа ларннне курсассăн – асту! Хĕрне-мĕнне пăхмăп, кăвак хуппи кăтартăп! Кампа лартăн-ха унта, пӳрт айккинче, кала?

П и н е р п и. Каламастăп.

А х т у п а й. Каламастăн-и? Каламасан – калаттарăпăр!.. (*Хапха умĕнче выртакан хулă татăкне илсе хĕнет.*)

П и н е р п и (*кăшкăрса*). Çап!.. Хĕне, атте!.. Каламастăп!

А х т у п а й. Ан çухăр, хĕрӳ-пуçу! Ял-йыш умĕнче намăса кĕртес тетни? Айтар сиссессĕн качча илме мар – пĕтĕм улăх уттине тиесе каять. Кала, намăссăр, кам пулчĕ вăл урам урлă чупса кайни?

П и н е р п и. Ятне каламастăп – вăл манăн савни! Айтара эпĕ каймастăп, атте.

А х т у п а й. Эс апла усалланса кайнă-и-ха, ашшĕпе амăшĕн ирĕкĕнчен ирте пуçларăн-и? Юрĕ! Айта-ха пӳрте, унта каласа парăн пĕтĕмпех (*сĕтĕрсе кĕресшĕн*).

П и н е р п и. Атте, хĕненипе эсĕ манран ыйтса пĕлес çук – пурĕ пĕр каламастăп. Качча пар мана, туй ту, ĕçĕр, юрлăр, анчах халех калатăп: эп Айтарпа пурăнас çук! (*Ашшĕн аллинчен вĕçерĕнет.*)

А х т у п а й. Ах, намăссăр йытă пичĕ! Хăçантанпа эс капла калаçма вĕреннĕ! Е тӳрру вĕрентрĕ-и? Ятне унăнне каламарăн, анчах эпĕ пурпĕр ял-йышсенчен те пулсан ыйтса пĕлетĕп. (*Чупса пырса, аллинчен ярса илет.*) Час кĕнĕ пултăр пӳрте!

П и н е р п и (*çăлăнать*). Кĕместĕп, атте! Эсĕ мана пушăпа хĕнесе тĕпчесшĕн!

А х т у п а й. Эй, карма çăвар! (*Çӳçĕнчен ярса илет.*) Кăшкăрса ху тавра халăх пуçтарас тетĕн-и, намăссăр? (*Чикелентерсе-сĕтĕрсе пӳртелле илсе каять.*)

П и н е р п и (*кăшкăрать*). Ах, атте, çӳçрен тăпăлтарма çуратрăр-и мана!

А х т у п а й. Кĕр пӳрте, ан кăшкăр урамра.

П и н е р п и. Кăшкăратăп, илтчĕр!.. Хĕрне ашшĕ хĕненине пурте курччăр!.. Курманнисем илтчĕр!.. Чаплă çынсен туйĕ те чаплă пултăр!.. Хĕне, атте!.. Хĕне хăвăн хĕрне лайăхрах, тен, сасса илтсе савни хĕрхенĕ.

Сентиер, унччен сăнаса тăнăскер, тӳсеймесĕр чупса пырать.

С е н т и е р. Эпĕ кунта, Пинерпи!

П и н е р п и (*ăна курса тӳрех чупса пырать*). Ах!.. Сентиер!..

С е н т и е р. (*Пинерпи ун çумĕнче тăрать*). Ахтупай пичче, хĕнесе эсĕ пире сивĕтес çук. Пинерпи – манăн савни.

А х т у п а й. Пӳлĕхçĕ сыхлатăрах! Мĕн куратăп? Тĕксĕм Киремет ачи ман хĕре хапсăннă!.. Ман умра ыталанса тăраççĕ, намăссăрсем... Эй, Пинерпи, ытлашши ап вĕç, эп халăх пуçтарса çĕре çыхса пăрахса хĕнеттеретĕп сире иксĕре те. Халĕ пĕтĕм халăх ман алăра: эпĕ хĕре Айтара памасан – пĕрин те пĕр пĕрчĕ утă пулас çук, пĕтĕмпех Айтарсене каять.

С е н т и е р. Айтарсене?!. Ёмёр Айтарсенчен хăраса тăмалла-и пирĕн?

А х т у п а й. Ан сӳпĕлтетсе тăр, Киремет ачи! (*Хĕрне пырса туртса илет те Сентиере çапса ӳкерет, леш хăвăрт сиксе тăрать.*)

С е н т и е р. Асту, Ахтупай пичче! Ку таранччен ман алă ваттисем çине çĕкленменччĕ, анчах шăпи тулсан – эп тиркесех тăмăп.

А х т у п а й. Ах, çӳрме! (*Чупса пырса çухаран пăвса Сентиере ярса илет.*)

П и н е р п и. Атте, мĕн тăватăн эс?.. Ăсу пур-и санăн?

4-мĕш курăнни

А ч а-п ă ч а сасă илтсе чупса кĕрет.

С е н т и е р (*Ахтупай айĕнчен вĕçерĕнсе тухса хирĕç тăма хатĕрленет, анчах вĕсене ачасем чараççĕ*). А!.. Юрĕ!.. Ахтупай пичче, эп сана хирĕç тытмарăм, анчах тата тапăнсан – эп ваттине тиркесе тăмăп!.. (*Ачасем пырса Сентиере чараççĕ.*)

С а с ă с е м. Мĕн пулнă?.. Сентиер, мĕн тăватăн эс?

А х т у п а й. Хуп çăварна, Киремет ачи! Ак ыранах халăх пуçтарттарса хĕнеттеретĕп сана! (*Вара хĕрне калать.*) А сана çăрапа хупса лартам, чупкăна! (*Тĕрте-тĕрте пӳртелле илсе каять.*) Ут, пӳтсĕрскер! (*Тĕртсе кĕртет.*)

С е н т и е р. Асту, Ахтупай пичче, Пинерпие пурпĕр хĕнеттерместĕп сана.

А х т у п а й (*кĕрес умĕн*). Эс хуна пĕл! Хамăн хĕрпе мĕн тумаллине эп эс вĕрентмесен те пĕлетĕп. Тьфу, им-юм ачи, ваттисене вĕрентме хăтланать тата, анкă-минкĕ!.. (*Кĕрсе каять.*)

С а с ă с е м. Сентиер, мĕншĕн вăрçнă эсĕр?

С е н т и е р. Эп пулмасан вăл хăйĕн хĕрне хĕнесе те вĕлеретчĕ пуль, ват супнăскер!

С а с ă с е м. Мĕншĕн хĕнемелле пулнă апла?

С е н т и е р. Пинерпи манпа тухса ларнăшăн.

С а с ă с е м (*кулаççĕ*). Ха-ха-ха!

С е н т и е р. Кайса итлĕр-ха кантăк патне. Пӳртре хĕнеме тытăнман-и тата? (*Хăшĕ-пĕри итлеме чупаççĕ.*)

5-мĕш курăнни

У л а й чышкина чăмăртанă, чупса кĕрет.

У л а й. Эй-эй-эй!.. Ачасем, маййăр кайса илтĕм: ыт-тĕкел кам пĕлет, пĕр ывăç маййăр çавна пулать! Ыт-тĕкел (*кашнин умĕнче чупкаласа çӳрет*). Ну, Сентиер, ыт-тĕкел?

С е н т и е р (*çилленсе*). Тĕкел!

У л а й (*хăвăрт шутлать*). Пĕр, ик, виç (*Малалла мăкăртатать те кăшкăрса калать.*) Ыт! Вăт пĕлмерĕн те – мăшăрсăр. Эх, Сентиер, Сентиер. Ахтупайăн кĕрӳшĕ пулатăп тесе мухтанаттăн – пулаймасть пулĕ çав. (*Пуçне сулласа ывăçри мăйăрĕсем çине пăхса тăрать.*)

С е н т и е р. Кирек кам пулам та, Пинерпие илетĕпех, Улай!

У л а й. Илейместĕн: мăйру та «ытă»!

С е н т и е р (*лешĕн ывăçри мăйăрĕсене çапса сирпĕтсе ярса*). Тĕкел!.. Шутла çĕнĕрен, кĕсел! (*Пурте кулаççĕ, хăшĕ-пĕри мăйăрĕсене пуçтараççĕ.*)

У л а й (*ывăçра тăрса юлнă мăйăрĕсене пăхса*). Ха-ха-ха! Чăнах та тĕкел: шăп иккĕ тăрса юлнă. (*Пурте ахăлтатаççĕ.*) Пĕри Сентиер, тепри Пинерпи (*пĕр мăйăрне çӳлелле тытнă*). Ой, хăямат, ытла та хуртлăскер вара ку сан Пинерпи.(*Пурте кулаççĕ. Улай каласа пĕтерет те тарать, ăна Сентиер хăваласа чупать.*)

Ч а р ш а в

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Декораци çавах. Урамра уйăх çути. Ахтупай килĕнче юрлани, ташлани илтĕнет. Кантăк анинче, пӳрт умĕнче ача-пăча кĕшĕлтетсе çӳрет, хăшĕ пӳрте кĕрет, хăшĕ тухать.

1-мĕш курăнни

Сернюкпа Улай кула-кула пӳртрен тухаççĕ.

С е р н ю к. Ну-и туй та, Улай.

У л а й. Калама та çук, Сернюк! Сана çавăн пек качча парасчĕ. Ура тупанĕ хăпарса тухиччен сикĕттĕм ĕнтĕ туйра.

С е р н ю к. Ай, тур ан хуштăрах Айтар пек каччăна кайма.

У л а й. Эй, кĕсел! Айтар пек пуянни лексессĕн эс мар, эп хам та ним шухăшласа тăмасăр пĕркенчĕк пĕркенсе йĕрĕттĕм.

С е р н ю к. Ун пек ват сухал лексессĕн, пĕркенчĕксĕр те выртса йĕрĕн.

У л а й. Ытлашши юратнипе-и? Ха-ха-ха!

С е р н ю к. Малтанхи арăмне хĕнесе вĕлернĕ теççĕ мар-и çавна?

У л а й. А куна мĕн тума илет тетĕн эс? Паян туй тăвать те ыран арăмне йытă вырăнне кăкарса хурать.

С е р н ю к. Пĕтрĕ вĕт Пинерпи, ашшĕ пиркиех пĕтрĕ.

У л а й. Ашшĕ пирки çех мар, халăх пирки!

С е р н ю к. Мĕншĕн халăх пирки?

У л а й. Халăх пирки пулмасăр, Ахтупай пичче хĕрне Айтара халăх хушнипе парать – унсăрăн пирĕн улăхсем пĕтеççĕ.

С е р н ю к. Халăх тесе Пинерпин çамрăк пуçне пĕтермелле-и?

У л а й. Самани çавăн пек ку чухне, Сернюк. Ну, кун çинчен туйра калаçмаççĕ. Итле-ха, эпир, пĕтĕм çамрăксем пуçтарăнса Айтар туйне мăшкăл тăвас тетпĕр, эс мĕн шухăшлатăн?

С е р н ю к. Ăна мăшкăллама та хăрушă: таçта яла тĕртсе çунтарса ярĕ – унăн çиллине ку таранччен никам та çĕнеймĕн, теççĕ.

У л а й. Каччине хурламасăр туй нихçан та иртмест вĕт – çилленсессĕн, эпĕр те айнех пулмăпăр.

С а с ă с е м. Эй, эй, ачасем, пăхăр, Сентиер килет!

2-мĕш курăнни

Сентиер хыçалта чарăнса шухăшаласа тăрать.

С е р н ю к. Пăх-ха, Улай, Сентиер мĕнле хуйха ӳкнĕ.

У л а й. А-ха, чим!.. Вăл эпир мĕн шухăш тытнине пĕлмест те пулĕ-ха... Систерес пулать: эс, Сернюк, кĕрсе пăх-ха, тухма хатĕрленмеççĕ-и унта? (*Сернюк çĕнĕрен пӳрте кĕрет, Улай Сентиер патне каять, леш пуçне чиксе каска çине ларнă.*)

С а с ă с е м (*чупса тухакансем*). Хатĕрленеççĕ!.. Тухаççĕ!.. Парне япалисене йăтаççĕ!.. (*Хăшĕ-пĕри пӳртелле чупса кĕреççĕ.*)

У л а й. Сентиер, мĕн пуçна чиксе ларатăн? Каччăна ун пек ларни килĕшмест.

С е н т и е р. Ах, Улай, эс пĕлесчĕ: ман ăшра вут çунать, анчах тĕтĕм тухни курăнмасть, Ман выränта пулсассăн эсĕ те пуçна уснă пулăттăн. Мĕн чухлĕ пуçран кăларса ывăтас тенĕ, çавăн чухлĕ ытларах пуçа çавăрать. Ах, Пинерпи, Пинерпи! Санăн савни арăслантан вăйсăр-мĕн! (*Сасартăк сиксе тăрса.*) Çук!.. Эп арăслантан хăрамастăп, ăна парăнмастăп! (*Кăшкăрса*.) Айтар-и, эпĕ-и, иксĕмĕртен пĕрин пĕтес пулать. Эпĕ пĕтсессĕн Пинерпи те пĕтет, анчах эпĕ çиеле тухсассăн – пĕтĕм таврари чăвашсемшĕн уяв пулать.

У л а й. Сентиер, эпĕр, пĕтĕм çамрăк пухăнса туйăн юлашкине пăсасшăн.

С е н т и е р. Итле-ха, Улай, ăна вĕлерсессĕн мĕн пулĕ-ши?

У л а й. Ырри пулас çук, мĕншĕн тесессĕн ваттисем ун майлă; ăна вĕлерсен, унăн ывăлĕсем ашшĕнчен те ирттерĕç, туйне пăртак мăшкăлласси, ман шухăшпа, çапах кирлĕ. Эпĕр шăп тухса каяс умĕн урапа пăтисене шăлт кăларса ывăтса пĕтересшĕн – ял варринче йăвана-йăвана ӳкчĕр.

С е н т и е р. Чим, Улай, тавай сисиччен Айтар лашинне сӳсмен пăявĕсене касса пĕтерер! Пурĕ пĕр вăрçă пулатех; тен, халăх та çамрăксем майлă пулĕ. Кам каснине пĕлес çук – кăшт халăх ыйхăран вăрантăр. Айтар

çыннисем ӳсĕр пулаççĕ, пирĕн халăх урă. Эпĕр çине тăрсан, тен, халăх та пирĕн майлă пулĕ.

У л а й. Çамрăксемшĕн иккĕленмелли çук, анчах ваттисем çинче шанчăк сахал: хăранипе Айтара юрас тейĕç.

С е н т и е р. Халăха пуçласа паракан çук: пĕрер хăюллăрах пуçлăх пулсассăн вăл хăех ыйхăран вăранать.

У л а й. Вăрансан юрать те, вăранмасан... (*Сасартăк сасăсем илтсе чарăнать.*)

С а с ă с е м. Тухаççĕ!.. Тухаççĕ! (*Пӳртрен халăх майĕпе «Тавай пире япала» юрласа тухать.*)

С е н т и е р. Ав, ав тухаççĕ... Айтар парне йăтать пулмалла, юрлаççĕ. Пирĕн майĕпе хатĕрленмелле мар-ши?

У л а й. Эс ан курăн, Сентиер, мĕншĕн тесессĕн кирек мĕн пулсан Ахтупай тӳрех сан çине шухăшлать... Пытан!

Сентиер пытанать. Улай юрлама чупать.

3-мĕш курăнни

Туй халăхĕ икĕ пая уйрăлать; пĕр касси «Хĕрçум юрри» юрлать, тепĕр касси – «Туй юрри». Айтар алăк умĕнчен (пăлтăртан) парне арчисене пĕччен йăта-йăта тухса сулахай еннелле урапа çине (сцена хыçне) кайса хурать. Айтар парне япалисене йăтса пĕтерсен туй халăхĕ юрласа пӳртелле кĕрет. Пĕчĕк ачасем кĕшĕлтетсе çӳреççĕ.

П и н е р п и ш ă л л ĕ (*пĕчĕкскер*). Кайса ларатăп та арча çине, пĕр пысăк укçа памасан, йыснана хапха уçса кăлармастăп! (*Хĕпĕртесе сиксе калать.*)

С е р н ю к. Эсĕ унтан ытларах шакка: тавай кĕмĕл укçа те. Ну, чуп, кайса лар хăвăртрах. (*Леш чупать, ун хыççăн кăшкăрса ачасем чупаççĕ.*)

У л а й (*хăй тĕллĕн*). Ăçта-ши Сентиер? Пиллесе пĕтериччен ĕçе туса хурас. (*Хыçалалла чупать.*)

С а с ă с е м (*алăк ананче тӳпелешеççĕ*). Пиллеме лараççĕ! Пиллеççĕ!.. (*Юрлама чарăнаççĕ.*)

4-мĕш курăнни

Сентиерпе Улай кĕреççĕ.

У л а й. Эс пытансах çӳре, Сентиер, вăрçă пулатех, анчах сансăр пуçне тусан авантарах – никам çине йăвантарма та çук.

С е н т и е р. Юрĕ, эп аякран сыхласа тăрăп – курăпăр, кам майлă пулать халăх? Эппин, эс кай, эп пытанса сăнам. Çĕççӳ çивĕч-и сан? Ме, хамăнне парам. (*Парать.*)

У л а й. Тавай! Пĕри касмасан, тепри касать. Сисиччен пĕр сӳсмен пăявĕ те юлмасть.

С е н т и е р. Ах, юлашки хут Пинерпипе курса калаçайрасчĕ!

У л а й. Эп унпа калаçрăм. Пĕр курка сăра ĕçтерчĕ, йĕре-йĕре сана асăнчĕ... «Атте-аннен хыт чĕри манăн пуçа çирĕ», – тет... Ну, юрĕ, эп карăм. (*Йĕри-тавра пăхкаласа сӳсмен пăявĕсене касма чупать.*)

С е н т и е р (*хăй тĕллĕн*). Юлашки çĕр савнин килĕ умĕнче тăратăп, икĕ юратакан чĕре паян кунтан уйрăлать! Мĕн пирки? Ĕмĕр хуйăх курма çуралнă пирки! Ах, Пинерпи, савнă чĕрем! Ĕмĕрлĕхех уйрăлатпăр-ши? (*Пуçне чиксе хуйхăрать.*)

5-мĕш курăнни

Т у й х а л ă х ĕ кĕшелтетсе пӳртрен тухать, пурте ӳсĕр, хăшĕ юрлать, хăшĕ лашасем патне утать, хăшĕ çĕнĕ çынсем тухасса кĕтет. Чылайран А й т а р п а П и н е р п и тухаççĕ. Вĕсем хыççăн П и н е р п и а ш ш ĕ п е а м ă ш ĕ сăра куркисемпе ăсатма тухаççĕ. Пинерпи урапа çине кайса ларас умĕн хăй çуралнă кил-çуртне асăнса йĕрет. Йĕрсе пĕтереймест, хыттăн макăрать. Вара хĕрарăмсем хăйсем те куççульлленсе ăна çавăтса каяççĕ. Т у й х а л ă х ĕ юрласа каять, хыçалта шăнкăрав сассисем илтĕнеççĕ.

6-мĕш курăнни

С е н т и е р (*вăрттăн*). Улай килмерĕ, тăваймарĕ пулĕ – каяççĕ!.. Çук! Ытла çăмăл, пĕр мăшкăлсăр илсе каять Пинерпие – памастăп. Пинерпи – манăн савни, çичĕ юта вăрă-хураха пама! (*Чупса кайма тăрать, анчах хыçалта сасартăк юрлама чарăнаççĕ те, вара кăшкăрашнисем илтĕнме пуçлаççĕ.*)

С а с ă с е м. Ав!.. Ав тытăр ăна!.. Ав, тарать!.. (*Улай урам урлă чупса каçса каять, анчах пăртак тăрсан ăна хуса çитсе тытса килеççĕ.*)

А й т а р (*усаллăн кăшкăрашса кĕрет, аллинче пушă*). А!.. Эппин, Айтарăн чапне çапла пăсма шут тытнă?! Юрĕ!.. Илсе килĕр ăна кунта! (*Улая тытса кĕреççĕ.*) Ха-ха-ха! Çак çара çерçи манăн тăшман пулма шут тытна! Ах, тăмсай! (*Пушшипе çапать.*)

У л а й. Кам курнă эп каснине? Айăплине тупмасăр çынна хĕнеме юрамасть! Эп касман сирĕн сӳсмен пăявĕсене.

А й т а р. Эс мар-и? (*Çапать.*) Эппин, эс маар?! Арча çинче ача ларнине курмарăн-и эс суккăр?!. Эс мар пулсан кам каснă – кала ятне!

У л а й. Каламастăп.

А й т а р (*çапать*). Эппин, каламастăн пулать?! Айтара каламастăн?!

А й т а р ç ы н н и с е м. Хĕнес ăна!.. Вĕлерес!.. (*Чупса пыраççĕ.*)

С е н т и е р (*сыхланса тăнă çĕртен чупса кĕрет*). Кам хĕнет айăпсăр çынна?!. Чарăнăр!

А х т у п а й (*чупса пырать*). А-а! Айăпли тупăнчĕ хăех, кĕрӳ, пулсан чăнах та çакă пулмалла, Улай мар.

С е н т и е р (*тамса*). Эпĕ!.. Хĕрне Айтара паратăп тесе ял-йыша хирĕç пырас терĕн-и? Юрĕ! Ялта Ахтупай çех мар, пирĕн майлисем те тупăнĕç-ха. (*Халăха*) Халăх! Ăçта сирĕн намăс? Çак пĕр вăрă-хурахран хăратра? Улăхсене тытса илет тесе Айтарпа хурăнташлă пулас терĕр-и? Мĕн пăхса тăратăр? Май килнĕ чух тытăр; ун пек çынна вĕлерсен те çылăх пулас çук!

Ç а м р ă к с е м. Тытă-ăр!.. (*Чупса пыраççĕ, ваттисем хăраса чакаççĕ.*)

А й т а р (*пушшипе пĕррех сулласа илет те пурне те чарать*). Ха-ха-ха!.. А ну, кам килсе тытас тет – тытăр! (*Кашкăр пек йĕри-тавра пăхса тăрать.*) Мĕнрен хăрарăр, кĕсел аврисем!.. Е Айтара тытма хăрушă? Ха-ха-ха!

А х т у п а й. Ан çилленсем, кĕрӳ, каçар. Ку ачасене эпĕр халăх пуçтарса хĕнеттерĕпĕр.

А й т а р. Эсĕ тата; ватсупнăскер, хурăнташлă пулас тетĕн, ял-йыша тытаймастăн. Кала, мĕнле качча ку, Пинерпи тӳрри мар-и?

А х т у п а й. Çу-ук... Вăл ялти пуçтах ача, ун пеккине хĕр юратать-и?

С е н т и е р. Суятăн, Ахтупай пичче, Пинерпи – манăн савни, ăна эпĕ вăрă-хураха памастăп.

А й т а р. Ав епле? Эсир пурте пĕр майлă-мĕн – мана шăварма шут тытнă? Эсир Айтар камне пĕлместĕр пулмалла? Юрĕ, курăр-ха, нумай кĕттермĕп. Эй, туй халăхĕ, илсе килĕр кунта çĕнĕ çынна!

С е н т и е р. Мĕн тăвасшăн эсир ăна? Тивтерместĕп! (*Хыçалтан чупма тăрать.*)

А й т а р. Тытăр куна та, ан ярăр! (*Сентиере тытса чараççĕ. Пинерпие çавăтса кĕреççĕ.*)

А х т у п а й. Ах, кĕрӳ, каçарсамах!..

А й т а р. Хамăн арăмпа хама ирĕк – сирĕн ĕç çук! А чим-ха, кил-ха кунта, «арăм»! (*Пырса аллинчен тытать те куçĕнчен пăхса калать.*) Кала тĕрĕссипе: кам çак çын? (*Сентиер çине кăтартать.*)

П и н е р п и (*Сентиер çине пăхса*). Тĕрĕссипе калатăп: ку çын – манăн савни. Ку пĕркенчĕк – манăн пĕтнĕ пуç (*пĕркенчĕкне Айтар çине ывăтать*). Тӳрех калатăп, Айтар, эпĕ санпа пурăнмастăп. Вăрă-хурах патĕнче пĕтиччен, савнипе пĕрле çакăнта пĕтем! (*Сентиере ыталаса тăрать.*)

А й т а р. Ытла илемлĕн калаçатăн-çке эсĕ, çĕнĕ çын? Çук, Пинерпи, Турă пӳрнинчен иртеймĕн. Пĕркенчĕкне ывăтнипех Айтар аллинчен вĕçерĕнеймĕн: пурăнассипе вилесси санăн паянтан манăн алăра. Эй, туй халăх, кайса хупăр-ха кăна кӳмене, ыран курăпăр: арăм пулать-и вăл ман

е... (*Халăх чупса пырса Пинерпие сĕтĕрсе илсе каясшăн, леш Сентиертен уйрăласшăн мар, вара Айтар хăй пырса вĕҫертет.*)

П и н е р п и. Сентиер!.. Сентиер... Сывă пул ĕмĕрлĕхе!.. Атте пирки пĕтрĕм! (*Йĕрет, çавăтса илсе каяççĕ.*)

А й т а р. Ха-ха-ха! Çухăр, «хĕрĕм», çухăр! Тен, савни пырса ыранччен хатарĕ. Ха-ха-ха-ха!.. (*Ахтупая*) Ну, Ахтупай хуньăм, ытла та май çук санăн хĕр. Тавтапуçах панăшăн. Сыв пулăр, «тепре куриччен». Хе-хе-хе-хе! (*Кула-кула табакне шăршлать те Сентиер çине тĕллесе калать.*) Ачху! Ан тытса тăрăр çавна, ярăр: савнине пырса ыталатăр! Хе-хе-хе-хе! (*Кулса ярать.*) Ну, туй халăх, юрлăр! (*Кулса юрласа каяççĕ, Сентнер хыçалтан чупса пырса Айтара ярса илесшĕн, анчах Улай чарать.*)

С е н т и е р. Ан чарăр мана. Хăвалăр хыçалтан, хăвалăр! (*Вĕçерĕнсе Айтар хыççăн чупать.*)

А й т а р (*хирĕç тăрса*). Мана хăвалама! Ме, шăршла. (*Айтар табакне куçĕнчен сапать те хăвăрт каять.*)

С е н т и е р. А!.. (*Ӳкет.*) Пинерпи, Пинерпи! Сӳнчĕ маншăн çут тĕнче! (*Хыттăн йĕрет, Улай ун умнее чĕркуçленнĕ, халăх пуçтарăнса пăхса тарать, Ахтупайпа карчăкĕ пуçне чиксе тăраççĕ.*)

Ч а р ш а в

ВИҪҪĔМĔШ ПАЙĔ

Вăрманта, чӳк тăвакан вырăнта. Сцена çине хĕвел тухăç енчен хĕрлĕ çутă ӳкет. Хыçалтан туй юрри çывхарать, вара кĕреççĕ: Айтар чи малта пырать. Хыçалта лашасене чарнисем илтĕнеççĕ.

1-мĕш курăнни

А й т а р. Ну, ырă туй халăхĕ, хамăр çĕршыва çитрĕмĕр. Ĕлĕк аттесем пирĕн нихçан та Киремете пехиллемесĕр ĕçкĕрен таврăнмастчĕç. Паянхи кун та çавăнпа Киремете кӳрентерес мар, памаллине парас, тивĕçлине пиллес пуль тетĕп эпĕ.

С а с ă с е м. Кӳрентерес мар. Çиллентерес мар. (*Мăн кĕрӳ, унпа пĕрле ватăраххисем (карчăксем те) малалла, хĕвел тухăç еннелле, пăхса чарăнса тăраççĕ.*)

М ă н к ĕ р ӳ (*аллисене çӳлелле çĕклесе калать*). Эй, писмелле! Ырă киреметсем, ан пăрахăр, çырлаха хурăр. Утмăл çухрăм хура вăрман урлă, çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă илсе килчĕç пире урхамахсем тăван çĕршыва, пушăлла маар – туллилле: вун ик çӳпçе парнепе, ылтăн-кĕмĕл хушпупа, кĕмĕл-мерчен çи-пуçлă, хура куçлă кинпеле вĕçсе килтĕмĕр киле. Эй, ырă киреметсем! Айăп ан тăвăр пире: кунтан чипер кин

тупаймарăмăр тĕнчипе, кунтан пуян хĕр тупаймарăмăр ялĕпе. Кĕтетĕр пуль, хапăл тăватăр пуль тетпĕр: пирĕн парнесене илетĕр пуль, пирĕн кине йышăнатăр пуль тетпĕр. Ырă хăта хиселерĕ пире, ĕçтерсе çитерчĕ, сире те манмарĕ: хăпарту-кулаç, хур аш парса ячĕ – çавсемпе сире чӳклетпĕр; сывлăх парăр пирĕн кинпе кĕрӳне. Килĕм-çуртăм тулли йыш пулма, çак вăрман пек аслă пулма пехиллĕр, ырă киреметсем. Ырлăх парăр, çырлахăр пире, тайма пуçăм сире. (*Ӳксе пуççапаççĕ те чăмлаксем пăрахаççĕ, вара Пинерпие çĕлен çипсем пăрахтараççĕ, мăн кĕрӳ малалла калать.*) Тата пирĕн кин ваттисене хиселесе парне парас тет, ал шăллилĕх çĕлен çип, кĕпе-йĕмлĕх хăмаç çип пиллес тет. (*Леш кайса çакать.*) Йышăнатăр пуль, эй, ырă аттесем? Пилленипе çитрĕ пуль, ытлашшине каçарăр, çитменнине çитерĕр; ырă курăр çăтмахра, пирĕн кинпе кĕрĕве телей кӳрĕр пурнăçра – тайма пуçăм сире. (*Çĕнĕрен ӳксе пуççапаççĕ.*)

А й т а р. Эй, ырă аттесем, эпĕр сире манмарăмăр, пире те малалла ан пăрахăр. Пурнăçа ăнтарăр, тăшмансене пĕтерме пулăшăр! (*Çаврăнса.*) Ну, туй халăх, шăватпăр пуль малалла: ав хĕвел те епле илемлĕн хĕрелсе хăпарать! Тепĕр ушкăн хамăрăн ял-йышпа юрласа савăнар. Айтар туйĕ – таврара пĕрре! Айтар йăхĕ ĕлĕкреннех хăватлă пулнă: уншăн пурнăçра чару çук – пурте ăна парăмлă! Çаплă вĕт, туй халăх!

С а с ă с е м. Тĕрĕс!.. Тĕрĕс!..

М ă н к ĕ р ӳ (*мухтанса*). Ара, Айтартан пĕтĕм таврари чăвашсем хăраса тăраççĕ – пирĕн яла телей кӳрекен Айтар çех!

С а с ă с е м. Айтар пурнăçĕ ăнса пытăр!

А й т а р (*мухтанса*). Айтар вăйлă!.. Айтар хăватлă! Айтартан сĕм вăрман та чĕтресе тăрать. (*Кăшкăрать.*) Ай-та-ар!.. (*Хыçалти вăрманта «Айтар» тесе икĕ хут янрани илтĕнет: малтан хытăрах, вара кăшт çех; пурте хăраса итлесе тăраççĕ.*) Ха-ха-ха-ха! Ав мĕн теççĕ мана çĕр çулхи юмансем! Илтетĕн-и, Пинерпи? (*Леш чĕнмест.*) Мĕн чĕнместен нимĕн те, е, хăранипе чĕлхӳ çĕтрĕ-и? Ан хара, арăм. Мана юраканĕ – манран хурлăх курас çук. *(Аллине Пинерпи хулпуççийĕ çине хурать, çынсем хыçалалла утаççĕ.*)

П и н е р п и (*вĕçерĕнсе*). Хурлăх курас çук? Апла пулсассăн мĕншĕн эсĕ пирĕн улăха çынсене хăвартăн?

А й т а р. Унта сан ĕç çук. Айтар нихçан та, никамран та ниепле канаш та ыйтмасть, çавна пĕл малалла!

П и н е р п и. Ăна пĕлме мана кирлĕ мар, мĕншĕн тесессĕн эпĕ пурĕ пĕр санпа пурăнас çук! Анчах мĕн тума çынсене хăварнине эпĕ лайăх пĕлетĕп: эс пирĕн яла вут тĕртесшĕн, эсĕр каласшнине эп илтрĕм.

А й т а р (*кулать*). Ха-ха-ха-ха! Хăш ялсем вара эсĕ апла? Камăн арăмĕ?

П и н е р п и. Сентиерĕн.

А й т а р. Сентиерĕн?! (*Хаяррăн.*) Ыран кирек камăн пул, анчах паян эсĕ манăн! (*Туртса илсе каясшăн, анчах Пинерпи туртăнса чĕркуççи çине ӳкет.*)

П и н е р п и. Ыран?!. А ыранччен ăна вĕлереççĕ!.. Леш çынсем вĕлереççĕ!.. Чунсăр выльăх, ăçта сан чĕрӳ, ăçта этем чунĕ! (*Йывăç тункати çине выртса йĕрет.*) Сентиер, Сентиер!.. (*Хыçалтан вăрттăн çынсем сăнаса тăраççĕ.*)

А й т а р. Вĕлереççĕ?! Ха-ха-ха! Йăнăшатăн, Пинерпи. Айтар çынна нихçан та вĕлерсе курман – вĕлермесĕрех пурнăç ăнса пырать.

П и н е р п и. Вĕлерсе курман? Апла пулсан мĕн тума хăвартăн эс тарçусене?

А й т а р. Мĕн тума? Вăхăт çитсен пĕлĕн.

П и н е р п и. Эс суятăн! Вĕсем усал ĕç тума юлнă!

А й т а р. Айтар суймасть – тӳррипе калать. Кам ун майлă – ăна хисеплет, анчах унăн çулĕ çине хирĕç таракана е хурлакана – каçару çук!

П и н е р п и. А, чунсăр этем! Санăн тарçусем ăна паян вĕлернĕ!.. Сентиер! Сентиер!.. Санăн пуçна çиме çуратнă-шим мана аттепе анне? (*Каска çине выртса хыттăн йĕрет.*)

А й т а р. Ан ӳле, арăму-пуçу! Санăн тӳррӳна вĕлерсе эпĕ Айтар ятне çĕртместĕп: Айтар урăхла та тавăрма пĕлет.

П и н е р п и (*савăнса Айтара уринчен ыталать*). Эппин, вĕлерместĕн?.. Тархаслатăп сана, вĕлерес пулсан мана вĕлер, Сентиере ан пĕтер! Айтар, тĕрĕссипе калатăп: сана эпĕ пурĕ пĕр юратас çук, çавăнпа вĕлерес пулсан, çакăнтах вĕлер – аслă Киремете санран парне пулам, е Сентиерпе пĕрле пулмалла ту. Эсĕ вăйлă, санăн яту чаплă – кирек ăçта та Турă пӳрни тупăнĕ! Тархаслатăп сана – хĕрхенсем мана!

А й т а р. Юрĕ, хĕрхенем, савнипе тĕл пулмалла тăвам сана, анчах халь мар – каçхине, хĕвел анса ларсассăн, яла ыйăх пуссассăн.

П и н е р п и (*хăраса чакать*). Мĕн тени пулать ку? Мĕне пĕлтереççĕ ку хăрушă сăмахсем?

А й т а р. Мĕне пĕлтереççĕ? Акă мĕне: Айтар нихçан та çут хĕвеле хурлантармасть: ав епле шăппăн манăн вăрман вăранать, аслă хĕвел те сăрт хыçĕнчен вăтанса çеç хăпарать. Айтарăн ăшри çил-тăвăл шурăмпуçпе лăпланать, анчах (*тискерленсе*) хĕвел анса ларсассăн – уншăн чару çук!

П и н е р п и. Каçхине, хĕвел анса ларсассăн? (*Шăппăн сасăпа, чĕтресе.*) Паян каçхине пирĕн çамрăк ĕмĕр сӳнет!.. Ах, савни, мĕншĕн пĕрле вилме пире Пӳлĕх хушман-ши? (*Йĕрет.*)

А й т а р. Ха-ха-ха! Пĕрле вилме?! Ан хăра, Пинерпи, Айтар çынна вĕлермест, анчах мăшкăла тавратех. Пит курас килет пулсан эп сана çитес кунсенче савни патне илсе кайăп, анчах темĕн – юратăн-ши вара эсĕ ăна?

П и н е р п и (*савăнса*). Çитес кунсенче?!. Тавтапуç сана, Айтар, хĕрхеннĕшĕн, эппин, эп ăна çитес кунсенче куратăп.

А й т а р. Куратăн, анчах вăл сана курса ыталаймĕ. Хе-хе-хе!

П и н е р п и. Ах, Айтар, мĕншĕн эсĕ манран çаплах кулатăн, мĕншĕн суя сăмахсемпе ман чĕрене çиетĕн?! (*Выртса хыттăн йĕрет.*)

А й т а р. Мĕншĕн тесессĕн Айтар çынна вĕлермест, кулакантан хăй кулать.

2-мĕш курăнни

М ă н к ĕ р ӳ хыпаланса чупса кĕрет.

М ă н к ĕ р ӳ. Айтар, Айтар! Васкас пулать, хăвăртрах: темĕскерле çынсем кунталла лашасемпе килеççĕ.

А й т а р *(сасартăк хаярланса*). Ăçта?.. Кам хăять Айтара хирĕç тăма? (*Чупса тухса каять.*)

П и н е р п и. Турăçăм!.. Пӳлĕхçĕм, пулăшсам пире, хĕрхенсем!.. Сентиерсем хыçалтан хăваласа килмеççĕ-ши? (*Чупкаласа айккинелле пăхкалать.*)

А й т а р *(чупса кĕрет*). Ăçта васкатăн, Пинерпи? Ир савăнатăн: сана эпĕ хамран вĕçертес çук! (*Пырса туртса илет.*)

М ă н к ĕ р ӳ (*чупса кĕрет*). Айтар! Тарас мар-и пирĕн лашасем каннă хыççăн.

А й т а р. Тарас?! Кам калама хăйрĕ ку сăмаха?..Тарас?!. Айтар нихçан та тарса курман, ăна çĕнекен те ку таранччен никам пулман!.. Никам та çак вырăнтан пĕр утăм ярса ан пуснă пултăр: пĕтсен Айтарпа пĕрле пĕтĕр!

3-мĕш курăнни

Т у й ç ы н н и с е м чупса кĕреççĕ.

С а с ă с е м. Вырăссем килеççĕ!.. Пĕтрĕмĕр!.. Тарас!

А й т а р. Вырăссем?! Хуть те шуйттансем килччĕр – вырăнтан ан сикнĕ пултăр!.. Илтрĕр-и, Айтар çыннисем?

С а с ă с е м (*хăраса*). Илтрĕмĕр…

Ç а м р ă к р а х с к е р (*сиксе тухса*). Айтар, эпĕр вĕсене çĕнес çук – вĕсем пăшалсемпе!

А й т а р (*çапса ӳкерет*). Хăравçă!.. Айтар умĕнче кун пек сăмаха нихçан та ан каланă пултăр! (*Пурте хăраса чакаççĕ.*)

С а с ă с е м. Çитрĕç!.. (*Чакаççĕ. Айтар вырăнтан сикмест; Пинерпи пĕр енче хăраса кĕтсе тарать. Çамрăкрахскер ун еннелле тăрса утать.*)

4-мĕш курăнни

П р и с т а в п а с а л т а к с е м кĕреççĕ. Пĕрин аллинче пысăк пăчкă.

П р и с т а в. Ах вот они куда укрылись? К самому богу! Оцепите всех и уничтожьте эту гниль – Киреметь. (*Киремет йывăççи патне пырса пăхать.*) Тьфу!.. Тошно смотреть: не то наплевали, не то нагадили… А это что тут навешали? (*Йывăç çинчи çипсене, пирсене хĕç вĕçĕпе çаклатса çĕклет.*) Ха-ха-ха! Видимо, они здесь хвалу Киреметю возносили!.. (*Кулать, ытти салтаксем те кулаççĕ.*)

А й т а р (*чупса пырса çипсене ярса илет*). Кам хăять пирĕн Турра хурлама?

П р и с т а в. Это еще кто такой? (*Пырса тăрать.*) Мин ятлы? Ты, мерзлятина!

А й т а р (*тăрса калать*). Айтар!

П р и с т а в. Ах вот с кем я имею дело?.. Айдар! Это тот самый Айдар, который наводит страх на все окрестное население? Посмотрим, каков он из себя. Эй, ребята!.. Дайте им пилу! (*Салтаксем мăн кĕрĕве пысăк пăчкă тыттараççĕ.*) А ну, гоните их – пусть сами пилят!

М ă н к ĕ р ӳ (*каймасть*). Айтар!.. Ку таранччен тăшман айне пулманнине вырăс айне ан пул! Хăтар пире!

А й т а р (*сиксе тухса пăчкăна тытса илет*). Кастармастăп чӳк йывăççине! Касакана Киремет ылхантăр, çĕр çăттăр. (*Пăчка çĕре тытса çапса урипе пусса тăрать.*)

П р и с т а в. Отнимите сейчас же пилу и рубите сами!..Ружья держите наготове! (*Салтаксем пăчкăна тытса илме чупса пыраççĕ.*)

А й т а р (*пăчки çине выртса кăшкăрать*). Памастăп! Кастармастăп!..

М ă н к ĕ р ӳ (*кăшкăрать*). Халăх! Айтар çыннисем нихçан та çын айне пулса курман – айтăр хирĕç тапăнар, Айтар хушать.

С а с ă с е м. Тапăнас!.. Парăнас мар!.. (*Чупса пыраççĕ.*)

П р и с т а в (*кăшкăрса*). Дайте залп! (*Çӳлелле переççĕ, пурте хăраса чакаççĕ, пăчка Айтартан тытса илеççĕ.*) Ха-ха-ха!..Струсили, небось! Начинайте, ребята! (*Касма чупаççĕ, пристав кулса тăрать.*)

А й т а р (*пĕтĕм чунтан, аллисене çĕклесе чĕркуççи çинче калать*). Эй, хаяр Киремет! Хĕрхенсем пире!.. Хăвăн вăйлă хăватупа тăшмансене пĕтер! Пĕтчĕр усал ăрусем! (*Лере касни илтĕнет.*)

П р и с т а в. Пилите хорошенько, пусть молятся своему богу, пока его не срубили! Ха-ха-ха!

А й т а р. А!.. Вĕсем касаççĕ!.. Çук, кастармастăп! Çĕр çул пире сыхласа усракан таса йывăçа тивтерместĕп! Халăх, пирĕн Киремет пысăк парне ыйтать – вăл парнене пирĕн кӳрес пулать. Вырăс туррин хаяр пуçлăхне пирĕн пĕтерес пулать. Пуçлăр ман хыçран – Айтар хушать: вилĕмрен ан хăрăр!..(*Чупса пырса приставăн пăшалне ярса илет; тĕпĕртетнĕ чух пăшал сасси илтĕнет, вара Айтар ӳкет, пурте тараççĕ.*)

П и н е р п и. А!.. Ăна персе ӳкерчĕç!

Ç а м р ă к р а х с к е р. Пинерпи, эс хăвна ан ман, айта май килнĕ чух тарар!

П и н е р п и (*ĕненмесĕр ун çине пăхать*). Кам эс?..

Ç а м р ă к р а х с к е р. Кирек кам пулам, анчах паянтан Айтарăн мар! Айта пĕрле тарар!..

П и н е р п и. Йытта йытă вилĕмĕ. Айта каяр! (*Çынсем Айтар йĕри-тавра пуçтарăннă вăхăтра тараççĕ.*)

А й т а р (*аран кăшкăрать*). Ылханатăп мана вĕлерекене!.. Пирĕн тĕнрен кулакана – çак вырăнта çĕр çăттăр! Итлĕр, Айтар çыннисем: Киреметĕн парни Айтар пулчĕ. Хамăрăн тĕне лайăх сыхлăр!.. Ылханăр!.. Ылханăр!.. (*Вилет.*)

Ч а р ш а в

ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Сентиерĕн килĕ (хура пӳрт). Кăмака умĕпче хăйă çунать. Путмар çинче С е н т и е р выртать. Урамра çил шавлани, аслати авăтни илтĕнет. Вăхăтпа çиçĕм çиçет.

1-мĕш курăнни

С е н т и е р а м ă ш ĕ пӳрте кĕрет те сăхманне хывать.

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Ай-ай, урамра тĕттĕм те паян: те çумăр çăвас тет – çил шавлать арçури пекех. (*Сентиер патне утса пырса.*) Сентиер, уйран тăрса çимĕн-ши? Ытла та паян кунĕпе пĕр çăвар çимесĕр выртатăнçке. (*Сентиер ченмест.*) Эй, çывăрнă-мĕн... Апла пулсан тивес мар пулĕ, канлĕ ыйхинчен вăратас мар... Ах, Пӳлĕхçĕм, телей курма ӳстереймерĕм пĕртен-пĕр ывăла та. (*Сӳнме пуçланă хăйăа тӳрлетет, хыçалта çил улани илтĕнет.*) Ах, тур, тур!.. Çырлахсамах, хурлăхлă чуна ан çӳçентерсем. (*Татах çил шавлани илтĕнет, унтан аслати авăтать, ăна илтсен сасартăк Сентиер вăранать.*)

С е н т и е р. Ай!.. Кам унта? (*Хăрса ларать.*)

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Никам та çук, Сентиер, иксӗмӗр çех... (*Каллех аслати авӑтать.*)

С е н т и е р. Аслати авӑтать мар-и, анне?

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Çанталӑк пит усал: çумӑр пӗлӗчӗсем ним майӗ те çук чупаççӗ, усал çил вӗрнипе пӳрт умӗнчи хурӑн та тӳсеймесӗр авӑнать, çиçӗм çиçне чух хура пӗлӗтсем тискер кайӑксем пек анат еннелле шӑваççӗ... Камӑн çылӑхӗ Киремете кӳрентерчӗ-ши?

С е н т и е р. Ах, анне, эпӗ нимӗн те курмастӑп-çке – маншӑн çут тӗнче сӳнчӗ.

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Ан хуйхӑр, ачам: юмӑç тӳрленет терӗ, анчах парни пысӑк кирлӗ терӗ (*шӑппӑнтарах*). Айтарӑн пӳрт кӗтессине кайса кӗмӗл нухрат хӗстермелле терӗ.

С е н т и е р. Ха-ха-ха-ха!.. Нухрат мар – унӑн чӗри тӗлне çивӗч çӗçӗ тӑрӑнтармалла! Манран савнине уйӑрса çут тӗнчене пӗтернӗшӗн ӑна вӗлерсен те çылӑх пулас çук. Ах, анне! Манӑн куçсем курас пулсан эп тӗттӗм çӗре, усал çил-тӑвӑла пӑхмӑттӑм, хамӑн савнине каялла таврӑттӑм.

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Ан пӑшӑрхансам, ывӑлӑм, пӳлӗх пире манмӗ-ха, хӗрхенӗ. (*Апат çиме хатӗрлет.*) Кил-ха, çывӑрма выртиччен ларса çикеле. (*Çавӑтса кайса лартать.*)

С е н т и е р. Пинерпипе тепӗр хут тӗл пуласса эп ӗненетӗп, анне… Темшӗн халь çакӑнта килсе тухассӑн туйӑнать… Ах, чӑнахах килес пулсассӑн вара… вара эпӗр тӗттӗм çӗре пӑхмасӑр хӑтлӑха тарӑттӑмӑр…

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Эх, ывӑлӑм, ывӑлӑм… Курман куçпа ӑçта тухса кайӑн эс?

Сентиер. Эп курмасан Пинерпи курать – эпӗр пӗрле пӗтес çук. (*Çиçӗм çиçет.*) А!.. Анне, çиçӗм çиçмерӗ-и? (*Савӑннипе сиксе тарать.*)

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Ай, Пӳлӗхçӗм!.. (*Савӑнса.*) Куçу уçӑлчӗ-им, ывӑлӑм?

С е н т и е р. Анне, эпӗ çиçӗм çиçнине чиперех сисрӗм... Ӑçта шыв, çӑвам-ха, тен, сана та куракан пулӑп.

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ (*витре патне çавӑтса илсе каять*). Ах, ывӑлӑм, çу-ха, тен, чӑнахах уçӑлӗ. (*Ывӑлӗ куçне çӑвать, амӑшӗ кӗлӗ сӑмахӗсене каласа тӑрать.*) Ип пултӑр, сип пултӑр, вӗрни-сурни çак пултӑр, Сентиер куçӗ уçӑлтӑр. Тьфу, тьфу, тьфу!.. Сентиер пӳрӗ тасалтӑр, çичӗ ют куçӗ хупӑнтӑр… Тьфу, тьфу, тьфу!.. Пӑсӑк пулсан тӳрлентӗр, пӑсна пулсан – пӑсакана хӑйне пултӑр! Куç тухтӑр, куç тухтӑр – тасалтӑр, сирӗлтӗр! Тьфу, тьфу,тьфу!..

С е н т и е р (*тӑрса кантӑк патнелле утать*). Ах, анне, курмастӑп-çке нимӗн те, мӗншӗн тата çиçӗм çиçмест-ши? Сӗмсӗр тӑвӑл, çил-тӑвӑл! Шавла, ула – эс ман чуна хӑратас çук! Манӑн куçсем курмаççӗ пулсан та,

ăшри вĕри чун сивĕнмен-ха, тăшмана тавăрма вăйлă аллăм пур. (*Çиçĕм çиçет.*) А!.. Анне, кала мана: çиçĕм çиçрĕ вĕт?! (*Кантăкне уçса пăрахать.*)

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Çиçрĕ, ывăлăм, çиçрĕ – пехил Турра! Сентиер, çиçĕм çиçнĕ чух кантăка уçсан аван мар теççĕ те, ачам.

С е н т и е р (*кантăкран пăхса*). Çук, анне, уçă выртăр. Çиç тата, çиçĕм, çутат ман куçсене – усал тăшмана манран кулма ан пар! (*Аслати авăтать.*) Ха-ха-ха-ха!.. Авăтса хăратас тетĕн-и, сĕмсĕр тăвăл! Çук! Эп текех хăрамастăп! Кăшкăр, авăт, аслати, – иккĕн пĕрле пулса Айтара хирĕç тăрар! (*Амăшĕ патнелле çаврăнса.*) Анне, мĕншĕн тек çиçĕм çиçмест-ха – курасчĕ.

С е н т и е р а м ă ш ĕ (*кантăк патнелле пырса пăхать*). Кун пек çил-тăвăлта çумăр çуса каяканах мар – пĕлĕтсем те сапаланса пĕтеççĕ пулас.

С е н т и е р. Ан сапаланччăр вĕсем: ман çиçĕм çиçнине курас килет! Анне, тухса пăх-ха тула, мĕн хатланать унта çанталăк?

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Юрĕ, пăхăп, эс апатне ларса çи-ха, каллех сĕтел хушшипчен çимесĕрех тухрăн... Кил-ха, лар. (*Лартасшăн.*)

С е н т и е р. Çук, анне, манăн çиес килмест... Савăннипе çиçĕм çиçнине çех курас килет! Тухса пăх, анне. Çĕрĕпе çиçĕм çиçес пулсан – çĕрĕпе кантăк умĕнче ларатăп.

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Ах тур çак санпала... Тухса пăхам, эппин. (*Каять.*)

С е н т и е р (*пĕччен*). Ах, çут тĕнче! Ĕмĕрлĕхех çухалтăн-ши эс ман куç умĕнчен? (*Çиçĕм çиçет.*) Ав, çиçрĕ!.. Куртам, куртăм!.. Ха-ха-ха-ха!.. Куçран табакпа сапнипех эп пĕтес çук – куракан пулатăпах. (*Хăйă çунакан çĕрелле хыпаласа утать.*) А!.. Куратăп, тупата турă, куратăп... Ах, мăнтарăн хăй çутийĕ, эс ман ĕмĕрте нихçан та паянхи пек илемлĕ çунса курас çук!.. Епле илемлĕ эс! Е ман савни те паянхн пек нихçан та манăн чуна йăпатман-ши? (*Куçне шăлать.*) Ах, куççулĕ, хăçан юхма чарăнăн-ши эсĕ? Хăçан пӳре тасатса чирлĕ куçа уçăн-ши? Е ĕмĕрлĕхех савнине курмалла мар тăвасшăн-ши эс мана? Çук! Тӳрленет!.. (*Витрене хыпаласа тупса куçне çăвать.*) Куççуль сахал пулсан эп çăл шывĕпе çуса куç хупанкисене уçатăп! (*Çăварĕпе пĕрĕхсе çăвать.*) Куратăп!.. Куратăп!.. (*Кантăк патнелле чупса пырать, лерен хĕрлĕ çутă ӳкет.*) Çиç, çиçĕм!.. Манăн ăшри пусмăрлăха хăвăн хăватлă хĕрӳпе çунтарса яр!.. Ха-ха-ха-ха! Куратăп!.. Куратăп! (*Куçне шăлать.*) Ах, кăмăлсăр куç хупанкисем, мĕншĕн часах хупăнтăр? Хăçан эсĕр çăмăлланăр, е сире уçма та манн вăйăм çитмĕ-и? (*Шыв патнелле çума чупать.*) Е тăшмана пĕтерме те эсир хăпăнмăр-и? (*Çăвать, аякра çынсем кăшкăрашни илтĕнет, ăна илтсе*

сасартăк куçне çӳма пăрахса.) Ку мĕне пĕлтерет?! (*Кантăк патнелле чупать.*) Сасăсем?.. Мĕн пулнă?!

2-мĕш курăнни

С е н т и е р а м ă ш ĕ хыпаланса кĕрет.

Хыçалта çĕмĕрлеççĕ.

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Ах, Сентиер! Пĕтрĕмĕр!.. (*Ывăлне ыталать.*)

С е н т и е р (*сиксе тăрать*). Мĕн пулнă, анне?

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Яла вут хыпса илнĕ. Малтан улăхри утă капанĕсем çунма пуçланă, теççĕ, унтан çилпе ял çине килсе ӳкнĕ теççĕ – ăçта кайса кĕрĕпĕр, ывăлăм. *(Йĕрет.*)

С е н т и е р. А!.. Куна Айтар çыннисем тунă!.. Анне, çавăт мана. (*Кармашса пырать.*)

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Ăçта каяс тетĕн эсĕ курман куçупа?

С е н т и е р. Эпĕ, халăх умне тухса хирĕç тăма чĕнетĕп!.. Инкек çыпăçмасан пирĕн халăх ăса кĕрес çук! Паянхи пек çĕр пирĕн ялшăн пулман! Пĕтĕм ялпа кайса Айтара хăйне пĕтерĕпĕр! Эпĕр ылханнине Киремет хăй илттĕр! (*Хыçалта тата хытăрах шавлаççĕ.*) Анне, çавăт мана! (*Сентиере амăшĕ çавăтать.*)

3-мĕш курăнни

Улай питĕ хăвăрт чупса кĕрет, хыçалта сасă çывхарнăçемĕн çывхарать.

У л а й (*лешсене алăк патĕнче тĕл пулать*). Сентиер!.. Пытан ăçта та пулсан е тар хăвăртрах!

С е н т и е р (*сасартăк хăраса*). Тар?! Мĕншĕн тарас ман?

У л а й. Тар, унсăрăн пĕтетĕн: халăх сана вутта пăрахас тет.

С е н т и е р а м ă ш ĕ (*йĕре-йĕре калать*). А! Турăçăм!.. Хăтарсам, çырлахсам!

С е н т и е р. Вутта? (*Чĕтресе.*) Мĕншĕн?!

У л а й. Ахтупай пичче халăха Сентиер пирки пĕтетпĕр тет. Вăл çиллентермен пулсан Айтарпа тӳрĕ пурăнаттăмăр тет! Васка! Айта хам ертсе каям – анкартипе тарар.

С е н т и е р. Анне, эс юл, сана нимĕн те тăвас çук – эпĕр тарар! Пахчапа тарнине пире курас çук! Сывă пул, ырă анне! (*Ыталать.*) Тавтапуç сана çак тарана çитиччен хисеплесе ӳстернĕшĕн!

Улай кантăк патне кайса пăхса тăрать

С е н т и е р а м ă ш ĕ (*ыталаса*). А!.. А! Ывăлăм!.. Юлашки хут ыталаса юлам – пил сана. (*Ывăлĕ çине ӳксе йĕрет.*)

У л а й (*чупса пырса*). Çывхараççĕ – васка, Сентиер!

С е н т и е р. Сывă пул, анне!.. Ан йĕр, вилмелле пулсан – пӳлĕх çапла çырнă пуль. (*Ыталать.*) Ну, çавăт, юлташ. (*Каяççĕ, амăшĕ хыçалтан сĕтĕрăнсе пырса чĕркуççи çине ӳксе юлать.*)

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Ах!.. Ах, ывăлăм!.. Çапла вилме сана Турă усрарĕ-ши?! (*Хыттăн ӳксе йĕрет.*) Çакна курма ӳстертĕм-ши?.. (*Сасăсем çывхараççĕ. Хыçалта: «Ан чар, яр!» - тесе Сентиер кăшкăрни илтĕнет*)

4-мĕш курăнни

У л а й С е н т и е р е каялла ирĕксĕр кĕрет,
амăшĕ сиксе тăрать.

С е н т и е р (*кăшкăрать*). Ан чар, Улай, эп вĕсемпе хам калаçатăп, ман пурĕ пĕр пĕтес пулать.

У л а й. Çук, санăн тухма юрамасть: вĕсем курнă-курман чупса пырса ярса илеççĕ! Ахтупай пичче сан сăмаха итлес çук – халăх ун майлă. Эп каланине, тен, итлĕç. (*Чупса тухса каять.*)

С е н т и е р. Улай, пĕрле тухар! (*Сентиер амăшĕ ăна тытса чарать.)*

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Сентиер! Сентиер! Халăх урсассăн – ăна чĕлхепе чарас çук!.. Ан тух – хĕрхен хăвна! Тен, Улая итлĕç.

С е н т и е р (*сĕтел умнелле чупса пырса чĕркуçленсе ларса аллисене çӳлелле çĕклет*). Эй, хăватлă Киремет! Чăнахах эп айăплă пулсан вĕлер мана çакăнта! Тăшман вуттинче çунса кайиччен анне килĕнче пĕтем! (*Хыçалта халăх: «Вĕлерес, çунтарас, пĕтерес!» - тесе хытă кăшкăрашать.*)

С е н т и е р а м ă ш ĕ. А!.. Пĕтрĕмĕр!.. (*Ывăлне пырса ыталать.*) Пĕтрĕмĕр-çке, ывăлăм!

С е н т и е р (*сиксе тăрса*). Çук!.. Сентиере тăшман айне пулма çуратман – пĕтес пулсан, хам алăран пĕтем! (*Сĕтел çинчи çĕççе хыпалать.*)

С е н т и е р а м ă ш ĕ. А!.. Ывăлăм, мĕн тăвасшăн эс? (*Чупса пырса çĕççе ярса илет.*)

С е н т и е р. Анне, хăвăн ывăлна юрататăн пулсассăн хĕрхен мана – пар çĕççе.

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Хĕрхенетĕп, ывăлăм, юрататăп, анчах чикĕнсе вилме памастăп!

С е н т и е р (*хăвалать, амăшĕ çĕççипе хыçалалла чакать*). Анне, ан чар!.. Е саншăн ывăлу çунса асапланни авантарах-и?

С е н т и е р а м ă ш ĕ. Çук, ывăлăм, пĕтес пулсан пĕрле пĕтер – çĕççе памастăп! (*Сасăсем пĕрехмай çĕмĕрлеççĕ.*)

С е н т и е р (*чĕркуçленсе)*. Анне, тархасласа тилмĕретĕп: çĕççе памастăн пулсан – вĕлер мана ху; эс мана çуратнă – эсех вĕлер!

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Мӗн калатӑн эсӗ, Сентиер!.. Ан кӳрентер Турра!

С е н т и е р. Мана вӗлернӗшӗн мӗншӗн Турӑ кӳрентӗр? Е асап курма çех çуратнӑ-и вӑл мана? Кӳр, анне, çӗççе!.. (*Пырса амӑшне тытать, леш памасть, çӗçӗрен усӑнать.*)

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Памастӑп, Сентиер!..

С е н т и е р. Ан чар, анне, кӗреççӗ! (*Вӗсем тӗпӗртетнӗ вӑхӑтра Улай чупса кӗрет, ун хыççӑн – халӑх.*)

5-мӗш курӑнни

Сентиер амӑшӗнчен çӗççе туртса илсе чикӗнме аллнне çӗкленӗ вӑхӑтра Улай пырса ярса илет.

У л а й. Сентиер, мӗн тӑвасшӑн эсӗ? Хӑвна хӑравçӑ вырӑнне хумастӑн пулсан – хирӗç тӑрар!

С е н т и е р. Халӑх урнӑ – вӗсене чарас çук.

У л а й. Чараймасан чараймастпӑр, анчах парӑнмастпӑр!.. Санӑн куç курмасть пулсан – ман курать, парӑнмастпӑр!

С е н т и е р. Апла пулсан – эс калаш пек пултӑр!

6-мӗш курӑнни

Х а л ӑ х çӗмӗрӗлсе кӗрет. Малта А х т у п а й, хӑшӗ – çунса хуралнӑ рычаксемпе.

А х т у п а й. Акӑ вӗсем иккӗш те – тытӑр!

С а с ӑ с е м. Тытӑр!.. Çыхӑр!..

С е н т и е р. Халӑх!.. Ман куç курмасть пулсан та сире кам ертсе килнине пӗлетӗп! Ахтупай пичче!.. Астӑватӑн-и, мӗн каланӑччӗ эп сана: шӑпи çитсессӗн манӑн ал та сан çине çӗкленӗ теттӗм. Куçсӑр тунипе çитмен – эс татах Айтар майлӑ пулса манӑн чуна илесшӗн. Çук, Ахтупай! Эс мана чӗрӗлле çунма вутта пӑрахаяс çук!

А х т у п а й. Ах, суккӑрскер! Сан пирки пӗтӗм улӑхри утӑ çунса пӗтрӗ, халӑх выльӑхӗ выçӑ тӑрса юлчӗ – сана çунтарма мар, чӗрӗлле çӑва шӑтӑкне ямалла! Халӑх!.. Çыхӑр ӑна, илсе тухса çунтарӑр!.. (*Чупса пырать, анчах çав вӑхӑтра Улай çӗççине çӗлесе чупса пырать.*)

У л а й. Кам хӑять Сентиере тивме! (*Ахтупая чиксе пӑрахать, халӑх чакать.*)

С а с ӑ с е м. Тытӑр Улайне!.. Çунтарас иккӗшне те!.. (*Улайпа Сентиере пырса ярса илеççӗ.*)

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Ырӑ ял-йыш, ан тивӗрех ывӑла – хӗрхенӗр! (*Ывӑлӗнчен хӑпмасть; халӑх Улая сӗтӗрсе тухса каять; вара Сентиере сӗтӗреççӗ.*)

7-мĕш курăнни

Ç а м р ă к р а х с к е р сасартăк кантăкран «вĕçсе» кĕрет те кантăк умĕнчи патмар çине тăрса калать.

Ç а м р ă к р а х с к е р. Тăвансем!.. Чарăнăр !.. (*Пурте сасартăк лăпланаççĕ.*) Мĕн тăватăр эсир? Айтара вĕлернĕ!

С а с ă с е м (*кăшкăраççĕ*). Мĕнле çын ку?.. Кам ку?..

Ç а м р ă к р а х с к е р. Эп Айтар çынни пулнăскер, анчах паянтан унăн чапĕ сӳннĕ: ăна вырăссем вĕлерчĕç.

С а с ă с е м (*хăраса*). Вырăссем?! Вырăссем?!

Ç а м р ă к р а х с к е р. Сирĕн утусем çунса кайнишĕн хурланмалла мар, хамăрăн авалхи тĕнпе йăлана усрас тесен пурĕ пĕр тарас пулать хăтлăха!

С е н т и е р. Хăтлăха?! Ăçта Пинерпи! Мĕн тунă ăна Айтар?

8-мĕш курăнни

П и н е р п и, У л а й кĕреççĕ.

П и н е р п и (*чупса пырса Сентиере ыталать.*) Эп кунта, Сентиер! Пирĕн асăнса хунă хăтлăх çитрĕ!

С е н т и е р. А!.. Пинерпи, Пинерпи! Пĕр самант каярах килнĕ пулсан санăн савнинчен ĕнĕк шăрши çех юлатчĕ. (*Ахтупай кăшт аллине хăпартать.*)

П и н е р п и (*сасартăк ашшĕне палласа*). А!.. Ку кам?.. Атте?!

А х т у п а й (*аран калать*). Эпĕ, Пинерпи…

У л а й (*хăраса*). Вăл вилмен?

П и н е р п и (*ашшĕ умне чĕркуçленсе*). Эх, атте, хĕрĕн чунне хĕрхенмерĕн, Турра кӳрентертĕн – халь ав хăвăн ылхану хăвнах килсе тухрĕ.

А х т у п а й. Каçар, хĕрĕм…Пил… сире… Сентиерпе… (*Вилет.*)

П и н е р п и. Атте, атте!.. Вилчĕ… (*Кăшт тарсан Сентиер çумне тăрать.*)

С е н т и е р. Тавтапуç сана, Ахтупай пичче, вилес умĕн те пулсан пиллесе хăвартăн… (*Пинерпие ыталаса.*) Ан хурлан, Пинерпи, пирĕн пурнăç хăтлăхра!

Ч а р ш а в

1927.

Николай Айзман

КАМА САВАТЬ – ÇАВНА КАЯТЬ

Комедири çынсем:

Е р а с т М и х а л ч ă – колхоз председателĕн заместителĕ, 50 çулта.

О л ь г а О с и п о в н а – унăн арăмĕ, пахчаçимĕç бригадин бригадирĕ.

С в е т л а н а – вĕсен хĕрĕ, ялти фельдшерица.
Л ь в о в А л е ш а – халь çеç çартан таврăннă, шофер, салтак тумĕпе.
К в а с к о в К о л я – салтак тумĕпе, пуçĕ çинче летчик карттусĕ.
Х в е т л и – кӳршĕ арăмĕ.
С о к о л о в – моряк тумĕпе.
Комедири ĕçсем хальхи вăхăтра пулса иртеççĕ.

Ераст Михалчă пӳртĕнче. Сылтăмра алăк, унпа юнашар кăмака, ун хыçне чаршав карнă. Хыçалти планра икĕ чӳрече, чӳречесем хушшинче – сехет. Сулахайрасĕтел, ăçта кирлĕ унта пукансем. Кĕркуннехи хĕвеллĕ кун.

Пӳртре никам та çук.

Х в е т л и (*кĕрет*). Пирĕн килес! (*Пăхкалать.*) Ай-уй! Никам та çук-им?! Ăçта кайса пĕтнĕ вара?! Ольга аппа халь çех килтеччĕ-çке. Пăх-ха, ăçта кайма пултарнă-ха вăл? Светлани ăçта çӳрет-ши тата? Мана вăл шутсăр кирлĕччĕ. Çакăнта халичченех çывăрмасть пуль те?! (*Кăмака хыçне кĕрсе каять.*)

С в е т л а н а (*тултан вăркăнса кĕрет, унăн аллинче çыру*). Аннеçĕм, эпĕ çартан çырать тесе, вăл салтакран таврăннă иккен! Килĕнче. Мĕншĕн халиччен те мана пĕлтермен-ха вăл? Мĕншĕн халиччен те пирĕн яла килмен? (*Хветли чаршав хыçĕнчен тухса итлесе тăрать.*) Акă паян мана çураçма килетпĕр, тет. Мĕнле-ха капла сасартăк? Эпĕ нимĕн те хатĕр мар. Аттесем те нимĕн те пĕлмеççĕ.

Х в е т л и. Вĕсене пĕлтерме пулĕ те-ха...

С в е т л а н а (*вăрт çаврăнса*). Ой, кам пулчĕ ку?

Х в е т л и. Эпĕ-ха, ĕçпе килсеттĕм те... Мана темскер пулчĕ-çке, апат анмасть. Мĕн-мĕн кăна çисе пăхмарăм пуль, çук, пĕр çăвар та анмасть. Эсĕ пирĕн хвершăл ĕнтĕ, мĕнпе те пулин пулăшсам.

С в е т л а н а. Килте нимĕнле эмел те çук, атя фельдшерсен пунктне, эмел парса ярам.

Х в е т л и. Ара, мана ахаль те темиçе кун çимесĕр пурăнма хушрĕç те, пĕр вăй та çук. Халĕ эпĕ унта утса та çитес çук...

С в е т л а н а (*кукăль лартса парать*). Ме-ха, кукăль çи-ха... Çакнашкал кукăль ăнаканччĕ. Ĕнер какай кукли пĕçернĕччĕ те...

Х в е т л и. Юрĕ... Çисе пăхам-ха, эппин... (*Сăмаха улăштарса кукăль çиме тытăнать.*) Каччи мĕнлескер вара? Ватă-и, çамрăк-и?

С в е т л а н а. Ватă мар. Халь çех çартан таврăннă.

Х в е т л и. Э-э, апла-иç. Ăçтисем тата?

С в е т л а н а. Хамăр колхозранах.

Х в е т л и. Кам ратнисем? Кам таврашĕ?

С в е т л а н а. Чеснок Михали тавраш.

Х в е т л и. Э-э...

С в е т л а н а. Эсĕ лар-ха, эппин, эпĕ эмелне илсе килем... (*Хуллентерех.*) Хветли аппа, мана калама аван мар, эсĕ аттесене систер-ха.

Х в е т л и. Манăн апат анманни çинчен-и?

С в е т л а н а. Çук, мана çураçма килесси çинчен, кăштах хатĕрленччĕр.

Х в е т л и. Э-э, юрать, юрать.

С в е т л а н а (*чӳречерен пăхса*). Вăнă атте килет. (*Васкаса каять.*)

Х в е т л и (*чӳречерен пăхса*). Кукăлĕ çав тери тутлă иккен. Эпĕ хам та пĕçеркелетĕп те, манăн темшĕн кун пек тутлă пулмасть. Кун пек кукăль ĕмĕрте иккĕмĕш хут çиетĕп. Пĕрре вăртахăмсен Минӳкне кавча панă чух çинĕччĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă (*кĕрет*). Э-э! Пĕтĕм халăх уйра тырă вырать, эсĕ мĕн туса ларатăн кунта?

Х в е т л и. Ара, Ераст Михалчă, калать те... Чирлерĕм-ха эпĕ. Апат анмасть, апат çименнипе пĕтĕм вăй пĕтсе çитрĕ, ыйхă та çук.

Е р а с т М и х а л ч ă. Хăраххăн тăрса юлнăранпа çапла пулса кайрăн пуль-ха эсĕ, арçын çинчен шухăшлатăн пуль-ха, çавăнпа санăн ыйху вĕçнĕ, çавăнпа апат анмасть. Çапла-и?

Х в е т л и. Кай, ун пек-кун пекки çинчен ан калаç-ха эсĕ. Чăнах та чирлерĕм пулмалла...

Е р а с т М и х а л ч а. Халь мĕн тума килтĕн-ха, каллех тырă ыйтма килтĕн-и?

Х в е т л и. Çук, эмел ыйтса пăхас терĕм.

Е р а с т М и х а л ч ă (*тарăхса*). Эпир сана халлĕхе урăх пĕр пĕрчĕ те памастпăр. Ĕçе тухмастăн, чирлĕ тетĕн.

Х в е т л и. Чăнах та чирлĕ эпĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Чирлĕ пулсан килне кай та вырт, ял тăрăх янккаса ан çӳре. Атя, тух. Эпĕ пӳрте питĕретĕп.

Х в е т л и. И-и, Ераст Михалчă, калать те... Тăхта-ха, манăн сана пĕр сăмах каламалли пур. Хăвăр хĕр Светлана хушрĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Ăна мĕн çитмест тата?

Х в е т л и. Ăна-и? Ăна пурнăçра мăшăр çитмест.

Е р а с т М и х а л ч ă. Эпĕ мăшăр тупса парас çук вĕт ăна.

Х в е т л и. Мăшăрне хăех тупнă вăл, паян çураçма килеççĕ, тет.

Е р а с т М и х а л ч ă. Чăнах-и?

Х в е т л и. Чăн пулмасăр. Халĕ çех ман умра çыру илсе вуларĕ. Сире систерме хушрĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Каччи ăçтисем-ши?

Х в е т л и. Хамăр колхозранах, терĕ. Халь çеç çартан таврăннă, тет.

Е р а с т М и х а л ч ă. Пилĕк ял пĕрлешнĕренпе колхозĕ те пысăкланса кайрĕ те, çамрăксене палласа пĕтерме те çук. Ялĕсем те сапаланчăк лараççĕ. Хăш ялсем-ши ĕнтĕ вăл?

Х в е т л и. Ял ятне каламарĕ. Чеснок Михали таврашсем, тет.

Е р а с т М и х а л ч ă. Э-э, кăштах чухлатăп. Мĕнле, паянах килмелле терĕ-и?

Х в е т л и. Паянах терĕ çав.

Е р а с т М и х а л ч ă. Апла пулсан, кăштах хатĕрленмелле пулĕ. Халех лавккана чупас, пушă алăпа кĕтсе илме аван мар. (*Сĕтел-пукансем çине пăхса.*) Ох, ку хĕрарăм килте ĕçлеменни... Эсĕ сĕтел-пукансене тутăрпа кăшт-кашт туртса ил-ха. Ахалех тумăп. Çиес килет пулсан, авă, кукăль çи.

Х в е т л и. Юрать, Ераст Михалчă, юрать.

Кукăль çие-çие, сĕтел-пукансене шăлкалать.

С в е т л а н а (*кĕрет*). Хветли аппа, акă çак порошока ĕçсенех апат анакан пулать. (*Порошоксем парать.*)

Х в е т л и. Манăн халь порошоксăрах анма пуçларĕ-ха.

Е р а с т М и х а л ч ă. Светлана, хĕрĕм, çураçма чăнах килеççĕ-и вара?

С в е т л а н а. Чăнах.

Е р а с т М и х а л ч ă. Мĕнле вара...

С в е т л а н а. Кай, урăх ан ыйт, вăтантаратăн, атте. (*Тухса каять.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Чăнах пулсан, лавккана чупас. Васкас. (*Кайма тăрать.*)

Х в е т л и (*чӳречерен пăхса*). Чим, Ераст Михалчă, акă пĕр салтак кунта килет, каччи çакă пулмалла. Эсир каласăр, эпĕ тухам. (*Кукăль илсе*) Ах, кукăлĕ-ĕ ытарма çук тутлă. (*Каять.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Эккей-ха, лавккана çитсе килеймерĕм.

Л ь в о в (*кĕрет*). Пирĕн килес, сывă çӳреççĕ-и? (*Алă тытать.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Сывах-ха. Малалла иртсе ларăр.

Л ь в о в. Нимех те мар, кунта та юрать. (*Алăк патне ларать.*)

Е р а с т М и х а л ч а. Эсĕ шӳт тума пăрах-ха, каччăсем ĕлĕк мачча каштинчен мала иртмен. Эпир хальхи çынсем вĕт. Пирĕн мĕн ĕлĕкхи йăласене пăхăнса тăрас? Атя, ирт, сĕтел патнерех лар. (*Çавăтса лартать.*)

Л ь в о в. Кунта та юрать. (*Иртсе ларать.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Та-ак! Чеснок таврашĕсем пулатăн-и-ха?

Л ь в о в. Çапла. Пирĕн унта Чеснок таврашĕсем çур ял ытла.

Е р а с т М и х а л ч ă. Çапла та-ха... Кам ывăлĕ пулатăн-ха?

Л ь в о в. Мелентей Леонтьевич ывăлĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. А-а, пĕлетĕп, пĕлетĕп. Лутрарах старик, ĕлĕкрех мелникре ĕçлетчĕ.

Л ь в о в. Çапла. Эпĕ çара кайиччен ĕçлетчĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Та-ак! Çынсем каланă тăрăх, эсĕ авланма шут тытнă тет пулас?

Л ь в о в. Çапла. Авланас та пулать пуль. Мĕншĕн тесен эпĕ çара кайиччен пирĕн ĕне пурччĕ, вăл иртнĕ çура ӳксе вилнĕ. Эпир халь аттепе ĕнесĕрех пурăнатпăр. Эпĕ колхозра пăрусем пур тенине илтнĕччĕ. Сутмастăр-и тесе пĕлме килтĕм.

Е р а с т М и х а л ч ă. Чухлатăп, чухлатăп.

Л ь в о в. Малтан пӳрт юсасшăнччĕ, атте калать: «Малтан пăру туян», – тет.

Е р а с т М и х а л ч ă. Хуçалăхра ĕне кирлех ĕнтĕ.

Л ь в о в. Апла пулсан, Ерест Михалчă, сутăр мана пĕр пăрушне.

Е р а с т М и х а л ч ă. Çапла, пирĕн пушмак пăрушĕ лайăх-ха вăл. Ăна килĕшĕпĕр-и, тен.

Л ь в о в. Тата мана вутă турттарма машина кирлĕччĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Анчах бензин... Ӳсентăрана шăварас пулать теççĕ. Хăвах куратăн, пирĕн бензин çук. Эпĕ хам та хатĕрлеймерĕм. Автол та сахал. Типĕ кашăк тутана хырать. Малтан сĕрес пулать, сĕрсен кустăрма та лайăх чупать.

Л ь в о в. А-а, ăнлантăм. Эпĕ халех автол патне чупатăп. Пăрăва сутатăн, эппин?

Е р а с т М и х а л ч ă. Эпĕ хирĕç мар.

Л ь в о в. Машина та паратăн?

Е р а с т М и х а л ч ă. Машинăсем пур, каларăм-çке, анчах та сĕрес пулать.

Л ь в о в. Халех тупса килетĕп. (*Аяккалла*.) Ну, ку ĕçлĕ çынсемпе калаçма питĕ хĕн. Хăть те кирек мĕнле ĕçпе кил, сĕрмесĕр нимĕн те тухмасть. (*Васкаса каять.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Аван кĕрӳ пулать. Чеснок таврашĕсем япăх çынсем пулакан марччĕ-ха. Ман хамăн та кăштах хатĕрлес. Кивçен те пулин кайса илес. (*Каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а (*кĕрет*). Тем каларĕ ман старик. Темĕн çураçма килеççĕ терĕ. Мĕн те пулин хатĕрле-ха терĕ. Кама çураçма килеççĕ, камсем килеççĕ?.. Хăçан килеççĕ?.. Нимĕн те ăнланмарăм. (*Ларать.*) Фу-у! Ку пахчаçимĕç бригадирне суйланăранпа... пĕр канăç та çук.

Х в е т л и (*кĕрет*). Сана куртăм та чупсах килес терĕм-ха.

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕн кирлĕ пулчĕ тата?

Х в е т л и. Ара, сирĕн Светланăна çураçма килчĕç вĕт.

О л ь г а О с и п о в н а. Çураçма?

Х в е т л и. Çураçма çав, çураçма.

О л ь г а О с и п о в н а. Хăçан? Паян-и?

Х в е т л и. Халь çех каччи кунта кĕрсе Ераст Михалчăпа калаçрĕ. Пит аван каччă! Халь çех çартан таврăннă, тет.

С в е т л а н а (*кĕрет*). Анне, эсĕ манăн кĕрен кĕпене курман-и?

О л ь г а О с и п о в н а. Тытман.

С в е т л а н а. Якатсан тахăш чемоданне хунăччĕ, манса кайнă.

О л ь г а О с и п о в н а. Светлана, Хветли аппу суймасть-и, унăн сăмахĕсем тĕрĕсех-и?

С в е т л а н а. Мĕн çинчен вăл?

О л ь г а О с и п о в н а. Çураçма килесси çинчен.

С в е т л а н а. Суймасть. (*Каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а. Апла пулсан, мĕнпе ырă пулас-ха, мĕнпе хăналас?! Хам бригадирта ĕçленĕ пирки килте нимĕн те хатĕрлейместĕп! Хветли йăмăк, столовăйне чуп-ха, пĕр пилĕк порци яшка тата пилĕк порци катлет илсе кил.

Х в е т л и. Винегрет илес мар-и?

О л ь г а О с и п о в н а. Ăна килте те хатĕрлĕпĕр.

Х в е т л и. Эпĕ туххăмра илсе килетĕп.

О л ь г а О с и п о в н а. Ме укçа. (*Укçа парать.*) Çенĕкре пысăк бидон ларать унта, тата пĕр миска ил...

Х в е т л и. Юрать. (*Васкаса каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а. Акă кĕтмен япала. Хĕрĕн çулĕ çитнĕ те-ха... Каччи манерлĕ пулсан... (*Апат-çимĕç хатĕрлеме тытăнать.*) Пăх-халĕ, мĕнле пулса тухрĕ. Мĕнле маларах систермелле пулман-ха?

К в а с к о в (*кĕрет*). Аван-и?!

О л ь г а О с и п о в н а. Аван-ха, çӳрекелетпĕр. Хăвăр мĕнле?

К в а с к о в. Эпир те сиккипех чупатпăр.

О л ь г а О с и п о в н а. Пит аван, çамрăксене майĕпен çӳрени килĕшмест. Ирт, лар.

К в а с к о в. Кунта килсе пăхас терĕм-ха.

О л ь г а О с и п о в н а. Юрать. Çартан таврăнни нумай пулать-и?

К в а с к о в. Халь çех. Килнĕренпе виçĕ эрне çех ĕçлетĕп-ха.

О л ь г а О с и п о в н а. Ăçта вырнаçрăн вара?

К в а с к о в. Кунта, аякрах мар. Кану çуртĕнче культурник пулса ĕçлетĕп. Светлана Ерастовна килте çук-им тата?

О л ь г а О с и п о в н а. Килтеччĕ-ха, таçта, кĕлетре пулмалла. Платьесем хатĕрлет.

К в а с к о в. Эпир килессе пĕлнĕ-им вара вăл?

О л ь г а О с и п о в н а. Пĕлнĕ пулас.

К в а с к о в. Хотя эпĕ ун патне ĕнерех çыру çырса янăччĕ. Унпа курса калаçасчĕ те... Килĕшет пулсан, каçалапа ларас та пирĕн пата вĕçтерес.

О л ь г а О с и п о в н а. Кăштах лар-ха, халех ашшĕ килет пулмалла.

К в а с к о в. Вăл ватă çын ĕçĕ мар та... ашшĕне кĕтмесен те юрать. Манăн кăштах ĕçсем пур-ха. Кану çуртĕнчен хушса ячĕç. Анчах малтан Светланăпа калаçса татăлмаллаччĕ.

О л ь г а О с и п о в н а. Калаçăр, калаçăр, эпĕ халех чĕнсе кĕретĕп. (*Каять*)

К в а с к о в. Мĕнле-ши, ку Светлана Ерастовна килĕшет-ши, çук-ши? Вĕсем пирĕн пата сахал мар пырса кайнă теççĕ те-ха. Халь ĕç вăхăчĕ тесе кутăна перет пулинех.Концерт параймасан, директор «çакать» вара мана. Канакансем те кăмăлсăр пулаççĕ.

С в е т л а н а (*кĕрет*). У-у, Коля Кваскoв. Хăçан таврăннă вара эс?

К в а с к о в. Нумай пулмасть.

С в е т л а н а. Эсĕ канмалли çуртра культурник пулса ĕçлет терĕç-и çав?

К в а с к о в. Çапла.

С в е т л а н а. Кунта мĕн çăмăлпа тата?

К в а с к о в. Ятарласа сан пата килтĕм. Сирĕн хор кружокĕ питĕ вăйлă ĕçлет тенине илтрĕм эпĕ.

С в е т л а н а. Мухтанмаллах мар та... Пĕчĕк япаласем юрлакалатпăр.

К в а с к о в. Вот çав пĕчĕк япалана сирĕн пирĕн пата пырса юрласчĕ. Кĕçĕр пирĕн концерт пулмалла. Филармони артисчĕсем килме пулнăччĕ, пыраймастпăр тесе телеграмма панă. План тăрăх концерт пулмаллах.

С в е т л а н а. Çук, эпĕ кĕçĕр пыраймастăп. Эсир те пĕр инсценировка илсе кайăр, унта эпĕ юрламастăп.

К в а с к о в. Инсценировки лайăх-и?

С в е т л а н а. Авалхи чăваш туйĕ. Сирĕн канакансем валли шăпах пулать. Вылякансем нумай та...

К в а с к о в. Кампа калаçмалла?

С в е т л а н а. Авă, правление кай та счетоводпа калаç. Нина ятлă вăл. Питĕ маттур хĕрача.

К в а с к о в. Тавтапуç, пĕр инкекрен хăтартăн, Светлана. Манăн тепĕр инкек пур. Эпĕ кĕçĕр чăваш юррисене тухса юрлатăп. Çарта чухне те самай юрлакаланă. Санăн тĕрленĕ арçын кĕпи çук-и?

С в е т л а н а. Пур.

К в а с к о в. Парса яратăн-и?

С в е т л а н а. Илсе кай ара, анчах ан варала.

К в а с к о в. Мĕн эсĕ?!

С в е т л а н а. Ну, ĕç пĕтрĕ-и? Манăн паян васкавлă ĕçсем пур-ха.

К в а с к о в. Светочка, чим-ха, тепĕр ыйту пур.

С в е т л а н а. Хăвăртрах кала.

К в а с к о в. Ку саншăн кулăшла пуль те-ха... Сирĕн колхозра кăçал помидор лайăх пулнă теççĕ.

С в е т л а н а. Çав тери ăнса пулнă.

К в а с к о в. Канмалли çуртри снабженец мана ыйтса пĕлме хушрĕ. Сирĕн колхозра помидор сутмаççĕ-ши, тет.

С в е т л а н а. Сутаççĕ.

К в а с к о в. Пирĕншĕн хулана кайса илме инçе. Кампа каласмалла?

С в е т л а н а. Председательпе ĕнтĕ. Пахчаçимĕç туса илекенсен бригадирĕ – манăн анне. Председатель çук пулсан, аттепе курса каласăр, вăл председателĕн заместителĕ.

К в а с к о в. Мĕн ятлă-ха вăл?

С в е т л а н а. Ераст Михалчă теççĕ.

К в а с к о в. Питĕ аван. (*Блокнот çине çырать.*)

С в е т л а н а. Анчах лайăхрах помидор илсе каяс тетĕр пулсан, аннепе каласăр.

К в а с к о в. Мĕн ятлă-ха вăл?

С в е т л а н а. Ольга Осиповна теççĕ.

К в а с к о в. Пит аван. (*Каллех çырать.*)

О л ь г а О с и п о в н а (*кĕрет, аллинчи винегрет туриллкине сĕтел çине лартать*). Эсир каласăр, каласăр.

К в а с к о в. Эпир пурин çинчен те каласса татăлтăмăр ĕнтĕ.

С в е т л а н а. Акă, аннепе каласса пăхăр.

К в а с к о в. Малтан правление кайса килем-ха. Кăшт тăхтасан кĕретĕп. Эсĕ тĕрленĕ кĕпе хатĕрле вара.

С в е т л а н а. Манăн тахçанах хатĕр тăрать.

К в а с к о в (*аяккалла*). Хĕрлĕ помидор кайса илем-ха. (*Каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а. Ну, Светлана, мĕнле, сĕтел хатĕрлемелле-и?

С в е т л а н а. Хатĕрле, хатĕрле, вĕсем халех килсе çитеççĕ ак. (*Каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а. Аван качча пулмалла. Хăйне лайăх тыткалать. Сăнĕнчен те япăх мар. Тумĕ, тумĕ мĕнле тата, карттусĕ мĕнле ялкăшса тăрать. Лейтенант пулнă ĕнтĕ. Ун пеккине такам та юратмалла.

Е р а с т М и х а л ч ă (*кĕрет. Аллинче пĕр четвĕрт, ăна сĕтел çине лартать*). Ну, ман енчен пурте хатĕр. Халь тесен халь çураçма

пултаратăп. (*Чĕнет.*) Карчăк, Ольга Осиповна, эсĕ пирĕн Светланăна çураçма килни çинчен пĕлетĕн-и çак?

О л ь г а О с и п о в н а. Пĕлмесĕр ара, пĕлетĕп. Каччи халь çех кĕрсе тухса кайрĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Эсĕ каччине куртăн апла?

О л ь г а О с и п о в н а. Куртăм-çке, куртăм.

Е р а с т М и х а л ч ă. Аван каччă вĕт?

О л ь г а О с и п о в н а. Эсĕ те курса калаçрăн-им?

Е р а с т М и х а л ч ă. Калаçмасăр ара, калаçрăм. Кунта паçăрах кĕрсе тухса кайрĕ вăл. Кăшт тăхтасан килетĕп терĕ.

О л ь г а О с и п о в н а. Çапла терĕ-çке.

Е р а с т М и х а л ч ă. Мĕнле, хĕре качча паратпăр пулĕ?

О л ь г а О с и п о в н а. Парас, парас. Кун пек кĕрӳ тупăннăшăн турра шĕкĕр темелле.

Е р а с т М и х а л ч ă. Епле кĕрнеклĕ вăл, мĕн çӳллĕш. Манран пĕр шит те çӳллĕ пулĕ!

О л ь г а О с и п о в н а. Ытла çӳллĕ пек туйăнмарĕ-çке. Санран кăштах лутрарах пулĕ. Çарта пулнă, офицер!

Е р а с т М и х а л ч ă. Çарта пулнă, çапла, анчах офицерне пĕлместĕп.

О л ь г а О с и п о в н а. Санăн куçусем ăçта? Ара, тумне асăрхамарăн-и?

Е р а с т М и х а л ч ă. Курмарăм.

О л ь г а О с и п о в н а. Суккăрланнă пуль эс...

Е р а с т М и х а л ч ă. Пĕр сăмахпа каласан, аван шофер пулнă пулмалла.

О л ь г а О с и п о в н а. Шофер мар ĕнтĕ, летчик.

Е р а с т М и х а л ч ă. Летчик мар-çке, шофер тетĕп.

О л ь г а О с и п о в н а. Пĕлместĕп. Эпĕ çарта пулса курман та, самолет çинче те шоферсем пулаççĕ-ши?

Е р а с т М и х а л ч ă. Кирек кам пулсассăн та, пирĕн ăна лайăх кĕтсе илмелле. Санăн мĕнле, çыртмаллисем пур-и?

О л ь г а О с и п о в н а. Хветлине паçăрах столовăйне чуптартăм та... Темшĕн çитмерĕ.

Х в е т л и. (*васкаса кĕрет, пĕр аллинче пысăк бидонпа яшка, тепĕр аллинче пĕр миска котлет*). Ах, кĕтсе хăшкăлтăм. Эпĕ столовăй умне чупса çитрĕм çех, ман сăмса умĕнчех перерыва хупса лартрĕç. Кĕт, кĕт, аран кĕтсе илтĕм. Мейĕр, ăçта лартмалла?

О л ь г а О с и п о в н а. Акă, тĕпел кукрине ларт.

Х в е т л и (*лартать*). Çул çинче çиле ну кастаратăп, ну васкатăп. Пĕр çĕрте такăнса ӳкрĕм те, мискăран пĕр котлечĕ палт! тухса ӳкрĕ.

Пăхатăп, кăштах вараланнă, мискăна каялла хума аван мар, терĕм. Кăшт-кашт саппун аркипе шăлкаларăм та хамах çисе ятăм.

О л ь г а О с и п о в н а. Пĕр котлет нимех те маар-çке.

Е р а с т М и х а л ч ă. Санăн апат анмасть теттĕнччĕ-çке эсĕ?

Х в е т л и. Паян анать. Темшĕн килĕшрĕ, хам та пĕлместĕп.

Е р а с т М и х а л ч ă. Ыран ĕçе тухатăн пуль, эппин?

Х в е т л и. Ыранччен темле-ха. Киле кайсан çисе пăхам, анать-и, анмасть-и. Каям-ха. Килте апат пĕçерсе пăхам. (*Каять*.)

Е р а с т М и х а л ч ă. Янккама хĕрарăм. Килӳнте пĕр паранкă çех вĕт сан. Кахал, ни купăста, ни сухан лартмасть.

О л ь г а О с и п о в н а. Эккей, вĕсене шăвармалла-çке-ха. Шывĕ инçе.

Е р а с т М и х а л ч ă. Ялта яшка пĕçернĕ, килте пăтă пăтратма та пĕлмен, теççĕ ваттисем. Ку чисти çавăн пек, яла тухсан темĕн те тăвать, килĕнче яшка пĕçерме те пĕлмест. (*Пауза*.) Эх, пĕр пилĕк-ултă бутылка напиток илмеллеччĕ те.

О л ь г а О с и п о в н а. Нӳхрепри пичке тĕпĕнче сăра пур та...

Е р а с т М и х а л ч ă. Сăра пĕтмен-и вара?

О л ь г а О с и п о в н а. Пĕрер витре тухать пуль-ха.

Е р а с т М и х а л ч ă. Тавай, халех ăсса кĕрес ăна.

О л ь г а О с и п о в н а. Кăштах шăркаланнă пуль тетĕп те...

Е р а с т М и х а л ч ă. Ним çукран нимĕр тенĕ пек, каять! Сода яратпăр та чиперех чашлать.

О л ь г а О с и п о в н а. Атя, ăсса кĕрер, эппин, пĕччен ăсма май çук, пичкине таяс пулать.

Е р а с т М и х а л ч ă. Халиччен мĕншĕн шарламастăн ун çинчен. Атя, ăçта витри?

О л ь г а О с и п о в н а. Çенĕкрех. (*Каяççĕ. Пауза*.)

Л ь в о в (*кĕрет те кĕсйинчен çур литр эрех кăларса лартать*). Акă бензин! (*Тепĕркĕсйинчен çу кăларса хурать.*) Акă автол. Бензиипе çăвар ăшне чӳхесен, автолĕпе хырăма сĕрсен вара пăру пулать. Пĕрене турттарма машина та пулать, пĕрене пулсан, пӳрт юсанать. Пӳрт юсасан, авланма та юрать.

К в а с к о в (*кĕрет*). Салам.

Л ь в о в. Колька, мур илесшĕ! (*Ыталаса чуптăваççĕ.*)

К в а с к о в. У-у! Алеша, эсрелĕ, эсĕ хăçан таврăннă?

Л ь в о в. Пĕр эрне çех-ха. Эсĕ ху хăçан таврăннă?

К в а с к о в. Виç эрне çех. Кам пулса килтĕн-ха?

Л ь в о в. Шофер! А эсĕ?

К в а с к о в. Эпĕ летчик!

Л ь в о в. Кунта мĕн ĕçпе?

К в а с к о в. Помидор илме снабженец хушса ячĕ те. Акă хĕрлĕ помидор илме хĕрлине илтĕм. (*Кĕсйинчен хĕрлĕ эрех кăларать.*) Ку заместителĕ ĕçкелет терĕç те... Эсĕ мĕн ĕçпе?

Л ь в о в. Пăру туянма тата машина ыйтма. Ку замĕ хăй каларĕ; сĕрес пулать, терĕ. Акă эпĕ те çур литр илсе килтĕм.

Ераст Михалчăпа Ольга Осиповна сăра ăсса кĕреççĕ.

К в а с к о в п а Л ь в о в. А-а, акă хуçисем те килчĕç. Эпир хамăрах хуçаланатпăр.

Е р а с т М и х а л ч ă. Пит аван-ха, пит аван. (*Львова.*) Ку мĕнле çын тата?

Л ь в о в. Ку манăн юлташ, летчик.

Е р а с т М и х а л ч ă. А-а, апла-иç.

О л ь г а О с и п о в н а (*Кваскова*). Ку кам пулчĕ тата?

К в а с к о в. Ку манăн юлташ, шофер.

О л ь г а О с и п о в н а. Э-э... (*Тĕпеле иртет.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Ну, ларăр, вырнаçăр. (*Львовпа Кваскова сĕтел хушшине лараççĕ.*) Малтан хĕрлĕ эрехрен пуçлар-ха.

Л ь в о в. Çук, малтан шурă пуçлинчен пуçламалла.

К в а с к о в. Ман шухăшпа хĕрлинчен.

Е р а с т М и х а л ч ă. Çук, хĕрлипе тăрламалла.

Л ь в о в. Юрать, эпĕ пуçлам-ха. (*Эрех тултарать.*) Тытăр! (*Тытаççĕ.*) Ну малашне те пăрусем хутшăнсах пыччăр. Пушмак пăрушăн! (*Ĕçеççĕ.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Çапла. Ман Светлана качча каять.

К в а с к о в. Чăнах-и?

Е р а с т М и х а л ч ă. Çапла терĕмĕр ĕнтĕ. (*Куркине тултарать.*) Пулас кĕрӳ сывлăхĕшĕн ĕçер-ха. Карчăк, ăçта çак эсĕ?

О л ь г а О с и п о в н а (*тĕпел кукринчен тухса*). Эпĕ кунтах та-ха... Мĕн терĕн эсĕ? (*Çимеллисем лартать.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Пулас кĕрӳ сывлăхĕшĕн ĕçмелле тетĕп-çке-ха.

О л ь г а О с и п о в н а. Ара, ĕçмелле, ĕçмелле. Пирĕн кĕрӳ лайăх çын пулчĕ ĕнтĕ. (*Кваскова çине пăхса.*) Кун пек кĕрӳпе эпир ниçта кайсан та намăс курас çук. Çапла-и, Колька?

К в а с к о в. Эпĕ ун пирки нимĕн те калама пултараймастăп та-ха. Эпĕ сире сăмах май хĕрлĕ эрех ĕçтерем-ха. (*Тултарать.*) Килĕр, тытăр. (*Ĕçеççĕ.*)

О л ь г а О с и п о в н а. Каларăм вĕт сана кĕрӳ аван çын тесе, юлташĕ те пит аван. Эсĕ ăна пит аван паллатăп терĕн-и-ха?

Л ь в о в. Çара та пĕрлех кайнăччĕ...

К в а с к о в. Çапла, катăк йĕм тăхăннă чухне те пĕрле чупса... Сирĕн Светлана ăçта çӳрет-ха ку таранччен, мĕншĕн пӳрте кĕмест? Халех кайма вăхăт çитет. Лере çитсенех пирĕн кĕçĕр туй тумалла. Кунтан пĕр машина юрлакансем пымалла.

О л ь г а О с и п о в н а. Туйне мĕншĕн кĕçĕрех тумалла-ха?

К в а с к о в. Пирĕн план тăрăх çапла.

О л ь г а О с и п о в н а. Ĕçлĕ çынсен çапла пуль ĕнтĕ, çапла пуль. Халĕ пур ĕçе те план тăрăх туса пыраççĕ те...

С в е т л а н а (*кĕрет те Кваскова тĕрленĕ кĕпе парать*). Ну, Колька, ан кӳрен, кунтан лайăххи çук ман.

К в а с к о в. Питĕ хитре-çке! Ку кĕпепе намăс курмалла мар. Кĕçĕр туйра тăхăнатăп та, юрра шăрантаратăп кăна! Тавтапуç сана, Светлана.

С в е т л а н а каять.

К в а с к о в. Ну, тата унти халăх валли пĕр икçĕр килограмм помидор кирлĕ пулать. Мана çапла каласа ячĕç. (*Ольга Осиповнăна.*) Сирĕн колхозра помидор пĕтмен пулĕ-ха?

О л ь г а О с и п о в н а. Халь пиçеккеннисем темĕн чухлех.

К в а с к о в. Юрать. (*Львова*.) Ну, Алеша, каятпăр пулĕ.

Л ь в о в. Каясси кайăпăр та-ха, пушмак пăру çинчен каласса татăлмаллаччĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Пурин çинчен те каласса татăлтăмăр пуль. Эх, эрех сахалтарах пулчĕ. Карчăк, кайса килмеллеччĕ пуль?

К в а с к о в. Эпир хамăрах кайса килетпĕр. Кун пек ĕç тунă хыççăн пирĕн ĕçтермелле. Алеша, атя. (*Каяççĕ.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Карчăк, Ольга Осиповна, аван кĕрӳ пулать вĕт, а?

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕн каласси пур ара, мĕн каласси пур.

Е р а с т М и х а л ч ă. Пире хисеплесе «çуттийе» илсе килчĕ.

О л ь г а О с и п о в н а. Ăна илекенни юлташĕ кăна вĕт вăл.

Е р а с т М и х а л ч а. Юлташĕ пулсан та питĕ ырă каччă.

О л ь г а О с и п о в н а. Иккĕшĕ те аван каччăсем.

Е р а с т М и х а л ч ă. Ырă кăмăллă пулман пулсан, вĕсем тепĕр хут лавккана та каяс çукчĕ.

О л ь г а О с и п о в н а. Вĕсем ырă кăмăллă та, эпир хамăр мĕнле? Хамăр енчен нимех те пулмарĕ. Укçа парса ямаллаччĕ хăть, старик. Мĕнле çавна та чухламастăн. Эпĕ чупам-ха. (*Укçа пама тухса чупать.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Ку, шоферĕ, питĕ вĕреннĕ çын пулмалла-ха, Светлана унпа мăшăрлансан пĕрре те япăх пулмасть.

С в е т л а н а (*юрлакаласа кӗрет*). Атте, халех çитеççӗ пулмалла, эсир кăштах хатӗрлерӗр-и?

Е р а с т М и х а л ч ă. Ытлашши хатӗрлемесен те... Каччи простой çын, шофер! Ытла тиркесех пăрахас çук терӗмӗр те...

С в е т л а н а (*тӗлӗнсе*). Шофер?..

Е р а с т М и х а л ч ă. Шофер çав..

С в е т л а н а. Шофер мар ӗнтӗ, моряк.

Е р а с т М и х а л ч ă. Мӗнле моряк пултăр вăл, шофер!

С в е т л а н а. Эсӗ кам çинчен, мӗнле шофер çинчен калаçатăн вара?

Е р а с т М и х а л ч ă. Акă халь кунта килекен шофер çинчен.

С в е т л а н а. Вăл мана çураçма килмен пуль те?

Е р а с т М и х а л ч ă. Епле килмен?! Алăк урлă каçнă-каçманах пушмак пăру çинчен сăмах пуçласа ячӗ. Пушмак пăру урăх пирӗн кам? Пӗр эсӗ çех.

С в е т л а н а. Çук, атте, эпӗ вăл шофера качча каймастăп.

Е р а с т М и х а л ч ă. Епле каймалла маар-ха тата? Каччи маттур, авланас та пӳрт юсар, тет. Чеснок таврашсене лайăх пӗлетӗп ӗнтӗ. Ырă кăмăллă, ӗçчен çынсем, пӗри тепринчен хастар.

С в е т л а н а. Çапла пулӗ те, эпӗ пурпӗрех каймастăп. Эпӗ ку шофера юратмастăп, атте. Манăн урăх, чун савнă каччă пур. Эпӗ кама саватăп, çавна каятăп.

Е р а с т М и х а л ч ă. «Çавна каятăп». Шыраса тупрăн пулӗ-ха пӗр-пӗр кил-çуртсăр çынна, хулана туртăнатăн пуль-ха?

С в е т л а н а. Кирек мӗнле пулсан та, эпӗ вăл шофера каймастăп.

Е р а с т М и х а л ч ă. Епле каймастăн пулать?! Хăв ирӗкпе каймастăн пулсан, эпӗ сана ирӗксӗр парса яратăп.

С в е т л а н а. Ун пек енне кайсан, эпӗ килтен тухатăп та таратăп. (*Каять.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Мӗн, мӗн терӗн эсӗ?! Чим-ха, чим!

Хыççăн тухать.

О л ь г а О с и п о в н а (*кӗрет*). Укçине çитсе патăм-ха. Кун пек каччăна вӗçертсен!.. Епле молодецă вăл. Çарта летчик пулнă, халӗ вырăнта пурăнать!

С в е т л а н а (*кӗрет*). Анне, пирӗн утюг ăçтарахчӗ çав, эсӗ курман-и?

О л ь г а О с и п о в н а. Çенӗкре пулмалла.

С в е т л а н а. Кӗрен кӗпене утюгламаллаччӗ те...

О л ь г а О с и п о в н а. Эсӗ, хӗрӗм, кӗреннине мар, хӗрлӗ кӗпӳне тăхăн-ха. Каччи простойскер мар, летчик!

С в е т л а н а. Летчик? Мĕнле летчик çинчен калаçатăн эсĕ?

О л ь г а О с и п о в н а. Акă, халь хамăр пата килнĕ летчик çинчен.

С в е т л а н а. Вăл мана çураçма килмен вĕт.

О л ь г а О с и п о в н а. Епле килмен?! Пӳрте кĕнĕ-кĕменех сан çинчен ыйтрĕ. Сана илсе каясчĕ, тет. Санпа курнăçнă хыççăн ху каларăн-çке, пурин çинчен те калаçса татăлтăмăр, терĕн.

С в е т л а н а. Эсĕ тĕлĕк куратăн пуль, анне?

О л ь г а О с и п о в н а. Тĕлĕк мар. Чăнах та, сана çураçма килнĕ вăл.

С в е т л а н а. Атте калать, шофер мана çураçма килнĕ, тет. Эсĕ летчик килнĕ тетĕн.

О л ь г а О с и п о в н а. Шоферĕ вăл летчикăн юлташĕ кăна. Ку летчика качча каймастăн-и? Çавăн пек çынна та тиркетĕн-и?

С в е т л а н а. Тиркесе мар, манăн хамăн каччă пур. Кăна эпĕ, хăть пус-кас, каймастăп. (*Каять.*)

О л ь г а О с и п о в н а (*тарăхса*).Ох, ку хĕрупраçа!.. Ашшĕ-амăшĕ сăмаххине турпас вырăнне те хумаççĕ. Çак каччăна тиркемелле-и? Çак каччăна савмалла мар-и? Яштак, хитре! Çипуçĕ мĕне тăрать.

Е р а с т М и х а л ч ă (*кĕрет*). Ăçта кайса кĕчĕ çав пирĕн хĕр. Пĕр тарăхсан кĕлете питĕрсе лартатăп акă. Пăх-ха, килтен тухса таратăп тет.

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕншĕн тата?

Е р а с т М и х а л ч ă. Эпир кăмăллана йĕкĕте качча каяшăн мар.

О л ь г а О с и п о в н а. Çапла çав. Эпĕ те халь çех сăмахларăм та, тем тусан та каймастăп тет. Каччи епле аван!

Е р а с т М и х а л ч ă. Аван пулмасăр.

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ?!

Е р а с т М и х а л ч ă. Кĕлете питĕрсе лартас та çĕрле вăрлаттарса ярас.

О л ь г а О с и п о в н а. Чăн та çапла тăвас. Каччине юратмастăп тет те, нимех те мар, пĕрер уйăх пурăнсан килĕшет.

К в а с к о в (*аккордеонпа чăваш юррине юрласа кĕрет. Унпа пĕрле Львов та кĕрет, вăлта юрлать*).

Хурăн тăрри хуçăкшăн
Кайăк çĕре ларас çук.
Эпир кунта килсессĕн те,
Креке пушă ларас çук.

Сăри лайăх, кăпăклă,
Ма ĕçес мар кăпăкшăн.
Хăти лайăх кăмăллă та,
Ма юрлас мар кăмăлшăн.

К в а с к о в. Алеша, ну-ка, ташла! (*Ташă çемми калать.*)

А л е ш а (*сăвă каласа ташлать*).

Сад варринчи улмине те
Татса çиес шухăш пур.
Çакă ялăн хĕрĕсене те
Качча илес шухăш пур.
Ташлама чарăнать.

Е р а с т М и х а л ч ă. Эх, ытла та ырă-çке, ытла та ырă! Карчăк, Ольга Осиповна! Ăçта пирĕн хĕр? Ăçта Светлана? Апат хатĕрлес те çамрăксене сĕтел хушшине лартас.

Л ь в о в. Апат çисе тăмасан та юрать. Ну, Ераст Михалчă, тавтапуç хăна тунăшăн, эпĕ каятăп, ман васкамалла. Пăрушне ыран пырса çавăтса каятăп вара?

Е р а с т М и х а л ч ă. Мĕнле çавăтса каятăп?

Л ь в о в. Пăрăва йăтса каяймăн ĕнтĕ.

Е р а с т М и х а л ч ă. Чим-ха, чим. Эсĕ пушмак пăру çинчен калаçрăн-çке.

Л ь в о в. Çапла. Колхозра сутлăх хĕл каçнă пăру пур терĕн те...

Е р а с т М и х а л ч ă. Эсĕ манăн хĕр çинчен калаçман, эппин?

Л ь в о в. Çук.

Е р а с т М и х а л ч ă. Ман хĕре çураçма килмен?

Л ь в о в. Çук. Ну, сывă пулăр-ха, эпĕ кайрăм. (*Каять*.)

Е р а с т М и х а л ч ă. Ак сана туй! Мĕнле ухмах иккен эпĕ, мĕнле ухмах! (*Тула тухса каять.*)

К в а с к о в. Ну, ман хамăн та каймалла. Халиччен хористсем пуçтарĕнчĕç пулĕ. Манăн кĕçĕр концерт. Чăвашсен авалхи туйне кăтартмалла. Ну, Ольга Осиповна, хăна тунăшăн тавтапуç. (*Алă парать.*) Помидорне илме ыран килеççĕ вара.

О л ь г а О с и п о в н а. Чим-ха, качча, эсĕ те хĕр çураçма килмен-и вара?

К в а с к о в. Çук. Хĕр çураçасси çинчен шухăшламан та!

О л ь г а О с и п о в н а. Шухăшламан?!

К в а с к о в. Пуçра та тытман. Сывă пулăр! (*Каять*.)

О л ь г а О с и п о в н а. Ку, чăн та, «туй» пулчĕ иккен! Ой, кун çинчен çынсем пĕлсен мĕн калĕç!

Е р а с т М и х а л ч ă (*кĕрет, пуçне алшăллипе çыхнă*). Пускилсем, ялйышсем пĕлсен мĕн калĕç. Намăс!

О л ь г а О с и п о в н а. Чăн та, намăс ĕнтĕ. Мĕнле питпе колхоза тухас. (*Тухать*.)

Е р а с т М и х а л ч ă. Мĕнле питпе района каяс!..

С о к о л о в (*кĕрет, аллинче пĕчĕкрех чăматан*). Здравствуйте!

Е р а с т М и х а л ч ă. Килĕрех, килĕр.

С о к о л о в. Сирĕн Светлана килте çук-им?

Е р а с т М и х а л ч ă. Эсĕ те пушмак пăру шырама тухман пуль те?

С о к о л о в. Шăпах пĕлтĕр. Пушмак пăру шырама.

Е р а с т М и х а л ч ă. Пушмак пăру шырама?

С о к о л о в. Çапла.

Е р а с т М и х а л ч ă. Çук, текех ĕненместĕп! Улталатăр эсир. Пурте улталатăр. Паян акă кунĕпех пушмак пăру сутса ларатпăр, анчах никам та илмест. Пирĕнтен мăшкăлласа çӳретĕр çех.

С о к о л о в. Мĕнле-ха капла... Эсĕ чипер калаç-ха...

Е р а с т М и х а л ч ă. Эпĕ ун çинчен урăх пĕр сăмах та каламастăп. (*Каять.*)

С о к о л о в. Мĕн пулнă паян кусене? Ниепле те ăнланма çук.

С в е т л а н а (*кĕрет*). Вася, эсĕ килсе çитнĕ иккен!

С о к о л о в. Килтĕм те-ха... Мĕн пулнă вара сирĕн?.. Аçу çав тери тарăхнă.

С в е т л а н а. Вася, эсĕ нимĕн те пĕлместĕн. Вĕсем мана кĕçех ирĕксĕр качча парса яратчĕç. Юрать-ха эсĕ килсе çитрĕн.

С о к о л о в. Кама?

С в е т л а н а. Каччисем пур вĕсен.

С о к о л о в. Ун пек хăтланаççĕ пулсан, эпир те вĕсене пăхсах тăмăпăр. Эсĕ хатĕр-и?

С в е т л а н а. Эп пĕтĕмпех хатĕрлерĕм. Икĕ чăматан.

С о к о л о в. Ăçта вĕсем?

С в е т л а н а. Пăлтăр умĕнчех.

С о к о л о в. Кайрăмăр-и?

С в е т л а н а. Çук, атте-аннепе калаçса татăлмасăр каймастăп. Эсĕ апла мар-ха, Вася. Лавккана кайса шампанскине илсе кил-ха. Унтан ушкăнпа ларăпăр та калаçăпăр.

С о к о л о в. Юрать, эппин, çапла тăвăпăр, анчах аçу калаçасшăн мар.

С в е т л а н а. Çаврăнать. Çав тери усал çынах мар вăл.

С о к о л о в. Юрать, эпĕ кайрăм, эппин.

С в е т л а н а. Чим, сетка парса ярам. (*Каяççĕ. Пауза.*)

О л ь г а О с и п о в н а (*кĕрет*). Паян вăхăта ирттерни те, укçа сая яни те ахалех пулчĕ. Ой, мыскара, мыскара!..

Е р а с т М и х а л ч ă (*кĕрет*). Пăх-халĕ, паян кĕтӳпе каччă, пурте пушмак пăру шыратпăр теççĕ. Çук, хĕр çураçасси çинчен урăх пĕр сăмах та калаçмастăп.

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕскер тетĕн эс?

Е р а с т М и х а л ч ă. Пирĕн хĕре çураçма тата тепĕр каччă килнĕ вĕт.

О л ь г а О с и п о в н а. Чăнах-и? Ой, măшкăл! Каччи ăçта тата?

Е р а с т М и х а л ч ă. Килкартинчехчĕ. (*Çенĕк алăк сасси.*) Акă, кĕрет пулмалла. Ăçта та пулин пытан. Урăх калаçмастпăр.

О л ь г а О с и п о в н а. Эп чăланта пулатăп. (*Чăлана каять.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Эп кăмака хыçĕнче. (*Кăмака хыçне пытанать. Пауза.*)

О л ь г а О с и п о в н а (*чăлантан пуçне кăларса*). Старик!

Е р а с т М и х а л ч ă (*чаршав хыçĕнчен пуçне кăларса*). Мĕн?

О л ь г а О с и п о в н а. Килмерĕç-и-ха?

Е р а с т М и х а л ч ă. Çук. Асту, пĕр сăмах та ан чĕннĕ пултăр.

О л ь г а О с и п о в н а. Юрать.

Е р а с т М и х а л ч ă. Килсен те... Ларсан-ларсан хăех каять.

О л ь г а О с и п о в н а. Мĕн? (*Ераст Михалчă патне пырать. Тулта ура сасси.*)

Е р а с т М и х а л ч ă. Пытан, кил кунта. (*Пытанаççĕ. Светланăпа Соколов кĕреççĕ.*)

С в е т л а н а. Ну, вăт, халь ĕнтĕ калаçма та пулать. Шампански пур!.. Ăçта кайса пĕтнĕ пирĕн? (*Чĕнет.*) Атте! Анне! (*Чӳрече уçса кăшкăрать.*) Атте! Атте теп! Çук. Интереснă. Намăс курмалла пулса тухрĕ. Мĕншĕн-ха эсир малтанах систермен?

С о к о л о в. Малтанах шухăшламанччĕ, кайран сасартăк атте-аннепе калаçса татăлтăмăр та... Паян килсе пăхас терĕм. Сирĕн аçусем килĕштереççĕ пулсан, туйлах авланас терĕм. Вĕсемпе калаçса татăлас та...

С в е т л а н а. Таçта çӳреççĕ-çке. (*Алăка уçса.*) Çенĕкре çывăрмасть-ши? Атте! Анне! (*Урам енчи чӳречене уçса.*) Урамра та курăнмасть пуль. (*Кăшкăрать.*) Ванюш, Ванюш! Правлени патĕнче пирĕн атте курăнмасть-и? Çук? Воте на! (*Чӳречене хупать.*) Ăçта кайса çухалнă-ха?

С о к о л о в. Уя кайнă пулĕ. Каçхине таврăнаççĕ пулĕ-ха. Унччен эпир, атя, района кайса килер. Пурин валли те пĕрер япала илĕпĕр, кашнин валлиех парне пултăр.

С в е т л а н а. Укçа илес-и?

С о к о л о в. Хамăнах çителĕклĕ. Кайрăмăр.

С в е т л а н а. Каяр. (*Каяççĕ. Пысăк пауза.*)

Е р а с т М и х а л ч ă (*кăмака хыçĕнчен тухать*). Ольга Осиповна, тух-ха. (*Ольга Осиповна тухать.*) Пăх-ха, эрехне юри лартса хăварнă. Çук, пире улталаймăн.

Х в е т л и (*çуйăхса кĕрет*). Ераст Михалчă, Ераст Михалчă! Ольга аппа!

Е р а с т М и х а л ч ă. Мĕн сиксе тухрĕ тата?

Х в е т л и. Светланăна лартса кайрĕç вĕт!

О л ь г а О с и п о в н а. Чăнах-и?

Х в е т л и. Халь çех машина çине ларчĕç те кĕрлеттерчĕç.

Е р а с т М и х а л ч ă. Юратнă каччи çавă пулнă, эппин.

О л ь г а О с и п о в н а. Çавă тесе кăмака хыçĕнчех каларăм-çке сана.

Е р а с т М и х а л ч ă. Эпир чĕр-çилом качча парасшăн.

Х в е т л и. Чĕр-çилампа пулмасть иккен. Юратман çынна епле кайтăр. Ку чухнехи хĕрупраç вăл кама савать – çавна каять!

Ч а р ш а в

1960.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Н. Айзманăн «Кай, кай Ивана» камитне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000085/index.html
2. Н. Айзманăн «Кама савать – çавна каять» камичĕн тулли вариантне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000389.pdf
3. П. Осиповăн «Айтар» драмин тулли вариантне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000110/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Драматурги хайлавĕсен хăйне евĕрлĕхĕ мĕнре палăрать?
2. Литература конфликчĕн драматургийĕнчи пĕлтерĕшĕ мĕнре?
3. П. Осиповăн «Айтар» драмин темиçе вариант пулнин тĕп сăлтавĕ мĕнре?
4. Чăваш совет литературинчи «конфликтсăрлăх» теорийĕ камит жанрĕн аталанăвĕ çине мĕнле витĕм кӳнĕ?

¤ *Пултарулăх ĕçне тăватпăр*

Н. Айзманăн «Кама савать – çавна каять» камичĕн пысăках мар сыпăкне илĕр, рольсем çине пайласа вуласа-выляса парăр.

● *Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Драматургин тĕп жанрĕсем:

трагеди (*авалхи грек трагедийĕ, Рим философиллĕ трагедийĕ, Ренисанс тапхăрĕнчи трагеди, шекспирла, классикăлла-французла, 18 ĕмĕрти вырăс просвещенийĕн, 19 ĕмĕрти романтикăлла, совет тапхăрĕнчи оптимизлă трагеди*)

драма (*социаллă, психологиллĕ, политикăлла, лирикăлла драма, çемье, йăла драми*)

камит (*сатирăлла, психологиллĕ, гратескăлла, лирикăлла камит, кулленхи пурнăç, йăла камичĕ, трагикомеди*)

♫ *Проектсем*


1. Петр Осиповăн нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕ: драматург, режиссер, актер, тухтăр *(пĕччен çын тĕпчевĕ).*

2. Чăваш камичĕн хăйне евĕрлĕхĕ (Федор Павлов, Николай Айзман) *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Литература хайлавĕн чĕлхи

П. Осиповăн «Пирĕн пурнăç хăтлăхра (Айтар)» драминче сăнарланă е асăннă чăваш халăхĕн йăли-йĕркине палăртăр. Çак йăла-йĕрке хайлавра мĕнле ĕçленине ăнлантарăр (вăхăт палли, культура элеменчĕ, характера тарăнлатма, тĕп шухăша анлăрах уçса пама тата ыт. те).

ЛИТЕРАТУРА ПУЛТАРУЛĂХĔНЧИ ВĂХĂТПА УЙРĂМ ÇЫН ТРАГЕДИЛĔХĔ



Виктор РСАЙ (1906–1970)

Кĕске биографи справки

1906 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕ – Кавал салинче çуралнă (халĕ Чăваш Республикин Вăрмар районĕ).

1914-1920 çулсем – Кавал салинчи икĕ класлă шкулта вĕреннĕ.

1924-1926 çулсем – Шупашкарти совпартшкулта вĕреннĕ.

1927-1929 çулсем – «Канаш» хаçат редакцийĕнче литература сотрудникĕнче ĕçленĕ, «Сунтал», «Капкăн» журналсемпе «Çамрăк хресчен» хаçата çырса тăнă.

1928 çул – «Çамрăк вăхăт» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.

1930 çул – «Виçĕ калав» ятлă кĕнеки пичетленнĕ.

1928-1933 çулсем – Хусанти педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Тутар Республикинчи Çутĕç министерствинче инспекторта ĕçленĕ.

1933 çул – çыравçă Шупашкара куçса килнĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕнче вăй хунă.

1934 çул – СССР писателĕсен Союзне кĕнĕ.

1934 çул – «Калавсем» ятлă хайлавсен пуххи пичетленнĕ.

1934-1944 çулсем – Тутар Республикипе Ульяновск облаçĕнчи вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вырăс чĕлхи вĕрентнĕ.

1944-1945 çулсем – çыравçă пичет ĕçне таврăннă.

1945-1966 çулсем – Канашри медицина училищинче тата учительсем хатĕрлекен институтра вырăс чĕлхипе литература вĕрентнĕ.

1966-1970 çулсем – Шупашкарта пурăннă.

1970 çулхи нарăс уйăхĕн 27-мĕшĕ – Шупашкар хулинче вилнĕ.

Ăслăлăх аниҫчен

«Аслă Пушкин тăлмачсене сăмахлăх «ямшăкĕ» тенĕрен, Виктор Рсая та халăхсем хушшинчи туслăх элчи тесе калас килет. Вăл вырăсла, чăвашла çырнă, тутарла лайăх каласа вуланă. Çакă ăна куçару ăсти пулма пулăшнă. Вăл чăваш хайлавĕсене тутарла куçарас ĕçе хутшăннă, хăй те тутарла пичетленнĕ. Чăваш прозин чылай хайлавĕсене (сăмахран, К. Чулкаçпа А. Артемьев повеçĕсене) вырăс тăлмачĕсем валли йĕркепĕрлесе панă. В. Рсай пултарулăхĕнче С. Элкерĕн «Шурăмпуç килсен» романне вырăсла куçарни тата мари писателĕн М. Шкетанăн «Эренкер» романне чăвашла кăларни паллă вырăн йышăнса тăрать» *(В.П. Станьял, филологи кандидачĕ).*

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Виктор Рсай *(Рзай Виктор Ефремович)* пултарулăх çулĕ çине ХХ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче тăнă. Çыравçăпа пĕр ялта пурăннă çынсем аса илнĕ тăрăх, ялти икĕ сыпăклă шкула вăл 1920 çулта пĕтернĕ, пĕр вăхăт ялти çамрăксен ячейкин секретарĕ пулнă, Шупашкарти совет парти шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ялти вулав çуртĕнче избачра (*туллин – изба читальня*) ĕçленĕ. Çак тапхăрта ял çамрăкĕсемпе пĕрле вăл спектакльсем лартнă, хĕрлĕ улахсем йĕркеленĕ. Шăпах çав каçсенче пулас çыравçă хăй çырнă сăвăсене хавхаланса пăхмасăр вуланă. 1924 çултан пуçласа вара унăн сăввисем тĕрлĕ хаçатсенче пичетлене пуçланă.

В. Рсайăн пĕрремĕш кĕнеки сăвăсен пуххи пулнă, 1927 çулта «Çамрăк вăхăт» ятпа пичетленнĕ. Кунта 24 сăвă, «Аслати умĕн» ятлă пысăках мар поэма кĕнĕ. Кĕнекен ум сăмахĕнче чăваш прозаикĕ, литература критикĕ тата куçаруçи Аркадий Золотов çамрăк сăвăçа хакласа çапла çырнă: «Рсай сăввисен хăвачĕ пысăк. Вĕри чĕрепе çырнă сăввисем унăн вăйлă, форма тĕлĕшĕнчен те вĕсем (çитменлĕхсем пулсан та) илемленсех, тарăнлансах пыраççĕ. Рсай малашне те ĕç халăхĕн кăмăлне хăпартакан... ăна ăнланмалла, çывăх сăвăсем çырса тăрсан, хăй те чăваш ĕç халăх пурнăçĕнчен ытла инçех татăлса каймасан, çут маякран пăрăнмасăр çутă хĕвел патнелле туртăнсан, чăваш литературинче паллăран паллă вырăн йышанса пырĕ». Шел пулин те, çакнашкал тӳрĕ хаклав ХХ ĕмĕрти чăваш литература критикинче пулманпа пĕрех, ытларах чухне В. Рсая ытти хăш пĕр çамрăк сăвăçсемпе пĕрле (П. Хусанкай, В. Митта) «Есенин евĕр çырнишĕн», «пусăрăнчăклăхшăн» айăпланă.

Виктор Рсая çут çанталăк вăйĕсене тарăннăн туякан «хресчен юрăçи», «уй-хир сăвăçи» темелле. Çут çанталăк урлă вăл социаллă пурнăçа та ăнлантарать. Çак тĕлĕшрен вăл чăваш литературинчи чи пысăк «уй-хир сăвăçинчен» Я. Ухсайран малта пулнă. Унăн хайлавĕсенчи танлаштарусем питех те курăмлă та ытарлă: «Вырма пĕлмен çурла», «Кăвак пĕлĕт çинче çӳрет путек», «Кусакан çур çăмха», «Сĕм-тăлăх уйăх – сар çӳпçе».

Сăвăç хайлавĕсенче çынлăх, чунлăх, ăспа тăн пĕрлĕхĕ малта. Рсайăн пĕтĕм пултарулăхĕнче – чун витĕр кăларнă чăн пурнăç, хăй тӳссе ирттернĕ самантсем.

Эп пырап. Пĕчченех çул çинче.
Савни çук савăнса юрлама.
Умăмра выртакан кĕленче
Çăлтăр пек ялкăшса çуталмасть.

Çак «Çул çинче» ятлă сăвăра пĕчченлĕх, нăйкăшу туйăмне çĕклет тесе сăвăçа сахал мар ятланă. Чăнласах та кунта вăл вăхăтшăн пĕлтерĕшлĕ кĕрешӳ ыйтăвĕ мар, çамрăк çыннăн чун ыратăвĕ, лирикалăх мала тухать.

В. Рсайăн 1920 çулсенчи сăввисене хаклана май темиçе саманта уйрăммăн палăртмалла. Çапла сăвăç вырăнти калаçу чĕлхипе анлă усă курать (пусăм, сăмах формипе пĕлтерĕшĕ), çакă хăш пĕр чух литература чĕлхине хирĕçлет. Сăмахран,

Ан тив. **Йĕмесп**. Лаши те **аттăр**,
Вĕрен те **талтăр**çурмаран («Шавла эс, Атăл»).

«Ан тив. Йĕместĕп. Лаша атса кайтăр, вĕрен татăлтăр çурмаран» – çапла вуламалла çак йĕркесене. Кунта «ат» сăмах пĕлтерĕшне ăнланма йывăр. Сăмахсар ăнлантарнă тăрăх, лаша атнă тесе тилхепепе, вĕренпе чăлханса ларнине калаççĕ. Çак сăмах лаша алхасса, тулхăрса кайнине те палăртать.

Унăн сăввисенче якалсах çитмен вырăнсем те пур, анчах кунта вĕсем чĕлхе мĕнле чĕрĕлсе-çĕнелсе пынине кăтартакан вăхăт паллисем. Тĕслĕхрен, «прошектăр», «трактăр», «Çисе ямĕ ешĕл илем**на**», «Тăпра çинче ӳснĕ пĕв**на**» («Юлташа» сăвă), «Ун **вырне** çĕн çурт», «Çĕн мунча халь тухнă **прахăça**», «ĕненместĕ**п**», «йĕмес**п**», «суймас**п**», «тет**нем**», «**малла**» («Парне» сăвă). Сăмахсенчи кĕскетӳсем пирĕн çыру та, пуплев те ылмашăнса пынине кăтартаççĕ.

Виктор Рсайăн пĕрремĕш прозăлла хайлавĕ – «Ĕçре çĕкленнĕ» кĕске калавĕ – 1925 çулта пичетленнĕ. Малалла вара пĕрин хыççăн тепри «Вожатăй» кулăшла калав, «Сăхман айĕнчи ача», «Хĕр ĕмĕрĕ», «Аялалла» портрет-калавсем (ку хайлавсем 1926 çулта «Çамрăк хресчен», «Канаш» хаçатсенче тухнă), «Знакомствă», «Шаннă

вĕлтĕренсем», «Шалу илнĕ чух» питлевсем, «Уçă хапха» калав-повесть (пурте 1927 çулта пичетленнĕ) кун çути кураççĕ. Шел пулин те хăй пурăннă çулсенче В. Рсайăн нумай хайлавĕсем ал çыру шайĕнчех юлнă. Кунта çавăн пекех 1930 çулта Хусанта тухнă «Виçĕ калав» кĕнекери «Икĕ тăлăх ача», «Тусанлă сарай», «Харсăр Ерхип» калавсене палăртмалла.

Пултарулăх çыравçăн юлашки кĕнеки 1934 çулта Шупашкарта «Калавсем» ятпа çапăнса тухнă. Кунта пурĕ 10 калав пичетленнĕ, вĕсен хушшинче «Брагадир кинĕ», «Ваçлей саккунĕ», «Кӳршĕсем» тата ытти калавсем пулнă. Çакăн хыççăн темиçе вунă çуллăха унăн ячĕ манăça тухнă, XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче кăна çыравçă чăваш литературинчи хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăннă. Темле пулсан та Виктор Рсай чăваш литература историйĕн 1930-мĕш çулĕсенче паллă вырăн йышанса тăрать. Çавăнпа та унăн хайлавĕсене хак памасăр вăл вăхăтри литература пирки туллин калаçма çук.

Виктор Рсайăн прозăлла хайлавĕсем сăвă-поэми пекех XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи чăваш хресченĕн кăмăл-туйăмне туллин, чĕрĕ те çывăх çырса кăтартнипе палăрса тăраççĕ. Вăл вăхăтри литературăра хайлава калăпламалли темиçе сюжет схеми анлă сарăлнă. Ытларахăшĕ иртнĕ пурнăç йывăрлăхне хальхи пурнăç ырлăхĕпе танлаштарса çырма кăмăллană. Теприсем сюжета иккĕн-виççĕн калаçнă евĕр йĕркеленĕ. Виççĕмĕшсем тĕп сăнара хăйне калаçтарнă. В. Рсайшăн вара çаксем пурте юрăхлă, анчах пурпĕрех ун хайлавĕсенче сăнарсен чунĕ малта. Унăн калавĕсен сюжечĕ пĕр-пĕр ĕçе, пулăма, шухăша, характера çутатса кăтартни тавра чăмăртанать. Ытларах чухне вăл икĕ пайран тăрать. Пĕр пĕчĕк ĕç çинчен çырса пани урлă вулакана пысăк шухăш патне илсе çитерме пĕлет автор.

Çыравçăна «ăш-чик» (психологи) тата «сăпат» (портрет) новеллисен ăсти тесен пачах та ытлашши пулмасть. В. Рсай калавĕсенче этем чунĕ пăтăрмахла «хуçăк» самантсенче çĕнелсе, вăйланса тухнине курма пулать. Вăл туслăх, тăванлăх, юлташлăхпа юрату тата ытти ĕмĕрхи йăла-йĕрке çĕнелсе пынине тĕрĕс кăтартасшăн. Çавăнпа та калавсенче уйрăм çын кивĕ йăласенчен тасалса пынине, килти пурнăçĕпе халăх хушшинчи хутшăнусенче ирĕклĕх тупнине сăнарлать.

Рсай калăпланă сăнарсем – канăçсăр çынсем, ыррине шанакан, юратакан, малалла талпăнакан çынсем. Вĕсенче çынлăх тени питĕ пысăк. Ытларах чухне хайлаври сăнарсем – чăваш ялĕн ĕçченĕсем. Вĕсем çĕнĕ пурнăçшăн, тĕрĕслĕхшĕн, юратушăн кĕрешекен çамрăксем, пĕрлешӳллĕ, колхозлă, ĕçе туртăнакан çĕр ĕçченĕсем, нумай нуша

курнă ватăсем. Хайлаври сăнарсем шухăшлама, танлаштарма, ырри-усаллине туйма тата уйăрма пĕлеççĕ. Çавăнпа та вĕсен кашниннех хăйсен тĕнчи, пуплевĕпе чĕлхи, тыткаларăшĕ. Çав вăхăтрах хайлаври кашни сăнар – чăваш халăхĕн çав вăхăтри çынни.

Çыравçă çавăн пекех историллĕ вăхăта палăртакан детельсемпе усă курма ăста. Çил, хапха, кĕпер, чан, çулăм, шыв юхăмĕ, çутă пайăркисем, йывăç-турат, «сĕлехеллĕ анчăк», кайăк-кĕшĕк сăнарĕсем кунта самана паллисем, çыравçă пурнăçран илнĕ сăнарсем. Çавăнпа пĕрлех В. Рсай чăн чăваш тĕнчине ӳкерет. Уншăн ӳсен-тăран, çанталăк тата тавралăх пĕрлĕхĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Совет тапхăрĕнчи литературăра, уйрăмах 1930-мĕш çулсенче, çĕнĕ хресчен сăнарне пĕр енлĕн сăнарласси йăлана кĕрет. Кунта сăнарăн шалти тĕнчине, кăмăл-сипетне, шухăш-туйăмне тишкересси мар, социаллă çыхăнусене (пуян е чухăн), политика шухăшлăхне (колхоз йĕркелени, пилĕкçулăх çитĕнĕвĕсем, социализм çĕнтерĕвĕ) ӳкересси мала тухать. Çак пулăм ку е леш тĕлĕшрен мĕн пур çыравçăсене пырса тивнĕ.

В. Рсай пултарулăхĕшĕн те çакнашкал туртăм ют мар. Чăваш хресченĕн çĕнĕ саманари пурнăçне çыравçăн 1920-мĕш çулсем вĕçĕнче çырнă «Тăпра каласать» повеçĕнче курма пулать. Каярах ăна вăл роман тума шутланă, пĕрремĕш тата юлашки хут çак хайлав Хусанти «Утăм» альманахра 1930-1931 çулсенче пичетленнĕ.

«Тăпра каласать» повесть – колхоз тума пуçланă вăхăта сăнарлакан пĕрремĕш пысăк хайлав. Чăваш литературинчи çак темăпа çырнă ытти повесть-калаври пекех (тĕслехрен, И. Тукташăн «Вăкăр çырми» повеçĕ) кунта коллективизаци ĕçĕн чи хĕрӳ тапхăрне сăнласа панă. Повеçре колхоз йĕркелекенсен хастарлăхне, ял халăхĕ çĕнĕ пурнăç çулĕ çине питĕ йывăррăн, пăтранчăклăн тухнине, хăйсен тĕттĕмлĕхне пула ял куштанĕсем хыççăн кайнине, хресченсен харпăрлăх туртăмĕ вăйлă пулнине курма пулать.

Анчах хайлавăн тĕп шухăшĕ кунта чылай тарăнрах. «Темиçе çăварăн каласса, темиçе тĕслĕ сăмах каласа утать халăх. Халăх ури айĕнче тăпра шавлать, тăпра каласать», – тесе çырнă повеçре. Шăпах çакăнта пулĕ хайлавăн тĕп шухăшĕ. Чăваш хресченĕшĕн çĕр вăл – чĕрĕ, çавăнпа та унăн кăмăл-туйăмĕ пур. Çакă вара вăл чăн чăваш тĕнче туйăмĕ, ĕненĕвĕн курăмĕ. Çавăнпа пĕрлех çакнашкал шухăш аталанăвĕ урлă В. Рсай хăйне илемлĕ психологиллĕ стиль ăсти пек те кăтартать.

«Сăхман айĕнчи ача амăшĕ» калавăн тĕп шухăшĕ ХХ ĕмĕр пуçламăшĕшĕн çеç мар, паянхи куншăн та питĕ çивĕч. Хĕрпе качча хушшинчи хутшăнусем, юратупа ултав, çемьери телейпе пĕчченлĕх,

ашшĕсемсĕр çуралакан ачасен шăпи – пурнăçри тата илемлĕ литературăри кивелмен ыйтусем. «Вăл çамрăк пулнă, çынсене ĕненнĕ. Пурнăçăн хура кĕсенлĕ тӳнтерлĕхне курман, активмен. Этем пурнăçĕ уншăн илемлĕ шур чечек пек ӳснĕ. Ăна вăл юратнă, савнă. Кайран вара, Петĕрпе юлташлансан, пурнăçра суя ĕмĕтсем çӳренине сиснĕ. Пурнăçăн шур чечекĕ, савнăçлă чечекĕ, этем йăхĕпех таптанса пынине вăл хăй куçĕпе курнă», – тенине вуласан паянхи кун пирки çырнă пекех туйăнать.

Литература теорийĕ

Сюжет тесе хайлаври сăнарсен характерне тата вĕсен хушшинчи çыхăнăвне уçса паракан ĕç-пуçсен тачă пĕрлĕхне калаççĕ. Вăл ку е леш сăнар мĕн кăмăлланине е кăмăлламаннине, кампа çыхăннине, характерĕ мĕнле аталанса пынине сăнарлать. Хайлавăн сюжетне тишкернĕ чух ун шăнăрĕнче ĕç-хĕл пуçланса кайни, ĕç-хĕл аталанни, кульминаци, ĕç-хĕл вĕçленни, эпилог текен ăнлавсем пуррине манма юрамасть.

Фабула тесе литература хайлавĕн никĕсĕнче выртакан ĕçсемпе пулăмсен картне калаççĕ. Фабула сюжетпа питĕ тачă çыхăннă, çавăнпа та хăш-пĕр тĕпчевçĕсем фабула тесе теприсем сюжет тенине палăртаççĕ, çавăн пекех кутăнла.

Повесть тесе эпикăлла хайлавăн вăтам жанрне калаççĕ. Унăн никĕсĕнче тĕп сăнар пурнăçĕн пĕр-пĕр тапхăрĕнче пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсене сăнарласси выртать. Повеçĕн ытларах чухне пĕр сюжет йĕрĕ пулать, хушма, иккĕмĕшле, сюжет йĕрĕсем сайра тĕл пулаççĕ е пачах та çук. Классикăлла повесть сюжечĕ (çакнашкаллисем XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче реализмла литературăра хывăннă) ялан тенĕ пекех тĕп сăнарпа çыхăннă, унăн шăпипе характерне пулса иртекен темиçе ĕç-пуçпа çеç уçăмлатаççĕ, çак ĕç-пуçсенче вара тĕп сăнар хăй хутшăнать.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

СĂХМАН АЙĔНЧИ АЧА АМĂШĔ

Калав

I

Çемçе сăпка çинче çывăрса кайнă ача пек лăпкă, çилсĕр каç. Таçал ялĕ çывăрать, пӳртсем умĕнчи ватă йăмрасем пуçĕсене çĕрелле уснă. Йытăсем вĕрмеççĕ. Вĕсем пурте сарайсенчи улăмран тунă йăвисене кĕрсе выртнă. Пĕлĕт шур утиллĕ улăх пек – ниçта та хура тĕм çук. Уйăх халь анчах çуралнă тиха майлă, аран-аран шăвать.

Таçал ялĕ сăртсем çинчи ăшă ыйхăпа çывăрать. Ялăн сылтăм енче çырма тăсăлса выртать. Çырма урлă кăçал пĕве тунă. Пĕве шывĕ уйăх

çути ун çине ӳкнĕрен сарă çутă-хĕрлĕн курăнать. Пĕве пуçĕнче вĕлтрен шăтса тухнă. Вĕсем те енчен еннелле сулăнаççĕ, темĕскер итленĕ пек калама çук шăп лараççĕ. Мĕн итлемелли вара? Çутă уйăхсăр пуçне пурте çывăраççĕ пулсан кам калаçнине итлемелле?.. Çук, пурте çывăрмаççĕ. Пĕр вăхăтра пурин те ыйхă килме пултараймасть.

– Эх, Санюк, халĕ те ĕненместĕн-и вара эс мана?.. Халĕ те сан умăнта шанчăксăр çын-ши вара эпĕ? Çук, сан çывăхăнтан эп нихçан та пăрăнас çук. Эп сансăр пĕр кун та пурăнма пултараймастăп. Сансăр ман пурнăç килĕшӳллĕ пулас çук... Тен, эс ху мана юратмастăн пулĕ?..

– Тĕлĕнетĕп санран, Петĕр, сана савмастăп пулсан, шухăшла-ха, мĕн-ма ларас кунта? Аттесем халĕ те ятлаççĕ, ирхине тин килен киле, кампа çӳретĕн çав таранччен тесе яланах калаçаççĕ... Çук, Петĕр, çак таранччен эп никампа та ларас çук... Маншăн пулсан эсĕ темрен те хаклă. Анчах çапах та хĕр пуçпах... ун пек юрамĕ. Кам пĕлет? Эс халь манпа лайăх калаçатăн, юрататăн... Тен, урăхла та пулĕ? Юрататăнах пулсан, сан ун пек шухăшсем пулмалла мар...

Çапла ĕнтĕ, Таçал ялĕ пĕтĕмĕшпех çывăрмасть. Ун кăçал пĕвеленĕ пĕви çинче никам та çук мар. Унта Санюкпа Петĕр пур. Вĕсем пĕве пуçĕнче пĕве шывĕ çинелле пăхса лараççĕ.

Санюк – Ваçли хĕрĕ. Ваçли тĕреклĕ, чипер çын. Ăна каччă чухне Чипер Ваçли тесе чĕннĕ, Санюк ашшĕне хунă.

Куçĕсем ашшĕнни пекех пысăк. Вăл куçсем такама та тапратмалла. Вăл куçсене курса Таçал каччисем сахал тĕлĕнмен. Вăл куçсене курсан Санюк çамки айĕнче икĕ кăвакарчăн йăва çавăрса пурăнаççĕ темелле... Çак куçсемшĕн Таçал каччисем сахал çапăçман. Çапăçса пуçĕсене çуракансем те пулнă.

Санюкпа ăшăнса пĕве çинче ларакан Петĕр те Санюк арки çине лариччен сахал хĕнлĕх тӳсмен. Ăна виç эрне ĕлĕкрех çеç виç ача аслă урамра хирĕç пулса хĕнеме тăнă. Вăл аран çеç тарса ĕлкĕрнĕ. Хĕнеме шухăшланă каччăсенчен вĕçерĕнме çăмăлах пулман. Петĕр хăй вăйсăр пулнă пулсан айăккисене шутлаттармаллах пулĕччĕ, анчах вăл та çирĕп.

Ун ашшĕ ĕлĕкрех, вăрман сыхланă чухне, вăрман вăрлама пынă виç тутара пĕчченех çыхса яла илсе пынă. Унтан халĕ те хăраççĕ. Хĕрĕх пиллĕкре пулсан та тутарсен сапан туйне каймасăр юлмасть вăл. Унта вăл кашни çулах паттăра тухса килет. Ывăлĕ – Петĕр, ашшĕ пекех пулмасан та, вăйсăр каччă мар. Çавна кура унтан та нумайăшĕ шикленерех çӳреççĕ. Юлашки вăхăтра Петĕр Санюкпа çӳренине юратмасăр пурăннă каччăсем те Петĕр çине тăрăнма пăрахрĕç ĕнтĕ.

Хăйсен шăписемпе килĕшрĕç. Килĕшмесĕр тăма та май çук. Санюк Петĕрех юратать.

– Ах, Петĕр, мĕн курас вара манăн? Ял çыннисем пĕлсен мĕн калĕç? Илсе каяс тесен паянах илсе кай, эп сан патна пыратăп. Сансăр эп хам та пурăнаймастăп. Анчах халь...

Шурăмпуç çуталса килет. Пĕлĕт çинче таçтан килсе тухнă хура тĕмсем çӳреççĕ. Уйăхĕ сăртсем хыçне шăппăн, темрен вăтаннă пек пулса кайса вырнаçрĕ. Çырма хĕрринчи çĕнĕ хапха Санюк кĕнĕрен сас пачĕ.

II

Михаил Архангел кунĕ Санюк ашшĕсем Кавала чиркӳ праçникне кайнă. Кавал вăл чухăн ял мар. Унти хресченсем праçник таврашне чапсăр туса ирттермеççĕ. Ĕçкĕ ĕçес пулсан, мĕн хĕвел анса шурăм пуç шуралса тухичченех ĕçеççĕ. Çавăн пирки Санюк амăшĕ – Клавье инке, юратнă Санюкне: «Ырансăр килместпĕр эпир, хĕрĕм, чипер пуçтарăнса лар, асту, хуран айĕнче кăвар пурччĕ, çĕре ӳксе амаланса ан кайтăр, тĕпĕртетсе ан лар», – тесе хăварнă...

Çук, Санюк тĕпĕртетсе ларас çук. Ун пек йăла ун нихçан та пулман. Уншăн пулсан Петĕрсĕр пуçне никам та ан килтĕр, никам та ан пултăр.

– Эх, Петĕр, Петĕр... ăçта эс? Мĕн-ма килместĕн?.. Е кирлĕ мар пултăм-им халь?!.

Пӳртре Санюксăр пуçне никам та çук. Вăл пĕчченех. Халĕ ĕнтĕ тăхăр сехет те çитрĕ. Анчах Петĕр çаплах килмест...

Санюк амăшĕсем Кавала кайнине Петĕр пĕлет те ĕнтĕ... Санюк Петĕр килмесрен пăшăрханма тытăнчĕ... Мĕн-ма пăшăрханас мар? Санюкăн ăш-чиккинче хĕр пуçпах ача çитĕнет. Вăл виç уйăхра ĕнтĕ. Ун ашшĕ – Петĕр.

Ак тĕпелте сехет вуннă та çапрĕ. Тепрер сехет тăрсан çывăрма та вăхăт. Кĕркунне никамах та нумай лармасть...

Сĕтел çинче ларакан лампа краççын пĕтсе килнĕрен хăйĕн хĕрлĕ чĕлхине кĕскетме пуçларĕ. Пӳрт тĕттĕмленет. Ăçта килчĕ унта пытаннă таракансем пӳрт пĕренисем çине тухрĕç, таçта васкаççĕ... Санюк, сĕтел çине пуçтарса кĕнчеле авăрлама пуçланăскер, хале ĕнтĕ ăна та пăрахрĕ... Ун çумĕнче мăрлатса ларакан кушак та кăмака çине улăхса кайрĕ. Пӳртре шăп. Сайра хутра çеç ассăн сывласа яни илтĕнет. Тата хăш-пĕр вăхăтра кăмака айĕнче шăшисем ашкăнни илтĕнет.

«Эх, Петĕр, Петĕр, ăçта эс? Е кирлĕ мар пултăм-им халь?..»

Кайăк пуçĕ пек лапка-лапка юр çăвать. Кăнтăрла кăна кăваккăн курăннă урам çĕнĕ тумтир тăхăнать. Çил вăйлă мар. Çанталăк ăшă.

...Мишук мунчи – çырмара, Мишук хăй мунчине кăçал анчах сиплеттернĕ. Ун мунчи ĕлĕк хура мунча пулнă, халĕ ĕнтĕ Мишук эрех сутса пуйса кайнă пирки мунчине пӳрт пекех пысăк туса лартрĕ, çине те хăма витрĕ. Кун пек мунча Таçал каччисемпе хĕрĕсем сахал кураççĕ. Пĕлтĕр çеç ку кас хĕрĕсем çĕр мунчара улах ларнă. Халĕ ĕнтĕ ун пек мар, сарлака саксемпе çавăрнă мунчара лараççĕ.

– Эх, спаççип Мишук пиччене пире çавăн пек мунча туса панăшăн, кунта калама çук лайăх ларма, – теççĕ хĕрсем. Чăнах та лайăх ĕнтĕ. Тăвăр мар, килнĕ каччăсем те ура çинче тăмаççĕ, пурин валли те вырăн пур. Анчах çапла пулсан та хăшĕ-пĕрисем сак çинче мар, хĕрсен аркисем çинче лараççĕ. Вĕсемшĕн пулсан хĕр арки çине лармасан улаха та тухмалла мар. Çапла ĕнтĕ, кĕркунне тивлечĕпе Таçал яшĕсем улах ларма пуçланă. Çамрăк савăнать, ăна тытса чарма май çук, вĕсен вăй-халĕ сăртран юхса анакан шыв пекех хастар. Вĕсемшĕн пулсан вăйă-кулă пултăр. Вĕсене хуйăх кирлĕ мар.

– Петĕр, мĕн пуçна усса ларан çав эсĕ? Е Санюк килте çук-и-мĕн?

– Çук-çке... Эх, эсир те çав, хĕрсем, чĕпĕтесшĕн çеç ларатăр... Апла пулсан ман никампа та калаçма юрамасть-и-ха? Е Санюкпа çӳренĕ тесе сирĕн пата та килме тивĕçлĕ мар-и?..

Çапла ĕнтĕ Петĕр Мишук мунчинче ларать. Уншăн пулсан Санюк ăна кĕтни хаклах мар иккен. Санюкпа пурăнни çитет тет вăл. Халĕ ĕнтĕ урăххипе савăнсан та юрамалла...

«Эх, Петĕр, Петĕр... Ăçта эс? Е кирлĕ мар пултăм-и халь?..» – татăлсах хуйхăрать Санюк çак вăхăтра.

III

Шартлама сивĕ каç. Пĕве патĕнчи йăмрасем сивĕ витнĕрен пĕрин хыççăн тепри çурăлаççĕ. Карта витĕр çил шăхăрать. Çил çĕрти юра çĕклесе пĕвен сулахай енчи сăртне купалать. Çил ахаль те тĕттĕм çĕре татах тĕттĕмлетет...

Таçал урамĕнче хунар çутса шырасан та кушака та тĕл пулмăн. Таçал ялĕнчи чĕрчунсем пурте ăшă шăтăксенче. Сарай çунаттисем ăшне йăва çавăрнă çерçисем те таçта амаках, шалах кĕрсе выртнă, пĕр сас-чĕв те памаççĕ... Çанталăк улать, шăхăрать, тусать. Анчах, апла пулсан та, Ваçли хĕрĕ Санюк пĕве çинчи тирĕ-çӳсем шăтарнă шăтăк умĕнче тăрать. Вăл çĕтĕк сăхман тăхăннă, сăхманпах ачине чĕркенĕ. Ăна сивĕ мар. Вăл чĕтремест. Уншăн пулсан халь сивĕ çанталăк, урнă çил вăй-хăвачĕ нимĕн те мар. Уншăн пулсан этем пурнăçĕ, пĕр чĕр чун пурнăçĕ çĕр çинчи çӳп пек хисепсĕр япала.

– Ула, урнă çил... Ула, эс мана хăратаймăн. Эпĕ халь нимĕнрен те хăрамастăп. Маншăн пулсан эс шăхăрни, çĕр çинче выртакан юра çӳле

улăхтарса тусни – нимĕн те мар... Çук, санран хăрамастăп. Санран пурнас текенсем çеç хăраççĕ... Ак ман алăра хам çуратнă ача, ăна пурнăçа юратакансене пиллесе хăварас çук эпĕ. Вăл хамăн, ăна хам çуратнă, хампа пĕрлех сӳнтеретĕп... Эп çамрăк, эп ĕнер анчах вун тăххăр тултартăм, этем çĕр çинче мĕншĕн пурăннине лайăх пĕлетĕп. Çапла, Таçал ялĕ, сыв пул... Савнă Петĕр... Сыв пул! Ах, ачам... анчах уçăлнă куçусене халех хупас-ши?.. Ах, мĕн курас манăн... Халех пĕтес-ши вара?..

Ах, Петĕр, Петĕр... ăçта эс?..

IV

Çу иртсен çурçĕр енчен сив çил вĕрнипе вăрманти чечексем пуçĕсене усаççĕ, хуçăлса анма тытăнаççĕ. Анчах хăш-пĕр чухне кĕркунне çитсен те ăшă хĕвел ăшăтса вĕсене каллех ура çине тăратать, вĕсем пĕр вăхăтлăха каллех савăнаççĕ. Çавăн пекех Санюк та пĕвери шăтăка сиксе вилес тенĕ çĕртенех урăх шухăш тытса çăлăнса юлчĕ. Çук, вăл хăйне хĕрхенмен, уншăн пулсан вăл хăй нимĕн те мар. Ăна хăй çуратнă ача çăлнă. Анчах сывлама пуçланă чĕр чуна халех шăтăка илсе кĕме вăл пултарайман... Çапла ĕнтĕ Санюк хăй ачишĕн пурăнма шутланă. Ак халĕ вăл пӳртре. Пӳрт маччинчен сăпка çакса янă. Сăпкинче – ачи. Халĕ ĕнтĕ мĕн кĕркуннерен пуçласа Санюка тем те пĕр каласа ятланă ашшĕпе амăшĕ те вăрçмаççĕ. Вĕсем хăйсен хĕрĕ пĕвери шăтăка сиксе вилме тăнине лайăхах пĕлеççĕ. «Уншăн хамăра та айăплĕç, вăл вилнĕ пулсан хамăрах айăплă пулаттăмăр турă умĕнче те», – теççĕ. Анчах Санюк ашшĕсене айăпламан. Санюкшăн ашшĕпе амăшĕ айăпсăр. Вăл ашшĕпе амăшĕ ятламан пулсан та вилес шухăша тытатчех... Вăл çамрăк пулнă, çынсене ĕненнĕ. Пурнăçăн хура кĕсенлĕ тӳнтерлĕхне курман, активмен. Этем пурнăçĕ уншăн илемлĕ шур чечек пек ӳснĕ. Ăна вăл юратнă, савнă. Кайран вара, Петĕрпе юлташлансан, пурнăçра суя ĕмĕтсем çӳренине сиснĕ. Пурнăçăн шур чечекĕ, савнăçлă чечекĕ, этем йăхĕпех таптанса пынине вăл хăй куçĕпе курнă... Анчах хăйĕн сăхманĕ айĕнчи кĕсенленмен çăл шывĕ пек таса, халь анчах сывлама пуçланă чун çăлать ăна. Ун чĕри таппинче вăл çĕнĕ ĕмĕт курать... Ах, ачи вăранчĕ, ак вăл ăна сиктерет.

– Çывăр, хĕрĕм, çывăр... ӳссен çывăрма памĕç... Ах, хăçан ăнланакан пулăн-ши эс? Ах, хăçан пĕрре кулăн-ши?

Çук, ачи çывăрса тăраннă. Вăл хăйĕн пĕчĕк аллисене çӳлелле çĕклет. Санюк çакна курсан ачине хытă чуптăвать те арки çине илет.

– Асту, ӳссен никама та ан ĕнен...

1926.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. В. Рсай хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: https://www.chuvash.org/lib/author/303.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. В. Рсай пултарулăх çулĕ çине хăш вăхăтра тата мĕнле тухнă?
2. Виктор Рсай, Митта Ваçлейĕ тата Петĕр Хусанкай сăвăçсене мĕнле пулăм çыхăнтарса тăрать?
3. «Хресчен юрăçи», «уй-хир сăвăçи» тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Чăваш литературин историйĕнче çак ята тата кам тивĕçнĕ?
4. Виктор Рсайăн хăш прозăлла хайлавĕсем хăй пурăннă чухнех пичетленсе тухнă? Жанрпа стиль тĕлĕшĕнчен вĕсене мĕнле ушкăнсене уйăрма пулать?
5. В. Рсайăн прозăри пултарулăхĕ мĕнпе палăрса тăрать?
6. «Сăхман айĕнчи ача амăшĕ» калавăн тĕп хирĕç-тăрăвĕ кампа кам е мĕнпе мĕн хушшинче аталанать? Чăваш культуринче «сăхман айĕнчи ача амăшĕ» тени мĕне пĕлтерет?
7. В. Рсайăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çĕршыври XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи социаллă тата политикăлла лару-тăрупа мĕнле çыхăнса тăнă?

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Рзай В.Е. Çырнисен пуххи. Сăвăсем, поэмăсемпе калавсем, повеçсем, статьясемпе çырусем, документсем. Шупашкар: Чăваш кĕн.изд-ви, 2004. 446 с.

☼ *Сочинени темисем*


1. Çĕр ĕçченĕн тавракурăмĕ чăваш культуринче.
2. Чыса çамрăкран упра (В. Рсай хайлавĕ тăрăх).

♫ *Проектсем*

1. Виктор Рсай çыравçăн пурнăçĕпе пултарулăх çул-йĕрĕ*(ушкăнла тĕпчев).*
2. Виктор Рсай пултарулăхĕнчи хресчен пурнăçĕн теми (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).

∆ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Виктор Рсайăн «Кистенĕм çук» сăввинчи паянхи литература чĕлхин нормисене пăсакан сăмах формисене тупса палăртăр. Архаизмсемпе вырăнти калаçу сăмахĕсене ăнлантарса парăр.



МИТТА Ваçлейĕ (1908-1957)

Кĕске биографи справки

1908 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕ – Пысăк Арапуç (Чĕмпĕр кĕпернин Пуинск уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Чăваш Республикин Патăрьел районĕн Первомайски ялĕ).

1924-1928 çулсем – Ульяновск хулинчи чăваш педагогика техникумĕнче вĕреннĕ.

1928-1929 çулсем – Патăрьел районĕнчи Тигашевă шкулĕнче вĕрентекен пулса ĕслене.

1929-1930 çулсем – Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕнчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕн заведующийĕ пулнă.

1930-1932 çулсем – Патăрьел районĕн «Паянхи сас» хаçачĕн яваплă секретарĕ пулса ĕçленĕ.

1932 çул – сăвăçăн пĕрремĕш сăвăсен пуххи «Кăмăл» ятпа пичетленсе тухнă.

1932-1936 çулсем – Чăваш АССРĕн Совнаркомĕ çумĕнчи радиовещани комитечĕн редакторĕ пулнă.

1935-1937 çулсем – Мускаври А.М. Горький ячĕллĕ литература институтĕнче куçăм мар йĕркепе вĕреннĕ.

1936-1937 çулсем – Шупашкарти Халăх пултарулăх çуртĕнче ĕçленĕ.

1937-1947 çулсем – совет влаçне хирĕç ĕçлет текен суя айăплава пула тĕрмене лекнĕ, Унженск лагерĕнче ларнă.

1949-1954 çулсем – Троцкий ушкăнне кĕнĕ тесе айăпласа каллех арестленĕ, Красноярск таврашне поселенине ăсатнă.

1955 çул – тӳрре кăларнă (реабилитациленĕ).

1956 çул – «Кăмăлтан» ятлă пуххи тухнă, унта куçарусем те кĕнĕ.

1955-1957 çулсем – «Тăван Атăл» литература журналĕнче ĕçленĕ.

1957 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕ – Патăрьел районенчи Первомайски ялĕнче вилнĕ, çакăнтах пытарнă.

Астăвăм

Митта Ваçлей фондне уçнă.

1983-мĕш çултан пуçласа чăваш культурин аталанăвĕнчи пысăк çитĕнӳсемшĕн çулсерен паракан Митта Ваçлей ячĕллĕ преми йĕркеленĕ.

Шупашкар хулинчи К. Маркс урамĕнчи Митта пурăннă çурт çине мемориал хăми çакнă.

Митта Ваçлейне асăнса Первомайски ялĕнчи (Патăрьел районĕ) урама унăн ятне панă.

Çĕнĕ Шупашкар хулинчи Чăваш наци гимназине (халĕ уйрăм предметсене тарăн вĕрентекен 20-мĕш № шкул) Митта Ваçлейĕ ятне панă.

Ăслăлăх аниичен

«20-мĕш çулсенче чăваш поэзийĕнче майĕпен çĕнĕ хум вăй иле пуçлать: В. Рсай, П. Хусанкай, В. Митта, А. Петтоки, Н. Янкас, И. Ивник тата ыттисем. Ытларах чухне ку вăл Çеçпĕлĕн Çулăмлă Глаголĕн (вĕсем çав трагедиллĕ çивĕчлĕхĕн ӳсĕмне çитеймен пулсан та) вĕренекенĕсем (адептчĕсемпе апостолĕсем) пулнă. Çакна вĕсем хăйсен пурнăç опычĕ, харпăр хăй кăмăл-туйăмĕн уйрăмлăхĕ урлă кăларнă» (*В.Г. Родионов, филологи докторĕ*).

«Чун-чĕрине яр-уççăн уçса парас енчен пăхсан тата ăсталăх шайне илсен, Миттан 30-мĕш çулсенчи сăввисем, малтан çырнисемпе танлаштарсан, куçкĕретех вăйсăртарах, ку тапхăрта вăл поэзирен те писнĕн туйăнать. Нумайăшĕ пĕлекен формулăпа каласан, вăл хăй чĕрин юррине хăех таптанă. Кун пек калани айăплани те, паянхи куçпа курса хак пани те мар, çакна тума манăн нимле тивĕç те çук. 30-мĕш çулсенчи атмосфера кун йышши «çĕн йĕркелĕве» çуратмаллах пулнă, кулленхи пурнăçра çак пулăм пултарулăх çынни хăй ĕçлес тенĕ пек ĕçлейменнине тата литература процесне пролетариллĕ совет литературишĕн кĕрешме йыхăракан догма-кăтартусем хушнă пек тӳрлетсе те аркатса пынине пĕлтернĕ. «Пăлхар поэчĕсем» вара, паянхи виçепе виçсен, çап-çамрăк ачасем, çирĕмрен кăшт иртнĕскерсем çеç, пулнă!» *(А.П. Хусанкай, филологи кандидачĕ).*

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Митта Ваçлейĕн (*Митта Василий Егорович*) пурнăçĕпе пултарулăхĕ XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи репрессин пĕтĕм синкерлĕхне кăтартать, мĕншĕн тесенвăл хăй пурнăçĕн вун çичĕ çулне тĕрлĕ лагерьсемпе тĕрмесенче ларса çухатнă. Çапах та çак тискер лару-тăрура та сăвăç чун тасалăхне, кăмăл паттăрлăхĕпе вăйне сыхласа хăварнă, чăваш халăхĕн патриочĕ пулса юлнă. Хăйĕн тĕп тивĕçне вăл тăван халăха чунтан юратса ăна малалла кайма пулăшассинче курнă. Çакă уншăн пуш сăмах пулман. Çапла хăй вун саккăрти яш пулнă чух тусĕ Петĕр Хусанкай патне янă çырура Митта тупа тунă пекех калать:

«Эпĕ çав ĕçе, чăваш халăхне малалла ярас йĕркене, нихăçан та, хамăн ĕмĕр иртсе каймасăр та, пăрахас çук».

Вăрçă хыççăнхи чăваш культуринче вăл,чăваш сăмахĕсене вырăс чĕлхинчен кĕрекен сăмахсемпе улăштарас йăла вăйланнă тапхăрта, чĕлхе çĕнетӳçи пулса тăнă. Унăн пултарулăхĕ литература чĕлхине халăх каласăвĕн чĕлхипе çывăхлатас ĕçре пысăк витĕм кӳнĕ. Çак енчен В. Миттана Çеçпĕл Мишшин чăваш чĕлхин поэзинчи çĕнĕ майĕсене аталантарас тĕлĕшĕнчен тунă ĕçне малалла тăсаканĕ теме пулать.

Митта Ваçлейĕ пултарулăх çулĕ çине 1920 çулсен иккĕмĕш çурринче тăнă. Унăн литературăри пĕтĕм ĕç-хĕлне 1937 çулчченхи тата 1954 çул хыççăнхи тапхăрсем çине пайламалла. Çапла енчен те репресси айне лекĕчченхи хайлавсенче (1924-1937) социаллă темăпа илемлетсе калани малта пулнă пулсан, тĕрмере ларнă тата ирĕке тухнă хыççăнхи тапхăрта вара (1937-1957) пурнăçа философиллĕ, лирикăлла ăнланса илме тăрăшни вăйланать.

Сăвăçăн лирика стилĕ çине 1920-мĕш çулсенчи «комсомол поэзийĕ», паллах, витĕм кӳнĕ. Çапах та, Митта Ваçлейĕ хăй каланă тăрăх, сăнарлă лирикăлла шухăшлава, сăмах сĕткенлĕхне туйма тата лирикăлла илемлĕ сăнар калăплама вăл ытларах В. Маяковскийпе С. Есенин вырăс сăвăçисенчен вĕреннĕ. Сăвăçăн мăшăрĕ Н. Еремеева-Митта каланă тăрăх та, Чĕмпĕрти педагогика техникумĕнче вĕреннĕ вăхăтра вăл хавхалансах С. Есенине сăввисене вуланă, вĕсене чăвашла куçарнă.

Пултарулăх çулĕн пуçламăшĕнче В. Митта вырăс сăвăçисене çеç мар, Çеçпĕл Мишшипе Петĕр Хусанкай сăввисене те кăмăлласа вуланă, вĕсем пекрех çырма тарăшнă. Унран та ытларах, Çеçпĕле, Миттана тата Есенина пĕрешкел шухăш-кăмăл пĕрлештерсе тăрать. Акă, сăмахран, Çеçпĕл тинĕсе чăваш чунĕнчи мĕскĕнлĕхе хăваласа кăларма чĕнсе ыйтать, вăл чăваш паттăрлăхĕшĕн кĕрешме май пуррине шанать. Митта тăвăллăн Атăлпа каласать, юхан шыв чăвашсен аваллăхне маннă намăссăрсен чунне кисретме пултарасса ĕненет. Вырăс сăвăçи те хăй чунне вулакансем умĕнче уçать, çавăнпа та унăн сăвă-поэмисем лирика геройĕн çылăх каçарттарăвĕ пек янăраççĕ, вĕсене лирикăлла монолог теме пулать.

С. Есенин витĕмĕпе Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕнче хăш-пĕр матафорасемпе сăмах çаврăнăшĕсем çуралаççĕ, вĕсенче сăвăç хăй чĕрине «турбинăпа» танлаштарать, вăя – «вулканпа», ӳте – «пăхăрпа».

Çамрăклăх – чаплă ят, Вăй ун –
Чап ун кивелмĕ те чакмĕ. Вулканăн вучахĕ.
Çамрăк шеллемĕ вăя, Чăнкă, сулмак кăкăрта

Çамрăк чĕремĕр – турбина.
Çамрăк ӳте пăхăртан
Тӳсĕм хăвачĕпе хывнă.
(«Çамрăклăх»).

С. Есенин вырăс ялĕн шăпишĕн пăшăрханнă, вырăс халăх культуринче çирĕпленнĕ килĕшĕвĕ арканасран хăранă, Раççей шăпин пуласлăхĕшĕн хурланса йĕнĕ пек, Митта Ваçлейĕ те çав вăхăтшăн, тĕрĕссипе вара паянхи кунченех, çивĕч ыйту çĕклет – тăван халăха мĕнле сыхласа хăвармалла? Шăпах çак ыйту çине хурав шыраса пулас сăвăç 1920 çулсенче икĕ поэма – «Савни парни» (1927), «Сĕрĕмре» (1927) – çынă. Кунта вăл çĕнĕ совет кулленхи йăлине хăй мĕнле ăнланнине уççа панă. «Сĕрĕмре» поэмăра вара С. Есенин витĕмĕ уйрăмах курăмлă.

Митта Ваçлейĕн поэзийĕнче философиллĕ туртăм питĕ пысăк. Ытларах чăваш тĕнчине сăнарлать вăл. Çакна нумай чухне Улăп сăнарĕ урлă кăтартать. Çавăн пекех сăвăç этем ĕмĕрĕ ытла кĕске пулни пирки, кăмăл-сипет тасалăхĕ, çынсене ĕмĕртен ĕмĕре канăç паман ыйтусем тавра (пурнăçпа вилĕм, телейпе хуйхă тата ыт.те) шухăша каять. Ун сăввисенче вара çакă çапла янăрать:

Юр ӳкет-и лапка та лапка...
Пурнăç, пурнăç, ытла ан васка!
Çамрăк ĕмĕр – самант.
Ун парни –
Çут шăнкравлă кĕç-вĕç çăварни
(«Çӳресе çинçелмен çӳрен ут...»).

Е тата:

Ырсенĕн ырсемĕ – Управ та Тирпей,
Эсир пирĕн хунтă, шанчăк, телей.
Ăс патăр ватти, вăй патăр яшши.
Этем этеме ан пул ытлашши
(«Анатри юрă»).

Литературăри нумай сăвăçсем пекех (кунта ют çĕршыв, вырăс, чăваш çыравçисене те асăнма пулать) Митта Ваçлейĕ хăй пултарулăхĕнче поэтпа поэзи темине те çĕкленĕ. Сăмахран, 1927 çулта çырнă «Тавралăх шуçăмпа хĕрелнĕ» сăвăра сăвăçа сăнланă май вăл «поэт кăвар чĕреллĕ», «чĕлхи вылять ун çут хĕçле», «поэт тени пит чăрсăр çын вăл», «поэт хĕçпе вăльть-вальть ухать» текен сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курать. Митта сăвăçăн çак пурнăçра пысăк пĕлтерĕшĕпе уйрăм вырăнĕ пурри пирки те манмасть:

Кам çакă тĕнчере асамăç,
Кам ăрăмĕ темрен хаяр, –
Çавна поэт тесе ăмсанĕç,
Унтан ытла никам та мар.

Лирикăри поэтпа поэзи теми «Тайăр» поэма-çаврăмра уйрăмах вырăнлă та трагедиллĕ янăрать. Кунта сăвăç хăйĕн синкерлĕ шăпине те, хăйĕн поэзинчи тĕллевĕсене те кăтартма пултарнă. Ку поэма-çаврăма сăвăç 1949-1956 çулсенче çырнă, вăл çырса пĕтермен хайлавсен шутне кĕрет.

Поэмăн тĕп сăнарĕ – революци поэчĕ Тайăр Тимкки. Митта Ваçлейĕ пекех ăна Çĕпĕр çĕрĕ çине пуç янă. Влаç çыннисем умĕнче

айăпа кĕнĕ Митта хăйĕн туйăмĕсемпе пăшăрханăвĕсем пирки тӳреммĕн калайман, çавăнпа та çакна вăл патша вăхăтĕнчи пуç янă çын сăнарĕ урлă тунă. Сăвăçа Тайăр сăнарĕ иккĕшĕн те шăписем пĕр пек пулнипе çеç мар, вăйлă характерĕпе, тăван халăхăн аталанăвне вĕçĕмсĕр шаннипе те илĕртнĕ. Чăнласах та хайлавра Тайăрăн йывăр шăпи пирки çырса панисем ерипен автор хăй Красноярск таврашĕнче ссылкăра пулни пирки каланисем, тăван халăхăн кăмăл-сипечĕ пирки пĕтĕмлетнисем çине куçаççĕ.

Тĕпрен илсен, «Тайăр» поэма-çаврăмра Митта хăйĕн шухăш-туйăмне, тĕрмесенчи, каторгăри, ссылкăри йывăр саманчĕсене палăртнă. Асапланакан çын сăнарне ытларах лирикăлла майпа – пĕтĕмлетӳллĕ шухăш-туйăм ӳкерчĕкĕсем урлă е юрăсем майлăрах уçса панă. Çакă пĕтĕмпех Миттана хăйне питех те çывăх пулни вара кашни сăвăра курăнса тăпать. Акă, «Пуç янисен юрри» сыпăкра арестленекен çыннăн арăмĕпе уйрăлнă самантне ӳкерсе панă. «Вун тăваттă çапсан» сăвăра тĕрмере ларнă вăхăта сăнарланă.

Сăвăçăн «Вун тăваттă çапсан» хайлавне тĕпчевçĕсем (Г.Я. Хлебников, В.С. Чекушкин) тĕнче поэзийĕн ахахĕ, паттăрлăх гимнĕ тесе хаклаççĕ. Кунта сăнчăрланă арăслан евĕр калла-малла утакан поэтăн парăнман шухăш-ĕмĕт ирĕлĕхне автор тулли сасăсен янравĕпе («тап-тап пусса, кал-кал утам-и») вăйлатса ярать, Атăл пăрĕ кайнине символ шайне çĕлесе пурнăçри улшăнусем пирки каласа ярать:

Туятăп, ав каплам-капламăн
Мăн Атăл та тапранă пăр.
Эпир хăçан çапла, тăванăм,
Çĕр чĕтретсе тапранăпăр? –

Митта Ваçлейĕ чăваш культуринче айăпсăр айăпланă çыравçăсен шутĕнче тăрать. Шел пулин те 1930 çулсенчи политикăлла репресси нумай чăваш çыравçисене пырса тивнĕ, шăписене хуçса хăварнă. Кунта А. Миллине, А. Золотова, В. Краснов-Аслине, Е. Захарова (Матена), Н. Патмана, С. Толмасов-Шăпчăка, Н. Золотова (Юта), Н. Шупуççиннине, Н. Янкаса, В. Рсая, П. Хусанкая, М. Юмана, М. Юрьева, И. Максимов-Кошкинскине, С. Лашмана, И. Салампека, В. Иванов-Паймена, И. Кузнецова тата ыт. те палăртмалла.

Митта Ваçлейне 1937 çулхи раштав уйăхĕн 18-мĕшĕнче арестленĕ, Чулхула облаçĕнчи политика тĕлĕшĕнчен айăпланисен лагерне 10 çуллăха лартнă. Ăна национализмла шухăшсем сарнишĕн айăпланă. Анчах тĕрмерен тухнă хыççăн та сăвăç ирĕклĕ пулман, ăна тăван ялĕнчен тухса çӳреме чарнă, вĕçĕмсĕр вăрттăн сăнаса тăнă. Хăй çемйипе те пĕрлешеймен вăл, питĕ сайра хутра çеç вĕсем патне Шупашкара тĕл пулăва кайма пултарнă. Çакна пăхмасăрах 1949 çулта

Миттана каллех арестлеççĕ те Çĕпĕре, Красноярск таврашне пуç яраççĕ. Кунтан вара сăвăç Сталин вилнĕ хыççăн çеç 1954 çулта киле таврăнма пултарать.

Митта Ваçлейĕн сыхланса юлнă ал çырăвĕсем кăтартнă тăрăх, 1938-1948 çулсенче вăл нимĕн те çырман. 1949 çулта çеç сăвăç кĕске сăвăсемпе эпиграммăсен ярăмне çырнă, А. Пушкин сăввисене чăвашла куçарнă. Çак çулах вăл, Çĕпĕре пуç янă хыççăн, «Енисейсăввисем» ярăма çыра пуçланă. Икĕ çул хушшинче сăвăç вунă сăвă ытла çырнă, анчах вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем ăнланмалли сăлтавсене пула сыхланса юлман. Унран та ытларах çак ярăмри нумай сăвăсем каярах «Тайăр» поэмăна кĕреççĕ. Паллах, кунта вĕсене улăштарнă, «Енисей» тени вырăнне «Сĕлкĕш Обь» е «Чул çыран» тесе ят панă. Çавăн пекех поэмăна тĕрмерен тухнă хыççăнхи тапхарта çырнă сăвăсем те кĕнĕ («Вунтăваттă çапсан»).

Литература теорийĕ

Лирика çаврăмĕ (ярăмĕ) тесе пĕр авторăн (сайра чухне çыравçăсен ушкăнĕн) пĕрешкел е çывăх темăпа çырнă хăй хальлĕ сăвăсен пысăк пуххине калаççĕ. Сăвăç шухăшĕпе çаврăма кĕрекен сăвăсем илемлĕх тĕлĕшĕнчен пысăк ӳкерчĕкĕ кăтартакан уйрăм пайсен пĕр пĕтĕмлĕхĕпе палăрса тăраççĕ. Лирика çаврăмĕ пур пысăк сăвăçсемшĕн те кăтартуллă пулнине палăртмалла (П. Хусанкай, В. Митта, Я. Ухсай, Г. Айхи тата ыт. те).

Автор шухăшĕ (позицийĕ) тесе илемлĕ хайлавра сăнарланă çынсен характерне, ĕç-хĕлпе пулăмсене, философиллĕ тата кăмăл-сипет ыйтăвĕсене çыравçă хăй мĕнле ăнланнине тата хакланине калаççĕ. Автор шухăшĕ, тĕслĕхрен, сăнарсене мĕнле лару-тăрура кăтартнинче, суйласа илнĕ пулăмсенче, сюжета мĕнле аталантарнинче, хайлавра çынсемпе пулăмсене мĕнле хаклаининче палăрăнать. Пĕр сăмахпа каласан, вăл илемлĕ хайлавăн мĕн пур пайĕнче курăнать.

Автор шухăшне икĕ тĕрлĕ кăтартма пулать: е тӳррĕн, уççăн, икĕ тĕрлĕ ăнланмалла мар, тӳрĕ хаклав мелĕпе, е тӳррĕн мар, авторăн хаклавĕпе шухăшне уççăн палăртмасăр. Хăш-пĕр çыравçăсем çынсемпе пулăмсене хăйсем мĕнле ăнланнине уйрăм сăнарсем урлă кăтартаççĕ. Çакнашкал сăнарсем, вĕсен кăмăл-сипечĕ автор хăй каланисене хирĕçлет пулсан та, ăна çывăх, унăн шухăшне е вăл этеме мĕнле йышăннине, курнине палăртаççĕ. Çакăн пек сăнарсене ытларах чух драматургийĕнче усă кураççĕ, мĕншĕн тесен кунта автор шухăшне тӳррĕн те уççăн кăтартмалли майсем сахал.

Нумай чухне автор хайлаври сăнарпа ĕç-пулăма, пурнăçăн ку е леш енĕсене мĕнле хаклани уçăмлă мар, пытанчăк. Кун пек чухне

çыравçă, тӳрĕ хаклавран пăрăнса (ырă е усал енчен), сăнарласа паракан пулăмăн кăткăслăхне, нумай енлĕхне палăртать. Вăл вулаканăн пурнăç опычĕ патне те çаврăнма пултарать. Нумай чухне пĕр хайлаврах çыравçă пурнăçăн хăш-пĕр енĕсем пирки çирĕплетсе каланине те, хирĕçленине те, çавăн пекех уçăмсăрлăха е тата нимĕн те савăнтарманнине çиреплетсе кăтартнине курма пулать.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

ТАЙĂР

Поэма-ярăм (сыпăк)

Тăван чĕлхем

Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем.
Пар ирĕк – çутăрах çунма.

Ĕненнисемшĕн çул çинче
Эс – шанчăк çăлтăрĕ ялан.
Тискер тăманлă каçсенче.
Йыхравлă чан пек янăран.

Çунат паратăн çамрăка,
Ватта чун канăçĕ кӳрен.
Сӳнсе кĕлленнĕ кăмрăка
Вут кайăк сывлăшĕ кĕртен.

Хыпса çунан çĕршывăма,
Чĕлхем, сипетлĕ çумăр яр.
Хĕвел хĕм панă сывлăма
Мана та пĕр тумлам сыптар.

Сĕткенӳпе шăварăнса,
Шаланкă евĕр çĕкленем.
Çӳлте çуйхавлăн ярăнса,
Этемшĕн савăнăç чĕнем.

* * *

Çӳресе çинçелмен çӳрен ут...
Лар, савни, вĕçтерер пĕрех хут!
Ытарса илейми чечен ир,
Куçпала виçейми çеçенхир...

Лар часрах! Аш вăркать, ăш çунать.
Кукалет – çул ыйтать çилçунат.
Эреветлĕ чаршав пĕлĕтсем
Уçăлайччăр эпир вĕçнĕçем.

Шăпăрне çухăртса, çил ачи
Чуптăр пирĕнпеле катаччи.
Туссан тус лайăхрах, çил-тăман!
Ирĕк, ирĕк!.. Тăван, мĕн тăвам?

Янкăс чун ямшăкла кăтăрса,
Е ярам-ши ши-ши шăхăрса?!
Тапса сиктĕр маттур çӳрен ут,
Пăхса юлтăр, ан тив, çичĕ ют.

Камăн çулĕ пире хирĕç мар –
Ларкăча тус-йышла сиксе лар!
Савнăç, савнăç! Чупту, ытала!..
Ямшăк тус, хулленрех хăвала...

Киленсе куç хупса иличчен
Ялăм юлнă таçта çитиччен.
Юр ӳкет-и лапка та лапка...
Пурнăç, пурнăç, ытла ан васка!
Çамрăк ĕмĕр – самант. Ун парни –
Çут шăнкравлă кĕç-вĕç çăварни.

Анатри юрă

Ман пурлăхăм чух, пин ылтăнăм çук,
Нумай кирлĕ мар тăван пĕрле чух.
Нумай та пĕтет, сахал та çитет,
Тату пурнăçа элле мĕн çитет?

Ырсенĕн ырсемĕ – Управ та Тирпей,
Эсир пирĕн хунта, шанчăк, телей.
Ăс патăр ватти, вăй патăр яшши.
Этем этеме ан пул ытлашши.

Пурри вăл – пĕрле, çукки – çурмалла.
Тата, тăвансем, епле пулмалла?
Çӳлтен ĕрĕхет сайра пĕрĕхет,
Çапах иксĕлмест пирти перекет.

Тивлет те сăвап, мухтав та пехил
Сана, ыр ĕçре хунан таса кил!
Мухтав та пехил ĕмĕр-ĕмĕрне
Тарпа тăварланă ыраш çăкăрне!

И мĕн пуян...

И мĕн пуян, тăванăм?
Сывлăх пуян.
Сывлăх çул памасăр çта каян?
И мĕн пуян, тăванăм?
Туслăх пуян.
Пин ылтăн мар,
пин тус эс туян.
И мĕн пуян, тăванăм?

Халăх пуян.
Унсăр пуçне кама пуç таян?
Эс те пуян, тăванăм,
Эп те пуян:
Пуçăмăрта сывлăх пур паян.
Сывă пулар, тăванăм,
Туслă пулар,
Халăх ирĕкĕнчен ан тухар.

Миша вăй юрри

Хир-хир урлă çĕр виçсе эп тухрăм:
Шухăшларăм – çак юрра эп тупрăм.
Пархатарлă пирĕн ен, тăванĕ!
Ялан тулăран тулă йăранĕ.
Аташтармĕ сарă тул йăранĕ.

Аташтарĕ янтă мул, тăванĕ.
Тĕнче мулĕ – мĕскĕнсен куççулĕ, –
Ан ăмсанăр, пуçăра хĕн пулĕ.
Хир-хир урлă сахал мар хутларăм:
Çак юрра эп ахаль мар юрларăм.

* * *

Çăлтăр хушка, ан хашка
Сывлăш çавăрми.
Тĕк татнă пек ан васка,–
Иртрĕ çăварни.

Сыв пулăрах, тусăмсем,
Вăхăт ăсанма.
Вылянисем-кулнисем
Юлччăр асăнма.

Вунтăваттă çапсан

– Çапать кун чапĕ вунтăваттă,
Салам Пĕрремĕш апреле!
Ĕнтĕ ман хурлăхлă йăва та
Пăртак çуталчĕ темелле.
Чуна уççа, пăлхавлă варкăш
Кĕрет хĕç карнă кантăкран.

Тĕнче ăшши кунта та пур кăшт,
Чĕре таппи чарăнмасан.
Туятăп, ав, каплам-капламăн
Мăн Атăлта тапраннă пăр.
Эсир хăçан çапла, тăванăм,
Çĕр чĕтретсе тапранăпăр?

Çĕклен, кам выçлăх, кам чуралăх
Кунне текех курасшăн мар.
Вăркать ăшчик, çунать хаярлăх,
Пĕр харăс çапăçма тухар! –
Çапла вăл, алăкăн-тĕпелĕн
Утса, хăйпе хăй сăмахлать.
Пĕрре çиçсе илет хĕвелĕн,
Тепре сĕм каç пек шăмарать.
Е, акă, темĕскер астунăн,
Пуçне тытать ик аллипе.
Çунат, çунат пулинччĕ унăн,
Ытла та мăшкăл каплипе.
Çилкайăк евĕр, тăвăл умĕм
Çӳресчĕ тинĕс çийĕпе;
Е, хум пулса, пăлхавăр кунĕ
Тапасчĕ аскăн çилĕпе...
Ларать пĕччен пĕр камерта вăл,
Кун хыççăн кун ахаль иртет...
Жандарм калать:
«Семенов, тайăл!»
Семеновĕ: «Эп – Тайăр!» – тет.
Ĕнтĕ çул талăк тыттармаççĕ
Ăна хутпа кĕнекене.
Чи пысăк хурлăх çакă мар-ши
Пăртакçă ăс пĕлекене?..
Шарланкă тăраймасть кĕрлевсĕр,
Вĕçмесĕр пурнаймасть хăлат.
Çырман поэт чăн-чăн телейсĕр,
Вăл, пулă пек, типпе юлать...
– Ак çапрĕ, çапрĕ вунтăваттă,
Хускалнă вăй мăн Атăлта.
Çĕклентĕр тĕлĕрнĕ хăватăм,–
Çур кунĕ ялтăрать тулта!
Тап-тап пусса, кал-кал утам-и,
Кисрентĕр цементлă урай.
Çĕлен пек сăнчăрăн ытамĕ
Ан пустăр кăкăра пĕрмай.
Ăçта эс, вутлă чăн сăмахăм,
Илемӳпе мана çутат!–
Çапла вăл тăлăххăн-хăраххăн
Кун-кунласа утать, утать...
Çук, халь ĕнтĕ вăл тăлăх мар тек:
Вăл туйрĕ турă пуррине...
Ĕмĕрлĕхех поэт ăнкарчĕ –
Çав турă юрă иккенне!
Ĕнтĕ тулать пек хĕсĕк пӳлĕм
Хăватлă юрă-сăвăпа.
Пăхăн таруллăн, çĕнтерӳллĕн
Кĕрлет йыхравлă йĕс труба.
Пĕр харăс уççăн хуравлаççĕ
Ăна хĕн-хурлă флейтăсем.
Чĕнет, хистет, янрать мăнаçлăн
Фанфара, кĕвĕ ӳснĕçем.
Çĕр çĕмĕрсе маттур çар умĕн
Утса килет мăн параппан.
Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх хумĕ
Тапса тăрать пур урамран...
– Аркат, çунтар, тĕп пултăр хурлăх,
Эпир çĕн никĕс хывмалла.
Мĕнпур тĕнче, пур ырлăх-пурлăх
Сана çеç, халăх , пулмалла.
Герой-и, турă-и, патша-и,–
Пире никам та çăлас çук.
Ху тивĕçне ху çапăçса ил,
Шаккар-ха тимĕр хĕрнĕ чух!–
Çапла вăл алăкăн-тĕпелĕн
Кун-кунласа хутлать, хутлать.
Чăваш çĕрне хăват кĕртмелĕх
Вут хĕç пек сăмахсем тупать.
Вăл тăлăх мар, вăл паттăр çарăн
Мухтавлă юррине илтет.
Жандарм калать: «Семенов, чарăн!»
Поэт: «Юрра чараймăн!» – тет.

Пуç янисен юрри

Çăлтăр витĕр çул курнать,
Куççуль витĕр кун курнать...
Çунатăм, юлатăн. Ан макăр.
Салтак пек маттур уйрăлар.
Ман çул – çăлтăр витĕр – тап-такăр,
Ман кун – куççуль витĕр – уяр.
Пире çурçĕр çилĕ ыталĕ,
Ачашлĕ кăра шартлама.

Çуталĕ жандармăн медалĕ.
Вăл памĕ çулра аташма.
Спасибо! Савса ывăлларĕ
Мана Сармантей самани.
Юрлар-и, кулса уйрăлар-и?
Тен, ĕмĕрлĕхех... чун савни!..

Элеги

Савнă Ульхана

Каясси ман каллех – вăрăм çул,
Курасси ман каллех – темĕн чул...
Тусăм, тусăм, мĕн пулчĕ?
Мĕн килчĕ? Тĕрĕс-тĕкĕл пурнар тенĕ чух,
Ак каллех уйрăлмашкăн тĕл килчĕ...
Юлтăн, юлтăн инçе, аякка.
Сăрт-тусем, шыв-шурсем, сĕм тайга –
Пирĕн хушшăмăра хупăрларĕ.
Ылхан витнĕ çӳрен кайăка
Çта çитсен те канăç пулмарĕ.
Ак умра сарăлса шыв юхать,
Улăхпа сивĕ лăм улăхать.
Чупса антăм: тăван Атăл мар-и?
Çук, ку шыв çичĕ ютăн сывлать:
Сĕлкĕш Обь – пăрлă çурçĕр тымарĕ.
Вăл шăмарнă паян темĕскер.
Хура хумĕ юнавлăç тискер.
Е пире вăл хапăл тумарĕ?
Е хăнийĕ эпир – кĕтменскер?
Е чалтун чăваша палламарĕ?
Кама калăп хам хуйхăм çинчен?
Кама чĕнĕп чĕлхем çĕтиччен?
Кăлăх пулĕ – сассăм пăчланĕ.
Анăçран тухăçа çитиччен –
Хырлăх мар-мĕн – хурлăх вăрманĕ.
Çитĕ вăхăт, мана манăçа
Эс хăварăн. Пурнан пурнăçа
Кайăкла ирттерме çтан пултарăн?
Эпĕ панă айван шанăçа
Шур пӳспе чĕркесе эс пытарăн.
Эп çаплах, хам пуçтах пуçăмпа,
Утăп, утăп асаплă çулпа –
Чăтлăхсем, шыв-шурсем, тусем урлă...
Çтан чĕнен сана, тусăм, хампа:
Инçе çулăм ытла та хĕн-хурлă!..

Ан кулян

Шавлĕ вăйă-кулă
Кĕр уявĕнче.
Эсĕ çеç салхуллă
Ларăн çын çинче.
Тав туман курканăн
йӳççине чăтса,
Асăнăн, хурланăн,
Куççульне çăтса.
Ан кулян, ан усăн!
Паттăрăн тăрса,
Аякри тусушăн
Шалт ĕç, тав туса.
Ун чĕрин хĕлхемĕ
Ахаль мар çунать–
Пурăнăç илемĕ
Килессе шанать.

Чул çыран хĕрринче

Чул çыран хĕрринче пĕчĕк пӳрт,
Юр тултарнă мăрйиĕ таран...
Мăнакка, хăвăртрах уçса кӳрт,
Çитсе ӳкрĕм паян эп аран.
Ураран ӳкерен шартлама
Кун каçа муталарĕ пире.
Ни ĕçпе, ни вутпа ăшăнма,
Тумтирри тумтир мар-çке çире!..
Чĕрт, аппа, вучахна... Çак яшка...
Салтăнам... Ашăнма эп ларам...
Малашне те пулсан çакнашкал –
Тĕнчере пурăнни те харам...

Куллен-кун хăшкăла – хăшкăла,
Хырăмшăн хырăмпа шăвăнан.
Çынлăхран кăларан măшкăла
Хăçанччен тӳсмелле-ши, тăван?..
Çун, вучах! Ĕнтĕркенĕ вăй-хал,
Тепĕр хут йăл илсе амалан.
Курасси, тен, нумай,
Пурнасси, тен, сахал...
Мĕн пулать, мĕн килет –
Тапалан!..

Икĕ çыру

I.

Хусанти юлташсене

Хăямата янисене ан манăр,
Харкамăн хăйĕн ăрăскал.
Салам сире! Аякри тăванăр
Упрать-ха сых ятне вăй-хал.
Е кĕтнĕ кун çитес пулсан пĕр те пĕр,
Эп çунăп иртнĕ хĕрӳпех,–
Ăмăртăва тухан яш-кĕрĕм евĕр,
Вăй-кил кӳртен мăн кĕрӳ пек.
Эп таврăнăп йăвашшăн та хаярăн
Çĕршыв туй-çуй тапратнă чух.
Хавхалануллă такмаксем хайларăм,
Туй намăсне ярассăм çук.
Çапла, кĕрӳ килессине ан манăр –
Е çур çĕрте, е кăнтăрла...
Салам сире! Аякри тăванăр
Вăй-кил кӳртме таврăнмалла!..

II.

Кĕçтук Иванова

Эс курнă тĕнчере чĕр тамăк,
Эп курăп çăлăнăç кунне!
Саламлăн уçăлать ытамăм
Паян, çĕршывăм, сан енне.
Эс манăн шанчăка сыхлатăн
Хаяр та шалкăм кунсенче.
Чĕпписене шыран хăлатăн
Вĕçетĕн ман шухăшсенче...
Каллех ак Атăлăн тав-шавĕ
Мана йыхравлăн тухатать...
Нихçан та сан йăху хавшамĕ,
Тăван çĕршывăм, тупата!
Эп саншăн çĕнĕрен çуралтăм,
Эп мантăм пур йывăрлăха.
Çĕкленчĕ сыпăннă çунатăм
Каллех хĕвеллĕ анлăха.
Тапранчĕ чун хаваль хавассăп,
Сан ăшшупа амаланса.
Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм
Каллех ян хурçă пек таса!..
Телейлĕ ачисем Адамăн
Умра ыр шанчăк пур чухне.
Тĕп пултăр тĕнчери çĕр тамăк!
Çул пултăр çăлăнăç кунне!

* * *

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр.
Ăна тăван ыр кăмăлпа юрлатăр, –
Вара май канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

1948-1956.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Митта Ваçлейĕн хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000041/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Литературăри хăй çулне шыранă çулсенче камсем В. Митташăн вĕрентекен пулнă?
2. Çеçпĕл Мишши тата Митта Ваçлейĕ сăвăçсене мĕн çыхăнтарса тăрать?
3. Вырăс сăвăçи С. Есенин Митта Ваçлейĕн илемлĕх туйăмĕпе литературăри туртăмĕсем çине мĕнле витĕм кӳнĕ?
4. Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕнче 1937 çул мĕнле вăхăт пулса тăнă? Айăпсăр айăплани унăн пултарулăхне мĕнле улăштарнă?
5. Литературăри поэтпа поэзи ыйтăне Митта мĕнле татса панă? Мĕншĕн «Тайăр» поэма-ярăмра сăвăç хăй шăпине сăнласа панă теме юрать? Митта, Тайăр пек çыравçăсене христианство культуринчи Христос сăнарĕпе танлаштарма юрать-и?

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Митта В. Е. Çак юрра эп ахаль мар юрларăм: Сăвăсем, поэмăсен сыпăкĕсем, куçарусем, тĕрлĕ статьясенчен. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1990. 173 с.

☼ *Сочинени темисем*

1. «Юлташлăхра телей иккен-мĕн.
   Илем юлташлăхра кăна!»
2. Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕнчи чăваш чĕлхипе тăван халăх пуласлăхĕн ыйтăвĕсем.

◊ *Реферат теми*

Айăпсăр айăпланисем – уйрăм çын тата пĕтĕм общество инкекĕ (репрессиленĕ çыравçăсен шăпипе пурнăçĕ тăрăх).

♫ *Проект*

Митта Ваçлейĕн куçару ĕçĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Δ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Митта Ваçлейĕн сăввисенчи тропсен (эпитет, метафора, танлаштару тата ыт. те) тĕсĕсене тупса палăртăр. Хăш тĕсĕсемпе вăл ытларах усă курать?

Ω *Пăхмасăр вĕренетпĕр*

Митта Ваçлейĕн «Тайăр» поэма-ярăмĕ (пĕр пайне суйласа илсе).

ВĂРÇĂ СИНКЕРЛĔХĔ ЛИТЕРАТУРĂРА



1940-мĕш çулсенчи литературăри вăрçă поэтики: вăхăтпа çынсен паттăрлăхĕ тата синкерлĕхĕ

Ăслăлăх анинчен

«Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн пынă аслă кĕрешӳре чăваш писателĕсен çулăмлă сăмахĕ, хĕрӳллĕн янăраса, тăван халăха куллен-кун хавхалантарса тăчĕ. Вăрçă çулĕсем калама çук йывăр пулчĕç пулин те, пирăн писательсем çав вăхăтра очерксемпе калавсем, повеççемле пьесăсем нумай çырчĕç, хăрӳллĕ сăвă-юрăсем хыврăç. Вĕсем ялан халăхпа пĕрле пулчĕç, пурнăçпа тан утрĕç, вăрçăри тата тылри событисене курмасăр, асăрхамасăр, чун-чĕрепе туймасăр ирттермерĕç» (*Н.С. Дедушкин, филологи кандидачĕ*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

XX ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчи чăваш литератури пĕтĕмĕшлех вăрçă тематикипе çыхăннă. Çапла Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланичченех, 1941 çулта, М. Кипекĕн «Тăван çĕршывшăн», А. Медведевăн «Юлташ çулĕпе», К. Турханăн «Атакăра», Хв. Çиттан «Фронт калавĕсем» кĕнекисем пичетленсе тухнă. Кунта çыравçăсем Хĕвел анăç Украинăпа Белорусси, Финлянди чиккисенче пулса иртнĕ çапăçусем пирки каласа панă. Çакă пирĕн çĕршыв тавра лару-тăру çивĕчленсе пынине кăтартакан пĕрремĕш пулăм пулса тăнă.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсемпе уйăхĕсенче совет культуринче сăвă-юрă малта тăнă.Нумай чухне вĕсем пĕр–пĕрин евĕрлĕ, хăнăхнă йăлапа çырнăскерсем пулнă. Çакăн тупсăмĕ те çиелтех выртать: хайлавсене çапăçу хирĕнче, ĕç-хĕл пулса иртнĕ самантра çырнă, мĕн курни-туйни нумайăшсен пĕрешкел пулнă. Пĕтĕмĕшле илсессĕн вара çак тапхăрти илемлĕ сăмахлăхра пĕчĕк жанрсем мала тухаççĕ: поэзинче – сăвă, юрă, лирикăлла поэма, прозăра – калав, очерк, публицистикăлла статья, фельетон, памфлет, тĕрленчĕк.

Паллах, вăрçă çулĕсен тĕрлĕ тапхăрĕнче лирикăн тĕрлĕ жанрĕ пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çапла, малтанхи уйăхсенче чăваш çыравçисем агитациллĕ, публицистикăлла хайлавсем, йыхрав, чĕнӳ сăввисем нумай çыраççĕ. Çакна сăвăсен ячĕсенченех курма пулать: «Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн!», «Хăюллăн малалла!» (П. Хусанкай), «Тавăрар тăшмана» (Н. Полоруссов (Шелепи)), «Тĕп пултăр фашист!» (Кашкăр

Микули), «Юншăн – юн!» (Ç. Элкер), «Малалла, хĕвел анăçнелле!» (Уйăп Мишши) тата ыт. те.

Сăмахсăрах вăрçă вăхăтĕнчи культурăра юрă-сăвă туртăмĕ вăйлă пулни пĕтĕм чăваш илемлĕ сăмахĕшĕн курăмлă. Çапла çак тапхăрта вăл чи малтанах поэзипе прозăн хăйне евĕрлĕхне тата стиль уйрăмлăхне кăтартать. С. Аслан, В. Долгов, Л. Агаков прозаиксен, В. Урташа И. Тукташ сăвăçсен хайлавĕсенче юрă вăрттăн шухăша палăртмалли мел çеç пулса тăмасть, вăл кунта хурлăхпа та, трагедилĕхпе те, шанчăклăхпа та тулса ларать. Акă, тĕслĕхрен, Л. Агаков хайлавĕсенчи юрă халап, романтика чун хавалĕпе сывлать, С. Асланăн юрри – кулленхи пурнăç ăнлавĕпе. Юрă кĕвĕлĕхĕ поэзипе прозăна çӳллĕ шайри романтикăпа кулленхи пурнăçа пĕрлештермелли майсемпе пуянлатать, вăл пурнăçăн курăмлă улшăну витĕмне кăтартать. Вăрçă лару-тăрăвĕнче çын характерĕ йĕркеленнине, этем хăйне хăй çĕршыв историйĕнче, кулленхи пурнăçра, пысăк тĕллевсенче шыранине юрă ытти мелсенчен лайăхрах çутатать.

Çак тапхăрти поэзишĕн фольклор пуянлăхĕпе анлăн усă курни те кăтартуллă. Вăл чи малтанах пĕтĕм халăх кăмăлне çавăрма, çынсен чĕрине вут пек туйăм тивертме, ĕмĕт-шанчăка çунатлантарса яма кирлĕ пулнă. Çак тĕллевпе сăвăçсем авалхи фольклор жанрĕсемпе – ылхан, тупа, пил сăмахĕ, вĕрӳ-суру чĕлхи – усă кура пуçлаççĕ. Анчах вĕсенче тĕшмĕшлĕх мар, пачах çĕнĕ содержани мала тухать. Авалхи йăла сăмахĕсен символики, витĕмлĕ сăнлăхĕ кунта патриотла шухăш-туйăмпа курайманлăха вăйлатма кирлĕ пулнă. Акă, сăмахран, И. Ивник хăйĕн «Ылхан» сăввинче фольклорăн туйăма вăйлатмалли мелĕпе – ĕçсен хисепĕ ӳссе пынипе – усă курать:

Ылхан сана, хура ылхан,
Тилĕпеле сысна йăхне.
Чее те сĕмсĕр майпалан
Эс кĕтĕн пирĕн çĕр çине.

Çапла «çич хут», «çĕр хут», «пин хут» ылханнăçемĕн поэтăн тарăхăвĕ ӳссе, гротескла танлаштарăвĕсем вăйланса пыраççĕ. Юлашкинчен сăвăра чăвашсемшĕн питех те хăрушшăн илтĕнекен ылхан сăмахĕ янăрать:

Çĕр çĕклейми ылхан сана
Пур ĕмĕр-ĕмĕр тăршшине.
Аça кикен те тăпруна
Шăтса ан палăрттăр санне!

Вăрçăри лару-тăру, тылри пурнăç хайлавсен документлăхпа публицистикăлăхне вăйлатасси çине те витĕм кӳнĕ. Очерксемпе калавсем, сăвăсем чи малтанах фронт хаçачĕсенче пичетленнĕ, çавăнпа та вĕсенче йĕри-тавра пулса иртнине васкавлăн çутатса пама тивнĕ. Çыравçăсенчен пĕр ушкăнĕ (сăмахран, А. Алка, С. Аслан, М. Кипек, Н. Мранькка) тӳремĕнех хаçат-журнал ĕçĕпе çыхăннă, тепĕр ушкăнĕ – пултарулăх çулĕ çине шăпах вăрçă çулĕсенче тăнă. Çыравçăсен икĕ

ушкăнĕ те илемлĕ хайлавсен материалне чăн пурнăçран илнĕ. Шăпах çапăçу хирĕнче литературăпа журналистикăн кĕçĕн жанрĕсем – репортаж, тĕрленчĕк, листовка, çыру çуралнă.Çапла, П. Хусанкай фронтри чăн ĕçсене сăнлакан «Ахмет Делиевăн маттурлăхĕ», «Ширшов комсомолецăн паттăрлăхĕ» сăвăсем çырать, Я. Ухсай «Пĕр дивизири чăваш салтакĕсемпе офицерĕсем чăваш халăхне янă çыру» пичетлет.

Вăрçă çулĕсенчи сăмах ăстисем хаçатçă-журналист тата илемлĕ пултарулăх ĕçне пĕрлештерсе тăнă. Çакă вара очерка калавпа повесть жанрĕсемпе, литературăри тĕрлĕ стильсене пĕр-пĕринпе çывăхлатнă. Вăрçă тапхăрĕнче ĕçленĕ авторсенчен нумайăшĕ хайлав çырнă самантри чи çивĕч лару-тăрăва хăй çине илекен «биографиллĕ çыравçă» пулса тăнă. Вĕсен хайлавĕсенче сăнарсем хăйсен пурнăçне уйрăм çын пурнăçĕ пек мар, пĕтĕм халăх, уйрăм ăру шăпи пек ăнланаççĕ.

Çак тапхăрта кашни салтак мирлĕ пурнăçри чĕрене çывăх аса илӳсемпе пурăнать. Вăрçă умĕнхи çулсем ниçта та çухалман, хыçа юлман, вĕсем сăнарсен хăтланăвĕсем çине витĕм кӳреççĕ, «вăрçă, çапăçу хирне хутшăнаççĕ». В. Алентей, М. Данилов-Чалтун, Л. Агаков, В. Ржанов, Илпек Микулайĕ, Х. Уяр, А. Алка очеркĕсем шăпах çакăнпа палăрса тăраççĕ.

Çак вăхăтри пултарулăхра биографиллĕ очерк вăй илет. И. Тукташăн «Ылтăн çăлтăр» очеркне çакнашкаллисен шутне кĕртмелле, кунта Совет Союзĕн Геройĕ Иван Поляков Днепр юханшывĕ урлă çапăçса каçни пирки каласа панă.

Вăрçă тапхăрĕнчи хайлавсем çивĕч питлевлĕ: вĕсенче романтикă та, лирикă та, кăмăл-туйăм та, публицистикăлăх та пур. Очерк çыракансем пĕр-пĕринпе тупăшса тенĕ пек вăрçăн йывăр лару-тăрăвĕнче халиччен нимпе те палăрса тăман сăпайлă çын чунĕ çирĕпленнине ӳкереççĕ. Прозаиксем питĕ тимлĕн те тишкерӳллĕн ентешĕсемпе паттăрсен пурнăçĕпе кун-çулне тĕпчеççĕ. Кунта, тĕслĕхрен, К. Турханăн «Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем» очеркне (Ген. Губайдулинпа Ф. Орлов пирки), Х. Уярăн Совет Союзĕн Геройĕ Иван Сироткин пирки калакан очерк-калавне («Çыру»), И. Тукташăн П. Лаптев çинчен çырнă биографиллĕ портретне («Павел Лаптев») асăнма пулать.

Вăрçă çулĕсенчи чăваш прозинче кăна мар, лирикипе лиро-эпикинче те витĕмлĕ хавхалану, ӳкĕтлев, публицистика, чуна уçса каласас туртăм вăйлă пулнă. Вăрçăн пĕрремĕш çулĕсенченех тĕрлĕ халăхсен литературинче пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтерекен жанрсен системи йĕркелене пуçлать. Сăмахран, чăваш литературинче çакна чи ватă сăвăçăн Н. Полоруссовăн (Шелепин) «Тăшмана аркатар» тупа

тунинче, «Эпĕ чĕнетĕп» чĕнĕвĕнче, «Гитлера икĕ метр тăршшĕ, пĕр метр анлăш çĕр» питлевлĕ хура ылханăвĕнче курма пулать.

Çак вăхăтри поэзийĕн курăмлă паллисем хушшинче авторсем юмахпа халапăн илемлĕ тĕнчин хăйне еверлĕхĕпе усă курни пулса тăнă. Çакă сăвă-поэмăсен илемлĕхне, историллĕ никĕсне тарăнлатма пулăшнă. Çавăнпа та литература сăнарĕсем кунта историри чăн çынсем, вăрçă паттăрĕсем пулнă (Зоя Космодемьянская, Александр Матросов, Николай Гастелло). Халăх сăмахлăхĕн йăли-йĕркипе усă курни çак хаяр вăрçă халăх вăрçи пулнине те çирĕплетсе кăтартать. Паллах, ку стилĕн ахаль палли çеç мар, шухăшлав мелĕ. Халăх сăмахлăхĕн йăли-йĕрки Аттелĕх вăрçин литературине хăватлăн кĕрсе çыравçăсене халăхпа ăна çывăх чĕлхепе, илемлĕх туйăмĕпе калаçтарать.

Вăрçă çулĕсенчи поэзире сăвăçăн лирикăлла шухăшлавĕн хăйне евĕрлĕхне палăртакан, çак тапхăрта питех те анлă сарăлнă çыру жанрĕ уйрам вырăн йышăнса тăрать. Вăл кун кĕнекине çывăх. Çыру жанрĕ чăваш лирикипе лиро-эпикинче илемлĕх мелĕсен анлă майĕсене кăтартать.

Акă, П. Хусанкайăн вăрçă çулĕсенчи сăввисен тĕсĕсем хăйне майлă. Сăмахран, вăл çине-çинех кун кĕнекин майĕсемпе усă курать. Çыру мелĕ чуна уçса парас, ĕненӳ еннелле туртнине пăхмасăрах, П. Хусанкай хăйĕн çырулла хайлавĕсенче гражданла туйăмсене мала кăларать («Салампи», «Госпительтен килнĕ çырусем» сăвăсем). Кунта çавăн пекех ылхану сĕмĕ те палăрăнать. Сăвăç çыру жанрне ытти çывăх жанрсен майĕсемпе – çĕнтерӳшĕн пĕрлешме чĕннисен гражданла хавхипе, лирика геройĕ тусĕсен, çывăх çыннисен шалти туйăмĕсем патне туртăннипе, хăйĕн юлташĕсене те, пĕтĕм вулакансене те шаннипе пуянлатать.

Вăрçă вăхăтĕнчи пĕтĕм çыравçăсемпе литературăсене халăхсен туслăхĕн мотивĕ çыхăнтарса тăрать. Илемлĕ пултарулăх ăстисем çак çулсенче (уйрăмах фронтри тата çапăçури йывăр самантсенче) ытти халăхсен, аслă патшалăхăн çыннисем патне туслăх туйăмне палăртма туртăннă.

Поэзипе тата прозăпа танлаштарсан, шел пулин те, вăрçă вăхăтĕнчи пьесăсем 1920-1930 çулсенче тунă çитĕнӳсенчен пуçĕпех пăрăннă. Драматурги ăстисем темăсемпе хирĕç тăрусене çиелтен çеç çутатнă, çавăнпа та çак çулсенче вăйсăр хайлавсем çуралнă. Ытларах чухне пьеса тени прозăлла хайлава рольсем тăрах выляса кăтартни çеç пулнă. Çапах та çак вăхăтра вăрçăпа патриотизм темипе пьесăсем çырнă авторсем шутĕнче Ç. Элкере, И. Максимов-Кошкинскине, А. Ĕçхĕле, Н.

Айзмана, Н. Мраньккана асăнмалла. Пĕрремĕш драмăлла хайлав шутĕнче вара Н. Айзманăн «Патриотсем» пьесине палăртмалла.

Максим Данилов-Чалтун (*Данилов-Чалтун Максим Николаевич, 1894-1944*) Тăван çĕршывăн аслă вăрçине 1941 çулхи раштав уйăхĕнче хăй ирĕкĕпе тухса кайнă. Калинин, Брянск тата иккĕмĕш Прибалтика фрончĕсенче çапăçнă, политрук, рота командирĕ, миномет батарейин командирĕ пулнă. Фронтра йывăр аманнă хыççăн çыравçă 1944 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Калинин (паянхи Тверь) облаçĕнчи Кувшиновка хулин çар госпиталĕнче вилсе кайнă.

М. Данилов-Чалтун Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче (1941-1944 çç.) çырнă хайлавсем шутĕнче «Çăлтăрлă çĕлĕк», «Пăлан хыççăн», «Антун çемйи», «34-мĕш атака умĕн», «Красноармеец Самсонов», «Лизавета Егоровна» калавсене асăнмалла. Çак хайлавсенче пуринче те çыравçă Тăван çĕршывăн кашни шитне фашистсенчен хŭтĕлеме хатĕр рядовой салтаксен паттăрлăхĕпе хастарлăхне ŭкерсе парать.

Акă, «34-мĕш атака умĕн» калав-очеркра çыравçă тŭремĕнех хăй пурнăçĕ пирки çырать. Çавăнпа та ăна вуланă май вăл «виççĕмĕш хут вăрçăра пулнине», «аллă çула çитнĕскер, хăй ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăнине», «фронта çитсе фашистсене хирĕç çапăçма пуçлани 14 уйăх тулнине», «33 хутчен наступленире пулнине», «икĕ хутчен çăмăл суранланнине», «фашистсем унăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлне вĕлернине» пĕлетпĕр.

Автор хăй хайлавне çыру тесе палăртать. «Хисеплĕ редактор, çак çырăва эпĕ пичетлесе кăларма ыйтатăп. Чăваш халăхĕ эпĕ мĕнле çапăçни çинчен пĕлтĕр. Çырăва çĕрле, шăши куçĕ пек çутăра çыратăп. Эпир черетлĕ наступление кĕме хатĕр. Халĕ пурте тенĕ пек тăванĕсем патне çырусем çыраççĕ. Эпĕ те çак çырăва çырса пĕтерсе, 34-мĕш наступление кĕме приказ кĕтетĕп», – тесе вĕçлет вăл хайлава.

Фронтри салтаксем кăна мар, тылри тата нимĕç фашисчĕсем ярса илнĕ хуласемпе ялсенче пурăнакан кашни çын ташмана хирĕç хаяррăн кĕрешнине М. Данилов-Чалтунăн «Лизавета Егоровна» калавĕнче курма пулать. Тĕп сăнарăн характерĕ урлă çыравçă пĕтĕм совет çыннисен хуçăлми çирĕп кăмăлне, ĕненĕвне, ирĕклĕхне уçса парать. Нимĕнле хĕн-асап та вĕсене тăшман умĕнче чĕркуççи çине лартаймĕ.

Лизавета Егоровнăна автор хурçă пек çирĕп («Нимĕç салтакĕсем Лизавета Егоровнăна темиçе сехет хушши асаплантарнă. Лешĕ шăлне çыртса тŭснĕ. <…> Нимĕç оккупанчĕсем Лизавета Егоровнăна вĕлермен, унăн икĕ куçне те хĕртнĕ пăшатанпа тĕксе шăтарнă»), хĕç пек çивĕч («Вăл, нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешсе суккăрланнă пулсан та, шанчăкне çухатмасть. Кирлĕ пулсан, вилсе çĕр айне кĕричченех

тăшманпа кĕрешме хатĕр») кăтартать. Хĕр арăм паттăрлăхне çыравçă пысăклатса, илемлетсе кăтартмасть, çавăнпа тĕп сăнар та хăй кĕрешĕвне паттăрлăх пек мар, ирĕклĕхшĕн тăвакан кулленхи ĕç пек йышăнать. Мĕншĕн тесен çак вăхăтра, вăрçă çулĕсенче, пурте çапла пурăннă, фронтра та, тылра та.

«Лизавета Егоровна» калавра паттăрлăх ыйтăвне çеç мар, сутăнчăклăх ыйтăвне те хускатнă. Паллă ĕнтĕ, совет влаçне йышăнман çынсем нумай чухне фашистсен çарĕнче тăнă. Вĕсем пирĕн çĕршыва «çĕнĕ хуçа» пулса тăма килнĕ. Хайлавра ун пек çынсенчен пĕри – нимĕç офицерĕ, Брянцев улпут ывăлĕ Сергей Васильевич. Анчах кашни ялтах урăхларах çынсем те тупăннă: хăравçă, йăпăлти тата нĕрсĕр. Калавра çакăн пек сăнар Воронцов пулса тăнă.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Максим Данилов-Чалтун

ЛИЗАВЕТА ЕГОРОВНА

Калав

Пушово ялĕнче ĕнер нимĕçсем пулнă. Паян вăл пирĕн алла куçрĕ. Мĕнле каламалла: халĕ ĕнтĕ вăл ял мар, ялăн вырăнĕ çеç тăрса юлнă. Çурт-йĕрĕсем çунса пĕтнĕ, кăмака мăрйисем çеç (ишĕлсе анайманнисем) тăрна мăйĕсем пек вăрăммăн курăнса лараççĕ, çунса пĕтеймен пĕренесем тĕтĕм кăларса выртаççĕ. Кашни колхозникăн панулми сачĕ пулнă, вĕсем те çунса пĕтнĕ. Ялта пĕр выльăх-чĕрлĕх чĕрни те юлман, пурне те нимĕç оккупанчĕсем пуçтарса хуса кайнă.

Çынсем те курăнмаççĕ. Ăçта саланса пĕтнĕ-ши вĕсем? Тен, çынсене те нимĕçсем хăйсемпе пĕрле илсе кайнă-ши? Тен, вĕлерсе пĕтернĕ пуль? Апла тесен, виллисем курăнĕччĕç.

Пăхатпăр, çунса пĕтеймен пĕренесем хушшинчен пĕр хĕрарăм пуçне çĕклесе пăхрĕ.

– Вырăссем-им эсир? – тесе хурлăхлă сасăла ыйтрĕ вăл пирĕнтен.

Эпир хĕрарăма курсан ун патне пытăмăр. Унăн пичĕ-куçĕ чĕп-чĕрĕ юн, çийĕнчи кĕпи çуркаланса пĕтнĕ.

– Вырăссем. Красноармеецсем эпир, – тет командир. Хĕрарăм савăннипе кулса илчĕ.

– Эпĕ ĕнтĕ эсир килместĕр пулĕ, çаплипех вилме тивет тесе пĕтĕм шанчăкăма çухатнăччĕ. Тавтапуçах сире! – тесе ури çине тăчĕ хĕрарăм. Вăл темшĕн аллисемпе сывлăша хыпалать.

– Мĕн пулнă сана, инке? – тесе ыйтатпăр.

Хĕрарăм аллисемпе хăлаçланса пирĕн патăлла утма тăчĕ, анчах пĕрене çине такăнса йăванса кайрĕ.

– Ах, куçăмсем курмаççĕ çав ĕнтĕ манăн. Ылханлă фашистсем мана сĕм суккăр туса хăварчĕç. Сассăра илтетĕп те хăвăра курмастăпçке.

Эпир ăна аллинчен тытса çĕклесе тăратрăмăр. Чăнах, хĕрарăмăн икĕ куçĕ те шăтса юхнă. Куç шăрçи вырăнĕсем пушă. Куç хупанкисене çĕклесе пăхать пулин те, нимĕн те курмасть. Çутă тĕнче уншăн пĕтĕмпех тĕттĕмленнĕ. Унăн куçĕсем ĕнтĕ нихçан та юсанас çук, çутă хĕвел те уншăн сĕм тĕттĕм. Вăл хăй пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе йĕрет, анчах унăн куççулĕ тухмасть. Чĕри патĕнчен тарăхса тухакан сасси çеç вăл йĕнине пĕлтерет тата вĕри сывлăшпа типнĕ тутисем çавна калаççĕ.

Кам-ха çак хĕрарăм? Мĕншĕн ăна фашист палачĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асапланмалла туса хăварнă?

– Эпĕ хамăр ялта колхоз председателĕ пулса ĕçлеттĕм. Манăн икĕ ывăлăм тата упăшкам Хĕрлĕ Çара кайрĕç. Эпĕ пĕрченех тăрса юлтăм... Мана халăх суйласа лартнă, халăх мана шаннă. Колхоз калама та çук пуянччĕ пирĕн. Иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне вуншар килограмм тĕш-тырă, пилĕкшер тенкĕ укçа валеçсе патăмăр. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма пуçланăччĕ, фашист оккупанчĕсем килсе пĕтĕмпех пĕтерчĕç. Хама суккăр туса хăварчĕç, – тесе пуçларĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахне.

Вăл хĕрарăмăн хушамачĕ – Губанова, ячĕ – Елизавета. Ăна колхозниксем Лизавета Егоровна тесе чĕннĕ. Вăл çав тери хастарлă та тӳрĕ хĕрарăм пулнă. Ăна пурте юратнă. Вăл хушнине итленĕ.

– Лизавета Егоровна колхоз председателĕ çеç мар, вăл пирĕн питĕ те çывăх çын. Эпир вăл ертсе пынипе çапла ырлахлă пурăнатпăр, – тесе мухтаннă колхозниксем. Вĕсем çак хĕрарăмшăн вутра çунма, шывра путма хатĕр пулнă. Анчах ялта Лизавета Егоровнăна курайман çын та пулнă. Çав çын ăна фашистсене сутнă. Çав тăшман пирки вăл халĕ çутă тĕнчене çухатнă, ĕмĕрлĕхех суккăр пулса юлнă. Мĕн каласан та, кашни çыннăн хăйне кура тусĕсем пур, çавăнтах тăшманĕ те çапкаланса çӳрет. Анчах вăл тăшман вăхăт çитиччен тискер кайăк пек пытанса пурăнать. Вăл хăй сурăх пек йăваш курăнсан та, вăхăт çитсен сурăх тирне хывса пăрахать те, кашкăр тирне тăхăнса, асав шăлĕсемпе хире-хирĕç шаккаса, хăйĕн тискер ĕçне тума тытăнать.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр ирхине, Пушово ялне фашистсен карательнăй отрячĕ пырса çитет. Отряд начальникĕ – офицер, вырăсла таса калаçма пĕлекенскер, тӳрех колхоз правленине пырса кĕрет.

– Калăр-ха, кам кунта сирĕн колхозра председатель пулнă? – тесе ыйтать вăл.

Правлениначе Лизавета Егоровнăран пуçне тата икĕ колхозник лараççĕ. Пĕри – Сырцов Павел, тепри – Воронцов Сидор.

– Ара, ку нимĕç мар-çке, вырăс, – хăйсем хушшинче калаçса илеççĕ Сырцовпа Воронцов.

Лизавета Егоровна хăй председательне пытармасть:

– Эпĕ пулатăп председатель.

Офицер ун çине урлă та тăрăх пăхса илет:

– Аван. Халех колхозниксене пуçтар. Манăн вĕсемпе калаçмалли пур.

– Мĕн çинчен калаçасшăн апла?

– Вăл сан ĕç мар. Каланă сана пĕрре колхозниксене пуçтар тесе. Пуçтар! – кăшкăрса тăкать офицер сасартăк.

Лизавета Егоровна колхозниксене пуçтарма канцеляринчен тухса каять. Офицер Воронцова палласа илет:

– Сидор, эсĕ вĕт ку?

– Эпĕ, паллаймарăм-çке... Эпĕ сана нимĕç офицерĕ пулĕ тесе.

– Чăн, нимĕç офицерĕ. Анчах эпĕ нимĕç мар, вырăс. Астăватăн-и Брянцев улпута?

– Астумасăр! Епле астăвас мар хамăр хуçана? Ун патĕнче атте приказчикре пурăнатчĕ, – тесе тавăрать Воронцов.

– Эпĕ унăн ывăлĕ Сергей. Мантăн-им, пĕрле выляттăмăр? Эпĕ сана час-часах хĕнеттĕм. Вăрах вăхăт иртнĕ çав ĕнтĕ. Çирĕм çул ытла вĕт... Эпĕ сана акă пирвай курсах палларăм, – тесе тутисене саркалать офицер.

– Сергей Васильевич! Вашбродь! Пăх-ха, ăçта тĕл пултăмăр! Вăт савăнăç, – хĕпĕртет Сидор.

Офицерпа Воронцов пĕрне-пĕри алă парса паллашаççĕ.

– Сирĕн яла фюрер мана пачĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир пурсăр та манăн пулатăр. Ан хăра, эпĕ сана, Сидор, ялта староста тăвăп. Эсĕ мана халăха ĕçлеттерме пулăшăн. Килĕшетĕн пулĕ? – тет офицер. Воронцов шухăшласа тăмасть.

– Тавтапуç сана, вашбродь, мана пысăк ĕç шанса панăшăн, – тесе тав тăвать.

Сырцов Воронцовпа офицер калаçнине итлесе тăма пултараймасть, тухса шăвать.

Вĕсем иккĕн çеç юлса нумайччен калаçаççĕ. Малашне мĕн-мĕн тăвасси çинчен сăмах пĕтереççĕ.

Колхозниксем часах пуçтарăнман. Вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн çеç пынă.

– Колхозниксем нумайăшĕ килте çук, уйра ĕçлеççĕ, – пĕлтернĕ Лизавета Егоровна.

– Аван, мĕн пуçтарăннипе çитĕ мана, ĕçлекенсем ĕçлеччĕр, – тет офицер.

Пуринчен ытла ватă стариксемпе карчăксем пуçтарăннă. Çамрăксенчен пĕр-икĕ çын анчах.

– Çамрăксем ăçта? – ыйтнă офицер, Лизавета Егоровна çине пăхса.

– Паллă ĕнтĕ, вĕсем пурте вăрçа кайса пĕтнĕ, – кĕскен ответленĕ Лизавета Егоровна.

Офицер колхозниксем умне тухса тăнă та сăмах калама пуçланă:

– Эсир мана паллаймастăр пулас-ха. Паллаттарас. Эпĕ Брянцев улпут ывăлĕ пулатăп, – Сергей Васильевич. Астăватăр-и?

– Чăнах та çавă, ашшĕ сăнлах. Каллех эпир вĕсен аллине çитсе лекрĕмĕр пулать-и? Пирĕн пĕтĕм пурлăх ăна пулать! – хăйсем хушшинче калаçса илнĕ колхозниксем.

– Вырăс çынни, епле-ха вăл нимĕç офицерĕ пулнă? – тесе хуллен ыйтнă пĕр ватă колхозница Лизавета Егоровнăран.

– Улпутсем вĕсем пурте фашистсем майлă, – ăнлантарнă лешĕ ăна.

– Малашне ĕнтĕ колхоз, совет тенĕ япаласем пĕтеççĕ. Паянтан пирĕн нимĕçсен влаçĕ пуçланчĕ. Колхоз пурлăхĕ пĕтĕмпех манăн алла куçать. Эсир ĕçлетĕр, эпĕ уншăн сире тăрантарăп. Ăнлантăр-и? – тесе ыйтнă офицер.

Ăнланмасăр, пурте лайăх ăнланнă. Анчах ирĕк пурăнма вĕреннĕ çынсен пĕртте чура пулас килмен. Çапах та ăна вĕсем улпут умĕнче уçса каламаççĕ. Пĕр Лизавета Егоровна çеç хăраман. Вăл сиксе тăнă та:

– Пĕтĕм колхоз пурлăхĕ сана пулать-и? А пире – хресченсене – мĕскер? – офицер куçĕнчен тинкерсе пăхса ыйтнă вăл.

Офицер аллисене хире-хирĕç тытса йăваланă:

– Сире, хресченсене, нимĕн те кирлĕ мар. Эсир ĕçлетĕр. Эпĕ сире тăрантарăп. Ăнланмалла пек.

– Ăнланмалла та, пĕтĕмпех мар, – пӳлнĕ офицера Лизавета Егоровна.

Офицер урăх нимĕн те каламан, ун вырăнне Воронцов тухса тăнă:

– Мĕн ăнланмалла марри пур вара кунта?

Лизавета Егоровна Воронцов куçĕнчен пăхса илнĕ:

– Ара, эсĕ, Воронцов юлташ, часах урăх май кайса ӳкнĕ-çке.

– Вăл сирĕншĕн текех юлташ мар ĕнтĕ – господин староста. Вăл хушнине итлес пулать. Унăн сăмахĕ сирĕншĕн – закон. Ку та ăнланмалла пек, – тенĕ офицер.

Çакна илтсен, пурте тĕлĕнсе кайнă. Воронцов çине чалăшăн-чалăшăн пăхса илнĕ. «Сутăннă» – тесе шухăшланă вĕсем.

Офицер урăх нумай калаçса тăман. Халăха саланма хушнă.

– Кам та кам мана хирĕç тăрать, уншăн ĕç начар пулĕ, – тенĕ вăл юлашкинчен.

Колхоз канцеляринчен офицерпа Воронцов юнашар утса тухнă.

– Вăл хĕрарăма пăхăнтарас çук. Совет влаçĕшĕн çирĕп тăраканскер вăл, – тесе пĕлтернĕ Воронцов Лизавета Егоровна çинчен.

– Пăхăнтарăпăр. Пит пăхăнмасан мĕн тăвасси паллă, – тенĕ офицер.

Лизавета Егоровна хăраса ӳкмен. Вăл Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе çирĕппĕн шанса тăнă.

– Пирĕн колхоз пурлăхĕ улпута ан пултăр тесен, ăна пĕтерес пулать. Кĕçĕр кам мĕн чухлĕ ĕлкĕрет – выльăх-чĕрлĕхсене ăсатăр, тырă-пулăсене пытарăр, – тесе пĕлтернĕ председатель колхозниксене.

Колхозниксем хăйсене ертсе пыракан хĕрарăма ĕненнĕ, ăна шаннă, вăл мĕн хушнине пурнăçланă: пĕр каçрах колхоз выльăхĕсенчен темиçе пуç çухалать, тырă та çаплах çĕр айне пытанать.

Тепĕр кунне офицер Лизавета Егоровнăна хăй патне чĕнтернĕ:

– Колхоз выльăхĕсемпе тырри ăçта кайнă?

– Пĕлместĕп. Халĕ ĕнтĕ эпĕ мар, эсĕ хуçа. Хăвна кирлĕ пулсан – сыхла, – тесе ответленĕ Лизавета Егоровна.

– Эпĕ – хуçа, эсĕ – манăн тарçă! – кăшкăрнă офицер. – Ман сăмаха итлемесен...

– Çук, эпĕ саншăн тарçă мар! – çирĕппĕн тавăрнă хĕрарăм.

Офицер хăйĕн салтакĕсене чĕнтернĕ.

– Ан вĕлерĕр. Пăхăнтарăр, çухалнă выльăхсене, тырăсене туптарăр, – тенĕ вăл.

Нимĕç салтакĕсем Лизавета Егоровнăна темиçе сехет хушши асаплантарнă. Лешĕ шăлне çыртса тӳсне. Выльăхсем ăçтине те, тырăсене пытарнине те пĕр сăмах та каламан.

– Лизавета Егоровна, кала, хăвнах çăмăл пулĕ, – пырса ӳкĕтленĕ ăна Воронцов.

– Çук, эпĕ нимĕçсен тарçи пулмастăп. Эсĕ вĕсене сутăннă йытă, – ответленĕ лешĕ.

Нимĕç оккупанчĕсем Лизавета Егоровнăна вĕлермен, унăн икĕ куçне те хĕртнĕ пăшатанпа тĕксе шăтарнă.

– Халĕ ĕнтĕ кăларса ярăр. Ыттисем курччăр ăна. Эпĕ вĕсене пăхăнма вĕрентем, – тенĕ офицер. Куҫсăрланнă Лизавета Егоровна аллисемпе хыпашласа, урисемпе такăна–такăна урама тухнă.

– Колхозник юлташсем! Пуҫтарăнăр ман патăма. Пăхăр ман çине. Мĕн турĕ мана «çĕн хуҫа!» – тесе кăшкăрнă вăл.

Колхозниксем хăйсен председательне курсан тĕлĕнсе каяҫҫĕ. Ăна ытала-ытала чуптăваҫҫĕ.

– Пирĕн тар кăларса пуҫтарнă пурлăх çав ирсĕре ан пултăр! Колхоз витисене, кĕлечĕсене, сарайĕсене вут тăртĕр. «Çĕнĕ хуҫана» кĕл çеç юлтăр! – тенĕ Лизавета Егоровна.

Çав каҫхине вара пĕлĕт çине хĕрлĕ шевле ӳкнĕ. Колхоз ялĕнчен «çĕнĕ хуҫа» валли кĕл тата çунса пĕтеймен вутпуҫҫисем çеç тăрса юлнă.

– Лизавета Егоровна, ытти колхозниксем ăҫта? – тесе ыйтатпăр эпир куҫсăр хĕрарăмран.

– Вĕсем пурте вăрмана тарса пытаннă, – тесе пĕлтерчĕ вăл пире.

Тепĕр çур сехетрен вăрмана тарса пытаннă колхозниксем пурте пирĕн пата пуҫтарăнчĕҫ. Вĕсем, нимĕнсĕр тăрса юлнă пулсан та, Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килнишĕн çав тери савăнаҫҫĕ.

– Ан кулянăр, юлташсем! Хамăр тара тăкса пуҫтарнă пурлăха хамăр алăпа пĕтертĕмĕр. Нимĕҫ оккупанчĕсене нимех те лекмерĕ. Совет влаҫĕ сывă пултăр! Пурлăха ăна каллех тăвăпăр. Кивĕ ял вырăнне çĕнĕ ял шăтса тухĕ, – тесе ĕнентерет колхоз председателĕ Лизавета Егоровна. Вăл, нимĕҫ оккупанчĕсемпе кĕрешсе суккăрланнă пулсан та, шанчăкне çухатмасть. Кирлĕ пулсан, вилсе çĕр айне кĕричченех тăшманпа кĕрешме хатĕр.

1944.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. М. Данилов-Чалтунăн калавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://www.nbchr.ru/virt_vov/p2_5.htm

Ĕçсемпе ыйтусем

¤ ***Пултарулăх ĕçне тăватпăр***

1. «Асаттепе каласа» ятпа сăвă çырăр. Сăвва çак йĕркесемпе пуçлама пултаратăр:

Курман эп хам асаттене,
Килмен вăл вăрçă хирĕнчен.

2. «Тăратăп палăк умĕнче...» ятпа вăрçăран (Тăван çĕршывăн аслă вăрçи, Афганистан тата Чечня вăрçисем) таврăнман ентешĕр пирки пысăках мар очерк çырăр.

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Дедушкин Н.С. Аслă çĕнтерӳ çулĕпе: Тăван çĕршывăн аслă вăрçи чăваш литературинче. Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1985. 199 с.

Дедушкин Н.С. Пăшалпа та перопа та ...: Тăван çĕршыв аслă вăрçи тапхăрĕнчи чăваш литератури (1941-1945). Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1970. 168 с.

☼ *Сочинени темисем*

1. «Лизавета Егоровна» калаври паттăрлăхпа сутăнчăклăх хирĕç-тăрăвĕ.
2. Хĕр арăм-салтак, хĕр арăм-кĕрешӳçĕ сăнарĕ чăваш литературинче.

◊ *Реферат темисем*

1. Вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă чăваш çыравçисен пурнăçĕпе пултарулăхĕ (Максим Данилов-Чалдун, Андрей Петтоки, Владимир Бараев, Ефрем Еллиев, Хветĕр Çитта, Максим Ястран, Константин Кольцов, Илья Думилин).
2. Фронт хаçачĕсен корреспонденчĕсем пулнă чăваш çыравçисен вăрçă çулĕсенчи пултарулăхĕ (Петĕр Хусанкай, Яков Ухсай, Леонид Агаков, Василий Долгов, Илпек Микулайĕ, Алексей Талвир, Василий Алакĕр).
3. Çапăçу хирĕнче командир е политработник пулнă чăваш çыравçисен вăрçă çулĕсенчи пултарулăхĕ (Александр Алка, Михаил Сироткин, Василий Ржанов, Уйăп Мишши, Мĕтри Кипек).

♫ *Проектсем*

1. Пирĕн ял паттăрĕсем (Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче, Афганистан тата Чечня çĕрĕ çинче пуçĕсене хунă ентешсем пирки) *(ушкăнла тĕпчев).*
2. Максим Данилов-Чалтунăн вăрçă калавĕсенчи паттăр ачасен сăнарĕсем (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).
3. Владимир Сатай пултарулăхĕнчи вăрçă теми (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).
4. Уйăп Мишшин вăрçă лирики (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).



Вăрçă синкерлĕхĕ чăваш литературинчи хĕрарăм прозинче

Ăслăлăх анинчен

«Хĕр арăм сăнарĕсем чăнласах та таса кăмăллă та çирĕп чунлă. Çапах та нихăш сăнарне те арçын хуçи пулса тăрассишĕн çунать тесе айăплама çук. Çак сăнарсене тĕрĕс ăнланас тесен пирĕн паянхи обществăра арçын хăйĕн социаллă статусне çухатса пынине шута илмелле пулĕ. Тахçан матриархат йĕркине патриархат улăштарнă пек патриархата матриархатпа улăштармалли вăхăт çывхарса пырать пулас. Паллах, çакă, ман шутпа, паян е ыран пулмасть. Анчах арçынсем пуласлăх, чи малтанах пулас ăру – ача-пăчи çинчен манса эрех кĕленчине чăмни, йывăрлăхсенчен пăрăнма хăнăхни те (ывăл ача салтак

пулма пăрахнинче, паллах, пирĕн хĕр арăмсен, аннесен айăпĕ те пысăк) çĕнĕ ĕмĕре кунран-кун хăвăртрах çывхартать пулĕ. Шел пулин те паянхи пурнăçра хĕр арăма вăйсăр пулма нимĕнле майсем те çук. Çемье тĕрекĕпе ача-пăча пуласлăхĕ, ĕçпе укçа ыйтăвĕ пурте пĕр харăс йывăр çĕклемпе выртрĕç унăн черчен хулпуççийĕ çине. Чăн пурнăçри хĕр арăм кăмăл-сипечĕ улшăнса пынăçемĕн унăн литературăри курăнăвĕ те улшăнчĕ. Вĕсем харсăрланса çивĕчленчĕç, ирĕкленчĕç, анчах çаплипех хăйсен телейне, чун канăçлăхне тупаймасăр асапланаççĕ. Шăпах çакнашкал сăнарсене эпир Юлия Силэм хайлавĕсенче курма пултаратпăр та ĕнтĕ» (*Кĕнеке авторĕ – А.М.*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Вăрçă теми XX ĕмĕрти тĕрлĕ халăхсен литературинче, çав шутра чăвашсен илемлĕ сăмахлăхĕнче те, пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăрать, уйрăмах Тăван çĕршывăн аслă вăрçи. Çак темăна чăваш литературинче ытларах чухне арçын çыравçăсем çутатса панă, мĕншĕн тесен вĕсенчен нумайăшĕ вăрçăн пĕтĕм асапне, çухату-ыратăвне çапăçу хирĕнче пулса хăйсен куçĕсемпе курнă, чĕрисемпе туйнă.

Çапах та хĕр арăм çыравçăсем те çак темăна хускатмасăр тăман. Ытларах чухне çакнашкал авторсем вĕсем – тылра вăй хунă çыравçăсем е вăрçă ачисем. Вĕсем пĕтĕм халăхпа пĕрле вăрçă çулĕсен синкерлĕхне, çухатусен трагедине курнă та, туйнă та. Нумайăшĕсен ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вăрçă хирĕнчен киле таврăнман, хăйсем вара вĕсем тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр çĕнтерӳ кунне çывхартас тесе ĕçленĕ. Çавăнпа та вĕсен пултарулăхĕнче салтак-çĕнтерӳçĕн мухтавне хак пани вăл – вăрçă хирĕнче выртса юлнă ашшĕсемпе пиччĕшĕсен умĕнче пуç тайса тав туни.

Валентина Элпи (*Андреева Валентина Андреевна, 1913-2014*) пултарулăх çулĕ çине 1946 çулта тăнă. Унăн пĕрремĕш калавĕсем республикăри тĕрлĕ хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ. Литература ĕçĕн пуçламăшĕнче вăл ытларах ача-пăча валли хайлавсем çырнă. Пулас çыравçă 1930 çулта Шупашкарти медицина техникумне вĕренме кĕнĕ, анчах ăна вĕренсе пĕтереймен. Каярах Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă вăл. 1932 çултан пуçласа В. Элпи тĕрлĕ хаçатсенче ĕçленĕ, 1938-1968 çулсенче вара Чăваш радиори ача-пăча редакцийĕнче вăй хунă.

Çыравçăн пурнăç факчĕсем унăн хайлавĕсем çине витĕм кӳни куçкĕретех. Акă, В. Элпин «Пулас кинсем» романĕн тĕп сăнарĕ автор пекех Шупашкарти медицина техникумне вĕренсе пĕтернĕ. Паллах, роман сюжечĕн малашнехи аталанăвĕпе çыравçă пурнăçĕ хушшинчи çыхану аплах курăмлă мар. Анчах та хайлавăн пĕрремĕш пайĕнче

автобиографилĕх вăйлă пулнине курма пулать. Автор тĕп сăнарăн шкулта вĕреннĕ çулĕсене, медицина техникумне мĕнле пырса лекнине, медсестра пулса ялсем тăрах прививка туса çӳренине, çамрăксен хушшинчи хутшăнусене, хĕрĕн ĕмĕчĕсене питĕ ĕненмелле çырса парать. Çавăнпа та çакна пĕтĕмпех çыравçă хăй пурăнса ирттернине пĕртте иккеленместĕн.

Çапах та «Пулас кинсем» роман автобиографиллĕ хайлав мар. Çыравçă кунта илемлĕ литературăшăн вырăнлă типлă характерсемпе лару-тăрусене ăста йĕркелет. Тĕп сăнар Талюна ытти çамрăк хĕрсемпе пĕрле (Елис, Варук, Катя, Валя) летчика вĕренсе тухса çара кайни, фронтри лару-тăрупа хутшăнусем – çав вăхăтшăн типлă самантсем. Çак йĕркесене вуланă чух вара çыравçă хаçат-журналта çырнисемпе, вăрçăра пулнă салтаксем каласа панисемпе усă курни палăрать.

Валентина Элпи романĕн тĕп шухăшĕ хайлав ятĕнченех тухать. Хĕрача арăм пулма çуралнă – çак шухăша çирĕплетсе каласшăн çыравçă. Çавăнпа та çак хайлавра малти рете хĕрпе каччă хушшинчи хутшăну, юратупа хĕр чысĕн проблеми, çемье çавăрасси, хĕр арăм телейне тупасси тухать.

Ева Лисинан (*Лисина Ева Николаевна, 1939*) пĕрремĕш калавĕ 1967 çулта пичетленсе тухнă. Çакăн хыççăн унăн ячĕ чăваш литературинче тарăн çирĕпленнĕ, хайлавĕсем тĕрлĕ журналсенче пичетленнĕ, çулсерен кĕнекисем тухса тăнă. Чи паллă хайлавĕсенчен пĕри вара унăн 1970 çулсенче çырнă «Çăкăр чĕлли» калавĕ пулса тăнă. Вăл 1991 çулта «Нимĕç хумĕ» (ФРГри Кельн хули) радиостанцин конкурсĕнче çĕнтерсе чи лайăх хайлав ята илнĕ. Çак конкурса хутшăннă ытти чи лайăх хайлавсемпе пĕрле «Çăкăр чĕлли» нимĕçле пичетленсе тухнă, кĕнекине вара Е. Лисина калавĕн ятне панă. Каярах вăл Хĕвеланăç Германири темиçе радиоэфирта та янăранă.

Ева Лисина чăваш литературинчи вăрçă ачисен ăрăвне кĕрекен авторсенчен пĕри. Паллах, хăйне хăй астăвакан вăхăт унăн вăрçă хыççăнхи çулсем çине килнĕ. Çапах та унăн пĕтĕм пултарулăхĕ витĕр вăрçă ыратăвĕпе синкерлехĕ сăрхăнать. Çакна, сăмахран, «Арçын Хĕветура» калавра курма пулать.

Калавăн тĕп сăнарĕ – пĕччен хĕр арăм Хĕветура. Хăйне тахçанах пăхма пăрахнă вăл, сăн-питне те, çи-пуçне те. Хĕр арăм çапла пурăннин сăлтавĕ вара иртнĕ вăрçă кунĕсенче. Юратнă Элекçейне вăрçа ăсатни, вăл фронтра вилни, хĕрĕн хуйхипе усă курса вăрман касакансен пуçлăхĕ мăшкăлани, ача çурални тата вăл пилĕк уйăха çитсен вилсе кайни çамрăк Хĕветурана пĕр самантра ватăлтарса, хуçса хăварнă. Çак самантран хĕр арăм текех пурăнман та пулас, телейĕ, хаваслăхĕ сӳннĕ

унăн. Анчах пĕр хĕвеллĕ çуллахи кун пĕчĕк Ленăпа паллашни ун пурнăçне пачах урăх çулпа чуптара пуçлать. Пĕчĕк хĕрача Хĕветурашăн çурхи кун çĕнĕ пурнăçа вăратакан хĕвел шевли пекех пулса тăрать.

Литература теорийĕ

«Хĕр арăм прози» – социокультурăн тĕлĕнмелле пулăмĕ. Вăл хĕр арăмсем ытларах халăх умне тухнипе тата хĕр арăм куçĕпе тĕнчене, çынсен хушшинчи çыхăнусене сăнласа паракан литература хайлавĕсем çуралнипе çыхăннă. Çак пулăм 1980-мĕш çулсем вĕçĕнче 1990-мĕш çулсенче хăй пирки уйрăмах вăйлă систернĕ. Хĕр арăмсем çырнă хайлавсене сăмахлăхăн хăй тытăмлă пайĕ пек пăхма ирĕк пуррипе çукки пирки темиçе курăм пур. Хĕр арăм прози текен пулăма ăнланса илме XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен варринчен пуçласа литература пĕлĕвĕнче «гендер» терминпа усă кура пуçланă. Ăслăлăхра ăна хĕр арăмшăн е арçыншăн кăна кăтартуллă тыткаларăш тата сисĕм–туйăм хаклавĕсемпе ăнлантараççĕ. Паянхи литературăра «хĕр арăм прозине» уйăрни темиçе сăлтавпа çыхăннă: çыравçи – хĕр арăм, тĕп сăнарĕ – хĕр арăм, хайлавăн проблеми те ку е леш енчен хĕр арăм шăпипех çыхăннă. Пурнăç çине хĕр арăм куçĕпе, унăн сисĕм-туйăмне шута илса пăхни те кунта пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Хĕр арăмăн литературăри пултарулăхĕ пирки вĕçĕмсĕр тавлашу пырать, вăл е сӳнсе ларать, е каллех хыпса илет. Çак тавлашу никĕсĕнче «хĕр арăмсем арçынсемпе пĕр тан çӳллĕ шайри илемлĕ пултарулăх хайлавĕ çырма пултараççĕ-ши» текен шухăш выртать. Чăннипе вара хĕр арăмсем калăпланă хайлавсен стилĕ, çыру чĕлхи тĕрлĕрен, вĕсем нумай çивĕч темăна çĕклеççĕ, вĕсенче тĕрлĕ сюжет аталанать. Пур чухне те вĕсене хĕр арăмсем çырнăшăнах теми вăйсăр та ăшăх, фабули ансат, ытла хĕрхенĕçлĕ тесе хаклама юрамасть.

«Хĕр арăм прозине» литература пулăмĕ тесе XX ĕмĕрĕн вĕçĕнче официаллă йышăннă. Паян вара ăна пирĕн çĕршыври литературăн çирĕпленсе çитнĕ пайĕ пек йышăнаççĕ. Çак пулăм тавра тĕрлĕ ăслăлăх тĕпчевçисем (филолог, историк, социолог) тавлашаççĕ. Вĕсем хĕр арăмăн уйрăм илемлĕх тĕнчи, уйрăм чĕлхи, уйрăм çыру мелĕ пуррипе çуккине татса парасшăн. Анчах тĕпчевçĕсем пурте «хĕр арăм прозинче» пĕтĕм литературăри ĕç-хĕлсемпе улшăнусемех пулса иртнине йышанаççĕ. Литература критикĕсен шучĕпе хĕр арăм литератури пирки калаçăва арçын тата хĕр арăм литератури пайлав юхăмĕнче мар, хĕр арăмсен хăйне евĕрлĕ те хăйне майлă пултарулăхне шута илсе тăсмалла.

Литературăра «хĕр арăм прозин» тĕрлĕ тĕсĕсем пур, вĕсен шутĕнче социаллă психологиллĕ, сентименталлă тата уйрăм çын пурнăçне çырса кăтартакан романсене, калав, эссе, повесть жанрĕсене

асăнмалла. Хĕр арăм прозин паянхи кун палли публицистикăлăх тата уйрăмах вăйлă кăмăл-туйăмлăх шутланать. Унăн хăйĕн тематики йĕркеленнĕ: çемье хуйхи-суйхи, ачалăхпа аслисен пурнăçĕн хире-хирĕçлĕхĕ, «çухатнă рай», пурнăç пĕлтерĕшне шырани, уйрăм çынпа общество хушшинчи çыхăну, «пĕчĕк çын» проблеми.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Валентина Элпи

ПУЛАС КИНСЕМ

Роман (сыпăк)

Пĕрремĕш пайĕ

1

Эпĕ халĕ те хĕр пĕрчи çеç-ха. Хăçан ӳссе çитĕнĕп? Унччен паăтах кĕтме тивĕ. Чурече умĕнчи çĕмĕрт те пĕр хут çеç мар çеçке çурĕ.

Саванăçла туйăм ман, вăрман уçланкинчи çăлкуç пек, палкаса тăрать. Эпĕ юрлатăп, ташлатăп, ихĕлтететĕп. Çӳлти тӳпе сеп-сенкер, хĕвеле тăхлан пĕлĕтсем хупламаççĕ. Çĕр çинче утса мар, чупса-вĕçсе çӳретĕп эпĕ. Мĕн тери ырă çакă çутă тĕнчере пурăнма! Кам вара эсĕ çав тери телейлĕскер тетĕн-и? Хĕвел ачи мар-ши эпĕ? Вăл хăйĕн ылтăн ярапи çинче чуччу ярăнтарса чун-чĕреме илем кӳрсе тăрать-тĕр. Кур-ха: питĕм-сăнăм – чечек, кăмăлăм – сар çу.

Тус-тантăш мана Талюна тесе чĕнет. Хут çине çырнă ятăм – Татьяна. Хушаматăм – Итемри. Çак хушамата пирĕн çемьене ял-йыш парнеленĕ. Папай аттене авлантарнă та хăйĕн йĕтемĕ вырăнне (пирĕн енче калаçура йĕтем мар, итем теççĕ) пӳрт лартса тĕпрен уйăрса кăларнă. Çынсем вара пирĕн ят çумне Итемри (йĕтем выраннĕнче пурăнакан ĕнтĕ) хушамат çыпăçтарнă.

Çак кунсенче эпĕ, тухтăр халатне тахăннăскер, ялта килтен киле çӳретĕп. Çук, шурă халат тăхăннă пулин те тухтăр мар-ха эпĕ. Малтан манăн фельдшера вĕренсе тухмалла. Хальлĕхе эпĕ студентка кăна, медицина техникумĕнче вĕренетĕп. Пĕр курс çеç пĕтернĕ. Практикăна салатрĕç пире. Анюк тус-хĕрпе пĕрле иксĕмĕре пĕр района ячĕç. Вăл чугун çул леш енчи ялсене кайрĕ, эпĕ ку енне юлтăм. Чеччерен хул касса çӳретпĕр. Медицина чĕлхипе каласан чечче чирĕ ересрен прививка туни ĕнтĕ ку.

Вĕренессе эпир Анюкпа пĕр шкултах вĕреннĕ, классем çеç уйрăмччĕ. Çавăнпа пĕрне-пĕри çывăхах пĕлмен. Пĕрле çӳремен. Унăн хăйĕн, манăн хамăн юлташ пулнă. Техникума вĕренме кĕрсен общежитире пĕрле пурăнма тытăнтăмăр. Краватьсем юнашарах. Вăл ырă кăмăлĕпе мана часах çавăрчĕ. Сăмах килĕшсе пычĕ. Вара шыв сапса уйăрăлми юлташсем пулса тăтăмăр.

Хĕвел тахçанах тухса сарăлнă, эпĕ çаплах вырăн çинче ачашланса выртатăп. Васкамастăп. Вырăн çинче шухăшласа выртма лайăх. Хваттер хуçисем мана ампар умĕнчи шăналăк карса тунă чатар ăшне выртттарчĕç. Шăп кунта, никам та чармантармасть. Шухашлатăп, шухашлатап... Таçта та çитсе перĕнетĕп хамăн шухăш-ĕмĕтсемпе. Анюкран килнĕ хыпарсем пуçран тухмаççĕ. Сумкăран унăн çырăвĕсене кăлартăм та каллех вулама тытăнтăм. Акă малтанхи çырăвĕ: «Талюна, ман пата пĕр каччă хăтана ячĕ. Тăван аппăшĕ хăй пырса юмахларĕ. Питĕ çепĕç калаçать! Ватаннипе хирĕç пĕр самах та чĕнеймерĕм. Шăллĕ мана çав тери юратса парахнă тет. Мĕн тăвас-ши? Çырса пĕлтер хăвăртрах».

Иккĕмĕш çыру: «Талюна, пуçăм йăлтах çавăранса кайрĕ. Мана çураçрĕç. Качча тухатап. Çапах та туй кунĕччен сана курса калаçасчех. Кĕтетĕп. Васкасах килме тăрăш. Вĕренӳ ĕçĕ вĕçленсе килет пулĕ тетĕп. Асту, хĕр çумĕ пулан...».

Анюк çырăвĕсене айккинелле хуратăп та каллех тарăн шухăша путатăп. Анюк качча тухать. Тĕлĕнмелле. Вунултă çулта çеç хăй. Кăшт ăмсанатăп та. Эпир, хĕрсем, пурте айван, качча кайма васкатпар. Манăн пулас упăшка кам-ши? Мĕнле çын-ши? Ах, айванскер эпĕ. Вăл мĕнлине пĕлместĕп-и вара? Çук, çук, тем тесен те ялти, Хыçал касри, Сĕмьюн марах. Пулас упăшка ман пачах урăххи. Эпĕ ăна куçа хупсан питĕ лайăх куратăп, йăрăс пӳллĕ яш. Патвар. Хăмăр куç. Харпаккисем – чăн-чан шерепе, йĕпкĕн хура çӳç. Кăшт кăтрарах. Çав тери вăйлă. Хăрах алăпах мана çӳле-çӳле çĕклеме пултарать. Паллах, ун ытамĕ – сăпка. Канлĕ, канлĕ. Унпа ĕмĕр тăршшĕпех ним шиксĕр утан юнашар. Темле инкекрен те хӳтĕлеме пултаракан çын вăл. Пĕлсе тăратăп, мана вăл çав тери, çав тери юратать. Ялан ачашлĕ. Эпĕ те юратăп. Анчах тĕл пулнă-ши унпа эпир халиччен? Тĕл пулнаа пулсан, ăçта? Мĕнле сăмах хушнă-ши? Ах, ытла та айван çав эпĕ, тĕл пулнă пулсан пĕр-пĕрне палламан пулăттăмăр-и? Вăл мана шырать, шырать пулĕ-ха. Кăшкăрасчĕ: «Эпĕ кунта-а!» Илтмеллех çывăх мар пулĕ çав вăл.

Кам-ши? Суйлатăп хамăн пулас ăмăрт кайăкăма. Анчах темшĕн ман çула Сĕмьюн картлать хурать. Самант пуçăм унпа тулать ларать.

Сĕмьюн манран пĕр çул аслăрах. Мĕн пĕчĕкреннех унăн ашшĕ – Павăл пичче мана тарăхтаратчĕ. Курсанах таçтан кăшкăрса ярать: «Акă ман пулас кин! Сĕмьюна качча илсе паратăп, Ĕçчен хĕр ача!» Ĕçченнине сăнанă вăл. Пĕчĕккĕ пулин те, унăнне пĕрер çур пилĕк хам пеккисем тăваттăн кĕрĕшсе тырă выраттăмăр. Тӳлессе, ача-пăча ĕçĕ тесе, йӳнĕ тӳлетчĕ. Хăйсем вырса асапланмастчĕç, улшуç – лашапа сут

тăватчĕç. «Павăл совет саманипе пуйса пырать», – тетчĕç çынсем ун пирки.

Килтисем хăна пухсан Сĕмьюн ашшĕ пымасăр юлмастчĕ. Пире, ача-пăчана, сăра ĕçтерме хушатчĕç. Пыран вара сăра курки çĕклесе Павăл пичче умне, вăл пур, чампăлт! пăрахать стакана пĕр пус пăхăр укçа. Тытăнать хистеме: «Тĕппи ĕç. Укçи сана, хăв – пире. Асту, ывăлăма качча илсе паратăп». Эх, тарăхса каятăп. Сăрипе питне чаш! сапаттăм, стаканне персе вататтăм. Юрамасть. Атте ялти сумлă çынна кӳрентерме ирĕк парĕ-и? Ав вăл çывăхрах пăхса сăнаса тăрать, хĕрĕнкĕскер.

– Ĕçсе пар ĕнтĕ, хĕрĕм. Пĕр стакан сăра пăсмасть. Укçи хăвна пулать, – юслать атте. – Эсĕ – хĕр ача, тĕнчене кин пулма çуралнă. Савăн ырă çынсем куç хывнăшăн.

Ялта пирĕн чăнах та йăли çапла. Хĕр ача çуралсан ывăл пуррисем калаççĕ вара: «Сирĕн пире валли кин çурална имĕш». Ашшĕ-амашĕ кулянса çапла тавăрать: «Хамăра тĕп тăвакан илсе килтĕмĕр». Эпĕ революци хыççăн тепĕр çултан çуралнă. Эпĕ тĕп тăвакан мар. Мана çуралсанах çĕр панă. Хресчене çав çеç кирлĕ те. Атте ман çине тăшманла пăхмасть. Аппа çуралсан (вăл манран пилĕк çул аслă) атте ăна çулталăкчен алла тытса пăхман тет. Çапах та пире, хĕр ачасене, урамра вăйă вылянине пăхса тăма юратакан ватăсем мĕн паянччене çапла калаççĕ: «И-и, пирĕн кӳршĕре мĕн чухлĕ пулас кин». Эпир хамăра йĕркеллĕ тытма тăрăшатпăр. Кин тума лайăххисене çеç суйласа илеççĕ-çке.

– Эсĕ, Талюна, пуян çын кинĕ пулатăн. Сана улшуç Павăл ывăлĕ валли суйласа хунă, – тăрăхлатчĕç манран кӳршĕри аслăрах хĕрсем.

Тимухха Иванĕ çакăншăн вĕсене ятлатчĕ:

– Тĕттĕм те иккен эсир, хĕрсем. Талюна ӳссе çитнĕ çĕре пирĕн çĕршывра нимле пуян та, улшуçсем те пулмаççĕ. Совет влаçĕ вĕсене хăй çулĕ çинчен йăлтах шăлса ывăтать.

Хĕрсем тавлашаççĕ:

– Пит нумай пĕлетĕн.

– Халĕ те совет влаçĕ. Мĕншĕн шăлса ывăтмасть вĕсене?

– Сутă тăваççĕ кăна. Хăшĕсем лавкка уçаççĕ.

Тимухха Иванĕ ăнлантарать вĕсене:

– Вăхăтлăх çапла кирлĕ. Совет влаçĕ ытла çамрăк, унăн вăй пухмалла. Ленин хальхи вăхăта нэп вăхăчĕ тенĕ. Вăрăмлатса каласан новая экономическая политика.

Тимухха Иванне ялта нумай çамрăк хисеплетчĕ, сутăç ачисем килĕштермен. Иван комсомола кĕнĕ, ялта ячейка йĕркелет тетчĕç.

Сĕмьюн хăй ашшĕ пакăлтатнине пуçа çирĕп хывнă пулас. Вăйăсенче вăл, сĕмсĕркке, ялан ман тавра явăнатчĕ. Курас килместчĕ ăна. Çинçешке, кукăр çурăмлă. Мана пачах урăх ача – Якур – килĕшетчĕ. Пичĕ кӳпшем. Кулнă чух пит çăмарти мăйăр вырнаçмалăх пăт путатчĕ. Куçĕ чап-чакăр. Мĕнле вăйлăччĕ. Выляннă чух ялан ман майлă хăй. Никама тивтермен. Сĕмьюн кĕвĕçнипе çĕр тĕпне анса кайма хатĕр. Хăш чух вĕсем чĕп автансем пек тӳпелешетчĕç. Сĕмьюн – юлхав ача. Начар вĕренетчĕ. Тухса тарма та хатĕр шкултан – ашшĕ чарать. Эпĕ вĕренетĕп-çке, апла пулсан унăн ывалĕн те вĕренмелле. Пирĕн ялта шкул çукчĕ, пурте юнашар яла çӳреттĕмĕр. Пуçламăш шкул пĕтерсен татах тепĕр яла каймалла. Çавна пулах нумайăшĕ вĕренме пăрахрĕ. Эпĕ лайăх вĕреннĕ. Учительница мана ялан çунатлантаратчĕ: «Талюна, сан ăс пур, малалла вĕрен». Эпĕ пиллĕкмĕш класа аякри пасарлă ялти шкула кайса кĕтĕм. Çакăн çинчен Сĕмьюнăн ашшĕ пĕлнĕ те вăл та хăй ывăлне çав шкула кайса вырнаçтарнă. Пĕрле вĕренме тиврĕ ăна шкултан кăларса яриччен. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чух, çурхи каникула каяс умĕн, пĕтĕм вĕренекенсен пухăвĕнче кăларчĕç ăна шкултан. Начар вĕреннĕшĕн мар, ĕнтĕ ыйхи уçăлса çитнĕччĕ.

– Сĕмьюнăн ашшĕ – улшуç. Лашапа сут тунă. Вăл класс тăшманĕ, – пĕлтерчĕ шкул директорĕ пухура.

– Кăларса çапас кулак ачисене шкултан! – терĕç пухури пĕтĕм вĕренекен сасăласа.

Сĕмьюн пухура пĕр хĕрелет, пĕр шуралать.

– Тĕрĕс тумастăр! – кăшкăрать вăл. – Эпир кулак йăхĕ мар!

Пуху хыççăн парта хушшинче юнашар ларакан хĕр ачасем – Натали, Плаки, Хветура каça хирĕç пулин те, килелле тухса чупрăмăр. Киле ман çак хĕр ачасен ялĕ витĕр каймалла. Унтан утмалли ытла нумаях юлмасть. Çакăн пек самантсенче ăшăмра тăван ялăмри хĕр тантăшсене ятласа илетĕп: пымарĕç манпа вĕренме. Халĕ ав ялтан пĕрченех шкула çӳретĕп. Пĕччен çул çинче хăрушă. Вăрман витĕр те тухмалла.

Пирĕн хыçранах арçын ачасем те тухрĕç шкултан. Уй урлă пыратпăр. Сукмак пылчăклă. Лупашкасенче сĕлкĕш шыв. Çăпата тĕпне кукăр тупан çыпăçтарнă пулин те, урана часах нӳр çапрĕ. Эпир юхан шыв хĕрне антамăр. Пирĕн ун урлă каçмалла.

Пăр кăвас чĕрессинче йӳçсе хăпарнă кĕвĕлĕк евĕр курăнать. Шанчăксăр. Пус кăна, çавăнтах çăварĕ карăлĕ те çăтса ярĕ. Çыран хĕррисене тĕл-тĕл шыв тухнă.

– Упаленсе каçатпăр! – ăс парать арçын ачасенчен пĕри, пĕрмеллĕ кĕске кĕрĕк тăхăнни. Хăй çавăнтах, ним тăхтаса тăмасăр, пăр çине выртрĕ те хырăмпа шума тытăнчĕ. Часах леш айккине çитрĕ.

Юхан шывĕ ансăр, пулсан пулĕ виç-тăват хăлаç. Тарăнăшĕ пур вара, хăйне кура мар. Ачасем çулла пу яратчĕç те тĕпне ура çитерейместчĕç. Çавăнпа пирĕн çулла шкула тӳррĕн çӳрес çул пĕтет, тавраран кайса кĕпер урлă каçма тивет.

Пăхкаласа тăнă хыççăн, ыттисем те умлă-хыçлă упаленме тытăнчĕç. Часах каçса та пĕтрĕç. Пĕр эпĕ çеç пăр çине кĕме хаяймасăр шикленсе тăратăп.

– Ан хăра, Талюна!

– Эпир чиперех каçрăмăр-çке!

– Ним те пулмасть.

– Пăр çирĕп, лашана та тӳсет.

– Хăвăртрах каç! – хистеççĕ мана ачасем.

Кăмăла хытаркаласа аранах пăр çине кĕтĕм. Чавсаланса шăватăп.

– Сиксе ан шу!

– Майĕпен, майĕпен, – асăрхаттараççĕ мана.

Тем тесен те варрине çитрĕмех-тĕр. Унччен те пулмарĕ, çумра çĕлен евĕр чашăл-чашăл тунине илтрĕм, Сĕмьюн хуса çитрĕ-мĕн.

– Эппин, ман пирки директора элек патăн? Пĕччен вĕренесшĕн? – тет.

– Мĕн кирлĕ мара каласан, ăçтан сăмахлас ман директорпа, – тетĕп.

– Суян! Пирĕн ялта мĕн пулса иртнине ăçтан пĕлет? Путаратăп сана паян çакăншăн. Тăм пул!

Иртсе кайрĕ, ĕнтĕ унăн атă тĕпне çеç куратăп. Хушшăмăр пĕр аршăн пулатех. Эх, эсрел. Темиçе хут атă пуçĕпе пăра так! так! тутарчĕ те малалла шурĕ. Эпĕ те васкатăп ырра мара чун сиснĕн. Хырăм айĕнче пăр çатăр-çатăр çурăлчĕ. Шыв чашăл! туса урасене ĕмсе илчĕ.

– Ах! – ахлатрĕç çыран хĕрринче пăхса тăракан юлташсем.

Мана туххăмрах сивĕ çапрĕ. Хам çаплах малалла талпăнатăп. Анчах усси çук.

– Пăртан тытса тĕк тăр! – тет пĕрмеллĕ кĕске кĕрĕк тăхăннă арçын ача. Хăй пăр çине выртса ман паталла шума тытăнчĕ. Чĕн пиçиххи ывăтса пачĕ. Пĕр вĕçĕ хăй аллинче. – Ярса тыт! – тет вăл.

Путмарăм, тухрăм. Туртса кăларчĕ. Ачасем ман сăхман аркине пăраççĕ. Анчах та вĕсен хушшинче Сĕмьюн çукчĕ. Вăл пăрахса кайнă. Чылай малта пырать эпир утас сукмак çинче. Юратма мар, Сĕмьюн манăн тăшман пулса тăчĕ.

Пăр çинчи инкек чылай нушалантарчĕ. Эрне ытларах чирлесе выртрăм, кайран çăпансем тухса тарăхтарчĕç. Инкек-синкек мĕнле пулса иртни çинчен никама та шарламарăм.

Выртатăп-ха чатар айĕнче çаплах шухăш вĕçтерсе. «Мĕн çыханчĕ çак Сĕмьюн пирки шухăш? Сирĕл-ха, пӳтсĕр!» Алăсене çатăр-çатăр чăмăртаса илтĕм. Аранах Сĕмьюн пичĕ чакрĕ-чакрĕ те пăнчă евĕр тăрса юлчĕ, унтан пачах çухалчĕ. Сасартăк кĕтмен çĕртен куç умне Ким Шуруков поэт тухса тăчĕ. Ăна техникумра курнăччĕ.

Шкултан вĕренсе тухсан пĕр харăс икĕ çĕре заявлени патăм. Экзамен тыттармаççĕ, ăçта илĕç, çавăнта вĕренĕп терĕм. Нумай та вăхăт иртмерĕ, ял хуçалăх техникумĕ чĕнсе те ячĕ. Кайрам. Вăрнар станцийĕнчен анса юлсан лини тăрăх каялла утрăм. Техникум вăрман ăшĕнче ларать, ĕлĕк мăнастир пулнă тет кунта.

Техникумăн пысăк хуçалăх иккен. Сăнав хирĕсенче çимĕç пиçсе çитнĕ. Выльăх-чĕрлĕх те пĕр кĕтӳ. Тыр-пул пухса кĕртмелле, выльăх–чĕрлĕхе пăхмалла. Акă мĕншĕн ирех пухнă иккен ачасене. Студентсене те каникула яман.

Пире, çĕнĕрен вĕренме килнĕ хĕр ачасене, аслă курссенче вĕренекенсем патне вырнаçтарчĕç. Астăватăп, алăка шаккаса пӳлĕме илемлĕ çамрăк кĕчĕ. Майка тăхăннă. Çан-çурăмĕ хăйĕн хĕвелпе пиçсе пăхăрланнă. Сарă çӳçĕ ылтăн шывĕ сĕрнĕн йăлкăшать. Чакăр куçлă. Хăйне хăюллă тыткалать. Йĕппе çип кирлĕ пулнă имĕш ăна. Тухса кайма çеç ĕлкĕрчĕ, хĕрсем тьхик! тьхик! кулчĕç.

– Çĕннисенчен хĕр суйлама килнĕ вăл, чее, – терĕ студенткасенчен пĕри.

– Çак хĕр ача çине ытларах пăхрĕ вăл, – пат хушса хучĕ ман çине тĕллесе хĕрлĕ çӳçли. Эпĕ хама вĕри шывпа сапнăнах туйрăм.

Хăйсем çавăнтах кĕпĕр! чӳрече умне пухăнчĕç. Пĕр-пĕрне тĕккелешсех пăхрĕç кантăкран.

– Мĕн ятлă-ха эсĕ? – ыйтрĕ хĕрлĕ çӳçлиех.

– Талюна, – пĕлтертĕм.

– Эсĕ ан кӳрен, – терĕ каллех хĕрлĕ çуçли. – Вăл пирĕн – поэт. Сăвă çырать. Хушамачĕ – Ким Шуруков. Миçе хĕр çак каччăшăн хăй чĕрине çунтармасть-ши! Вăл пур, никама та пăхмасть. Итле, мĕнле илемлĕ янăрать ун сăвви:

Пул-ха, савнă пикеçĕм, ăста агроном,
Каятпăр тăван яла тыр-пул ӳстерме!..

Сăвви вăрăмччĕ, эпĕ икĕ йĕркине çеç астăватăп.

Тепĕр куннех пиртен, çĕннисенчен, тырă выракансен бригади йĕркелерĕç. Пăхатпăр, пирĕн бригадир хайхискер – Шуруков поэт.

Ун çине никам та пăхма хаяймасть. Вăтаннипе пуç çĕклемесĕр тырă выратпăр. Бригадир хĕрхенет пулас çамрăк хĕрсене. Пирĕн кăмăлсене çĕклесшĕн: шӳтлесе те пăхать, пырне пӳрнепе хĕстерсе качакалла кăшкăрать. Эпир вăрттăн кулатпăр.

Темиçе кунтан, тырă вырса пĕтернĕ ятпа, студентсем вечер турĕç. Мĕн чухлĕ вăйă-кулă пулмарĕ-ши?!

– Почтăлла вылятпăр! – илтĕнчĕ уçă сасă. Çавăнтах номерсем парса тухрĕç. Ман кăкăр çине иккĕмĕш номер тирсе ячĕç. Пĕр студенчĕ почтальон сумки çакрĕ. Студентсен самантрах хут, каранташ тупăнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, почтальон тытанчĕ чупкалама.

Ку вечерта мана вун сакăр ачаран çыру пачĕç. Сырăвĕсене халĕ те пулин пытарса усратап. Шăллăмсем ман питĕ чарсăр, çырусене шыраççĕ. Хăш чух тупаççĕ те йĕкĕлтеме пикенеççĕ. Юрать-ха, ырă кăмăллă асанне хута кĕрет:

– Хĕр чухне хĕрĕх тус, качча кайсан пĕрре, вăл та пулин тăшман, – тет. Тĕлĕнетĕп. Малтанхипе килĕшме пулĕ. Качча кайсан упăшка ăçтан тăшман пултăр-ши? Ах, асанне, асанне. Хăй мĕн каланине хăй те ăнланмасть пулас.

Вечер савăнăçлă иртрĕ. Пурте пĕрле карталанса юрларĕç, ташларĕç. Ким Шуруков хăйĕн саввисене вуларĕ. Эпир, кĕçĕннисем, клубран маларах тухрăмăр. Пурте пĕр ретре карталанса утатпăр. Юрă пуçланчĕ çеç, Шуруков поэт юлташĕпе пире хуса çитрĕ. Иртсе каяççĕ пулĕ тенĕччĕ. Çук, поэт манпа юнашар утма тытăнчĕ.

– Миша Авдеев, – чĕнчĕ вăл юлташне. – Манăн арăм пуласси акă çакă. Маттур, ĕçчен хĕр.

Çапла каларĕ те мана çурăмран лап–лап лапкаса илчĕ.

Эпĕ вăтаннипе, тарăхнипе сăмах чĕнме пĕлмерĕм. Картаран вĕçерĕнтĕм те, пуçран чулпа çапнăн, малалла ыткăнтăм. Общежитие çитсен пуç урлах витĕнсе выртрăм. Хĕрсем кĕрсен никам та нимĕн те шарламарĕ, те илтмĕше хыврĕç поэт сăмахне. Ăнланмастăп.

Ирхине куç уçма хăраса выртрăм. Каçхине поэтпа пулса иртнĕ пăтăрмах пирки студенткасем куласран хăратăп. Ят кайĕ. Тем те шухăшласа кăларĕç.

– Талюна, тăр! Сана çыру! – илтетĕп.

Çыру килтен. Телее кура, конвертран маншăн питĕ хаклă хут тухрĕ. Ăна Шупашкарти медицина техникумĕ янă. Мана вĕренме илни çинчен пĕлтерет. Вăт тамаша... Мĕн тумалла ĕнтĕ, мĕн? Манăн умри çул сасартăк икке уйрăлчĕ. Хăш юппине кĕрсе кайсан телей тупап-ши? Шухăш пăтранма тытăнчĕ. Манăн хамăр чăвашсен тĕп хулине, Шупашкара, каяс килет. Кунтан та пăрахса кайма аван мар. Сăлтав

шырама тытăнтăм. Пуçа вут çути евĕр шухăш çуталса кĕчĕ. Чим-ха, кунта вĕрентмеççĕ-иç. Тырă выртараççĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхтараççĕ. Ку вĕрентни мар. Ăна килте пĕчĕккĕ чухнех хăнăхтарнă.

Сăлтавĕ тупăнчĕ. Савăнтăм вара куншăн. Ара, асаннем час-час йăшса çӳрет ав. Юн кайнипе аптратăп тет. Пулăшма пултарайманскер ун сăмахĕсене чуна ыраттараймасăр итлейместĕп. Халĕ шăпах май пур. Медицина техникумĕнче вĕренĕп те асаннене сыватма лайăх эмел тупăп. Çу-у-ук, Шупашкарах каймалла. Çулăм унталлах выртать. Шупашкара!

Хĕрсем ĕçе кайса пĕтсен пĕчĕк арчама япаласене чиксе питерсе илтĕм те ăна хулпуççи çине лартса станцине вĕçтертĕм. Таçтан-муртан пĕр студент тухрĕ. Хушамачĕ унăн – Чернов. Хура сăн-питлĕскер. Хушамачĕ хăйне курах вара. Юнашар утать. Йĕркеллĕ калаçать хăй. Майĕпен эпĕ аçта кайнине вăлтса пĕлчех. Ӳкĕтлет. «Лайăх техникума пăрахса каян», – тет. Эпĕ пуçăма кăна суллатăп, ĕç тухман енне çапла каласа хучĕ:

– Шел, пирĕн техникум çакнашкал хитре пикене çухатать.

– Пакăлти-çке эсĕ, – терĕм ăна хирĕç, вара иксĕмĕр те кулса ятăмăр.

Поезд çине ларсан...

Аса илсе выртнă май илтех кайрам: «Тухтăр, тухтăр!» – тет тахăшĕ. Кам йăслать, ара?

Поезд тăпах чарăннăн туйăнчĕ. Кама чĕнеççĕ? Чим, ара, ку мана-иç. Мансах кайнă: эпĕ халĕ те ампар умĕнчи чатăр айĕнче выртатăп-çке.

– Тухтăр, вăрантăн-и эсĕ?

Шăналăк чаршава пĕр кĕтесĕнчен сирсе пăхрăм. Хваттер хуçи арамĕ чĕнет иккен.

– Ырă кун пултăр, инке, – тетĕп.

– Тавах, хăвна та сывлăх пултăр, – тет вăл. – Мĕн-ха, хĕрĕм, сана паян кил тăрăх ертсе çӳреме куршĕ ачине хушнă. Шĕвĕрĕ паçăрах килнĕ, ав алкум вĕçĕнче ларать.

Эпĕ тăрса тумлантăм. Сĕтел хушшинче апат хатĕр: пари тинкĕли пăсланать тата тирĕкпе уйран. Чи юратнă апат ку ман.

– Ан ятла ĕнтĕ, хĕрĕм, урă ним те пулмарĕ, – тет кил хуçи хĕрарамĕ сĕтел çине татах икĕ çăмарта хурса.

Мана ертсе çӳрекен шĕвĕркке калаçма юратаканскер пулчĕ. Пĕр киле кĕрипченех паллашрăмăр. Ванюк ятлă хăй Тăваттăмĕш класра вĕренет. Çитменнине тата питĕ хăюллăскер. Пӳрте манран малтан чупса кĕрет те хуçисене çапла калать:

– Тухтăрăн васкамалла. Çаннăрсене тавăрса, хатĕрленсе тăрăр! Хăрамалли ним те çук, ӳпре çыртнă чухлĕ те ыраттармасть.

Çыннисем ăшшăн йăл кулаççĕ те ăна итлеççĕ. Урам урлă каçнă чух Ванюк хыпар пĕлтерчĕ:

– Илтнĕ-и эс Мĕкĕте мучи упа тытни çинчен?

– Çук, – тетĕп. – Хăçан?

– Ĕнер ара. Вăрманта, Çарăк çырминче тытнă. Паллах, ун сăмахне ĕненместĕп. Юмах çаптарать. Вăрманĕ чанах çывăхрах ĕнтĕ.

– Упине куртăн-и? – ыйтатăп Ванюкран.

– Пĕтĕм ял халăхĕ курнине эпĕ, мĕн, суккăр-и?

– Упи пысăк-и?

– Ытлашши мар, – ăнлантарать Ванюк аллипе хăйĕн кăкăрĕ таран кăтартса. – Пирĕн пăру пысăкăш пур пулĕ.

– Курасчĕ-çке манăн та, – пĕлтертĕм ĕмĕте.

– Ĕнер çывăрмалла пулман, – пат татса хучĕ Ванюк, – кая юлнă.

– Мĕншĕн?

– Патшалăха кайса панă.

– Эппин, – терĕм, – сунарçине те пулин курасчĕ.

Ванюк ман çине чăр-р пăхса илчĕ те кулса ячĕ. Вара çапла каларĕ:

– Мĕкĕте мучи упа мар-иç, ăна мĕн курмалли пур?

Эпĕ те сăмахран ӳксе юлмарăм:

– Ха, упа тытакан вăл – паттăр çын. Ăна мĕнле курас килмĕ?!

Ванюк ним те чĕнмерĕ. Мала иртрĕ те тӳрех униче умĕнче ларакан пӳрт патнелле утрĕ. Эпĕ хирĕçлемерĕм. Ун хыççăн шăпăрт кăна пытăм.

Хапха уçăлнă-уçăлман алкум вĕçĕнче йывăç чутласа тăракан кĕреçе сухаллă ватăрах арçынна куртăм. Сывлăх сунма ĕлкĕриччен Ванюк персе те ячĕ:

– Мĕкĕте мучи, сана çак майра курасшăн!

Хама аван маррăн туйрăм. Анчах тӳрех тавçăртăм: ку – Мĕкĕте мучи, упа тытакан сунарçă. Эпĕ ăна элесмелес çӳллĕ çын пулĕ тенĕччĕ. Вăл вăтам пӳллĕскер çеç.

Ман çири шурă халата курсан эпĕ мĕн сăлтавпа килнине ăнланчĕ пулас, тӳрех пурте кĕме сĕнчĕ.

– Çемье килте, – терĕ вăл.

– Сирĕн те кĕме тивет самантлăха. Айтăр пĕрле, – чĕнтĕм мучие.

– Юрĕ, юрĕ.

Ванюк малтанах çĕмĕрттерсе кĕрсе кайнă. Урата урлă каçрăм çеç – çынсем çанăсене тавăрса тăнине куртăм та. Ванюк ĕçĕ. Йăл кулмасăр

тӳсеймерĕм, çыннисем те ăнланчĕç, вĕсем те вăрттăн тутисене сарса пĕрчĕç.

Прививка тума аслисенчен пуçларăм. Вара – пĕчĕккине. Шăпăртах тăчĕ ача.

– Маттур, – мухтатăп ăна. – Аслаçу пекех сунарçă пулатăн пулĕ.

– Çу-ук, – хирĕçлерĕ ача. – Эпĕ шофер пулатăп.

Мĕнле ăслă ача. Ялта пĕр машина çук, вăл курман та-и тен ăна. Мал ĕмĕтлĕ. Калаçнине илтнĕччĕ, малашне кашни колхозрах трактор, машина пулмалла. Хăçан çитĕ-ши вăл вăхăт?

– Тӳсĕмлĕ ача, – татах мухтатăп пĕчĕкскере. – Кĕпе çаннине антар та аслаçуна тухса чĕн.

Ача тиха евĕр тĕпĕртетсе пӳртрен тухса кайрĕ.

Прививка тунисен ячĕсене списока çыртăм ĕнтĕ. Мучи çаплах кĕмест. Тӳсеймерĕм, картишне хам тухрăм. Сунарçă мăнукĕ пĕрченех тăрать.

– Аслаçуна тупаймарăн-и?

– Тупрăм. Вăл ăçтине каламастăп. Асатте хушмарĕ.

– Эпĕ сана чăн-чăн шофер пулĕ тенĕччĕ. Эсĕ пур, аслаçу ăçтине те калаймастăн. Эх!

Ачан куçĕ чеен йăлтăртатса илчĕ, вара вăл ман халат аркине карт-карт туртрĕ. Пĕшкĕнсе лартăм. Вăл мана хăлхаран шăппăн çапла каларĕ:

– Асатте нӳхрепе анса ларчĕ.

Куна кĕтменччĕ эпĕ. Кулса ямасăр аран тӳсрĕм. Çын упа тытма хăрамасть, хул кастарма шикленет.Тен, йăнăшать ача? Ĕненмесĕртереххĕн нӳхреп анине пырса уçрăм. Мĕн тейĕн? Тĕрĕс. Мĕкĕте мучи куян пек чĕтресе ларать.

– Ай-уй! – кăшкăрса ятăм.

– Ан та тăрăш. Пурпĕрех хул кастарма килĕшместĕп. Чеччепе чирлес вăхăт иртнĕ ĕнтĕ ман. Эпĕ ватă çын.

– Çапла пулĕ те. Анчах кашни çынна прививка тумалли çинчен правительство йышаннă-çке. Кун пирки ял совет пухăвĕнче те калаçса татăлнă. Çук, ман пĕр çынна та прививка тумасăр хăварма юрамасть.

Тем кала, мучи пĕрех ӳкĕте кĕмест. Эй, мĕн тилмĕрсе тăратăп çак? Пурте кĕрсе сумкăна илсе тухрăм та хапăл-хапăл нӳхрепе антăм. Мучи, çакна кĕтменскер, шалт аптраса тачĕ. Ирĕксĕрех килĕшме тиврĕ. Анчах сунарçă эпĕ мĕн прививка тăвичченех пуçне айккинелле пăрса, куçне хупса тăчĕ.

Мĕкĕте мучи хăй мыскарине нӳхрепе кăкарса хăварайман-мĕн. Вăл ут утланса хапха уçсах ял çине тухса вĕçнĕ. Çав хыпар эпĕ çитес

çĕрте хăнара, çынсен шăл хушшинче шĕкĕлченнĕ, пуринне те чĕлхе вĕçне кăтăклантарнă, лĕх-лĕх култарнă.

Кунсем умлă-хыçлă хăварт-хăварт иртрĕç. Юлашкинчен хам вĕреннĕ яла çитрĕм. Кирек хăш урамран пăхсан та тăван шкулăм курăнать. Сарт çинче вăл. Икĕ хутлă чул çурт. Таврара тупаймăн унашкал хŭхĕм шкул. Мана та илемĕпе илĕртсе вĕренме йыхăрчĕ вăл. Çак шкула империализм вăрçинче тыткăна лекнĕ австриецсене тутарнă тетчĕç. Халĕ шкул тавра ачасем хĕвĕшни курăнмасть, каникулта ĕнтĕ вĕсем.

Ял советĕнче мана ертсе çŭреме кашта пек çуллĕ арçын тупса пачĕç.

Килрен киле кĕрсе тухатпăр. Эрне иртрĕ. Хам вĕреннĕ ял. Турăçăм! Тăватă çул пурăннă. Иккĕмĕш тăван ял. Палланă çын нумай. Унта та кунта пĕр класра вĕреннĕ тантăшсене тĕл пулатăп. Тăкăрлăка пухăнатпăр та тытăнатпăр сăмахлама. Вăрăм çивĕтлĕ Маня халап майан ыйту парать:

– Кăмăла каять-и тухтăр ĕçĕ?

– Калаймастап. Эпĕ хальлĕхе тухтăр та, сестра та мар. Хальлĕхе ман ĕç çăмăл. Çынна кĕпе çаннине тавăрттаратап та мамăкпа спирт пуçса чавсаран çŭлерех сĕретĕп. Вара ŭте перопа виç-тăват миллиметр тăршшĕ чĕлт! чĕретĕп, эмел хуратăп. Пулчĕ те. Ĕçĕнчен ытла мана халĕ çынсемпе тĕл пулни, калаçни, вĕсен пурнăçне пĕлни чуна килĕшет.

– Тухтăр ĕçĕнчен çав тери йĕрĕнетĕп, таса мар ĕç, – хушса хурать ушкăнта тăракансенчен тепри пуçне пăркаласа. – Çын шыçне курсан хăсса ярăп, тупата.

– Çынна ыратнинчен хăтарни – чи пархатарлă ĕç, – тет Маня.

– Ман шутпа та çапла, – тетĕп эпĕ. – Анчах тухтăра тухас çул питĕ вăрăм. – Нумай вĕренмелле. Пулайăп-ши эпĕ чăн-чăн тухтăр? Пĕлместĕп. Анчах ĕмĕтĕм тĕнче пек пысăк.

Сăмах вĕçленмест. Пĕр-пĕринчен ыйтса тĕпчемелли темĕн чухлех.

– Крахха качча тухнă!

– Упăшки мĕнле çын-ши?

– Учитель тет.

– Талюна, эсĕ хăçан качча каян? – ыйтать тухтăр ĕçне тиркекен хĕр.

– Никам та илмест, – тетĕп.

Тантăш хĕр хускатна ыйтăва хăех татса пачĕ:

– Шăтăклă шăрçа çĕрте выртмасть теççĕ ваттисем. Йĕркеллĕ пулсан тупăпăр-ха эпир те упăшка.

Хĕрсенчен уйрăлсан Тарăнвар еннелле утрăм. Пĕве леш енче пĕчĕк çеç çĕнĕ çурт ларать, пĕчченех. Мĕншĕн халăхран уйрăлмалла пулнă-ши ун? Çав киле кĕрсе тухсан ĕçĕм вĕçленет вара, практика пĕтет.

Каллех Анюкпа пулăпăр!.. Вăрнар станцийĕнче тĕл пулатпăр. Районти сывлăх пайне отчет памалла. Вара – Шупашкара! Анчах та Анюк качча тухасшăн. Мĕнле-ха ĕнтĕ малалла, пĕрле çÿреймĕпĕр-ши? Вăл та, эпĕ те мăшăрла пулсан килĕшÿллĕ. Эпĕ – мăшăрсăр. Эй, кулянас мар, пирĕн валли те тупăнĕ-ха. Пулас упăшка кантăк умне пырса ларса макăрать тет. Хĕр тантăш каларăшле: йĕркеллĕ çÿре, ятна ан яр. Ыра ят хĕршĕн сывлăш пекех кирлĕ.

Иккĕмĕш пайĕ

11

Сĕтел çинче «Красная звезда» хаçат выртать. Тăнă-тăман ăна ярса илтĕм. Пăхатăп: пĕтĕм материалĕ Сталинград патĕнчи çапăçусем çинчен. Константин Константинович Рокоссовский ертсе пыракан çар питĕ вăйлă пĕçерккĕ парать фашистсене.

Указ пур. Çарти воинсене орденсем, медальсем панă. Куç список тăрăх шăвать. Паллана çынсен хушамачĕсене шыратăп. «Арланова...». Ара, ку леш аэростат хăпартаканни маар-и? Тупата çав. Ячĕ те ав – Александра. Хĕрсем ăна Саня-Санюк тесе чĕнетчĕç. Ай, маттурскер. Мĕнле награда-ха унăн? «За отвагу» медаль. Тен, манăн куç умĕнче пулса иртнĕ ĕçшĕн панă ăна? Фашист самолечĕ вут хыпса персе анчĕ. Тен, тата пысăкрах ĕç тунă вăл? Ашшĕ-амашĕ, ял-йыш савăнать ĕнтĕ. Паттăр, телейлĕ хĕр. Хамăн та саламласа çыру çырас ун патне.

– Эх, манăн та медаль илсе курасчĕ! – персе ятăм сасăпах.

Елис та вăраннă-мĕн. Çийĕнчех вăл мана мĕн каламалли тупрĕ.

– Çар пурнăçĕ тин çеç пуçланать-ха, ĕлкĕрĕн. Урпа та утмăл кунтан тин кĕрекене ларать.

Санюкпа пĕрле аэростат хыççăн чупни халĕ те куç умĕнче. Ун чухнехи пекех, кĕçĕр те ку сĕм вăрманти çĕр пуртре пĕр çĕр каçма çеç хăвармарĕç-ши пире? Çавăнпа та эпĕ мĕн кăларнине каллех кутамккана чиксе хутăм.

– Талюна, эсĕ çула кайма хатĕрленетĕн пулас? – тет Валя эпĕ кăштăртатнине асăрхаса.

– Сталинградах илсе каяссăн туйăнать.

– Кунта та Сталинградринчен кая мар, – тет Валя.

Фронт ав Воронежран пуçласа Хура тинĕс патне çитиех тăсăлнă.

– Тепĕр тесен, мĕн тума пире Сталинграда çити тиесе çӳреччĕр, – килĕшетĕп Вальăпа.

– Аплах ан хурла-ха хамăра, – кӳреннĕ пек калать Елис. – Çинçе çипрен те çăмха пулать.

– Малашне хамăра хамăр ырласа çеç тăрăпăр.

Пире ирхи апата илсе кайрĕç. Кунта çар çыннисем лăках, эпир хамăр çеç тесеччĕ. Мĕн туса пурăнаççĕ вĕсем? Камсем? Пĕлес килет, анчах йĕке хӳрелле пăлтартатса çӳрени çарта килĕшмĕ. Çын тем шухăшлĕ тата.

Столовăйĕнчен тухсан Измайлова командир пире штаба каймалли çинчен пĕлтерчĕ.

Штаб. Кĕрсе тăтăмăр. Пӳлĕмĕ пысăках мар, анчах хăтлă. Стена çинче – Ленин портречĕ.

Сĕтел тавра кĕпĕрленнĕ çар çыннисем темшĕн питĕ шавлаççĕ. Вĕсем хушшинче паллакан çынна асархатăп. Вăл – Куропаткин комиссар. Сухалне хырнă, урăх тум тăханнă та вуçех ватă курăнмасть. Лараканни начальник ĕнтĕ.

Сăнатап та, вĕсен пурин те тумĕсем çинче летчик иккенне пĕлтерекен паллăсем пур.

Сывлăх сунтăмăр. тăпах чарăнчĕç. Чăрлаттарса пахрĕç хĕрсем çине.

Часах пире каласттарма тытăнчĕç, кашнинпе уйрăмшарăн пуплеççĕ.

Кам мĕн тума пултарнипе кăсăкланаççĕ.

– Эпĕ медицина техникумне пĕтернĕ тата аэроклубран вĕренсе тухнă, – тетĕп.

– Медик та, летчик та! Питĕ лайăх, – мухтаççĕ. – Санăн пĕлу, Татьяна Итемри, çав тери кирлĕ. Шута илес. Хальлĕхе – аэродромра...

Ыттисемпе мĕн каласни хăлхана кĕмест. Аэродром терĕç. Самолет çинех ларатăп-тăр.

Тепĕр пулĕме тухрăмăр.

– Варук, саламлатăп сана! – хăпăртланать Елис. – Вĕсем калани хăлхана кĕчĕ-и?

– Ăçта унта, – йынăшать вăл. – Выросла каласаççĕ те – ăнланса юлаймарăм.

– Сана, Варук, такăнма пĕлмен, тарланан, сĕлĕ парса сĕлĕ çимен, киреметрен хăраман хаклă япала параççĕ.

– Эй, тĕнче! Тем каласа тăкран. Мĕн-ши ĕнтĕ вăл?

– Курăн ак часах.

Эпир вĕсен каласăвĕнчен кулса ятăмăр. Уртемовăпа Елиса илсе те кайрĕç. Ăçта? Эпĕ пĕлмесĕрех юлтăм.

– Талюна, мĕн параççĕ-ши мана?

– Елис ахаль çеç пуплерĕ-тĕр, – лăплантаратăп Варука.

– Хĕр ачи вăл нихăçан та суймасть-ха. Ун пек йăла çук ун, анчах хăй самахĕпе çынна шухăша ярать.

Тек нимĕн те калаймарăм ăна. Измайлова командир тухрĕ. Пирĕн аэродрома каймалла.

Мĕнех? Шинель тăхăннă, пиçиххисене туртса çыхнă, çурăм хыçĕнче – пăшал. Капла çеç юрамасть-мĕн. Тумтирсене улăштарттарчĕç. Дубленка, кĕрĕк пиншак, тăхăнтăмăр. Ăна ялтилле çĕлетмен. Шинель пекех варăм та çурăк аркăллă. Çухави пысăк, тăратсан касса вĕрекен çил те ĕнсене тивеймĕ. Сивĕ шыраса тупаймастех, ара, çĕр мамăк хурса çĕлетнĕ брюки тăхăнтартрĕç. Пилĕкре çав-çавах чĕн пиçиххи. Йĕлтĕр сыртăмăр. Вара кĕрĕк аркисене пиçиххирен хĕстерсе тапранса кайрăмăр. Малта – Измайлова командир. Çил пек вĕçтерет вăл. Аллинчи мăшăр туя вăй вылять.

Ун хыçĕнче – эпĕ, кайра – Варукпа Валя.

Мĕн чухлĕ чупрăмăр-ши? Тен, виçĕ километр, тен, тăваттă? Уя тухсан йĕри-тавра пăхрăм та чун сулетсе илчĕ. Кăнтăрпа хĕвеланăç енче çулăм хыпнăн пĕлĕт йĕпкĕн хĕрлĕ чаршавпа карăннă. Сывлăшра тискер сасă улать, шăмми-шаккине тылă хушшине хурса хĕстереççĕ тейĕн. Сăр сăрлать ура айĕнчи çĕр те. Ăна сив чир тытса хутлатать. Çук, вăл та мар, ку та мар. Ăшпиççи вăл фронт.

Кăшт чарăнса тăтăмăр сывлăш çавăрмалла.

– Миçе çухрăмра вĕресе тăрать çав тамăк хурăнĕ? – ыйтать Варук хăйса.

– Аякрах мар, пĕр çĕр çухрăмра.

Алари туясем каллех вылянма пуçларĕç. Шаваççĕ йĕлтĕрсем, ярăнма тухнă пекех, пĕрре çырманалла вăркăнатпăр, тепре тавайккинелле мекеçленетпĕр. Пирĕн çул варман çумĕпе пырать.

Инçех те мар салтаксем курăнчĕç. Эпир те вĕсем патне çитсе чарăнтăмăр.

– Катя-çке! Хăйĕн хĕр тантăшĕсене ертсе килчĕ!

– Салам!

– Салам! – кăшкăраççĕ вĕсем.

– Сире улăштарма килтĕмĕр, – тет Измайлова. Командир пире хăй тавра пухрĕ. Акă мĕн-мĕн пĕлтĕмĕр унран. Ку – çĕнĕ аэродром. Ун капашне çак салтаксем суйласа илсе, виçсе хатĕрленĕ, ăна халĕ юртан

тасатмалла. Малашне пирĕн çак аэродрома йĕркеллĕ тытса тăмалла, мĕншĕн тесен салтаксем фронта каяççĕ, вĕсен выранне эпир юлатпăр.

Юртан тасатса кайнисĕр пуçне вĕççе килекен самолетсене йышăнмалла, вĕсене аэродромран ăсатса ямалла.

Куçпа виçетĕп аэродромлах суйласа илнĕ хире. Пĕчĕк лаптăк мар, тăçтанах сарăлса выртать. Çĕр çын ĕçлесен те юрне вуна кунта тасатса пĕтерес çук.

Кĕреçе пачĕç. Мăкăралса тăракан пĕр пысак кĕрт патне пытăмар. Трактор пытарса лартнă-мĕн кунта. Чаватпăр. Чăнах-мĕн: трактор тухрĕ.

Варук трактора курсан хĕпĕртесе ӳкрĕ, таван пиччĕшĕпе тĕл пулчĕ теăĕн. Эх, шăлать, тасатать, çынпа калаçнă пек тем мăкăртатать унпа.

– Сан трактор ку. Чиперех-и вăл, тĕрĕсле! – хушать Варука Измайлова.

Çакна çеç кĕтнĕ тейĕн Варук. Тута хĕрри хăлхи таран сарăлчĕ. Самантрах кабинăна кĕрсе ларчĕ. Тем турткалать, тĕккелет. Чылайччен тăрмашна хыççăн мотор кĕр! кĕрлесе кайрĕ.

– Ĕçлет, командир юлташ! – пĕлтерчĕ Варук. Катя Измайлова йăл-йăл кулкалать.

Трактор кĕрт ăшĕнчен йăраланса тухрĕ.

Командир та кабинăна Варукпа юнашар кĕрсе ларчĕ, ăна çул кăтартса пырать ахăртнех. Трактор аэродром варрипе юра пусарса леш вĕçнелле кайрĕ.

Вальăпа иксĕмĕр салтаксемпе юнашар тăрса ĕçлеме тытăнтăмăр.

Çак вăхăтра аэродроман вăрман енчи вĕçĕнче татах салтаксем куранчĕç. Вĕсем связистсем, техник-механиксем иккен, грузовикпа тем турттараççĕ. Мĕн-ши? Ыйтрăм салтаксенчен, вĕсем пĕлмĕше переççĕ.

Каç кӳлĕм аэродром юртан тасалчĕ. Сарлака çул! Асфальт сарнăн якалчĕ вăл. Трактор каллĕ-маллĕ çӳресе такăрлатрĕ ăна.

Тепĕр кунне, эпир аэродрома çитсен, командир çапла каларĕ:

– Каç юр çуман, çулсем таса. Халĕ паллăсем тавар!

– Мĕн тума? – ыйтать Варук.

– Летчика курса пĕлме. Хăш вырăнта çĕре перĕнмелле, хăш таран аэродром çулĕпе чупмалла, хăш тĕлте чарăнмалла. Паллăсем ăна пĕтĕмпех кăтартса параççĕ.

Ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр.

Самолет сасси илтĕнчĕ.

– Килет! Килет чĕкеçĕм! – кăшкăрса ячĕ Измайлова. – Хĕрсем, тăнлăр ун сассине. Ӳлĕмрен хамăр самолетсене сассинчен уйăрмалла

пултăр. Фашистсен самолечĕсен сасси пачах урăхла... Нарлатать тĕкĕлтуралла.

– Ав куранать! Курăнать! – терĕç салтаксем.

Эпĕ те пуçа каçăртрăм, янкăр уяр тӳпе, ăна та шăпăрпа шалса тасатна тейĕн. Куçăм хура пăнчă шырать. Тупрăм! Вĕçет! Икĕ çунатне сарнă халат вĕçет хаюллăн. Кайакăн тĕкĕ – çутă тенкĕ. Хĕвел пайăрки ун çине илемлетме ылтан хĕлхемĕ сапать.

Аннăçем анать. Пĕр çаврăм çаврăнчĕ аэродром çийĕн. Туртана кĕнĕн кĕрет хăйĕн картине. Çĕре перĕнчĕ, çӳлелле сикрĕ мечĕкле. Унтан татах тепĕр хут перĕнчĕ те çĕртен çатăрласа тытнăн тек уйăрăлмарĕ. Чупать аэродром тăрăх. Ун айĕн юр тусанĕ тĕрĕлтетет, çавра çил пек. Вăл чарăннăçемĕн çынсем ытканчĕç ун патне. Çунаттисенчен ярса та тытрĕç. Те çавăнпах, лăпланчĕ – çынсен утти майĕн пырать самолет.

–Хĕрсем, хавăртрах васкăр маскировка тума! – чĕнет Катя.

Вăл пире темле çыхă тыттарчĕ. Вырăна çитсен салтрăмăр – шăналăк иккен.

– Кунпа самолета витмелле, – ăнлантарать командир. Ман çав тери летчикне курас килет. Акă сиксе анчĕ.

Комбинзон тăхăнна. Вăтам пӳллĕ çын.

– Салам, Булат! – сывлăх сунчĕç ăна кунта пухăннисем.

Ăçтан паллаççĕ! Вăл пурне те алă парать.

Булат текенни пирĕн пата çывхарчĕ. Хам куç илмесĕр пахатăп. Тĕлĕннипе хытса кайнаскер, ăна хирĕç алă тăсма та мантăм эпĕ. Ăçта унта, ара, чăн–чăн çар летчикне куратăп-çке.

– Катя, сан йыш ӳснĕ-çке? – кулкалать вăл куçне ман çинчен илмесĕр. – Ну, аллуна чăмăртаттар ĕнтĕ, паллаштар.

Ал парса хам ята каларăм:

– Талюна.

– Эпĕ Булат ятлă, хушаматăм – Костин, – тет вăл. – Мана ӳлĕм те аэродром çинче кĕтсе илессе шанатăп. Эсĕ тутар хĕрĕ пулас. Çапла-и?

– Çук, эпĕ чăваш хĕрĕ.

– И-и, Атăл тăрăхĕнченех! – кулса ячĕ вăл сулахай аллипе çурăмран лапкаса. – Ентешсем, эппин.

Хăш ялтан е хуларан вăл, тĕпчеме иментĕм. Вăл Вальăна та, Варука та ала тытса сывлах сунчĕ.

Мăн кăмăллă мар курăнать ку çын. Пире самолетне шăналăкпа витме пулăшать. Хăй ман çине ăшшăн пăха-пăха илет. Куçне тартсан эпĕ тинкеретĕп вăрттăн. Аллисене вĕçертсе ĕнси çинерех шутарчĕ калпакне, çамки çине сарă кăлкан çӳç пайăрки тухрĕ. Ĕненес те

килмест, Булат ятлă çыннăн çÿçĕ кăмрăк пек хура пулмалла пек туйăнать. Пăхатап та, вăл сăнĕпе Ким манерлех.

Самолета техник-механиксем сырса илчĕç. Вĕсенчен тахăшĕ çапла ыйтрĕ:

– Булат, мĕнле унта фронтра ĕçсем?

– Ытлашши саванмалли нимех те çук, – пĕлтерчĕ вăл пуçне çĕрелле пĕксе. – Хамăрăннисем кăшт чакнă. Нимĕç Брянск патнелле чугун çул тăрăх хĕç-пашал турттарать. Ну, пирĕн самолетсем çителĕклех бомба тăкрĕç.

Булат вăрахчен тытăнса тăмарĕ, кайрĕ. Ăçта?

– Командир юлташ, самолет чăннипех чĕрĕ кайăк-и вăл? – пат! патлаттарса хучĕ Варук.

Эпир Вальăпа иккĕн хулпуççисене выляткаласа, пĕр-пĕрин куçĕнчен ыйтуллăн пăхса илтĕмĕр.

– Мĕншĕн апла шухăшлан? – тĕлĕнет командир. Вара тавçăрчĕ пулас та ахăлтатса кулса ячĕ. – Сивĕре шăнса хытасран мар, тăшман килсе бомбăсем пăрахасран витетпĕр. Фашистсем хурчака куçлă, çĕр çинче чăх чĕппи тĕршĕнсе ларнине те кураççĕ. Витнĕ самолета асăрхаймаççĕ, çÿлтен вал юр купи пек çеç курăнать.

Малтанхи вăхăтра самолетсене витмен те, хупламан та имĕш. Савна пулах тăшман пирĕн аэродромсене самантрах шыраса тупнă. Маскировкăна халĕ чи кирлĕ хĕçпашал вырăнне шутлаççĕ.

Аэродром çине тепĕр самолет анчĕ.

– Хĕрсем, ку истребительпе Гоша вĕçет. Питĕ харсар летчик вăл. Эпир унпа пĕрле... – командир шухăшне вĕçлеймесĕрех калама чарăнчĕ. Унăн пичĕ улшăннине асăрхарăм. Вăл куç умне бинокль тытрĕ те тÿпенелле пăхрĕ. Эпĕ те Имайлова пăхнă çĕрелле тинкертĕм. Ним те курăнмасть. Кăшт та вăхăт иртмерĕ, хăлхана самолет сасси пырса кĕчĕ. Темле урăхла кĕрлет. Хайхискер курах кайрăм: çута сенкер тÿпере – хура курак ушкăнĕ. «Хĕлле кураксем?» вĕлтлетсе илчĕ пуçра шухăш.

– Фашист самолечĕсем! – хыпаланса ÿкрĕ командир. – Нивушлĕ пĕлчĕç те пирĕн çĕнĕ аэродром ăçтине? Ытла хăвăрт.

Чĕрем йăшкама тытăнчĕ манăн.

Измайлова пире хăй хыççăн чупма команда пачĕ. Паян ирхине аэродром айккинче канав чавнăччĕ. Çавăнта пырса ÿкрĕмĕр. Хĕрсем пăштик-пăштик сывлаççĕ. Хăрамалла-çке.

Ку канава хамăра пытанма чавтарнине чухламан, самолета кирлĕ пулĕ тенĕччĕ.

Нихăшĕ те пуçа чикместпĕр. Сăнатпăр тÿпери çăхансене. Çÿлтех мар вĕсем, лайăх курăнаççĕ. Темшĕн ерипен, йывăррăн вĕçеççĕ хăйсем.

– Чимĕр, хĕрсем, – тет хавас сассипе командир, – фашист бомбардировщикĕсем пирĕн аэродром айккипе иртеççĕ-иç.

– Тупаймарĕç! Ур-ра! – кăшкăрать Валя.

Унччен те пулмарĕ – аэродром çине тин çеç анса ларнă пирĕн самолет сывлăша вăркăнчĕ.

– Гоша тӳсеймерĕ, – пĕлтерчĕ Измайлова.

Мĕн хăтланать ку Гоша? Вăл фашист самолечĕсем патнелле çывхарать.

– Командир юлташ, вăл пĕччен çапăçма тытанасшăн мар-и таçта? – тетĕп пăшăрханса.

– Мĕнех, тытăнать. Çав тери паттăр летчик вăл.

– Пĕччен ăçтан çĕнтертĕр пысăк ушкăна?

– Иртсе кайнă, таси паха, – мăкăртатать Варук. – Мĕн-ма вĕсене хыçран хăвалас?

– Хумошова, эсĕ йăнăшатăн, – асархаттарать командир. – Фашистсем бомба пăрахма каяççĕ.

– Ăçта?

– Тен, пĕр-пĕр ял çине. Мĕнпур ача-пăча вилет. Тен, чугун çул станцийĕ çине вилĕм тăкасшăн. Çакна пĕле тăркачах совет летчикĕ çапăçăва кĕмесĕр мĕнле тӳстĕр? Юрамасть.

Сăнатпăр. Гоша хӳрере пыракан самолет патнех çывхарчĕ. Лешĕ сисмест пулас, унсăрăн пеме тытăнмалла. Вĕсем шав малалла, пĕр тикĕс вĕçеççĕ. Хайхискер, Гоша атакăна кĕрет, вăл, хӳрере пыраканнисене ним вырăнне хумасть тенĕ пек, ертсе пыраканнине тапăнать. Çакна кĕтмен тăшман самолечĕ ним тума та ĕлкĕреймест, ăна çулăм явса илет.

– Маттур, Гоша! – савăнать Измайлова. – Аха, фашист, хăвăн бомбусем çурăлнипех пĕтен. Çав кирлĕ!

Сехĕрленсе ӳкрĕç пулас фашист летчикĕсем тинех. Ретсем арпашрĕç.

– Питĕ лайăх! Халĕ ĕнтĕ пĕрин хыççăн тепри ӳкет, – тет командир савăнăçлăн.

Тĕрĕсех. Акă вут хыпнă иккĕмĕш самолет çĕрелле ярăнчĕ, самант та иртмерĕ – виççĕмĕш, тăвăттăмĕш самолетсем тирĕнчĕç çĕре.

Хĕрсе кайна совет летчикĕ сывлăшра фашистсемпе улапла çапăçать.

Тĕрĕс-тĕкеллисем каялла çавранчĕç. Тăрса хăтăласшăн фашист бомбардировщикĕсем.

– Гоша! çăлăн! – çухăрса ячĕ Измайлова. – Фашист истребителĕсем!

Таçтан муртан килсе тухрĕç тăшманăн виçĕ истребителĕ.

– Çăлăн! Гоша, çăлăн!

Хурахлатса кăшкăрсан та çĕр çинчи çын сассине ăçтан илттĕр вăл?

Паттăр Гоша. Вăл тăшман истребителĕсемпе те çапăçăва кĕчĕ. Пĕччен виççĕне хирĕç?! Çук, вăйĕ çитмерĕ, персе анчĕ мăнтаран летчикĕ. Измайлова уласа йĕрсе ячĕ.

Хамăн та куççулĕ пит çăмартине вĕтелесе юхса анчĕ. Çапах та командира лăплантарма пикенетĕп:

– Ун пекех татăлса ан макăрар-ха. Тен, вăл парашютпа сикрĕ пулĕ.

– Ăçтан сикейтĕр, çапаçу ытла аялта пулчĕ-çке. Эх, çынни питĕ лайăхчĕ, пĕрле вĕреннĕ...

– Айтар кайса пăхар самолет ӳкнĕ çĕре, – чĕнет Варук.

– Юрамасть, эпир – постра, – ассăн сывлать командир. – Пирĕнсĕрех каякансем пур.

Кашт тахтасан эпир хамăр вырăна таврантамăр.

Кун сисĕнмесĕр иртрĕ. Хĕвел варман хыçне ансанах таврана çĕр тĕттĕмĕ хупларĕ те. Хĕвеланаç енче тӳпенелле хĕрлĕ чаршав çĕкленчĕ. Унта фронт, çапăçу. Çунаççĕ ялсем, хуласем, вилеççĕ çынсем.

Çĕнĕрен самолет çывхарна сасă.

– Пирĕн аэродрома-и? – ыйтатăп Катьăран.

– Ăçта кайччăр?

– Хĕвел анчĕ, тĕттĕмленчĕ. Тупайĕç-ши вĕсем аэродрома?

– Вăрман хĕрринчи çĕр пӳртре ларакан связистсем мĕншĕн тата? Вĕсем летчиксемпе çыхăну тытаççĕ. Çывхарать. Сигнал памалла.

Катя умлă-хыçлă персе ракета ярать çӳлелле. Тĕттĕм тӳпере йăл-л çуталаççĕ те сӳнеççĕ, çуталаççĕ те сӳнеççĕ.

Анать самолет. Ун патне техниксем чупаççĕ. Эпир вырăнтан тапранмастпăр. Самолета шăналăкпа витме хушмасть командир хальхинче. Çĕрле ахалех ним те курăнмасть имĕш.

Татах, татах йышăнтăмăр самолетсене. Катя пурсăмăра та ракета яма вĕрентрĕ. Çын тума пултарайман япала мар. Ытла тĕлĕнмелле, ракета ямасан пĕр самолечĕ те аэродром çине анма хаяймасть.

Çул çинче – самолет. Çак вăхăтра шăпах тепри таврăннă. Сигнал парать.

– Илтетĕп. Куратăп сана! Пĕлетĕп анса ларма ирĕк ыйтнине, – каласать командир ун сăмахне илтме пултарайман сывлăшри летчикпа. – Кăшт тăхта, вĕçкеле.

Ракетăн çутă хунарне кĕтсе çаврăнса çӳрет сывлăшри самолет. Акă ĕнтĕ аэродром çинчи çул пушанчĕ. Тепĕртакран Катя ракета яма хушрĕ Варука. Курчĕ пулас летчик. Аэродром ăна йышăнма хатĕр. Анчĕ.

– Ой, вăл! – вĕçерĕнчĕ Катьăн хавасла сасси. – Манан Виталик таврăнчĕ. Ур-ра! – ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр тăпăртатать хĕр.

– Мĕнле çын вара вăл Виталик, летчик-и? – кăсăкланать Варук.

– Летчик, летчик, манăн вăл, Хумошова, – кулкалать Катя. Хăй вĕçсе кайманни кăна. Командирсем те ача пек савăнма пĕлеççĕ иккен.

Кам та пулин «Мĕншĕн санăн вал?» тесе ыйтасса кĕтрĕм. Темшĕн нихăшĕ те шарламарĕ. Вăрттăнлах арчанах хупăнса юлчĕ.

Пире канма ячĕç. Самолетсем те вĕçсе килмеççĕ. Çĕрлехи тĕттĕм чăрмантарать.

Командир юлчĕ. Мĕншĕн? Кунтах çĕр каçать-ши?

Виççĕмĕш пайĕ

1

Симĕс çулçăллă туратсемпе, чечек кăшăлĕсемпе илемлетнĕ хĕр салтаксене лартнă пуйăс çула тухрĕ. Пĕр разъездра та чарăнса тăмасăр иртмест вăл. Ара, кашни çĕртех анса юлакансем пур-çке. Темиçе кун, темиçе çĕр кайсан-кайсан пирĕн те черет çитрĕ. Пуйăс тăван Чăвашри пысак станцана – Канаша чашлаттарса пырса кĕчĕ те хăвăртлăхне чакарса майĕпен чарăнчĕ.

Кантăкран пăхса пынăскер курах кайрăм: икĕ хĕрарăм пирĕн вакун алăкĕ уçăласса кĕтсе тăраççĕ. Аллинче – тĕрĕллĕ ал шăллипе витнĕ чĕрес. Тен, анне? Чарлаттартăм куçăмпа. Çук иккен. Кусем – палламанскерсем.

Эпир Варукпа хамăр чăматансене йăтса вакунран тухрăмăр.

– Çĕнтерӳпе!

– Киле çитнĕ ятпа ырлăх-сывлăх сунатпăр! – саламларĕç те хайхи хĕрарăмсем пире сăра тултарнă алтăр тыттарчĕç. Сăраран аслă пулма хушман. Активсе пама тиврĕ. Сăри – тутлă-тутлă.

Ытти станцисенчи пекех иртме çук халăх хĕвĕшет. Пурте фронтран таврăнакансене кĕтсе илме тухнă ĕнтĕ. Тепри-тепри курасшăнах ятарласа килнĕ тен.

Сăрапа хăналакансенчен пăрăнтăмăр кăна, çывăхрах купăс тăсса ячĕç. Шăранать ташă кĕвви – «Цыганочка». Çынсем самант купăççă тавра карталанса тăчĕç. Çийĕнчех пĕр çăмăлчăк хĕр салтак сиксе тухрĕ те тытанчĕ хуçкаланма. Тапăртатать кăна, кăкăрне те чĕтрентерме пĕлет мур илесшĕ.

Эпир те вăйă картине пырса тăтăмăр. Шартлаттарса алă çупни чугун çулĕ тăрăх ян-ян! каять. Хăватлă кĕвĕ-çемĕ ман çумра тăракан Варук ăшне те асамлă туйăм вĕрсе кĕртрĕ-ши, тусеймерĕ вăйăç умне тухмасăр.

– Линкка-линкка! – те хушрĕ, те ыйтрĕ вăл. – Хамăрла ташлар-ха пĕрре!

Купăсçăн пӳрнисем вылянса илчĕç. Ачашшăн юхать чăвашсен авалхи ташă кĕвви. Тур çырлах! Кам улăштарчĕ Варука! Эпĕ ăна паллаймастăп, тупата. Эх, епле авкаланать: йăкăш-йăкăш шукалать, йăпăр-йăпăр чупкалать. Алли, шăмăсăр пекех, кайăк çунатти евĕр авăсанать. Пултарать иккен хамăр ял хĕрĕ – фронтри çывах тусăм.

– Талюна, тух! – кăчăк туртать Варук. Унччен те пулмарĕ, темиçе çамрăк йĕкĕт чупса пычĕç те ман пата сĕтĕрме тытăнчĕç вăйăç умне.

– Хĕр герой ташлатăр! – шартлаттарса алă çупать халăх. Хăтăлса юлма май çук. Мĕнех? Ма ташлас мар, ма савăнас мар? Эпир вăрçă тамăкĕнчен çăлăнса тухнисем-çке.

Вăйăç умĕнче çавăранкаласа тапăртатна чух пăравус кăшкăртрĕ. Вокзал умĕнчи йĕс шăнкăрав сас пачĕ. Пуçланă ташшă вĕçне çитереймерĕм. Малалла каякансем хăйсен вакунĕсем патнелле ытканчĕç.

Эпир Варукпа перронпа утрăмăр. Ярса пусмассерен пирĕн кăкăр çинчи орден-медальсем касите тенкисем евĕр чанкăртатаççĕ. Сисетпĕр-ха: пире кашни ытарайми сăнать.

– Ăмсанаççĕ, – йăпăштин кулса илет Варук пуçне çамрăксем енне сĕлтсе.

– Хăв курнăçланатăн та, – йĕплетĕп ăна. –Ав мĕнле каçарăлса пыратăн.

Çак самантра куçăмсем ватă кинемей çине ӳкрĕç. Пуçне тутăр-сурпан çыхнăскер пирĕн çине тинкерсе пăхать. Тутине кăвак юн тымарĕсемлĕ аллипе хупланă. Чунăм карт! турĕ.

– Э-эй, çырлах! – икĕ пĕççине шарт çапрĕ кинемей. – Ара, эсĕ ман кин Талюна пулмарăн-и?

Эпĕ те ăна палласа илтĕм. Ким амăшĕ. Чупса пырса ыталарăм.

Ким амашĕ «кин» терĕ. Анчах эпĕ ун ывăлĕн арăмĕ пулма ĕлкĕреймерĕм çав, ӳлĕм те пулаймастăп. Пирĕн хушăра сиксе каçма çук пысак хӳме карăнчĕ.

Нăш-нăш ĕсĕклет карчăк. Пĕркеленнĕ пит çăмартисем тăрăх савăнăç куççулĕ тумламăн-тумламăн йăр-йар юхса анать. Ăшри çăлкуçĕнчен тапса тухнă тумламсем тĕксĕмленнĕ куçĕсене çуса тасатса

çĕнĕрен вĕр çĕнĕ тĕс кучĕç-тĕр. Унсăрăн самант йĕпкĕн хурăн курăнса йăлтăртатмĕччĕç.

Ким амăшĕ чарăнайми пуплет, куçне ман çинчен самант та илмест хăй. Пурне те асăрхать: сăнăм та ӳкнĕ, ытла шуранка имĕш эпĕ. Эх, мăнтарăн амашĕ. Тепле тĕпчесен те сана чунăма уçса параймăп, ирĕксĕрех ывăнни çине йăвантаратăп.

Карчăк мана хăйпе илсе каясшăн чĕнет, тилмĕрсех ӳкĕтлет. Ывăлне кинĕпе пĕрле кĕтсе илесшĕн вăл. Ытла аванччĕ те, анчах... «Анчах» пурри пĕтерет çав. Ким та, çĕрпе витĕннĕскер, чĕрĕлсе амăш патне таврăнаймĕ. Сывă пурăнать пулсан мĕншĕн ан çыртăр пĕрре те? Эпĕ те текех Ким амашĕ вăрçа тухнă кун курнă хĕр мар ĕнтĕ.

Пушă сăмахсемпе ăсатрăм Ким амăшне.

Вокзалта пĕр кĕтес тупса вырнаçрăм. Варука кĕтетĕп. Ăмсанатăп юлташăма: ăна савнă каччи Çемьян кĕтсе илме тухнă.

Шăп ларнă самантра тем те пĕр аса килет, таçта та çитен. Пулни-иртни явăнать пуçра, ӳлĕмхи тĕрленет. Эпĕ килте пек, аннем ыталать мана. Шухăшăмсенчен сасартăк репродуктортан тухакан диктор сасси уйăрчĕ. Мĕн япала? Чиперех ман ята асăнать. Çапла: «Талюна Итемри, сана юратнă упăшку – Ким Шуруков – вăрçă пĕтнĕ ятпа хĕрӳллĕн саламлать! Тĕл пулас куна чун-чĕререн кĕтет. Йышăн мăшăрун музыка саламне!» – сĕнет диктор. Çавăнтах «Шупашкар туйи шурă туя» юрă юхма тытăнчĕ. Яш! сиксе тăтăм. Тĕлĕннипе чун-чĕрем хытрĕ. Пуç çаврăнса кайрĕ, чутах тĕшĕрĕлсе анаттăм. Пит-куçăма йăпăр-япăр алăпа хупларăм, тăтăм вара пĕр кана çапла хытса. Сасартăк, темшĕн, тӳсмелле мар хĕпĕртесе ӳкрĕм. Эппин, Ким сывă. Ур-ра! Кун çинчен хăвăртрах амăшне пĕлтермелле. Çак туйăм мана вокзалтан çавăтса тухрĕ, уялла ĕрĕхтерттерчĕ. Ниме уямасăр чупатăп Ким амăшне хуса çитесле. Паçăр иксĕмĕр уйралнă тĕле çитрĕм. Вăл ĕнтĕ çук текех кунта. Эпĕ килессе пĕлнĕ пулсан-и? Виçĕ кун та виçĕ çĕр пĕр тапранмасăр кĕтетчĕ вăл. Ак япала, мĕн амакĕ, пуç çаврăнать. Утаймастăп. Кăмăл пăтранса килчĕ, лĕклентерет. Пĕтĕм ăш хăпарать. Пиçиххи тăхине йăпăр-япар вĕçертрĕм. Хăстарчĕ, хăстарчĕ... Вара çул хĕрринчи курăк çине перçе антăм та тытăнтăм ӳлеме. Татăлсах йĕретĕп. Хама хĕрхенсе пулас. Пурнăçăма хамах пăсрăм-ши вара? Чăнах çапла-ши? Унта, фронтра, Берлин çине вĕçме хатĕрленнĕ самантра, Булата хирĕçле сăмах калама пултараймарăм эпĕ. Пысак савăнăç чун вăйне ӳстерет. Пирĕн вара ун чух, манăн та, Булатăн та, нихăçанхинчен те хастар, паттăр, çирĕп хавхаланупа хĕмленсе тăмаллаччĕ. Тепĕр тесен, эпĕ ăна юратман та маар-çке. Ун пек маттур, чипер летчик упăшка тупас пирки мĕнле хĕр ĕмĕтленмĕ? Булата качча тухма сăмах патăм. Тен, пире пулас телейлĕ,

илĕртуллĕ мăшăрла пурнăç тăшман хăйĕн йăвинчен пĕрхĕнтерекен вут-хĕм витĕр тĕрĕс-тĕкел çăлăнса тухма та пулăшрĕ-тĕр.

Ким вара мĕнле? Вăл шаннă кайăкне йăвинче тупаймасть-çке. Мĕн тери шел. Айăплă эп ун умĕнче, айăплă! Унăн таса юратăвне упраймарăм. Чим-ха, мĕншĕн эпĕ айăплă-ха? Йăлтах тискер вăрçă муталарĕ пирĕн пурнăçа. Тискер вăрçă.

Темĕн чухлĕ йăваланса йĕрсен те иртни хĕвел пулаймĕ, шурăмпуç хыççăн тӳпене çĕкленсе хăйĕн ылтăн шевлине ман çине сапалаймĕ.

1989.

Ева Лисина

АРÇЫН ХĔВЕТУРА

Калав

1

Кун хĕрсе кайнă. Сывлăш шурă çулăм евĕр вĕлтĕртетет.

Ял хушшинче никам та курăнмасть. Хушăран çеç йывăççем айĕпе хĕвелпе пиçнĕ ӳт ялтраса илет. Вĕри сывлăш çулçăсене сас кăлармасăр чӳхентерет.

Шăпланнă урампа сарлака шăмшаклă лутра çын утса пырать. Вăл саплăклă шăлаварпа хуралса-якалса пĕтнĕ фуфайка тăхăннă, шупка тутăр çыхнă. Вăл васкамасăр утать, уçă çĕрте, хĕвелрен сыхланса, куçне хупăрлать.

Вăл чарăнса тăчĕ, пĕр аллине чĕри тĕлне тытрĕ, тепринпе карарах ярса илчĕ. Кăштахран пуçне çĕклерĕ. Сăнĕ унăн – çунса–çурăлса выртакан тăм çинче темле майпа сыхланса юлнă икĕ сенкер тумлам пек.

Çак çынна «Арçын Хĕветура» тесе чĕнеççĕ. Вăл колхоз лашисене пăхать.

Хĕветура хуллен – çӳхе пăр çийĕпе çырма урлă каçнă евĕр – çывăхри çурт умне пырса ларчĕ: «Мĕнле курăнăç ку...» Вăл çӳç пайăркине тутăрĕ айне тирпейлесе чикрĕ те, ку тĕнче чăнах та мĕнлине пĕлес тенĕн куçне хĕссе, малалла тинкерчĕ.

Шурăхнă сĕмлĕ кас вĕçленет те, талккăшпе сенкер кĕрен тĕссем пуçланса каяççĕ: вăрманлă тусем тĕтреленсе тăраççĕ. Кунтан курăнмасан та, çумра аслă шыв пурри сисĕнет: сывлăш юхăмĕсем ун енне туртăнаççĕ. Атăл... Хĕветура ун шывĕпе юлашки хут хăçан çăвăннине те астумасть... Çынсем вара аякран, ятарласах, çакăнта килеççĕ...

Хĕветура хăй хыçĕнчи çурт енне çаврăнса пăхрĕ. Акă, кану çурчĕ... Хĕветура кĕсйине хыпашларĕ, туртмалли кăларчĕ. Хаçат çурса, чикаркка чĕркерĕ.

Айккинчен пăхсан, çак çын шухăша путнă темелле. Çук, Хĕветура ĕшеннĕ çын евĕр пĕр шухăш-туйăмсăр ларчĕ. Чикаркка кĕлĕ унăн шăлаварĕ çине татăла-татăла ӳкрĕ.

Вăл, ача сассине илтсе, вырăнтан хускалчĕ.

– Халь эс – ман анне... Эс анне пек сенкер кĕпеллĕ, – терĕ хĕрача сасси.

Хĕветура карта хушшипе пăхрĕ. Пилĕк-ултă çулхи хĕрача улах вырăна, улпут хăвисен айне, ларнă та пуканене сенкер кĕпе тăхăнтартать.

– Ман анне эс... «Ленук, Ленук» те! – хĕрача, пуканен аллине сарса, хăйне мăйран ыталаттарчĕ.

– Атте патне чипер инке килнĕ. Анне куçне каллех сухан кĕнĕ. Анне! Анне!.. – хĕрача пуканен куçне шăлчĕ.

Алкум умне йăмăх хĕрлĕ кĕпе тăхăннă çамрăк хĕрарăм тухрĕ.

– Леночка!

Хĕветура салхуллăн кулса илчĕ. Çакăн пек йĕпкĕн хура çӳçлĕ, кĕрен питлĕ ĕлккен хĕрарăмсем Хĕветурана хăй пурăнакан çĕр çинче мар, пачах урăх тĕнчере пурăннăн туйăнать. Çавăнпа ку илем ăна ăмсантармасть те, савăнтармасть те. Чуна çеç салхуллă та ырă. Хĕветура, йăвашшăн кулса, хĕрача чупса тухасса кĕтсе тăчĕ.

Кĕтнĕ пек пулмарĕ, çавăнпа Хĕветура хĕрача енне пăхрĕ. Лешĕ темшĕн аллине тăснă пулнă, халь çаплах, мелсĕррĕн, хытса тăнă, пуçне çеç алкум енне пăрнă та çавра куçĕсене сиктермесĕр пăхса ларать.

«Хĕрачу кунта пытаннă» тесшĕнччĕ Хĕветура, анчах та каласа ĕлкĕреймерĕ: хĕрарăм варт! çаврăнчĕ те каялла кĕрсе кайрĕ. Самантран пӳртрен çӳллĕ те патвар арçын тухрĕ...

– Леночка!

Йăм-йăмăх тĕмсене хуллен сире–сире, хĕртнĕ кирпĕчрен сарнă сукмак çине хĕрача тухса тăчĕ.

– Çывăхарахкил!

Лена пуçне çĕклемесĕр шит тăрăшшĕ утăм турĕ.

– Çывăхрах!

Хĕрача аялти картлашка умне çитрĕ.

– Çĕкле пуçна!

Хĕветура инкене хĕрачан пӳрне хулăнăш шурă çивĕчĕсем чĕтрене-чĕтрене çурăм çине шуса анни курăнса тăчĕ.

– Аннӳ чĕннине илтрĕн-и?

– Илт...рĕм...

– Хирĕç мĕнле чĕнмеллеччĕ?

– Анне...е...çĕм...

Шала кайнă хурлă сасă Хĕветурана пăлхатса ячĕ. Вăл, алăка уçса, картана кĕчĕ.

Пӳртрен паçăрхи хĕрарăм тухрĕ, Хĕветура çине вĕлт! пăхса илчĕ те йăл кулчĕ, юрланă евĕр çепĕç калаçса, çĕре анчĕ.

– Кур-ха, ашшĕ! Пирĕн ача мĕнле кĕпепе çӳрет! – терĕ вăл, хĕрачан пĕчĕкленсе юлнă сенкер кĕпи çине кăтартса.

Ашшĕ те кулса илчĕ.

– Аçтан туртса кăларнă вăл ку кĕпене?

– Теттисен хушшине пытарса килнĕ. Леночка, пепкем, хыв часрах кĕпӳне. Хĕрлине тăхăнтартам. Хĕвеллĕ кун кам çӳретĕр тĕссĕр тумтирпе? Паян пурте хĕрлĕ, кĕрен тум тăхăнаççĕ. Кил, пирĕштийĕм...

Хĕрача каялла чакрĕ, малтан амăшĕн кĕпине, унтан ашшĕнне, çак кил-çурта йĕркелесе тăракан Алтюк инкен тумне тинкерчĕ, аптăраса, йĕри-тавра пăхса илчĕ. Тинех вăл Хĕветурана асăрхарĕ, вара ним тăвайман енне пӳрнипе унăн хура фуфайкине тĕллерĕ, аслисен сăмахне темшĕн чăна хума пултараймасăр, çав вăхăтрах хăй те тĕрĕс мар каланине пĕлнĕрен мĕскĕнле кăшкăрса ячĕ:

– Çак инкен кĕпи сенкер!

Ахăлтатса кулса ячĕç. Хĕветуран чун-чĕри ятланă-кӳрентернĕ чух такам хĕрхеннĕн çемçелсе кайрĕ. Вăл шăрăхпа пиçнĕ курăк евĕр хуллен хĕрача енне тайăлчĕ, анчах та Вадим Андреевичăн куçĕпе тĕл пулчĕ те каялла тӳрленсе тăчĕ. Вадим Андреевич Хĕветурана сăнаса пăхрĕ. Вăл сăнанă май, Хĕветура хăйĕн çипуçне такам сенкер тени, чăнах та, кулăшлине, пушмакĕн кĕлисем çийĕннине, хăйĕнчен вите шăрши кĕнине туйса тăчĕ. Ун ал лапписем тарласа кайрĕç. Вадим Адреевич, хаклă ыйтакан япалана йӳнĕ хунă пек, кулса ячĕ. Хĕветура хăйне шар çутă варрине лекнĕ чĕрчун пек мĕскĕн туйрĕ, пăлханса ӳкнĕскер, васкаса каялла тухрĕ...

2

Вăл килне çитрĕ те çумăр хыççăн хытса ларнă картлашка çине ларчĕ. Пушмакне хыврĕ, тăртаннă урисене, пӳрне хушшисене сăтăркаларĕ. Куçне хупрĕ, пӳрт çумне таянчĕ. Шăмшака лăштăр ярса, пĕренесенчен ăшă çапать. Пуç çаврăна-çаврăна каять. Хĕветурана ĕнерхи ĕç, аташтарса, тĕлĕк пек курăнать.

Вăл урама тухрĕ. Унта кӳршĕсен хĕрĕ, Надя, калаçса тăратчĕ. Ăна хĕрарăмсемхупăрласа илчĕç, хĕрхенчĕç. Хĕветуран тутти-çаварĕ типсе ларчĕ, вăл нимĕн те чĕнеймерĕ. Çакăншăн кӳренчĕ те Надя: «Сан ăшунта чĕре мар, чул пуль», – тесе хучĕ. Хĕветура лашасене вĕри кĕл пек тусанлă çулла хăваласа кайрĕ. Чул пек касать хулпуççине пушă, чĕрене туртать.

Хĕветура пуçĕ ланк! кайнипе вăранчĕ. Усĕр çын пек тайкаланса, лупас енне утрĕ. Унтан çăмарта илсе анчĕ. Каллех картлашка çине майлашрĕ. Çăмартине чĕрĕлле ĕçсе ячĕ, çăкăрпа хăяр чăмларĕ. Аллипе пӳрт пĕренине тĕрĕнсе, ура çине тăчĕ, карлăк çинче ларакан витрере лĕпленсе кайнă шыв ăсса ĕçрĕ. Ирхине пӳрт алăкĕ уçах юлнă иккен, шала чăх-чĕп кĕрсе юлнă. Хĕветура вĕсене, çуйхаштарса, хăваласа кăларчĕ, иртенпех пуçтарман вырăнăнçиттине илнĕ чух тусан вĕçтерсе, вырăн çине тӳнчĕ…

* * *

Хăш чухне Хĕветурана такам унăн мĕнпур кунĕсене яланлăхах пĕр пек тумалла ăрăмласа хăварнăн туйăнать. Акă, вăл вăранчĕ, уншăн ĕнерхи пек, эрне каялли пек кун пуçланчĕ. Вăл пӳртрен тухрĕ, питне йĕпетсе илчĕ, пĕри пĕр çĕрте, тепри тепĕр çĕртевыртакан пушмакне тупса тăхăлчĕ. Йăлашăн çеç тенĕ евĕр апатланчĕ. Кĕсйине çăкăр чĕлли илсе чикрĕ те витене кайма тухрĕ.

Урамра вăл кашни ир самантлăха чарăнса тăрать. Сулхăн. Тавралăх таса тĕкĕр çинчи сăн евĕр уçă. Хăш-пĕр йывăçсем çине пĕчĕк-пĕчĕк тĕкĕрсем çакса хунăн туйăнать: çиçеççĕ çулçăсем. Вăл йăлăм енне пăхать: çутçанталăкра вĕçсĕр уяв тăнă пек. Хĕветурана çак самантра яланах хавхалану çавăрса илет: ăшра темле вăй вăраннăн, паянтан пĕтĕм пурăнăçулшăнассăн туйăнать.Туйăнать çеç... Кăштахран каллех сӳрĕклĕх парăнтарать.

Хĕветура кану çурчĕ енне анчĕ. Ăна ĕнерхи хĕрача аса килчĕ. Тĕлĕннипе вăл чарăнса тăчĕ: пăхăнтарма ĕлкĕрнĕ ĕшенчĕк тепĕр хут сирĕлчĕ. Хĕветура каялла çаврăнчĕ те чупнă пекех килне пырса кĕчĕ, çипуçне сенкер пусма кĕпепе улăштарса тухрĕ, анчах та хăйĕнчен хăй именсе кайнипе çиелтен саплăклă фуфайкине тăхăнчĕ...

3

Канма килнĕ Андреевсен хĕрачипе Хĕветура çапла, ăнсăртран, паллашрĕ. Паллашрĕ çеç мар, туслашрĕ те унпа. Лена ăна хирĕç чупса тухакан, ăна кĕтсе тăракан пулчĕ.

Ленăпа паллашнă хыççăн эрнерен пĕр каçхине Хĕветура чие татса пуçтарчĕ. Унтан вăл çăвăнчĕ, çӳçне уçрĕ. Вăл паян питĕ ерипен, аслă ĕçе пуçарăнас умĕн хăйне лăплантарас, пусарас тенĕ евĕр, ĕçлерĕ. Йывăррăн тĕпелти арча патне утса пычĕ. Ун умне чĕркуçленсе ларчĕ. Ăна уçса, шурă пӳспе чĕркенĕ çыхă кăларчĕ. Çыхă ăшĕнчен пĕр купа çыру, пурçăн кĕпе тухрĕ. Çырусене вăл каялла чĕркесе хучĕ, кĕпине илсе, тĕкĕр умне пычĕ. Хĕр чухнехи кĕпе... Тӳпепе çĕр илемĕ: сенкер çинче улмуççи çеçкисем... Хĕветура вĕр-çĕнĕ пушмак тăхăнчĕ, шурă тутăр çыхрĕ. Пĕр чĕрес чие илчĕ те Лена патне тухса утрĕ.

Те çăвăнса тасалнăран, те пурçăн кĕпе варкăшса пынăран ӳт-пӳ анлăн сывланă пек туйăнать.

Хирĕç пулакансем: «Мĕн пулнă ку арçын Хĕветурана?» тесе пăхса юлчĕç.

Çăмăллăн пырса кĕчĕ вăл кану çуртне.

– Ăçта каян эс çапла? – тĕлĕнчĕ Альтюк инке.

– Лена валли чие илсе килтĕм, – терĕ именчĕклĕн Хĕветура.

Альтюк инке ăна çаплах, аптăраса кайса, тинкерчĕ, пуçĕпе пӳрт енне сулчĕ.

– Роза Семеновна хăй те юрăçă та, ачине те, ав, кĕвĕ итлеттерет. Атя, кайса ларатпăр.

Уçă ир чечек çине тумлакан сивĕ тумлам пек хурлăхлă çемĕ асăрхануллăн, амантасран сыхланнă евĕр, чуна ирĕке кăларать .

Элекçейĕн ыран вăрçа тухса каймаллаччĕ, хăй вăл вăрман каснă çĕртен таврăнманччĕ те-ха. Хĕветура çенĕкри чаршав ăшĕнче маччана пăхса выртрĕ. Темиçе хутчен ăна алăка шакканă пек туйăнчĕ, вăл картана чупа-чупа тухрĕ. Никам та сас памарĕ. Юлашкинчан, чăнах, шаккарĕç. Хĕветура çаруранах сиксе тухрĕ. Юр евĕр тăм ӳкнĕччĕ. Уйăх пушă пахча варринче тăр-пĕччен ларакан лапсăркка хĕвелçаврăнăшне аса илтерчĕ. Хĕветура хапхана уçрĕ те Элекçей ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Хыр шăрши çапнă алăсем ун çара урине кĕрĕк аркипе чĕркерĕç...

Çук, юратура çепĕç те илемлĕ пулнипе çеç мар, юратнă çыннунтан ĕмĕрлĕхех уйрăлас хăрушлăх пур чухне хăюллă та пулмалла-мĕн. Мĕншĕн, унсăр пуçне нихăçан та, никама та юратас çуккине пĕле тăркач, мĕншĕн каламан-ши: «Элекçей, хĕр ĕмĕрĕ çак каçшăн пултăр». Юлатчĕ асăнмалăх чуна ирĕлтерекен ытам, кĕленче пек таса ӳте, çивĕтсен ялтравне тӳрре кăларакан ытам...

– Мĕн ахлатан? Шăлу ыратмасть пуль? – ыйтрĕ Альтюк инке.

Хĕветура инке, хăйне хĕвел çапнăран хӳтĕленĕ пек туса, аллипе питне хупларĕ.

...Пулчĕ тамăк каçĕ...

Вĕсем хăйсен ялĕнчен вунă çухрăмра вăрман касатчĕç. Çавăн чух Элекçей вилни çинчен хыпар çитрĕ. Хĕветура çакна ĕненмерĕ, вăл Элекçей амăшĕ патне кайса килесшĕн пулчĕ. Ĕç хыççăн тухсан та, çĕрĕпе утсан, ирччен каялла таврăнма пулать. Çакăн пирки калаçса татăласшăн вăл пуçлăха шырарĕ, тупаймарĕ. «Эрех шырама кайнă пуль. Вăл киличчен эс каялла çаврăнма ĕлкĕретĕн», – терĕç пĕрле ĕçлекен хĕрсем.

Юратнă çын çĕр çинче çук пулсан, таврари илем ырату кӳрет-мĕн: йĕпе çĕр çумне чăлханса ӳкнĕ хура-хăмăр курăксемпе тарăн

çырмасен сĕмлĕхне сирсе, хĕмленекен йывăçсен тĕлĕпе Хĕветура ĕсĕклесе чупса иртрĕ. Каç пулсан, вăл вăрман хĕрринчи хире сиксе тухрĕ те хăйсен пуçлăхне куçпа куç тĕл пулчĕ.

Хĕр сăмахне итленĕ май пуçлăх енчен енне сулкаланса тăчĕ.

– Лар! Шухăшласа пăхас пулать! – тĕртрĕ вăл хĕре çĕрулми аврин купи çине. Хăй, çĕрĕшнĕ хура авăрсенчен тусан кăларса, лаш! кайса ларчĕ.

Хутаççинчен вăл эрехпе сысна çăвĕ кăларчĕ.

– Таратăн апла? Çынсем вăрçăра юн юхтараççĕ, эс тарса çӳретĕн? Дезертирство! – пуçлăх кĕленчерен эрех сыпрĕ, сысна çуне, ниепле те çыртса илейменрен, шăлĕпе енчен енне тăпăлтарчĕ.

– Ĕç! Эс пуçлăхсене те хисеплеме вĕренсе çитмен-и? Вĕренес пулать! Атту яла каяймастăн! – вăл елпĕрсе кулса ячĕ, ни вилĕ, ни чĕрĕ ларакан хĕрĕн пуçне çĕклерĕ те кĕленче тутине ун çăварне чикрĕ, кĕленчене тĕпĕнчен çĕклерĕ. – Ничево! Ничево! ĕç! – чыхăнса кайса, куççульне шапăртаттаракан хĕре вăл çурăмран шаккарĕ.

– Аннӳ пур-и? Ватă пуль? Шел карчăка! Шел! Конешнă, ватлăх кунĕнче хĕрĕ çапла намăс кăтартасса тĕлленмен вăл... – кĕленчере эрех пăкăртатрĕ.

– Мĕ-ĕн? Эс ĕç хыççăн çеç тухнине хĕрсем пĕлеççĕ? Пĕлетĕн-и эс: дезертире хӳтĕлекенсене совет влаçĕ мĕнле статьяпа айăплать? Пĕлместĕн? – вăл хĕр енне çаврăнчĕ. – Чипе-е-ер... Чипе-е-ер... – хĕрĕн чĕркуççинчен тытса силлесе илчĕ. – Ан хăра! Час каян яла! – сиксе тăнă хĕре, ун аллинчен тытса, каялла туртрĕ.

Хĕветура пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чăмăртанса, хутланса ларчĕ.

– Чипе-е-ер... – пуçлăх сăран пиншакне хыврĕ, çаннине тавăрчĕ. – Шел чипер хĕре... Пĕлетĕн-и, мĕн вăл çар трибуналĕ? – вăл пырне пӳрнипе сĕрсе илчĕ.– Хăвăн çăлăнăçу çеç мар, аннӳпе юлташусен пурăнăçĕ те халь санран килет...

Пуçлăхăн куç шурри хĕрелсе кайрĕ, юн тымарĕсем хăпарса тухрĕç.

Вăл сăран пиншакне купа çине сарса хучĕ. Пушă кĕленчене пуç урлă ывăтса ячĕ те сысна çăвĕпе лапăртаннă пӳрнесем хĕвел çулĕ евĕр çуталса выртакан çивĕте ярса тытрĕç. Хĕветура кăшкăрса ячĕ, ура çине сиксе тăчĕ. Анчах та хăйне ураран тапнипе, йĕпе йăран çине тăрăнса анчĕ.

Лапсăркка пĕчĕк тĕм, хĕрлĕ çырлисем çинче шăрçаланса тăракан тумлама тумлатса, хумханчĕ, чĕтренчĕ...

...Вăл яла каймарĕ, каялла таврăнчĕ. Элекçей вилнине, никамран ыйтмасăрах, ĕненчĕ.

Ăнланайми улшăну пулса иртрĕ Хĕветурашăн. Çак каç уншăн çутăпа сĕмлĕх хушшинчи чикĕ вырăнне пулчĕ. Хăйне халиччен çутă тĕнчинче усранă чеченлĕхпе тасалăх ишĕлсе анчĕ те, ачаш сасăсен, ĕмĕтсен тĕнчи уншăн инçете ют пулса тăчĕ. Вăл сĕмлĕк тĕнчине куçрĕ. Çав кунтанпа Хĕветура намăс-ирсĕр сăмахсемпе каласа пуçларĕ. Ăна «Арçын Хĕветура» тесе ят пачĕç. Каçсерен, пуçлăх патĕнчен тухмассерен, вут куписем хушшинче танкăлтатса çӳренине кура, «Ухмах Хĕветура» та терĕç.

Амăшĕ, Хĕветура яла таврăнсан, тӳлеклĕ хĕрачи вырăнне, кăмрăк пек пит-куçлă хĕрарăма курчĕ те сăх сăхса илчĕ, хĕрĕн каласăвне илтсен: «Хĕветурана шуйттан ернĕ пуль»,– тесе йĕрсе ячĕ...

4

...– Турă пур! – терĕ Хĕветура пĕр кунхине. – Турă пур!

Чăнах, кĕтрет ку: тискер каç Хĕветурашăн шап-шурă çӳçлĕ, кăвак куçлă хĕрача пулса çаврăнчĕ. Хĕветура, куçне шăлса, пĕрре ача çине, тепре йывăçсен юнăхланнă çулçисем çине пăхса, пăшăлтатрĕ: – Турă, эсĕ пур...

Вăл пĕр япалана ăнланчĕ: çак ача çуралман пулсан, йĕпе хура каç ăна ĕмĕрĕпе асаплантарнă пулĕччĕ. Акă, çуралчĕ те вăл, этем, чуна хурапа хупăрланă каça пĕтĕмпех сирĕлтерчĕ.

...Вăл лаша витинче ĕçлеме пуçларĕ. Амăшĕ чирлесе ӳкрĕ те, Хĕветура витене пилĕк уйăхри ачине йăтсах кайрĕ. Вăл кĕрхи пусă çине сапаланнă лашасене хăвалама тухрĕ. Чикĕ енчен пĕр юланут вĕçтерсе килет. Кӳршĕ ялăн хуралçи пулас. Вăл лашасене тытса кайсан, каялла тӳлесе илме çурта сутмалла пулĕ. Калча çийĕпе ача йăтса чупма хĕн. Хĕветура вăр-вар фуфайкине хыврĕ, ăна çил арманĕ çумĕнчи çерем çине сарчĕ те ачине çакăнта хучĕ. Хăй вара çарамасах чикĕ енне чупрĕ. Лашасене хуралçă умĕнченех çавăрса, илсе килчĕ. Ачи патне чупса пычĕ те вут тивнĕ лĕпĕш пек çĕре ӳкрĕ, ăнланчĕ: тĕнче хуçи – сехмет. Ача, тапалана-тапалала, кипкепе фуфайкăна сирнĕ те шăн çĕр çине тухса ӳкнĕ. Хĕветура кĕпе тӳммине вĕçерчĕ, ачана хăй ӳчĕ çумне пăчăртарĕ, çиелтен фуфайкине тăхăнчĕ, вăрăм калчапа чăлхана-чăлхана, лашасене вите енне хăваласа чупрĕ...

...Икĕ кунтан Хĕветура ачасăр тăрса юлчĕ. Масар çинчен аннă чух урамра хĕрарăмсен ушкăнĕ тăратчĕ. «Çынсем вăрçăра, ку вунçиччĕре ача туса пачĕ, ачишĕн йĕмест те вăл, ав, танкăлтатса пырать. Мĕн калăн: арçын Хĕветура...» – терĕ пĕри.

Хĕветура, мăй сыпписене шăтăртаттарса, аран-аран çаврăнса пăхрĕ. Умма ачан улмуççи çеçки тĕслĕ пит-куçĕ тухса тăчĕ. Хĕветура йынăшса ячĕ, хăйсен килкартине чупса кĕчĕ, лупас хыçĕнчи утă çине тӳнчĕ те шалтан хăрушшăн каплана килекен сасса путарасшăн çăварне утă персе чикрĕ...

...Пуçланчĕç пĕр пек кунсем, пĕрешкел çулсем. Пурăнăç çине вăл тăлăха юлнă ача тепĕр ачана тăван ашшĕ-амăшĕ епле ачашланине пăхса тăнă евĕр пăха пуçларĕ...

5

– Каяс... Чиене Ленăна пар...

Хĕветура лăпкă пулма тăрăшрĕ. Анчах та вăл, шухăш-туйăм тĕнчине хускатмасăр пурăнма вĕренсе çитнĕскер, кăштах сĕртĕнчĕ те иртнĕ çулсене, халь – чылайччен читлĕхре ларнă кайăк, ирĕке тухса, урăм-сурăм вĕçнĕ евĕр – пăлханса кайрĕ.

Вăл сăрт çине чупса хăпарчĕ, килне кĕчĕ, каллех арчаран шурă пӳспе чĕркенĕ çыхха туртса кăларчĕ. Ăна салтса, икĕ-виçĕ шит тăршшĕ кĕпене алла тытрĕ. Хĕветура куçне хупрĕ, кĕпене чирлĕ ачана чуптунă евĕр чуптурĕ. Кăкăр сĕчĕн шăрши кĕнĕ пекех туйăнчĕ ăна... Кĕпене шурă пӳс çине хучĕ. Çыру купине çыхнă хĕрлĕ хăйăва салтрĕ те çиелти çыруне уçрĕ. «Пĕртен-пĕр юратăвăм...»

Хĕветура каллех урама сиксе тухрĕ, кану çурчĕ енне чупса кайрĕ...

* * *

Вăл кас вĕçне тухрĕ çеç, Андреевсене тĕл пулчĕ.

– Эпир шăпах сирĕн пата çул тытнăччĕ, – терĕ Вадим Андреевич. – Эпир икĕ-виçĕ кунлăха хулана каясшăн. Леночкăна сирĕн пата хăварма çук-ши, терĕмĕр.

Малтанах Хĕветура ăнланмасăр пăхса тăчĕ, унтан ăшталанса ӳкрĕ. Паллах... Паллах... Мĕншĕн икĕ-виçĕ кунлăха çеç?.. Вĕреннĕ çынсен ĕç йывăр, мĕншĕн канмалла мар вĕсен чылайрах?

– Ман мăшăр малтан сирĕн кил-çурта кĕрсе пăхасшăн, – пӳлчĕ ун сăмахне Вадим Андреевич. Вăл арăмне хулпуççинчен ачашласа илчĕ. – Розочка, ытла ырă эсĕ, Леночкăран икĕ кунлăха уйрăлассишĕн те пăшăрханатăн.

Хĕветура Роза Семановнăна тинкерчĕ, самант тĕлĕнсе тăчĕ: вăтăралла çитнĕ хĕрарăмăн сăнĕнче пĕр перкеленчĕк те çук, ун пичĕ çĕнĕ укçа пек яка. Вăл халь çеç çывăрса тăнă, халь çеç тăраниччен çисе тухнă çын пек мăранрах, çав вăхăтрах мăнаçлăн пăхса тăрать.

– Çук, çук! – терĕ Хĕветура. – Ман... Ман каллех витене каймалла. Виç-тăватă сехетрен таврăнатăп. Сирĕн ĕнтĕ çавăн чухне килмелле пулать.

Хĕветура витене васкаса утрĕ. Унта вăл тепĕр конюхпа хăйĕн лашисене эрне хушши ăна пăхтармалла калаçса татăлчĕ. Киле çитсен мăн хуранпа шыв çакса ячĕ. Чӳречисене ярр! уçса пăрахрĕ. Мĕнпур савăт-сапана, тумтире сада йăтса тухрĕ. Вара вăл пӳрт çума пуçларĕ. Канмасăр, хушăран сехет çине шиклĕн пăха-пăха ĕçлерĕ Хĕветура. Кайран вăл савăт-сапана хырса тасатрĕ. Тумтире шаккаса, пӳрте кĕртрĕ, минтер пичĕсене, тӳшек çиттине, чӳрече каррисене улăштарчĕ. Ĕç хыççăн хăй те шыва кĕчĕ, каллех пурçăн кĕпине тăхăнчĕ, вара урай варринче, тĕлĕнсе кайса, пăхса тăчĕ. Кантăк кĕленчисем – çуса тасатнăран – курăнмаççĕ, çавăнпа пĕтĕм йывăç-курăк пӳртех кĕнĕн туйăнать. Аслă уяв умĕн çеç пулакан тӳлеклĕ телее путса, Хĕветура Андреевсене кĕтсе илме тухрĕ...

6

Хĕветура лаçра çырла кукли пĕçерсе ларать. Лена чупа-чупа пырать те: «Мĕншĕн халĕ те пиçмест-ха?» – тесе хăварать. Е вăл йывăç айĕнчен кăшкăрать: «Эп таса мар çырла çиет тесе ан хăра! Пылчăкланнă çырлана малтан çуласа тасататăп, кайран çеç çиетĕп!» Хĕветура, хăйне вут хыпса илнĕ евĕр, хĕрача патне чупать. Вĕсем пĕр-пĕрне ыталаса илеççĕ.

– Мĕншĕн эс мана çапла юратан, Хĕветура аппа?

Мĕнле каласа ăнлалтармалла çакна? Хĕветуран чун-чĕри паян – тинех тамалнă суран пек.

– Эс сукмакпа шăкăртаттарса чупса çӳретĕн. Çавăнпа юрататăп, – шӳтлет вăл.

Лена кулса ярать те каялла чупса каять.

– Эпĕ тата хытăрах шăкăртаттарса чупатăп!

Хĕветура сукмак патне пырса тăрать. Каллĕ-маллĕ чупса çӳрекен хĕрача ун ытамне кĕрсе ӳкет.

– Лена! Атя апат çиетпĕр!

Хĕрача ăна мăйран ыталать те, йĕри-тавралла шиклĕн пăхса, хăлхаран пăшăлтатать:

– Лена мар, «Ленук» те!

– Мĕншĕн ара «Ленук»?

Хĕрача каллех тавралла пăхса çаврăнать, каллех шăппăн хуравлать.

– Калама юрамасть...

Хĕветура ăна сад варринчи сĕтел хушшине кайса лартать. Вĕсем шăкăлтата-шăкăлтата апатланаççĕ. «Урăх çиейместĕп, çăвар ывăнчĕ», – тет те хĕрача, аллине малалла кăнтать. Хĕветура ăна пӳрте йăтса кĕрет, çывăрма выртта рать. Ыйăхланă ача йывăррăн куçне уçать:

– Ниçта та ан, кай...

– Ниçта та каймастăп, ниçта та...

– Сăмах пар...

– Сăмах паратăп, Лена!

– Лена мар, Ленук!

Хĕрача, Хĕветура аллинчен тытса, çывăрса каять.

* * *

Виççĕмĕш кун каçалапа Лена:

– Эпир мансах кайнă вĕт кучченеç çиме кайма! Каяр пуль, – тесе аса илтерчĕ.

Чăнах, Надя аякри хуларан таврăннă шăллĕн кучченеçне çиме чĕннĕччĕ.

Хĕветура Ленăна шурă кĕпе тăхăнтартрĕ, çивĕчĕсен вĕçне шурă хăю ячĕ. Вара вĕсем, панулми тултарнă карçинккана иккĕш икĕ енчен тытса, хăнана кайма тухрĕç.

Йăрăм-йăрăм улмасене курсан, Витя савăнăçлăн ахăлтатса ячĕ.

– Мана манман иккен, манман!

Витя ача чухне çак улмасене çаратса тăнине аса илсе, Хĕветурапа Надя та кулса ячĕç. Вĕсем, хаваслăскерсем, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç.

– Каласа пар ĕнтĕ инçетри хула пурнăçне! – терĕ Хĕветура.

– Эс те кала-ха: çывăхалла килтĕр, тĕнче кĕтессинчех пурăнать, – терĕ Надя.

Лена, пĕремĕк тытнă аллине каялла ярса, Витьăна тинкерчĕ.

– Лена, эсĕ манран мĕн те пулин ыйтасшн мар пуль? – ыйтрĕ Витя.

Хĕрача пĕтĕм кĕлеткипе малалла ӳпĕнчĕ.

– Пичче, эсĕ инçетри хуларан килнĕ-и?

– Инçетри хуларан çеç мар, эпĕ чи-чи инçетри хуларан килнĕ. Эпĕ Инçет Хĕвелтухăçĕнче пурăнатăп.

Лена сĕтел хушшинчен тухрĕ, Витя патне пычĕ те ăна икĕ аллипе чĕркуççинчен çатăртаттарса тытрĕ, пысăкланса кайнă куçĕпе Витьăна куçран пăхрĕ.

– Ман аннене куртăн-а?

Хĕветура лачăрах кайрĕ.

– Лена, мĕнле аннӳ...

Хĕрача ун сăмахне пӳлчĕ.

– Калама юрамасть...

Хĕрача çаплах Витя куçĕнчен пăхса тăчĕ.

– Вăл чи инçетри хулара вĕренет .

– Аннӳ мĕн ятлă?..

– Шура, – терĕ Лена васкавлăн, ахăртнех, Витя калаçма тытăннăран хавхаланса. – Шура, хушамачĕ Андреева.

Хĕветура хăрах аллипе сĕтеле тĕрĕнсе, тепĕр аллине малалла тăсса, хĕрача патне пычĕ.

– Андреева Шура.– антăраса кайрĕ Витя. – Астумастăп... Институтра вĕренет пулсан, килмелле вăл. Халь вĕсен каникул.

– Килмест çав. – нăшăлтатса илчĕ хĕрача.

– Хăш хулара аннӳ? – ыйтрĕ Витя.

– Чи инçетри хулара. Вăл унта больницăранах тухса кайнă.

Хĕветура хĕрача умне пĕшкĕнсе ларчĕ. Витя куçне çĕрелле тартрĕ.

– Лена... Лена... Пирĕн хула ытла пысăк... Пурне те палласа пĕтереместĕн... Эпĕ юлташсенчен ыйтса...

Хĕрача аяккалла пăхса илчĕ, тем калакан Витьăна итлеме пăрахса, Хĕветурана кĕперен туртрĕ.

– Киле атя...

7

Вĕсем урама тухрĕç те хăйсен умĕнче ун-кун пăхкаласа таракан Вадим Андреевичпа Роза Семеновнăна тĕл пулчĕç. Хĕветура чарăнса тăчĕ: ара ачана илме килчĕç те-и?

– Леночка, мĕнле пурăнтăн? – ыйтрĕ Вадим Андреевич, ачине чуптуса.

– Лайăх, аттеçĕм.

– Эпир сана шыратпăр, Леночка. Ăçта кайнă эсир? – чĕвĕлтетрĕ Роза Семеновна, Ленăна ыталаса.

– Хăнана, аннеçĕм.

Андреевсем васкарĕç. «Вадим Андреевича пысăк института ĕçлеме куçараççĕ, ыран тухса каятпăр, çула пуçтарăнмалла», – тесе пӳрте те кĕмерĕç. Хĕветура Лена япалисене пуçтарса тухрĕ. Вăл, Андреевсене ăсатмалла, урампа утрĕ.

Роза Семеновна упăшкине темĕскер хăлхаран пăшăлтатрĕ. Вадим Андреевич пуçĕпе сулчĕ, Хĕветурана çапла каларĕ:

– Эсир ача пăхнăшăн тата укçа ыйтасшăн мар пуль? Эпир çителĕклĕ панă.

Хĕветура малтанах ăнланаймасăр тăчĕ, унтан намăсланса кайрĕ.

– Çук! Çук!

– Апла пулсан, юрать. Тавтапуç сире Леночкăна пăхнăшăн. Чипер кайăр.

Хĕветура хыпăнса ӳкрĕ. Вăл пĕшкĕнчĕ те, ăна Лена ыталаса илчĕ. Хĕветура хĕрачан хĕвелпе ăшăннă шурă çӳçĕнчен чуптурĕ. Лена епле кайнине хыçалтан пăхса тăчĕ. Утать-утать те хĕрача, каялла çаврăнса, аллине сĕлтет. Хĕветура та аллине сулать. Çул кукăрĕнчен пăрăнас умĕн Лена кукленсе ларчĕ те пуçне хыçалалла пăрчĕ:

– Хĕветура аппа! Хĕветура аппа!

Хĕрача çул хĕрринче темĕскер чакалать. Ашшĕпе амăшĕ пĕр харăс: «Юрамасть! Юрамасть!» тесе тăраççĕ. Хĕрача васкаса чавать, ăшчике хускатакан сасăпа йыхăрать:

– Хĕветура аппа!

Лена ура çине тăчĕ те, хăрах аллине малалла кăнтса, Хĕветурана хирĕç чупрĕ. Вăл пĕчĕкçеçĕ сенкер чечек тăсса пачĕ. Лена ура айĕнче таптаннă чечеке чавса кăларнă пулас: çеçкесем лутăрканнă, хĕрачан пӳрнисем вараланнă.

– Эп пĕлетĕп анне ăçтине.

– Ăçта?!

– Ăна çĕр айне чиксе хунă. Мана Сашка каларĕ.

Хĕветура хуллен-хуллен пĕшкĕнчĕ те чечек тытнă аллипе ачана ыталаса илчĕ.

– Ленук! Мĕн каласан эс? Мĕнле Сашка?

– Вăл пирĕн çуртра пурăнать. Пĕрремĕш класа каять. Вăл пурне те пĕлет. Ман анне ăçтине те пĕлет.

– Ленук...

Хĕрача çĕрелле пăхрĕ. Шухăша кайнăн шăппăн хуравларĕ.

– Эпĕ килте пулман çав. Ун чух садикре пулнă. Эпĕ килте пулнă пулсан, каймастчĕ. Вăл сенкер кĕпепеччĕ.

– Ленук... Ленук...

– Леночка!

Хĕрача, хыпаланса, Хĕветурана ыталарĕ, ун çумне пăчăртанчĕ, вара каялла çаврăнчĕ. Анчах та вăл пилĕк-ултă утăмранах такăнса, хĕреслĕ урам варрине кайса ӳкрĕ, аллине вĕри тусан çийĕпе сарса, ĕсĕклесе ячĕ.

Хĕрача патне чупса пынă Хĕветурана Вадим Андреевич, хулпуççинчен тытса, сирчĕ.

– Тавтапуç. Чăрманма кирлĕ мар. Сывă пулăр.

Хĕветурапа ĕнтĕ сывпуллашрĕç те, çавăнпа унăн килелле утмалла пулчĕ.

Хыçалтан Вадим Андреевич сасси илтĕнсе тăчĕ.

– Тăр, пепкем. Тăр, ытарайми пепкем. Халь хăвна шакка лайăхрах. Çыннăн илемлĕ пулмалла, эсĕ илемсĕр хăтланатăн, пире пăшăрхантаратăн. Ав, аннӳ те кăмăлсăрланчĕ. Каçару мĕнле ыйтас пулать?

Хĕветура вăрт! çаврăнса пăхрĕ. Макăра-макăра каçару ыйтакан хĕрачана курсан, унăн пит-куçне юн хĕвĕшрĕ, вăл ыратса кайнă тăнлавне сăтăркаларĕ...

* * *

Каç пулчĕ. Йывăçсем пĕр-пĕрин мĕлкисемпе хупăрланчĕç. Хĕветурана вĕçсĕр пĕр япала аса килчĕ: виçĕмкун Ленăна хăй патне чылайлăха хăварма сĕнсен, Роза Семеновна упăшкине епле куç хĕссе илни. Мĕне пĕлтерчĕ ку?.. Тен...

– Мур! Ăçта сĕтĕрен? Хĕветура, хăçан ĕçе тухатăн? Лашусем сĕтĕрсе кĕрекен пулчĕç,– ятлаçрĕ урамра пĕр сасă.

Хĕветура урама тухрĕ. Хăла лаша, пуçне уха-уха, ăна сĕртĕнчĕ. Хĕветура лашана мăйĕнчен, ăмăрĕнчен шăлса ачашларĕ.

– Хам кайăп, витене,–терĕ вăл хăйпе пĕрле лаша пăхакана.

Пăлханнă вăхăтра çумма ансат та тӳрĕ шухăш-кăмăллă юлташ пырса тăнă пек лăпланать Хĕветура. Анчах та çак лăпланăç вăхăтлăха çеç иккенне, пĕччен юлсан пăлхану тата вирлĕленессе пĕлет вăл, çавăнпа, вăхăта тăсасшăн васкамасăр, лашасене каласа-каласа шăварать. Лешĕсем ун патне пĕрин хыççăн тепри пырса тăраççĕ, ăшă тутипе ăна йăвашшăн тĕрткелеççĕ.

Тĕттемленчĕ. Хĕветура лаша пăхакансен пӳртне кĕчĕ, çутă çутрĕ. Пӳрте ӳпре-шăна кĕрсе тулнă. Вĕсем çутă тавра явăнса вĕçеççĕ. Такам радиопа хавхаланса каласать. Хĕветура радиона чарчĕ. Якалса-хуралса кайнă сак çине пырса ларчĕ çеç вăл, алăк уçăлчĕ те, Надя кĕрсе тăчĕ.

– Хĕветура, эп сан пата.

Хĕветуран çав тери кам та пулин, хăçан та пулин хăйне «аппа» тесе чĕннине илтес килсе кайрĕ.

– Хĕветура, юмăç пăхса пар-ха, – Надя куçне хĕсет. – Кур, çутти илсе килтĕм. Лавккарине.

Хĕветура Надьăна чăрр! пăхрĕ. Вăл теме ăнланма пултарайман пек ларчĕ, унтан вĕриленсе кайрĕ.

– Кӳр аллуна! Кӳр! – вăл хăй аллине Надьăннипе юнашар тытрĕ.

– Кур!

Пĕр алли ăшă сĕт пек. Тепри – хура-хăмăр, ун пӳрнисем тăртаннă, пуклак.

Хĕветура хăйĕн тутăрне сӳсе илчĕ.

– Кур!

Кĕл сапнă пек çӳç.

Хĕветура Надьăн хулпуççи таран кастарнă çӳçне шăлса илчĕ.

– Кур!

Хĕвел пайăркисем евĕрлĕ çӳç.

– Кала – илемлĕ-и эс?

Надя хуçкаланса илчĕ.

– Камшăн мĕнле...

– Ан курнăçлан! Тӳрĕ кала!

– «Илемлĕ» тетчĕç...

– «Тетчĕç» мар! Эс, чăнах та, илемлĕ! Эс, илемлĕскер, мĕскĕнленме пуçларăн?! Ху ирĕкӳпе мĕскĕне тухатăн! Урамра йĕрсе çӳретĕн! Сан юмăça çӳресси çеç юлчĕ! Сана, мĕскĕне, юмăçлăмасăрах тĕрĕсне калатăп! Сана юрату çунтарать! Эсир уйрăлса кайнишĕн эсĕ ху айăплă. Ăна малтан сан илемӳ парăнтарнă. Кайран вăл çак илеме курми пулнă. Ун куçне сан шухăш-кăмăлу хупăрланă. Эсир уйрăлнă. Акă, макăратăн эсĕ, куççуль сан тавра. Мĕскĕнле хăтланатăн: кашни çынна хăвăн инкекӳ пирки каласа çӳретĕн. Итле: çынсем усал та, ырă та. Вĕсем пулăшма пултараççĕ. Анчах та пуринчен ытла хăвна, хăвăн икĕ аллуна, ху чунна шанас пулать. Унсăрăн çынсем сана пулăшаймаççĕ. Асту: пĕтĕм пурнăçу хăвăнтан килет. Ăна ырă тăвас тесен пĕр мел çеç кирлĕ – тавăр хăвăн илемне. Сана инкек ху илемлĕ пулнине мантарчĕ пулсан та, ăшунта та пулин, кĕлĕ пек, каласа тăр: «Эп илемлĕччĕ, ман илемлĕ пулмалла». Çит килне, питĕр пӳлĕмне, пĕр пĕччен, ан йĕр, çӳçне ан тăпăлтар, ху çинчен çеç шухăшласа лар, чылайччен шухăшла. Ан хăра, ху çинчен тĕрĕс шутлани пурин çинчен те шухăшлани пулать. – Хĕветура Надьăна хулпуççинчен ярса тытрĕ, ун пичĕ тăрăх шултра тумламсем йăрăлтатса анчĕç.

– Чунун илемне уçаймасан, ăна путарса лартсан, эс Арçын Хĕветурана тухатăн! Надя! Ан пул Арçын Хĕветура! Ан тух Арçын Хĕветурана! Тархаслатăп сана, мана та пулин хĕрхен – ан пул Арçын Хĕветура!

– Хĕветура... Хĕветура... – ыталаса, илчĕ ăна Надя.

Çак вăхăтра алăк ярр! уçăлчĕ те, тăвăлпа ӳкекен утă капанĕ пек чӳхенекен Альтюк инке хашăлтатса чупса кĕчĕ.

– Часрах чуп! Пĕтереç ачана...

Хĕветура урама вирхĕнсе тухрĕ.

«Ленук!.. Пурăнтăрччĕ вăл кунта... Ах, мĕн ухмахланатăп эпĕ!.. Кам парса хăварĕ măскал пек ачана? Кунта пурăнас пулсан, ăна ытларах илемлĕ вырăнсем кăтартасчĕ... Епле те пулин пирчетĕр суранĕ... Илсе

кайччăрах вара ăна ун чух, илсе кайччăрах... Халлĕхе çеç, кăштах тĕреклениччен çеç хăварасчĕ... Çулталăка... Уйăхлăха çеç юлтăрччĕ!»

Хытхураран тытса, Хĕветура сăрт çинчен чупса анчĕ.

«Шкултан епле чупса килмелле вăл!» Умма ӳссе çитĕннĕ Лена тухса тăчĕ: ун сăнĕ йăваш кулăш! витĕр çуталнă... Сенкер кĕпепе... Шăпах çакăн пек пулмалла унăн амăшĕ... Хĕветура инке икĕ аллипе питне хупларĕ, пĕтĕм вуллипе чĕтренсе кашлакан йывăç çумне тĕренчĕ те ĕсĕклесе ячĕ: «Канлĕ çывăр... Канлĕ çывăр, сенкер кĕпеллĕ хĕрарăм... Эпĕ, пур-ха... Сан ачу, сан тĕпренчĕкӳ ман чĕре çумĕнче...»

Куççульне çăта-çăта, вăл кану çурчĕн килкартине чупса кĕчĕ. Пӳрт алăкне уçрĕ те аптăранипе тăп чарăнчĕ.

Кĕтесри сĕтел çинче Лена тăрать. Хĕрача пуçне чикнĕ. Ун çумĕнче – ашшĕ. Роза Семеновна стена çумне таяннă.

– Халех шăлса тасат! – терĕ Вадим Андреевич, пӳрнине стенана тĕллесе.

Шурă тăмпа сăрланă стена çине ача аллипе «Анне» тесе çырса хунă. Саспаллисем ишĕлнĕ кил-çуртăн юписем пек чикĕннĕ, тайăлнă.

– Паян парăнтармасан, нихăçан та итлеттерес çук ку пӳтсĕр ачана, – кашни сăмаха шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Роза Семеновна.

– Хурат халех!

Аллине хыркăч тыттарнă хĕрача, çамкипе стенана тĕрĕнсе, ĕсĕклет. Ун çумĕнчи кантăк кĕленчине туратсем – тискер кайăк чĕрнисем пек – чăкăртаттараççĕ.

– Мĕн терĕм? Сăтăрса пăрах!

– Ку ача ырă каçа пĕтерчĕ пирĕнне, – хашлатрĕ Роза Семенована.

– Итлетĕн-и, итлеместĕн-и?! – Вадим Андреевич Ленăна алăран ярса тытрĕ. Хĕрача, аллине аялалла туртма тăрăшса, çари! çухăрса ячĕ.

Хĕветура малалла сиксе ӳкрĕ.

– Чарăн!

Хăрах аллипе вăл Вадим Андреевича хулпуççинчен пĕрре туртса, хăй еннелле çавăрчĕ, тепĕр аллипе Ленăна ыталаса илчĕ.

Вадим Андреевич темрен йĕрĕннĕ пек кулса илчĕ.

– А-а... Каллех эсир... Каçарăр, эпĕ сире хăнана чĕннине астумастăп, – анчах та, хăйĕн мăнаçлă кулли Хĕветурана пăлхатса ярайманнине курсан, Вадим Андреевич, тĕлĕннĕ евĕр, куç харшине çĕклесе илчĕ.

– Ан тытăр пирĕн ачана! – кăшкăрчĕ Роза Семеновна.

Хĕветура пĕр сăмах та калаймарĕ. Кашни хытă сасă илтĕнмессерен Лена чĕтрене-чĕтрене илчĕ, çавăнпа, хăйĕн сассипе

хĕрачана хăратасран асăрханса, Хĕветура, шăлне çыртса, хăйне лăплантарма тăрăшрĕ.

Вадим Андреевич пуçĕпе алăк енне сĕлтрĕ:

– Ăсатма кирлĕ мар пуль, тетĕп эпĕ.

– Ан кăшкăр. Ача чĕтрет, – хуллен тавăрчĕ Хĕветура.

– Малтан çынпа «эсир» тесе калаçма вĕренĕр! – ахăлтатрĕ Роза Семеновна.

– Ан кăшкăр. Ача чĕтрет.

– Мĕнле тӳрех ăнкараймарăмăр, Ваденька: ухмаха тухнă карчăк ку!

Çак вăхăтра пӳрте Альтюк инке тата Надьăпа Витя кĕрсе тăчĕç.

Самант чарăнса тăчĕ Вадим Андреевич, пĕр утăм каялла чакрĕ, унтан йăл кулса илчĕ.

– Вăт çапла... – терĕ вăл кăмăллă калаçăва малалла тăснă евĕр лăпкă сасăпа. Аллине çурăм хыçне тытрĕ те каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. – Эпир çĕнĕ, илемлĕ общество тăватпăр. Кашниех ырă пулмалла, тепĕр çыннăн ĕçне хисеплемелле. Эсир вара, хаклă... Каçарăр, тархасшăн... – Вадим Андреевич каллех кулса илчĕ, – аçăр ятне пĕлместĕп.

– Иван... – мăкăртатса илчĕ аптăраса кайнă Альтюк инке.

– ...Вăт, хисеплĕ Феодора Ивановна, эсир йăнăшатăр. Эсир калама çук ырă çын. Сирĕн шутпа, çак ачана ыттисем асапланса, тăрăшса шуратнă стенана пăснăшăн та ятлама юрамасть. Мана, тăван ашшĕне, мĕнле йывăр çак пирĕштине ятлама. Амăшне мĕнлерех? – Вадим Андреевич пуçĕпе Роза Семеновна енне сулчĕ. – Питĕ ачаш пирĕн амăшĕ, Леночкăна пĕр сивĕ сăмах калаттармасть. Вăт... Эп хам пысăк институтра вĕрентетĕп. Куркаланă эп ачаран тĕрĕс мар ӳстернĕ студентсем мĕнле иккенне. Коммунизмла воспитани парас тесен, кирлĕ вăхăтра çирĕп пулмалла. Çалла-и, Альтюк инке?

– Çапла ĕнтĕ ...

Хĕветура хăйне куç пăвнăн хытса тăчĕ, ун ăсĕ Вадим Андреевич пĕр самантра çапла улшăннине ăнланма пултараймарĕ:

– Çамрăксем, паллах, комсомолецсем, ман сăмахпа килĕшеççĕ, – тăсрĕ сăмаха малалла Вадим Андреевич, – Розочка, чунăм, мĕншĕн эсĕ хăнасене пукан сĕнместĕн?

– О-о! Каçарăр, тархасшăн, каçарăр, çак пепкене пула мансах кайрăм, – Роза Семеновна Ленăна чуптăвасшăн пулчĕ, анчах та хĕрача йынăшса ячĕ те Хĕветурана çатăртаттарса тытрĕ, ун куçĕнчен пăхса тилмĕрчĕ.

– Ан пар мана чипер инкене...

Хĕветура çанçурăмĕ сӳ-ӳ турĕ: вăл çак хĕрачана пĕрремĕш хут курнине, Лена епле выляса ларнине аса илчĕ. Витьăпа Надя, ав, темĕскер каласшăн. Надя, Хĕветура инкене пулăшма хатĕрленнĕ пек, çумма пырса тăчĕ: ачана пуçран шăлать те шăлать вăл. Витя халь-халь çапăçăва ыткăнас пек тăрать. Лена умĕнче ун ашшĕне питлени хĕрача суранĕ çине тăвар сапни çеç. Хăйне те, ыттисене те тытса чармаллах. Те Ленăна, те хăйне вĕрилентерсе пăрахрĕ, ытам тулли кăвар пек. Сăмахĕсем Хĕветуран аран-аран тухрĕç.

– Витя... Надя... халь... Каласма кирлĕ мар, – вăл юлашки сăмахне пусарах каларĕ. – Ачана çунтарать. Витя, чуп часрах тухтăр патне. Роза Семеновна, Вадим Андреевич, ачан пуçĕ кăвар пек. Ăна илсе кайма юрамасть. Юлтăр кунта, – Андреевсем пĕр-пĕрин çине шиклĕн пăхса илнине курсан, Хĕветура хăйне калама намăс, анчах та умри икĕ çынна парăнтарма, лăплантарма пултаракан сăмах каласа хучĕ. – Укçи пĕркун хăварнă чухлĕ те çитет.

Хĕветура Роза Семановнăна тинкерчĕ. Лешĕ çăмăллăн сывласа ячĕ те упăшкине вăрттăн çеç куç хĕсрĕ.

– Розочка, – терĕ Вадим Андреевич. – Чирлĕ-и, чирлĕ маар-и Леночка, пирĕн ыран каймаллах. Кафедрăна часрах йышăнас пулать.

Ача йăтнă Арçын Хĕветура кантăк патне пырса тăчĕ. Ун умне – хура каça сирсе, хӳтĕлеме пуçтарăннă тăвансем пек лăпкă вăй кӳрсе – Ленăна кăтартма ĕметленнĕ сăнсем: шыв илнĕ улăхсем, сывлăшра вĕçекен сенкер çеçкесем, чечеке ларнă хĕвелçаврăнăш хирĕсем шуса килчĕç...

1974.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Е. Лисинан «Çăкăр чĕлли» калавне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000005/index.html
2. В. Элпин «Пулас кинсем» романне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000035/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Хĕр арăм прози текен ăнлав литература пĕлĕвне хăш тапхăрта кĕнĕ?
2. Хĕр арăм прози мĕнле енсемпе палăрса тăрать?
3. Хĕр арăм прози литературăна килнин тĕп сăлтавне мĕнре куратăр?

● *Сивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Хĕр арăмсен прависемпе ирĕклĕхне саракан юхăмсем:

феминизм (*хĕр арăмсен политикăри, экономикăри, харпăр хăй тата социаллă прависене анлăлатассишĕн кĕрĕшекен юхăм*)

сексизм (*çынсене, ытларах чухне хĕр арăмсене, арлăх паллине кура хĕсĕрлени*)

Литература хайлавĕн чĕлхи

В. Элпин «Пулас кинсем» романĕнчи тĕп сăнар Талюна хăйĕн пулас мăшăрне хăй мĕнле курнине калакан сыпăка тупăр, унăн сăнне тата характерне мĕнле сăмахсемпе сăнарланине палăртăр.

ИЛЕМЛĔ ПУЛТАРУЛĂХРИ НОВАТОРЛĂХ



Петĕр ХУСАНКАЙ (1907–1970)

Кĕске биографи справки

1907 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕ – Сиктĕрме (Хусан кĕпернин Сăпас уесчĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Тутарстанăн Элкел районĕнчи Сиктĕрме-Хусанкай ялĕ).

1915-1923 çулсем – ялти икĕ класлă шкула пĕтернĕ.

1923-1925 çулсем – Хусан хулинчи Чăваш педагогика техникумĕнче вĕреннĕ.

1924 çул – «Сунтал» журналта пĕрремĕш сăввисем (вĕсен шутĕнче «Ирĕк тимĕрçĕ» сăвă) пичетленнĕ.

1925-1926 çулсем – «Сунтал» журнал редакцийĕнче куçаруçă, литература консультанчĕ пулса ĕçленĕ.

1927-1930 çулсем – Хусанти Хĕвелтухăç педагогика институтĕнче вĕреннĕ.

1928 çул – «Уяртсан» ятлă пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухнă.

1930 çул – Мускав хулине пурăнма куçнă, «Коммунар» тĕп чăваш хаçачĕн тулашри корреспонденчĕ пулса ĕçленĕ.

1934 çул – «Коммунар» хаçат тухма чарăннă хыççăн пĕтĕмĕшпех литература ĕçне куçать.

1938 çул – националист тесе айăпласа тĕрмене хупнă.

1939 çул – айăпсăр айăпланине йышăнса тӳрре кăларнă.

1939-1942 çулсем – тĕрмере ларса тухнă хыççăн Ленинград тата Хусан хулисенче сывлăхне çирĕплетнĕ.

1941-1942 çулсем – Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçатра ĕçленĕ.

1942-1944 çулсем – Совет Çарĕн ретĕнче рядовой, лейтенант, аслă лейтенант, политотдел инструкторĕ, «За Родину», «Сталинец»

дивизи хаçачĕсен редакцийĕсен сотрудникĕ пулса 207 тата 273 стрелковой дивизи йышĕнче çапăçнă.

1944 çул – йывăр аманнă. Сывалнă хыççăн Мускаври Театр искусствисен патшалăх институтĕнчи чăваш студийĕнче куçаруçă пулса ĕçленĕ.

1950-1960 çулсем – ют çĕршывсем тăрăх тĕнче курса çӳренĕ, çул çӳревсем хушшинче çĕнĕ кĕнекесем кăларнă, тĕрлĕ халăх сăвăçисен хайлавĕсене чăвашла куçарнă.

1950 çул – Чăваш АССРăн халăх сăвăçи ятне тивĕçнĕ.

1955-1957 çулсем – СССР писателĕсен Союзĕн çумĕнчи Аслă литература курсĕнче вĕреннĕ.

1967 çул – К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССРăн патшалăх премине илнĕ.

1969 çул – Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен Чăваш Енĕн комсомол преми лауриачĕ пулнă.

1970 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ – Шупашкар хулинче вилнĕ.

Астăвăм

Сăвăç çуралнă ял 1981-2004 çулсенче Хусанкай ятлă пулнă. 2004 çулхи раштав уйăхĕнчен унăн ятне Сиктерме-Хусанкай ячĕ çине улăштарнă.

Сăвăç çуралнă ялта 2002 çулта Петĕр Хусанкая асăнса музей уçнă.

П. Хусанкая асăнса Шупашкар хулинче, Йĕпреç районĕнчи Сюрбеевка ялĕнче, Тутарстанри Альметьевск хулинче тата Пасар Матаки ялĕнче урамсене ун ятне панă.

Шупашкар хулинчи уйрăм предметсене тарăн вĕрентекен 49-мĕш № вăтам шкула П.П. Хусанкай ятне панă.

Шупашкар хулинчи Культура керменĕ, Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи библиотекăсем П. Хусанкай ячĕпе хисепленсе тăраççĕ.

Шупашкар хулинчи Ленин проспекчĕнчи сăвăç юлашки вунă çул пурăннă 38 çурт çине мемориал хăми çакнă.

Шупашкарти Культурăпа искусствăсен чăваш патшалăх институчĕ умне сăвăçăн бюст-палăкне лартнă (2006).

Ăслăлăх анинчен

«...Чăваш çырулăхĕн аталанăвĕнче эпĕ пилĕк вăта юпа куратăп: Яковлев – Иванов – Ашмарин – Çеçпĕл – Хусанкай. Малтанхи иккĕшĕ анатри чĕлхен сăмах пуянлăхне уçрĕç, тепĕр иккĕшĕ çав пуянлăха анлă ĕнерӳ пама вирьял чĕлхинче май тупрĕç, Хусанкай вара, хăйĕн тантăшĕсемпе тата Çеçпĕл нормисене нимĕн иккĕленмесĕр йышăннă

çамрăксемпе пĕрле, чăваш сăввин сассине Европа культурин çӳллĕхне çити çĕклерĕ» (*В. Митта, сăвăç*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Кашни çыравçăн хăйĕн пурнăçĕпе тата тавракурăм аталанăвĕпе çыхăннă пултарулăх тапхăрĕсем йĕркеленеççĕ. Нумай чухне шăпах вĕсем çыравçăн хайлавĕсене тарăнрах ăнланма пулăшаççĕ. Акă, сăмахран, **Петĕр Хусанкайăн** (*Хусанкай Петр Петрович)* пултарулăхĕнче В.Г. Родионов тĕпчевçĕ пилĕк тапхăр палăртать: 1) ачалăхпа çамрăклăх кунĕсем (1923 çулччен); 2) ирĕклĕх тата чăвашсен авалхи тăван çĕрне шыранă вăхăт (1923-1929 çç.); 3) «хăйшĕн хăй тата большевиксем» валли ĕçленĕ тапхăр (1930-мĕш çç.); 4) илемлĕ пултарулăхри çарпа патриотизм юхăмĕнче ирттернĕ вăхăт (1941-1954 çç.); 5) пултарулăхра националлă тата интернационаллă пулăмсене ятарласа тарăнлатни (1955-1969 çç.).

Çапах та Петĕр Хусанкайăн пултарулăх еткерне тимлĕрех пăхсан унăн нумай сăвă-поэмине сăвăçăн çул çӳревĕ ушкăнласа, ăнлантарса тăнине асăрхама пулать. Çавăн пекех унăн пĕтĕм пултарулăхне тĕрлĕ халăхсен хушшинчи туслă хутшăнусем çыхăнтарса тăнине палăртмалла. Çакăн вăрттăнлăхĕ вара – сăвăç мĕн ачаран тутарсемпе вырăссем хушшинче ӳсninче, тĕрлĕ халăхсем пĕр пĕринпе тачă хутшăннинче. Çапла, унăн амăшĕ тутарла та аван калаçнă. Таврари ялсенчи тĕрлĕ халăхсем (чăвашсем, тутарсем, вырăссем) пĕр-пĕрин йăли-йĕркисене (сапантуй, чăваш вăййисем) хаваспах хутшăннă. Çакă пĕтĕмпех пулас сăвăçра тĕрлĕ халăхсене хисеплес туртăма ачаран ӳстернĕ.

Нумай çамрăк сăвăçсем пекех пултарулăх çулĕ çине тухнă çулсенче П. Хусанкай хайлав-евĕрлевсем çырнă: малтан – халăх юррисем манерлĕ, кайран – чăваш сăвăçисем (М. Çеçпĕл) пек, тата каярах – вырăс, хĕвел тухăç тата хĕвел анăç сăвăçисем еверлĕ. Революци хыççăнхи тапхăрта (1918-1925 çç.) çамрăк чăваш сăвăçисем вырăс тата европа эстетики патнелле туртăннă. Икĕ тĕрĕк чĕлхипе (чăваш тата тутар) калаçакан çамрăк Хусанкай çак çулсенче çĕнĕ чăваш культурин икĕ пĕр танлă çунат çине – хĕвел тухăç тата вырăспа европа культурисем çине тайăнса аталанмалла тесе шутланă. Çавăнпа та пулĕ вăл Хĕвел тухăçпа тата С. Есенин пултарулăхĕпе уйрăмах кăсăкланнă.

П. Хусанкайпа вырăс сăвăçне иккĕшĕ те хресчен çемйинчен тухни те пĕрлештерсе тăрать пулĕ. Сăвăçсем иккĕшĕ те ял теми патне туртăннă, сăмахран, вĕсемшĕн хулапа яла хирĕç тăратса танлаштарни кăтартуллă. Унсăр пуçне чăваш сăвăçне С. Есенин поэзийĕнче чи малтанах лирикăлла «Эпĕ» хăйне хăнăхнă пек мар тыткалани илĕртнĕ.

В.Г. Родионов тĕпчевçĕ шучĕпе, шăпах вырăс сăвăçин тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ П. Хусанкая «Хура пĕркенчĕк», «Кăнтăр кĕввисем» ятлă лирика ярăмĕсене çырма пулăшнă. Асăннă ярăмсене чăваш сăвăçи 1926-1927 çулсенче Вăтам Азипе Кавказ тăрăхĕсенче (вăл Туркменире, Узбекистанра, Азербайджанра, Грузире пулса курнă) çул çӳренĕ хыççăн çырнă. Хусанкай хăй çакăн пирки çапла аса илет: «Эпĕ вĕт Вăтам Азине Есенинăн «Перси кĕввисемпе» хавхаланса тухса кайрăм. Манăн Саадипе Хафиз, Фирдуосипе Омар Хайям сывлăшĕпе сывлас килетчĕ».

«Хура пĕркенчĕк» ярăма 1926 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 1927 çулхи ака уйăхĕччин Ашхабад хулинче çырнă 19 сăвă кĕнĕ. Вĕсене Хĕвел тухăç тăрăх çул çӳреме юратакан тата унпа тачă çыхăну туякан лирика геройĕ – романтик çыхăнтарса тăрать. «Кăнтăр кĕввисем» ярăмăн лирика геройĕ те Азинчен Кавказ тăрăхне таврăнакан, тăван еншĕн тунсăхлакан, тинĕс хăватне çивĕ туякан çул çӳревçĕ-интеллигентах. Ку ярăмра сăвăç ирĕклĕ пултарулăхпа юратăва çеç мар, пултарулăхпа ирĕксĕрлĕхе те пĕр-пĕрне хирĕç тăратать. Тĕнче касса çӳрекен лирика геройне тăван çĕр тата çак çĕр çинче пурăнакан чăвашла калаçакан çынсем хăй патне туртаççĕ. Вĕсенчен мĕн чухлĕ инçерех вăл, çавăн чухлĕ вăйлăрах вĕсемшĕн тунсăхлать, вĕсен пĕлтерĕшлĕхне туять.

Эп юрататтăмччĕ пĕртен-пĕр
Çĕршыв çак аслă тĕнчере.
Ăçта пулса та, теттĕм эпĕ,
Пĕр уншăн тапĕ ман чĕре.

Ун тăмлă сăрчĕсем, вăрманĕ –
Хăй майлă çав тери хитрен,
Чуна нихçан йăлăхтарманăн
Тухса сăнланчĕç çĕнĕрен.

Пĕлместĕп, темĕншĕн апла вăл:
Ĕмĕтĕмпе çеç ку енчен
Каçсан та, ĕмĕрлĕх ман Атăл
Куçран çухалнан туйăнчĕ.

Ун ĕмĕр канăçсăр хум шавĕ,
Çулталăкри тăватă сăн...
Мĕнпе çакна ун чух улшам эп,
Эп – ирĕккĕн тĕнче касан?..

Петĕр Хусанкайăн тарăн содержаниллĕ хайлавĕсен шутне унăн «Аптраман тавраш» сăвăлла романне кĕртмелле. Автор хăй каланă тăрăх çак хайлава вăл 13 çул, 1941-1954 çулсенче çырнă. Хăшĕ-пĕр пайĕсене вара (тĕслĕхрен, «Натали кĕпе тĕрлет» пайне) сăвăç 1939 çултах çырса хунă. Эльтиван, Йăкăнат утарçă, Сар-Микен сăнарĕсем вара «Пĕр ялсем» сăвă ярăмне кĕнĕ. Çакă пĕтĕмпех Хусанкай хăйĕн сăвăлла романĕн уйрăм сăнарĕсене 1939-1940 çулсенчех калăпласа хунине кăтартать. Тепĕр самант: сăвăç хăйĕн хайлавне 1957 çулчченех поэма тесе палăртнă. Каярах çеç литература тĕпчевçисем ăна сăвăлла роман жанрĕпе çырнă тесе кăтартнă.

Кунта çакна та палăртмалла: сăвăлла роман литературăра анлă сарăлман жанрсен шутне кĕрет. Вырăс литературинче пĕрремĕш

сăвăлла роман А. Пушкинăн «Евгений Онегин» пулнă. П. Хусанкайăн «Аптраман таврашĕ» – чăваш совет литературинчи пĕрремĕш сăвăлла роман. Çав вăхăтрах тĕпчевçĕсем Ç. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» (автор хăй ăна сăвăлла повесть тесе каланă), Я. Ухсайăн «Ту урлă çул» хайлавĕсем те сăвăлла роман жанрне çывăх тăнине палăртаççĕ (М.Я. Сироткин).

«Аптраман тавраш» сăвăлла романăн çиелте выртакан теми – чăваш халăхĕн Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнчи пурнăçĕпе патриотизмла ĕçĕ-хĕлĕ. Анчах хайлавăн сюжет аталанăвĕ вăрçă умĕнхи тата хыçăнхи тапхăрата, революцичченхи çулсене те ярса илет. Çавăнпа та хайлав темине анлăн «чăваш халăхĕн совет саманинчи пурнăçĕ» тесе палăртсан тата вырăнлăрах.

Хайлавăн темипе тĕп шухăшне уçса пама сăвăç пĕр çемьен тата пĕр ял халăхĕн кун-çулне сăнарласа парать. Анчах та Аптрамансен çемйин тата Ярмуххаль ял йышĕн пурнăçĕнче пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕн паллисем сăнланса тăраççĕ. Сăвăлла романăн тĕп сăнарĕсем –Аптраман таврашĕсемпе вĕсене çывăх çынсем, вĕсемпе пĕр ялта пурăнакан халăх. Сăвăç уйрăм çыннăн тата пĕтĕм халăхăн «аптраманлăхне» – ĕçри, çапăçури хастарлăхне, кăмăл çирĕплĕхне – пĕтĕмпех Аптрамансен йăхĕнчи çынсен сăнарĕсем урлă кăтартса панă.

Сăнарсен ретне ăру пуçĕ Униçĕм, хастар тата пурнăçра темĕн те курнă, темĕн те тӳснĕ çын, харсăр салтак (вăл çирĕм пилĕк çул хушши çарта пулнă, темиçе вăрçа хутшăннă), «уçать». «Хупаканĕсем» вара – çамрăк ăру – кĕçĕн Аптрамансем:ĕнтĕ аслă шкул пĕтернĕ Герман, совет çарĕнчи Энтри, тин çеç вăтам шкул пĕтерсе малалла вĕренме хатĕрленекен Натали, халлĕхе шкул ачи Палля. Пĕтĕмĕшле илсессĕн вара «Аптраман тавраш» сăвăлла романра сăнарсен йышĕ 30 яхăн.

Чăваш поэзи классикĕн пултарулăх тишкерĕвĕнче вăрçă çулĕсене уйрăммăн палăртса хăвармалла. Çапла, Тăван çĕршывăн аслă вăрçин пĕрремĕш кунĕсенченех вăл Тăван çĕршыва сыхлама чĕнекен сăвăсем çыра пуçланă. Çак тапхăрта унăн хайлавĕсенчи вилĕм мотивĕ çĕнĕ (паттăрла) сăн-сăпат йышăнать: хайлаври сăнарсем çивĕч лару-тăрура пуçĕсене хураççĕ, вĕсем мĕн туни сăлтавлă тата ăнлануллă. Хусанкай, ытти халăхсен сăвăçисем пекех, совет çыннисен шухăш-кăмăлĕ ним иккĕленми çирĕп пулнине, вĕсем Тăван çĕршыва чунтан юратнине, тăшмана çĕнтерессе çирĕп шаннине кăтартакан сăвăсем çырнă («Памастпăр ирĕк хулана!», «Çĕнтерӳ юрри»). Пĕтĕмĕшле вара П. Хусанкайăн вăрçа кайиччен тата фронтра çырнă сăввисене «Шухăшăмçăм, шухăш…» ярăма кĕртнĕ.

Сăвăçăн вăрçă çулĕсенчи чи паллă тата пĕлтерĕшлĕ хайлавĕсенчен пĕри «Таня» поэма пулса тăнă. Ку хайлавра П. Хусанкай партизансем хушшинче Таня ячĕпе çӳренĕ Мускав комсомолки Зоя Космодемьянскаян паттăр ĕçĕ çинчен çырнă. Тĕп сăнар кунта пĕтĕм совет халăхĕн вăрçă хирĕнчи паттăрлăхне кăтартакан сăнар пулнине те асăнмалла.

Литература тĕпчевçисем (М.Я. Сироткин) палăртнă тăрăх, çак хайлава хăйĕн шалти тытăмĕпе пĕр вăхăтрах лирикăлла та, эпикăлла та темелле. Г.И. Федоров тĕпчевçĕ шучĕпе хайлавăн эпикăлăх вăрттăнлăхĕ сăвăç пĕлтерĕшсĕр япаласем урлă та анлă картинăсем тума пĕлнипе çыхăннă. М.Я. Сироткинпа Г.Я. Хлебников ăсчахсем хак панă тăрăх, «Таня» поэма пĕр Хусанкай пултарулăхĕнче кăна мар, вăрçă çулĕсенчи пĕтĕм чăваш литературишĕн пысăк çитĕнӳ пулса тăнă. Ку поэма Хусанкай поэзийĕнче социализмла реализм принципĕсем çирĕпленнине кăтартса панă.

Литература теорийĕ

Ярăм (çаврăм) термин (унăн синонимĕ пек хайлавсен «речĕ», «ушкăнĕ», «çаври» ăнлавсем вырăнлă) хăйĕн ансăр пĕлтерĕшĕнче жанр пулăвне, пĕр-пĕр автор çырнă сăвăсен пĕрлĕхне пĕлтерет. Унăн тĕп палли – сăвăпа авторăн темĕнле кăткăс курăмне те уçса пама пулăшакан контекст хушшинчи уйрăм çыхану.

Паянхи литература тĕпчевçисенчен нумайăшĕ лирикăлла ярăма хăй тĕллĕн жанр пулăмĕ (е жанр патне туртăнакан пулăм) тесе пăхмалли пирки пусса калаççĕ. Çавна май вĕсем лирикăлла ярăма, пĕр енчен, темăпа çыхăнса тăракан сăвă ушкăнĕнчен, тепрĕр енчен вара, лирикăлла поэмăран уйăрса тăракан курăнуллă уйрăмлăхсене палăртаççĕ.

Вырăс литература тĕпчевçи Л.Е. Ляпина, сăмахран, çакнашкал курăнуллă уйрăмлăхсем шутĕнче çаксене асăнать:

1. Хайлав тытăмне (композицине) автор йĕркелесе тăни.
2. Лирика ярăмне кĕрекен сăвăсен хăй тĕллĕнлĕхĕ.
3. Лирика ярăмĕн тытăмĕ «пĕр тĕплĕ» пулни, пĕр çыхха туртăнни.
4. Ярăмри сăвăсене лирикăлла туртăм тачă çыхăнтарса тăни.
5. Сăнласа кăтартнин лирикăлла йăли.

Пĕтĕмлетсе каласан вара лирикăлла ярăм вăл – сăвă пĕрлĕхĕн хăйне евĕрлĕ жанр форми. Вăл çӳлерех асăннă курăнуллă уйрăмлăхсене тивĕçтерсе тăракан хăй тĕллĕн лирика сăввисене пĕрлештернипе пулать.

Чăваш литература тĕпчевĕнче хальлĕхе лирика ярăмне пур енлĕн хакланман-ха.

ХУШКА ХУМСЕМ

Сăвăлла ярăм (сыпăк)

* * *

Хур акăшсем какакласа иртеççĕ
Ян Райнис çĕр-шывĕ çийĕнчен.
Каллех çул çӳреме тухать поэзи,
Чăваш поэзийĕ те пур тĕнчен.

Калех кил-çуртлă чип-чипер çынах-мĕн
Туртать вăл таçталла, темскер тума.
Нумай пĕтет, сахалпала çырлахмăн…
Ак сулхăн Балти тухрĕ ман ума.

Шыв тăрă мар-ха: сахăр сапнă евĕр
Тĕлĕпеле вăл юрлă-пăрлăрах.
Хĕринерех чарлан чарлать илемсĕр,
Шаркалчăсем чăмаççĕ шаларах.

Çыр хĕрринчи паркра çӳрет хĕрарăм,
Кĕреплепе вăл çулçă пуçтарать,
Тирпейлĕ тураса пырать, сăнарăм:
Хăр çулçă курăка шăтма чарать.

Унта-кунта йăсăрланать ав тĕтĕм, –
Вута пăрахнă пĕлтĕрхи çулçа.
Тен, эп те пĕлтĕрхи шутне халь кĕтĕм?
Ик хут никам та ешермест пуль çав…

Эп самана кĕреплине шанатăп:
Хăрнах пулсассăн – сиртĕр вăл мана.
Пĕр ешĕл хунава чăрпмантарма та
Хавасăм çук – ӳсех, кашла кăна!

Кăшт ытларах та калама пултарăп:
Чăн хунавах шăтсассăн ман пата, –
Хам пăрăнăп, хамах ăна çул парăп,
Кирлех пулсан – хам ыткăнăп вута.

* * *

Шаккать юлташăн чăвашла машинĕ…
Ансат ĕçлетпĕр ку чухне, ансат.
Аса килет мăнтарăн Кĕçтенттинĕ,
Аса килет те чĕрене касать.

Вăл йывăçран машин туса хăтланă, –
Пĕччен алçырăвне камах пĕлет?
Пичетлĕ сăмаха епле сăхланнă
Пĕр кĕнеке те кăларман поэт!

Чернил тени те уншăн пулнă «чудă»:
Çырать те хуратать, калех çырать…
Хура тĕс витĕр вăл курасшăн çутă,
Чĕлхемĕр вилĕмсĕрлĕхне шырать.

Саспаллисем чăваш хĕр куçĕ евĕр
Шăрçаланаççĕ шурă хут çине…
Шаккатпăр, кĕнекен те пичетлетпĕр,
«Нарспи» çапах та çалтăр пек инçе.

* * *

«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-анне…»
Мĕн пур ман сăввăмсен пуххи
Тăмасть çак икĕ йĕркене.

Ăçта эс, вилĕмсĕр ăста?
Хăш ĕмĕрте юрларăн-ши?
Ялу ăçта, тăпру ăçта?
Мĕнле йăхран çуралтăн-ши?

Çăпатуна шакка-шакка
Утса суха кассипелен,
Мал ĕмĕтне эс аякка
Вĕçтернĕ нӳр ану çинчен.

Хыçран унтан хура курак

Çав ĕмĕте çуначĕпе
Çĕклес тесе, хăйне кура,
Сана тинкернĕ юмăç пек.

Кĕрекере курка тытса,
Ăсна курка тĕпне туман;
Çаврасерен чунна татса
Юрланă эс, инçе тăван!

Юрру сан пулнă çăкăр пек,
Тăвар пек, шыв пек кирлĕскер.
Ăна тӳлев саккунĕпе
Виçмен никам та йĕркешер.

Нихçан та преми эс илмен,
Мĕне вăл кирлĕ шăпчăка?
Юрру вилмен, юрру вилмен!
Мĕнпе виçейĕн çав хака?

Текех пуç çапмăпăр тенке,
Вăл килĕ-ха, çав самана:
Тултарĕç юрă енчĕкне,
Çавна шантартăн эс мана.

Чăваш чĕри, хуйхи-суйхи,
Шăпи – йăлт тухрĕ куç умне:
«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-анне…»

* * *

Хушка хум… Эп курап ăна куçăн:
Урхамах пек чĕвен вăл тăрать,
Çилхине хирĕç çил салатуçăн
Шурă кăпăк татса кăтăрать.

Хушка хум… Сахал мар каснă пулĕ
Эс, чăваш, Атăла, тинĕсе.
Яланах хăтарман-тăр çав пӳлĕх, –
Тек кĕл ту йăлăнса, тилмĕрсе.

Хушка хум йăвантарнă, пытарнă
Киммӳне, кĕсменне авăра.

Юлнисем макăрман: чун хытарнă
Çакăнта кăларма хамăра.

Хушка хум хушшипе, харсăр халăх,
Тухрăн эсĕ истори çулне.
Киммӳне карап пек аслатмалăх
Хăвату çитмелле ку чухне.

Хушка хум… Сăвăçсем тертленеççĕ
Сăн-сăпатлă сăмах йĕрлесе.
Эсĕ, халăхăм, эсĕ чĕлхеçĕ,
Шухăшлавçă, илемçĕ – эсех!

1963.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. П. Хусанкайăн эпикăлла хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001104.pdf
2. П. Хусанкайăн лирика ярăмĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001137.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

***Вуланине сӳтсе явтпăр**

1. П. Хусанкай пултарулăхне мĕнле тапхăрсем çине пайлама пулать? Çак тапхăрсем унăн пурнăçĕпе мĕнле çыхăннă?
2. Сăвă ярăмĕсем Хусанкай пурнăçĕпе пултарулăхĕнче мĕнле вырăн йышăнаççĕ?
3. П. Хусанкай сăвă-поэмисем С. Есенин пултарулăхĕпе мĕнле çыхăнса тăраççĕ?

4. Хусанкай пултарулăхĕнче хĕвел тухăç туртăмĕ, мотивĕсем мĕншĕн палăрмалла вăйлă пулнă?

5. П. Хусанкайăн мĕнле лирика ярăмĕсене асăнма пултаратăр?

6. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи Хусанкай пурнăçĕпе пултарулăхĕнче мĕнле палăрăм хăварнă?

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Иванова Г.Н. Петĕр Хусанкайăн илемлĕх тĕнчи: («Тилли юррисем» сăвă ярăмĕ тăрăх). Шупашкар: [б. и.], 2007. 64 с.

Манăçми Хусанкай: асаилӳсем. Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1987. 304 с.

Афанасьева И.В. Петр Хузангай – поэт, философ, педагог: монография. Чебоксары: Новое Время, 2010. 135 с.

☼ *Сочинени темисем*


1. «Нимене! Нимене!» –
   Ян янранă ир-ир.
   Пулăшса пĕр-пĕрне,
   Йӳнĕçтернĕ эпир.
2. «Мĕн чăваш чĕлхи!» – илтетпĕр
   Хăш чухне чăвашранах.

♫ *Проектсем*

1. Петĕр Хусанкай çул çӳревĕсен карттине йĕркелĕр, ăна унăн пултарулăхĕпе çыхăнтарăр (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).
2. Петĕр Хусанкайăн юрату лирики (*пĕччен çын тĕпчевĕ*).

Ω *Пăхмасăр вĕренетпĕр*

Петĕр Хусанкайăн «Хушка хумсем» ярăмĕ (пĕр пайне суйласа илсе).



Леонид АГАКОВ (1910-1977)

Кĕске биографи справки

1910 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕ – Çуткасси (Хусан кĕпернин Етĕрне уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Чăваш Республикинчи Етĕрне районĕ).

1920 çул – Етĕрнери тăватă класлă шкула вĕренме кĕнĕ.

1925-1926 çулсем – «Канаш», «Çамрăк хресчен», «Пирĕн ял» хаçатсенче пирвайхи заметкăсемпе пĕчĕк очерк пичетленнĕ.

1927-1928 çулсем – Етĕрне хулинчи педагогика техникумĕнче вĕреннĕ.

1927 çул – «Капкăн» журналта пĕрремĕш фельетон пичетленнĕ.

1928 çул – «Тумхахлă çул» ятлă пĕрремĕш калавĕ пичетленнĕ.

1930 çул – ««Валентер» комунăн пурнăçĕ» ятлă пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухнă.

1931 çул – Мускавра ача-пăчасем валли çырнă икĕ кĕнеки «Вĕтлĕхри отряд» тата «Юлашки юмах» ятпа пичетленнĕ.

1932-1935 çулсем – Мускаври А.В. Луначарский ячĕллĕ театр искусствин институчĕн (ГИТИС) драматурги факультетĕнче вĕреннĕ.

1935-1937 çулсем – Чăваш театр училищин вĕрентекенĕ, Чăваш АССРĕн Совнаркомĕ çумĕнчи искусствăсен ĕçĕсен управленийĕн инспекторĕ пулнă.

1937 çул – Пушкăрт республикинчи Пишпӳлекри колхоз театрĕн художествăлла ертӳçи пулнă.

1938 çул – Хĕрлĕ Çара кайнă.

1939 çул – «Пĕрре çуркунне» повесть çырнă.

1939-1940 çулсем – фин вăрçине хутшăннă.

1941 çул – Тăван çĕршывăн аслă вăрçине тухса кайнă, рота командирĕ, «Советский патриот» дивизи хаçачĕн яваплă секретарĕ пулнă.

1945-1949 çулсем – Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ пулнă.

1950-1952 çулсем – чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн редакторĕ пулнă.

1962-1965 çулсем – «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕнче, «Капкăн» журнал редколлегийĕнче вăй хунă.

1977 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕ – Шупашкар хулинче вилнĕ, çакăнтах хулан мемориаллă масарĕнче пытарнă.

Ăслăлăх аниичен

«Леонид Агаков – писатель-воин; вăл икĕ вăрçăра – 1939-1940 çулсенче шурă финсем Совет Союзне хирĕç пуçланă вăрçăра тата Тăван Çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче çапăçнă. Çав вăрçăсенче пирĕн писатель малтан ахаль салтак, унтан офицер, рота командирĕ пулнă, каярахпа ăна дивизи хаçачĕн редакцине ĕçлеме илнĕ. Дивизи хаçачĕ таçта аякра тухса тăман – вăл тăшманпа çапăçакан дивизирех пулнă, наступлени вăхăтĕнче наступленире, оборона вăхăтĕнче – оборонăра пулнă. Редакци сотрудникĕсем «лăпкă çĕрте» ларман; вĕсем пĕрмай полксенче, батальонсенче, ротăсемпе взводсенче, малти линире çӳренĕ. Тепĕр чух çапăçăва та кĕрсе кайнă. Пирĕн писатель çавсенчен пĕри пулнă. Çавăнпа та вăл вăрçăри ĕçсене те, вăрçă çыннисене те лайăх

пĕлет. Çавăнпах унăн вăрçă çинчен çырнă кĕнекисем ĕнентерӳллĕ пулаççĕ» (*В.А. Долгов, чăваш литература критикĕ тата çыравçи*).

«Вăрçăра совет писателĕсем пин çын таран пулнă. Вĕсем пурте тенĕ пекех хаçатсенче – фронт, арми, корпус, дивизи хаçачĕсенче ĕçленĕ. Пин çынран çуррине яхăн киле таврăнайман. Чăваш писателĕсенчен те фронтра çирĕм çын ытла пулнă. Вĕсенчен чылайăшĕ çапăçу хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕç. Анчах сывă таврăннисем кайран вăрçă паттăрĕсем çинчен сахал мар кĕнеке çырса кăларчĕç, халь те çыраççĕ, мĕншĕн тесен Отечественнăй вăрçă теми вăл – нихçан иксĕлми, ĕмĕре пымалли тема. Вăрçă хыççăн эпĕ те чылай произведени çыртăм. Ячĕсене асăнма кирлĕ те мар пуль – вулакансем пĕлеççĕ вĕсене. Çав повеçсене, калавсене, çак кĕнекене кĕнĕ «Шанчăк» ятлă çĕнĕ романа та эпĕ, паллах, вăрçăра пулнă чух пухнă материалсемпе, хам курни-илтнисемпе усă курса çырнă. Хамăн вăрçăри биографире пулса иртнĕ фактсем те сахал мар кĕрсе юлнă вăл произведенисене. Сывлăх пулсан, тен, татах та çырăп-ха вăрçă çинчен. Фронтри дневниксенче, блокнотсенче материалсем питĕ нумай-ха. Сая ярас марччĕ вĕсене. Манăн хальхи çамрăксене, пулас воин-патриотсене хăйсен аслашшĕсемпе ашшĕсем, аслă пиччĕшĕсем Тăван Çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, халăх телейĕшĕн епле паттăррăн, пурнăçĕсене те хĕрхенмесĕр çапăçни çинчен тата ытларах, витĕмлĕрех, ĕнентерӳллĕ, чĕре патне пымалла каласа кăтартас килет...» (*Л. Агаков автобиографийĕнчен).*

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

XX ĕмĕрти чăваш литературинче **Леонид Агаков** (*Агаков Леонид Яковлевич*) хăйне нумай енлĕ пултаруллă çыравçă пек кăтартнă. Уйрăмах унăн кулăшпа питлев тата детективпа пăтăрмахлă (приключениллĕ) хайлавсем çырас ăсталăхĕ палăрнă. Çыравçăн çак икĕ литература стилĕн çăлкуçне унăн хăй пурнăçне сăнласа паракан автобиографийĕнче курма пулать.

Кулăшпа питлев хайлавĕсем çыра пуçланин сăлтавне вăл, сăмахран, çапла аса илет: «1927 çулта манăн «Капкăнра» пĕрремĕш фельетон тухрĕ. Вăл фельетона пула эпĕ чутах «мăя хуçаттăм» – эпĕ ăна хамăрăн техникумри пĕр пуçтах преподаватель çинчен çырнăччĕ. Хĕсме тытăнчĕ çав мана – тӳсме çук, вĕренсе тухас умĕнхи юлашки экзаменра, чăркăша-чăркăша, чут çеç «неуд» лартса паратчĕ. Анчах Иван Мучие çав фельетон питĕ килĕшнĕччĕ. Унпа пĕрремĕш хут курнăçсанах (вĕренсе тухичченех пулчĕ-ха ку) вăл мана «санăн перу çивĕч, култармалла, йĕплесе çырма пултарни курăнать, «Капкăн» валли

тăтăшах çыр», терĕ. Çак ăшă калаçу мана сатирăпа юмор çулĕ çине тăратрĕ, тесе шутлатăп».

Паллах, çыравçă сăнласа паракан лару–тăру унăн пултарулăхри илемлĕх тĕнчине йĕркелеме пулăшнă. Анчах та илсе панă тата ытти лару-тăрусем вĕсем кулăшпа пăтăрмах туртăмĕ Агаковра хăйĕнче малтанах, çуралнăранпах, пулнипе сиксе тухнă. Çавăнпа та хайлавĕсем те унăн çăмăллăн çуралнă, ăнăçлă пулса тухнă. Çакна çыравçăн аса илĕвĕнчи тепĕр сыпăк иккĕленӳсĕр çирĕплетет: «Çарта действительнăй службăра пулнă вăхăтра, 1939 çулхи çулла, Ленинград çывăхĕнчи лагерьте, эпĕ пĕррехинче, çĕрле, ротăри дежурнăй пултăм. Çанталăк лайăх, каçĕ çап-çутă, кăнтăрлахи пекех, вулама та, çырма та пулать. Пурте çывăраççĕ, эпĕ палаткăсем хушшинче пĕчченех каллĕ-маллĕ çӳретĕп. Сасартăк унччен малтан çуралнă сюжет аса килчĕ кайрĕ... Мĕн тăвас? Пушă вăхăт пур чух – çырас çавна! Çумра хутпа кăранташ яланах пулнă манăн. Пĕр «грибок» айне лартăм та – калав ятне çырса хутăм: «Сахар мучи – чемпион...». Малтанхи пуплев те тӳрех тупăнчĕ. Унтан ыттисем те... Питĕ ăнса пычĕ ман ĕç! Ирччен калав пулса та тăчĕ. Тепĕр кунне таса хут çине куçарса Иван Мучие ярса патăм. Эрнерен çыру илтĕм: аван калав, каять «Капкăна»! Ăçта çитмерĕ пуль кайран çав ман Сахар! Вăрçă хыççăн чăвашла кĕнекесенче тăват-пилĕк хут тухнисĕр пуçне, Сахар мучи епле майпа чемпион пулни çинчен çырнине вырăсла темиçе хут кăларчĕç (Мускавра виçĕ хут), Мускаври радиопа пачĕç, вăл калава пушкăртла, мăкшăлла, таджикла, узбекла, удмуртла куçарса кăларчĕç, унтан вăл Болгарие çитрĕ (болгарла ăна паллă писатель Ангел Тодоров куçарнă), нумай пулмасть акă Венгрири Эгер хулинче тухакан хаçата ярса пачĕç – унта та чупса çитнĕ иккен Сахар мучи...».

Детективпа приключениллĕ хайлавсем çырас туртăм вăйлă пулни те, сăмахсăрах, Агаковăн шалти илемлĕх тĕнчипе çыхăннă. Çапах та чи малтанхи утăмĕ, çыравçă хăй аса илнĕ тăрăх, ачалăхран, юратнă кĕнекесенчен пуçланнă. «Ырăпа çеç асăнатăп эпĕ Етĕрнере вĕреннĕ çулсене. Унта мана литературăна ытларах та ытларах юратма вĕрентрĕç – вырăслине кăна мар, чăвашлине те. Питĕ нумай вулаттăм эпĕ, вырăс классикĕсемсĕр пуçне Жюль Верн, Майн Рид, Фенимор Купер кĕнекисене «çăтаттăм». Пĕр хушă Шерлок Холмс тата ытти сыщиксем çинчен çырнă детективсем пуçа çавăрсах яратчĕç. Тен, çавăнпа та-и эпĕ приключениллĕ жанра паян кун та юрататăп, хам та, вăй çитнĕ таран, çав жанрпа ĕçлеме тăрăшатăп», – çапла аса илет вăл пăтăрмахлă хайлавсем çырас çул çине тăнине.

Чăваш литературинчи приключениллĕ литература детективлă тата фантастикăлла прозăпа тачă çыхăнса тăрать. Хăш-пĕр чухне вĕсене уйăрма та йывăр, анчах та хăй тĕллĕн жанр тĕсĕ пек вăл пурпĕрех аталаннă. Паллах, чăваш приключениллĕ прозинче чи малтанах чăваш халăхĕн нациллĕ тавракурăмĕ, шухăшлавĕ ӳкерĕннĕ. Тĕслехрен, тĕнче литературишĕн характерлă пулăмсене кураймăн кунта: сăнлакан тавралăхра, çут-çанталăкра темĕнле тĕлĕнтермĕш, экзотика çук, чăваш историйĕнче тинĕс çинчи вăрă-хурахсем те пулман тата ыт.те.

Чăваш литература тĕпчевçисем (В.А. Абрамов) асăрханă тăрăх приключениллĕ хайлав жанрĕн ХХ ĕмĕрти аталанăвĕнче темиçе тапхăр палăрăнать: 1) пăтăрмахлăх паллисем XIX-XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш çыравçисен хайлавĕсенчех тупăнаççĕ (В. Лебедев, И. Иванов, И. Юркин, О. Романов); 2) Граждан вăрçи вăхăтĕнче çивĕч сюжетлă калавсемпе повеççем çуралаççĕ (М. Данилов-Чалтун), анчах та кунта приключениллĕх туртăмĕ питĕ вăйсăр палăрăнать; 3) 1930-1940 çулсенчи приключениллĕ хайлавсенче детектив витĕмĕ вăйланать (М. Трубинан «Мучар» повеçĕ, Л. Агаковăн «Пĕрре, çуркунне...», «Партизан Мурат», «Ылтăн вăчăра»); 4) 1960-1990 çулсенчи приключениллĕ жанр темиçе юхăм çине пайланать: ача-пăча литератури (Г. Красновăн «Катăк чĕлĕм» повеçĕ, Л. Агаков, Р. Ярантай, В. Енĕш хайлавĕсем), вăрçăпа приключениллĕ хайлавсем (М. Кипекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романĕ, Г. Краснов, Ç. Аслан хайлавĕсем), разведчиксемпе шпионсем пирки çырнисем (И. Вутланăн «Асамат кĕперĕ», «Çул – пĕрре», «Кĕтмен утăм» трилогийĕ, А. Савельев-Сас хайлавĕсем), историллĕ пăтăрмахсем (М. Юхма хайлавĕсем).

Чăваш литературинче хĕвел анăçĕнчи классикăлла детектив жанрне çывăх хайлавсем çукпа пĕрех. Çакăн сăлтавĕ чи малтанах чăваш халăхĕн историйĕнче тата тĕнче туйăмĕнче пытаннă пулĕ. Чăвашсем хушшинче вăрă-хурахра çӳресси, юнашар пурăнакан çынсене çаратса-вĕлересси (вĕсем кӳршĕсене сив сăмахпа кӳрентерессинчен те сыхланнă) ХХ ĕмĕрченех питĕ сайра пулнă. Халăхăн кăмăл-сипечĕ çеç мар, пирĕн тăван чĕлхе те детектив жанрне тивĕçтермест. Чăваш чĕлхе культуринче шăхвăртса, çепĕççĕн систерсе, юптарса калаçасси мала тухать. Детектив жанрĕ ыйтакан тӳркеслĕх çук кунта. Тен çавăнпах пулĕ чăваш литературишĕн яланах кулăшпа питлев, синкерлĕх, лирикăлăх пĕлтерĕшлĕрех пулнă.

Л. Агаковăн вăрçă темипе çырнă повесть-калавĕсем пурте тенĕ пекех пурнăçри чăннипех пулса иртнĕ пулăмсене сăнласа параççĕ. Акă, сăмахран, «Ылтăн вăчăра» повесть мĕнле çурални пирки автор хăй

çапла каласа парать: «1943 çулхи февраль уйăхĕнче, Курск облаçĕнчи Чернихово ялĕнче, эпĕ блокнота çапла çырса хунă: «Ĕненмелле мар хăрушă историсем каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсем пирĕн çынсене çĕршерĕн-çĕршерĕн персе пăрахнă, вутта пăрахса çунтарнă. Паян пĕр хĕрарăмпа калаçрăм. Ку ялсем мар вăл, темиçе çухрăмри Веретенино ялĕнчен, халь вăл ял çук, çунтарса янă. Нимĕçсем вĕсен ялне тăрук хупăрласа илсе, пурне те хăваласа кăларса, 197 çынна персе пăрахнă. Ку хĕрарăмăн 7 ачипе упăшкине вĕлернĕ, хăй аманса тăнсăр пулса выртса юлнă. Унсăр пуçне тепĕр арçын ача – вăл та аманнă – чĕрĕ юлнă»». Шăпах çак историллĕ ĕç-пуçа тĕпе хурса вăрçă хыççăн Л. Агаков «Персе вĕлернĕ ача» повесть çырать, хайлав пĕрремĕш хут 1947 çулта «Ялав» журналта «Ылтăн вăчăра» ятпа пичетленсе тухать.

Леонид Агаков прозин паллă енĕ вăл – паттăрлăха тĕлĕнтермелле, романтикăлла пысăклатса, илĕртӳллĕн çутатса пани. Çыравçă хăюллă та паттăр çынсене сăнлать, вĕсене йывăр лару-тăрура, çивĕч кĕрешӳре кăтартать, сюжета интереслĕ аталантарма пĕлет, çăмăл та сăнарлă чĕлхепе çырать. Паттăр ĕç тунине Агаков романтикăлла тĕлĕнтермĕш пек çеç мар, реализмла сăлтавласа та кăтартма тăрăшать. Час-часах çыравçăн хайлавĕсенче сăнарăн ĕçĕ-хĕлĕ унăн характерĕпе килĕшсе тăрать.

Литература теорийĕ

Приключениллĕ (пăтăрмахлă) хайлав тесе илемлĕ литературăн, ытларах чухне прозăн, пĕр тĕсне каласçĕ. Унăн никĕсенче чăн пулнă е шутласа кăларнă ĕç-пуçсем пирки кăсăклăн та антăхтарса каласа паракан калав выртать. Приключениллĕ литературăн палăрăмĕ – динамикăлла сюжет, лару-тăру çивĕчлĕхĕ, кăмăл-туйăмсен хĕрӳлĕхĕ, вăрттăнлăх, вăрă-хурах, йĕрлев, айăпла ĕç мотивĕ. Тĕнче литературинче ытларах приключениллĕ роман сăралнă, уйрăмах XIX ĕмĕрте (Жюль Верн, Фенимор Купер, Александр Дюма). Çакнашкал хайлавсенче сăнарсене ырлавлă паттăрсемпе чуниллисем, вăрă-хурахсем çине курăмлă пайланă. Приключениллĕ хайлавсен тĕп тĕллевĕ – вулакана вĕрентесси, чăнлăха тишкересси е сăнласа парасси мар, киленӳ кӳресси.

Детективлă жанр тесе ăнланма йывăр ĕç-пуçа (вăрă-хурахла ĕçе, çын вĕлернине) тĕпчекен хайлава каласçĕ. Кунта сыщикпа (шыравçăпа) айăплавлă ĕç тăвакан çын хушшинчи хирĕç тăру пĕлтерешлĕ. Детектив жанрĕшĕн айăплавлă лару-тăрăва тĕпчени, тĕрĕслĕхпе саккунсăрлăх хирĕçĕвĕ, çак хирĕçӳре тĕрĕслех çиеле тухни пĕлтерĕшлĕ. Вăл илемлĕ литературăра тата кинематографинче анлă сарăлнă. Классикăлла детектив хайлавĕ хĕвел анăç литературинче аталаннă (Эдгар По, Артур Конан Дойль, Агата Кристи). Классикăлла детективăн пĕлтерĕшлĕ енĕ –

пăтăрмахлă, айăплавлă лару-тăрăва уçса пама пулăшакан пулăмсемпе ĕçсен туллилĕхĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

РАЗВЕДЧИК ДЖУНГАЛИ

Калав

Эхер те, эп вилес пулсан та,
Мана хисеплĕр коммунист тесе...
(*Фронтри сăвăран*).

...Чикĕ урлă каçнă хыççăн батальон тăваттăмĕш кун ĕнтĕ хăйĕн секторĕпе пырать. Çак тăватă кун хушшинче вăл хăйĕн çулĕ çинче тĕл пулакан финсен нумай бандитла отрячĕсене аркатрĕ, йĕплĕ пралук картисене ватса, тĕлĕнмелле чеелĕхпе лартса тултарнă минăсене тасатса, çĕмĕрсе хăварнă кĕперсене хăвăрт тӳрлетсе, таттисĕр, пĕрмаях малалла шурĕ.

Батальон пуçĕнче, çӳлĕ кăвак лаша çинче, сарлака хулпуççиллĕ, кăшт курпунтарах комбат ларса пырать.

Ĕнер ирхине, К. шывĕ урлă кĕпер тунă чух, леш енчи йывăçсем хушшине вăрă пек пытанса выртнă белофинсем сасартăк пулеметсемпе, автомат-пăшалсемпе пеме тапратрĕç. Батальон, хăвăрттăн ик еннелле сарăлса, тăшмана хирĕç çунтарма тытăнчĕ. Пĕр çирĕм минут хушши таврари сывлăшра пулеметсем шатăртатни, пульăсем пин-пин сăпсасем пек нăйлатса шăхăрни çеç илтĕнсе тăчĕ. Кунпа пĕрлех батальонăн икĕ флангĕнче те минометсем пĕтĕм вăрмана чĕтретсе кĕрĕслетме тытăнчĕç, çырман леш енче, тăшмансем пытанса ларнă çăра туратлă йывăçсем патĕнче, пирĕн гранатăсем шаптлата-шартлата çурăлни илтĕнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, финсен пулемечĕсем шарлами пулчĕç, гранатăсемпе минометсем хупларĕç вĕсен çăварĕсене...

Финсем вăрман енне шалалла тарчĕç курăнать, кĕпер туса пĕтмен пирки батальон вĕсене хăваламарĕ.

– Пурпĕрех пирĕн алла лекеççĕ-ха вĕсем, инçех тараймĕç, – терĕ комбат, батальон умне тухса тăрса. Вăл çырма хĕрринчех, никамран малта, финсене пулеметран ăшаласа выртнă иккен.

Ун патне тулли те çаврака питлĕ, хĕсĕкрех куçлă, хура сăнлă кĕçĕн командир пычĕ.

– Юлташ капитан! Сирĕн янахран юн юхать!– терĕ вăл, пӳрнипе комбатăн пичĕ çине кăтартса. Çавăнтах, тепĕр еннелле çаврăнса, хыттăн кăшкăрчĕ:

– Санита-ар! Санинструкто-ор!..

Комбата, чăнах та, сылтăм тăнлавĕнчен суранлатнă иккен. Анчах та вăл медпункта каясси çинчен илтесшĕн те пулмарĕ. Санинструктор

пырса суранне çыхсанах, вăл хăй патне çавăтса пынă лаши çине утланса ларчĕ.

– Юлташ капитан, астăвăр, кайран япăх ан пултăр... – сăмах хушрĕ унăн суранне малтан асăрханă кĕçĕн командир.

– Ан хăра, Джунгали, нимĕн те пулмасть! Пĕчĕк ача-им эпĕ пуля кăшт шăйăрса кайнăшăнах стройран тухма?– терĕ те ăна комбат, батальона çырман тепĕр енне каçарма пуçларĕ.

Джунгали хăйĕн отделенине кайса тăчĕ.

– Маттур пирĕн комбат... – шухăшларĕ вал. – Çав тери хăюллă, паттăр чĕреллĕ этем...

...Çул çинче, унта та кунта, совет салтакĕсем çывхарнине кура хăвăрт таракан финсем пăрахса хăварнă вĕр-çĕнĕ велосипедсем, йĕлтĕрсем, патрон ещĕкĕсем выртаççĕ. Хăшĕсем – çăмăлланма – шинелĕсене те хыва-хыва ывăтнă. Вăрçă пуçланиччен хăйсен «паттăрлăхĕпе» тем пекех мухтаннă щюцкорсем халĕ мулкачсем пек тараççĕ-мĕн!

Майĕпе каç пула пуçларĕ, батальон ансăр çул тăрăх пĕр пысăк уçланкă хĕрринелле тухрĕ. Комбат лашине чарса çĕре анчĕ те командирсене халех хăйĕн патне пухăнма хушрĕ. Вĕсемпе вăл мĕн калаçнине никам та илтмерĕ, анчах та вунă-вунпилĕк минутран пурте пĕлчĕç: ирччен батальонăн çак уçланкă хĕрринче тăмалла.

Часах çăра туратлă чăрăшсем айне палаткăсем карăнчĕç, вĕсен ăшĕнче пĕчĕкçеç кăвайтсем çунма пуçларĕç. Халăх йышлă пулин те, ним шав та çук, пурте шăппăн кăна калаçаççĕ, мĕншĕн тесен тăшман усал та чее, унран кирек мĕнле ирсĕрлĕхсем те кĕтме пулать... Часах пăшăлтатни те илтĕнми пулчĕ, боецсем – кун каçа ĕшĕннĕ хыççăн – çывăрма выртрĕç. Темиçе сехетлĕх «лагерь» йĕри-тавра кăларса тăратнă хуралти боецсем çеç çывăрмаççĕ, вĕсем, никам асăрхамалла мар вырнаçса, вичкĕн куçĕсемпе тĕттĕмелле пăхса, таврара епле те пулин сас-чĕв пуласса итлесе выртаççĕ.

Джунгалийĕн тăруках ыйхă килмерĕ... Юлашки темиçе кун хушшинче пулса иртнисем унăн куçĕ умĕнче пĕрин хыççăн тепри шуса иртрĕç. Унтан вăл хăй Хĕрлĕ Çара пĕлтĕр кĕркунне мĕнле тухса килнине аса илчĕ. «Кзыл Аскер» колхоз хăйĕн чи маттур джигитне çав тери савса ăсатрĕ, хура куçлă Эмине, асăнмалăх, çынсем куриччен хăрах хăлхинчен алкине хывса пачĕ.

– Ан çухат... Алкама çухатсан, пирĕн юрату та çухалĕ...

Тепĕр ирхине вăл юлатшĕсемпе пĕрле панулми хулине – илемлĕ Алма-Атана çитрĕ, вĕсене поезд çине лартрĕç, вунă кунтан Ленин хулине, Джунгалие хăйĕн чапĕпе калама çук тĕлĕнтернĕ Ленинграда,

пырса тухрĕç. Вĕренӳ пуçланчĕ... Кунтан-кун Джунгалишĕн тĕнче сарăлса пынă пек туйăнчĕ, кунтан-кун унăн умĕнче пурнăçăн çĕнĕрен çĕнĕ страницисем уçăлса пычĕç... Çуркунне лагерьти пурнăç пуçланчĕ... Кунта Джунгалийĕн тата пысăк савăнăç пулчĕ: пулеметчиксен сборĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн комбат ăна пĕтĕм батальон умне чĕнсе кăларса тав турĕ... Унăн сăнне хаçатра пичетлесе кăларчĕç, хаçат тухнă кунах Джунгали ăна Эмине патне ярса пачĕ.

Тепĕр ик уйăхран Джунгалие батальон штабне чĕнтерчĕç. Комбат яланах шăтарас пек пăхакан куçĕпе Джунгалие пăхса илчĕ, унтан ларма хушрĕ.

– Сана эпир паянтан пуçласа отделени паратпăр, эсĕ – командир пулатăн.– терĕ.

Джунгали, кун пек хыпара кĕтменскер, тӳрех сиксе тăчĕ.

– Ан пăлхан, ан пăлхан, лар, – аллине пукан сине кăтартрĕ комбат. – Эп каланине кирлĕ çĕрте çирĕплетнĕ ĕнтĕ... Çапла, командир пулатăн. Эпир сана шанатпăр... Анчах та асту, Хĕрлĕ Çар командирĕ пуласси вăл – питĕ пысăк чыс, вăл чыса таса тытма пĕлес пулать...

– Ăнланатăп, – терĕ Джунгали, каллех ура çине тăрса, – анчах та... пултарайăп-ши эп? Вырăсла та начартарах...

Комбат ăна каласа пĕтерме памарĕ, пӳлчĕ.

– Кирлĕ мара каласатăн! Сан пек каччăсем пултармасан тата... Эпир пурте малтан сан пек пулнă.

Комбат пирус чĕртрĕ. Джунгалие те туртма пачĕ, унтан хăй епле командир пулни çинчен каласа кăтартрĕ. 1918 çулта, Совет çĕршывне пур енчен те тăшмансем тапăнса хĕсме тытăннă вăхăтра, вăл – Питĕрти пĕр заводра «подручный» пулса ĕçлекен 16 çулхи ача – хăй ирĕкĕпе çара çырăнса фронта кайнă. Ик-виç çул хушшинче нумай фронтсенче пулса курнă, фронтрах командира тухнă.

– Пурăна-киле эсĕ те пысăк командир пулатăн акă... Чĕререн тăрăшни тата хамăр çĕршыва чунтан юратни пулсан, этем теме те çĕнсе илĕ, Джунгали!– терĕ вăл юлашкинчен.

Çакăнтан вара комбат Джунгалишĕн хаклăран та хаклă çын пулса тăчĕ. Мĕнпур вăйне хурсах тăрăшрĕ Джунгали, «Кзыл Аскер»колхозри джигит. Çакăн пиркиех вара вăл ырă ятсăр пуçне нимĕн те илтмерĕ аслă командирсенчен.

...Кун каçа ĕшенни çĕнтерсе илме пуçларĕ. Джунгалийĕн куçĕ хăех хупăнчĕ, шăмшак тăрăх темле ырă ăшă сарăлса кайрĕ, шухăшсем татăлчĕç. Тем вăхăт çывăрнă вал... Сасартăк, такам шăппăн кăна хăйне хушаматпа чĕннине илтсе, вăранса кайрĕ.

– Джунгали!.. Юлташ Джунгали...

– Мĕн?– хăвăрт тăрса ларчĕ вăл. – Кам?

– Эпĕ ку, эпĕ...

Джунгали взвод командирĕн сассине палларĕ.

– Сана комбат чĕнет...

Джунгали пĕр сăмахсăрах сиксе тăчĕ те хăйĕнпе юнашар выртакан боеца вăратрĕ.

– Мана чĕнеççĕ, ман вырăна эсĕ юлатăн... Асту!

– Есть!– терĕ боец, палаткăра выртакансене пăхса çаврăнса.

Ик минутран лейтенантпа Джунгали комбат палаткине пырса кĕчĕç. Комбат çывăрма шутламан та иккен, аран-аран çунакан кăвайт умне пĕшкĕнсе, карттă çине пăхса ларнă.

– Тăхтăр пăртак, – терĕ вăл, пырса кĕнисем çине пăхмасăрах. Унччен те пулмарĕ – палатка хĕрри çĕкленчĕ, палаткăна тата икĕ кĕçĕн командир кĕрсе тăчĕç:

– Юлташ капитан, эсир хушнипе килтĕмĕр!

– Юрĕ... – комбат сылтăм аллине карттă çине хучĕ. – Акă мĕн, юлташсем... Сире эпĕ питĕ ответлă задача пурнăçлама яратăп. Пăхăр çакăнта... – Вăл пӳрнипе карттă çине тĕллерĕ. – Эпир халь çак вырăнта тăратпăр. Ку – юнашар уçланкă. Унтан каллех вăрман пуçланать. Ик–виç километрта Х. ялĕ. Сирĕн кĕçĕр çав Х. ялне çитсе килес пулать. Белофинсем пур-и унта, çук-и? Нумайăн-и? Орудисем пур-и вĕсен? Пирĕн çул çинче мĕнле чăрмавсем пулма пултараççĕ?

* * *

Комбат панă задачăна разведчиксем тĕп-тĕрĕс пурнăçларĕç. Вăрман варринче ларакан ял патне виççĕн виç енчен упаленсе пырса, кил-çуртсем, хӳмесем çуммипе йăпшăнса, яла урлă-тăрăхах «хыпашласа» тухрĕç. Никам та çук иккен, ял пуш-пушах. Чĕрчунсенчен пĕр тăлăх йытăпа пĕр пăрусăр пуçне нимĕн те тĕл пулмарĕç вĕсем.

– Кулаксем пурăннă пулмалла кунта, çурчĕсем ытла лайăх, тата кил таврашĕнче машинăсем те нумай...– шухăшларĕ ялăн анат вĕçне тĕрĕсленĕ Джунгали. – Чухăнсен ун пек пулас çук! Çавăнпа тарнă та вĕсем... Комбата çавăн пекех каласа паратăп...

Вăл ял хыçĕнчи юлашки хӳме урлă каçрĕ те, таврари шăплăха пĕр-ик минут итлесе выртнă хыççăн, вăрманалла упаленсе кайрĕ. Юлташĕсемпе тĕл пулма каласса татăлнă çĕре, пĕр пĕчĕк çырма пуçне çитсен, çамрăк чăрăш айне пытанчĕ.

– Аван пулчĕ-ха ку паян. Приказа пурнăçларăмăр. Ял – пушă, ирпе хăюллăнах килме пулать... Анчах та юлташсем мĕншĕн килмеççĕ-ха? Çĕтсе каймарĕç-ши?

Вăхăт шурĕ... Çур сехет иртрĕ, унтан пĕр сехет. Джунгалийĕн урисем шăнма пуçларĕç, айĕнчи юр ирĕлсе пăрланма тытăнчĕ. Юлташсем кĕç-вĕçех тухаççĕ пуль тесе, вăл тата тепĕр çур сехет кĕтсе выртрĕ. Урисем ыратакан пуличченех шанса кайрĕç, пĕтĕм шăмшак чĕтреме пуçларĕ.

– Мана тĕл пулайманнипе иккĕшех кайнă пулас, – шухăшларĕ Джунгали юлташĕсем çинчен. – Капла выртсан, ырри пулас çук, каяс...

Чăрăш тĕми айĕнчен шуса тухрĕ те мăн вăрман ăшне кĕрсе кайрĕ. Вăрманта хăрушла шăплăх, пĕтĕм тĕнче пĕр харăс сывлами пулнă пекех туйăнать. Тĕттĕм, куçран чиксен те курăнмасть, ура айĕнчи шурă юр çеç тĕксĕм-кăвакăн палăрать. Джунгали пĕр йывăç патĕнчен тепĕр йывăç патне, шăппăн, туратсене чăштăртаттармасăр пыма тăрăшса утрĕ. Пĕр километр ытларах кайсан, вăрманта сасартăк кăштах çутăлнă пек пулчĕ. Джунгали çÿлелле пăхрĕ. Çăра пĕлĕтсем хушшинчен чалăш уйăх шуса тухнă иккен.

– Хамăрăннисем патĕнчен кайнăранпа вăхăт та нумай иртрĕ ĕнтĕ, тен, часах çутăлать те пулĕ...

Чăнах та, майĕпе кăвак çутă çапма пуçларĕ. Джунгали, хăрах аллипе шинель аркисене çĕклесе, хăвăртрах утма пуçларĕ. Батальона часрах çитес пулать-çке, пĕлтерес пулать мĕн пулнине, ирпе ирех батальонăн малалла наступление каймалла!

Сасартăк сылтăм енче хăрăк турат хуçăлнă сасă илтĕнчĕ...

Джунгали пĕр йывăç кутне лап выртрĕ те сас илтĕннĕ еннелле мĕнпур куç вăйĕпе пăхма тытăнчĕ. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ. Татах тепĕр турат хуçăлчĕ.

– Финн... – шухăш вĕçрĕ те Джунгали пуçĕнче, унăн аллисем винтовкăна çатăрах пăчăртарĕç. Унччен те пулмарĕ, вăл пĕр йывăç патĕнчен теприн патне темле мĕлке сиксе каçнине асăрхаса юлчĕ.

– Вĕсен разведчикĕ пулмалла, – шухăшларĕ Джунгали, – йывăç тăрринче ларнă пулĕ-ха... Курăпăр, мĕн пулĕ! Эх, чĕррĕн тытса кайсан аванччĕ!.. «Чĕлхе» пулатчĕ...

Çапла шухăшларĕ çеç – хайхи мĕлке каллех тепĕр тĕмĕ патнелле ыткăнса каçрĕ.

Джунгалин чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапма пуçларĕ. Тăшман разведчикие чĕррĕн тытса каяс шухăш ăна калама çук пăлхатса ячĕ. Вăл йывăç айĕнчен тăчĕ те мĕлке курăннă çĕрелле хăвăрттăн шума тытăнчĕ. Тул çутăлса пырать, ĕнтĕ вăрманта вунпилĕк-çирĕм чалăшра аванах курăнакан пулчĕ.

– Кĕрĕс! – турĕ кĕтмен çĕртен пăшал сасси малти тĕмĕ айĕнчен... Пуля, хăлха çуммипе шăхăрса иртсе, йывăça шалтлатса çапăнчĕ.

Тăшман Джунгалие асăрхарĕ иккен. Джунгали самантлăха пуçне юр ăшне чикрĕ, анчах çавăнтах çĕкленсе малалла пăхрĕ, хайхи тăшман йывăçсем хушшипе кукăр-макăррăн чупнине курчĕ.

– Ну, манранах тараймăн!– терĕ те Джунгали шăл витĕр, тăшман çулне пÿлес шутпа, тÿрех васкаса чупрĕ. Пĕр самантлăха тăшман мĕлки курăнми пулчĕ. Малта çырма пулнă-мĕн. Джунгали пĕтĕм вăйран чупса пырса çырманалла кусса анчĕ те кăкăр таран шыва кĕрсе кайрĕ... Çавăнтах тепĕр еннелле сиксе тухрĕ те каллех хăвалама тытăнчĕ.

– Пурпĕрех тараймастăн...

Тăрук ун хыçĕнче пăшал сасси кĕрĕслетрĕ. Пуля Джунгалин питçăмартине çунтарса илчĕ. Хăйĕн хыçĕнче те тăшман пуррине шута илсе, вăл вилнĕ пек пулса выртрĕ. Самантранах аяккалла упаленме тытăнчĕ, лăпсăркка туратгисене çĕре çитнех саркаланă чăрăш айне пытанса йăпшăнчĕ.

Пит çăмарти тăрăх юн чарăнма пĕлмесĕр юхрĕ. Пырĕ типсе ларчĕ. Джунгали çăвар тулли юр хыпса илчĕ. Сывламасăр итлерĕ... Темшĕн çак вăхăтра йывăç тăррисем кашлама пуçларĕç, Таçта инçетре, сылтăм енче, тупăсем пени илтĕнсе кайрĕ.

Çак хушăрах, инçетре те мар, йывăçсем хыçĕнче тăшмансем çывхарса килни сисĕнчĕ. Йывăçсем хушшипе кăштăртатни, типĕ туратсем хуçăлса шартлатни, нÿрĕ юр нăтăртатни Джунгалие уççăнах илтĕнчĕç ĕнтĕ.

Акă унăн куçĕ çывăхрах пĕр тăшман мĕлкине тытрĕ. Алăсем хăйсемех винтовкăна çĕклерĕç, пÿрне курок çине пусрĕ. Çавăнтах пăшал сасси янăраса кайрĕ.

– Са-атана!– уççăнах илтĕнчĕ тăшман хаяррăн кăшкăрни. Белофинн çĕрелле йывăррăн персе анчĕ.

– Курăпăр-ха кам кама тĕп тăвĕ!– савăнăçлăн шухăшларĕ те Джунгали, тепĕр чăрăш айне кушак пек сиксе каçрĕ.

Ун çинелле харăссăн темиçен персе ячĕç. Пăшал сассисем, вăрманта шăплăха çурса, таçта çитиех кĕрлесе кайрĕç.

– Курăпăр-ха... – терĕ Джунгали тепĕр хут, пысăк хыр патне чупса каçса. Анчах пăшал пенисем йышланах пынине кура: – Капла май килмест... Эп пĕччен, хамăрăннисем патне тухас пулать! – тесе шухăшласа илчĕ.

Тĕмĕсем хушшинче каллех мĕлке курăнчĕ. Джунгали ун çине тĕллесе курока туртрĕ те тепĕр белофинн, малтанхи пекех, темскер кăшкăрса йывăррăн ÿкнине курчĕ. Халь ăна хăйне те пур енчен те пеме тапратрĕç. Вăл хăйĕнчен инçетре мар тарăн çырма, унтах тăвăлпа ÿкнĕ йывăçсем пуррине аса илчĕ. Пĕрре сылтăмалла, тепре сулахаялла,

унтан каялла печĕ те çырма патнелле ыткăнчĕ. Пăшал сассисем пĕтĕм вăрманĕпех янăрарĕç ĕнтĕ... Таврара пульăсем шăхăрчĕç кăна. Пĕри Джунгалие пĕçĕрен çыртрĕ. Вăл çырана чупса çитсе аялалла сикрĕ, каллех кăкăр таран шыв урлă шăмпăртатса каçрĕ. Акă ĕнтĕ купаланса выртакан йывăççем...

– Халь килĕрех! – терĕ Джунгали, темле шăтăка кĕрсе тăрса. Аллисем винтовкăна хăвăрт авăрларĕç, куçĕ йĕри-тавра мĕн пуррине сăнарĕ...

Тăшмансем ун йĕрĕпех чупса пынă-мĕн. Джунгали сывлăш çавăрма ĕлкĕричченех сăртра пĕр белофинн кĕлетки курăнчĕ. Джунгали персе ячĕ, тăшман çӳлтен пăрахнă каска пекех йăванса анчĕ çырма тĕпĕнчи юханшывалла. Самантранах ун хыççăн тепри чăмрĕ...

Сылтăм хулпуççие витĕрех такам сивĕ йĕппе чикнĕ пек туйăнчĕ, унтан вĕри пулса кайрĕ. Ĕнтĕ тăшмансем ăна виççĕмĕш хут суранлатнине вăл аванах ăнланчĕ, ун куçĕ темле тĕтре витĕр пăхнă пек çеç куракан пулчĕ, анчах та Джунгали, юлашки вăйне пухса, обойма хыççăн обойма пушатрĕ. Юр çинчи пушă гильзăсен купи пысăклансах пычĕ.

– Тăван çĕршывшăн... – çирĕппĕн çыртса лартнă шăлĕсем витĕр пăшăлтатрĕ вăл, пĕтĕм чун хавалне пухса. – Мейĕр, илĕр манăн кучченеçе!..

Вăрманта пăшал пени ку вăхăтра татах вăйланчĕ. Таçта инçетре те мар, Джунгалисен батальонĕ вырнаçнă енчен, темиçе пулемет урнă пек шатăртатма тапратни хăлхана пырса кĕчĕ.

– Апр... ăрр... – темле типĕ сасăпа ĕрлеме тытăнчĕç кĕске черетсем, унтан вара, кăшт тăхтасан, дискĕ-дискĕпех кăларса яма тытăнчĕç курăнать. Пĕр çĕр-çĕр аллă чалăшран аякра та мар умлăн-хыçлăн икĕ граната сиксе çурăлчĕç, пĕтĕм вăрман чĕтресе кайрĕ...

– Неушлĕ кусем пурте мана переççĕ?– шухăшласа илчĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пыракана Джунгали. – Юлташсем ăçта-ши? Тен, ку пулеметсем – пирĕн? Тен, мана пулăшма килеççĕ?..

Леш енчи çыранра, шăпах ик-виç минут каялла икĕ белофинн шывалла чикеленсе аннă вырăнта, каллех тăшман курăнчĕ. Вăл йывăç çумне пĕшкĕнсе автомат-пулемета вырнаçтарма тытăннине Джунгали курчĕ те, кăкăр умне чикнĕ чăмăркка гранатăна туртса кăларса, пур-çук юлашки вăйне пухса, тăшман патнелле ывăтрĕ.

Граната сиксе çурăлса кайрĕ...

Тĕтĕмпе, çулăмпа, тăпăлнă çĕрпе пĕрле сывлăшалла белофинпа унăн пулемечĕ те пĕр метр пек çĕкленчĕç, унтан иккĕшĕ те пĕр харăсах çырма тĕпнелле сирпĕнчĕç...

Анчах Джунгали хăй те пачах вăйсăрланса çитрĕ. Кăкăрĕнче тӳсме çук вĕриленсе, вутпа çунтарнă пек çунакан пулса кайрĕ. Вăл аран-аран пĕр ывăç юр илсе хыпрĕ. Пуçĕ çаврăнма пуçларĕ, чĕркуççисем хутланса анчĕç.

– Мĕнле-ха... Эп заявлени параймарăм пулать... – йывăр тĕлĕкри пек шухăш çуралчĕ унăн.

Сулахай аллипе кăкăрĕнчен, гимнастерка кĕсйи тĕлĕнчен тытрĕ. Унта, гимнастерка кĕсйинче, Джунгали темиçе кун каялла çырнă заявлени выртнă, вăл хăйне парти кандидатне илме ыйтнă, анчах та ăна памашкăн тăхтаса тăнă – çапăçусенче паттăр ĕç тунă хыççăн авантарах пулать, тенĕ. Çав кĕсъерех çаврака çутă кĕмĕл алка – хура куçлă Эмине парни выртнă...

Вăрман хытăран хытă кĕрлерĕ.

Ĕнтĕ пулеметсем çывăхрах шатăртатрĕç, унта та кунта гранатăсем çурăлчĕç, такамсем команда парса кăшкăрнисем илтĕнчĕç.

Джунгали ăнран кая пуçларĕ...

Юлашки хут ăна, тĕтре витĕр курăннă пек, хăйĕн тăван килĕ, ватă амăшĕ, колхозри джигитсем, хура куçлă Эмине, комбатăн хăюллă сăнĕ, разведкăна пĕрле кайнă юлташĕсем курăнса иртрĕç...

Вăрман çаплах кĕрлесе тăчĕ.

Джунгалирен инçетре те мар хулăн сасăпа кăшкăрнă команда янăраса кайрĕ.

– Вперед, за мной!.. В атаку!...

– Урра-а!..

Джунгали ăна илтмерĕ.

* * *

Вăл икĕ-виçĕ кунтан Ленинградри пĕр госпитальте вăранса тăна кĕчĕ.

Шап-шурă таса стенасене, хăйĕн пуçĕ патĕнче пукан çинче ларакан шур халатлă хĕрарăма курсан, вăл нумайччен хăй ăçта лекнине ăнланаймасăр выртрĕ.

– Ăçта эпĕ?– ыйтрĕ юлашкинчен.

– Больницăра, шăллăм, госпитальте, – терĕ ăна хирĕç йăваш саслă хĕрарăм. – Кунта эс икĕ талăк ытла выртатăн ĕнтĕ...

– Аха-а, каласма пуçларĕ-и?– савăнăçлăн пуçне çĕклерĕ юнашар койка çинчи çын. – Тавах медицинăна! Хăранăччĕ эпĕ!

Джунгали пуçне ерипен çавăрчĕ те разведкăра хăйĕнпе пĕрле пулнă юлташне палласа илчĕ. Тăруках унăн чĕри савăнăç ăшшипе тулса ларчĕ.

– Эс те кунта-и?

– Эп те çав! Алла çĕмĕрчĕç, явăлсем! Эс пĕлместĕн-ха вĕт мĕнле пулнине...

– Паллах, пĕлместĕп.

Джунгали тăна кĕрсе каласакан пуласса икĕ талăк ытла пăшăрханса кĕтсе пурăннă юлташĕ халь ăна каçса кайсах каласа кăтартма тытăнчĕ.

...Çав каçхине Х. ялĕнче разведка туса пĕтерсен, вĕсем те пĕр юлташĕпе пĕрле Джунгалие тĕл пулас тесе вăрман хĕрринелле пынă, анчах ăна тĕл пулайман. Тĕрĕссипе, вĕсем урăх вырăналла тухнă пулмалла. Вара, чылай кĕтсе тăнă хыççăн, батальона иккĕшех таврăнма шут тытнă. Вăрман хушшипе пĕр сехете яхăн пырсан, пăшал сассисем илтнĕ, унтан тăшмансене хăйсене те асăрханă. Вĕсем пурте пĕр еннелле пенине чухласа илсен – ăнланнă: финсем е Джунгалие, е пирĕннисенчен кама та пулин урăххине переççĕ... Пĕр-ик сăмахпа канашласа илсе, лайăхрах пытанса выртнă та финсене таттисĕр пеме тытăннă. Темиçĕшне патĕнчех тирпейлесе хунă. Çапла пулнă ĕнтĕ: Джунгали сылтăм флангран, кусем сулахайран çунтарнă... Çав вăхăтра, разведчиксем час таврăнманшăн пăлханма пуçласа, тата уçланкăн тепĕр енчи вăрманта, шăп разведчиксен çулĕ çинче, вăйлă перкелешнине илтсе, комбат пĕр ротăна тăратнă та уçланкă урлă каçарса янă... Вара белофинсенчен пĕри те хăтăлайман.

– Нумайăн пулнă-и вĕсем?– ыйтрĕ Джунгали, юлташĕ хăйĕн калавне пĕтерсен.

– Рота таран. Вĕсем пирĕн батальон çулĕ çинче засада тăвасшăн пулнă...

Джунгали çăмăллăн сывласа илчĕ.

«Эппин, эпĕ малтанхи разведчикĕ хыççăн кайни тĕрĕс пулнă...»

– Эпир вара саншăн питĕ хытă хăрасаттăмăр, – терĕ юлташĕ малалла. – Çырмари шăтăкран сана комбат хăй çĕклесе кăларчĕ, тет. Санăн суранусене çыхнă чух ниçта уйрăлмасăр пăхса тăчĕ, куна эп хам куçпах куртăм. Унтан вара... эс пĕлместĕн-ха... Тепĕр ĕç пулса иртнĕ.

– Мĕн тата?

– Кăнтăрлапа, кăшт каннă вăхăтра, парти пухăвĕ пулнă. Унта сана кандидата илнĕ. Санăн заявлени пулнă вĕт?

– Чăнах-и? Чăн калатăн-и?– хĕмленекен куçĕпе пăхса илчĕ Джунгали хăйĕн юлташĕ çине.

– Аçа çаптăр мана, суятăп пулсан, – терĕ лешĕ. Джунгали кăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, кăмăлĕ çав тери тулса килнипе çемçен кулса илчĕ çеç.

Темиçе кунтан, майĕпе тӳрленме пуçласан, вăл хутпа кăранташ ыйтса илчĕ те çыру çырма тытăнчĕ.

«Савнă чунăм Эмине, сана эпĕ хамăн савăнăçпа тулнă чĕререн пĕлтеретĕп: эпĕ халь тĕнчери чи телейлĕ çын...»

1939.

ПУРТЕ ДИПЛОМЛĂ!..

Калав

Çирĕм пилĕк çулхи Андрон Андроновăн биографийĕ вăрăм мар: çуралнă, шкулта вĕреннĕ, малтан пионер пулнă, унтан комсомола кĕнĕ, тантăщĕсемпе пĕрле тăтăш ах колхозра ĕçленĕ, ӳссе çитсен салтака кайса килнĕ, ун хыççăн ялхуçалăх институтĕнче агронома вĕренсе тухнă та виçĕ çул Çĕпĕрте ĕçленĕ...

Пĕлтĕр авланнă, кăçал унăн ывăл çуралнă.

Питĕ телейлĕ вăл.

Халь акă ашшĕ-амăшне, тăванĕсене курма отпуска килнĕ.

Пĕтĕмпе те çав кăна...

...Чугун çул станци çуртĕнчен тухсан, вăл картлашкасем тăрăх чупса анма васкамарĕ, чарăнса тăчĕ.

– Салам сана, тăван хула! Хĕрӳллĕ салам! – пăш ăлтатса илчĕ кăшт тăрсан, йĕри-тавралла пăхса.

Станци умĕнчи сарлака площадьре унталла та кунталла халăх кускалать, пурте васкаççĕ, кăшт леререхре троллейбуссем, автобуссем, çăмăл машинсем чупни курăнать, тем тĕрли те пур – сенкерри, сарри, хĕрли, кăвакки...

– Шавлать, кĕрлет Шупашкар!..– шухăшларĕ Андронов. – Виçĕ çул каялла кун пекех шавлă марччĕ...

Унăн ĕнтĕ чăн малтан гостиницăна çитсе вырнаçмалла. Темиçе талăк пуйăспа килнĕ хыççăн тасалас, çăвăнас, канас, кайран хула тăрăх çӳрес. Каçхине, епле пулсан та,– театра!

Андронов таксисем тăракан çĕрелле утрĕ.

Унта халăх тем териех пухăнма ĕлкĕрнĕ. Арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-вĕтти. Чăматансемпе, çыхăсемпе, сумкăсемпе. Пурте Андронов ларса килнĕ пуйăс çинчен аннăскерсем ĕнтĕ. Ах, çыннисем те çав, иртĕнсех кайнă-çке халь. Станцирен хуланалла ĕлĕкхи пек çурран утма мар, троллейбус-автобуспа кайма та килĕшмеççĕ, пар вĕсене такси! Канлĕ пултăр, çемçе пултăр, крыльца умнех кĕрлеттерсе пырса тăтăр! Тупата, çакăнта вертолет анса ларас пулсан, пурте, таксисем çине ал сулса, ун патнелле ыткăнаççĕ пуль? Этем тени вăл лайăхран лайăххине шырать тесе ахаль каламаççĕ. Ытла лайăх пурăнма тапратсан вăл иртĕнме те, пăсăлма та пултарать...

Андроновăн та темшĕн таксипех каяс килчĕ те, вăл черет вĕçне пырса тăчĕ. Юрать-ха, черечĕ самаях хăвăрт шурĕ. Пĕр таксийĕ тăватă çынна лартса каять те, хыççăнах тепри çитсе тăрать. Çирĕм минутсем çеç кĕтрĕ вăл – «Т» саспаллиллĕ тимĕр юпа тĕлне шур «пхашкăллă» йăм–хура «Волга» пырса та тăчĕ. Андроновран маларахра тăнă килйыш – упăшкипе арăмĕ тата пĕр вунă çулхи арçын ача – хыçала кĕрсе ларчĕ, Андронов шофер çумĕнчи вырăна лекрĕ. Пит аван ĕнтĕ ку: вăл виçĕ çул курман хула урамĕсене курса пыма пултарать.

– Вырнаçрăр-и? – хыçалти пассажирсем еннелле çаврăнса ыйтрĕ шофер.– Кама ăçта леçмелле?

– Пире Мир проспектне, вуннăмĕш çурта,– терĕ хыçалти арçын.– Агрегат завочĕ çывăхĕнче вăл...

– Пĕлетĕп,– куçне хупса илчĕ те шофер, Андроновран ыйтрĕ: – Сирĕн ăçта çитмелле?

– Гостиницăна,– терĕ Андронов.

– «Чувашия» пĕр çын та йышăнмасть, нумай пулмасть кĕрсе тухрăм унта, темле делегатсем вырнаçнă, сирĕн «Атăла» кайса пăхма тивет. Эппин, малтан кусене ăсатар, унтан «Атăла» анăпăр. Юрать-и?– Андронова куçран пăхрĕ шофер.

– Пит аван!

...Такси яп-яка («çатма пек!» теççĕ чăвашсем) асфальтлă сарлака проспектпа ыткăнса пычĕ. Ик енче те тем çӳллĕш çуртсем, пĕринчен тепри хитререх.

«Хăçан ĕлкĕрнĕ кусене туса лартма? – тĕлĕнчĕ Андронов.– Виçĕ çул каялла кунта ним те çукчĕ-çке! Ĕçлет çав пирĕн халăх, ай, хытă ĕçлет!..»

Çав хушăрах Андронов шофер çине пăха-пăха илчĕ. Çынни çамрăк-ха, Андроновран аслă пулас çук, питçăмартисем кӳпшек те хĕп-хĕрлĕ, пӳрнепе кăшт пуссанах юн тухас пек, анчах тем тума-çке сăнне-питне вăл авалхи генералсен евĕрлĕ туса лартнă: тулли янахĕсем çинче тем пысăкăш бакенбард, ик еннелле çунат пек сарса янă уссийĕ хăлха патнех çитет.

«Ку пĕтĕм çăма кассан, пĕр мăшăр алсиш çыхма та çитет пуль!» – кулса илчĕ Андронов хăй ăшĕнче.

Ĕçне вара пит лайăх пĕлет пулмалла шоферĕ, машинне вĕçтерет кăна, умри автобуссенчен, грузовиксенчен, тепĕр чух çăмăллисенчен те çил пек иртсе каять.

Тӳсеймерĕ Андронов, мухтаса илчĕ:

– Ытла та маттур-çке эсир... Нумайранпа çавăратăр-и баранкăна?

– Нумаях мар, ик çул кăна. Иртнĕ эрнере пĕрремĕш класшăн экзамен патăм...

– Унччен ăçта ĕçленĕ?

– Ĕçлемен, вĕреннĕ.

– Шоферсен курсĕнче пуль?

– Çук, институтра.

– Институтра?! Хăшĕнче?

– Сельхозĕнче.

– Вĕренсех тухнă-и, е...

– Ĕçе мĕншĕн çурмалла тăвас? Диплом илнĕ, тетчĕç. Арăмăн арчи тĕпĕнче выртать, пурçăн тутăрпах чĕркесе хунă.

Çакна илтсен, Андронов пырне темскер кĕрсе ларнă пек пулчĕ. Пĕр-икĕ хут ӳсĕркелесе те илчĕ вăл. Çав вăхăтрах шофер ун çине хулпуççи урлă пăхса йăл-йăл кулчĕ.

– Эсир мана паллаймарăр курăнать, анчах эпир пĕр вăхăтрах вĕреннĕ сирĕнпе, Андронов юлташ,– терĕ вăл.– Чăн та, тĕрлĕ факультетсенче пулнă: эп зоофакра, эсир – агрономире. Лайăх астăватăп сире, комсомол пуххисенче пит çивĕч калаçаттăрччĕ...

– Хушаматăр мĕнле сирĕн? – ыйтрĕ Андронов.

– Купташкин. Институтра пурте пĕлетчĕç мана – спортпа вăйлăччĕ эпĕ. Кроссенче яланах мала тухаттăм,– ахаль чупса та, велосипедпа та, йĕлтĕрпе те...

– Астăватăп! – тем пирки хаштах сывласа ячĕ Андронов.– Анчах халь сире паллама та çук. Усси, бакенбард...

– Мĕн тăвас тетĕн – мода! Ман арăм çĕнĕ модасене юратать...

Тек калаçасси пулмарĕ, такси çитес çĕре çитсе пат! чарăнчĕ.

Кайра ларса килнĕ килйыш майĕпен машинăран тухрĕ, арçынĕ шофера пĕр тенкĕ тыттарчĕ. Андронов счетчик çине пăхрĕ–вăл 40 пус кăтартать-мĕн. Эппин, 60 пус тавăрса памалла. Купташкин кĕсйисене хыпаланă пек турĕ те йăл кулчĕ:

– Каçарăр, гражданин, манăн вакки пĕр пус та çук...

– Юрĕ-çке, тепĕр чух шута илĕр, эппин! – ал сулчĕ тӳлекенни.

Купташкин ăна тав та тумарĕ, кабина алăкне чант! хупрĕ те машинне малалла ыткăнтарчĕ.

Андроновăн халь ку çын çинчен питĕ пĕлес килчĕ: мĕншĕн-ха дипломлă зоотехник такси шоферĕ пулса тăнă? Урăхла каласан – автоизвозчик... Тĕлĕнмелле-çке?

– Институтра панă специальноçпа ĕçлеме май килмерĕ-им тата сирĕн? – ыйтрĕ вăл хуллен, куншăн куляннă пекрех.– Ку чухне

ялхуçалăхĕнче ĕç пит нумай-çке? Эп акă хам специальноçпах виçĕ çул ĕçлерĕм, ăна пăрахма та шутламастăп-ха...

– Хăш районта ĕçлетĕр? – ун çине чăрр! пăхса ыйтрĕ Купташкин.

– Кунта мар эпĕ, Çĕпĕрте. Диплом илсенех направлени унта пачĕç те, хирĕçсе тăмарăм. Пĕртте ӳкĕнместĕп уншăн. Ĕçĕ ăнса пынă пек туйăнать. Кандидат диссертацине хӳтĕлеме ĕмĕтленетĕп...

– Вăйлă! – терĕ шофер.– Кандидатсем укçана кĕреçепе хыраççĕ. Анчах манăн... специальноçпа ĕçлесси пулсах çитеймерĕ çав. Институт хыççăн пĕр района ячĕç те... кăмăла каймарĕ! Укçи сахал, хваттерĕ çук, ĕçĕ шуйттан чухлĕ, – выльăх-чĕрлĕх енĕпе районĕ чăн кайра çапкаланса пырать. Малтисене хуса çитмелле, теççĕ. Çитсе пăх-ха! Пыршу-пакарту тухса кайиччен мекĕрленсен те çитейместĕн! Пăрахрăм та килтĕм – по семейным обстоятельствам. «Обстоятельстви», чăнах та, пурччĕ ĕнтĕ – арăм çамрăк манăн, ансамбльте ташлать. Ультиматум лартрĕ вăл – е Шупашкарта вырăн тупатăн, е мана çухататăн! Эс сысна пăхса пурăннă çĕре эпĕ вĕлерсен те каяссăм çук, терĕ. Килтĕм вара. Пĕр хушă ĕççĕр пурăнтăм. Арăм кăшламах тытăнчĕ: харам пыр эсĕ, аçа хурт! тет. Кĕç хуса кăларса яратчĕ, – хваттерĕ унăн та-ха... Кайса кĕтĕм вара шофера – ку ĕçе эпĕ çартах, института кĕричченех вĕреннĕ. Автобатра пулнă та... Малтан – калама та намăс! – ирсерен картишсем тăрăх çӳп-çап, лапра-çĕпре пуçтарса çӳрекен грузовик çинче ĕçлерĕм. «Золотарь» теççĕ пирĕн ун пек шоферсене. «Ылтăн турттаракан» тени пулать вăл. Мĕнле йышши ылтăн çинчен калани паллă ĕнтĕ... Анчах каярахпа ыр çынсем пулăшнипе – эрех тем те тăвать! – такси çине лартăм. Икĕ çул ĕнтĕ...

– Килĕшет-и вара ку ĕç?

– Аптрамасть, тиркемеллех мар.

– Укçи лайăх килет-и?

– Çитет çăкăр-тăварлăх. Хăш чух мухмăр уçмалăх та пулать. Мĕн кирлĕ тата мана!

– Çапла ĕнтĕ, çапла... аван,– терĕ те Андронов, пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕ. Унтан тăрук ыйтрĕ:–Анчах совĕç пирки мĕнле?

– Мĕн? Мĕн? – ăнланаймарĕ Купташкин.

– Совĕç, тетĕп. Ăнланмалларах каласан – намăс.

– Мĕнле намăс? Мĕншĕн намăс пултăр? – тĕлĕнчĕ Купташкин.

– Сире институтра вĕрентсе çĕршывшăн усăллă çын тăвас тесе патшалăх мĕн чухлĕ тăкак туни çинчен шухăшламан-и нихçанта? Хăвăр арăмăн арчинче выртакан диплом мĕн хака ларнине пĕлетĕр-и?

– Э-э, ку сăмаха нумай илтнĕ эпĕ! – ал сулчĕ Купташкин.– Пустуй халап! Кашни çын хăйĕн телейне хăй пĕлнĕ пек шырать. Ман пеккисем,

институт пĕтернĕ хыççăн яла кайманнисем, пĕлессĕр килет пулсан, Шупашкарта виççĕр çын ытла теççĕ!

– Пулма пултараймасть! – куçĕсене чарсах пăрахрĕ Андронов.

– Пултарнă çав!

– Мĕншĕн вĕреннĕ-ха вĕсем Ялхуçалăх институтĕнче?!

– Диплом илме! Епле пулсан та – высши образовани. Ячĕ лайăх!

– Анчах вăл ята тӳрре кăлармалла-çке! Ĕçлемелле!

– Нихăшĕ те ĕççĕр лармаççĕ. Пурте вырнаçнă. Хăйсен çăкăрне çиеççĕ. Эпĕ те, ав, иртен пуçласа каçчен, хул калакĕсем ыратакан пуличченех баранкăна çавăратăп, обществăшăн тăрăшатăп темелле, халь акă сире фон–барон пек лартса килтĕм... Стоп, çитрĕмĕр!

...Тӳсме çук тарăхса кайнă Андронов машинран вăшт кăна тухрĕ те тӳрех гостиница алăкĕ патнелле утрĕ, анчах самантранах Купташкин сассине илтрĕ.

– Эй, гражданин, тӳлес пулать! Вăтăр пус! Андронов, таврăнса, Купташкина виç тенкĕлĕх хут тыттарчĕ те пĕр сăмах каламасăрах хăвăрт пăрăнса кайрĕ.

– Паразит... – пăшăлтатса илчĕ те вăл, лач! сурчĕ.

...Андронов гостиница алăкне карт! туртса уçрĕ те вестибюле – малти пӳлĕме – кĕрсе тăчĕ. Никам та çук иккен. Стена çумĕнчи диван та, пӳлĕм тавра лартнă чăх уриллĕ креслосем те пушă.

– Гостиницăсенче яланах халăх нумай пулаканччĕ-çке, мĕнле вара кунта пĕр çын та çук? – тĕлĕнчĕ Андронов.– Ахăртнех, килекенсене пурне те вырнаçтарнă пуль. Эппин, эпĕ те халех номер илсе вырнаçатăп лайăх кăна.

Анчах «дежурнăй администратор» тесе çырнă чӳрече патнелле темиçе утăм тусанах, вăл питĕ кӳрентерекен табличка курчĕ: «Пушă вырăнсем çук!» Чӳречи хупă. Андронов хуллен шаккаса пăхрĕ – сас паракан пулмарĕ.

– Мĕн тумалла капла? Кĕтсе пăхам-ха çапах та, мĕн пулĕ...

Вăл пĕр кресло çине ларса пирус тивертрĕ, сĕтел çинче выртакан хаçата тытса пăхрĕ – хаçачĕ иртнĕ эрнерискер иккен, ăна вăл Красноярск вокзалĕнчех вуланăччĕ.

Вăхăт шурĕ. Çул çинче ĕшеннĕ çынна ыйхă пусма пуçларĕ. Вестибюльте çав-çавах пушă пулчĕ, администратор чӳречи те уçăлмарĕ.

Çывăрсах каяс мар тесе, Андронов вăшт! сиксе тăче те, хулпӳççисене выляткаласă илсе, чӳречерен шак-шак-шак! тутарчĕ. Каллех усси пулмарĕ. Тепре шаккарĕ. Унтан тата тепре. Тарăхса, çине тăрса! Вара тин çывăхри ансăр алăкран аллине урай сĕрмелли швабра тытнă хĕрарăм тухса тăчĕ.

– Ан хăнтăртаттар, ывăлăм, çук унта никам та,– терĕ вăл.

– Администратор ăçта сирĕн? – çилĕпе ыйтрĕ Андронов.

– Марье Левонттĕвнă-и?

– Пĕлместĕп, Марье-и вăл сирĕн, Тарье-и! Мана çак шăтăкра лараканни кирлĕ!

– Паян Марье Левонттĕвнă ларать унта. Анчах çук-ха халь.

– Ăçта вара вăл? Ĕç вăхăтĕнче унăн вырăнта пулмалла!

– Площăтри лавккара сакраничнăй хĕрарăм аттисем сутаççĕ, тет, тем тĕрли те пур, тет те, çавăнта чупрĕç-ха, тирехтăрĕ те, министратăрĕ те, кĕçтелянши те, пухвет майри те, пурте...

– Паçăрах кайрĕç-и?

– Пĕр-ик сехет çитет пуль.

– Пĕчченех хуçа пулса юлтăн, эппин?

– Мĕн тăвас тетĕн? Хушаççĕ те...

– Апла пулсан, калаха мана, инке: ак çакăнта «пушă вырăн çук» тесе çырнă. Ман валли пĕр çĕтĕк койка та тупăнмĕ-ши?

– Э-эй, суя вăл! – швабра аврипе сулса илчĕ хĕрарăм.– Епле-ха вырăн çук пултăр! Паян ирпе кăна харăсах çиччĕн тухса кайрĕç, вĕсен койкисене те пуçтарман-ха.

– Ма-ха, эппин, кунта «вырăн çук» тенине кăларса çакнă?

– Сан пеккисене улталама! Марье Левонттĕвнă вăл яланах çакăн пек: хăйĕн ĕç вăхăтĕнчех ăçта та пулин пăрахса тухса каймалла пулсан, çав вывескăна юриех çакса хурать. Чее мар-и? Çынсем килеççĕ те, «çук» тенине вуласа, каялла тухса каяççĕ. Нимĕнле черет те пухăнмасть, ятлаçакан-вăрçакан та пулмасть. Эс кăна пит тӳсĕмлĕ-ха, кĕтетĕн ав...

– Час-часах тухса каять-и вара вăл çавăн пек?

– Кунне виççĕ-тăваттă та çухалать!

– Директор ятламасть-им ăна уншăн? Юрамастьçке ун пек!

– И-и, ятласси çинчен каларăн-ха! Хăй хăрать унран! Майрин чĕлхи – тин çеç лупаткаланă çава пек, кастарма тытăнать-тĕк – хуть те çĕр тĕпне анса кай!

– Мĕнле вара ун пекех паттăр вăл сирĕн?

– Ара, упăшки... упăшки пысăк начальник, хулари пур гостиницăсен пуçлăхĕ, тет! Çавăнпа никамран та хăрамасть Марье! Пĕррех ура тапать те, пурте шăпăрт пулаççĕ...

Çав самантра урам енчи алăк уçăлчĕ те вестибюле умлăн-хыçлăн тăватă хĕрарăм кĕчĕç. Кашнин аллинчех пĕрер мăшăр хĕрарăм атти.

«Çаксем пуль ĕнтĕ кунти пуçлăхсем...» – шухăшларĕ Андронов.

Пуринчен малта питĕ çӳллĕ, вăрăм мăйлă, кукăртарах çинче ураллă, çӳçне-пуçне хĕп-хĕрлĕ сăрласа лартнă çамрăк хĕрарăм патлаттарса пычĕ. Сăнĕ-пичĕ тарăхнă тĕслĕ – черетре çăмăлах пулман курăнать. Те çапăçма та тӳр килнĕ-ха? Ун хыççăн утаканĕсем кăшт аслăрах пулмалла, тумланасса та начартарах тумланнă.

Вĕсенчен нихăшĕ те Андронов çине пăхмарĕ. Самантранах пурте ансăр алăкран кĕрсе çухалчĕç.

– Администраторĕ хăшĕ? – ыйтрĕ Андронов урай сĕрме тытăннă хĕрарăмран.

– Малти, ара, тăрна пекки...

– Хушамачĕ мĕнле унăн? Ужова мар-и?

– Çапла пулас. Хăй çук чух, куç хыçĕнче, ăна пурте çĕлен теççĕ. Паллатăн-им?

– Çук, ахаль ыйтрăм...

Ахаль ыйтмарĕ Андронов, чăнах палларĕ леш хĕрарăма! Унпа пĕрле вĕреннĕ вăл. Начарах вĕренместчĕ, анчах характерĕ шутсăр усалччĕ. Хĕр-тантăшĕсене ним сăлтавсăрах кӳрентернĕшĕн профкома пĕрре кăна мар чĕнсе пăскăртнă ăна. Дипломне пуринпе танах илчĕ, анчах – куран! – яла кайман, намăссăр, специальноçĕ çине сурнă те «хăна çуртне» килсе ларайнă!..

Андронов паçăр такси шоферĕ Купташкин Калинине аса илчĕ: «Хăйĕн телейне кашни хăй пĕлнĕ пек шырать...» Мĕн телейĕ пултăр-ха ĕнтĕ çакăнта, килекен-каякансен ячĕ-хушамачĕсене çырса ларнă çĕрте? Çавна валли вĕрентнĕ-и ăна патшалăх пилĕк çул хушши?!

Питĕ тарăхса кайрĕ Андронов! Çупа-çупа янă пулĕччĕ çакăн пек намăссăрсене!

Çапах та, вырнаçас пулать-çке. Вăл администратор чӳречи патне пырса шаккарĕ. Пĕрре, иккĕ. Виççĕмĕш хут хытăрах тăкăртаттарсан тин сасă илтĕнчĕ:

– Ан çĕмĕрĕр! Апат вăхăчĕ халь, уçмастпăр!

Йăнăшман Андронов: Ужова сассиех, тăкăскă, сĕрмен урапа нăтăртатнă пек сасă!

– Уçăр-ха, администратор юлташ! – татах шаккарĕ Андронов.

– Каланă сире – перерыв пирĕн! Кĕтĕр! – илтĕнчĕ шалтан.

– Эп ĕнтĕ икĕ сехет кĕтетĕп!

– Хуть те пиллĕк кĕтнĕ пултăр! Мана мĕн?

– Тек кĕтме пултараймастăп!

– Пултараймастăр пулсан – тухăр та кайăр, чаракан çук. Эпир те сирĕншĕн выçă ларма пултараймастпăр!

– Уçăр, тетĕп! – Андронов тата хытăрах шаккарĕ.

– Сирĕн мĕн, гражданин, хулиганствăшăн пĕр вунă талăк ларса тухас килет-и? – çухăрсах ячĕ шалти хĕрарăм. – Халех чĕнетĕп!..

– Чĕнĕр, чĕнĕр! Манăн çав-çавах ăçта та пулин çĕр каçмалла!

Пĕрре куç хупса та илеймерĕ Андронов – хайхи хĕрарăм алăкран сиксе тухрĕ. Тигр пек! Халь тесен халь тытса çурма пултарать! Анчах Андроновпа питепитĕн тĕл пулчĕ те малалла ыткăнас вырăнне каялла чакрĕ.

– Андрошка! Аçтан татăлса антăн эсĕ?! – Хĕрарăм кулса ячĕ, ун çăварĕ хăлхисем таранах сарăлса кайрĕ.– Салам сана! Хĕрӳллĕ салам! – аллине тăсса пачĕ вăл.

– Саламĕ салам та-ха, анчах питĕ хаяр-çке эсĕ, Маруся! Хăранипе чут çеç тухса тармарăм! – терĕ Андронов.

– Хаяр пулăн кунта! Кунсерен çĕршер çын килет, кашни хăйĕн характерне кăтартма, хăратма хăтланать. Пурне те парăнсан – вилес пулать, çисех яраççĕ!

– Вырăн тупăнать-ши ман валли?

– Тупăнмасăр! Пĕрле вĕреннĕ çын, çамрăк чухнехи юлташ валли те тупăнмасан тата! Уйрăм номер паратăп, «люкс», ваннăллă, телефонлă, йĕри-тавра – кавир. Лайăх çынсем валли яланах пур манăн! Хуть те уйăх пурăн. Пĕр-пĕр хитре пике илсе килме те чармастăп... Ха-ха-ха! – лаша тулхăрнă пек кулса ячĕ администратор.

Андронова хулпуççинчен ыталасах илсе кĕрсе кайрĕ вăл. Анчах Андронова хăйне çав самантра хĕрарăм мар, çĕлен ыталанă пек туйăнчĕ. Номера вырнаçнă чух та, кайран та вăл çак Ужова мĕншĕн хăйĕн специальноçĕпе ĕçлеменни çинчен ыйтмарĕ. Ахалех паллă пулчĕ-çке: вăл ĕçлесси çинчен мар, çăмăл та канлĕ пурнăç çинчен çеç шухăшланă. Ыр курасчĕ, урăх ним те кирлĕ мар ун пек экземплярсене. Сăвăссем вĕт вĕсем...

Тарăхмалли кунпа пĕтмерĕ-ха Андроновăн. Çӳçпуçа тирпейлес тесе парикмахерскине кĕрсен, унта та институтра пĕрле вĕреннĕ Любка Свистуновăна тĕл пулчĕ – пĕр аллине пуç тури, тепĕр аллине çап-çутă хачă тытнă та клиент тавра авкаланать кăна! Шутсăр хаваслă хăй, шӳтлет, кулать, кĕçенкелесе илет... Питĕ телейлĕ пулмалла çав!

Каçхине, театр хыççăн апат çиме ресторана кайсан, ун сĕтелĕ умне шĕшлĕ пек сăмсаллă официантка пырса тăчĕ. Ăна та палларĕ Андронов – Клава Морковкина иккен вăл, институтра Люба Свистуновăпа шутсăр туслăччĕ вĕсем, вечерсенче пит лайăх ташлатчĕç...

Номере таврăнсан, Андронов нумайччен шухăшласа выртрĕ:

– Мĕн тума вĕрентнĕ пуль çав эсрелсене! Мĕн тума халăх укçине тăккаланă вăл путсĕрсемшĕн!..

1973.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Л. Агаковăн вăрçă хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001377.pdf
2. Л. Агаковăн кулăш калавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000647.pdf
3. Л. Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă» повеçне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0 000088/index.html
4. Л. Агаковăн «Ылтăн вăчăра» повеçне Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001129.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Чăваш литературинчи мĕнле жанрпа стиль аталанăвĕнче Агаков тӳпи уйрăмах сисĕмлĕ?
2. Л. Агаков пултарулăхĕ çине И. Мучи мĕнле витĕм кӳнĕ?
3. Агаковăн пултарулăхĕнче вăрçă теми мĕнле вырăн йышăнать? Хайлавсен сюжечĕ авторпа хăйпе мĕнле çыхăннă?
4. Чăваш литературинчи приключениллĕ хайлав аталанăвĕнче мĕнле тапхăрсем палăртма пулать?
5. Чăваш литературинчи детективлă жанрăн хăйне евĕрлĕхĕ мĕнре?
6. Л. Агаков пултарулăхĕнчи детективлă хайлавсене мĕнле хаклама пулать?

● *Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Детективлă хайлав тĕсĕсем:
психологиллĕ
историллĕ
ирониллĕ
фантастикăлла
политикăлла
шпионсем пирки
милиципе полици пирки
криминаллă
тавăру

Приключениллĕ хайлав тĕсĕсем:
мул шыракансем пирки
çул çӳревçĕсем пирки
историллĕ мыскарасем пирки
тинĕс çинчи мыскарасем пирки
индеецсем пирки

♪ *Астăвăма тĕрĕслетпĕр*

1. Вăрçă хирĕ витĕр тухнă çыравçăсем: А. Алка, А. Артемьев ...
2. Айăпсăр айăпланă чăваш çыравçисем: Митта Ваçлийĕ, П. Хусанкай ...

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Дедушкин Н. С. Писатель – салтак. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1974. 72 с.
Дедушкин Н.С. Пăшалпа та перопа та...: (Тăван çĕршыв Аслă вăрçи тапхăрĕнчи чăваш литератури. 1941-1945). Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1970. 168 с.

Федоров Г.И. Леонид Агаков: сăнарлă пултарулăх çулĕ-йĕрĕ: (чăваш литературине теорипе историйĕ енчен хак пама сĕмленни): монографи. Шупашкар: «Çĕнĕ вăхăт», 2010. 57 с.

Сочинени темисем

1. Л. Агаков хайлавĕсенчи вăрçăпа патриотизм теми.
2. Чăваш литературинчи кулăшпа питлев традицийĕ (Иван Мучипе Леонид Агаков пултарулăхĕсем тăрăх).

Проект

Леонид Агаковăн нумай енлĕ пултарулăхĕ: кулăшпа питлев, пăтăрмахпа детектив, публицистикăпа очерк ăсти *(ушкăнла тĕпчев)*.



ЧĂВАШ ПОЭЗИЙĔНЧИ ХУРА ÇĔР ЮРĂÇИСЕМ

Ăслăлăх аниичен

«Ухсайăн совет литератури умĕнчи чи пысăк тава тивĕçлĕ ĕçĕсенчен пĕри вăл пĕтĕм чĕререн тăрантарса тăракан çĕре мухтаса юрлани пулса тăнă. Сăвăç шухăшĕпе, çĕр вăл – пурнăçри нумай ырлăхсен амăшĕ, çăкăр вара – çĕр ачи. Çĕр илемне художник хăйне евĕрлĕ уçса парать. Нумай сăвăçсем çеçкене ларнă улма пахчисемпе, уйсемпе, тулса çитекен тырă-пулăпа тата ыт. те ытларах хавхаланни вăрттăнлăх мар.Ухсай сăнавĕсем чылай тарăнрах пулса тăнă. Вăл çĕр çине çĕр ĕçченĕн куçĕсемпе пăхать, ахаль чухнекурман çĕрте илем курать. Илемлĕ хура тăпра, илемлĕ лайăх сухалань уй, илемлĕ сухаçăн пĕрремĕш суха касси, илемлĕ пĕтĕмĕшле çĕр ĕçченĕн ырлăхлă ĕçĕ. Илем никĕсĕнче – ĕç. Уй-хир илемне те, колхозлă ял илемне те, килкарти илемне те ĕç йĕркелет. Тăван çĕре илемлетес тата ун сăнне улăштарас тесе этем мĕн чухлĕ ытларах вăй хурать, çавăн чухлĕ вăйлăрах вăл тăван ен, тăван çутçанталăк патне туртăнать. Ухсай çутçанталăкпа перекетлĕ усă курассишĕн кĕрешет. Çак тĕлĕшрен ун ячĕ М.М. Пришвин, К-Г. Паустовский, Л.М. Леонов ячĕсемпе пĕр ретре тăрать. Ухсай шухăшĕпе, патриотлăх туйăмĕ чи малтанах тăван вырăнсене юратнинчен çуралать» (*А.И. Ефимов, литература критикĕ*).

«Çавăнпах ĕнтĕ вăл ял пурнăçĕпе, уй-хир ĕçĕпе çыхăннă кашни пулăмах асамлăх тĕкĕрĕ витĕр курать. Ахальтен мар унăн сăввисенче капан тăрне персе яран кĕлте сар хĕвел пулса çиçет, çил, çăлтăр алтăрне ярса илсе, çĕр сĕткенне тултарать, уйăх сарнă сукмакпа вăштăр çил

çемçен утса иртет, пĕлĕт тутăрĕ те çӳçеллĕ, кĕлтене пуçелĕк вырăнне хурса канакан çыннăн ури те тухăçа лекет, хир сывлăшĕ те хăмла сăри пек, çĕнĕ çăкăр та çĕр чăмăрĕ евĕр çавра... Хресчен телейĕ... Хресченĕн çăкăрлă ыраншăн ыйхă çĕтернĕ телейĕ. А. Воробьев хресчене, çĕр ĕçлекене çĕр чăмăрĕн чи тĕп çыннине сума сунă пек хисеплеме сĕнет. Хăйĕн пултарулăхĕ çитнĕ таран ун ятне сăвап юрри кĕвĕлет: «Ан ӳкĕн эс никам та маршăн. Эс – çын. Унран хакли те çук». Çав вăхăтрах вăл, çĕр ĕçлекенĕн романтикине поэзи тĕпелне лартать пулин те, унăн ĕçĕ шутсăр тăварлă иккенне те лайăх асăрхаттарса хăварать: «Ятран калĕ», «Усал-тĕсел, мана ан явăç», «Хĕррипе тан пурне те курнă», «Каçалăк çинчен» тата ытти сăвăсем» (*Хв. Акивер, çыравçă*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Чăваш литература пĕлĕвĕнчи «хура çĕр юрăçи» ăнлав XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çуралнă. Ытларах чухне унпа Ухсай Яккăвĕн пултарулăхне хак панă чух усă курнă. Каярахпа вăл Алексей Воробьев сăвăçăн илемлĕх тĕнчин хаклавĕнче те хăй вырăнне тупнă. Паянхи кун «хура çĕр юрăçисен» ушкăнне çавăн пекех Виктор Рсай çыравçăна та кĕртеççĕ. Унран та ытларах шăпах Виктор Рсай калав-повеçĕсем çак юхăмăн пĕрремĕш вăйлă палăрăмĕ пулнине çирĕплетеççĕ.

Чăваш литературинчи «хура çĕр юрăçи» ăнлав вырăс литературинчи «хресчен поэзийĕпе» пĕр юхăм çинче тăрать, анчах вĕсем пĕрешкел ăнлавсем мар. Чăннипех те «хура çĕр юрăçисен» хайлавĕсенче çынпа çĕр çыхăнăвне туллин те тарăннăн кăтартасси тĕпре, тĕп сăнарĕ те – ялти çĕр çинче ĕçлекен çын. Анчах «хресчен поэзийĕнчи» чун асапĕ – ял тĕнчипе хула культури хушшинче икке пайланни – çук кунта. Вырăс литературинчи «хресчен поэзийĕн» авторĕсем нумай чухне хăйсем ялтан тухнипе пĕрлешнĕ. Çак тĕлешрен илсен XX ĕмĕрти чăваш литературинчи мĕн пур тенĕ пек çыравçă – ял çынни. Вĕсем халăх сăвă-юррине, юмах-халапне илтсе ӳснĕ, хресчен тĕнчекурăмĕ, ял йăли-йĕрки çинче аталаннă. Çапах та вĕсене пурне те «хура çĕр юрăçи» юхăм ушкăнне кĕртме юрамасть.

Паллах, XX ĕмĕрти чăваш илемлĕ сăмахлăхĕшĕн, хăш-пĕр чухне паянхи XXI ĕмĕрти литературăшăн та, ялпа хресчен сăнарĕ яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Мĕншĕн тесен шăпах ĕмĕрхи йăла-йĕркене тытса пыма тăрăшакан ял, тыр-пул анлăшĕпе хумханса ларакан уй-хир сăнарĕ пирĕн илемлĕ сăмахлăхра наци тĕнче курăмне калăплама пулăшать. XX ĕмĕрти чăваш çынни вăл – хресчен ачи. Çакă вара унăн тĕнче курăмне те, пурнăç философийĕне те, хуйхи-суйхипе савăнăçне те йĕркелет.

Яккăв Ухсайĕ (*Ухсай Яков Гаврилович, 1911-1986*) пурнăç тăршшĕпех чăваш литературинче тухăçлă ĕçленĕ çыравçăсенчен пĕри. Унăн пĕрремĕш сăвви «Юратрăм эп, хирсем, сире» 1929 çулта пичетленнĕ. Çак хайлавра сăвăçăн пĕтĕм пултарулăхĕн тĕп теми – ялпа çĕр теми хăй вырăнне тупнă. Ял çыннисем уншăн яланах чи пысăк, чи таса ориентир пулнă. Çак уйрăмлăха палăртса Г.И. Федоров тĕпчевçĕ çапла çырать: «Çамрăк çулсенченех çапла поэт хăйне халăх чунĕ-юнĕ урлă хаклама хăнăхать, тăван тавралăх, ял йыш, Урал анлăшĕ умĕнчи яваплăха туптать сулмаклăн. Ахальтен мар вăхăчĕпе сăвă ярăмĕсем те хăйне евĕрлĕ ун: «Çăкăр кăвапи», «Силпи енчи çилсем», «Хура тăпра». Йăлтах тăван тавралăха ăша хывнă ят. Слак шывне ĕçсе тĕрекленнĕ, ыраш çăкри çмсе патварланнă каччă çапла хăйĕн ĕмĕрхи проблеми-идейине тупать».

Чăваш литература анинче ĕçлекен çыравçăсем те Я. Ухсайăн сăвă-поэмисен çакнашкал хăйне евĕрлĕхне курса палăртаççĕ. Хветĕр Акивер прозаик, акă, сăвăçа чăваш халапĕсенчи Улăппа танлаштарать. «Улăп сухаçă пек курăнса тăрать вăл пирĕн чăваш литературинче. Пирĕн çĕнĕ культурăн виçĕ сийне – Пушкăрт, Чĕмпĕр тата хамăрăн тĕп Чăваш çĕрĕн асамлă сийĕсене пĕр культурăна пуçтаракан чаплă сухаçă. Умĕнхи литературăра вăл, паллах, Константин Иванова пуç çапнă. Иван Яковлевич Яковлев уншăн – чăваш çулпуçĕ, тĕнче сăпки – Чăваш çĕрĕ. Ухсай тĕнчи – Çĕр-аннемĕр чĕлхи, «тăпра поэчĕ», тетпĕр ăна çавăншăнах. Тĕп сăнарĕ – Çĕр ăсчахĕ – Кĕлпук мучи. Поэзире – хутран касса тетте çуртсем лартмасть Ухсай, кăмака хутса, çăкăр пĕçерсе, выльăх-чĕрлĕх усраса пурăнакан çынсен хĕвел айĕнчи пура поэми-романĕсем вăл çырнисем, Чăваш çĕрĕ çинчен Ухсай ухсайла каласа панисем», – тесе калать вăл.

Чăнах та, Я. Ухсай çырнисем шухăшпа сăнар хăйне евĕрлĕхĕпе палăрса тăраççĕ. Унсăр пуçне поэзири жанр аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен те ХХ ĕмĕрти чăваш литературинче унăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Çапла вăл сăвăлла трагедипе сăвăлла роман жанрĕсем аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывни куçкĕретех. Сăвăçăн «Кĕлпук мучи», «Çĕр», «Шурă хурăнпа калаçни», «Чапаевпа тĕл пулни», «Ача чухнехи çăлтăрăм» поэмисем, «Ту урлă çул», «Акăшкӳл» сăвăлла романĕсем, «Хура элчел», «Тутимĕр», «Шуйттан чури» трагедийĕсем Я. Ухсай чăн-чăн сăмах ăсти пулнине туллин çирĕплетсе параççĕ.

«Кĕлпук мучи» поэмăна сăвăç 1951 çулта çырса пĕтернĕ. Литература анинчи ăсчахсем палăртнă тăрăх (Г.И. Федоров, Н.Г. Иванова), Яккăв Ухсайĕн «Кĕлпук мучи» сăвăлла повеçĕ вăл – чăваш

халăх энциклопедийĕ. Кунта Кĕлпук мучин вăйлă та хăватлă кăмăлĕ çеç мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн характерĕпе йăли-йĕрки курăнать.

Поэмăра Кĕлпук мучин икĕ сăнарне, тĕрĕсрех икĕ тапхăрти сăнарне, калăпланă. Ача чухнехи Кĕлпук ашшĕ пек маттур, хура сăнлă, çĕмĕрт куçлă. Çут тĕнчене те вăл кĕпепе килнĕ, чавси çинче тур палли пур, чирсĕр, сывă, маттур ӳснĕ. Ватăлсан вара пирĕн ума кăвапа таран кĕреçе сухаллă, кăвакарнă çӳçлĕ Кĕлпук мучи сăнарĕ тухса тăрать.

Кĕлпук сăнарне калăпланă чух сăвăç вăхăт улшăнăвне (патша тапхăрĕнчен совет тапхăрне куçнине) те кăтартать. Çапла, Кĕлпук чăваш ялĕнчи хура пӳртре кун çути курать. Ача, çамрăк чух тĕн-тĕшмĕшпе хирĕçлевлĕн, кун-çул терчĕпе ӳсет. Ĕçре маттур, йывăрлăх умĕнче пуçа пĕкмест вăл: ял-йышран уйрăлмасăр хура ĕçе хисеплесе куллен тар юхтарать. Тĕлĕкре патша пулса та пăхать Кĕлпук, анчах çакă ăна пĕрте килĕшмест, чăн чун канлĕхне вăл хресчен ĕçĕнче çеç курать. Çапла тивĕçлĕ те сăваплă пурăнса ирттерет вăл пурнăçне, хăй хыççăн маттур йăх хăварать.

Унăн ĕмĕчĕсем те халăхăн ĕмĕрхи шухăш-кăмăлне палăртаççĕ, Кĕлпук чăваш халăхăн иксĕлми оптимизăмне ăша хывнă. Чĕлхи-çăварĕ питĕ япшар унăн: вăлтса, шахвăртса, ытарлăн калаçма, шӳтлеме юратать. Тарават çын пулнăран ял çыннисемшĕн вăл яланах кĕтнĕ хăна. Тӳрĕ чунлă та çирĕп кăмăллă, аслă тĕнчекурăмлă Кĕлпук. Çакă пĕтĕмпех Яккăв Ухсайĕ хăйĕн Кĕлпукĕнче чăваш халăхĕн чи лайăх енĕсене уçса пама тăрăшнине кăтартать. Çавăнпа та вăл пирĕн ума сыпăкран сыпăка вăйлă, сăпайлă, чăтăмлă, пултаруллă, ытарлă чĕлхеллĕ çын, вăлтса, шахвăртса калаçакан ялти хисеплĕ ватă пек тухса тăрать.

Кĕлпук хăйĕн ĕç-хĕлĕпе ял çыннисем умĕнче хисепе тухма пултарнă. Вăл чăн-чăн хресчен çынни, яланах ĕç çинчен шухăшлать, уйра трактор-комбайн ĕçленине курса савăннипе киле çитсен тахçанах хатĕрлесе хунă тупăкне вакласа хитре арча туса хурать. Вилес килмест унăн, вăл пурнăçа юратса пурăнакан çын.

Яккăв Ухсайĕ Кĕлпук мучин пурнăçне йăлтах историлле событисем тавра çыхăнтарать. Н.Г. Иванова тĕпчевçĕ асăрханă тарăх, сăвăç «Кĕлпук сăнарĕ хура саманапа тавлашуллăн хывăннине уçăмлăн кăтартать. Калуçă хăй геройне асамлă юмахри пек тумхахлă çул çӳреве те ăсатать, анчах ун Кĕпукĕ юмахри паттăр пек, эпосри Улăп пек хывăнать. Юмахри паттăрсене халăх мĕнле юратать, Ухсай хăйĕн сăнарне çавăн пек юратса-савса сăнлать».

Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэмăн чĕлхи сăнарлă, тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе пуян, вĕсене такмак евĕр çырнине те палăртмалла. Хайлавăн сăнарлă чĕлхинче архаизмсемпе калькăсем чылай. Акă, сăмахран, «эх,

çапатăп, эх, шăлатăп çурăма, пĕççе-каççа!», «сехреметлĕ вăрçă-харçă», «шуйттан илесшĕ», «ват супьях». Хайлавра тĕл пулакан фразеологизмсем те (тĕслĕхрен, «куç хупса», «вĕри мунча») унăн халăхлăх сĕмне вăйлатаççĕ.

ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче пултарулăх çулĕ çине тăнă чăваш çыравçисем пурте тенĕ пекех Чĕмпĕр чăваш учителĕсен шкулне е урăх учительсем хатĕрлекен вĕренӳ учрежденине (Етĕрнери, Шупашкарти, Патăрьелĕнчи) вĕренсе пĕтернĕ, учитель профессине алла илнĕ. Каярахри тапхăрти çыравçăсен пысăк йышĕ вара хаçат-журналпа кĕнеке издательствинче, радио комитетĕнче ĕçленĕ. Пĕр сăмахпа каласан чăваш литературинчи çыравçăсем хăйсен пурнăçне ялан тенĕ пекех вĕрентӳпе тата творчествăлла профессипе çыхантарнă. Паллах, пурте мар.

Алексей Воробьев (*Воробьев Алексей Александрович, 1922-1976*) сăвăç пурнăçĕ, сăмахран, пĕтĕмпех ял хуçалăх ĕçĕпе çыхăннă: колхоз председателĕ, МТС (машинăпа трактор станцийĕ) директорĕ, аграном пулнă. Шăпах çакă сăвăçăн пĕтĕм поэзине ял сăн-сăпачĕ витерсе тăнине ăнлантарать те пулĕ. Çакна ун кĕнекисен ячĕсем («Хирти каласу» (1958), «Хĕвел çаврăнăш» (1969), «Йăмра» (1974)) те, сăвă-поэмăри йĕркесем те ĕнентереççĕ.

А. Воробьев нумай сăввисенче çĕр, тыр-пул ӳстерекен хура тăпра чăваш çыннишĕн чĕрĕ пулăм, сăнар, хăй кĕлеткин пĕр пайĕ пулнине кăтартать: «Паш хăпарса пиçет тăпра», «Тăпра хăвачĕ юнăмра» («Хиртех ман чун»), «Кĕрхи самант, ăш вĕçнĕ бригадир пек, Килтен киле çӳрет тем янраса», «Камсем хирте пиçеççĕ? Ватă-вĕтĕ. Çăкри ăçтан çитсе тăрать кăна!» («Ватă йăмрасем»). Е тата:

Пучах пуплерĕ пăшăл-пăшăл,
Мана ăс пачĕ: – Ӳс, чĕкел…
Тĕмсем йăтса эп хыврăм кăшăл,
Эп турăм пуçласа çĕмел *(«Çĕмел»).*

А. Воробьев кашни хайлавĕнче тăван çĕр, унăн çыннисем çинчен ăша выртмалли юрă-çемĕ ĕнĕрет. Хăйĕн телейне сăвăç çĕр ĕçлекенĕн терт-телейĕнче курать. «Чунпа-юнпа та эп – хресчен, Хура çĕрпе эп пĕртăван», – тесе çырать вăл, сăмахран, «Сăмах тĕшши» сăввинче.

Çавăнпа пĕрлех сăвăç поэзийĕнчен чуна çупăрласа илекен темле ачашлăх, çепĕçлĕх тапса тăрать. Унăн поэзийĕ «пырне çурса кăшкăрмасть», çĕр ĕçлекенĕн кăмăлĕ пекех сăпайлă та тарават. А. Воробьев поэзийĕнчи çак туртăм ăна чăваш çыннин кăмăлне тарăнрах кăтартма пулăшать.

Алексей Воробьев хайлавĕсем стильпе жанр тĕлĕшĕнчен нумай енлĕ. Уйрăмах кашни пулăмра философиллĕ тарăн пĕлтерĕше шырасси,

шухăшпа туйăмăн, сăмах хăвачĕн халиччен палăрман вăрттăнлăхĕсене тупса палăртасси уншăн кăтартуллă. Çавăнпа та сăвăçăн юратуллă лирики те, философиллĕ поэзийĕ те пĕрешкел ăнăçуллă пулса тухать. Ку енĕпе А. Воробьев – чăваш поэзинчи чăннипех те хăйне евĕрлĕ савăç, пулăм. Унăн поэзийĕ, чăваш литература классикĕн Яккăв Ухсайĕн сăвă-поэмисем пекех, хура çĕрпе, тăван халăх кун-çулĕпе сĕткенленнĕ. Апла пулин те, А. Воробьевпа Я. Ухсая иккеленӳсĕр пĕр шая лартма юрамасть. Çапла, Я. Ухсай пултарулăхĕнче совет идеологийĕн витĕмĕ туйăмлă пулсан, А. Воробьевшăн философиллĕ, лирикăлла туртăм кăтартуллă.

Литература теорийĕ

«**Хресчен поэзийĕ**» текен ăнлав литература жанрĕ пек XIX ĕмĕр варринче вырăс литературинче йĕркеленнĕ. Çак юхăмăн паллă сăвăçисем хушшинче Алексей Кольцов, Иван Никитин, Иван Суриков пулнă. Вĕсем хресчен çыннин йывăр ĕçĕ, кулленхи пурнăçĕ, ун пурнăçĕнчи асаплă тата синкерлĕ хирĕçлĕхсем прики çырнă. Вĕсен пултарулăхĕнче çĕр ĕçченĕпе çутçанталăк пĕтĕçĕвĕн савăнăçĕ те, чĕрĕ çут тĕнчешĕн ют, шавлă, пăчă хула пурнăçне курайман туйăм та ӳкерĕннĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çак юхăма кĕрекен сăвăçсем шутне Сергей Есенин та хутшăннă.

Литературăри «хресчен поэзине» вăхăт хăй çуратнă. Çапла вырăс литературинче вăл икĕ ĕмĕр ылмашнă тапхăрта çуралнă. Ку вăл социаллă пурнăç арканни, искусствăри ăнлавсем арпашни туйăнмалла палăрса тăнă вăхăт пулнă. Çавăнпа та хресчен сăвăçисен пултарулăхĕнче те философири дуализм вĕрентĕвĕпе килĕшӳллĕн пулăмсене темĕнле икĕ енлĕ пăхасси курăнать. Чи малтанах кунта вĕсен урăх пурнăçа куçас килнин асаплă туртăмне, хăйсем кам пулса çуралнипе кăмăлсăр пулнине палăртмалла. Çавăнпа та вĕсем пурте асапланнă, çак сăлтава пулах юратнă ялĕсенчен хăйсем чунран курайман хуласене тарнă. Çапах та хресченсен кулленхи пурнăçне тата халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхне пĕлни, тăван çутçанталăкпа çывăх пулнин нациллĕ тарăн сисĕмлехĕ хресчен сăвăçисен пултарулăхĕнчи вăйлă енĕ пулса тăрать. Вĕсен сăввисен тĕп темисем шутĕнче ял йăли-йĕркине, хресчен ĕçне тата ялти çутçанталăка илемлетсе кăтартнине палăртмалла.

«Хресчен поэзийĕн» пĕлтерĕшлĕ паллисем шутĕнче çаксене асăнмалла:

– «пĕчĕк Тăван çĕршыва» юратни;

– ĕмĕртен килекен халăх йăли-йĕркипе кăмăл-сипет йăлисене тытса пыни;

– тĕн символикипе, христианствă мотивĕсемпе тата ыр-хаяр тĕнĕпе (язычество) усă курни;

– халăх сăмахлăхĕнчи сюжетсемпе сăнарсем патне туртăнни, поэзи тĕнчине халăх юррисемпе такмакĕсене кĕртни;

– «сиенлĕ» хула культурине йышăнманни, машинăсемпе тимĕр культне хирĕç тăни.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Яков Ухсай

КĔЛПУК МУЧИ

Поэма (сыпăк)

Пĕрремĕш сыпăк

Ача чухне

Пуша уйах вĕçенче
Каç сĕм тĕттĕм пулнă,
Шыв çурхи шырлансенче
Шăнкăр-шăнкăр юхнă.

Хăйчикки чӳречерен
Ылтăн çутă янă.
Ун çути кӳлленчĕкре
Çăлтăр пек вылянă.

Путексем сике-сике
Тăрăслатнă майăн
Ернĕ пулнă чĕтренке
Кив хăма урайĕ.

Кăмака таврашĕнче
Шăрчăк та юрланă.
Çав пӳртре сăхман çинче
Пĕр ача çуралнă.

– Мах ан пар пуянсене,
Çĕнĕ кăвакарчăн!–
Тенĕ те кăвапине
Каснă эпи-карчăк.

– Енчĕкре укçу пин-пин
Янрĕ, чунăм, санăн.
Муллă пул!– тесе эпир
Тăпăртăк ташланă

Чăн сăмахăн суйи çук,
Чи пĕрремĕш ывăл
Пĕчĕкçĕ хура Кĕлпук
Нар пек хĕрлĕ, сывă.

Ашшĕ-амăш телейне
Сыхлама вăл, паллă,
Килнĕ çутă тĕнчене
Кĕпепе, тухъяллă.

Ĕçлеме вăл килĕнче
Пăлатна çуралнă.
Турпалли чавси çинче
Ĕç палли пек ларнă.

Малтанхи тĕпренчĕкне
Амăш хытă савнă.
«Паппине те нянине»–
Тенĕ вăл, юрланă.

Ытлашши юратнипе
Ним тума аптранă,
Тӳсеймесĕр кисĕппе
Вăл тӳме пултарнă[1].

[1]Хĕрарăм ытла юратакан ачине килле хурса кисĕппе тӳме пултарĕ, теççĕ (Халăх сăмахĕ).

Малтанхи ача паха,–
Ачине ачашшăн
Куçĕнчен пăха-пăха
Хĕпĕртенĕ ашшĕ.

Юмантан ӳтне-тирне
Тунă евĕр, паттăр,
Ылтăн ывăл ашшĕне
Ĕмĕрсавăнтартăр!

Кĕпепе çуралнă чун
Ăрăскаллă пулĕ.
Ĕмĕр тăршшĕ юхмĕ ун
Тарăхса куççулĕ.

Амăш ун кăвапине
Çав тери типтерлĕ
Типĕтсе çӳпçе тĕпне
Пытарса хĕстернĕ.

Шĕкĕпе ытти инкек
Тивесрен шикленнĕ,
Укçана чĕркенĕ пек,
Тутăрпа чĕркенĕ.

Ашшĕ пек маттур, хура,
Çĕмĕрт куçлă ывăл
Кулленхи ачашлăхра
Ӳснĕ чирсĕр, сывă.

Шăкăл-шăкăл пуплеме
Иккĕре вĕреннĕ,
Урампа чупса иртме
Пулнă ун йĕвенĕ.

Вăл хулла лаша туса
Утланса çӳренĕ,
Чупнă чух хура тусан
Çул çинче çĕкленĕ.

Пăхнă вăл çынсем çине
Тем пек пархатарлă,
Ашшĕпе пĕрле çиме
Юнтармасăр ларнă.

Тирĕк урлă кармашса
Тытнă пысăк кашăк.
Сикнĕ-тухнă тамаша
Килĕнче сасартăк.

Тыр вырма пĕрре çулла
Вăхăт çитнĕ пулнă,
Халăх аллинче çурла
Кăчăрт-кăчăрт тунă.

Ашшĕ-амăш – иккĕш те–
Пусăра ĕçленĕ.
Пĕчĕкçĕ Кĕлпук хирте
Савăнса çӳренĕ.

Шăрчăксем умра вĕçсе
Юрласа хăпарнă.
Килĕнче хайхи çӳпçе
Пĕр хуралсăр ларнă.

Вăрă кĕнĕ кил-çурта,
Пĕтĕмпе ухтарнă,
Çӳпçене çаратнă та
Тӳнтерсе хăварнă.

Савнă ывăл аллинчен
Ырлăх тарнă майлă,
Ăпăр-тапăр хушшинче
Кăвапа та кайнă.

Ашшĕ-амăш каçхине
Килнĕ те хурланнă.
Ку хыпар чĕрисене
Вут-кăвар хыптарнă.

Ним тума пĕлмен пирки
Арçынни шăп ларнă.
Макăрса кăна инки
Хăй чунне кантарнă.

Çухалсассăн кăвапа
Тем инкек те килĕ.
Юхнă ĕнтĕ çавăнпа
Амăшĕн куççулĕ.

Мур-инкек килессинчен
Хăрамасăр, ывăл
Лăнкăр-лăнкăр сак çинче
Сикнĕ паттăр, сывă.

Сак çинче тăна кĕми
Кушака хŭтернĕ.
Чалăшса пĕр сак хăми
Урайне ŭкернĕ.

Амăшне хăратнă-çке,
Урайне шаплатнă.
– Ак, инкек!– тесе инке
Пĕççине шарт çапнă.

Ăншăрт чирĕ ачине
Укесрен хăранă,
Кив урай хăмисене
Кусарпа такканă.

– Чир-чĕр, кай хурах килне!–
Лач сурса каланă,
Кивĕ ăвăс кăмпине
Тĕтĕре пуçланă.

Ку çитмен, çŭлтен тата
Кĕрĕкпе хупланă,
Урăм-сурăм ăншăрта
Хытă хăваланă.

Сывлама пĕртте паман,
Тĕтĕмпе тултарнă,
Çавăнпа Кĕлпук аран
Антăхса çеç ларнă.

Пулнă тепĕр кун ирпе
Ун çамки миталлă–
Ларнă сурăх куçĕ пек
Кăвакрах пĕр паллă.

Кунсерен пыра-киле
Ун çинчен те маннă.
Çитнĕ кĕр, унтан хĕлле
Сивĕ çил пуçланнă.

Ашшĕ пĕчĕк ывăлне
Ытарми юратнă,
Ярăнма хур йăвине[1].
Шыв сапса пăрлатнă.

Ылтăн ывăл сăрт çинчен
Аннă çил пек вирлĕ,
Тĕс выляннă питĕнчен
Киккирик пек хĕрлĕ

Ялĕпе килтен-киле
Пуп кĕрсе çŭренĕ,
Раштавра, хаяр хĕлле,
Тем те ŭкĕтленĕ.

Вăл «çветуй вода шывне»
Сыхлама каланă,
Йŭçĕ ладан тĕтĕмне
Килсерен кăларнă.

Кĕнĕ пуп, анчах кунта
Курăнман ниçта та
Ни хайхи çветтуй вода,
Ни иккун хăма та.

[1] Елĕк хур йăвин тĕпне пăрлатнă та ачасене ярăнмалли туса панă.

Ярханах кăкри çинче
Пĕр пилеш пĕтевĕ[1].
Пулнă пĕчĕк ачинче,–
Ку инкек пĕтерĕ…

– Эх, тĕне кĕртместĕн-çке,
Шуйттанпа туслашнă!–
Тенĕ пуп, патша çынни,
Çиленсе тулашнă.

Кĕлпука тĕне кĕртме
Чăркăш пуп каланă,
Астуса тăма, пĕлме
Пӳрнипе юнанă.

– Кăвапи çухалнипе
Тухрĕ арăш-пирĕш,–
Тенĕ савнă ашшĕпе
амăш пупа хирĕç.

Ик хресне те тепĕр кун
Хăнари пек ларнă.
Хресне ашшĕ пĕр саккун,
Пĕр сăлтав кăларнă.

Леш ăнман хаяр пуппа
Калаçасчĕ ырă.
Паллă ĕнтĕ, çавăнпа
Ярăнать-çке пырĕ.

– Сыпсанах, хăюллă-çке,–
Тенĕ çакă ватă.
Сыпнă малтан пĕр черкке,
Каярах тăваттă.

Хайхисем вара каçпа
Тин кайма пултарнă,
Кĕлпука çăпатапа
Чиркĕве уттарнă.

Ылтăн ывăл шăннăран
Макăрма та маннă,
Такăнса, аран-аран,
Урампа танкканă.

Чăркăш пуп çарапакка
Тăратса хăварнă,
Сивĕ шывлă касмăка
Кĕлпука чăмтарнă.

Пĕр «Анне!» тесе ача
Кăшкăрма шутланă, –
А!– тесе юлни анчах
Чиркӳре янранă.

Ӳсĕр куçлă пуп пĕрре:
– Раба божий,– тенĕ,
Касмăкран йĕпескере
Уринчен çĕкленĕ.

Хресне ашшĕ мĕскĕне
Чаппанпа чĕркенĕ,
Сивĕре инçе килне
Çĕклесе çитернĕ.

«Раба божий» урине
Тăм илсе пĕтернĕ.
Ывăл хăйĕн амăшне
Паллайми чирленĕ.

Сехрине хăпартнипе
Мĕскĕн амăш йĕрнĕ,
Ачине хур çăвĕпе
Эмелленĕ, сĕрнĕ.

Ашшĕ пăлтăр каштинчен

[1] Тĕне кĕмен чăвашсем инкек-синкекрен, чир-чĕртен сыхланса мăйне пилеш татăкĕ çакнă, ăна пĕтев, тенĕ.

Метрӳшке антарнӑ,
Кӗтесри пукан çинче
Тунката пек ларнӑ.

Кирлӗ чей, анчах пӗрре
Вут çурма та халӗ
Юлайман кӗрвен ӳтре
Ашшӗн вӑйӗ-халӗ.

Сывлаймасть, анчах вӗри,
Пӗчӗкçӗ чӑвашӑн
Карӑнса тапать чӗри,
Тем пек пурӑнасшӑн.

Харсӑрсен ӑратнинче
Çак ача çуралнӑ.
Унӑн пӗчӗк ӳтӗнче
Пысӑк вӑй амалнӑ.

Ун аслашшӗ вӑйӗпе
Тем тума пултарнӑ,
Тавлашсан, сухалӗпе
Пичӗке кустарнӑ.

Пулнӑ çавӑ пичӗке
Хӗрӗх пӗр витреллӗ.
Паттӑр чунлӑ старике
Çул килмен телейлӗ.

Выçлӑх çул нумай хресчен
Пӑлхансан, тискеррӗн
Килнӗ-тулнӑ уесрен
Салтаксен эшкерӗ.

Çирӗм ик салтакӑнне
Ӗмӗрне вӑл татнӑ.
Туртапа çапса – хӑйне
Çӗпӗре ӑсатнӑ.

Каттӑршнай ӑратнинче
Çак ача çуралнӑ.
Пулмӗ-ши çамки çинче
Аслашшин пек паллӑ?..

Пурӑнсан, чипер ачан
Пулмалла хастарӗ,
Халӑх ӗçӗшӗн анчах
Тертленме пултарӗ.

Ашшӗ-амӑш килӗнче,
Пӗр хӗлхем çимесӗр,
Савнӑ ывӑль умӗнче
Ларнӑ куç илмесӗр.

Эрнерен Кӗлпук вара
Ик куçне те уçнӑ.
Пӑхнӑ вӑл йӗри-тавра
Пӑшатан пек куçлӑ.

Çав самант килкӳртине
Ашшӗ сикнӗ-тухнӑ,
Виçӗ сурӑхран пӗрне
Пархатаршӑн пуснӑ.

Кӳршӗрен, ӑратнинчен
Хӑнасем пуçтарнӑ.
Кӗрекен чи варринче
Ылтӑн ывӑл ларнӑ.

Пӗтӗм халӑх умӗнче
Хурарах кукарлӑ
Сурӑх пуç мӑйракинчен
Вӑл тытма пултарнӑ.

Вӑл çуралнӑ кунтанпа
Чылай вӑхӑт иртнӗ.
Чӗринчи хӑватлӑхпа
Çӗр çула вӑл çитнӗ.

Вăл тĕне кĕни çинчен
Этемсем пăртакçă
Шӳтлесе хăй ялĕнче
Каласа параççĕ.

Хăй Кĕлпук та, хушăран
Чĕлĕмне туртас-тăк,
Ӳсĕрсе илет паян
Юриех сасартăк.

– Çав хресне атте шăнтни
Ӳпкере кăшт юлнă.
Пулнă вăл, Тукас çынни,
Сыпнă чух хăюллă.

Мĕн вăрçас… Утне тăпри
Хур тĕкки пек виттĕр! –
Тет Кĕлпук мучи юри
Ырă кулă витĕр.

Хăй пăхать масар енне–
Йывăçлă масарĕ
Халĕ вирлĕ çил чухне
Ухĕрсе кашларĕ.

Хăйĕн йăх-ăратнинче
Этемсем хастарлă
Пулнипе Кĕлпук мучи
Юмансем ларттарнă.

Ашшĕн вил тăпри паян
Питĕ пысăк пӳллĕ.
Ун çинче ларать юман
Хурчăка йăвиллĕ.

Улăп пек аслашшĕне
Хăй Кĕлпук курман та,
Асăнче тытать ятне
Халĕ те, паян та.

Çĕпĕр çĕрĕнче таçта
Пĕтнĕ кунĕ-çулĕ,
Кутамас юман унта
Шăтса тухнă пулĕ.

Çĕпĕре ăсатнă чух
Хăй çинче ӳсмелĕх
Илнĕ вăл, хăватлă чун,
Пĕр юман икелĕ

1958.

Алексей Воробьев

ЯЛТА

Сап-сар автан кашта çинчен
Пуçне пăрса сăнатъ мана.
Ун ашшĕ маар-и эп килсен
Лексеччĕ пĕлтĕр хурана?

Ак шаклатать те калинкке,
Килсе çитет тури инке.
Ун пур саппунĕ айĕнче
Хутпа пăкланă кĕленче.

Çуйхашнă еасă илтĕнет:
«Кукка, кукка...»
Хапха чĕрикĕ, –
Улт-çич ача сырса илет.
Утайманни те пур пĕр-иккĕ.

Кĕтнех пуль эпĕ килессе,
Тус-тантăшсем персе çитеççĕ.
– Паян пит шăрăх-çке, – тесе
Сĕтел енне пăхса илеççĕ.

Кунта шӳте сума сăваççĕ.
Кунта кашни –Йĕп Ахванаçĕ.
Сӳнтернĕ май пирус тĕпне,

Пĕри кăларчĕ, кур, «йĕпне»:
– Уйрăлайман-мĕн эс ялтан,
Хула çумне çыпçăнайман...

Çилленĕп-и? Шӳ́те хавас:
– Ялта чух лĕр туйран юлман.
Чыса яман.
Çынна сутман.
Сиртен ман мĕншĕн уйрăлас?

Туя сасси тулта шăк-шак.
Кĕрет ман вăрçăри юлташăм,
Çемçелнĕ мухмăрлă шăмшак.
Е хăтланать юри ултавшăн?
Пырса ларать те ман çума,–
Каллех итле, каллех çав çемĕ:
– Эпир санпа епле çунаман?
Çĕр çывăрми, калас, ĕçленĕ,
Атя шаккар.
Ан вĕçкĕнлен.
Мĕнле поэт вăл, ĕçмесен?

Хĕвел те тӳ́нчĕ.
Каçхине
Шăпланнă пек уй-хир кĕрлевĕ,
Тӳ́пен çӳçенчĕк виттине
Ял хĕрĕеем пулас тĕрленĕ.
Çиле туятăп пит çинче.
Тăван пекех вăл сунчĕ сывлăх.

Хĕрӳ́ллĕ мăкăнь куçĕнче
Куççуль пĕрчи пек чĕрĕ çывлăм.

1958.

Алексей Воробьев

ХИРТИ ТĔЛПУЛУ

Ирхи хĕвел çиппи вĕр-çĕнĕ,
Тулли пучахсене тирет.
Хирте ку кам?
Сергей Есенин...
Манпа калаçрĕ куçкĕрет.

Çӳç кăтрине вылятрĕ çил,
Кăвак куçсем каллех яшланнă.
Поэт хире сăнать пĕр си,
Кĕç хаш сывлатъ, тем шухăшланăн,
Манран ыйтать:
– Кала, сухаçă,
Паян эс мĕншĕн хĕпĕртен?
Выçса хуралнă хурлăх каçĕ
Яла хуплатчĕ ĕлĕкрен.

Ӳ́летчĕ анчăк.
Мĕскĕн уйăх
Çурла çĕтернĕ пусăра.
Çухалтăрах вăл, – тырă уйĕ
Вырмасăр вырнă тек çара.

Çул хĕррине тухса тăратчĕ
Ват ăвăс, сарăхнă сухал.
Ыйткалакан пек ун турачĕ
Чĕтре-чĕтре тăсатчĕ ал...

Хирти сăнсем паян йăлт урăх,
Хуть çĕнĕ сăвă çыр халех.
Тухатнă тек асамлă юрă
Вăратрĕ ман чуна каллех.

Çапла каларĕ те Есенин
Шăпланчĕ тем. Çав самантра
Пĕр харăсах çĕр ут кĕçеннĕн
Кĕрлерĕ трактор анатра.

Комбайнсем шăваççĕ хирĕç
Çапăçăва хатĕрленсе:
Çула картланă тулă хирĕ

Тăрать хӳме тек çĕкленсе.

Ирхи ĕç ирĕк,
Шавĕ савăк.
Ыр туйăм пачĕ çынсене.
Чипер хĕрсем вулаççĕ сăвă,
Сергей Есенин çырнине.

Сисмесĕр тухнă куççульне
Шăлмасăрах поэт хăварчĕ:
– Кала, сухаçă, кам хăвачĕ
Çĕнетрĕ Руçăн кунçулне?

Хуравлама сăмах тупасшăн
Çапла шутланă хушăра
Поэт мана каларĕ ăшшăн:
– Хамах куратăп, ан шыра...

Пĕлетĕп эпĕ.
Аслă Ленин
Кунта çĕн пурнăç çавăрать.
Эп яланах ăна ĕненнĕ,
Мухтарăм хамăн сăвăра.

...Хирти хĕвел çиппи вĕр-ĕнĕ,
Тулли пучахсене тирет.
Чăн чĕрĕлес пулсан, Есенин
Çапла калатчĕ куçкĕрет.

1958.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэмине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000011/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

*** *Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Литература пĕлĕвĕнчи «хресчен поэзийĕ», «хура çĕр юрăçи» ăнлавсене хак парăр. Вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхне мĕнле ăнлантарма пулать?
2. Яккăв Ухсайĕн пултарулăхне тĕпчевçĕсемпе ытти çыравçăсем мĕнле хаклаççĕ?
3. Яккăв Ухсайĕ «Кĕлпук мучи» поэминче мĕнле илемлĕх мелĕсемпе усă курать? Вĕсене ăнлантарса парăр.
4. А. Воробьевпа Я. Ухсай пултарулăхĕсенче мĕнле пĕр пек идейăна, темăна тата сăнарсене палăртма пулать?
5. Чăваш литературинчи «ял», «çĕр ĕçченĕ» пирки çырнă мĕнле хайлавсемпе çыравçăсене эсир пĕлетĕр? Çĕр ĕçченĕн сăнарĕ, ял теми хайлавра мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине тишкерĕр.

¤ *Пултарулăх ĕçне тăватпăр*

Тăван ял сăн-сăпатне, таврари çутçанталăка, ял ĕçне сăнарласа паракан хайлав (сăвă, эссе) çырăр е ӳкерчĕк тăвăр.

♫ *Проектсем*

1. Яков Ухсай поэзийĕнчи жанр пуянлăхĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.
2. Алексей Воробьев пултарулăхĕнчи саманапа вăхăт сăнарĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Δ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Яккăв Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэминчи архаизмсене, фразеологизмсене тупса палăртăр, вĕсен чĕлхери тата хайлаври пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

Ω ***Пăхмасăр вĕренетпĕр***

Алексей Воробьевăн «Хирти тĕлпулу» сăвви.

ХАЙЛАВ ПОЭТИКИНЧИ ХАЛĂХ ТАТА ЭТЕМЛĔХ ЭТИКИ



Александр КĂЛКАН (1912-1988)

Кĕске биографи справки

1911 çулхи раштавăн 25-мĕшĕ – Çĕн Мертлĕ (Хусан кепĕрнин Пăва уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Тутарстанри Пăва районĕ).

1926-1930 çулсем – Хусанти Чăваш педагогика техникумĕнче вĕреннĕ.

1928 çул – çыравçăн пĕрремĕш сăвви пичетленнĕ.

1930-1935 çулсем – Тутар тата Пушкăрт республикисенчи шкулсенче учитель пулса ĕçленĕ.

1933 çул – Хусанти Тутар педагогика институтĕнче вĕрене пуçлать.

1935 çул – Шупашкара куçса килнĕ.

1935-1938 çулсем – Чăваш çыравçисен пĕрлĕхĕн япаллă секретарĕнче ĕçленĕ.

1936 çул – çыравçăн «Аниса» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.

1938-1940 çулсем – «Пионер сасси» хаçат редакциĕнче пай пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ.

1940 çул – СССР çыравçисен пĕрлĕхне кĕнĕ.

1940-1941 çулсем – «Хатĕр пул» журналăн редакторĕ пулнă.

1941-1945 çулсем – Чăваш республикинчи Халăх комиссарĕсен Союзĕ çумĕнчи ӳнер управлениĕн пуçлăхĕ пулнă.

1945-1956 çулсем – Чăваш академи театрĕн литература пайĕн заведующийĕ, «Тăван Атăл» журналăн редакторĕ пулнă.

1945 çул – Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ ӳнер ĕçченĕ ятне тивĕçнĕ.

1951 çул – çыравçăн «Хаклă парне» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.

1956 çул – çыравçăн «Сар Иван» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.

1958 çул – Мускаври А.М. Горький ячĕллĕ Литература институчĕ çумĕнчи Аслă литература курсĕсене пĕтернĕ.

1959 çул – çыравçăн «Юптарусем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.
1988 çулхи чӳкĕн 19-мĕшĕ – Шупашкар хулинче вилнĕ.

Ăслăлăх аниичен

«Юптару жанрĕ хăй тĕллĕн питех те кăткăс, çавăнпа та лайăх юптару çырас тесен хăвăн шухăша ирĕке яма пĕлмелле, чĕрĕ тата хăйне евĕрлĕ шухăшлавлă, кăштах ашкăнчăк та пулмалла» (*А.А. Тарасов, çыравçă*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Александр Кăлкан (*Антонов Александр Дмитриевич*) совет чăваш литературинчи чаплă-сумлă çыравçăсенчен пĕри. Вулакансем ăна драматург, прозаик, сăвăç-сатирик тата куçаруçă пек пĕлеççĕ. Вăл нумай камитсемпе драма, повеçсен, поэмăсемпе ачасем валли çырнă сăвăсен, юрă сăмахĕсен, юптарусемпе памфлетсен авторĕ. Çакна пăхмасăрах Александр Кăлкан алла илнĕ литература жанрĕсен ретĕнче юптару жанрĕ уйрăм вырăн йышăнса тăрать.

Пулас юптаруçăн пултарулăх аталанăвĕ çине П. Хусанкайпа Н. Полоруссов (Шелепи) сăвăçсемпе тачă çыхăнура тăни, туслă пулни пысăк витĕм кӳнĕ. Çапла унăн пĕрремĕш сăвви, Н. Полоруссова (Шелепине) халалланăскер, Хусанта тухса тăракан «Утăм» ятлă альманахра 1928 çулта пичетленнĕ. Ун хыççăн пĕрин хыççăн тепри «Кĕрхи ака», «Уй-хир хĕрĕ», «Тимĕрçĕ-комсомолец» тата ытти сăввисем шăранса тухаççĕ. Вĕсенче сăвăç совет халăхĕн кулленхи ĕç-хĕлĕн мăнаçлăхне мухтанă.

А. Кăлкан чăваш литературине сăвăсемпе кĕнĕ пулсан та хăйĕн «Анисса» (1935) ятлă пĕрремĕш драми хыççăнах вăл республика премине илме тивĕçнĕ. Вăхăт ыйтнипе килĕшӳллĕн çак хайлавра çыравçă тĕрлĕ социаллă сийе кĕрекен çынсен (чухăнсемпе пуянсен) хушшинчи çивĕч кĕрĕшĕвне кăтартнă. Паянхи куншăн çакă, паллах, актуаллă мар. Апла пулин те шăпах çак драма А. Кăлкан пьесисем малашне анлă сарăлни çине витĕм кӳнĕ. Çапла, сăмахран, унăн «Алим», «Маргарита алхасăвĕ», «Авлантарчĕç» ятлă драма-камичĕсем чăваш театрĕсен репертуарне çирĕп кĕрсе куракансен хушшинче анлă сарăлнă. В.Я. Канюков литература тĕпчевçи асăрханă тăрăх, «пирĕн çĕршывра пулса иртекен çитĕнӳсем çуттинче драматург производствăри ӳсĕмсене сăлтавсăр ӳстерсе кăтартакансене, йыш-ушкăнри икĕ питлĕхпе суя-ултава, кулленхи пурнăçри мещенлĕхе питлет».

Пĕтĕмĕшле илсессĕн Александр Кăлканăн драмăлла хайлавĕсенче паянхи чăваш ял çыннин пурнăçĕпе ĕçне («Çывăх çăлтăрсем» (1950) пьеса, «Хаваслăх» (1945) музыкăлла камит), халăхăн иртнĕ пурнăçĕпе

революциллĕ кĕрешĕне («Анисса» драма), граждан вăрçинчи паттăрлăха («Алим» (1940) пьеса), совет влаçĕ ура çине тăнине («Октябрь хумĕ» (1957) драма) сăнарласа кăтартнă.

Кулленхи пурнăçри тата уйрăм çын çитменлĕхĕсене питлесси А. Кăлканăн юптару жанрĕнче татах та ăнăçлăрах пулнă. Çапла çыравçăн юптарăвĕсенчи тăрăхлавлă питлев яланах конкретлă, ытарлăхĕ уçă пулнине палăртмалла. Çакăнпа пĕрлех вăл сĕткенлĕ те пуян, сăнарлă та янравлă чĕлхепе усă курать. Тăрăхлавлă хайлавсенче сатирик харпăр хăй нушине халăх кăмăлĕнчен çÿлерех лартакан – антăх тата вăрлаканçынсене («Сăпайлă пуçлăх»), пакăлти, чĕлхепе çеç тем те тума пултаракан («Тĕкĕлтурасемпе Пыл хурчĕсем», «Кăркка сăмах парать»), критикăна хĕсекен («Юманпа Улатакка»), карма çăвар («Ашакпа Кашкăр») çынсене сивлени те курăмлă.

Александр Кăлкан çавăн пекех литературăри чи кăтăс жанрсенчен пĕринче тухăçлă ĕçленĕ – чи кĕçĕннисем тата кĕçĕн классенчи ачасем валли хайлавсем çырнă. Кунта вара çыравçăн фантазийĕ, илемлĕх туртăмĕ, чĕлхи кăна мар, виçелĕхпе ăса вĕрентни те пĕлтерĕшлĕ. Çыравçăн çакнашкал ăсталăхĕ чăннипех те пысăк пулнă. Вăл хăйĕн хайлавĕсенче кулленхи пурнăçăн хăвăрт аталанăвне çивĕччĕн тата васкавлăн кăтартма, çĕнĕ темăсемпе проблемăсене тишкерме тăрăшнă.

Ача-пăчасем валли çырнă хайлавсем шутĕнче Кăлканăн юмахĕсене уйрăммăн палăртмалла. Çапла вулакансем унăн «Сар Иван» сăвăлла юмахне юратса вуланă, 1959 çулта çак хайлава чăвашла тата вырăсла (куçаруçи В. Тушнова) пичетлесе кăларнă. Юмахăн тĕп сăнарĕ хресчен ачи Иван тĕрлĕ йывăрлăхсене тÿссе вĕсене тивĕçлĕ çĕнтерме пултарнине кăтартать кунта автор. Çак тĕлĕшрен Кăлкан хайлавĕ халăх юмахĕсен йăлисемпе килĕшсе тăрать.

Н. Дедушкинпа М. Федотов критиксем палăртнă тăрăх, çак юмахра чăваш халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ уйрăмах курăнать. Вĕсем çапла çыраççĕ: «Чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн çÿрекен пултарулăхĕнче Иван ят анлă сарăлнă. Çак Ивансем пирки, вĕсен телейсĕр шăпи пирки нумай юмах, халап хывнă. Анчах та А. Кăлкан кĕнекин геройĕ – урăхла Иван. Пирĕн совет саманин Иванĕ, Сар Иван, урăхла каласан мухтавлă, кăмăллă, илемлĕ». Унсăр пуçне ку хайлавра шÿт лирикăлла шухăшлавпа, пурнăç философийĕпе черетленсе пырать.

Чăваш сăвăçи, юптаруçи тата драматургĕ çавăн пекех илемлĕ куçару ăсти те пулнă. Вăл хĕрĕхе яхăн вырăс тата ют çĕршыв авторĕсен, çавăн пекех хăй вăхăтĕнчи çыравçăсен тата классиксен нумай хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Вĕсен шутĕнче В. Шекспирăн «Отелло»,

«Патша Лир», А. Островскийĕн «Правур вырăнта», «Василиса Мелентьева», Н. Гоголĕн «Авлантару», Н. Погодинăн «Пăшаллă çын», «Кремель куранчĕсем» хайлавĕсене асăнмалла.

Чăваш совет литературинчи юптару жанрĕн аталанăвĕ çине А. Кăлкан пултарулăхĕпе пĕр тан А. Галкин, Н. Евдокимов, И. Мучи, М. Аттай пултарулăхĕсем те пысăк витĕм кӳнĕ. Паянхи кун, XXI ĕмĕрен иккĕмĕш вунăçуллăхĕнче, вĕсен йăлине малалла тăсакан çамрăк çыравçăсен хушшинче вара Владислав Николаева палăртма пулать. Чăваш юптаруçисем ытларах чухне классикăлла юптару тĕсĕпе ĕçлеççĕ: тискер чĕрчунсемпе йывăç-курăк сăнарĕсем урлă çынсен çитменлĕхĕсемпе кăлтăкĕсене сивлеççĕ, халăхăн социаллă пурнăçне тата шăпине сăнласа кăтартаççĕ.

Литература теорийĕ

Юптару тесе ăса вĕрентсе калакан тăрăхлавлă сăвăлла е прозăлла илемлĕ литература хайлавне калаççĕ. Юптару вĕçĕнче яланах кĕске ăса вĕрентсе калакан пĕтĕмлетӳ – мораль (тăн пани) – тăрать. Тĕп сăнар вырăнĕнче кунта чĕрчунсем, ӳсен-тăрансем, япаласем пулаççĕ. Юптару авторĕ çынсен çитменлĕхĕсене питлет.

Юптару литературăри чи авалхи жанрсенчен пĕри. Вырăс литературинче унăн аталанăвĕ XVIII ĕмĕр варри – XIX ĕмĕр çурри çине ӳкет, А.П. Сумароков, И.И. Хемницер, А.Е. Измайлов, И.И. Дмитриев ячĕсемпе çыхăннă. Çапах та вырăс юптарăвĕн чăн аталанăвĕ И.А. Крылов пултарулăхĕнче курăнать.

Юптару илемлĕ литературăн халăх сăмахлăхне чи çывăх жанрĕ. Вăл ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшĕсемпе çыхăннă, халăхăн кулленхи ăс-халне тата тăн парăвне кăтартать, ăна уçăмлă та ансат чĕлхепе çыраççĕ. Çакă пĕтĕмпех вара юптарăвăн халăхлăх никĕсне вăйлатать.

Юптару жанрĕшĕн автор-калуçă сăнарĕ питех те пĕлтерĕшлĕ. Шăпах унăн шухăш-кăмăлĕ юптарури сюжет йĕркелес, стиль, калу йĕркин камитле мелĕсен уйрăмлăхне çирĕплетет. Юптарура автор сăнарĕ яланах курăмлă: харпăр хăй сăпатлăхĕ те, пуплев кĕвĕлĕхĕ те, мĕн пулса иртнине хакласси те калавçăпа çыхăннă. Хăш пĕр чухне калавçă сăнарĕ хайлав авторĕпе тӳр килет. Çакăн пек чухне вара юптару авторĕ вулаканпа тӳремĕн калаçу, пуплешӳ пуçлать, хăйĕн курăмне, шухăшне пытармасăр палăртать.

Юптару жанрĕн тухăçлă ытарлăх мелĕсем шутĕнче сăпатлантарупа аллегорине, гротескпа иронине асăнмалла.

ТИЛĔ

Пĕр кайăк-кĕшĕк ферминче
Сасартăк шав çĕкленнĕ нр çинче.
– Сыхланăр! Тилĕ! – тенĕ Сар Автан,
Лупасайне вăл чуганă чи малтан.
– Кикак! Этăк-итак!
Чăнах та Тил никак? –
Янрашнă Хур Аçи, чĕвен тăрса.
Хай Тилĕ янă макăрса:
– Эй, самана!
Эсир, туссем, мана
Темле йăнăшпала
Тилех тесе шутлатăр пулмалла.
Эп Тилĕ мар, эп йыт çури,
Çапла пулать-и тил хӳри?! –
Кăтартнă Тилĕ татăк хӳрине,
(Трезор-çке татса юлнă çуррине!)
Анчах та Хур Аçи, айван,
Ăна-кăна пит чухлайман:
– Как, этăк-итак!
Эс чăн та йыт çури никак? –
Тесе, вăл пынă та Тилĕ патне,
Кĕç манса кайнă хăй ятне.
Манмасăр! Тиллĕн шăлĕсем
Тăмаççĕ шеллесе!

_____

Çапла хăшпĕр çынсем,
Тилĕ пекех чееленсе,
Макраççĕ те йăпăлтатаççĕ;
Май килнĕ чух вара хăйсем
Ним хĕрхенми çыртаççĕ!

1979.

ЙЫТĂПА КУШАК

Кушакăн шартлама хĕл варринче
Вутти пĕтсе çитет,
Выртасчĕ кăмака çинче,

Анчах сив кирпĕч хытă чĕпĕтет!
Ашша вĕреннĕ Кушака
Пит ырах мар-мĕн шăннă кăмака.
Тек тӳсеймест хайскер, пӳртрен тухса,
Йăпăлтатма пуçлать Йытта курса:
«Салам, пускилĕ-м! Ма-а вĕрен?
Пит майлă маар-им сивĕре?»
«Сана аван! – тет Йытă тарăхса, –
Эс ăшă кăмака çине
Выртан та хăпарса,
Туймастăн сивĕ хĕл кунне».
«Туятăп çав, туяп, Хураçка тус!
Шеллеп сана... Анчах пуçна ан ус,
Куç паянах эс ман пата!
Пурнар-ха, тупата,
Чунтан килĕштерсе,
Çут тĕнчене тĕлĕнтерсе.
Пăрах çак шăтăк кил-çурта,
Шăнса вилетĕн эс унта...
Тăхта!
Пĕр шухăш кĕчĕ ман пуçа:
Пул ман килте халь эс хуçа,
Вут тат та, хăв пуртне пăсса,
Тек пурăн кăмака хутса!»
Суйса курман нихçан та Хураçка,
Шанать вăл Кушака;
Куçать те ун патне
Сӳтсе такать хăйĕн пӳртне.
Хĕл каçиччен вал, вут татса,
Хутса пурнать Кушак кăмакине.
«Ава-ан! – тет Кушакки, мăрăлтатса,
Мухтать вал халь Йытта, –
Сан пек маттур тус тупас çук ниçта!
Мĕнле хастарлă эс! Мĕнле ĕçчен!
Пĕрле пурнасчĕ виличчен!..»
Анчах та çуркунне çитсен,
Хуса ярать ăна хăй килĕнчен.

_____

Çак Кушак евĕр туссене
Ан шан эс, тусăм, ан ĕнен:

Вĕсем эс ырă туиине
Манаççĕ йывăрлăх иртсен.
1979.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. А. Кăлканăн хайлавĕсене Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000050/index.html

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе яватпăр*

1. Мĕнле литература жанрне юптару теççĕ?
2. А. Кăлкан чăваш литературинче мĕнле жанрсемпе ĕçленĕ?
3. А. Кăлкан чăваш драматургийĕн аталанăвĕ çине мĕнле витĕм кӳнĕ? Унăн паллă драма хайлавĕсене асăнăр.
4. Чăваш юптару жанрне А. Кăлкан мĕнпе пуянлатнă?
5. Чăваш литература историйĕнче юптару жанрĕпе кам-кам ĕçленĕ? Паянхи литературăра кам ĕçлет?

● *Çивĕч ыйтусемпе ăнлавсен кăшăлĕ*

Ытарлăх тĕсĕсем:
сăпатлантару (оллицетворение) *(чунсăр япаласене чунлă пек туса кăтартни)*
аллегори (*ытарлă, юптарса калани*)
символ *(курăнакан япала курăнман япалан палли пулса тăни; ăнлава, идейăна пĕлтерекен паллă япала)*
гротеск *(акăш-макăш ӳстерсе, улăштарса сăнламалли мел)*
ирони (*ытарлă тăрăхлани*)
эзоп чĕлхи (*автор шухăшне ятарласа пытаракан литературăри вăрттăн çыру, ытарлăх*)

♣ *Вулама сĕнетпĕр*

Дедушкин Н.С. Пурнăç илемĕпе хавхаланса: статьясем, асаилӳсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1988. 160 с.

Григорьев Н.Г. Пархатарлă сăнар, сăнарлă чĕлхе: литературăпа критика статйисем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1990. 240 с.

☼ *Сочинени темисем*

1. Чăваш юптару жанрĕн илемлĕх тĕнчи (А. Кăлкан юптарăвĕсем тăрăх).
2. Александр Кăлканăн пурнăçĕпе пултарулăх çулĕ.

♫ *Проект*

Александр Кăлкан – кулăш ăсти *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.

Δ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Александр Кăлканăн юптарăвĕсенчи ытарлăх тĕсĕсене тупса палăртăр. Çыравçă ытларах хăш тĕсĕпе усă курнине асăнăр.

Ω *Пăхмасăр вĕренетпĕр*

Александр Кăлканăн «Йытăпа кушак» юптарăвĕ.



Мĕтри КИПЕК (1913-1991)

Кĕске биографи справки

1913 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕ – Тимĕрчкасси (Хусан кĕпернин Етĕрне уесĕ) ялĕнче çуралнă (халĕ Чăваш Республикин Вăрнар районĕ).

1926 çул – Тимĕрчкасси ялĕнчи пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă та Кĕçĕн Яуш ялĕн сакăр çул вĕренмелли шкулне вĕренме кĕнĕ.

1930-1932 çулсем – Чăваш патшалăх педагогика институчĕн филологи факультетĕнче 2 курс вĕреннĕ.

1932-1933 çулсем – Вăрман-Кибекри коммунизмла çамрăксен шкулĕн заведующийĕ тата учителĕ пулса ĕçленĕ.

1932 çул – «Коммунар» хаçатра малтанхи сăвви пичетленнĕ.

1933 çул – «Трактор» альманахра çыравçăн пĕрремĕш калавĕ пичетленсе тухнă.

1935 çул – Кĕçĕн Яуш ялĕн вăтам шкулĕнче учитель пулса ĕçленĕ.

1935-1954 çулсем – Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Отставкăна полковник званинче тухнă.

1946 çул – Çарпа юридици академинчен вĕренсе тухнă.

1983 çул – «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романшăн К.В. Иванов ячĕллĕ патшалăх премине тивĕç пулнă.

1991 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕ – Мускав хулинче вилнĕ.

Ăслăлăх анинчен

«Эпир вăтăр çул ытла туслă пулнă. Вăл Мускавра пурăннă, эпĕ – Шупашкарта, май тупса тĕл пулкаланă, час-часах çыру çӳретнĕ. <...> Унăн юратнă теми вăрçăпа патриотлăх пулса тăнă. Фронтран таврăнсан тата профессиллĕ çыравçă пулса тăрсан, Дмитрий Афанасьевич «Хитре хĕрарăм», «Студентсем» повеççене, «Кайăк тусĕ», «Вилсе чĕрĕлнĕ çын», «Çын хуйхи» романсене çырать.

Унăн хайлавĕсенче çырса панă ĕç-пуçсем хăйсен чăнлăхĕпе тата тĕрĕслĕхĕпе уйрăлса тăраççĕ, специалистсем ĕнентернĕ тăрăх, Кипек çивĕч лару-тăрулла сюжет тума пултарулла. Вăрçă паттăрĕсем пирки роман çырма йышăнсан вăл пухнă материалпа çеç çырлахса ларман,

çапăçусем пулнă вырăнсенче хăй пулса курма шут тытнă» (*П.А. Крысин, журналист*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Мĕтри Кипек (*Афанасьев Дмитрий Афанасьевич*) çыравçăна чăваш, çавăн пекех вырăс вулаканĕсем чи малтанах икĕ анлă сарăлнă романа («Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», «Кайăк тусĕ») пула пĕлеççĕ. Паллах, çыравçăн пултарулăх еткерĕ çак икĕ хайлавпа çеç çырлахса лармасть. Унăн тĕрлĕ вăхăтра тухнă тата вулакансем юратса йышăннă кĕнекесем хушшинче «Тăван çĕршывшăн» (калавсемпе очерксем, 1941), «Сунарçă калавĕсем» (1959), «Вăрман улăпĕ» (калавсем, 1959), «Кайăк тусĕ» (роман, 1962), «Уйăх витĕр çул курăнать» (повеҫсем, 1963), «Çамрăк çын» (повеҫсем, 1964), «Хитре хĕрарăм» (повесть, 1966), «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» (роман, 1 кĕн., 1969; 2 кĕн., 1974), «Сунарçăсем» (роман, 1973) кăларăмсене асăнмалла.

Нумай çыравçăсенни пекех Мĕтри Кипекĕн литература туртăмĕ ир çуралнă. Пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех вăл нумай вуланă, аслă классенче вара хăй те сăвăсем çыра пуçланă. Çак сăвăсем шкул стена хаçатĕнче тата литература кружокĕн ал вĕççĕн тухса тăнă журналĕнче кун çути курнă. Унăн пĕрремĕш пичетленнĕ хайлавĕ те сăвă пулнă, çапах та чăваш вулаканĕсен кăмăлне вăл хăйĕн прозăлла хайлавĕсемпе тыткăнланă.

Мĕтри Кипекĕн пĕрремĕш калавĕсенчен чылайăшĕ çар темине çĕкленĕ («Кочетов капитан», «Лейтенант ывăлĕ», «Цыганок курсант», «Хисеплĕ вахтăра», «Санинструктор» тата ыт. те). Çакăн тупсăмĕ питех те ансат: 1935 çулта, пĕрремĕш калавĕ пичетленни икĕ çул иртсен, ăна çара илсе кайнă. Нумай çыравçăсем йĕри-тавра пулса иртекен ĕç-пуçпа пулăмсене хăйсен хайлавĕсен никĕсне хураççĕ. Çакă, паллах, хайлав сюжечĕн чăнлăхне те ӳстерет, авторăн кăмăл-туйăмне те туллин сăнарлать. Ку тĕлешрен Мĕтри Кипек ыттисенчен уйрăлса тăмасть. Сăмаха май çар хĕсметĕнче вăл çирĕм çула яхăн тăнă. Çавăнпа та çарпа вăрçă теми те унăн пултарулăхĕнче тĕп темăсенчен пĕри пулса тăнă пулĕ.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçин пĕрремĕш кунĕсенчен пуçласах Мĕтри Кипек Калинин тата Хĕвел анăç фрончĕсенче уйрăм çыхăну батальонĕн штаб начальникĕ пулнă, фронтри хаçатсенче пичетленнĕ. Шăпах çапăçу хирĕнче вăл совет салтакĕсемпе офицерĕсен паттăрлăхне кăтартакан калавсемпе очерксем çырнă («Тăван çĕршывшăн», «Разведкăра», «Этем хакĕ» тата ыт. те).

Вăрçă ахрăмĕ унăн 1945 çул хыççăнхи хайлавĕсенче те хăй вырăнне тупнă. Фронтра юн юхтарнă ытти çыравçăсем пекех çак тема ăна питĕ çывăх пулнă. Анчах та нумай чăваш çыравçисемпе танлаштарсан, сăмахран Л. Агаковпа, М. Кипекшĕн сăнарăн кăмăл-туйăмне (психологине) – унăн туйăмĕсемпе шухăшĕсен шалти хирĕç тăрăвне, чун аталанăвне тата ыт. те. – кăтартасси пĕлтерĕшлĕрех («Тăватă кун» повесть, 1953). Çыравçăн Тăван çĕршывăн аслă вăрçине халаллана пысăк хайлавĕсем хушшинче «Вилсе чĕрелнĕ çын», «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романĕсене уйрăммăн палăртмалла.

Пĕтĕмлетсе каласан, М. Кипекĕн геройĕсем вĕсем – салтаксем, ахаль ял ĕçченĕсем, студентсем, сунарçăсем, вĕреннĕ çынсем, интеллигенци. Вĕсене пурне те Тăван çĕршыва юратни, этемĕн ăс-тăнне иксĕлми ĕненни пĕрлештерсе тăрать. Вăрçă хаярлăхне пĕр илемлетмесĕр уçса панă май çыравçă салтаксемпе офицерсен сăнарĕсенчен паттăрлăхшăн çунакан, тавăру çулăмĕпе çеç хĕмленсе тăракан çын тумасть. Хаяр вăрçă хирĕнче те чун ырăлăхĕпе ачашлăхне çухатман сăнарсемшĕн Тăван çĕршыва хŭтĕлесси вăл – таса тивĕç.

Мĕтри Кипек çарпа вăрçă темипе пĕр тан çут-çанталăка сыхлас ыйтава та çĕкленĕ. Унăн çынпа таврари çут çанталăк хушшинчи çыхăнăва кăтартакан калавĕсемпе повеçĕсем, романĕсем вулакана çут çанталăка, пĕтĕм тавралăха, чĕрĕ тĕнчене – чĕрчунсемпе йывăç-курăка – юратма вĕрентеççĕ, çутçанталăк пуянлăхĕпе тухăçлă усă курассине йĕркелет. Çын, унăн шалти тĕнчи, вăл çутçанталăк çине мĕнле пăхни – Кипек пултарулăхĕн тĕп йĕрĕ пулса тăрать. Çавăнпа та çыравçăн «Сунарçă калавĕсем», «Вăрманти улăп», «Сунарçăсем» тата ытти кĕнекисенче те çыннăн çутçанталăка аркатса çаратмалла мар текен тĕп шухăш мала тухать.

Мĕтри Кипек çивĕч лару-тăруллă сюжет тума ăста. Унăн хайлавĕсенче пулса иртекен ĕçсем хăйсен чăнлăхĕпе тата тĕрĕслĕхĕпе палăрса тăраççĕ. Акă, «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романа çырма шут тытнă чух çыравçă материал пуçтарнипе çеç çырлахса ларман, çапăçусем иртнĕ вырăнсенче хăй пулса курма тăрашнă. 1970 çулта Польша çĕршывĕн тĕп хулинчен янă çырура М. Кипек çапла çырать: «Тин çеç Кельц хулинчен Варшавăна таврантăм. Унтан маларах Кракова кайса килтĕм, ман кĕнекен тĕп сăнарĕсем çапăçнă вырăнсене çитсе куртăм. Партизансемпе тĕл пулса калаçрăм. Романа вырăсла куçарнă чух кирлĕ пулакан нумай пĕлтерĕшлĕ материала хам валли пуçтартăм». Тен, çакăнпах пуль «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» роман питĕ ăнăçлă пулса тухнă.

Литература теорийĕ

Калавсен пуххи тесе, ытларах чухне, пĕр-пĕр çыравçă калавĕсен (новеллисен) ушкăнĕн уйрăм кăларăмне калаççĕ. Çакнашкал кĕнеке çыравçăн пачах çĕнĕ е маларах пичетленсе тухнă хайлавĕсенчен йĕркеленет. Шалти çывăхлăх принципĕпе ушкăнланнă калавсен пуххисем раççей литературинче ХХ ĕмĕрĕн пĕрремĕш виçĕ вунăçуллăхĕнче анлă сарăлнă. Шăпах çак çулсенче хайлаври мĕн пур япалана çыхăнтарса тăракан автор сăнарĕн пĕлтерĕшĕ чакать, йăлана калу йĕркин нумай сасăлăхĕ кĕрет.

Калавсен пуххи калавсен ярăмĕпе тӳр килмест. Нумай чухне калавсен ярăмне малтанах палăртса хунă планпа çыраççĕ. Ярăмăн уйрăм калавĕсем пĕр-пĕринпе шалтан çыхăнаççĕ, хăш пĕр чух вара пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ. Ярăмри калава пĕрлĕхĕн пĕтĕмĕшле содержанине сиенлемесĕр туртса кăларма юрамасть, мĕншĕн тесен кунти калавсем хушшинче пĕлтерĕшне пуянлатакан тачă çыхăну пур. Пĕрлештерсе тăракан пулăм пек пулса иртекен ĕçсен вырăнĕ, пĕрлĕхлĕ калавçă е тĕп сăнар, калавран калава куçакан сăнарсем, хăйне евĕрлĕ калу интонацийĕ, жанр хăйне евĕрлĕхĕ пулма пултарать.

Унран та ытларах, новеллăсен ярăмĕнчи пĕрлĕх хăш-пĕр чух çав тери вăйлă пулнăран ăна роман пек пăха пуçлаççĕ. «Калавсенчен тăракан роман» текен жанр ХХ ĕмĕрĕн юлашки вунăçуллăхĕнче уйрăмах паллă пулса тăрать, тĕрлĕ çĕршывсенче çакнашкал ятлă хайлавсем тăтăшах тухса тăраççĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

ÇАМРĂК СУНАРÇĂСЕМ

Калав

Эпĕ икĕ кайăк кăвакалĕ тытни çинчен çав кунах пĕтĕм ялти ачасем пĕлчĕç. Кăнтăрла иртсен, пирĕн пӳрт умĕнчи ватă ăвăс айне шкулта пĕрле вĕренекен ачасем пухăнчĕç. Вĕсем ыйтнипе, хам кăвакалсене епле тытни çинчен тĕплĕн каласа патăм. Ватă кăвакал аçинчен тунă кĕлеткене курсан, нумайăшĕ хытă тĕлĕнчĕç.

– Чĕрĕ кăвакал пекех! – теççĕ пĕрисем.

– Чĕрринчен те илемлĕрех, – теççĕ теприсем.

– Юлташсем, – терĕ шкулти çамрăк натуралистсен кружокĕн пуçлăхĕ Арланов Кĕçтук, – ман шутпа, пирĕн ытти кайăксене те тытса çакнашкал кĕлеткесем тăвас пулать. Вара эпир хамăр шкулта «Ука ялĕ таврашĕнче пурăнакан вĕçен кайăксем» ятлă орнитологи[1]музейне уçма пултаратпăр. Çак музей – çĕнĕ вĕрентекене пирĕнтен панă парне пулĕ.

[1]Зоологин кайăк-кĕшĕксене тĕпчесе вĕренекен пайĕ.

Çак шухăшпа пурте килĕшрĕç.

– Айтăр ун патне кайса ыйтăпăр, – терĕм эпĕ.

Вара, шавлăн калаçса, урам тăрăх шкул патнелле утрăмăр.

Орнитологи музейне уçас шухăшпа Арсений Иванович килĕшрĕ. Вăл пирĕн çине сăнаса пăхрĕ.

– Музей пире зоологи вĕреннĕ чух пайтах пулăшĕ. Пурăна киле унта тискер кайăк кĕлеткисене те пуçтарма пулĕ. Анчах кайăксене мĕнле тытас тетĕр? – ыйтрĕ вăл.

– Сунара çӳресе, – кĕскен хуравларĕ Кĕçтук.

– Сунара çӳрени аван ĕнтĕ, – терĕ вĕрентекен, – уçă сывлăшра çут тĕнчен ытарайми хитре кĕтесĕсене курса çӳрессинчен пахи мĕн пултăр? Анчах сунара çӳрес пулсан, пăшал, тар, йĕтре, капсюльсем кирлĕ. Ăçтан тупас тетĕр эсир çав хатĕрсене?

Ачасем шухăша кайрĕç. Вĕсен пичĕсем тĕксĕмленчĕç, пуçĕсем усăнчĕç. Пăшалпа унăн хатĕрĕсене тупасси çăмăл ĕç маррине пурте пĕлеççĕ.

– Пирĕн Çавалкассинче пурăнакан куккисен шомполпа авăрламалли икĕ кĕпçеллĕ пăшал пур. Вăрçăран уксах таврăннă хыççăн кукки сунара çӳреме пăрахрĕ. Эпĕ унăн пăшалне илсе килетĕп, – терĕ Кĕçтук.

– Кайăксене тапăпа, капкăнпа, серепепе, мăйкăчпа, йăлăпа, плашкăпа тытма пулать. Çав хатĕрсене ман атте питĕ ăста тăвать. Вăл пире вĕрентме пултарать, – тепĕр шухăш пачĕ Ухливанов Роман.

– Кăçал каникул вăхăтĕнче эпĕ кирпĕч сарайĕнче ĕçлерĕм. Кирпĕч тунăшăн панă укçапа пĕр кĕпçеллĕ пăшал туянма пултаратăп, – терĕ Кĕçтук тусĕ Яушев Иван.

– Апла, тапăсемсĕр пуçне, пирĕн тăватă пăшал пулать. Çав пăшалсем чăлансенче тусанланса çакăнса ан тăччăр тесен, пире малтанлăха тăватă кило хура тарпа икĕ пăта яхăн йĕтре кирлĕ. Пистонсемпе капсюльсем манăн сире валли те çителĕклĕ. Йĕтресене, хура тăхлан тупсан, хамăр та шăратса юхтарма пултаратпăр. Тарне «Заготживсырье» конторипе районти сунарçăсен организацийĕ урлă туянас пулать. Анчах çав организацисем пăшал хатĕрĕсене сунарçăсен ушкăнĕнче тăракан çынсене çеç параççĕ, – тăнлантарчĕ Арсений Иванович.

– Эпир хамăр шкулта çамрăк сунарçăсен кружокĕ уçăпăр! – ырă шухăш пачĕ Кĕçтук.

– Тĕрĕс. Хăвăртрах уçасчĕ çав кружока! – Арлановпа килĕшрĕ Роман.

– Кружок уçма пулать ĕнтĕ. Анчах унта кĕрес текен çамрăксен

сунар ӗҫӗ ача вӑййи мар, пысӑк ӗҫ иккенне яланах асра тытас пулать. Пӑшал тытнӑ çын халӑха усӑ тума та, пысӑк сиен кӳме те пултарать. Кружок членӗсем хушшинче чи малтанах çарти пек çирӗп йӗрке кирлӗ. Пӑшала ӑçта килчӗ унта пеме юрамасть. Ун пирки пирӗн халех калаçса татӑлмалла. Пуринчен ытла пӑшалпа этеме, выльӑх-чӗрлӗхе, çынсем пурӑнакан çуртсем енне нихçан та тӗллеме юрамасть. «Авӑрламан пӑшал та çулталӑкра пӗрре перет», тенине нихçан та ан манӑр. Тар хатӗрӗсене яланах çӑрапа питӗрсе илнӗ арчасенче çеç усрамалла. Ку – ӗçӗн пӗр енӗ çеç–ха. Тепӗр енӗ – кружок членӗсен пурин те «Сунарçӑ – чӗрчунсен тӑшманӗ мар, вӗсен чи çывӑх тусӗ», тени çинчен астунине сӑмахпа мар, кулленхи ӗçсемпе кӑтартма тӑрӑшмалла. Паллах, чӗрчунсем те пурте пӗр пек мар. Вӗсем хушшинче усӑллисем те, сӑтӑр тӑвакансем те пур. Пирӗн усӑллӑ кайӑксене ӗрчеме, сӑтӑр тӑвакансене пӗтерме пулӑшмалла.

– Кайӑксене пӑшалпа ӗрчетесси çинчен ку таринччен илтменччӗ эпӗ, – терӗ яланах тӑрӑхлама юратакан Яушев.

– Вӑл çапла пек туйӑнать ӗнтӗ. Анчах сунарçӑ, кайӑксене пӑшалпа персе тытать пулин те, вӗсене ӗрчеме те пулӑшать. Çапла пултӑр тесен, унӑн чи малтан сунар пирки кӑларнӑ саккунне, унта кӑтартнӑ йӗркесемпе вӑхӑта яланах пӑхӑнса тӑмалла. Çав саккуна пӑхӑнман çынсене сунарçӑсем мар, браконьер теççӗ. Эпир ӑна чӗр- чунсемпе çут тӗнче тӑшманӗ тетпӗр. Акӑ хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр, çуркунне пусма ларнӑ кайӑк кӑвакалне тытакан браконьер пӗр кӑвакала çеç мар, унӑн кӗç-вӗç тухас вунпилӗк-çирӗм чӗппине те пӗтерет. Е тата хӗллехи сунар тапхӑрӗ пӗтнӗ хыççӑн мулкач амине тытни кӗркунне çав вырӑнта улт–çич мулкач хутшӑнассине пӗтерни пулать. Кӗрхи сивӗ кунсем киличчен тытнӑ тиллӗн тирӗ темиçе хут йӳнӗрех. Пирӗн чи малтанах çав браконьерсемпе кӗрешес пулать. Çапла тунипе эпир ырӑ кайӑксене ӗрчеме пулӑшӑпӑр.

Арсений Иванович чакӑр куçӗсемпе пирӗн çине сӑнаса пӑхрӗ. Эпир, паллах, ун сӑмахӗсене тинкерсе итлесе ларатпӑр. Никам та сӑмах хушманнине курса, вӑл малалла çапла каларӗ:

– Браконьерсемсӗр пуçне ырӑ кайӑксемшӗн тӗнчере тӑшмансем тата нумай. Çӑткӑн кайӑксене курнӑ ӗнтӗ эсир. Вӗсем çулла та, хӗлле те, çуркунне те, кӗркунне те яланах ырӑ кайӑксене пӗтерсе пурӑнаççӗ. Вӗсенчен пӗрисем ырӑ кайӑксен çӑмартисемпе чӗпписене тупса çиеççӗ. Теприсем кайӑксене хӑйсене те тытаççӗ. Малтанхисен шутне вӗçен кайӑксенчен ула кураксемпе чакаксем, тискер кайӑксенчен – чӗрӗпсемпе енотла йытӑсем кӗреççӗ. Иккӗмӗшсен шутне хурчкасемпе ӳхӗсем тата лачака хӑлачӗпе хӑшпӗр кӑйкӑрсем кӗреççӗ. Пирӗн вӗсене

май килнĕ таран пĕтерме тăрăшмалла. Анчах çăткăн кайăксем хушшинче те халăх хуçалăхĕшĕн усăллисем нумай. Училни кайăксем, çерçи тăманисем, шаланкăсем, уй хăлачĕсем, ытти вак-тĕвек хурчка-тăманасем шăшисене, тыркассене пĕтерсе пурăннипе пире пысăк усă кӳреççĕ. Çавăнпа пирĕн сиен тăвакан çăткăн кайăксене çеç пĕтермелле. Эсир чăх тытакан пысăк хурчкана курнă ĕнтĕ. Çав хурчка кунĕпе вĕтлĕх вăрмансем тăрăх йывăç тăррисене кĕç-вĕç çапăнас пек вăшкăнса хăвăрт вĕçсе çӳрет е пĕр-пĕччен уйрăм ларакан çӳлĕ йывăç тăрне пытанать те сехечĕ-сехечĕпе хытса кайнă пек хускалмасăр ларать. Мĕншĕн çапла тăвать вăл? Паллах, апат-çимĕç тупасшăн. Курăк çинчи хурт-кăпшанкăсене е çырла пуçтарса çӳрекен ăсансене, карăксене, пăчăрсемпе шурă уй чăххисене курсанах вăл çĕмрен йĕппи пек хăвăрт вĕçсе анать те çав кайăксене тытса çиет. Çу каçиччен кашни хурчка çĕр çирĕм усăллă кайăкран кая мар пĕтерет. Вăрманти кайăксене тытса пĕтерсен выçса аптранипе тин вăл яла тухать те хур-кăвакалсемпе чăх-чĕпсене пĕтерме тапратать. Çапла вара пирĕн кружокра тăракан кашни çамрăк пĕр хурчка çеç тытсан та çĕр пуç ăсан-карăк çăлса хăварĕ. Салакайăк хурчки çулталăкра пин кайăкран кая мар тытса çиет. Унăн качине вăрман илемне кĕртекен шăпчăксемпе хура кайăксенчен пуçласа ыраш уйĕнче юрласа чуна савăнтаракан путенесем, карăшсем, сунара çӳреме юрăхлă улаппасем, уй чăххисем, шăркалчăсем те лекеççĕ.

– Ун çинчен нихçан та шутламан эпĕ, – терĕ Арланов.

– Пĕчĕк чухне эпир аттепе вăрмана хуп хуплама кайсан, эпĕ утă капанĕ тăрринче ăсан аçине çисе ларакан хурчкана куртăм. Утă капанĕ тĕлне йăпшăнса пытăм та çав хурчкана туяпа петĕм. Тутлă апатпа киленсе ларакан хурчка мана вăхăтра асăрхаймарĕ пулас, эпĕ пенĕ туя ун çунатне хуçрĕ. Вара вăл çĕре ӳкрĕ. Эпĕ питĕ хĕпĕртесе хам мĕн туни çинчен аттене каласа патăм. Анчах вăл питĕ сехĕрленсе ӳкрĕ. «Ах, мур илесшĕ, халĕ çак хурчкан тăванĕсем пире тавăрас тесе чăх-чĕпсĕр хăварĕç. Кăйкăра, ăмăрткайăксене, хурчкасемпе çăхансене турă кайăк-кĕшĕксемпе тăранса пурăнма хушнă. Çавна нихçан та ан ман!» – терĕ атте, – каласа пачĕ ытлашши сăмах ваклама юратман Кроликов Кавĕрле.

– Хăлхаран çулăхмарĕ-и? – кулса ыйтрĕ Яушев.

– Паллах, ăс панине ан мантăр тесе, хăлхаран хытă лăскарĕ. Кĕркунне улăхра çӳрекен хура хурчка тытса çисен, атте мана тепре хĕнерĕ. Арсений Иванович, хурчкасем чăнахах тавăраççĕ–ши хăйсене сиен тунă çынсене? – ыйтрĕ Кавĕрле.

– Чĕрчунсем шухăшлама пĕлмеççĕ, – терĕ вĕрентекен. – Тăшмана тавăрас тесе этем çеç шутлама пултарать. Çут тĕнче çинчен питĕ сахал

пĕлекен хутла вĕренмен çынсем çеç çапла шутлаççĕ.

Ачасем хăйсем çăткăн кайăксем çинчен илтнисене каласа пачĕç.

– Анчах ырă кайăксене çăткăн чĕрчунсем çеç мар, сирĕн пек ачасем те пайтах пĕтереççĕ. Нумай вырăнсенче сирĕн пек ачасем те пысăк сăтăр тăваççĕ. Сирĕн ялти ачасенех илер акă. Вĕсем кашни çулах Мăклă шур лачакипе Сархăмăш кӳлли çывăхĕнче пурăнакан кайăк çăмартисене пуçтараççĕ. Кăвакалсем, шыв чăххисем тата ытти кайăксем çăмарта туса ĕрченине пĕлетĕр ĕнтĕ эсир. Çăмартисене çынсем пуçтарсан, кайăксем чĕп кăларма тултараймаççĕ. Ку анчах мар-ха, эсир, кăвакалсен йăвисене тупма çăмăл пултăр тесе, пĕлтĕрхи типнĕ курăксемпе хăмăшсене вирт ярса çунтаратăр! Вара йăва çавăрмалли улах вырăнсем пĕтеççĕ. Вара ырă кайăксем, урăх çĕре вĕçсе каяççĕ, е чĕп кăлармасăрах юлаççĕ, шанчăксăр çĕре йăва çавăрнипе çăткăн кайăксен качинелекеççĕ. Çак тискер йăлапа кĕрешесси те çамрăк сунарçăсен кружокĕн ĕçĕ пулса тăмалла.

– Паянтан пуçласа çăткăн кайăксене пĕтерме, çăмарта пуçтарассине хирĕç кĕрешме тытăнатпăр, – терĕмĕр эпир.

Кушак Кирили çеç ним те шарламарĕ.

– Эсĕ ыттисемпе килĕшместĕн-им? – ыйтрĕ унран Арланов.

– Çăткăн кайăксене персе вĕлерме пулĕ, эпĕ ăна хирĕç мар. Анчах вĕсен чĕпписене тытма юрамасть. Çăхан йăвине тустарнă çыннăн алли хăрса ларать, теççĕ! – хуравларĕ Кириле.

– Çăхансем каласçĕ-и? – тăрăхласа ыйтрĕ Яушев.

Ачасем пурте кулса ячĕç.

– Çак тĕшмĕше туртса кăларнă çын вăл – çăханăн чи çывăх тусĕ. Чăнах та, çăхан пысăк сăтăрах тумасть пире. Вăл пуринчен ытла уйсемпе вăрмансенче çĕрсе выртакан вилесене çисе пурăнать. Çапла тунипе вăл чир-чĕр сарма пултаракан вилĕсене пĕтернипе, санитар пек, çĕршыва усал-тĕсел мурсенчен тасатать. Анчах çăхансем ытлашши ĕрчесе йышланса кайнă вырăнсенче вĕсем чĕрĕ кайăксене, пуринчен ытла килти чăх-чĕпсене тапăнма тапратаççĕ. Çавăн пек вырăнсенче çăхансене те пĕтермелле.

– Арсений Иванович, – терĕ Ухливанов, – эсир енотла йытăсем сăтăр тăваççĕ, терĕр. Ман атте пĕлтĕр капкăнпа пĕр енот тытрĕ те, ăна штраф тӳлеттерчĕç. Мĕншĕн-ха çав сăтăрça саккун тытма хушмасть?

– Енотла йытă хаклă йышши тир панипе чыса кĕрет. Анчах шыв-шур таврашĕнче е ăсан-карăксем пурăннă вырăнсенче енотсем пулсан, вĕсене пирĕн пĕтермеллех. Паллах, сунар инспекцинчен лицензи илес пулать, унсăрăн пире штраф тӳлеттерме пултараççĕ. Тытасса та енотсене саккун хушнă вăхăтра çеç тытмалла.

Çав кун эпир çамрăк сунарçăсен кружокĕ уçрăмăр. Кружока вунултă çула çитнĕ ачасене илмелле турăмăр. Малтанах унта эпĕ, Ухливанов Роман, Арланов Кĕçтук, Кушак Кирили тата Яушев Иван çырăнтăмăр. Мана кружок пуçлăхне суйларĕç. Кружок членĕсен çулталăкра сиенлĕ çăткăн кайăксене çирĕм пуçран кая мар пĕтермелле терĕмĕр.

– Çĕнĕ учитель пирки мĕн шутлатăр? – ыйтрĕ Яушев Иван киле таврăннă чух.

– Вĕренӳ çулĕ пуçланичченех вăл пире пĕр ирĕксĕрлемесĕр нумай ăс пачĕ. Кайăк-кĕшĕке ĕрчеме пулăшасси çинчен нихçан та илтменччĕ эпĕ. Çăткăн кайăксем пирки те ним те пĕлмен эпир. Унăн урокĕсене чăтаймасăр кĕтетĕп, – терĕ Роман.

– Зоологи урокĕсем кăçал чи кăсăклă уроксем пуласси халех паллă. Юлашки класра та пулин кăмăл туртнă пек вĕренсе курасчĕ, – шухăшлăн каларĕ Иван.

Апрам мучисен анкартинче ӳсекен хурăнсем çинчен ула курак краклатни илтĕнчĕ.

– Краклат, краклат, – чышкипе юнарĕ Кушак Кирили, – санăн шалчу тулчĕ ĕнтĕ. Кĕçех хура тăхлан мĕн тути каланине активсе курăнха.

– Чăнах, ял варринче ларакан йăмрасем çинче те йăва çавăрма хăяççĕ ула кураксем. Ваттисем пире çав йăвасене тустарма чаратчĕç. «Ула курака ан тив, тивсен вăл чĕпсене пĕтĕмпех тытса пĕтерет», тетчĕç. Шеремет чăххисем çывăхра çын пулмасан пусма айĕнчен тухма хăяймаççĕ. Тек апла пулмĕ. Ыранах çав ирсĕр кайăксене хирĕç вăрçă пуçлăпăр, – терĕ Арланов...

Пĕр ирхине ман патăма сунарçă кружок членĕсем пухăнчĕç. Кĕçтукпа Иван пăшалсем илсе пынă. Пемелли хатĕрсене Арсений Иванович унччченех валеçсе панăччĕ. Пăшала мĕнле авăрламалли çинчен ятарласа кружокра заняти ирттертĕмĕр. Халĕ тĕрĕс тĕллесе пеме вĕренесси çеç юлчĕ.

– Хăма татăкĕсене персе тар-йĕтре сая яриччен, чĕрĕ мишеньсене тĕллесе пăшал пеме вĕренер. Хурчкасем, ула кураксемпе чакаксем пулччăр пирĕн мишеньсем, – терĕ Кĕçтук.

– Тĕрĕс, – унпа килĕшрĕç кружок членĕсем, – çапла тусан, эпир пăшал пеме те вĕренĕпĕр, ырă кайăксене те тискер тăшмансенчен хăтарăпăр.

– Эпĕ мур карта патне каятăп. Унта пытарнă выльăх виллисене йытăсем çĕр айĕнчен чавса кăлараççĕ, унта çăткăн кайăксем яланах йышлăн пухăнаканччĕ, – терĕм эпĕ.

– Ман аллăма пăшал пĕрремĕш хут кĕнĕ пирки эпир унпа тĕплĕнрех паллашма ĕлкĕреймерĕмĕр-ха. Çавăнпа вăл мĕнле пенине пĕлейместĕп. Малтанлăха Сурăм хурами патне каяс пулĕ. Унта ула кураксем те, хурчкасемпе кăйкăрсем те канма лараканччĕ. Тен, пĕрне те пулин персе антарма май килĕ, – кулкаласа каларĕ ывăç тупанĕпе икĕ кĕпçеллĕ пăшалне ачашшăн шăлса тăракан Арланов.

– Эпĕ Çăва çырмине каятăп. Мĕн те пулин тĕл пулап-ха унта, – терĕ Яушев.

– Музей тума шухăшланине ан манăр, – асилтертĕм эпĕ, – ула кураксемпе чакак кĕлеткисем те кирлĕ пулĕç. Кайăксене çĕклесе çӳрес килмесен, вĕсен урисене татса илсе килĕр. Хамăр миçе çăткăна пĕтернине шута илме май парĕ.

Мур карта тесе пирĕн ялта ĕлĕк вилнĕ выльăха пытарма çатан карта тытса тунă вырăна калатчĕç. Ялтан вăл виçĕ çухрăмри вăрман хĕрринчеччĕ. Мур карта тавра йĕплĕ хулăсемпе йыт çĕмĕрчĕсем ӳсетчĕç. Вĕрлĕк хапха патĕнче хăрма тытăннă юман ларатчĕ.

Романпа иксĕмĕр мур карти патне çитсен, икĕ хыткан йытă çатан карта урлă сикрĕç, хура çăхансемпе ула кураксем, темиçе ушкăна пайланса, таврари йывăççем патнелле вĕçсе кайрĕç.

Карта ăшĕнче лаша вилли выртать. Ăна малтанах ăшăх шăтăка пăрахса çиелтен тăпрапа витнĕ пулас, анчах выçă йытăсем çерем çине туртса кăларнă. Тавралла ӳсекен хăнкăла курăкĕ çинче пыршă татăкĕсем выртаççĕ.

Эпĕ лаша вилли çывăхри çатанран миçе утăмра выртнине утаспа виçрĕм: вăтăр утăм.

– Мĕн тăвăпăр, Роман? – ыйтрăм юлташран.

– Ман шутпа пирĕн ула кураксемпе чакаксене çеç тĕллесе пемелле. Вĕсем паян кунта апатланмаççĕ, ыран кайăк чĕпписене тытма каяççĕ, çитес çуркунне вĕсем татах ырă кайăксен йăвисене тустарма тытăнĕç. Çăхансем çак таврана çĕрĕк шăршă саракан вилле çисе тасатчăр.

Эпир çатан карта тулашĕнче ларакан йыт çĕмĕрчĕн тĕми ăшне кĕрсе пытантăмăр. Пăшал кĕпçине, çатан хушăкĕнчен кăларса, лаша вилли еннелле кăнтартăмăр.

Çăткăн кайăксем нумай кĕттермерĕç. Малтанах чакаксем вĕçсе килчĕç те, вăрăм хӳрисене силлесе, хытă чакăртатма тапратрĕç. Унтан ула кураксем, пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек васкаса, виле патне анма тытăнчĕç. Çăхансем çеç хăрăк тăрăллă юман çине ларса инçетрен кăна виле çине выçă куçĕсемпе пăхаççĕ.

Лаша виллин çурăк хырăмĕ патне ула кураксемпе чакаксем

йышлӑ пухӑнсан, тек чӑтса тӑраймарӑм – пӑшал чӗмине çӑткӑн кайӑксен купи тӗлне тытрӑм та вӗçертмелли крючока туртрӑм. Çав самантрах вӑрман янраса кайрӗ. Шуйханнӑ кайӑксем чӑл-пар кӑна саланса куçран çухалчӗç. Лаша вилли патӗнче çеç тӑватӑ ула куракпа икӗ чакак выртса юлчӗç, тата тепӗр чакак, çунаттисене усса, çатан карта патне сиккелесе тарма пикенчӗ.

– Музей валли кӗлетке тума илсе каяс мар-и? – ыйтрӑм эпӗ.

– Аманнӑ чакакне илсе кайма пулӗ, – хуравларӗ Роман.

– Çук, ман шутпа ӑна пирӗн халех вӗлермелле. Вӑл, паллах, ирсӗр çӑткӑн, анчах çапах та пирӗн ӑна асаплантарма юрамасть. Кирек епле чӗрчуна та вырӑнсӑр асаплантарни усал ӗç тунипе пӗрех пек туйӑнать мана, – терӗм эпӗ.

– Чӑн. Пирӗн хытӑ кӑмӑллӑ пулас мар...

Кӑнтӑрла иртсен, эпир Арсений Иванович патне пухӑнтӑмӑр. Арланов икӗ ула куракпа пӗр чакак вӗлернӗ. Яушев пӗр лачака хӑлачӗ вӗлернӗ тата пӗчӗк тӑмана чӗрӗллех тытса килнӗ.

– Çерçи тӑманине ирӗке ярӑпӑр, – терӗ вӗрентекен. – Вӑл шӑшисем тытса пурӑнать, çавӑнпа хуçалӑхра усӑллӑ кайӑк. Хӑй вӑл пысӑк мар пирки нумай çимест, анчах хырӑмӗ тутӑ чух та шӑшисене çӗрӗпех тыта-тыта пӑвса пӑрахать. Эсир шӑши виллисем выртнине курнӑ пулӗ. Çак пӗчӗк тӑманан ӗçӗ ӗнтӗ вӑл. Хӑш-пӗрисем ӑна, çерçи хурчкипе пӑтраштарса, сӑтӑр тӑвать тесе шутлаççӗ. Ку тӗрӗс мар. Вырӑссем ӑна домовой сыч теççӗ, çерçи хурчкине – ястреб-перепелятник, теççӗ. Ку ӗнтӗ чӑн-чӑнах пысӑк сӑтӑрçӑ. Ӑна пирӗн пӗтерме тӑрӑшмалла. Çерçи хурчки кун çутипе çеç вӗçсе çӳрет, çерçи тӑмани каçхи тӗттӗмре тӑранса пурӑнать. Çавӑнпа та вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрса илме хӗн пулмӗ.

Çак сӑмахсемпе Арсений Иванович тӑманана çӳлелле ывӑтрӗ. Ирӗке туйнӑ кайӑк, çӑмӑллӑн çӗкленсе, çывӑхри йӑмра тӑрне ларчӗ те пирӗн çине хӑйӗн çаврака сарӑ куçӗсемпе шӑтарас пек пӑхрӗ.

Çав кун çӑткӑн кайӑксемпе хӑватлӑ кӗрешӳ пуçларӑмӑр. Унтанпа çирӗм виçӗ çул ытла иртрӗ. Кашни çул хӗрӗхшер çӑткӑна çеç пӗтернӗ пулсан та, хам сунар çулӗ çине тухнӑранпа пине яхӑн çӑткӑн кайӑк пӗтернӗ эпӗ. Çапла тунипе мӗн чухлӗ ырӑ кайӑк вилӗмрен хӑтӑлса юлнӑ пулӗ?..

1953.

Ирӗклӗ хушма вулав

1. М. Кипекӗн «Кайӑк тусӗ» романне Интернет уçлӑхӗнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kcht_0_0000017.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

***** ***Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. М. Кипек пурнăçĕнчи мĕнле паллă пулăмсем унăн пултарулăхĕ çине витĕм кӳнĕ?
2. Çыравçă литература хайлавĕсенче мĕнле темăсене хускатнă?
3. Çутçанталăк темине чăваш литературинче М. Кипексĕр пуçне тата камсем хускатнă?
4. Калавсен пуххипе калавсен ярăмĕ пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

¤ ***Пултарулăх ĕçне тăватпăр***

Мĕтри Кипек пултарулăхĕнчи фактсемпе, хайлавсен ячĕсемпе тата темисемпе, вĕсенчи сăнарсен ячĕсемпе тата ытти пулăмсемпе усă курса сăмах каçмăш хайлăр.

☼ ***Сочинени темисем***

1. Ешĕл тĕнче – пирĕн тăван кил.
2. Мĕтри Кипек пултарулăхĕнчи паттăрлăх теми (çыравçăн пĕр-пĕр хайлавĕ тăрăх).



ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ХĔР АРĂМ СĂНАРĔН ИДЕАЛĔ

Ăслăлăх аннинчен

«Чăваш литературинче хĕрарăм сăнарĕ унăн пĕтĕм аталану тăршшĕпех пĕлтерĕшлĕ вырăнсенчен пĕрне йышăннă.Кашни çĕнĕ вунăçулăхра унăн илемлĕх кăтартăвĕ татăклă, 1920-1930-мĕш çулсем, вăрçă хыççăнхи вăхăт, XX ĕмĕр вĕçĕ пек тапхăрсенче вара каламасăрах паллă. Хĕрарăм сăнарĕсене илемлĕх тĕнчине кĕртесси е чăн пурнăçа социаллă тата историллĕ лару-тăру хаклавĕ (1920-1930 çулсем), е историллĕ чăнлăха, çынсен шăпине философиллĕ ăнлантарăвĕ (1970-1990 çулсем) урлă пулса пынă. Çак тĕлĕшрен 1920-1930-мĕш çулсенчи çыравçăсен сăнарлă публицистикăлла, очеркла шыравĕсене сăнама кăсăклă. Çак хайлавсенчи хĕрарăм литература характерне пурнăçа кĕртни çеç мар, обществăн социаллă тата политикăлла шыравне, истори юххине социализмла йĕркеленине кăтартни пулса тăрать. Хĕрарăм тĕп сăнарсенеçĕнĕ, коммунизмла, идеологипе витĕнне, çын сăнарне

йĕркелес ыйтăва татса парас ĕçĕн авăрне çавăрса кĕртсе янă» (*Г.И. Федоров, филологи докторĕ*).

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Чăваш литература аталанăвĕнче чăваш хĕр арăмĕсен идеалне нумай çыравçăсем калăпланă. Вĕсен шутĕнче А. Артемьев çыравçăпа унăн Салампи сăнарне, Ю. Айдашпа унăн Илемпи сăнарне, Илпек Микулайĕпе унăн Селиме сăнарне асăнма пулать. Г.И. Федоров литература тĕпчевçи асăрханă тăрах, пултарулăхри илемлĕх идеалĕ çурални ялан тенĕ пекех историпе обществă аталанăвĕн юхăмĕ сасартăк хуçăлнă самантсенче пулса пырать, мĕншĕн тесен çакнашкал тапхăрсем çыравçăсемшĕн пурнăçри романтикăлла идеалсене шырамалли вăхăт пулса тăрать. Чăннипех те, акă, хăшпĕр хайлавсене çырнă çулсене аса илсен çакна палăртма пулать: К. Иванов «Нарспи» поэмăна Пĕрремĕш вырăс революци тапхăрĕнче (1905-1907 çç.) çырнă, Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр» романне, А. Артемьев «Салампи» повеçне – вăрçă хыççăнхи вăхăтра, XX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче, революци хыççăнхи (1917 ç.) ĕç-пуç вара Ф. Павловăн «Ялта» тата П. Осиповăн «Айтар» драмисене çуратнă.

Хĕр арăм сăнарĕн идеалне калăпламан çыравçă пултарулăх анинче çукпа пĕрех. Анчах хăш-пĕр чух çак туртăм çыравçă пултарулăхĕнче тĕп йĕр пулса тăрать. Ытларах чухне чăваш прозинчи хĕр арăм сăнарĕсем хăйсене ял темипе çырнă хайлавсенче тарăннăн кăтартнă. Тĕрлĕ тĕпчевçĕсемпе çыравçăсем (Г.И. Федоров, А. Артемьев) хайлаври хĕр-идеал сăнарне калăпламалли мелсемпе майсем пирки нумай шухăшлаççĕ. Вĕсем çак илемлĕ пулăмăн çакнашкал енĕсене палăртаççĕ: 1) тĕп сăнар ытти сăнарсене хирĕçле (контрастлă) пулни; 2) тĕп сăнар ытти сăнарсенчен çÿлерех тăрать, вăл ыттисем çине «гипнозла» витĕм кÿрет текен шухăш мала тухни; 3) тĕп сăнарăн кăмăл-туйăм пăлханăвĕсемпе çутçанталăк пулăмĕсен хушшинче параллеллĕх пулни; 4) çыравçăсем искусство сăнарĕ, пултарулăх çыннине мала кăларас шухăш майлă пулни, çавăнпа та хайлаври художник, çыравçă, солист, композитор сăнарĕсем вĕсен уйрăмах тарăн туйăмлă. Çакна та палăртмалла: хĕр арăмсен чун вăрттăнлăхĕсем культурăпа искусствă çыннисене яланах канăçсăрлантарнă. Çак вăрттăнлăха çутатас ĕçре вĕсем хĕр арăмăн амăш туйăмне, çемье вучахне, йăх (халăх) йăлисене, кăмăл-сипете сыхлас туртăмне мала кăларнă.

Александр Артемьев (*Артемьев Александр Спиридонович, 1924-1998*) чăваш литературинче чи малтанах «Салампи» хайлавăн авторĕ пек паллă. Анчах вăл чăваш илемлĕ сăмахлăхне çирĕм ытла кĕнекепе пуянлатнине те манма юрамасть. Вĕсен шутĕнче вулакансем ăшшăн

йышăннă «Алтăр çăлтăр» (каярахри кăларăмсенче ăна «Çăлтăр çумăрĕ» ятпа та пичетленĕ), «Ан авăн, шĕшкĕ!», «Сăвăсем», «Симĕс ылтăн», «Çăкăр хакĕ», «Улма йывăç авăнать», «Тăвăл умĕн», «Хунавлах хăрнисем», «Шурă çӳçлĕ хĕр», «Юрату юррисем» тата ыт. те кĕнекесене палăртмалла.

А. Артемьевăн пĕтĕм пултарулăхне романтикăлла стиль витĕрсе тăрать. Çавăнпа пĕрлех вăл – сисĕмлĕ лирик, этем чунне тарăннăн пĕлекен психолог. Г.И. Федоров тĕпчевçĕ асăрханă тăрăх, çыравçăн нумай хайлавĕсене шăнăрласа тăракан ен – юрату тата юрă-кĕвĕ (музыка) пулса тăрать. Чăннипех те, музыка сăнарĕ Артемьев пултарулăхĕн яланхи палли. Акă, «Алтăр çăлтăрти» («Çăлтăр çумăрĕнчи») Атнаров – композитор, «Ан ман мана» повеçри Айдаров – чаплă юрăç, Астров связист та чăваш халăх юррине киленсе шăрантарать тата ыт. те. Кĕвĕ-юрă кунта чи малтанах çыравçă чунĕнчи ромнтикăллă сисĕм-туйăм палли.

А. Артемьев пултарулăхĕн тепĕр енĕ вăл – геройсене тата вĕсем тавралли ситуаци-эпизодсене хатĕр хальлĕн илни. Çакна «Салампи» повеçре те курма пулать. Çапла Салампи – чаплă хĕр, ялта та, студентсем хушшинче те ăна çав тери хисеплеççĕ. Ун юрри те пĕтĕм республикăшăн паллă, Шупашкарти çамрăксем те ун кăмăл тирпейлĕхĕпе тасалăхне курса тĕлĕнеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Салампи юрăри, легендăри сăнар евĕр – тап-таса та çап-çутă. Çакă пĕтемпех унăн сăнарĕ пиççе-тулса çитнĕ, хатĕр характер пулнине кăтартать. Сюжетăн малашнехи аталанăвĕнче вара çыравçă Салампин кăмăл аслăлăхне кăтартакан енсене, хĕр чунĕнчи хусканусене тарăнлатакан мелсене çеç шырать.

«Салампи» повеçĕн тĕп сăнарĕ чăваш литературинче идеал-сăнар, чăваш хĕрĕсен чи паха, чи мухтавлă, чи сăваплă енĕсен паха тĕслĕхĕ пулса тăнă. Г.Я. Хлебников тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, «Салампире чăваш хĕрĕн чи хӳхĕм енĕсем пуçтарăннă», «ун пек хĕрсем вăрçă вăхăтĕнче чи паттăрисем пулнă». Чăнласах та Салампи ĕçре тĕплĕ, çын хушшинче именчĕк, хăй умĕнче яваплă, тантăшĕсем хушшинче малта, ашшĕсĕр ӳснĕскерех амăшĕшĕн пысăк тĕрек, çынна пулăшма яланах хатĕр тата ыт. те. Май пур таран мĕнпур ырă ене хĕр сăнарĕнче кăтартать çыравçă. Çапла майпа хайлавра романтикăллă идеал хывăнать.

А. Артемьев хăйĕн тĕп сăнарне пурнăçăн политикăпа истори курăмĕ витĕр мар, хăйĕн илемлĕ тĕнчекурăмĕ урлă калăплать. Çавăнпа та хĕр-идеал сăнарĕ хайлавра чăваш халăхĕн нацилле илемлĕ ăнĕнчен çуралса тухать.

ХХ ӗмӗрӗн иккӗмӗш çурринче чăваш литературинче хӗр арăм характерӗсен хăйне евӗрлӗ галерейине **Хветӗр Акивер** (*Коновалов Федор Георгиевич, 1943*) çыравçă та тума пултарнă. Унăн хайлавӗсенче чылай чухне пурнăçăн ӗмӗрхи ăслăлăхне, кăмăл-сипет тасалăхне хӗр арăмсен (амăшӗсен, ват хӗр арăмсен) сăнарӗсем уçса параççӗ.

Тӳрех палăртмалла: Хв. Акиверӗн пӗтӗм хайлавӗсем çӳллӗ шайри кăмăл-сипет шухăшӗпе, сăнарсен ăс-тăн тӗнчин пуянлăхӗпе тата çынлăхӗпе палăрса тăраççӗ. Çавăнпа та вӗсен характерӗнче ăшă кăмăллăх тата ыттисемшӗн хăйне хăй шеллеменни мала тухать.

Тӗслӗхрен, «Тăрна ирӗ» повеçӗн тӗп сăнарӗ Елька шăллӗсене ура çине тăратассине мала хурса хăйӗн юратăвӗнчен тата телейӗнчен пăрăнать, пӗтӗм пурнăçне çаплипех качча тухмасăр пӗччен пурăнса иртерет. «Оля-Ольăçăм-Ульха!..» ятлă тепӗр повеçӗн сăнарӗ Ульха инвалид кресли çинче ларакан юлташӗшӗн хăйӗн телейне алран ярать. Юратман çынпа юнашар иртекен малашнехи пӗтӗм пурнăçне вара хӗр шăпа çырни, хăйӗн тивӗçӗ пек йышăнать.

Кăмăл-сипет тасалăхӗпе çынлăх Акиверӗн ытти хӗрсемпе хӗр арăмсен сăнарӗсенче те курăнса тăрать. Вӗсен шутӗнче Уçтук («Çӗмерт çеçки»), Тамара («Юрату сăмсахӗ»), Акăль («Акăль»), Тарье («Çил-тăман») сăнарӗсене палăртма юрать. Çапах та çыравçăн хайлавӗсенче пачах хирӗçле хӗр арăм сăнарӗсене – хăйсемшӗн çеç пурăнакан, хаяр тата кӗвӗç чунлă сăнарсене те курма пулать. Шăпах çакăн пек «Юрату сăмсахӗ» повеçри ама çури сăнарӗ, «Çапса çумăр çăвать» новеллăри Лиди, «Акăль» новеллăри кин тата «Тăрна ирӗ» повеçри Хӗвечис сăнарӗсем.

Çыравçăн хӗр арăмсене хисеплени, хăйӗн хӗр арăм сăнарӗсенче халăх кăмăл-сипетлӗхӗпе çынна юратнине кăтартма тăрашни, чăваш хӗр арăм идеалӗн сăнарне калăплани Хветӗр Акиверӗн пӗтӗм пултарулăхӗ витӗр тухать. «Каçӗ сулхăн» калаври тӗп сăнарсенчен пӗрин çăварӗпе çыравçă çакна çапла палăртать: «Кăна эсӗ, шăллăм, хӗрарăмсем пирки тӗрӗсех каларăн: хӗрарăм çук – кил ăшши те çук! – чӗлӗмне паклаттарчӗ Уртемей мучи. – Эпӗ ӗнтӗ сирӗн хушшăрта чи асли, чи ватти темелле. Пурăнасса та ӗнтӗ эпӗ çӗр çинче сахалах мар пурăнатăп. Хура-шурне те çителӗклех активсе курнă, апла пулин те эпӗ тӳрех: тавтапуç хӗрарăмсене, тетӗп».

Хв. Акивер хăй хайлавӗсенче ӗмӗрхи ыйтусене – кăмăл-сипет, çемьери çыхăнусем – çӗклет. Çыравçă вулакана сăнарсемпе сюжет аталанăвӗнче мӗнле те пулин ӗç-пуç пулса иртнӗ хыççăн çеç паллаштарать. Çакă вара ăна сюжета аса илӳсемпе пуянлатма хистет. Унсăр пуçне унăн хайлавӗсенче сăнарсен шăпин пӗрпеклехӗ курăнса

тăрать. Акă, тĕслĕхрен, Акăль («Акăль») тата Лена («Суран») сăнарĕсем, иккĕшне те арçынсем улталанă, иккĕшĕ те упăшкасăр ача çуратнă. Çавăн пекех Матĕрнепе («Пулăри каç») Елькка («Сар ачапа сарă хĕр») пĕрремĕш юратăвĕн кăвайтне сӳнтереймесĕр качча каймасăр юлаççĕ, Оля («Оля-Ольăçăм-Ульха»), Тамара («Юрату сăмсахĕ»), Христина («Сар ачапа сарă хĕр») вара инкеке лĕкнĕ арçынна пулăшассине пуринчен мала лартаççĕ тата ыт. те. Унăн хайлавĕсенчи хĕр арăм шăписем ырăпа усал, айванлăхпа ăс, чун сисĕмлĕхĕпе туйăмсăрлăхĕ алла аллăн юнашар пынине кăтартаççĕ. Çавăнпа пĕрлех Хв. Акиверĕн пĕтĕм пултарулăхĕ пуриншĕн те паллă чăнлăха çирĕплетет: илемлĕ хайлаври хĕр арăм сăнарĕсем çыравçă уйрăм халăхăн е пĕтĕм этемлĕхĕн этеплĕх ыйтăвĕсене мĕнле татса панине уçса параççĕ.

Литература теорийĕ

Идеал тесе ку е леш тĕлĕшрен чи паха тĕслĕх пек йышăнакан сăнра е ăнлава палăртаççĕ (ырă кăмăл идеалĕ, илем идеалĕ тата ыт.те). Хăш-пĕр чухне идеал тесе ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан çын сăнарне те калаççĕ. Идеал пек кăмăл-сипет тата тыткаларăш нормисен пĕрлĕхне те пăхма пулать.

Çын идеалĕ унăн идеализациленĕ сăнĕпе тӳр килмест. Нумай чухне идеал тени çынна мĕн çитменнине, вăл мĕн патне туртăннине пурнăçа кĕртет, çакă ăна хăйĕн ĕмĕчĕсемпе тата палăртса хунисемпе канăçлантарма пулăшать. Идеал патне туртăнни çыннăн пурнăç тĕллевĕ, унăн тыткаларăшне ăнлантарса паракан тĕп сăлтав пулма пултарать.

Идеал социаллă тавралăх витĕмĕпе йĕркеленет, ытларах чухне уйрăм çын тĕнчекурăмĕнчен тата халăх менталитетĕнчен килет. Кашни вăхăт, самана хăйĕн çын идеалĕн курăмне калăплать. Анчах та çак курăм пуриншĕн те пĕр пулса тăмасть, мĕншĕн тесен тĕрлĕ пĕрлĕхсем (çын йышĕсем, халăхсем) идеала хăйсем мĕнле курнине аталантараççĕ. Кун пек чухне идеал вырăнĕнче паха кăмăл уйрăмлăхĕсене пĕрлештерсе тăракан историри пĕр-пĕр уйрăм çын та пулса тăма пултарать.

Чăваш, вырăс тата тĕнче литературинче нумай чухне идеал вырăнĕнче хĕр арăм сăнарĕ тухса тăрать. Шăпах вĕсене çыравçăсем уйрăм социаллă çыхăнура калăплаççĕ, вĕсем урлă хĕр арăмсен кăмăл-сипечĕ мĕнле пулмаллин кулленхи курăмне кăтартаççĕ. Урăхла каласан илемлĕ литературăри хĕр арăм сăнарĕ автор хăй пурăннă, ĕçленĕ тата илемлĕ хайлавра сăнласа паракан обществăн политика, социаллă тата психологиллĕ уйрăмлăхĕсене пăхăнса тăрать. Илемлĕ хайлавра уйрăм

обществăшăн кирлĕ, типлă хĕр арăм сăнарĕсене кăтартаççĕ, çак общствăра хĕр арăмсемшĕн пĕлтерĕшлĕ ен тесе йышăнакан пулăмсене сăнарлаççĕ. Çавăнпа та хĕр арăм сăнарне хак панă чухне унăн социаллă сийĕн идеологийĕпе уйрăмлăхĕсене те асра тытмалла.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Александр Артемьев

АЛТĂР ÇĂЛТĂР (Çăлтăр çумăрĕ)

Повесть (сыпăк)

Çăлтăр витĕр çул курнать...

Вун саккăрта кам çамрăк пулман, кам кăна илĕртӳллĕ ĕмĕтпе киленмен? Эй, çăмăл çунатлă шухăш-ĕмĕт. Ăçта кăна илсе çитерместĕн эсĕ хавхалануллă, хĕрӳллĕ чĕрене! Яш чух пурсăмăр та телейлĕ малашлăха шаннă, паттăр ĕçшĕн, таса та хăватлă юратушăн çуннă, кашни пĕр лайăха çеç ăмсаннă, чи хӳхĕм хĕре куç хывнă. Мĕн ĕмĕтленни яланах сыпăнса пыман çав. Поэт каларĕш, яш чух эпир пурте юратнă, анчах пире савнă сахал...

Шухăшсăр çӳренĕ шухă кунăмсем таврăнми иртсе кайрĕç ĕнтĕ, çамрăклăхăн хĕвелĕ кĕр еннелле сулăнчĕ. Çулсеренех тăнлавсенче шурă пĕрчĕ йышланса лырать. «Лапка-лапка шур юр çăвать – çĕр çине мар, ман пуç çине» тене юрă чĕрене çулсерен витерех парать, ман çинченех, ман çинченех каланăн туйăнать.

Пурăнан пурнăç пĕр пек килмест, тепĕр чух вăл кĕрхи çанталăк евĕр улшăнса тăрать: ырри те, йывăрри те сахал мар унта. Çапах вăхăт иртнĕçемĕн йăлтах манăça тухать иккен, чи савăк самантсемпе чи хурлă кунсем çеç чĕрере нихçан çухалми йĕр хываççĕ.

Нумай çӳрерĕм, нумай куртăм, анчах манран кам та пулин чи манайми кунăмсем çинчен ыйтас пулсан – эпĕ (пĕлместĕп, калăттăм-и, каламăттăм-и), чĕремпе хыпса-çунса, хам асăмра малтанхи юратăвăма курнă пулăттăм.

Çак кунсенче ман пурнăçăмра асран кайми ĕç пулса иртрĕ, çулсем каялла шунă май ӳт иле пуçланă чĕремĕн суранĕ тепĕр хут сурса ыратма тытăнчĕ. Çавăнпа эпĕ халĕ çакна çырмасăр ниепле те тӳсейместĕп.

I

Шăранса тăракан шăнкăр уяр çанталăк. Çил çук – йывăç тăррисем йăшăлт та хускалмаççĕ. Шăркана ларнăыраш уйĕ çийĕн вĕлтĕртетсе ăрша юхать. Паян ыранах хĕрӳ ĕç вăхăчĕ – утçи пуçланмалла.

Вакун чӳречи витĕр тавралăха сăнаса пыма лайăх: уçă сывлăшлă сулхăн вăрмансем, тыр-пуллă уй-хирсем, пĕр-пĕринпе ылмашăнса, вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлаççĕ; инçетри ялсем, çул хĕрринчи шурă хурăнсем

чуна çывăх курăнаççĕ, хамăр тăван енĕмĕре, Атăлпа Сăр тăрăхне, аса илтереççĕ.

Эпĕ Мускавран таврăнатăп. Кăçал унта консерватори пĕтерсе тухрăм. Часах ман юррăмсен кĕнекине Мускавра пичетлесе кăлараççĕ... Пĕр сăмахпа каласан, мĕн ачаран ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм сыпăнса пырать. Савăнмалла пек ĕнтĕ! Анчах халĕ çакăншăн ачалла савăнаймастăп эпĕ, мĕн пулнине йăлтах лăпкăн кĕтсе илсе, шăппăн ирттерсе яма тăрăшатăп. Консерваторирен лапах вĕренсе тухни те, ман юррăмсене халăх юрлани те кĕтмен-туман çĕртен пулнă япала мар, ку йăлтах хам тăрăшнипе, çине тăрса тимленипе пулнă, урăхла пулма та пултарайман...

Çапларах шухăшласа пыраттăм эпĕ вакун коридорĕнчи чӳрече умĕнче. Чĕрем те лăпкăччĕ, кăмăлăм та тулличчĕ. Кĕтмен çĕртен чĕрем пăлханса кайрĕ, кăмăлăм хуçăлчĕ...

Вăрман варринчи пĕр пĕчĕк разъездра пирĕн пуйăс чарăнса тăчĕ. «Хирĕç тепĕр пуйăс килет», – терĕç чугун çул çинчи йĕркесене чухлакансем. Лара-тăра пĕлмен çамрăксем çавăнтах чечек татма вăрманалла чупрĕç, ватăраххисем çул хĕрринчи ешĕл курăк çине тухса ларчĕç. Эпĕ те, ура çемçетмелĕх тенĕ пек, хамăр вакун патĕнче уткаласа çӳреме тытăнтăм. Кунта урăх ниçта каймалли те çук: çул хĕрринче стрелочникăн пĕртен-пĕр пĕчĕк пӳрчĕ çеç тăлăххăн курăнса ларать.

– Пичче, чечек туянсамăрччĕ! – терĕ хыçăмра янăравлă çинçе сасă.

Хура куçлă, çавра питлĕ хĕрача, куçăмран чăр пăхса, йăлкăшса кулчĕ. «Стрелочник хĕрĕ пуль-ха ку, хăюллăскер, иртен-çӳренпе каласа хăнăхнă», – шухăшласа илтĕм эпĕ.

– Юлашки икĕ çыхă юлчĕ, илсемĕр, тархасшăн, – терĕ хĕрача, кăмăллăн кулкаласа. Вăл çара уран, çара пуçăн; пĕчĕк хура çивĕтне хĕрлĕ хăюпа çыхнă, шурă платйĕ çийĕн тĕрĕллĕ саппун çакнă, саппун аркине тавăрса пиçиххи хушшине хĕстернĕ – унта чечек тĕркемĕ мăкăрăлса тăрать.

Хаваслă хĕрача кăмăлĕшĕнех пĕр çыххине туянтăм. Кама парнелем-ха ăна? Кам манран чечек çыххи кĕтсех тăрать пуль ĕнтĕ?

Хĕрача, çинçе сассипе янăраса, юнашар вакун умĕнчи çынсем патнелле чупрĕ.

– Чечек туянăр, пиччесем! Чечек! Юлашки икĕ çыхă!

«Кама аса илтерет-ха ку?» – тĕлĕнсе шухăшларăм эпĕ, ăна аякран сăнаса, анчах вăл ман еннелле урăх çаврăнса пăхмарĕ, малалла чупса кайрĕ. Çеçке пек çепĕç, чипер хĕрача, мана хаваслантарнă хушăрах, чĕремре темле ачаш хĕлĕхе сĕртĕнсе хускатрĕ. Вакун çумĕпе каллĕ-

маллĕ утнă май эпĕ çав хĕрача пирки шухăшларăм. Кам телейне кура ӳсет-ши вăл, мĕнле хӳхĕм пике пулĕ-ши тепĕр пилĕк çултан? Мĕнлерех килсе тухĕ-ши унăн шăпи-ăраскалĕ?.. «Пичче», терĕ вăл мана. «Пичче». Çак сăмаха çултан çул хăнăхса пыратăп ĕнтĕ, çултан çул мана çапла чĕнекен нумайлансах пырать. Астăватăп, пилĕк-ултă çул каялла е ытларах-и, тен, Мускавра пулнăччĕ ку: пĕр палламан пике мана урамра пичче тесе чĕнчĕ. Çав кун мана пĕрремĕш хут яш ĕмĕр иртнĕн туйăнчĕ... Çапах кама аса илтерет-ха чечек сутакан хĕрача?..

Çывăхрах тепĕр пăравус кăшкăртни вăрман шăплăхне çурса ячĕ. Çул кукринче пире хирĕç килекен пуйăс курăнса кайрĕ. Вăл çывхарнăçемĕн хăвăртлăхне чакарчĕ. Акă пĕрремĕш вакун вашлатса иртрĕ, иккĕмĕшĕ манпа танлашрĕ. Ун çине «Шупашкар – Мускав» тесе çырнине вуласа илсен, савăнса кайрăм: хамăр енчисем иккен. Палланисене курас тесе, вакун чӳречисем çинелле тинкерсе пăхма тытăнтăм. Йăли çапла манăн: хирĕç килекен пуйăссенчи çынсене ялан тинкерсе пăхса ăсататăп: вĕсем хушшинче кам та пулин хама çывăххи пулассăнах туйăнать.

Виççĕмĕш вакун иртсе кайрĕ, акă тăваттăмĕшĕ шуса çывхарать. Çынсем вакун картлашкисем çинех тухса тăнă. Вĕсем хушшинче хам палланисене шыратăп, анчах тупаймастăп.

Сасартăк, умăмра çиçĕм ялтăртатса çиçнĕ евĕр, шартах сикрĕм. Ман куçăмсем чӳрече витĕр пăхакан пысăк хура куçсемпе тĕл пулчĕç. Ут-пĕвĕм сăрăлтатса илчĕ, чĕрем талпăнса сикме тытăнчĕ.

Вакун малалла шуса иртрĕ, чӳречери салхуллă çамрăк хĕрарăм сăнĕ куçран çухалчĕ. Эпĕ хама хам ĕненмерĕм. Нивушлĕ вăлах? Е ун сăнарлă çын та тепре пурах-ши? Тен, эпĕ ăна хулăн кантăк витĕр палласах илеймерĕм те пулĕ? Ахаль çапла туйăнчĕ çеç-ши мана? Çук, çук! Çуках! Чĕрем йăнăшмасть, чунăм сисет: вăлах! Урăх камăн пултăр-ха тата çавнашкал куç?

Килнĕ пуйăс чарăнчĕ, пирĕнни – кĕç-вĕç тапранса каймалла, чашкăрса пăс кăлара пуçларĕ. Эпĕ тăваттăмĕш вакун патне, хам астуса юлнă чӳрече умне, ыткăнтăм.

– Георги! Герă! Атнаров! – çине-çине кăшкăрчĕ темле хĕрарăм.

Эпĕ сасă илтĕннĕ еннелле пăхрăм: вакун пусми çинче кĕске çанăллă хăмăр платйĕ тăхăннă çамрăк хĕрарăм мана кăчăк туртса тăрать. Каллех вара нихçан манми хура куçа куртăм.

– Тамара!

Вăл çĕре сиксе анчĕ, çӳлĕ кĕлеллĕ пушмакĕсемпе вĕтĕ чулсене кăчăртаттарса, мана хирĕç ыткăнчĕ, чупса çитсенех, ӳкекен çын пек, маййăмран уртăнчĕ, ман çумма пăчăртанчĕ, пуçне кăкăрăм çине хучĕ.

Пĕр самант иксĕмĕр те ним калайми пулса тăтăмăр. Эпĕ Тамарăн чĕри кăртлатса тапнине, унăн кăкăрĕнчен хама вĕри çапнине туйрăм.

Акă вăл, пуçне хуллен çĕклесе, пысăк хура куçне уçрĕ – вĕсенче тăп-тулли куççулĕ йăлтăртатать, шăпăртатаса тумламасть кăна.

Йывăр-çке, савниçĕм, сан хурлăхна курма,– ун çинчен сăмахпа мĕнле ăнлантарăн ĕнтĕ?..

Тамара пырне тулнă куççульне çăтса ячĕ, йăлкăшса кулам пек турĕ. Кулнă чухне унăн пит çăмарти ĕлĕкхилле пăт путса кĕмест, тута хĕрринче вĕтĕ-вĕтĕ пĕркеленчĕк пухăнать, çамки çинче тарăн йĕрсем палăраççĕ. Çӳхе симĕç тутăрĕ айĕнчен шап-шурă çӳç пайăрки курăнать...

Вăтăр улттăрах кăвакартăн эппин, савниçĕм... Анчах чипер эсĕ маншăн, вун саккăрти пекех чипер!..

– Акă, тĕл пултăмăр... миçе çултан... – терĕ Тамара, аран сывлăш çавăрса. – Çур ĕмĕр иртнĕн туйăнчĕ...

– Яш ĕмĕрсем иртрĕç пуль ĕнтĕ, – терĕм эпĕ, шӳтлерех калама тăрăшса. Сăмахăм тӳрре килмерĕ пулас, Тамара салхуланчĕ.

– Авлантăр-им? – темле шăппăн, çĕрелле пăхса ыйтрĕ вăл.

– Çук. Пырас текеннисене илмерĕм, хам илес тенисем – хама тиркерĕç, – тавăртăм эпĕ, ăна куçран пăхса.

– Апла ан кала, Георги, кӳрентеретĕн мана, – аллăма хуллен пăчăртаса каларĕ вăл, вара, пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн, ыйтрĕ. – Ăçтан таврăнатăн, Мускавран-и? Эсĕ консерватори пĕтернĕ, кĕнекӳ Мускавра тухмалла, тенĕ пек илтнĕччĕ...

– Кам пĕлтерчĕ? – персе ятăм эпĕ, хам тĕлсĕр ыйтнине сиснĕçĕртенех. Иксĕмĕр те кирли çинчен калаçманнине ăнлантăмăр пулас, çапах та кирли çинчен сăмах пуçарма хăяймарăмăр.

– Радиопа пĕлтерчĕç. Концерт пулнăччĕ – сан юррусене юрларĕç... Савăнтăм-çке саншăн, Георги. Йăлтах ху шутласа хунă пек пулса пырать. Астăватăн-и, çамрăк чух епле ĕмĕтленеттĕмĕр?

«Ун чухне ман санпа мăшăрланса пĕрле ĕмĕр ĕмĕрлес килетчĕ, анчах чи хаклă ĕмĕтĕм арканчĕ», – теессĕм килчĕ манăн. Савни куçĕнчен пăхрăм та – калама хăяймарăм. Мана именторекен мĕнле асамлă хăват пур-ши çав хурлăхлă хура куçра?

– Ăçта каятăн эсĕ, Тамара?

– Львова. Костя патне... Пĕлетĕн-çке, вăл унта... – терĕ те Тамара паçăрах куççульпе тулса çитнĕ куçне мăчлаттарса хупса илчĕ. Пичĕ тăрăх икĕ çутă шăрçа йăрлатса анчĕ.

Çав самантра пирĕн пăравус кăшкăртса ячĕ, кĕçех тапранса та кайрĕ. Тамара аллăмран пăчăртаса тытрĕ, васкаса калаçма тытăнчĕ:

– Ах, калаçаймарăм та-çке! Нимĕн ыйтса пĕлме ĕлкĕреймерĕм. Эпĕ тепĕр эрнерен каялла таврăнатăп, иртсе çӳренĕ чух кĕрсе тух, Гера. Адресне пĕлетĕн. Эпĕ халь хамăр ялтах. Кĕрсе тух, тархасшăн, Георги... Кĕтетĕп... Чуп часрах, пуйăсран юлатăн! – терĕ те Тамара мана хултан тĕртрĕ. Эпĕ кайри вакун пусми çине сиксе хăпарсан, тепĕр хут кăшкăрчĕ:

– Кĕтетĕп, Георги!

Эпĕ тинех аллăмри чечек çыххи çинчен аса илтем те ăна Тамарăна ывăтса патăм:

– Ку – Костьăна... манран!

Тамара чечек çыххине кăкăрĕ çумне пăчăртаса тытрĕ. Хĕрĕнни евĕр çинçе пилĕклĕ кĕлетки, пуçĕнчи симĕс тутăрĕ паçăрах курăнми пулчĕç пулин те, Тамара çаплах куçăм умĕнчен каймарĕ.

Халь ĕнтĕ канăçăм та çухалчĕ, ыйхăм та вĕçрĕ. Эпĕ шавлă купене кĕмесĕрех коридорти чӳрече умне пырса тăтăм, шухăша кайса, пирус хыççăн пирус туртма пуçларăм.

Ак ăçта, мĕнле майпа тĕл пулма тиврĕ пире, Тамара! Пирĕн çулăмăрсем ĕмĕрлĕхех уйрăлчĕç, çул юппи ытла инçетре юлчĕ пуль, тенĕччĕ мар-и иксĕмĕр те? Тен, кам пĕлет, ытла инçех те мар пуль пирĕнтен çав çул юппи? Мĕншĕн эпĕ каллех вун саккăрти евĕр пăлханса кайрăм-ха? Мĕншĕн каллех чунăма ыраттарса, сан çинчен шухăшлама пуçларăм?

«Çур ĕмĕр иртнĕн туйăнчĕ», – терĕн эсĕ. Туйăнчĕ мар çав, чăн, шăпах çур ĕмĕр иртрĕ унтанпа. Эпир паян иксĕмĕр те вăтăр улттăра. Пĕр-пĕрне юлашки хут курнă чух иксĕмĕр те вун саккăртаччĕ. Халĕ çав вăхăт куç умне яр уççăн тухса тăрать.

II

Пирĕн ял питĕ илемлĕ çĕрте вырнаçнă: кăнтăр-хĕвел анăçĕнче ĕмĕрхи хура вăрман кашласа ларать, çавăнти пĕр çăлкуçĕнчен Выл шывĕ юхса тухать, вăл Сăр шывне кĕрет; ялăн çурçĕр-хĕвел тухăçĕнче уçă хир сарăлса выртать (тахçан унта та сĕм вăрман пулнă, теççĕ), çакăнтан тепĕр тарăн çыр пуçланать, унăн шывĕ Çавала кĕрет. Çавал пуçĕ пирĕн ялтан вунă çухрăмра. Çак шыв та хамăр вăрманти çăл куçĕнченех юхса тухать.

Вăрманлă, тулăх шыв-шурлă, çырма-çатраллă ку тавралăх. Вирьял халăхĕ – вăрман халăхĕ, теççĕ пирĕн пирки. Ялсене, аякран пăхсан, сад тейĕн: çуртсем йăмра-хурăн айĕнче, улма-çырла пахчисем хушшинче лараççĕ. Ĕçчен те пултаруллă халăх пурăнать ку енче. Пирĕн каччăсем уявсенче купăс каласа, çĕр çĕмĕрсе ташлама хавас, хĕрсем тĕрĕ тĕрлеме, юрă юрлама питĕ ăста. Маттур сăвă-юрăллă кунти халăх,

ахальтен мар пуль çак тавраран чăвашсен паллă сăвăçĕсемпе юрăçисем йышлăн тухнă.

Хамăр енĕмĕре, çуралнă кĕтесĕмĕре, эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн саватăп, мĕншĕн тесен кăвапапа унпа çыхăннă.

Çавал пуçĕнчен инçех мар пирĕн куккасен ялĕ, Çавалкас, ларать. Питĕ авалхи ял вăл, унта шкул уçнăранпа та часах çĕр çул çитет ĕнтĕ. Ман аннемĕн пиччĕшĕ, Сантăр кукка, çав шкулта ĕçлет.

Тĕлĕнмелле çын ман кукка, ку таврара ун ятне илтменни те çукрах пуль – Александр Ильич Ходаров тесен, такам та пĕлет. Ятлă çынна ял савать, теççĕ. Тахçан куккаçăм ялта маттур каччă шутланнă, пĕр хӳхĕм хĕре юратнă. Анчах, пӳрмен çăкăр çăвартан тухса ӳкет тенĕ пек, ăна хăйĕн савнийĕпе арлă-арăмлă пурăнса кӳрма тивмен-мĕн. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухне унăн юратнă хĕрне ашшĕ-амăшĕ кӳршĕ ялти пуян урçана вăйпах качча панă. Сантăр кукка, вĕри чунлăскер, ăна каялла вăрласа килме те пăхнă – хĕрĕ килĕшмен. «Пĕрре венчете тăнă – халь тин сан мăшăру пулаймăп ĕнтĕ. Кампа сурпан сырса пуçа шуратнă, çавăнпах ĕмĕре ирттерме тивет», – тесе каланă пулать вăл. Анне асăнать: «Сантар кукку çавăн хыççăн хăй çине алă хума тăчĕ – юлашки самантра ашшĕ ун аллинчи пăшала туртса илме ĕлкĕрчĕ», – тет. Пурнăçра пĕрре кăна юратма пултаракан çын пулнă-мĕн Сантăр кукка, урăх нимĕнле хĕре те куç хывман вăл, яш ĕмĕрне пĕр-хăраххăн пурăнса ирттернĕ...

Хĕрĕх çул хушши Александр Ильич тăван ялĕнчи шкулта ĕçлет. Вăл хисеплĕ учитель çеç мар, сад ăсти те. Таврари пахчаçăсем ун садне курма, вĕренме килсе çӳреççĕ. Ку çеç те мар-ха. Александр Ильич учитель пахчаçă пулнинчен те ытларах ăста музыкçă пулнипе халăхра паллă. Ун пек кĕсле-купăс калама пултаракана чăвашра урăх курман эпĕ. Музыкăна вăл, пуринчен ытла хамăр енчи чăваш юррисене, вилсе кайса юратать, вĕсене тухсах пырать, пухнисене Шупашкара, тĕпчев институтне, ярса парать. Çак ĕçе вăл мана та çамрăклах явăçтарчĕ, музыкă грамотине вĕрентрĕ. Эпĕ, вун пиллĕкри ача, хама килĕшнĕ юрра пĕрре илтсех астуса юлма е ăна хут çине çырса хума вĕренсе çитрĕм.

– Улах юрри-и, ĕçкĕ юрри-и, туй юрри-и, салтак юрри-и, уяв юрри-и – йăлтах çырса ил, – тет мана кукка. – Пĕр кĕвĕ те ан çухалтăр, манăçа ан тухтăр. Халăх юрри вăл – халăх чунĕ. Ăна упрама пĕлес пулать.

Александр Ильич архивĕнче халăх юррисене çырса тултарнă тетрадьсем тĕрки-тĕркипе выртаççĕ. Вĕсен копийĕсене вăл Шупашкара – юрă кĕввисене Федор Павлов патне, сăввисене Ашмарин патне ярса тăнă. Чăвашсен профессилле музыкă никĕсне хывакан композиторпа

чăваш сăмахĕсен кĕнекине çырнă профессорăн çырăвĕсене Александр Ильич чи хаклă япаласемпе пĕрле упрать.

Куккана кура эпĕ те музыкăна питĕ юратса пăрахрăм, вуннăрах тăмра, хут купăс калама вĕрентĕм, вун пиллĕкре сĕрме купăс та чиперех кала пуçларăм. Халăх юрри-сăввине пухасси манăн юратнă ĕçĕм пулса тăчĕ. Хир пуçтарса кĕнĕ çĕрте-и, çамрăксемпе выртмара чухне-и, туй-шилĕкре-и, ĕçкĕ-çикĕре е улахра-и – ăçта мĕнле юрă илтетĕп, йăлтах тетрадь çине çыра-çыра хуратăп. Тетрачĕ тулса çитсен, куккана кайса паратăп.

– Маттур, Якур! Маттур! – тет вăл, кăвак сухалне шăлкаласа, вара, çавăнтах ман çинчен манса, эпĕ пухнă кĕвĕсене тĕрĕслеме пикенет.

– Мĕнешкел илем! Мĕнешкел пуян чунлă халăх! Мĕнешкел пысăк туйăм, ăслă шухăш! – хавхаланса калать вăл, пĕр-пĕр юрă хăйне хытă килĕшсен. Ман вара халăх юррисене тата тимлĕрех пухас килсе каять.

Акă эпĕ каллех Сантăр кукка патне çĕнĕ сăвă-юрă çырса тултарнă тетрадь илсе каятăп. Мĕнлерех хаклĕ-ши вĕсене ватă музыкçă?

Выл пуçĕнчен Çавал пуçне тӳрĕ тухас тесе, эпĕ уй çулĕпе мар, вăрман çулĕпе утрăм.

Хаваслă та-çке çуллахи вăрманта! Уйра халĕ тӳсме çук шăрăх, çил çук пирки улăхсенче кăмакари пек вĕри; пĕвесенчи шыв юри такам ăшăтнă пекех лĕп, унта пулăсем пăчăпа аптăранă. Вăрманта вара – сулхăн, чуна уçă. Пин-пин чечек куçа савать, кайăк юрри кăмăла çĕклентерсе ярать, лапсăркка çăкасем хушшинче пыл шăрши кĕрет, унта вĕлле хурчĕсем хура тул ани çинчи пекех сĕрлеççĕ. Ансăр сукмакăн икĕ енĕпе ашкăрса ӳсекен упасаррине сĕртĕнетĕп те, шăпăрр! кăна тăкăнать çутă сывлăм тумламĕ...

Эй, вун пилĕк çулхи çамрăклăх! Мĕнешкел ырлăх иккен нимĕншĕн те кулянмасăр, пăшăрханмасăр,вăрман сукмакĕпе çарран çатлаттарса пыма, çутçанталăк илемĕпе киленме! Эпĕ, чăтаймасăр-тӳсеймесĕр, юрласа яратăп. Манпа пĕрле пĕтĕм вăрман юрлать. Чим-ха! Вăл малтан ман сасăпах, ман кĕввех юрлатчĕ, халĕ акă кĕвви те, сасси те урăхланчĕ. Чарăнса тăрса тăнлатăп. Çинçе те уçă сасă. Илемлĕ, савăнăçлă кĕвĕ. Юрă çывăхрах, умри çырмарах, илтĕнет. Эпĕ, лайăх юрăшăн чунăма пама хатĕрскер, халиччен илтмен кĕвве пĕтĕм чĕререн киленсе итлетĕп. Анчах кĕвĕ сасартăк татăлчĕ. Эпĕ юрă илтĕннĕ çĕрелле, çырманалла, васкарăм: юрăçне те пулин курса юлассăм килчĕ.

Акă çырма пуçĕ. Ун тавра çамрăк çăкалăх, шĕшкĕлĕх ашкăрса ӳсет. Пăхмасăрах пĕлетĕп, шăпах çак тĕлте нихçан типми палкаса тăран

çăл куçĕ пур. Такамăн ӳркенмен алли ун тавра шурă чул хурса тухнă, çăл куçĕ патне анма картлашка тунă. Вăрманта ĕçлекенсем, утă çулакансем е выльăх кĕтекенсем кунта шыв ăсма çӳреççĕ. Çӳлĕ валакран чĕр кĕмĕл пек çутă, сивĕ шыв шăнкăртатса юхать, валак пуçĕнче хурăн хуппинчен тунă курка ларать (ăна пирĕн енче «пырак» теççĕ). Валак айĕнче пысăк авăр. Вăл питĕ тарăн, унти шыв тăп-тăрă, кантăк пек, витĕр кăтартать; ун тĕпĕнче шăкăрах вĕтĕ чул сапаланса выртать. Шыв çиййĕ тĕкĕр пек çутă, пăхсан, сăн курăнать. Çакă ĕнтĕ вăл – Çавал пуçĕ. Çавал çакăнтан пуçланать те, нумай-нумай чăваш ялĕсем çумĕпе иртсе, чăваш вăрманĕсемпе хирĕсене шăварса, аслă Атăла юхса кĕрет.

«Çак шĕшкĕ тĕмĕсенчен иртетĕп те çăл куçĕ патне тухатăп», – тесе шухăшласа илтĕм çеç – сасартăк ман умрах паçăрхи юрă янăраса кайрĕ те, эпĕ тăп чарăнса тăтăм. Çинçе сасă вăрмана ян ячĕ:

Асапсăр пултăр пурнăçу та,
Хисеплĕ пултăр ыр яту,
Умри çулу сан пултăр çутă,
Телейлĕ пултăр юрату.

Ĕçе тухсан – йышран ан юл эс,
Ĕçле ялан хавхаланса.
Вăййа тухсан – выля та кул эс,
Юрла, ташла хавасланса.

Эпĕ, чуна килĕшнĕ кĕвве астуса юлас шутпа, куçа курăнман юрăçпа пĕрлех ăшăмра юрларăм, юрă сăмахĕсене пăшăлтатса каларăм, унтан, юрăçа курас тесе,шĕшкĕ турачĕсене сирсе пăхрăм.

Каçă çинче пĕр вун пиллĕксене çитнĕ хĕрача тăрать, – ача çулĕнчен тухнă ĕнтĕ, хĕр пулсах çитеймен-ха. Вăл кунта ĕне çитерме килнĕ пулас: çывăхри уçланкăра пĕр хура ĕне çӳретчĕ. Хĕрача çырмана шыв ĕçме е ура çума аннă-ши? Хăй çара уран, урисем шап- шурă, пушмакĕсем пысăк чул çинче ларaççĕ. Тумланасса вăл вирьял хĕрĕсем пек мар, сала майрисем евĕрлĕ тумланнă: чăлт шурă платйĕ çиййĕн кĕске хура саппун çакнă, ун аркине тавăрса, пиçиххи хушшине хĕстернĕ. Саппунĕ айĕнчен тем пысăкăш чечек тĕркемĕ мăкăрăлса тухса тăрать. Çара пуçĕ çинче – тĕрлĕ тĕслĕ чечекрен çыхса тунă пуç кăшăлĕ. Икĕ хура çивĕтне кăкăрĕ çинелле усса янă, çара хулĕсене сарса, каçă карлăкĕ çине хунă, пилĕкне кăшт аварах, карлăк çумне тайăнсă тăрать. Эпĕ унран пилĕк-ултă утăмра çеç пулин те, çывăхра çын пуррине сисмест вăл. Акă хĕрача, юрлама чарăнса, шыв çине ӳкнĕ сăнне хирĕç пăхса кулчĕ – шап-шурă шăлĕсем йăлтăртатса илчĕç, пит çăмартисем пăт путса кĕчĕç. Çак самантра вăл мана, халăхри тĕрлĕ халап-юмаха юратакан вун пилĕк çулхи романтике, юмахри вăрман пики пек туйăнчĕ.

Хĕрача, йăл-йăл кулкаласа, хăйĕн мĕлкине чечекпе печĕ те каллех юрласа ячĕ – шывра сăн тавра хумсем ункăланса сарăлнă майăн, тавралла савăк юрă янăраса сарăлчĕ:

Тус-тантăшпа ялан пул хапăл,
Ан салхулат яш кăмăла.
Ĕçле, вĕрен, юрат – ан ватăл.
Телейлĕ пул çултан çула.

Вăл юлашки йĕркене иккĕмĕш хут юрлама ĕлкĕреймерĕ – ман ура айĕнче хăрăк турат шатăрт! турĕ. Хĕрача кăртах сикрĕ, ман еннелле çаврăнса тăчĕ. Унăн хура куçĕсем хăранипе чарăлчĕç, пушшех чиперленнĕ пек туйăнчĕç.

– Ай! – терĕ вăл хуллен.

Эпĕ ун умне тухсан, хĕрача сăнĕ сасартăк улшăнчĕ, кӳреннĕ пек курăнчĕ. Хăйне юрлама чăрмантарнăшăн кӳренчĕ пуль, терĕм ăшăмра. Чăнах та вăл ман сине кăмăлсăррăн пăхрĕ. Эпĕ питĕм пĕçернине сисрĕм, сасартăк чĕлхем çĕтрĕ.

– Çавалкассине çак çулпа каймалла-и? - тытăнчăклă сасăпа ыйтрăм унран, пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн, нимĕн калама аптăранă енне.

– Çакăнтан, – терĕ вăл пĕр сăмахпа, ман çине тӳррĕн пăхса. Çул памарĕ.

Эпĕ ансăр каçăпа ун çумĕнченех, ирĕксĕртен ăна сĕртĕнсе, куçĕнченех пăхса иртрĕм... Çав самантра хам мĕн туйнине е шутланине калама пĕлес çук, анчах çав самант халĕ те куçăм умĕнчех...

Хĕрачаран иртсен вĕçнĕ пек утрăм, ура çĕре тивнине туймарăм. Чĕремре халь кăна илтнĕ юрă шăранчĕ. Уя тухас умĕн пĕр тунката çине лартăм та юрă кĕввине те, сăмахĕсене те хам астунă пек çырса хутăм...

III

Кукка садра улмуççи турачĕсем айне тĕкĕсем лартать: шултăра пан улмисем пуснипе туратсем çĕрелле авăна-авăна аннă. Унпа пĕрле Петюк ятлă вун-вун ик çулхи ача тĕрмĕшет, хăйĕн юратнă учителĕнчен сад ĕçне вĕренсе юласшăн тимлет вăл. Унăн хĕрлĕ çӳçĕ çулăмпа çуннă пек, чĕкеç шатриллĕ тулли пичĕ юн пĕрхĕтсе ярас пек курăнать.

– Петюк, чуп-ха, сĕрме купăс илсе тух, – хушрĕ старик ачана.

– Халех, Александр Ильич! – терĕ те лешĕ, хытса сăранланнă ура кĕлисене ялкăштарса, пӳртелле вĕçтерчĕ, кĕçех каялла сиксе тухрĕ.

Петюк та Сантăр куккана ман пекех юратать, кăштах мана кӳлешет те пулас, анчах хăйĕн туйăмне палăртмасть. Вăл кĕвĕçнине эпĕ чĕремпе сисетĕп. Александр Ильича тимлесе итленĕ хушăрах ача ман енне куç хӳрипе пăхса илет, унăн çырă куçĕнче кӳренчĕк хĕлхемĕ йăлкăшса сӳнет. Ĕçчен Петюк – сăпайлă ача, именме пĕлет.

Ватă учитель ман тетраде улмуççи турачĕ çине майлаштарса хучĕ те унти юрăсене йĕркипе тĕрĕслесе тухрĕ. Унăн пĕркеленчĕк пичĕ ăшă кулăпа çуталнине кура эпĕ чунтанах савăнтăм. «Вăрман пикин» юррине

сĕрме купăспа икĕ хутчен те каларĕ вăл.

– Кĕвви питĕ селĕм, чăн-чăн халăх кĕвви, сăвви çеç кĕнеке сăвви, – терĕ старик.

– Тамаркка юрри вăл, Наçтук аппа та вăл юрра унран вĕренчĕ, – пĕлтерме васкарĕ Петюк, ман еннелле куç хӳрипе пăхса.

– Тамаркка селĕм юрлать, маттур хĕрача, – терĕ те кукка, купăсне футляра чиксе хучĕ. – Ну, халлĕхе купăс каласа çитĕ, ачамсем, купăсне ăна каçхине калăпăр. Халĕ ĕçлер-ха. Эсĕ те пулăш, Якур.

Эпир виççĕн ĕçлеме тытăнтăмăр.

Александр Ильич тĕреклĕ хул-çурăмлă, хĕрлĕ сăнлă, кăвакарнă кĕреçе сухаллă. Шурă костюмпа, хăй çĕленĕ сăран пушмакпа. Аякран пăхсан, вăл Лев Толстой сăнлăрах пек. Унăн кашни сăмахне астуса юлас килет ман, вăл пĕлтермен вăрттăн япаласем çинчен те пĕлес килет. Александр Ильич каланă кашни сăмахра темле пысăк пĕлтерĕшпур пек туйăнать мана: вăл ялан шухăшласа каласать, кирлĕ-кирлĕ мара асăнмасть. Акă халĕ темле Тамаркка мухтарĕ, апла пулсан, маттурах çав Тамаркка! Анчах мĕнлерехскер вăл? Эпĕ вăрманта курнă хĕрачана çапла чĕнмеççĕ-ши? Кун пирки Петюкран ыйтса пĕлес терĕм те – хăяймарăм çав.

Тӳррипе каласан, хам тĕл пулнă хĕрача, темшĕн-çке, Тамара ятлах пуль терĕм. Вăл çак ялсемех пулсан, эпĕ ăна тепре курма кирлĕ, тен, кам пĕлет, эпир паллашса-туслашса та кайăпăр? Эх, мĕн тери телей пулĕччĕ ку маншăн! Мĕншĕн çав хура куçлă мăн кăмăллă хĕрача ман асăмран каймасть-ха? Мĕнлескер вăл, кам таврашĕ? Ун пирки Кĕçтук тусăмран ыйтса пĕлесех пулать. Кĕçтук пĕлме кирлĕ, вăл тем те пĕлет.

Эпĕ çав хĕрача çинчен шухăшласах кун ирттертĕм, каçхине вара ăна тĕлĕкре куртăм: эпир иксĕмĕр питĕ туслă пек, пĕр-пĕрне саватпăр пек... Ирхине, çак тутлă тĕлĕк сирĕлсе çухалсан, эпĕ хам ыйхăран вăраннăшăн та кăмăлсăрлантăм...

«Вăрман пикине» тĕл пултăм эпĕ, анчах пурнăçри тĕл пулу тĕлĕкри пек телейлĕ пулмарĕ.

Тепĕр кунне куккапа садра ĕçлеттĕмĕр. Петюк çукчĕ, вăл улăха утă тавăрса типĕтме кайнăччĕ. Сасартăк çатан карта çăтăр-çатăр! турĕ те, пахчана Кĕçтук сиксе кĕчĕ. Вăл хĕрлĕ кĕпепе, кăвак йĕмпе, йĕм пĕççине чĕркуççи таран тавăрнă. Çара урисене чĕркелесе, вĕлтĕренпе пĕçертсе пĕтернĕ. Сарă кăтра çӳçĕ хĕвел çинче шупкаланса кайнă, ачасем ăна «купăста пуç» тесе йĕкелтеççĕ. Кĕçтук манпа тантăш, кăçал çиччĕмĕш класс пĕтерчĕ. Вăл тракторист пулма ĕмĕтленет: «Кам пулас?» ятлă сочиненире те: тракторист пулатăп, тесе çыртăм, тет. Кĕçтук пек хăюллă, чăрсăр ача ку касра урăх çук. Эпĕ ăна ыттисенчен

ытларах хисеплетĕп. Эпир унпа тахçантанпах туслă.

– О-о, Георги, эсĕ килнĕ тем?! Пĕлсенех чупса килтĕм, – терĕ вăл, савăнăçлă пакăлтатма пуçласа. Хăй каласнă чух çынна итлесех каймасть Кĕçтук тус. Эпĕ темле сăмах майăн кăна унран Тамаркка ятлă юрăçă çинчен ыйтрăм.

– Э-э, Тамарккăпа питĕ туслă эпир, – терĕ вăл, пакăлтатма чарăнмасăр, – халех, кирлĕ пулсан, халех унпа паллаштарма пултаратăп сана. Кунтан инçех те мар вăл...

Кĕçтук, çавăнтах Тамарккăна манса, урăххи çинчен калаçма тытăнчĕ.

– Ну, шăрăх та-çке паян, ача-а! Пуç купташки кăмакари тăм чӳлмек пек хĕрсе кайрĕ, пуç мими улма нимĕрĕ пек пиçсе хытрĕ пуль... Атя, Георги, шыва кĕме каяр! Александр Ильич, сирĕн пĕвере шыва кĕме юрать-и? Эсĕр халĕ пулă тытмастăр пуль вĕт, э?

– Çак шăрăхра кам пулă тыттăр? Хыпмасть халь, – терĕ старик, чăрсăр ачана савсах кайманскер. – Кайса кĕрĕр, ара, кам чарать...

– Кайрăмăр, Георги! Анчах шăпăрт пыр, ан шавла, – терĕ мана Кĕçтук, ытарлăн куç хĕссе, хăй çавăнтах анкарти хыçнелле тапса сикрĕ. Эпĕ ун хыççăнчупрăм.

Кукка пахчи çырманах анать. Çырма тепĕр енче пахча, иккĕшин хушшинче – пысăк пĕве. Пĕве икĕ енĕпе те сад. Хăш-пĕр чие тĕмĕсене шыв илнĕ.

Эпĕ пĕвехĕррине çитнĕ çĕре ман Кĕçтук хывăнма та ĕлкĕрнĕ, çапах темшĕн шыва сикмен, тĕмсем хушшине йăпшăннă та шăп ларать. Чарусăр Кĕçтук хăçан та пулин шăп ларма пултарасса тĕлленменччĕ те эпĕ.

– Ан шавла, пĕр мыскара кăтартатăп, – терĕ вăл мана, пӳрнипе юнаса.

– Мĕнле мыскара?

– Хывăн часрах, леш енне ăмăртмалла чăмса каçăпăр, унта мĕнне курăн вара. Асту, пĕр шав та ан пултăр, унсăр нимĕн те кураймăн.

Эпĕ, шывра ишнинчен ытларах чăмма юратаканскер, пĕве хĕррине хывăннă-хывăнман пытăм та ытлашши шав тумасăр чăмрăм. «Мĕн кăтартасшăн-ха вăл мана? Тата мĕншĕн шăппăн чăмма хушрĕ?»– шухăшласа илтĕм шывра. Тантăшăмран маларах леш енне çитсе тухас тесе, мĕн пур вăйран тăрăшатăп, алăсемпе хăлаçланатăп, урасемпе çĕртен тапса пыратăп. Сывлăшăм та пĕтсе çитрĕ ĕнтĕ, аллăмсем те чĕтре пуçларĕç – пĕви питĕ сарлака,– çапах леш енне тухмаллах! Акă, юлашкинчен, ман ӳте туратсем чăрмалама тытăнчĕç. Кусем – шывра ларакан çамрăк чие тĕмĕсем. Вĕсенчен иртрĕм те, пĕрре-иккĕ тапсан,

çыран хĕррине пуçпа пырса тăрăнтăм, çавăнтах шывран пăкă пек сиксе тухрăм, кăкăр тулли сывласа ятăм.

– Ай! – тесе çухăрчĕ ман умрах такам çинçе сасăпа.

Эпĕ, шартах сиксе, куçа уçрăм та тĕлĕнсе хытрăм.

Тĕм хушшинче хайхи «вăрман пики» тăра парать. Вăл халĕ çеç пĕверен тухнă та вăрăм çӳçĕнчен шыв пăрса юхтарать-мĕн. Куç хупса илнĕ самантлăха хĕрача хăранипе хускалми пулса тăчĕ: йăрст тӳрленчĕ, аллисене пуçĕ çинчен илмерĕ, йĕпе хулăн çӳçĕ хулпуççисемпе кăкăрĕ тăрăх сапаланса кайрĕ; унăн пĕчĕк кăкăрĕсем шуратнă икĕ çарăк пек курăнчĕç, çинçешке, тăпăл-тăпăл кĕлетки пĕчĕк вутăш-хĕр[1] статуйи евĕр туйăнчĕ. Анчах çав шурă мрамор статуйăн куçĕсем кăвар пек ялкăшрĕç, мана çунтарса ярасла хĕлхем сирпĕтрĕç. Мĕн тери хаяр курайманлăх çиçсе тăратчĕ çав куçсенче!.. Самантранах хĕрача çĕрте выртакан платйине пĕшкĕнсе илчĕ те йăрăс урисене, çара кăкăрĕсене хупласа, кукленсе ларчĕ.

Вăл хускалсанах эпĕ те, шалкăм çапнă пек хытса танăскер, тăна кĕтĕм – вăрт! каялла çаврăнтăм та шыва чăмрăм. Çав вăхăтра пĕве леш енче Кĕçтук ахăлтатса кулни илтĕнчĕ. Тухас килместчĕ шывран, вăтаннипе путса вилме те хатĕрччĕ эпĕ – сывлăшăм пĕтсе çитрĕ те, шыв хăех мана çиеле кăларса ывăтрĕ.

Ман Кĕçтук тĕмсем хушшинче йăванса, варне тытса кулать:

– Куртăн-и ĕнтĕ халь юрă ăсти Тамаркка мĕнлине? Суккăр пулмарăн-и? – тет.

Юрă ăстине тепре тĕл пуласран вăтанса, эпĕ çав кунах хамăр яла таврăнтăм.

Виçĕ çул иртрĕ çавăнтанпа, виçĕ çул кураймарăм ăна. Малтанлăха ăнсăртран тĕл пуласран та шикленеттĕм, пурăна-киле питĕ курас килекен пулчĕ. Аякран та пулин курас килетчĕ. Анчах телейĕм тухмарĕ.

Тамара пирки Кĕçтук пĕрре çапла пĕлтерчĕ:

– Унăн ашшĕ-амăшĕ хулара пурăнать, вăл теплерен кăна кунта, кукамăшĕ патне, килкелет, – терĕ.

Çакна пĕлнĕ хыççăн пушшех Тамарăна курас килекен пулчĕ, кунĕн-çĕрĕн ăна аса илме, тунсăхлама тытăнтăм. Вăрманта курни те, пĕве хĕрринче курни те чĕреме ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлчĕ, асăмран кайма пĕлмерĕ.

Иксĕмĕр те каччăпа хĕр шутне кĕрсен тĕл пултăмăр эпир. Тĕл пуласса тĕл пултăмăр, анчах... юрăри пек каласан, çурхи сархĕвеллĕ, кайăк юрриллĕ ирхине мар, хура кĕркуннехи сивĕ çумăрлă тĕксĕм

[1]Вутăш-хĕр – русалка

каçхине çуралнăпуль çав эпĕ...

IV

Эпĕ ĕнтĕ вуннăмĕш класра вĕренетĕп. Халĕ манăн пĕртен-пĕр пысăк ĕмĕтĕм – вăтам шкул пĕтерсе музыка училищине кайса кĕресси. Халăх юрри-кĕввине малтанхинчен те тимлĕрех пухатăп, вĕсенчен хăшне-пĕрне пултарнă таран илемлетме пикенетĕп, анчах халлĕхе ку ĕç кирлĕ чухлĕ ăнаймасть пулас-ха. Хам илемлетнĕ юрăсене композиторсен Союзне ярса парассăн та эпĕ – Александр Ильич хушмасть. «Иртерех-хавĕсене пичетлеме сĕнмешкĕн. Тата тăрăшарах вĕрен, çине тăрса ĕçле, ан васка. Искусства васкакана юратмасть», – тет вăл.

Пĕрре, хĕллехи каникул вăхăтĕнче, Çавалкаса çĕнĕ юрăсем илсе кайрăм. Ку хутĕнче Александр Ильич мана хаваслă кĕтсе илмерĕ: вăл шăнса пăсăлнă та чирлĕ выртать. Ăна кӳршĕ хĕрĕ Наçтук пăхать.

Наçтук – Петюкăн тăван аппăшĕ. Хăй вун саккăрта кăна пулин те, пĕвĕ-сийĕпе питĕ кĕрнеклĕ вăл. Ашшĕ-амăшĕ ăна мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ. Колхозра Наçтук тытман ĕç те çук: вăл суха та тăвать, утă та çулать, вăрман та касать, ниçта та арçынтан юлмасть. Вăрмантан вутă кăларнă чух сулăнкăра тӳнсе кайнă тулли çунана пĕччен тăратса лартма пултарать, арманта тырă авăртнă чух тăватă пăтлă миххе чул сакки çине хăех çĕклесе хăпартать, михĕри тырра никам пулăшмасăр пĕрнене йăтса ярать, вылямалла кĕрешес пулсан, каччăсене те ним мар хăй айне çавăрса хурать. Пур вăйлă çын пекех, Наçтук сăпайлă та именчĕк. Ăна шӳтле каланă сăмахпах вăтантарма пулать, вара унăн чĕкеç шатриллĕ тулли пит çăмартисем мăкăнь çеçки евĕр хĕрелсе каяççĕ. Наçтук пуринчен ытла манран именнĕ пек туйăнать. Кĕçтук каланă тăрăх, вăл мана курсанах сăнран улшăнать, тӳрем çĕртех такăнать, пăлханма тытăнать. Тепĕр чухне эпĕ пĕр-пĕр çĕнĕ юрă юрласа пама ыйтатăп та, хĕр ытлашши туртăнкаласа тăмасăр килĕшет, анчах питĕ хăюсăр юрлать. Сасси уçах мар унăн, çитменне тата кĕвĕсене хăйне майлă пăсать вăл. Мĕн тери лайăх юрлама тăрăшать пулин те, мăнтарăн, тăрăшнăçемĕн йăнăшать. Хăй, именнипе, ман çине мар, аяккалла е çĕрелле пăхса юрлать. Эпĕ сĕрме купăс каланă чух Наçтук ман çинчен куç илмесĕр итлет, эпĕ хурлăхлă кĕвĕ каласан, унăн хăмăртарах хĕрлĕ куçĕсем куççулĕпе тулаççĕ. Наçтук мана пĕр шанчăксăр, ӳпкевсĕр, вăрттăн юратать – çакна эпĕ тахçанах сисетĕп. Тепĕр чухне вăл Сантăр куккана пулăшас тесе мар, мана курасшăнах çакăнта килнĕ пек туйăнать, анчах ырă кăмăллă хĕр кирек кама та пулăшма хатĕррине куратăп та ку шухăша сирсе яма тăрăшатăп. Чăнах та, Наçтук пулăшса тăмасан, чирлĕ старике йывăр килнĕ пулĕччĕ...

Эпĕ пырса кĕнĕ чух кӳршĕ хĕрĕ урай çăватчĕ – мана курчĕ те йăрст тӳрленсе тăчĕ, аллинчи мунчалине çĕре ӳкерчĕ, тавăрнă кĕпе çаннисене хăвăрт усса ячĕ, тутăр айĕнчен сапаланса тухнă хĕрлĕ çӳç пайăркисене тирпейлесе чикрĕ. Вăл савăнăçлăн та именчĕклĕн йăлкăшса кулчĕ, мăкăнь çеçки пек хĕрелсе кайрĕ, вара эпĕ хывăнса малалла иртмесĕр те вырăнтан хускалмарĕ. Мана кукка хăй патне чĕнсе илсен тин хĕр каллех урай çума пикенчĕ. Вăл, вăйлăскер, юман хăмасене шăлан курăкĕпе нăтăртаттарса хырса-çуса тухрĕ те тимĕр кăмака хутса ячĕ, унтан, тăрăхла сак çине ларса, кукка валли çăм чăлха çыхма тытăнчĕ.

– Тамаркка виççĕре килет, терĕн мар-и çав? Халĕ шăпах тăватă сехет, – терĕ Александр Ильич, вăйсăррăн ӳсĕрсе.

– Çынсем нумайччĕ ун патĕнче, вĕсем кайсанах килет, – айăпа кĕнĕ евĕр, хăюсăр пĕлтерчĕ Наçтук.

Чĕрем кăртах турĕ. «Мĕнле Тамаркка? Нивушлĕ хайхи «вăрман пики»? Халĕ хулара пулма кирлĕ-çке эсĕ? Мĕн тума килет вăл кунта?» Эпĕ Наçтук куçĕнчен пăхрăм.

Ман шухăшăма куçран пăхсах ăнланма, мана юрама тăрăшакан хĕр васкаса пĕлтерчĕ:

– Тамара кăçал медсестрасен шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ, халĕ хамăр ялта ĕçлет. Часах çитет пуль ĕнтĕ...

Çак хыпар мана мĕнле пăлхантарса янине сăмахпа калаяссăм та çук. Пĕр сехет иртрĕ-ши, иккех-ши, – вăхăт питĕ вăраххăн шунă пек туйăнчĕ, – эпĕ, чун-чĕремпе пăшăрханса, вăрттăн асапланса, Тамара килсе кĕрессе кĕтрĕм.

Акă, шăннă крыльца картлашкисем чĕриклетни илтĕнчĕ... çенĕк алăкĕ шалтлатса хупăнчĕ... пӳрт алăкĕ уçăлса кайрĕ... пӳлĕме, шурă пăс пек мăкăрланса, сивĕ кĕрсе тулчĕ...

Тамара хыпаланса кĕчĕ те, тӳрех мана асăрхаса, пĕр маншăн çеç каланă пек: «Салам!» – терĕ.

Эпĕ ăна курсанах палласа илтĕм. Ман умра виçĕ çул каялла курнă «вăрман пикиех». Ун чухне вăл хĕрачаччĕ, халĕ ак – пĕве çитнĕ хĕр, сарпике...

– Паллашăр, Тамаркка: ку – ман йăмăкăн ывăлĕ. Георги ятлă, – терĕ кукка, выртаканскер, чавси тайăнса тăрса. – Ман валли çĕнĕ юрăсем пухсакилчĕ. Музыкант.

Хĕр ман куçăмран тӳрĕ пăхрĕ, шурă перчеткине хывса, алă пачĕ.

– Тамара, – терĕ вăл уçă сасăпа, унтан хăй йăнăшне тӳрлетнĕ евĕр, хушса хучĕ, – Тарханова.

Вара, эпĕ пӳртре пулман пекех, кукка енне çаврăнса унпа калаçа

пуçларĕ.

– Ну, мĕнле, Александр Ильич, кăштах çăмăлланчĕ пек-и, сывалатăр-и? Пилĕк каç кĕтеççĕ сире пирĕн музыкантсем – кĕтсе илеймеççĕ... Каллех банкă лартмалла-и?

– Лартан пуль. Чикен чиксе аптратрĕ. Пальтуна ав çавăнта хывса çак, – терĕ кукка, стена çумĕнчи пăлан мăйраки çине кăтартса.

Тамара пĕчĕк чăматанне сак çине лартрĕ, пальтине хывса çакрĕ, каллех Александр Ильич патне пычĕ. Вăл ман еннелле пăхманран, эпĕ ăна лайăх сăнарăм.

Тамара шурă халатпа, шурă çăматăпа, хура мулахайпа. Çӳçĕ сапаланса каясран пуль, çĕлĕкне хывмарĕ. Хура çĕлĕк питĕ килĕшет ăна: ун çумĕнче хĕрĕн пысăк куçĕсем, авăк куç харшийĕсем тата хурараххăн курăнаççĕ, йĕрĕлче пек çаврака тути вара – пиçсе çитнĕ çĕр çырли тĕслĕ.

Хĕр-тухтăр старике эмелленĕ хушăра эпĕ журналсем пăхса лартăм. Александр Ильич 1924 çултанпах «Сунталăн» кашни номерне пухса, çĕлесе пынă. Эпĕ çав кивĕ журналсене пăхма питĕ юрататăп. Хальхинче вĕсем те илĕртми пулчĕç. Вуланçи тунă хушăрах, Тамарăпа кукка калаçнине пĕр сăмах сиктерми тăнларăм.

– Музыкă кружокĕ саланса каять, тетĕн çак? Авă, Георгие чĕнĕр клуба, вăл манран та ирттерет, – терĕ сасартăк Александр Ильич.

Эпĕ, çакна илтсен, хытă пăлханнипе тарласа кайрăм.

Тамара ман çине ăшшăн пăхрĕ, чипер тути унăн çавăнтах кулса ячĕ, пит çăмартисем пăт путрĕç.

– Эпир клубра музыкă кружокĕ йĕркелерĕмĕр. Музыкăна юратакансем чылай пирĕн, инструментсем те пур, анчах пире вĕрентекекни çук. Александр Ильич чирлерĕ ав, – терĕ Тамара. – Кăмăлăр пулсан, пырса курăр клуба.

Ыйтса та, хушса та каламарĕ вăл çакна, анчах эпĕ унпа килĕшмесĕр тăма мĕнле пултарăп ĕнтĕ? Тем тума та хатĕр уншăн!..

Тамара, килсе кĕнĕ пекех, хыпаланса тухса кайрĕ, тата икĕ чирлĕ çын патне çитмелле, терĕ. Вăл килсе кайни мана тĕлĕкри пек, сĕм çĕрле хĕвел çутатса пăхнă пек туйăнчĕ, чунăма çунатлантарса ячĕ. Манăн çĕрлене юличчен хамăр яла таврăнмаллаччĕ, анчах кил шухăшĕ-и ун пек чух! Каç пуласса чăтăмсăр кĕтсе лартăм та хăйă çутсанах клуба тухса утрăм. Çул майăн Кĕçтук патне кĕрсе тухрăм, унпа пĕрле каяс тесеттĕм – вăл килте пулмарĕ, шкул вутти кăларма вăрмана кайнă та таврăнман-ха.

Пĕчченех клуба пырса кĕтĕм. Мана пуринчен малтан Тамара асăрхарĕ, хаваслăн йăлкăшса кулса, хирĕç темиçе утăм турĕ, унтан

шавлакан çамрăксем енне çаврăнса: – Акă, пирĕн музкружокăн çĕнĕ руководителĕ. Паллашăр, Атнаров юлташ, – терĕ.

Эпĕ Çавалкас çамрăкĕсене йĕркипе алă парса тухрăм. Вĕсем хушшинче Петюк та пурччĕ.

– Вăл пирĕн чаплă суфлер, унашкалли Шупашкарта академтеатрта та çук, – терĕ ун пирки пĕр мыскараçă каччи, Пракух ятлăскер. – А хам эпĕ – ватă хусах, спектакльсенче эрех-паттăрсене çеç вылятăп, ытти рольсем пиçсех каймаççĕ ман.

Тăсланкă Пракух куляннă пек хăлаçланса илчĕ. Çамрăксем хаваслăн ахăрса ячĕç.

Çавалкас клубĕ икĕ хутлă. Аялти хутĕнче кино, концерт курмалли пысăк зал, çӳлти хутĕнче – библиотека, вулав пӳлĕмĕсем. Пĕр пӳлĕмĕнче музыкçăсем репетици ирттереççĕ иккен. Тамара мана çавăнта илсе кайрĕ. Кунта пĕр баян, виçĕ гитарă, виçĕ мандолинă, балалайкăсем, пĕр сĕрме купăс пур. Сĕрме купăсне калама пĕлекен çукмĕн, ăна ашкăннă чух çеç тыткаласа пăхаççĕ, хĕлĕхсене сухăрламан сĕркĕчпе хытă сĕркелесе, чуна çурмалла сасă кăлараççĕ. Баянне те пĕлипĕлми турткалаççĕ. Гитарă калакансем чикан юрри евĕрлĕ кĕвĕсене çеç ăнкараççĕ. Нумай тар кăлармалла ку музыкçăсемпе, анчах хăйсем питĕ хастар кăмăллă: ăста купăсçă е гитарçă пуласшăн çунаççĕ. Пуринчен ытла мана, паллах, Тамара музыкăна юратнихавхалантарчĕ. Эпĕ çак музыкçăсене хам пултарнă таран вĕрентме хаваслансах килĕшрĕм. Малтанхи каç эпир пурте пĕлнĕ çемĕсене харăс каларăмăр. Пĕри вăрмана, тепри армана, тенĕ пекрех тухрĕ ку япала. Ĕç ăнсах пымарĕ пулин те, Çавалкас çамрăкĕсем музыкăна пикенсех вĕренме пулчĕç, мана хăйсем патне час-часах килсе тăма чĕнчĕç. Эпĕ, ним шухăшламасăрах, килсе çӳреме сăмах патăм.

Манăн килте те ĕç нумай. Кăнтăрла колхозра ĕçлетĕп, вăрманта вутă касатăп е хирте юр купалатăп. Ĕçрен ялан ĕшенсе таврăнатăп. Çапах, каç пулсан, çанталăк сиввине те, çул инçине те пăхмастăп, йĕлтĕр çине тăратăп та Çавалкаса вĕçтеретĕп. Çывăрма кукка патĕнчех юлатăп, ирхине вара илĕм-тилĕмпех киле таврăнатăп. Каллех ĕçе. Çав вăхăтра эпĕ самаях начарлантăм, сăнран туртăнтăм. Пурпĕрех чĕрем нихçанхинчен хаваслăрах, хастарлăрах. Тамарăна виç-тăват сехет курассишĕн инçе çула кĕске турăм. Вунă çухрăм уй урлă каçасси нимĕн те мар мана. Пĕр сăмах кăна ĕнтĕ: вун сакăр çулхи яш ĕмĕр! Урăх мĕн каласси пултăр?

V

Çавалкас оркестрĕнче вун иккĕн. Вĕсенчен пиллĕкĕшĕ – хĕрсем. Тамара гитарă калать. Вăл çĕнĕ кĕвве пуринчен малтан астуса юлать,

хăвăрт вĕренет. Ыттисене тепĕр чух хам çума лартса, пӳрнисене хам алăпа тытса пустарса выляма хăнăхтаратăп. Тамарăна та çавнашкал вĕрентессĕм килет, анчах вăл хăй тĕллĕнех майне кӳме тăрăшать. Эпĕ ун çывăхне пыраймастăп. Пĕр каçхине вăл çĕнĕ журнал илсе килчĕ те:

– Лайăх юрă пур кунта. Вĕрентĕр-ха юрлама, Атнаров, – терĕ мана.

Тукташ сăвви тăрăх Василий Воробьев çырнă «Шурă кăвакарчăн» ятлă юрă иккен. Эпĕ хаваласнсах оркестрантсене кĕввине калама, Тамарана – юрлама вĕрентрĕм. Килĕшнĕ юрра вăл хăвăрт вĕренсе çитрĕ.

Ах, ларатăп эп, йĕретĕп,
Вут çунать ман ăшăмра:
Юнлă вăрçăра вĕлерчĕç
Манăн савнă мăшăра,–

тенĕ чухне унăн куçĕсем шывланаççĕ, сасси хурлăхлăн чĕтренсе тухать, вара умра вун сакăр çулхи хĕр юрланă пек мар, тăлăха юлнă салтак арăмĕ татăлса йĕнĕн туйăнса каять.

Салтак тенĕрен, кăçал Кĕçтукпа иксĕмĕрĕн те Хĕрлĕ Çара кайма ят тухрĕ.

Çавалкас çамрăкĕсем, вуннăмĕш класра вĕренекенсемпе ялти комсомолецсем, клубра «призывниксен каçĕ» тума, унта спектакль лартса пама, концерт кăтартма пулчĕç. Оркестр та хăйĕн пултарулăхне çав каç кăтартас терĕ.

Музыкçăсем хĕрсех концерта хатĕрленнĕ вăхăтра драмкружок членĕсем нимĕн те тумарĕç: вĕсем хайсене юрăхлă пьесă шыраса хăшкăлчĕç. Çĕнĕ пьесăсем çук. Пулсан та – е ытлашши вăрăм, е выляма çын çитмест, е тата выляс текенсем рольсене питĕ тиркеççĕ, япăх роле пĕри те йышăнасшăн мар.

Çавалкас çамрăкĕсем кăнтăр кунĕнчех хунар çутса çĕнĕ пьесă шыранă кунсенче «Сунталра» шăпах тахçантанпах кĕтнĕ «Нарспи» пьесă тухрĕ. Пьесăна Наçтуксем патĕнче, улахра, ушкăнпа вуларĕç, кунтах рольсем валеçрĕç. Яланхи пекех, хирĕçӳ пуçланчĕ: хĕрсенчен пĕри те элекçĕ карчăк рольне йышăнасшăн пулмарĕ. Пракух та, те чĕрре кĕрсех, те шӳтлесе кăна, шавлама тытăнчĕ:

– Пьесинче ĕçкĕ-çикĕ çук-тăк – никакой та вылямастăп, – терĕ.

Ăна яланах йĕркерен тухнă пупсен, кулаксен, кахалсен, ĕçке ернĕ çынсен ролĕсене параççĕ. Пракух çав рольсене чăнах та ăста кăларать, анчах кашни спектакльтех ĕçсе ӳсĕрĕлет: чăн пурнăçри пек пултăр тесе, сценă çинче ĕçкĕ-çикĕ кăтартнă чух ахаль шыв ĕçмест вăл. Пӳрнĕ çăкăр шăл çĕмĕрсе кĕрет, теççĕ мар-и? Пракухшăн тенĕ пекех, чăваш пьесисем пурте ĕçкĕ-çикĕпе вĕçленеççĕ. Пракух çавăнпа кашни спек-

такльтех савăнса вылять.

– Элекçĕ карчăка хамăн выляс пуль,ăна Тăхтаман хытă ĕçтерет, – терĕ вăл ку роле урăххине парасран пăшăрханнă сасăпа. «Мăн кĕрĕве те хытă ĕçтереççĕ-çке», – тесе, ăна мăн кĕрӳ рольне пачĕç...

Спектакль лартнă каçхине Пракух чăннипех ĕçсе ӳсĕрĕлчĕ. Куракансем ăна ячĕшĕн кăна шыв ĕçет пуль тенĕччĕ, анчах «мăн кĕрӳ» туй такмакĕ каланă вăхăтра такăна пуçларĕ, суфлер вуланине илтми пулчĕ, час-часах ун еннелле çаврăнса пăхкаларĕ, пĕрре суфлер будки умнех пырса: «Мĕнле тетĕн?» – тесе ыйтрĕ, вара, тара ӳксе вулакан Петюк мĕн каланине ăнланса илеймесĕр, хăй пĕлнĕ пек кăшкăрса ячĕ:

– Çитменнине çитерĕр! Ытлашшине ка...ка...каçарăр! Т...т...тайма пуçăм сирĕн умăрта! – терĕ те, пуç тайма хатĕрленсе, тăрăнса кайрĕ. Куракансем кулса ячĕç, анчах Пракух ӳсĕрпе роле пăснине сисмерĕç:

– Чисти артист пекех, питĕ лайăх кăларать ку, ача-а, – терĕç...

Нарспипе Сетнере Тамарăпа Кĕçтук вылярĕç. Кĕçтук халь çара уран, çара пуçăн чупса çӳрекен чăрсăр ача мар ĕнтĕ, яштака пӳллĕ маттур каччă. Унăн чакăр кăвак куçĕсем хастарлăхпа çиçеççĕ, сарă кăтра çӳçĕ тăнлавсенче ункăланса тăрать. Тĕрĕллĕ шурă кĕпепе, çĕнĕ çăпатапа вăл – каснă-лартнă Сетнерех.

Тамара авалхи тумпа: пуçĕнче тухъя, кăкăрĕ çинче шĕлкеме, хул урлă тевет. Акă вăл, çинçе пилĕклĕ, йăрăс пӳллĕ хĕр, витрисене йăтса, валак умнĕ ярăнса утса тухать. Тенкисем хаваслă шăнкăртатаççĕ. Ирĕксĕрех поэт калани аса килет:

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
Явăнаççĕ хыçалта
Çивĕт вĕçĕн кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем...

Клубри халăх çăвара шыв сыпнă пек шăп ларать. Акă Сетнер, Нарспие куçран пăхса, пăлханнипе чĕтрекен сасăпа калать:

Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек лашам пур,
Вĕсенчен те хаклăрах,
Чунăм савни, эсĕ пур.
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур. –
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур...

Кĕçтук, тĕреклĕ хулĕсене сарса, пысăк чăмăрĕсемпе тăшмана юнать. Лайăх вылять тусăм, анчах темшĕн-çке вăл Сетнер рольне выляннă пек мар, хăйĕн шухăш-туйăмне пĕтĕм ял-йыш умĕнче пĕлтернĕн туйăнать.

Эпĕ, хам та сисмесĕр, ассăн сывлатăп.

Çĕрлехи вăрманта, лаштра юман айĕнче, Нарспипе Сетнер ларaççĕ, вĕсем-çимĕк каçĕ вăйăран çакăнта тарса килнĕ. Сетнер юрату юмахĕ ярать, Нарспи ăна сывламасăр итлет.

Каччӑ калать: «Эпӗ килнӗ çул çинче чечек нумай, вӗсем пурте илемлӗ, сан куçусем евӗрлӗ», – тет. Каччӑ çапла каласан, сархӗр кулса ярать...

Нарспи, савнине пӳлсех: «Унтан вӑл ӑна ак çапла тытать те юратса чуп тӑвать», – тесе, Сетнере ыталаса чуп тӑвать... Вара ман умра каллех Нарспипе Сетнер мар, Тамарӑпа Кӗçтук кӑна.

Кӗçтук пьесӑра кӑтартнинчен ытларах чуп тӑвать...

Хӗрӗнкӗ Пракух, юри хытӑ ӳсӗренçи пулса: – «Чунсаван чуп тунӑ, чун суран чӳк тунӑ», – тет те, сценӑ хыçӗнче кулни илтӗнет. Ку тӗлте чаршав хупӑнмалла, анчах вӑл темрен çакланса ларнӑ. Вара сценӑ çине Пракух тайкаланса тухать те, халӑха култарса, чаршава карса хурать...

Спектакль çапах та, концерт пекех, лайӑх иртрӗ. Пуринчен ытла çынсене Тамара выляни килӗшрӗ. Пӗтӗм чӗререн пӑлханса, хавхаланса вылярӗ вӑл, хурлӑхлӑ самантсенче куççулӗпех макӑрчӗ, куракан хӗрарӑмсене те макӑртса пӗтерчӗ. Кӗçтук та маттур вылярӗ. Пур пӗрех эпӗ хам умра Нарспипе Сетнере мар, Тамарӑпа Кӗçтука çеç куртӑм: пӗрехмай мана Силпи хӗрӗпе каччи вырӑнне Çавалкас каччипе хӗрӗ, хамӑн çывӑх тантӑшӑмсем, хӑйсен юратӑвне пӗтӗм ял-йыша кӑтартнӑн туйӑнчӗ...

Çав каçхине эпӗ канлӗ çывӑраймарӑм: манӑн тем парса Кӗçтук вырӑнӗнче пулас килчӗ.

VI

Хӗллехи каникул иртсен, Çавалкаса час-часах кайса çӳреме пулмарӗ. Килте те, шкулта та ӗç нумайланчӗ. Унсӑр пуçне тата хамӑр ялта музыкӑ кружокӗ йӗркелерӗм, каçсерен кружока çӳрерӗм. Кукка патӗнче сайра пулкаларӑм, Тамарӑна кураймарӑм. Александр Ильич сывалнӑранпа вӑл унта пымасть. Эпӗ, ӑна тӗл пулас тесе, пӗрре Кӗçтукпа пӗрле клуба та кайрӑм, анчах телей килмерӗ. Вӑл каçхине Тамара хӗрсене медпункта пухнӑ-мӗн.

– Эпӗр, çирӗм хӗр, медицинӑ кружокӗнче вӗренетпӗр. Тамара пире çын амансан, ӑна пӗрремӗш пулӑшу мӗнле памаллине вӗрентрӗ, – терӗ Наçтук. – ГСО значокне илме экзамен патӑмӑр, – хушса хучӗ вӑл, именчӗклӗн кулкаласа. Наçтук мана кружокра мӗн вӗренни çинчен каларӗ, анчах эпӗ ӑна тимлесе итлеймерӗм, тунсӑхласа, Тамара çинчен шухӑшларӑм...

Февральте Çавалкасра комсомолецсен пысӑк пухӑвӗ пулчӗ, унта таврари виç-тӑват ял çамрӑкӗ пуçтарӑнчӗ. Эпӗ те хамӑр ял ачисемпе кайрӑм. Пухура ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ доклад турӗ – тӗнчери лару-тӑру, тӑван çӗршыври ӗçсем, комсомолӑн хальхи задачисем

çинчен каларĕ.

Тĕнчери лару-тăру лăпкă мар. Хĕвеланăçĕнче фашистсем çултан çул вăй илеççĕ, урнăçемĕн ураççĕ. Германипе Англи хушшинче вăрçă пырать, нимĕç фашисчĕсем акăлчансен мирлĕ хулисем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Германи Европăри нумай патшалăхсене вăйпа тытса илнĕ, вăл тухăçалла кармашать. Инçет Хĕвелтухăçĕнче Китай халăх çарĕсем Япони самурайĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи тахçанах пуçланнă, вăл сарăлнăçемĕн сарăлса пырать.

Германипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне тапăнмалла мар тесе килĕшӳ тунă пулин те, фашистсене шанма çук. Совет çĕршывĕ хăйĕн тĕрекне кунсерен ӳстерме тимлет...

Кăçал çара кайма ят тухнисем тата ытти çамрăксем вăрçă ĕçне вĕренеççĕ. Çапах та эпир, вăрçă мĕн иккенне курса пăхман е курсан та кинора çеç курнă, тар шăршламан çамрăксем, вăрçă çинчен аса та илместпĕр: вăл пирĕнтен инçетре-ха, çавăнпа пире ытлах пăшăрхантармасть. Тăшман тапăнса килес пулсан, эпир халь тесен халь, кинори паттăрсем пек, пĕр шиксĕр çапăçма хатĕр. Анчах халлĕхе, хăрушлăх çук чухне, куллен-кунхи интерессемпе пурăнатпăр: ĕçлетпĕр, вĕренетпĕр, юрататпăр, кӳлешетпĕр...

Комсомол Тĕп комитечĕ Хĕрлĕ Çар çирĕм виçĕ çул тултарнă ятпа пĕтĕм çĕршыври йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерме йышăннă. Чăваш республикинче çав кроса февральте, çак кунсенчех, ирттермелле. Амăртăва Хĕрлĕ Çар кунне ирттерес, таврари ял çамрăкĕсен Çавалкаса пуçтарăнас, тесе йышăнтăмăр пухура.

– Турикассемпе ăмăртса пăхар эппин – хăшĕ мала тухĕ, – терĕ Кĕçтук, ман çине кулкаласа пăхса. Унпа юнашар ларакан Тамара та, куçăмран пăхса, йăлкăшса кулчĕ. Унăн ăшă кулли мана хăюллатрĕ.

– Эпир те Çавалкассемпе ăмăртса пăхар эппин – хăшĕ мала тухĕ, – терĕм ăна хирĕç шӳтлесе, анчах ку шӳт маррине, Тамара умĕнче хам çирĕп сăмах панине ăнланса илтĕм.

Хĕрлĕ Çар кунĕ шартлама сивĕ çанталăк тăчĕ. Ăшăтмасăр пăхакан хĕвел икĕ хăлхаллă. Кайăксем вĕçеймеççĕ. Сурчăк çĕре ӳкичченех пăр татăкĕ пулать. Пас тытнă йăмрасемпе хурăнсем юмахри тĕлĕнмелле йывăçсем пек курăнса ларaççĕ, аякри вăрман та юртан купаласа тунă хӳме пек туйăнать. Ура айĕнче юр кăчăртатни е çуна сасси çухрăмран илтĕнет.

Йĕлтĕрçĕсем шкул умĕнче пухăнчĕç. Пирĕн çакăнтан тапранмалла та, мăн çулпа çичĕ çухрăм кайсан, çул тăваткăлĕнчен, вышкă патĕнчен, каялла таврăнмалла.

Кĕçтук хăй тавра чи маттур йĕкĕтсене пуçтарнă, вăл хăйĕн

командипе пирĕн çине тухасса шансах тăрать пулас. Ман юлташсем те Çавалкассенчен япăхах мар пек. Хам пирки ытлашши пăшăрханмастăп: эпĕ ГТО норминчен тахçанах ирттернĕ.

Хĕрсем хушшинче Тамара та пур. Вăл пĕчĕк чăматанне йăтса тухнă.

– Камăн мĕн ыратать, кама тăм илнĕ? – тесе çӳрет, йĕлтĕрçĕсемпе шӳтлесе каласать.

Тамара Тарханова – Çавалкасри комсомол организаци секретарĕ. Акă вăл эмелсем чикмелли чăматанĕнчен икĕ кĕнеке кăларса кăтартрĕ: Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» тата Горькин «Амăшĕ» романĕсем.

– Юлташсем! Ку кĕнекесене райкомран çырса пачĕç: кам паянхи кросра мала тухăть – çак парнесене илме тивĕçлĕ пулать!

Унтан вăл аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ те:

– Костя Камаев! Георги Атнаров! Командăсене йĕркелесе тăратăр! – терĕ. Вăхăт çитсен, командă пачĕ. – Тапранăр!..

Çул тăваткăлĕнчи вышкă патне çитнĕ çĕре эпĕ юлташсене чылай кая хăвартăм, каялла килнĕ чух мана Кĕçтук хăваласа çитрĕ. Пĕр икĕ çухрăм эпир юнашар пытăмăр. Иксĕмĕр те чăм шыва ӳкрĕмĕр, фуфайкă тӳмисене вĕçертрĕмĕр. Пуç тӳпинчен пăс тухать, иксĕмĕр те лаша пек хашкатпăр, анчах пĕри те парăнма шутламастпăр, пĕр-пĕрин çулне пӳлме хăтлансах, мала тухма тăрăшатпăр. Малтан Кĕçтук шӳтлесе илкелерĕ, юлашкинчен вăл сăмах хушми пулчĕ. Нимĕн чĕнмесĕр, пăравус пек пăс кăларса, малалла ыткăнатпăр. Пуринчен малтан çитсе, Тамара аллинчен парне илмелле-çке! Мĕнле каччă çак чысран хăй ирĕкĕпе пăрăнса юлма пултартăр ĕнтĕ?..

Юлашки тăвайккине хăпарса çитсен, çул анаталла каять, вара Çавалкас та инçех мар. Ял айлăмра ларнăран, унта хăвăрт ярăнса анма, Наçтуксен анкăртийĕ çумĕнчи тăкăрлăкпа тӳрех шкул тĕлне тухма пулать. Тăвайккинелле хăпарнă чух Кĕçтук манран иртсе кайрĕ. Манăн хăрах йĕлтĕр кантри татăлчĕ те, эпĕ чылай кая юлтăм. Кĕçтук анаталла вăшт! кăна вĕçтерчĕ. Эпĕ йĕлтĕр кантрине хăвăрт сыпрăм та ун хыççăн ыткăнтăм. Тантăшăм манран çур çухрăм маларах пырать. Акă, ял çырминелле анса, курăнми те пулчĕ. «Юлтăм, пĕрремĕш парне илесси пулмарĕ!» – çиçсе илчĕ пуçăмра кӳренчĕк шухăш... унтан çырма хĕррине çитрĕм те – ак кĕтмен япала! – Кĕçтук юр çинче йăванса выртнине курах кайрăм. Мана каллех чун кĕчĕ, чăннипех савăнса ӳкрĕм.

«Ан хапсăн, Кĕçтук тусăм, пĕрремĕш парнене! Тамара патне чи малтан эпĕ çитетĕп!» – тесе кăшкăрассăм килчĕ манăн. Авă, умрах, шкул та курăнать ĕнтĕ, ун умĕнче çынсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Ачасем

пире курчĕç те алă сулса кăшкăрашма тытăнчĕç....

Акă эпĕ тусăм умĕнчен ыткăнса иртетĕп... Кĕçтук, нимĕн чĕнмесĕр, юр çинче выртса юлчĕ. Эпĕ тем самантра унăн хурлăхлă чакăр куçĕсене асăрхарăм: вĕсенче виçесĕр асап палăрчĕ. «Юлташ инкеке лекнĕ пулас», – килсе кĕчĕ çавăнтах тепĕр шухăш. Вара, Кĕçтукран иртсе кайнăскер, хăвăрт каялла çаврăнса, ун патне пытăм.

– Мĕн пулчĕ, Костя?

– Ура хуçăлчĕ пулмалла, – терĕ тусăм, ахлатса.

Унăн сулахай йĕлтĕрĕ юр айĕнчи тунката çине пырса тăрăннă та çурмаран хуçăлнă. Кĕçтукăн сулахай чĕркуççинчен шăлавар витĕр юн çапса тухнă.

– Тăр, Костя, кайрăмăр!

– Çук, пĕчченех кай эсĕ, Георги... Хыçалтисем хуса çитĕç... Пĕрремĕш парне санăн, – терĕ вăл, куççулĕ витĕр йĕре-кула, анчах салхуллă куçĕсем: «Тĕрĕссипе, пĕрремĕш парнене Тамара аллинчен манăн илмеллеччĕ, эсĕ ăна халĕ ман инкеке пула çеç илетĕн», – тесе каланă пек, ӳпкевлĕн, ăмсануллăн пăхрĕç.

– Ан калаç! Пур пĕрех юр çинче нумай шăнса выртаймăн. Атя, инçе юлмарĕ, анаталла ярăнса анмалла çеç. Кайрисем – инçетре-ха. Атя, тăр, çакăн мăйран...

Эпĕ тусăма йăтса тăратрăм. Вăл, чуна тивмелле сасăпа йынăшса, мана сулахай аллипе мăйран ыталарĕ, сылтăм аллипе йĕлтĕр туйисене тытрĕ, пĕртен-пĕр йĕлтĕрĕ çине хăрах уран тăрса, манпа пĕрле анаталла ярăнса анчĕ... Мĕн каласси пур, йывăр килчĕ мана. Шкул тĕлне çитиччен эпир темиçе те ӳкрĕмĕр, пур пĕр малаллах туртăнтăмăр.

Кĕçтук, хăй хытă асапланнине палăртас мар тесе, шăлне шатăртаттарать, хуллен кăна йынăшса илет, тутине юн тухиччен сыртать, çапах парăнма шутламасть. Çирĕп чунлă, мур! Тантăшăм ача чухнех çемçешке пулман, темле йывăр килсен те, вăл макăрнинеастумастăп эпĕ.

Эпир пуринчен маларах çитрĕмĕр.

Мĕн пулнине ăнланма ĕлкĕреймен çынсем, пире курса, ахăлтатса кулаççĕ. Тамара та кулать... Эпир çитсенех, пире вăл, иксĕмĕре те çĕнтерӳпе саламласа, парнесем тыттарчĕ.

Кĕçтук парне илсенех ыратакан ури çине пусрĕ те, хытă йынăшса ярса, хĕр умне ӳкрĕ.

Тамара каллех, кĕмĕл шăнкăрава урайне ӳкерсе кустарнă пек, шăнкăртатса кулса ячĕ, анчах каччă йынăшнине илтсен, сасартăк кулма чарăнчĕ, сăнран улшăнчĕ, шуралса кайрĕ.

– Костя! Мĕн пулчĕ сана, Костя? – тесе, Кĕçтук умне кукленсе

ларчӗ, вара тинех ун шӑлаварӗ çинчи юна асӑрхарӗ.

Кӗçтука шкула çавӑтса кӗрсе, хывӑнтарса выртартамӑр. Тамара ун урине тытса пӑхрӗ:

– Чӗркуççийӗ шӑйрӑлнӑ кӑна, анчах пакӑлчак шӑмми сикнӗ, ӳт тӑсӑлнӑ, – терӗ.

Шкул технички, темӗн те пӗр чухлакан Кулюк апла, сикнӗ шӑмма çавӑнтах вырӑнне туртса лартрӗ те:

– Ним хӑрамалли те çок. Вон сакӑр çолта-тӑк – шӑп та лӑп вон сакӑр кон выртас пать, – терӗ.

Тамара сурана йодпа шӑлса çыхрӗ. Вӑл Кӗçтук çине мӗнле куçпа пӑхнине, ун суранне мӗнле тыткаланине асӑрхарӑм та... хамӑн ура хуçӑлманшӑн кӳрентӗм.

Кӗçтук, чӑнах та, Кулюк аппа каланӑ пекех, икӗ эрне ытла вырӑнпа выртрӗ. Эпӗ ун патне канмалли кунсенче иккӗ кайса куртӑм. Вӑл, класри ачасенчен юлас мар тесе, килте вӗренет, пӗрехмай вулать. Кӗнекисене ӑна Тамара килсе парать иккен. Кун çинчен вӑл мана кӑшт мухтаннӑ пекрех каларӗ. Эпӗ вара каллех ун телейне ӑмсантӑм...

Çапла хӗл иртрӗ, çуркунне çитрӗ. Шкул ачисемшӗн хӗрӳллӗ вӑхӑт пуçланчӗ. Эпӗ Çавалкаса çӑва тухиччен те каяймарӑм.

VII

Çимӗк! Çак сӑмах халӑх сӑвви-юрринче час-часах тӗл пулать. «Çимӗкрен пахи пур, – теççӗ, – чӑнах пур-ши ӗнтӗ çав?». «Çимӗк килет çичӗ кун, ма çич эрне килмест-ши?» – тесе юрлаççӗ пирӗн енче. «Çимӗк кунӗ миçе-ши? Епле унченех тӳсес?» – теççӗ Силпи çыннисем «Нарспи» поэмӑра... Мӗншӗн ун пекех тунсӑхласа кӗтнӗ-ши ӑна? Мӗн-ха вӑл çимӗк? Пӗррехинче эпӗ çакӑн çинчен куккаран ыйтрӑм та, вӑл мана çапла каласа пачӗ:

– Çимӗк-и? Э-э, ача-ам! Çимӗк – чӑваш чӗлхинчи чи селӗм сӑмахсенчен пӗри. Анчах халӑх сӑвви-юррине уншӑн çеç кӗрсе юлман вӑл. Тахçан авал çимӗк чӑвашсен йӑла уявӗ пулнӑ. Çимӗкре ваттисем вилнисене асӑнса ӗçкӗ-çикӗ туса ирттернӗ, çӑва çине кайса чӳк тунӑ, вилнӗ хурӑнташ-тӑвана парне кӳнӗ... Çапах та çимӗк – чӳк тунипе мар, урӑх енӗпе чаплӑ, унсӑрӑн ӑна юрӑсенче ырӑпа асӑнмӗччӗç. Çимӗк уявӗсенче халӑх пултарулӑхӗ, унӑн ӗмӗртенхи çамрӑклӑхӗ, поэзийӗ хӑйне евӗрлӗ палӑрнӑ. Çимӗк – тӗн-тӗшмӗш уявӗ мар, çуркунне, çамрӑклӑх, савӑнӑç, юрату уявӗ. Çимӗкчен çинçе уявӗ килет. Çинçе тесе çӗр пӗтӗленнӗ вӑхӑта каланӑ, тетчӗАшмарин. Йӑла тӑрӑх, ун чухне çӗре чавма, сухалама, шӑтӑк алтма юраман, хӗрлӗ-кӑвак тӗс тӑхӑнмалла мар, шурӑ çи-пуçпа çеç çӳремелле пулнӑ, хӗрарӑмсене кӗпе-йӗм çума хушман, çамрӑксене выляма-кулма, ташлама чарнӑ: çӗр пӗтӗ, ӑна

пăшăрхантармалла мар, тыр-пул, пахча çимĕç пулмĕ, тенĕ. Çак йăлана пурте çирĕп тытса пынă. Çимĕк çитсен вара, ĕç çине тухиччен, çамрăксем каçсеренвăййа тухнă. Çав вăйăсене уяв тетчĕç. Эпĕ вĕсене хальхи пекех астăватăп. Тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен пулаççĕ вăл уявсем. Пирĕн енче, Çавал пуçĕнче, ăна çулçă уявĕ, çӳлчи, хураçту, пухă, хĕр пасарĕ е ярмăнкка, теççĕ. Çавал вăрри енчисем, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Ĕсмĕл таврашĕсем, сухати, кушар, тапă, хĕрпуххи, теççĕ. Вăл уявсене пĕтĕм таврари ял çамрăкĕ пĕр çĕре пухăнса ирттерет. Эп хамăр ял çамрăкĕсем Çавал пуçĕнчи вар хĕрринче аслă улăхра, пухăнатчĕç... Курасчĕ эсĕ, Якур ачам, çав уява! Пĕтĕм вулăс çамрăкĕ пĕр пысăк ал карти çавăрса тăрать те «вăйă калама» тытăнать!.. Вăйă пуçласа калама таврари чи хӳхем хĕрпе маттур качча хушаççĕ…

Александр Ильич, хавхаланса калаканскер, сасартăк шăпланчĕ, стена çинчи пике сăнĕ çине пăхса, шухăша кайрĕ, салхуланчĕ.

Эпĕ вăлмĕншĕ çапла шăпăртах пулнине ăнлантăм,тӳрех анне каланине аса илтĕм: Çимĕк уявĕнче ялан Сантăркуккапа унăн савнийĕ Эрнепи вăйă пуçласа паратчĕç. Сантăр кукка кĕсле калатчĕ, Эрнепи юрлатчĕ, тет.Мĕн тăвăн, телей пулман çав мăнтарăнсен… Эрнепи пуян урçа патĕнче нумаях та асапланса пурăнайман, ӳпке шыççипе чирлесе вилнĕ... Халь ĕнтĕ унăн хĕресĕ теçĕрсе ӳкнĕ, тăпри ăçтине те никам та пĕлмест пулас. Халăхра телейсĕр хĕрĕн ячĕ юлнă, Сантăр кукка пӳртĕнче унăн сăнĕ упранать, Александр Ильич ăна хăех ӳкернĕ. «Каснă-лартнă çав, чĕрĕ пекех ларать», – тет анне ун пирки.

Эрнепи, çаврака питлĕ, çӳхе туталлă, чакăр куçлă хĕр, пуçне тӳп-тӳрĕ тытса, кулмасăр пăхса ларать. Вăл шурă тутăрпа, шурă кĕпепе; йăла тăрăх, кĕпин сулахай какăрĕ çинче çеç капăр тĕрĕ, хĕве хупман хĕр тĕрри. Тĕлĕнхелле чипер вăл, санăн шухăш-туйăмна витĕр курса тăнă пек, куçăнтан тинкерсе пăхать. Хам ачарах чухне эпĕ ăна Нарспи пуль теттĕм, халĕ вăл мана хăш-пĕр чухне Тамара пекрех те туйăнса каять. Тен, эпĕ ăна ытла чипертен Тамарăпа танлаштаратăп пулĕ. Кашни юратакан çынах хăйĕн савнине пуринчен чипертерех тесе шутлать.

– Пĕтĕм улăхĕ-вăрманĕ янăраса кăна тăратчĕ, юрă кăна юрламастпăр пуль! Селĕмччĕ! – Александр Ильич каллех пĕр вăхăт шухăшакайса ларчĕ, ассăн сывласа илчĕ, вара, артист пĕр-пĕр монолог вуланă евĕр, витĕмлĕ сасăпа калама пуçларĕ:

– Мĕнех вара оперăсем, мĕнех вара романссем?! Çак ĕмĕр-ĕмĕр çамрăк çуркуннепе чи çепĕç тунсăхăн ырă илемне туйса илме пулăшаяççĕ-и вĕсем? Çак халăх юррине, икĕ пин çул хушши темĕн те пĕр тӳссе курнă, çапах та хăйĕн ĕмĕртенхи культурине çухатман халăх юррине, çитееççĕ-и вĕсем? Çакнашкал юрра ним çукран шухăшласа

кăларма пулать-им?..

Александр Ильич хăй ăссĕнех кăмăллăн йăлкăшса кулчĕ те, кăвакарнă сухăлне шăлкаласа, хушса хучĕ:

– Кăна, чăваш юррисем пирки, эпĕ мар, вырăс писателĕ Гарин-Михайловский каланă. Чăваш пурнăçне, йăли-пăлине лайăх пĕлнĕ вăл... Вырăссен нумай аслă çыннисем пирĕн юрăсем пирки ырă сăмах каласа хăварнă... Юрăран тесен, пуян вара пирĕн халăх! Селĕм!

Сăмах майăн эпĕ Иван Яковлевич Яковлев çак таврари уяв юррисене юратса итлени çинчен ыйтсан, кукка пушшех хавхаланчĕ.

– Э-э, Йăван Яккăльч-и? – терĕ, куçĕсемпе кăна кулкаласа. – Йăван Яккăльч пулкаланă кунта. Чĕмпĕртен ку енчи шкулсене тĕрĕслеме килсе çӳренĕ. Халăхра икĕ тĕрлĕ халап çӳрет ун пирки... Пĕрре, шăпах çимĕк эрнинче, каччăсемпе хĕрсем укăлчара, вăйă карти çавăрса, юрă юрланă. Сасартăк вĕсен умне пар лашаллă кӳмĕпе чаплă улпут килнĕ тухнă. Çамрăксем хăраса ӳкнĕ, вăйă карти чăл-пар саланнă. «Мĕнтен хăрарăр, ма манран таратăр? Эпĕ те сирĕн пек çынах, чăвашах-çке?» – тенĕ вара улпут. Чăвашлах чип-чипер каланă. Çавалкас çамрăкĕсем тĕлĕнсе хытнă: вĕсем çак мăн сухаллă, ылтăн пакунлă генерала, патша пекскерне, ниепле те чăваш тесе шутлама хăяйман. Анчах улпут вĕсене ăшшăн калаçса ӳкĕте кĕртнĕ, каллех юрлама ыйтнă. Çамрăксем юрласа ярсан вара, урапи çинчен аннă та тĕпекӳлнĕ лаши умне пырса, пĕкĕ çумне тайăнса, пуçне усса итленĕ... Хĕрсен хурлăхлă юррине итлесе, питне шурă тутăрпа хупласа макăрнă çав генерал... Каяс умĕн вара: «Çакнашкал чаплă юрăсем хăйлакан халăх – чăннипех пысăк чунлă халăх, анчах вăл тĕттĕмре пурăнать, ăна çутта кăлармалла», – тенĕ пулать. Тепĕр халапĕ тăрăх, Йăван Якальч пирĕн енче хăй çамрăк чух, çĕр виçсе çӳренĕ май пулнă, çамрăксен юррисене вăрттăн итлесе тăрса макăрнă, вара чăвашсене çутта кăларма, ялсенче шкулсем уçма тупа тунă пулать... Йăван Яхăльч пирĕн ялта чăнах та пулнă, пирĕн енчи юрăсене те итлеме пултарнă, анчах халь каланă халапсене нумай çĕрте илтнĕ эпĕ, кашни ялтах: ку ĕç пирĕн енче пулнă теççĕ. Ку вăл халăх хăйĕн юррисене юратнăран та, чăвашсене çутта кăларасшăн тăрăшнă çынна хисепленĕрен те килет пулĕ... Юррисем чăнах та селĕм пирĕн, Федор Павлов ытла та юрататчĕ вĕсене...

Кукка каланисем мана хамăр енĕмĕре пушшех юратма, халăх юррисене тата ытларах, тимлĕрех пухма хистеççĕ.

1963.

Хветĕр Акивер

ҪАПСА ҪУМĂР ҪĂВАТЬ

Калав

Хаклă çыннăма –
Валя Константинована

Çумăр çапса çăвать, сиввĕн, ăшчике витермелле. Вĕтĕ тумламсем вăхăтăн-вăхăтăн кабина кĕленчине пăчăр-пăчăр хупласа хураççĕ – касмăкран чӳшкĕнтернĕ пек чӳшкĕнтерет, «шăпăрсем» ӳркенменни çеç шофера çăлăнăç, унсăрăн машинине çул хĕрне тăратсах çумăр тамаласса кĕтме тивĕччĕ унăн. Çумăр тамаласса вара – аса та ан ил: шавкăнтарать те шавкăнтарать.

Тарас газикне ахаль те асăрхануллăн тытса пырать, çул çинче ункун сиксе тухасран умри çутă лаптăкне тиккерет. Çав лаптăкра вĕçĕмех пĕр ӳкерчĕк: çумăр хӳхлевĕ, тумлам ăсран каясла çатăлтатни.

Декабрь çурри çитнĕ тесе те калаймăн: лапра-çĕпре. Çак лапра-çĕпрере темĕн ырă марри упаленет пек. Ăна тытса чарма та, тĕксе яма та хал çитмессĕн туйăнать. Пĕтĕм таврана хупăрласа илнĕ вăл, тĕм-хура витĕнкĕçпе пĕркенĕ. Тарас кăмăлĕ те сулхăн, ăшăнчăксăр. Унăн кăмалĕ ĕнтĕ паян кăна мар, чылайранпах, арăмĕ пăрахса тухса кайнăранпах çапла.

Тухса каясса унăн Лидийĕ хайсем пĕрлешсен иккĕмĕш çулнех пирвайхи хут парахса тухса кайначчĕ, амăшĕ патне, Украинана.

«Тарас, ан та пырса çӳре, эпир пурпĕрех пĕрле пурăнаяс çук». Тарас вара пурпĕрех пырса çӳрерĕ, пĕрле пурăнма ӳкĕтлерĕ, çемьене аркатма кирлĕ маррине ĕнентерчĕ, ӳлĕм пурте йĕркеллĕ пуласса шантарчĕ.

Тепĕр çултан вĕсен Вадим çут тĕнчене килчĕ. Тарас çĕнĕ кайăкшăн каççах кайрĕ, пĕлĕт çинчен сикменни çеç, вĕçĕм ачипе, кăнтăр апатне сехетлĕхе килсен те ун койки умĕнчен хăпма пĕлместчĕ.

Пĕрлешнĕ чух çын патне вырнаçнăскерсен, çĕнĕрен хваттер шырамалла килсе тухрĕ: ача сассине юратмасть иккен хуçа арăмĕ – ĕлĕк те йăлăхнă имĕш. Тарас вара хваттер шыраса-туса тăмарĕ, кăшт-кашт пуçтаркаланă укçипе «засыпушка» туянса ячĕ. Çурчĕ пысăкки пысăках мар ĕнтĕ – кĕрсе тухмалăх çеç, пурпĕрех çын патĕнче мар, ир каятăн-и, каç килетĕн-и – хăвăн кĕтес. Çав паха. Ĕçĕнчен тахçан парасси пур-ха, черет тахçан çитет. Тарас пысăк вырăнти çын мар, пĕр кантурти ахаль шофер çеç, хăйĕн пеккисем те унта вуннăн, пĕрин те путлĕ хваттер çук, пурте çамрăксем, такама такам вырăнне хурса такама малтан тыттармалла-ха хваттерне. Чăн та, хваттер тĕлĕшĕпе ку кантурта питĕ тăкаскă вара – çӳллен хăрах çемье валли те тивĕçĕнмест. Темме. Ертсе пыракансем хăйсем хваттерсĕр мар та, çыншăн пит çăвар

уҫсах каймаҫҫĕ. Ҫавăншăн пуль. Ку – тарам-ха. Ĕҫлесен-ĕҫлесен, черечĕ ĕлкĕрсен, Тараса та унсăрăнах тăратса хăвармĕҫ, ҫавăнпа та вăл ыттисем пек шит хыпăнсах та çӳремест, пурнăҫăн паянхи саманчĕпе ăшăнса пурăнать. Пӳрни – шăл çĕмĕрсе кĕрет, пӳрменнине шăналăк карса та тытаймăн.

Хальтăран шăкал-шăкал, çăвартан çăвара çеҫ пурăнмаллаччĕ ĕнтĕ – çук çав, çемье тирĕк–кашăкĕ пурпĕрех шăкăртатрĕ. Çын патĕнче пурăннă чух çын патĕнче темеллеччĕ, халĕ, кирек мĕн калăр та, хăйсен йăви, хăйсен кăмăлне кура кил-тĕрĕш темелле. Лиди хирĕлет, чипер тăнă çĕртех тем пулать ăна – катарса каять, сăлтавĕ пур теесрен – Тарасĕ те савапа якатса тунă пекех: хирĕҫ мăк та, мак та хускатмасть. Тем çитмест хĕрарăмне?.. Вĕҫĕм çĕтĕлет: ку çук та, вăл çук, ăна илсе пар та, кăна илсе пар, Тарасĕ пысăк шалуллă çын тет-ши?

Пĕрлешессе вĕсем чиперех пĕрлешрĕҫ-ха, пĕрне-пĕри килĕштерсех. Тарасăн çартан таврăнасси те тепĕр çур çулсем кăна юлнăччĕ, ҫавăн чухне вăл, пĕррехинче, увольнение тухсан, хулари пĕр хĕрпе паллашрĕ те ăна кăмăлласа пăрахрĕ. Кайран вара, служба вăхăчĕ иртсен, Лидине чăваш çĕрне илсе килчĕ. Малтан вĕсем ялта пурăнкаласа пăхрĕҫ, унтан – хулара, Шупашкарта. Темĕн çав, пурнăҫ пĕр ăнмасан ăнмастех пулĕ çав, веҫĕм уксахлать. Акă, вĕсен хăйсен кĕтесĕ те пулчĕ темелле – пурăн та пурăн, пĕр пус çумне çур пус хушса, çапах тем çитмерĕ Лидине. Вадимĕ икке пуссан, каллех ашшĕ-амашĕ патне ăсанчĕ. «Хăлхам ан илттĕр те, куçăм ан куртăр, ӳлĕм таврăнассăм пур – тапранассăм та çук», – тесех тухса кайрĕ. Ку хутĕнче – икĕ çул çурăсем иртсе кайрĕ. Вăхăт хăй еккипех чупрĕ. Тарас сисĕнмеллех чĕмсĕрленчĕ, сăмаха сайра ваклакан пулчĕ. Унăн чĕрине пĕрмаях темĕн вĕчĕрхентерсе тăчĕ.

«...Кам пурăнма пĕлет-ши ăна пурнăҫа, кам? Камран кайса ăс ыйтмалла-ши? Мĕншĕн пурнăҫĕ çапла-ха – пурăнас-пурăнас тенĕ çĕртенех аяккалла пăрăнса кĕрсе каять, – шухашларĕ Тарас, ăнăҫсăрлăхăн тупсăмне тупасшăн тăрăшса. – Тахăшĕ айăплă – те хам, те арăм? Эп Ладăна ӳпкелетĕп, чипер пурăнма пĕлменшĕн, çемье телейне упрама вăй çитерейменшĕн. Çемье çемьех ĕнтĕ вăл – тирĕк-кашăк шакăртатасси пулатех, икĕ тĕрлĕ çын пĕр тĕвве пĕрлешеҫҫĕ-çке-ха, уяс пулать пĕр-пĕрин кăмăлне. Эпир, ак, уяймарăмăр. Лида шучĕпе, çемьери пĕтĕм кĕрĕс-мерĕс те манран кăна килет иккен, укҫа çителĕклĕ мар – эпĕ айăплă, çынсен хĕрарамĕсенни пек йĕркеллĕ çипуç илсе параймастăп – эп айăплă, газлă, ванналла хӳхĕм хваттерте усраймастăп – каллех эп айăплă. Пĕрех хут, васкамалла марччĕ манăн авланма,

васкамалла марччĕ. Хамăнах тăрри шăтăкрах та çав... Тепĕр тесен, халь тин апла-капла шухăшлама кая юлнă ĕнтĕ, ача пур...

Краçук!.. Мĕншĕн эсĕ те пулин кăшт çирĕпрех пулмарăн-ши! Ма хăвна кăшт та пулин упрамарăн-ши? Юрĕ, вăрласа кайнă тейĕпĕр, ирĕксĕр арăм тунă тейĕпĕр. Вара мĕнех? Унпа кăна тĕнче хупланмастчĕ вĕт-ха? Эпĕ пурччĕ. Шанмарăн, ĕненмерĕн пулмалла çав эсĕ мана. Капла пулса тухнă хыççăн илмĕ терĕн-ши? Пĕтнĕ пурнаç пĕттĕрех, çыннине кура çапла пӳрнĕ, терĕн пулĕ... Пӳрни вăл апла та, капла та килет-ха – хăв кăмăлна кура. Пăрахса каймаллаччĕ, çирĕпрех пулмаллаччĕ, Краçук! Пурнăç иккĕленчĕк çынсене каçармасть иккен, каçармасть. Телейĕмĕр патне çил çурса ыткăнман çав эпир, ыткăнман. Телейĕмĕр хăй тĕллĕнех алăк уçса кĕрессе ĕненнĕ-ши? Айвансем! Халь тин мĕн тăвăн, ман – хамăн пурнăç, сан – хăвăн. Çук, ман хамăн та кĕрĕшмелеччĕ телейĕмĕршĕн, çапла васкаса авланса лартмаллаччĕ-и? Кама тавăртăм, хама-и? Хамăр телейĕмĕре! Эсĕ те, эпĕ те пурнăç инкекĕ умĕнче нишлĕ пултăмăр. Пĕри те пирĕнтен туйăм лавне тапса туртма хăват çитереймерĕ...»

Икĕ çул çурăсем иртсе кайрĕ, Лидин çав-çавах таврăнас сас-хури пулмарĕ-ха. Тарас асапланчĕ, çунчĕ. Эх, çав çын сăмаххи! Кунашкал пулса тухнăшăн та усал чĕлхесем Тараснех айăпларĕç: «Ыр арçынран мĕнле хĕрарăм тухса тартăр!» – терĕç. Хальхаççăн хваттерне те илмеллеччĕ пек, хăйсемпе пĕрле тăххăрмĕш çул ĕçлекен пĕр шоферăн икĕ пӳлĕмлине куçма черечĕ çитрĕ (вăл икĕ ачипе пĕрреллинче пурăннă), анчах та Тараса мар, урăххине тыттарчĕç çав пулĕме. Тĕрĕссипе, ăнах памаллаччĕ те – ачи хăй темлескер, çемйипе йĕркеллĕ пурăнма пĕлмест, терĕç.

Чылай шухăш авăртрĕ Тарас, пурнăçне урлă та, пирлĕ те виçсе пăхрĕ, çынсен шайĕпе картрĕ – вара Украинăна, арăмĕ патне ларса тухса кайрĕ. Çавăн хыççăн вĕсем тата çулталăк çурра яхăн пĕрле пурăнчĕç. Çемье тирĕк-кашăкĕ çав-çавах шакăртатма пăрахмарĕ. Хальхинче вăл хытăрах, кӳршĕсен хăлхине кĕмеллех шакăртатрĕ. Мĕншĕн? Темшĕн... Эх, çав çын ăшĕнчи «темшĕне» пĕлме пӳрсессĕн – çĕр çинчи кашни этем юрласа-ташласа çеç ирттерĕччĕ те ĕмĕрне, ăш çунни-мĕнне ăнкармĕччĕ, пурнăçĕ – уяр кунри çанталăк пек çиçсе тăрĕччĕ. Анчах «темшĕне» пĕлейменниех пĕтерет.

Пурнăç пĕр ăнмасан ăнмастех çав, вĕçĕм уксахлать. Тарас хăй те сиссе юлаймарĕ, мамăк тӳшек çине çывăрма выртнă çын ир енне çара çĕрте вăранса кайнă пекех пĕччен тăрс юлчĕ. Лиди Вадимне яла, хунямăшĕ патне, леçмелле каятăп тесе тухса кайрĕ те каялла

Шупашкара килсе-курăнса та тăмарĕ – унтанах Украинăна тухса вĕçтернĕ. Ку хутĕнче вăл çырăвне вăрăмрах çырнă:

«Тарас, çакăнпа – пăнчă. Çапла, ан чĕн, эп айван пулам. Анчах эс хăвна пĕл-ха! Мĕскер, манăн кунĕн-çĕрĕн, вĕçĕмсĕр хирĕлес килет тетĕн-им? Çилле шăнараймасăр хирĕлетĕп эпĕ, сан имшерлĕхне чăтаймасăр, ăнлан! Манăн санра вăйлă, вутлă çумăр çусан – вутлă çумăр витĕр те пуç çĕмĕрсе ыткăнакан кĕрнеклĕ арçынна курас килет. Тата çав çын хăй хĕрарăмне темĕнле асар-писер йывăрлăх умĕнче те хÿтте илме пултартăрччĕ. А эсĕ?.. Санăн тепĕр çынна хÿтте илме мар, хăвна ху хÿтте илме те хевтÿ кăйттă... Шăши Элекçей пек этем эс, хăвăр ялти çум çакки этем пекскер. Çил çинчи çерçи. Тунмастăп, туртăнатăп эпĕ сан патна, анчах та пĕрле пĕр тăрă айĕнче пурăннă чухне мар, санран аякра, инçетре-инçетре чухне. Пĕрле чухне, сассуна илтсенех, мана çĕтĕлтерме пуçлать, ăшра тем капланса хăпарать, санăн тимсĕрлĕхÿпе хăюсăрлăхна ватас-çĕмĕрес килет. Темшĕн? Хам та пĕлместĕп. Пур вĕт-ха таçта ирĕк, пите çил çинче тытса утмалли тĕнче?!

Тарас, хуть çурăл, хуть те тем ту – урăх таврăнмастăп, пырса йăлăнсан та. Шыраса пăхатăп-ха çав ирĕк, пите çил çинче тытса утмалли тĕнчене; тупаймасан, тен, таврăнăп та. Ан шыра, саншăн тунсăхласа çитсен, хамах пĕлтерĕп. Çынсем, ав, уйăх çине вĕçеççĕ, поляр ункинче çÿреççĕ, Антарктидăна çăварлăхлаççĕ. Эпир мĕн?..

Вадим халлĕхе асламăшĕ патĕнче ялтах пурăнтăр-ха. Пĕлетĕп, унта ăна япăхах пулмĕ...»

...Çулăн икĕ айккипе вăрман евĕр çĕкленнĕ йывăç ĕречĕсем сивлеккĕн кашласа лараççĕ. Вĕсен çара вуллисем хушшинче йăрă çумăр йăшăлтатать. Калăн: хăйне çĕр каçма ăшă хÿтлĕх шырать, тейĕн. Асфальт çинче те чарăнми çумăр – типпе кăларса пăрахнă çăрттан хÿри пек çатăлтатать. Кÿлешет. Анчах та унăн вăйĕ паçăрхи мар ĕнтĕ, тумламсем ырханланнă, хухнă.

Кабинăра ăшă – кăмака ĕçлет. Апла пулин те, фуфайка витĕрех сулахай аякне сулхăн çапнине туйрĕ пулас Тарас. «Хăçан «тихам» валли çĕнĕ «аçам» илсе парĕç – сивĕ перет те перет». Канашран иртсен, вăл газикне çул хĕррине тăратрĕ, тухса пирус чĕртсе ячĕ. Тĕтĕм хĕлхемĕ çăвар маччине ыррăн ăшăтса илсенех, Тарасăн пĕтĕм кăмăлĕ çемçелсе, канăçланса кайрĕ, ăшĕ вăркани те иксĕлчĕ.

Кĕрхи тĕттĕм каç йĕпе хирпе лапăстатса чупать. Хĕл кая юлса ларнă çулсенче те ку вăхăта ялан тенĕ пекех юр хăйне кăтартаканччĕ. Кăçал тем амакĕ пулнă çанталăка – декабрь çурри çитрĕ ĕнтĕ, çаплах хĕлĕх ала кĕрпи евĕр вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Лайăххи алланса пĕтнĕ ĕнтĕ, сăсăлĕ çеç юлнă, çавăнпа. Пĕрех хут – шăнтса лартинччĕ. Шăнтасси те

асӗнче çук. Юрӗ, вăл, вăхăчӗ ӗлкӗрсен, сехечӗ çапсан, тенӗшкел, хăйне кӗттерсех тăмӗ-ха, тунсăх çӗре шурă пир тăрăхӗсемпе сийӗн-сийӗн вите-вите хурӗ. Çапах та хӗл кая юлчӗ кăçал, тивӗçсӗр кая юлчӗ. Поэт калашле: «Çил тунсăхлать, кӗтсе шап-шур хӗле...»

Акă, пӗр тулли грузовик хула еннелле лӳпперрӗн кӗрлесе иртсе кайрӗ. Таçта лере, айлăмăн тепӗр енче, сăрт çинче, каллех тепӗр машинан вăйсăр çути çывхарса килни палăрать. Аякка хыпаламалли çути чăхăмлă-ши? Çул шăп. Çур çӗр тӗлӗсем пулма кирлӗ (сехечӗ кая юла пуçланипе Тарас ăна юсама леççе панă). Ку ЗИЛ-130 пулчӗ, паçăрхи ГАЗ-151 кивӗскерччӗ, халтăртаттарса пыратчӗ, ку – вӗр-çӗнӗскер, Тарас тӗлӗпе чăшт çеç иртсе кайрӗ. Çумăр шӗпӗртетрӗ те шӗпӗртетрӗ. Тарас çунса пӗте пуçланă пирусне ик-виçӗ хутчен техӗмлӗн ӗмсе илчӗ те сурса пăрахрӗ, ларкăч çине тӗплӗн вырнаçса ларса, моторне чӗртрӗ, васкамасăр тапранса кайрӗ.

«...Вадим халлӗхе асламăшӗпе ялтах пурăнтăр-ха. Пӗлетӗп, унта ăна япăхах пулмӗ...» – аса илчӗ Тарас арамӗн сăмахӗсене каллех. – Пӗр шутласан, хамах айăплă та-ха – арăм тенине ирӗке янă. Чӗлпӗрне кăшт хытăрах тытсан та татăлса каяссăнах туйăнмастчӗ. Йăхра çук намăса кăтартрӗ, икӗ хут кайса çырлахтарса та çырлахмарӗ, асламăшӗ тертленет. Путлӗ ялала-и ку? Эпӗ те паян кун çӗр хута сӗтӗрӗнсе çӳреместӗм. Эх, çав Лидана, утне çитмен туртине, чăпăркаччӗ те! Ав, Вадимӗпе тем сиксе тухнă-ха тата, «Тарас, ачу аптраса ӳкрӗ, çийӗнчех кил», тенӗ телеграммăра. Те виçӗмкунах çитсе выртнă-ха телеграмма ялтан, хам командировкăна тухса кайнă тӗле. Темрен тем сиксе ан тухтăрах. Те час иртсе каяканни ӗнтӗ чирӗ? Ăна пӗлнӗ пулсан, паçăрах машинăна кил еннелле çавăрмаллаччӗ, пустуй Шупашкара кайса курса çӳрерӗм. Тăвай районӗнчен Канаш урлă тӳрех кунталла çапмаллаччӗ. Кам шутланă-ха ăна? Ăçта ӳкессине пӗлсен, тӳшек сарса хунă пулăттăм.

Çӗрле никамран ыйтмасăр çапкаланса çӳренӗшӗн ӗçре вирлӗ пӗçеркке параççӗ акă, кӗтсех тăр. Ху машину мар – патшалăхăн. Ыран тата, акă, каллех района командировкăна каймалла пулнă пулсан? Вăл-ку тарамччӗ-ха, Вадимӗ тӗрӗс-тӗкелех, сывах çӳресен. Эх, анне нихăçан та çапла телеграмма çаптарсах пӗлтерекен марччӗ, чӗре сисет – темӗскер сиксе тухнах ялта, темскер сиксе тухнах...»

Тарасăн самаях лаш пулнă кăмăлӗ çӗнӗрен вӗчӗрхене, кăмăскалана пуçларӗ. Газ хушрӗ – машина хăвăртрах чупма тытăнчӗ. Вăрахран Тарас шухăшӗ амăшӗ çине ӳкрӗ.

«...Анне... Мӗн ыррине кăтартрăм-ши ӗнтӗ эпӗ сана... Сакăр уйăхри ачупа (манпа) упăшкунтан тăрса юлтăн. Атте вăрçă хирӗнчен

таврăнаймарĕ. Çамрăк пуçпа юратнă çынсăр тăрса юлса ача пăхса ӳстересси çăмăлах пулман ĕнтĕ. Мĕн каласси! Çĕрлесерен сахал йĕпетнĕ–и санăн хурлăхлă куççулӳ вĕри минтере... Яш чух яшлăхшăн та тунсăхланă пулĕ, ĕмĕр иккĕ килмест-çке, иртсе каять – чатăр карса та чараймăн. Пурпĕрех чăтнă, чун вутне шалта упраса, çынна кăтартмасăр чăтнă, ывăлĕ ӳссе çын пуласса ĕненнĕ, çав пепкешĕн пурăннă. Астăватăп-ха, уйăхлăха колхоза пулăшма полуторкăпа килнĕ шофер пирĕн пата хваттере чарăннăччĕ те каяс умĕн аннене качча тухма ураран ӳксех тилмĕрчĕ. Ман умрах калаçрĕç. Арçынни темле те ӳкĕтлесе пăхрĕ: сăмаха татса каласан, паян тесен паян хулара пурнăç пуçласа яма, анне килĕшсен, кунтах, ялтах, юлма пулчĕ. «Ачи те хамăрăнах пулĕ, ĕмĕр сив сăмах каламăттăм, ĕнен – чĕре варне кĕрсе вырнаçрăн. Эпĕ те санашкалах тăлăх, арăм икĕ çулхи ачипе эвакуаци вăхăтĕнче нимĕç бомби айне пулса вилчĕ. Пирĕн иксĕмĕрĕн пĕр шăпа, Униççе», – терĕ вăл, тилмĕрсе. Этемми ку, чăваш хушшинче пурăнса, чăвашла калаçма вĕренкелесе çитнĕ вырăсчĕ. Вăл мĕн калани чиперех хăлхана кĕрсе пычĕ. Эпĕ ун чухне улттăраччĕ ĕнтĕ. Темех ăнланнă пуль, пурпĕрех хирĕç те, майлă та чĕнмерĕм, хушша-хуппа кĕме эп пысăк çын мар, хăйсем татăлччăр, терĕм. Çынни мана хама та килĕшетчĕ, шутсăр манпа выляма юрататчĕ вăл, тата машинăпа лартса çӳретчĕ. Темле ӳкĕтлесен те, анне унпа килĕшмерĕ. «Капла ӳппĕн-тĕппĕнех хăтланар мар-ха, – терĕ вăл шухăшлăн. – Эсĕ те, эпĕ те пурнăç тути-масине курман çынсемех мар, çитменнине эпир пĕр-пĕрне те питĕ сахал пĕлетпĕр-ха, васкар мар, ӳлĕм курăнĕ. Санăн та шухăшу тĕрлĕ кунра тĕрлĕ пулĕ... Тарас ӳссен мĕн калĕ, тапратар мар ку сăмаха урăх». Темех каланă пулăттăм ĕнтĕ. Ӳссен те сив сăмах каласа кӳрентермен пулăттăм. Кайран виç-тăватă çул хушши те тăтăшах килсе çӳрерĕ çав çын, анчах та вĕсем ĕлĕкхи сăмахне урăх тапратмарĕç курăнать. Анне тапраттармарĕ.

Пурнăçна маншăнах пурăнса ирттеретĕн, аннем... Çавах ырлăхра усраса кăтартаймарăм-ха сана, аннем, аннеçĕм... Ывăлу ăнмарĕ. Ывăл ăнмасан, килти выльăх-чĕрлĕх те ăнмасть, теççĕ ваттисем.

Чăнах та çапла пулчĕ çав. Ĕне таврашĕ иленмерĕ пирĕн картишне, илнĕ-пĕри ӳксе-вилсе пычĕ. Качака чунĕ туянса ячĕ вара анне, сĕт шăршине активмелĕх тесе. Качаки те темĕскерли лекрĕ: çиме упшар пек çиет – сĕтне курмалăх та антармасть. Виçĕ сурăхĕ пур тата аннен, виççĕшĕ те пăранламанскерсем. Виç çул каялла ăнсăртран пĕри хăрах путек туса пачĕ, вăл та пулин суккăр çуралчĕ, çитменнине – така. Йăх тăсăмĕ вырăнне пулмарĕ – раштав сивви тĕлне хурана лекрĕ. Хурĕсем, калама та кирлĕ мар, такам хурĕсене хывнă, питĕ вĕçкĕн, çĕвĕн-хĕлĕн

кил тĕлне пĕлмесĕр янккаса çÿреççĕ. Таçта мур шăтăкне тăваççĕ çăмартисене, астуса та çитермелли çук, чĕп кăларсан та таçта çухатса пĕтереççĕ чĕпписене, кĕр çитнĕ çĕре вуннă-вуниккĕрен пĕрре-иккĕ çеç тăрса юлать, активсе пăхмалăх. Ыттисем е йыт çăварне лекеççĕ, е çын хурĕсене иленеççĕ. Хăнăхнă ĕнтĕ анне вĕсен хăтланкаларăшĕсене, çавăнпа пит хыпăнсах та ÿкмест – телейĕмĕр çапла пулĕ, тет. Чăххисем вара аннешĕн чăн-чăн савăнăç, пĕринчен тепри кĕре, кăркка пек – картиш илемĕ. Пусма ларасса та вăхăтра пусма лараççĕ, чĕпписене те çу каçипех куçран вĕçертмесĕр пăхаççĕ, вĕçĕм кил тĕлне пĕлеççĕ, анне вĕсене нихçан шыраса хăшкăлман ăннă, ăнмаллипех ăннă. Сивĕсем çитсен, пÿрт тулли пăслантарать вара чăх ăшне анне... Анне... Кĕххĕм... Кĕххĕм...

Ÿсĕрес килмен çĕртенех пырне тасатмалла ÿсĕркелесе илчĕ Тарас. Тепĕр икĕ айлăм урлă каçсан, асфальтлă çул пĕтет, тăпра çул пуçланса каять – çав тĕлтен вĕсен ялне çитме тата сакăр çухрăм юлать. Тепĕр пирус чĕртсе ячĕ Тарас. Хальхинче унăн шухăшĕ Шăши Элекçейĕ çине ÿкрĕ.

«...Пăх-ха, ăçтан килсе лекрĕ ара ку çын ман аса? Пулин, этемми путишскер, çавăнпа килсе тухрĕ-ши? Миçесенче пырать-ши ĕнтĕ вăл? Темиçесенче. Эп астăвассах пĕр хĕрĕх çулсенче пек курăнатчĕ те, халĕ те ним чухлĕ те улшăнман, çав тĕспех тăрать. Ял çинче Шăши Элекçейĕ çерçи пек пурăнать, – кирек те кам патне кĕрсе кай – такам та апат лартать ăна. Хăй те вăл чĕнессе-хистессе кĕтсе тăмасть – кил хуçисене сывлăх сунать те сĕтел хушшине йăпăрт çеç кĕрсе ларатъ. Намăссăр тес ăна, намассăр мар вăл – çынни çавнашкал, катăкрахскер. Никам та çилленмест Шăши Элакçейне çапла хăтланнăшăн – хăнăхнă! Апат тĕлне пулаймасан, Элекçей вара хĕвĕнчен çăкăр чĕлли кăларать те (вăл нихăçанта çăкăр чĕллисĕр çÿремест) ăна чапкаса çиме пуçлать, «сирĕн тăварăр ăçтарах ара», тет. Кил хуçи, çакна асăрхаманçи пулса, апат лартмасан, Элекçей ним сăмахсăр ларнă çĕртен тăрать те урамалла танкăлтататъ. Çенĕк алăкĕн халăпне ярса тытиччен каялла кĕрет, кил хуçине ал тытса тав туса хăварать. «Алă пама мансах кайнă». Ытти чух алă тытмасть вăл – йăли çапла. Утать вара Шăши Элекçейĕ урам тăрăх йăкăртатса, шăши пек, кам патне пăрăнмаллине тĕсесе. Пĕвĕ унăн лутра, виçĕ пăтлă сĕлĕ миххинчен кăшт çеç çÿллĕрех. Икĕ куçĕ шуралса тăрать, те шур илнĕ, те хăйсем çапла. Элекçее сĕм-суккăр теççĕ, икĕ куçĕ те курмасть, теççĕ, кам пĕлет, çав пĕлет пулĕ, эпĕ шантарсах калаймастăп, мĕншĕн тесен вăл тепĕр куçлинчен те ирттерет – çип çапнă пек тÿп-тÿрĕ утать, никам калитки енне те йăнăшпа пăрăнмасть,

кĕрсенех ятран сывлăх сунать: «Хветле кума, çӳреççĕ-и?». Уншăн пурте – кум та, хăта та, тăхлач та.

Яланах пĕр тумпа çӳрет Элекçей. Уринче унăн кĕске кăçатă евĕр çăм калуш, тĕпне кĕле çаптарса, хĕррисене сăран сăртарнăскер. Пуçĕнче – хăрах хăлхаллă сарă çĕлĕк, сулахай хăлхи çук. Çавăнпа вăл çĕлĕкне сулахай енне чалăштарса лартса çӳрет – ик хăлхи те тан хӳтĕре пулччăр! Çĕлĕкне Элекçей шăши тирĕнчен хăйех çĕленĕ пулать (çавăнтанах ячĕ те – Шăши Элекçейĕ), капкăн лартса çĕлĕклĕх пуçтарнă имĕш. Те чăн, те суя ку – халăх çăварĕ çапла евитлет. Çийĕнче – хĕрарăм кĕски манерлĕ пиншак, хĕррисем хăпарса тăраççĕ. Хăй ни çĕнĕ, ни кивĕ – ĕмĕрлĕх пусмаран çĕлетнĕ тейĕн.

Ăçтан пирĕн яла килсе лекнĕ вăл, хăш вăхăтра? Ашшĕ-амăшĕ кам пулнă унăн, кам ачи? Çакна никамах та татса калаймасть. Пĕрисем ăна – хăрăм пекех хура пулнăран, чикан ачи, теççĕ, теприсем – чăвашах теççĕ (чăвашлах калаçать вĕт-ха!) – вĕлтрен кайăк. Тахăшĕ тĕрĕс, апла-и, капла-и, хăй пирки вара Элекçей çапла калать: «Шаккур йăхĕ», – тет. Пирĕн тăрăхра авал таврана ят сарнă çав ятлă лаша вăрри пулнă, теççĕ. Хам пĕлейместĕп, çынсем каланине çеç калатăп. Элекçейĕ хăй çыннăнне тĕкĕнме мар, ĕмĕрне никама сив сăмах каласа курман. Пурăнасса та вăл, каларăм ĕнтĕ, ял çинчи çерçи пек, ял хывахĕпе тăранса пурăнать. Килĕнче ун кăмаки те çук, такама пĕрне мăрье тăрлама шутсăрах кирпĕч кирлĕ пулнă та, – ку турткалашса тăман, хăйĕн кăмакине сӳтсе парсах янă – ăшăнăр, мана та ан манăр. Пӳрчĕн чӳречи те пĕрре çеç. Вăл та пулин кăсăя куçĕ пек кăна, хĕвел хĕртсе пăхнă чух та пĕр хĕлхем çутта шала ямасть. Пӳрчĕ те тахçанах çĕр айне çурри путса анса кайнă ĕнтĕ, халь-халь ишĕлсе анасла ларать, вăйлă çил килсе вĕртĕр – таçтаччĕ çав çурт йĕрĕ! Çулталăкне иккĕ çĕр каçать-ши вăл хăй килĕнче – паллă мар, хĕллесенче – çын патĕнче, çулла – хирте çывăрать. (Хирте çывăрса пурăннăран та ăна чикан ачи пуль, теççĕ.) Мунчи пур тата, чăх йăви пекскер. Унта пĕр çын та аран-аран хĕсĕнкелесе кĕрет. Çавăнта çăвăнкаласа пурăнать Элекçей.

Шăши Элекçейĕ пирĕн яла килсе кĕрессе колхоз тунă тапхăрта килсе кĕнĕ. Килсе кĕнĕ те унччен пĕр-икĕ кун маларах çеç çĕре кĕнĕ çĕр çулхи Мархва кинемейĕн мунча пек çуртне вырнаçнă (çав çурт пирки каларăм), такамран çур хакпа хĕç пулă пек çинçешке сурăх туянса пынă, алкум уратинчен кăкарса янă. Халь алкумĕ те çук ĕнтĕ – тĕтĕм пулнă. Тепĕр икĕ эрнерен вăл хăйĕн сурăхне колхоз витине кайса леçнĕ. Ку унăн пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕни вырăнне пулнă – пĕр сурăх хакĕ ăçта каймĕ, тату пурăннине мĕн çиттĕр!.. Çакнашкал пысăк чунлă вăл Элекçей».

Çумăр лăпланнăпа пĕрех, кассăн-кассăн çеç пĕрĕхкелесе иртет – тупĕ шăтăк ырçинчен юлашки пĕрчисене ывăçласа пăрахать. Пĕлĕт хăяматалла явăна-явăна чупать. Лăс-лăс çил тапраннă. Çил тапранни – уяртасса.

«...Çавскер, Шăши Элекçейĕ, пĕррехинче сывмарланнă: те шăнса пăсăлнă, те урăххи – паллă мар. Унччен ăна никам та чирленине курман. Утнă çакскер фельдшер пунктне, çитнĕ ахлаткаласа. Сестра ăна градусник панă, пăртаклăха хул хушшине хĕстерсе ларма хушнă. Элекçей ларнă. Ларнă-ларнă та, сестра урăх пырасса кĕтсе илеймесĕрех, килне тухса сĕнкĕлтетнĕ, халăхĕ пуçтарăннă вăхăт пулнă иккен вăл кун. Тепĕр икĕ кунтан персе çитнĕ хайхискер савăнăçлă сăн–питпе каялла. «Ну, хĕрĕмçĕм, хĕр пĕрчи, сапаççипех сана, эмелӳ питĕ сиплĕ пулчĕ, сывалтăм», – тенĕ вăл, градусника тавăрса парса...»

Асфальт çул пĕтрĕ, – малалла – тăпраран хăпартса тунă дамба. Урапасем, лепĕркке пылчăка лексенех, сулăнчăк пара-пара, йăралтатма пуçларĕç, пăхса çеç ан ĕлкĕр – кучи-мачи чикеленĕн, дамби чăнкă. Тĕрлĕ шухăш сӳсленчĕкĕпе арпашса пыракан Тарас куçĕ янках уçăлса кайрĕ, кун пек çулпа машинăна тытса пыма куç сисĕмĕпе ал сисĕмĕ вăйлă кирлĕ. Çумăр лăпланнă. Шĕвĕ пĕлĕтсем çеç паçăрхилле, пуç тăрне перĕнеслех, катрамăн-катрамăншăва-шăва иртеççĕ, тати-сыпписĕр, вĕсен вĕçĕ-хĕрри те çук. Хирте кăчăр пулнă ĕнтрĕк çĕр çуммипе йăпшăнать. Мăн çултан пĕр çухрăм çурă пек хăпкаласан, газик умĕнче пĕр çын мĕкĕлтетнине асăрхарĕ Тарас.

Темиçе хут кăшкăртсан та, çынни мĕнле утнă, çаплипех утрĕ, çаврăнса та пăхмарĕ. Çиллине шăнăраймасăр, Тарас машинне чарчĕ те, кабина алакĕнчен пуçне кăларса, кăшкăрчĕ:

– Эс мĕскер, анкă-минкĕ, хăлхасăр-им, машина кăшкăртнине те илтместĕн, пăрăн çул çинчен, мĕн, урапа айне пулас килет-им?

Çынни сӳ те тумарĕ, çаплах танкăшрĕ. Çакна кура тăркăч, Тарас тарăхса кайрĕ, çынна хăваласа çитсе, çухăран ярса тытрĕ: – Эс мĕскер, шофертан мăшкăллама-и!.. Çынни хĕрарăм пулах кайрĕ. Арçыннăн ятлас сăмахĕ те пырне ларчĕ.

– Тарас?.. – хĕрарăм, эрленсе, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ те ун кăкри çине ӳкрĕ.

Тарас та ăна палласа илчĕ.

– Краçук...

– Ай, турăçăм.

Шăп. Газик çеç пĕр тикĕссĕн лĕкĕртетсе ларать.

– Краçук... мĕнле-ха капла?..

Тӳпе пĕр касă çумăрне пĕрĕхсе хăварчĕ.

– Мĕнле-ха капла... пĕр кĕтмен-туман çĕртен?

Краçук куççульне чармасăр ĕсĕклет.

– Пĕлместĕп...

– Мĕн эпир кунта тăратпăр, машина ăшне атя, унта типĕ, хŭтĕ... Машинăра, чăнах та, пŭртри пекех – ăшă. Тулта чылай вăхăт хушши пулнă çынна çакă тата ытларах палăрать.

– Эс хыв-ха, хыв плащна, хыв, ак, манăн ваткăлла фуфайкăна тăхăн. Юрĕ, юрĕ, ан турткалаш, мана сивĕ мар... Вăт çапла...

Тарас Краçукпа инкек пулнине чĕрипе туйса илчĕ: кам ырăран çĕр хута ыйхă татса çŭретĕр! Çавăнпа тĕпчемерĕ те.

– Çĕрлене юлтăм, анне телеграмма çаптарнă: Вадим аптраса ŭкнĕ...

Краçук майĕпен-майĕпен ĕсĕклеме чарăнчĕ, лăпланчĕ. Те ăша пусса килнипе, те туйăмĕсем лĕштĕрех кайнипе, вăл хăй сисмесĕрех кăтăша путрĕ. Тарас сывлами ларчĕ, хăйĕн чи пирвайхи юратăвĕн ыйхине пистерес темерĕ. Çак çынпа пурнăç çыххине çыхма арасланнă ĕнтĕ вăл качча чухне. Пŭрни мăшăр хăрах утпа хапха умнех кĕрлеттерсе çитсе тăрать, теççĕ те – Тараспа Краçук тĕлне апла килмерĕ, ав, вĕсен шăпине усал çын алли картларĕ. Унтанпа – нумай-и, сахал-и – çичĕ çул иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Краçук та ĕлĕкхи мар халь – чылай тĕксĕмленнĕ, туртăннă, çамкине те ĕшенчĕк йĕрĕсем каса–каса кĕнĕ. Апла пулин те, ку сăн-пит – Тарасшăн тăванран та тăван, чи хакли. Унăн юратăвĕ, чи пирвайхи юрри пулнă-çке вăл. Пулнă?..

Краçук кăшкăрса, шарт сиксе вăранса кайрĕ:

– Вĕлер, çап, хĕне, шыва кайса сикетĕп, пĕтнĕ пуç пĕттĕрех!..

Чун тĕпĕнчен тухакан сасса илтсе, Тарас та шарт сикрĕ, çŭçенсе илчĕ.

– Мĕн эс? – терĕ вăл, аллине ун хулпуççийĕ çине хурса. – Тĕлĕк куртăн–им?

– Упăшкаран тухса тартăм эпĕ, Тарас... Çичĕ çул хушши чăтса пурăнтăм-пурăнтăм, урăх чăтма тусĕм çитмерĕ, – пŭлĕне-пŭлĕне калаçрĕ Краçук. – Чун сиснĕ пекех, паян тухса тартăм. Сана курасса пулĕ... Хăçантанпа курман... Турăçăм, пĕлесчĕ санăн ман пурнаçа! – сасси чĕтрене-чĕтрене тухрĕ Краçукăн, куçĕнчен каллех куççулĕ шăпăртатса анчĕ.

– Ан йĕр-ха эс, Краçук, ан йĕр. Куççульпе кăмала пусараймастăн, лăплан...

Тарас газ хушрĕ, машина çĕнĕрен малалла упаленме пуçларĕ.

– Хыçра машина сассине илтрĕм те, чун сŭлетсе кайрĕ, вăл хăваласа çитрĕ иккен, терĕм, манран ŭсĕр выртса юлчĕ, кăшкăрашрĕ-

кăшкăрашрĕ те... арчари пĕтĕм кĕпене кăларса, пуртăпа вакласа пĕтерчĕ, кăмакана ывăтрĕ. Хама та пĕрре кăна мар вĕлерессипе хăратнă. Ĕçки йĕркесĕр. Урă чухне те ним ĕренки çук... Çын сăмаххинчен иртейменни хупларĕ, çын сăмаххинчен иртейменни. Пăрахса каймалла пулнă, çийĕнчех, ним тăхтамасăр. Мĕне кĕтнĕ? Намăсран хăранă ĕнтĕ. Кавча кайса килнĕ ята илтесрен хăрана. Яш чух ытла та ăссем кĕске çав, хамăршăн тăма пĕлместпĕр...

Малтанхи çулсенче чиперех пекчĕ, юлашки çулсенче пăсăлчĕ. Çын валли вутă турттарса килсе парать – ĕçкĕ, районтан мĕн те пулин кĕртсе парса хăварать – ĕçкĕ, сысна çапаççĕ – ĕçкĕ... Халĕ тата уявĕсем те йышлă... Теприсем пур – ĕçмеççĕ, акку пур – курманла пехлет те пехлет. Пăсалчĕ этем... Киле килми пулчĕ çĕрлесерен... Хыççăн çӳремен... Калакалама пахсан – хăмсарать, алă çĕклет... Çавăнпа чĕнмен... Ача çуккипе хăрататчĕ, акă халь йывăр çын пулса тăтăм ĕнтĕ.
– Именнĕ пек пулса, пуçне пĕкрĕ Краçук. – ...Санăн та пурнăçу латлă килмерĕ, манăн та. Çук, килсе пуççаптăр, йăлăнтăр, хуть те тем тутăр – каймастăп... Çумăр та, ав, чарăнчĕ... Самай лӳшкететчĕ... Тарас... астăватăн-и аслатиллĕ çумăра?..

Тарас сăмах хушма та ĕлкĕреймерĕ, газик, хӳрине вĕлтĕр-вĕлтĕр пăркаласа, пĕр лакама пашт! çеç анса ларчĕ, моторĕ те, сывлăхсăр çын пек, пĕр-икĕ хутчен кĕххĕм–кĕххĕм ӳсĕркелесе илчĕ те лăп сӳнчĕ. Иккĕшĕ те, шăплăха çурасла, ахăлтатса кулса ячĕç.

– Акă çитрĕмĕр те, – çаплах кулчĕ Тарас. – Ăт, истори, чатăр пулсан, чатăр кар та – кăвайт чĕртсе яр, ăнманĕ...

Тарас стартера пускаласа пăхрĕ – мотор шарламарĕ. Вара вăл, капота уçса, пĕр вăхăт унта чакаланчĕ.

Телее, нумаях чакаланмалла пулмарĕ, машина ăш-чиккине унтан-кунтан тыткаласа-тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Тарас ручка илчĕ те унпа мотор çунатне пĕрех çавăрса ячĕ – мотор чĕрĕлчĕ. Газик лакăм урлă ӳлесе каçса кайрĕ.

– Тарас, чим-ха, тăхта... Тем, кăмăл пăтранса килчĕ.

Тарас машинине чарчĕ. Краçукăн мĕншĕн кăмăлĕ пăтраннине те тĕшмĕртрĕ вăл.

– Эсĕ выртса кан, лăш пул, ак çакăнти вăрăм ларчăк çине...

– Нимех те мар, иртсе каять... Эсĕ ан чăрман... хамах...

– Вырт, вырт, именсе ан тăр... ак, пуçу айне çакна хур, çемçерех пулĕ...

– Нимех те мар, нимех те мар, иртсе каяканччĕ...

– Эп тухкаласа çӳрем-ха...

Çулпа юнашарах – лупас пек улмури. Кĕрхи хирте çил вылять. Пылчăк кушăха пуçланă. Шăнтать.

«Аслатиллĕ çумăра астăватăн-и, тет-ха... Утă çулатчĕç. Тăххăрмĕш класс пĕтернĕччĕ эпир ун чух. Каникул вăхăчĕ. Ыттисенчен темле майпа тăрса юлнă вара эпир, аннесене пулăшма çӳрекен икĕ ача. Сисмен те – çине-çинех аслати кĕмсĕртетсе илчĕ, çумăр тăкса ячĕ. Пăхрăмăр та – пĕлĕчĕ асатте кукши пек çеç. Кĕреплесемпе сенĕксене пăрахса хăварса, çывăхри хӳшĕ патне чупрăмăр. Краçук малта вирхĕнсе пырать, хăй аллисене çӳлелле кантарнă, – çухăрать, чарăна-чарăна пĕр вырăнта тапăртаткаласа илет, каçса кайса ахăлтатать, шултра тумламсене ывăçласа иле-иле, питне пĕрĕхтерет. Ытлăх! Краçукăн пиçĕ урисене курсанах – шалта тем пĕçерсе каять, тăнлава çĕмĕрттерсе юн кăлтлатма пуçлать, çак хĕрачашăн темĕнле ырă-ырă пулас килет. Вĕçĕмсĕр ырă. Хӳшше чупса çитнĕ çĕре вĕсем иккĕшĕ те касмака чиксе кăларнă пек шӳнĕччĕ ĕнтĕ, чĕп-чĕр шыв пулнăччĕ. Краçук çаплах çуйхашрĕ, ахăлтатрĕ. Тарас ăна йĕпе хулĕсенчен çатăрласа тытрĕ те хăй çумне пăчăртарĕ, уçалса тăракан тутинчен чуптурĕ. Анчах хĕрача арçын ача ытамĕнчен çийĕнчех шăвăнса тухрĕ.

– Ан хăйнă пултăр, – юнарĕ вăл Тараса. Вара, кулма чарăнса, хӳшĕ кĕтессине хĕсĕнсе кĕрсе ларчĕ. Эпĕ – тепĕр кĕтессине, умне. Пĕри те: пĕр сăмах чĕнместпĕр. А хамăн каласас-каласас килет. Çумăр чикĕне-чикĕне кайса çатăлтатать. Пĕлместĕп, çапла çур сехет ларнă-и, пĕр сехет-и, – тулта тĕттĕмленсе килнине асăрхарăмăр, эпир иксĕмĕр те пĕр харăс сиксе тăтăмăр та, пушмаксене хывса, ялалла васкарăмăр. Хамăр пĕр-пĕрин çине куç хӳрипе те пулин пăхса илĕпĕрин... Манăн чĕре çунса тухать хам кунашкал сĕмсĕрле хăтланнăшăн. Каçару ыйтас-и – каçармасран хăратăп, ӳксе пуç çапас-и (юрататăп сана, Краçук!) – кӳрентересрен шикленетĕп. Калама та чĕлхе çаврăнмасть, виçĕ пăтлă кире пуканĕ çакса янă тейĕн.

Çумăр чарăнчĕ. Канлĕн сывлать çутçанталăк. Хĕвел анса ларасси те инçех юлман. Каçхи ĕнтрĕк пĕтĕм çĕре хăйĕн канлĕ сĕмĕпе çупăрлать.

Хăйсен тĕлне çитсен, Краçук кĕтмен çĕртен мана сулахай питçăмартинчен чăпăрт чуптуса илчĕ те, калинкке алăкне шатлаттарса хăварса, пӳртне кĕрсе тарчĕ... Эпĕ юла пек хытса юлтăм... Кăштахран çеç чун кĕчĕ... Эй, тĕнче!.. Краçук... Аслатиллĕ çумăра астăватăн-и, тет-ха... Ăçтан манăн?!.»

Кĕрхи çил çӳçентерет, йăлăхтарать. Унран пĕр-пĕр кĕрĕк çанни ăшне тарса кĕрес килет. Улмури тавра уткаласа çӳренĕ хыççăн Тарас каялла таврăнчĕ.

– Краçук, тен, пульницăна леçес?..

– Пĕлместĕп... – кăкăрĕ хăпара-хăпара анчĕ хĕрарăмăн, сасси улшăнса тухрĕ. – Пуçланчĕ пулмалла... Хуть те мĕн ту... Ах, аван марçке...

– Мĕн аван марри... Эс вырт, вырт, ан тăр... чăт ĕнтĕ кăштах... Эпĕ машинăна хытах хăваламăп...

Ĕнтĕ кăнтăрла иртсе иккĕ çине сулăнни те паçăрах, Тарас çавçавах больница картишĕнчен хăпмарĕ-ха, сестрасем хыпар тăвасса кĕтрĕ. Чиперех илсе çитерчĕ вăл Краçука, кирлĕ çынсене те хăвăртах шыраса тупрĕ, вырнаçтарчĕ, ак халĕ унăн хыпарне тилмĕрсе кĕтет. Хăйте вăл йĕп çинчи пекех-ха, ăшĕ çунсах тухать: «Темле ĕнтĕ ялта Вадимĕ? » Анчах пăрахса кайма – пултараймасть: тен, пулăшу кирлĕ? Тĕрĕссипе, темпех пулăшĕ ĕнтĕ Тарас Краçука хальтаран?

Хырăмĕ çатăр выçса кайнине туйса илчĕ Тарас. Хăçан çинĕччĕ-ха вăл? Ĕнер, кăнтăр апатне, шăп та лăп талăк каялла. Çул çине илсе çӳрекен пĕчĕк чăматанĕнчен вăл хура çăкăрпа хытнă кăлпасси татки кăларчĕ, сухан шуратрĕ. Тарас запаслă çын, ним те илмен чухне те унăн яланах çăкăрпа тăвар пур. «Хунӳ патне ĕçке кайма тухман – чăрмантармасть!»

Йĕркеллĕ пĕр-ик çăвар та тума ĕлкĕреймерĕ – хирĕç çуртран ăна пĕр шурă халатлă канттамас хĕрарăм кăшкăрса чĕнчĕ. Сасси – контрабас сасси пек.

– Ну, ашшĕ, савăн. Ывăл çуратнă ятпа саламлатăп – терĕ вăл чупса çитнĕ Тараса. – Ку пĕрремĕш-и-ха сирĕн? Тĕреклĕ ача пулать, маттур, тăватă кило та çĕр вунпилĕк грамм таять, амăшне мĕн чухлĕ асаплантарчĕ, шеремет...

Тарас ним калама аптраса тăчĕ. Юлашкинчен çăвар уçса тав тума ăс çитерчĕ: «Спасибо».

– Пире мĕн спаççипи, хăвăр ывăл, хăвăр тăрăшнă... Ну, ан хумханăр, ан хумханăр, пурте йĕркеллĕ пулса пырать... Эсир кайăр ĕнтĕ, кайăр, текех арăмăра нимĕнпе те пулăшма пултараймастăр. Тепре килнĕ чухне ăшă тум илме çеç манса ан кайăр, сивĕтрĕ... Ну, чипер юлăр...

– Итлĕр-ха, сестра юлташ, вĕсем валли кучченеç илсе килсен мĕнле-ши, э?

– Кучченеç? Паянлăха кирлех мар, тепрехинче... Халь канаççĕ-ха вĕсем... Эс луччĕ хĕреснашшĕпе хĕреснамăшне тупса хур. Кун пек ывăлшăн мĕнле ăшшă кĕçтин тумалла, урай хăми авăниччен: пăхаттир!..

Ваккат пек сăмах çаптаракан хĕрарăмран çăварне карсах тăрса юлчĕ Тарас. «Те кăшт катăкрахскер пулчĕ ку, ача ашшĕ вырăнне йышăнчĕ. Пулать этем. Э, тепĕр тесен, çыннине ма кӳренес, ăçтан пĕлтĕр-ха, ман çамка çине çырса хуман вĕт. Юрĕ...»

Краçук ăнăçлă çăмăлланнăшăн хĕпĕртерĕ Тарас.

«Турра шĕкĕр, мĕн те пулин сиксе тухасран чун юлманччĕ. Тинех лăплантăм. Халĕ ĕнтĕ – яла, киле! Ах, Вадимĕ темле ĕнтĕ?..»

Çула тапраниччен малтан вăл РТСа кĕрсе бензин яртарттарса тухрĕ, хушма бакне те тултарчĕ – каялла Шупашкара çитме те çиттĕр!

Çул çийĕ ĕнерхи мар – кĕмсĕркке. Çĕркаçа самаях шăнтнă. Сывлăшра юр пĕрчисем юлхавлăн вĕçкелеççĕ. Çил йăшнă. Машина çăмăллăн юртать, хутран–ситрен муклашка çине лексе сиккелесе илет.

«...Краçук, Краçук... эх... Халь тепле çав, калама та пĕлмелле мар... Лиди тата лере тепле, тем ăспа пурăнать. Пĕр шутласан, Краçукпах сыпмалла та пурнăçа. Э, чим-ха, мĕн калаçатăп çак эпĕ, юрать-и вара апла калаçма Лида пур çинченех. Эпир уйрăлман, расна çеç пурăнатпăр. Манăн хамăн çемьене тĕреклетме тăрăшмалла, капла кучи-мачи шухăшласа пуçа ватмалла мар. А Краçук вăл иртни, çутă ĕмĕт. Ĕмĕт çиçет те – сӳнет. Юрĕ ĕнтĕ, халь мĕн сăмахламалли. Краçукăн та шухăшĕ улшăнĕ, упăшки килĕ те акă... мирлешĕç. Хушша-хуппа кĕрем мар... Малтан ăса картмалла пулнă, малтан. Тĕрĕссипе халĕ те кая юлман та-ха, хăй те хирĕçех пулас çук... Пĕрех хут, тытатăп та больницăран тӳрех Шупашкара илсе каятăп ăна хам пата, ачи чармасть, камран хăраса тăмалла! Иксĕмĕрĕн пурнăç пуласси – паллах!»

Кĕтмен-туман çĕртен хăмла аври пек капланса хăпарнă хăюлăх Тараса çĕклентерсех ячĕ. Сĕлкĕш кăмăлĕ янках уçăлса кайрĕ унăн. Савăкланнипе, сăмси айĕн юрă та ĕнерлеме пикенчĕ:

«А дорога серою лентою вьется...»

«Акă – Краçук унăн арăмĕ. Пĕр-пĕрне вĕсем нихăçан та сивĕ сăмах каламĕç, шăкăл-шăкăл пурăнĕç, çăвартан çăвара, пĕр-пĕрин сăмахне итлесе. Каçсерен, акă, вĕсем иккĕшĕ те ĕçрен таврăнĕç те апата ларĕç, куçран куçа пăхса çийĕç. Краçук именĕ, Тарас çине пăхса йăл кулĕ. Тарас та Краçук çине пăхса йăл кулĕ, хăйĕн телейĕ çитнĕшĕн хĕпĕртĕ. Кайран вара вĕсем вырăн сарĕç, ачисене çывăрттарĕç. Ачи вĕсен пĕрре кăна пулмĕ-ха. Пĕр-пĕрне юратса пурăнсан, йышлă ача ӳстересси те ырлăх çеç. Унтан хăйсем те выртĕç. Ыйхă вĕçтерсе, пуç вĕçне лартнă сехет хуллен çакăлтатĕ. Ыйăхĕ ахаль те килмĕ-ха. Пӳлĕмри шăплăх, чуна тӳлĕклентерсе, ерипен-ерипен кăмăлĕсене çавăрса илĕ. Чылайччен çывăрса каяймасăр выртĕç Краçукпа Тарас.

Вĕсем иртнине, хĕвел пек хĕм сапса тăракан яшлăх кунĕсене асăнĕç, куç умне кăларĕç...

...Чупать Тарас, акаци тĕмĕсем хушшипе, вĕрене, тирек йывăçĕсем хушшипе вирхĕнсе чупать. Чупать-чупать те тăп чарăнса тăрать – танн хытать, пăши пек, шăплăха итлет. Шăплăхĕ – тĕлĕнсе хытса каймалли, чуна çÿçентермелли; çулçă лăпкăлăхĕ, чĕре ынатлăхĕ. Çĕрлехи тÿпе кăваккăн сарăлса выртать. Унăн кăваклăхĕ çамрăк ÿт-пĕве сарăлтаттарса ярать, темĕнле вăрттăнлăхпа чыхăнтарать. Сад кĕтессинче ăна Краçук кĕтсе тăрать, шурă кĕпеллĕ, вăрăм çивĕтлĕ Краçук. Шăппăн утаççĕ вĕсем садпа, вĕрене, тирек аллеипе, чĕнмесĕр, алăран алла тытса. Унтан Тарас сасартăк сылтăмалла ыткăнса кĕрет те тепĕрçемĕн икĕ чăп-чăмăр панулми татса тухать. «Краçук, тыт, тутанса пăх...» Чĕрисем иккĕшĕн те тĕпĕртетсе тапаççĕ, кăкăрĕсенче – кĕрхи сăйпа сипĕтленнĕ панулми сĕткенĕ, пиçсе çитнилĕх. Тăкăнасла!

Тăкăнасла çутă уйăх тÿпере çакăнса тăрать, кĕрхи сăйпа сипетленнĕ панулми сĕткенĕ пек ырă çÿçенчĕклĕх сапалать. Чупать Тарас, каллех вăркăнса чупать, ăшĕнчи чиксĕр савăнăçне пытараймасăр, кăмăл çунатне йÿле ярса. Акă вăл çывăхри улмури патне вирхĕнсе çитет те ун тăрне тĕк пек хăпарса каять. «Эй, çут тĕнче, кăвак пĕлĕт, таса уйăх, илтĕр, тăнлăр. Эпĕ Краçука юрататăп, питĕ хытă юрататăп!» – тесе хыттăн кăшкăрса ярать. Краçук пуçне каçăртнă та – кулать, каçăхса кайса кулать: «Ухмах, тăрри шăтăк!» – тесе ахăлтатать. Ян! ян! кĕрлет тулли уйăхлă, чĕре еккиллĕ çĕрлехи шăплăх! Ахрăмăн-ахрăмăн! Тарас улмури тăрринчен аялалла мулкач пек пĕтĕрĕнсе анать те Краçук умне пырса тăрать. Именчĕклĕн тытать вăл унăн аллине, вăта пÿрнине çепĕççĕн, чун сĕмĕпе хыпашласа тупать. «Акă, ме, ил, икĕ кун ăсталарăм, вунпилĕк пуслăх укçаран...» – тесе, Краçука кĕмĕл çĕрĕ тыттарать. – Ку – пирĕн пурнăçăн талисманĕ пултăр, чĕрÿ манран сивĕнсен – хывса пер, ултав кирлĕ мар!..»

Йăрă çăлтăрсем, çĕрлехи тÿпене сивлеклĕх кĕртсе, кас-кас йăрăлтата-йăрăлтата анаççĕ. Садăн кăнтăр енĕ – уçлăх, янк – тем анлăш кăвак тÿпе. Çăлтăр çумăрĕ çăвать. Август уйăхĕ. Тараспа Краçук пĕр-пĕрин çумне тĕршĕннĕ те çăлтăр çумăрĕнче шыва кĕреççĕ...»

Акă, Сĕнтĕр ялĕ те хыça юлчĕ. Сĕнтĕртен Тĕркеçе виçĕ çухрăм кăна. Юр çăралчĕ, лапка-лапка çăвать, тавралăха чавка пуçĕ пек çăмламас юр пĕрчисем карса илнĕ. Хĕвел пек хĕм сапса тăракан яшлăх кунĕсен тата хăш саманчĕсене аса илĕç-ха вĕсем? Чылайăшне. Çакна вара, паллах, манса хăвармаççех.

«...Утать ял урамĕ, салтак юррин эрлĕклĕ кĕввине укăлча хапхи енне çавăтса. Кĕрнеклĕн утать, куççуль кăлармасăр, енчен енне тĕрĕллĕ

тутăр çыххисене авăсса. «Сывă пулăр, айăпласа ан юлăр, ялйыш!» Мĕн куççуль кăлармалли, вăхăчĕ те урăх, самани те тăнăç, тутăр вĕçтерни те ячĕшĕн çеç – йăлине астуса.

Утать ял урамĕ, халăхпа – ватти-вĕттипе, яш-кĕрĕмпе капланса, Тараса çара ăсатать. Укăлча хапхине тухсан, халăх чарăнать.

Укăлча хапхи. Шухăш шухăшласа пуçăм та шурчĕ. Тем те илтме, тем те курма тиврĕ хамăн вăрăм ĕмĕрĕмре. Çамрăкчĕ эпĕ, яшчĕ – ватăлтăм, чалăшрăм. Шăмшак сурать, шăмшакка ним хĕрхенми çумăр ислентерет, юр çĕрĕштерет, çил лăскать. Пурнăçĕ те лăскать. Пĕр канăç çук. Пурпĕрех ларатăп çапла, ырра ырăпа ăсатса, усала усалпа кĕтсе илсе. Инçе çула ăсанакансене никама та усал сунман эпĕ, ырă çеç суннă. «Чипер çаврăнса килĕр, çĕрле те, кăнтăрла та ман хапхам яри пулĕ». Тĕрлĕ çынсен шăписем те тĕрлĕ пулчĕç. Пуйма каякан та вилсе килчĕ, вилме каякан та пуйса килчĕ. Пĕтет текен çын пĕтмерĕ, пĕтмест текен çын пĕтрĕ. Ырă ятпа тухса каякан усал ятпа таврăнчĕ, усал ятпа тухса каяканырă ятпа таврăнчĕ. Таврăнманнисем тата мĕн чухлĕн пулчĕç. Пĕрисем – халăх сăмахне вырăна хумасăр пуç каçартса тухса кайрĕç те – сасси-хури те сарăмсăр таçта кайрĕ. Теприсем, çĕршыв евитлесен, тĕрлĕ усал-тĕселе хирĕç кар çĕкленчĕç те – пуçĕсене хучĕç, халăх асне тивĕçлĕ пулчĕç...

Эх-хе-хей, саманисем саккăр, тамашисем тăххăр килчĕç çав Пурнăçăн! Куççульпе тухса каякан кулăпа çаврăнса килчĕ, кулăпа тухса каякан куççульпе çаврăнса килчĕ.

Паян, акă, Унийçе ывăлĕ Тарас çара ăсанать. Ашшĕ те, çирĕм пĕрреречкер, çакăнтанах вăрçа ăсаннăччĕ – таврăнаймарĕ. Ывăлĕ шăпи йĕркеллĕ килтĕрех...

Ĕнтĕ çамрăксем пĕр астрăм ташласа та илчĕç, пĕр çавра юрă та юрларĕç. Акă, тапранма та вăхăт. Тарас ялйышпа сывпуллашать, кашнинех алă парса çаврăнать. Краçук тĕлне çитсен, вăл ăна çупăрласа илет те, укăлчари халăхран, тăванĕсенчен, тантăшĕ–пĕлĕшĕсенчен именмесĕр, тутинчен хыттăн чуптăвать. «Краçук, кĕт, пĕр ĕмĕр, иккĕ, виççĕ кĕтмелле пулсан та – кĕт, манмăн-и?» – тет вăл çине-çинех. «Кĕтетĕп, мĕн чухлĕ кĕтме пӳрсен те – кĕтетĕп, кĕтетĕпех, манмăп», – пăшăлтатать хĕр тути.

Тараса амăшĕ çул курки тыттарать. Тарас ăна тĕппипех ĕçсе ярать те аякка-аякка ывăтать. Кĕленче курка ванмасть, ку – тĕрĕс-тĕкĕл таврăнасса. Амашĕпе сывпуллашать.

Лав тапранса каять. Тарас аллинчи тутăр çыххипе сулать, сулать, сулать. Краçук та аллине сулать, сулать, сулать...»

Кĕрекеç çырма урлă та чиперех каçса кайрĕ пазик. Юр сайралчĕ. Укăлча хапхи умне çитсен, Тарас машинине чарсах тăван ялĕ çине пăхса тăрасшăнччĕ, анчах та вăрăм урам кĕтессинчен, хăйсен тĕлĕнчен, капламан-капламан халăх йăтăнса тухнине асăрхасан, малалла вирхĕнчĕ.

Хирĕç – тупăк йăтса килеççĕ. Тарасăн ăшĕ пĕçерсе кайрĕ, çанçурăмне вĕри çапрĕ. Тем ырă мара сисрĕ унăн чĕри, кăкăрĕ ӳслĕкпе чыхăнчĕ. Халăх урам хĕресленнĕ тĕле çитсе перĕниччен вăл газикне сулахай такăрлăка пăрма ĕлкĕрчĕ те кĕçĕн урампа килĕ енне çил пек вĕçтерчĕ. Тарас чĕтремех пуçларĕ. Моторне чарса хăварма мансах вирхĕнсе кĕчĕ вăл пӳртне. Ывалĕ, Вадим, урайĕнче теттесемпе йăпанса ларнине курсан, питне аллисемпе хупласа макăрса ячĕ. Амашĕ, Унисçе, тĕлĕнсе чăр-р пăхрĕ Тарасĕ çине.

– Кам вилнĕ ара? – хăйăлтатрĕ Тарас.

– Э-э, Шăши Элекçейĕн тупăкне хирĕç пултăн пулĕ-çке эс. Виçĕмкун вилчĕ, – сывлăш çавăрчĕ Унисçе.

– Пурнăçне путишле пурăнса ирттерчĕ те, вилме те çаплах вилчĕ. Такам ухмаххи кулма шут тытнă çав, талăппа мунча кĕрсен – куçу куракан пулать тесе илĕртнĕ. Лешĕ, айванĕ, пӳрт урайне сӳтсе мунча хутнă, исленсе кайиччен хăй тăрăх вĕри шыв чушкĕнтернĕ, хăва милĕкпе çапăннă. Унтан Пренкке пĕвинче çур сехет шампăртатса тухнă. Вĕри мунча хыççăн сивĕ шывпа сивĕнмелле пулнă иккен – унсăрăн куракан пулаймастăн, тенĕ. Кайран вăл, лĕштĕрех кайнăскер, çырма хĕрринчех выртса çывăрнă. Ураланаймарĕ вара...

– Анне, Вадим мĕнпе аптрать ара?

– Аптрани-мĕнĕ... çӳрекелетпĕр-ха. Сана, Тарас, ĕнерсемех кĕтсеттĕмĕр. Пит килсех те куркаламастăр та ку чухне. Ни хыпар тумастăн. Ачи чип-чиперех-ха, сывах. Ху мĕнле?Ĕнтĕ пĕр-пĕрне кун чухлĕ йăлăнтарсан çитет пулĕ, çемье чăмăртасчĕ, ял-йышран намăс. Хăвăн та хула енне пит тĕмсĕлсех пăхмалла мар, хула пурнăçĕ вăл хулаллах, çавăн чухлĕ пурăнса та хăвăра хула ăшăтмарĕ пулсан урăх унта ыррине кĕтсе лармалли те çук, яла куçмалла. Шофер ĕçĕ ялта та хисеплĕ. Эпĕ те текех вăйпитти мар ĕнтĕ. Шутларăм – шутларăм та телеграмм çаптартăм, сирĕн ялтах пурнăç çавăрмалла пек, çапла, ывăлăм. Кине те, упăшки пур çинчех, тĕнче касса çӳрен-и сăпайлă мар. Ăна та хыпар тутарнăччĕ те, ĕнер каçхине, ав, вăл та çитрĕ...

Унисçе хăйĕн сăмахне вĕçлеме те ĕлкĕреймерĕ, тĕпелти чечеклĕ чаршав хыçĕнчен, ыйхă тĕлĕшпе упăшки сассине илтсе, Лида аялти кĕпе вĕççĕнех урай варрине юхса тухрĕ. Хăй савăнăçлă...

Тарас, алăк умĕнче хытса тăраканскер, ăна курсан, кутник сакки çине лаках кайса ларчĕ.

1970.

Ирĕклĕ хушма вулав

1. Хв. Акиверĕн «Юрату сăмсахĕ» кĕнекине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000065.pdf
2. Хв. Акиверĕн «Çапса çумăр çăвать» кĕнекине Интернет уçлăхĕнче çак веб-адреспа вулама пулать: http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kchl_0_0000066.pdf

Ĕçсемпе ыйтусем

* *Вуланине сӳтсе явatпăр*

1. Чăваш литература историйĕнчи мĕнле хĕр идеал сăнарĕсене аса илме пултаратăр?
2. Литературăра хĕр арăм идеал сăнарĕсем çуралнине тĕпчевçĕсем мĕнпе ăнлантараççĕ?
3. Александр Артемьевăн Салампи сăнарне мĕнле хаклама пултаратăр?
4. XXI ĕмĕрти обществăра Салампи сăнарĕ çаплипех идеал пулса юлать-и? Пулать пулсан – мĕншĕн? (Ăнлантарăр). Çук пулсан – мĕншĕн? (Ăнлантарăр).
5. Хв. Акивер пултарулăхĕнчи хĕр арăм сăнарĕсен пĕлтерĕшĕ мĕнре?
6. Литературăри хĕр арăм сăнарĕн вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ мĕнпе çыхăннă?

¤ *Пултарулăх ĕçне тăватпăр*

Кăмал-сипет тата сăн-пит, кĕлетке илемне, çын ĕçченлĕхне уçса паракан эпитетсемпе усă курса хăвăрăн кукамай-асаннене, аннене, аппа-йăмăка сăнарласа парăр.

♫ *Проектсем*

1. Александр Алкан куçару ĕçĕнчи пултарулăхĕ (Ю. Збанацкийĕн «Çеçпĕл» романĕ, А. Пушкинăн «Русланпа Людмила» поэми, В. Шекспир хайлавĕсем) *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
2. Георгий Ефимовăн литература портречĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.
3. Петĕр Ялкир – чăваш юрă сăввисен авторĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
4. Альпăрт Канаш поэзийĕ *(пĕччен çын тĕпчевĕ)*.
5. Аркадий Эсхелĕн литература портречĕ *(ушкăнла тĕпчев)*.

∆ *Литература хайлавĕн чĕлхи*

Хветĕр Акиверĕн «Çапса çумăр çăвать» калавĕнчи халăх каларăшĕсене тупса палăртăр. Вĕсен пĕлтерĕшĕсене анлăн ăнлантарăр.



УРАЛПА АТĂЛÇИ ТĂРĂХĔНЧИ ХАЛĂХСЕН ХХ ĔМĔРĔН ПĔРРЕМĔШ ÇУРРИНЧИ ЛИТЕРАТУРИ

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Кашни халăх (наци) литературин хăйĕн шăпи, хăйĕн аталану çулĕ. Çапах та нумай чухне уйрăм халăх литератури ытти халăхсен илемлĕ пултарулăх çулне питĕ çывăх. Уйрăмах çак халăхсем юнашар пурăнаççĕ пулсан.

Çапла Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен илемлĕ сăмахлăхĕ (тутар литературисĕр пуçне) çырулăхĕ пулман пирки нумай ĕмĕрсем хушши сăмах вĕççĕн аталаннă. Çак тăрăхри наци литературисенчен чылайăшĕ XIX ĕмĕртен йĕркелене пуçланă. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх малтанхи тапхăрта çыруллă литература аталанăвĕ çине халăх сăмахлăхĕ пысăк витĕм кӳнĕ. Шăпах фольклор кунта халăхăн илемлĕ шухăшлавĕн «çӳпçи» пулса тăнă. Кунран та ытларах, халăх сăмахлăхĕ каярахри тапхăрта та, литература халăх культурин уйрăм пайрăмĕ пулса тăрсан та, хайлавсене стильпе чĕлхе тĕлĕшĕнчен пуянлатса пынă. Çавăнпа та çыравçăсен пултарулăхĕнче фольклор сюжечĕсемпе мотивĕсем илемлĕ шухăшлавăн пĕлтерĕшлĕ çăлкуçĕ пулнине йышăнмасăр тăма çук.

Çапла вара Уралпа Атăлçи халăхĕсен илемлĕ литератури пĕтĕмĕшле илсен пĕрешкел аталану çулĕпе пынă – халăх сăмахлăхĕн формисенчен пуçласа профессионаллă пултарулăхăн оригиналлă жанрĕсем таран. Çакна пăхмасăрах, паллах, тĕрлĕ халăхсен литература аталанăвĕн шайĕ, çулĕ тата майĕсем тĕрлĕ пулнă.

Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен литературинчи пĕрпеклĕхсем халăх пулса кайнин, чĕлхе тата историпе культура йăли-йĕркин пĕрлĕхĕнчен амаланаççĕ. Çак пĕрлĕх халăх тĕнчекурăмĕнчи, характерĕнчи, пултарулăхри илемлĕх мелĕсен пĕрешкел пулăмĕсене те ăнлантарса парать. Çапла, нĕсĕлĕсене кура çак тăрăхри халăхсем икĕ чĕлхе çемйине (тĕрĕк – чăваш, тутар, пушкăрт тата финн-угр – çармăс (мари), мордва, удмурт, коми), ĕненĕвне пăхсан христиан тата ислам тĕнне пуç çапакансен йышне кĕреççĕ.

Халăх тĕнчекурăмĕн аталанăвĕ çине этемлĕхшĕн культура тата пĕтĕмĕшле истори пулăмĕ пулса тăнă тĕн витĕм кӳнине манма юрамасть. Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен культуринче çак сыхăну çут çанталăк вăйĕсене сума суса нумай турра пуççапнинче, йăла-йĕркере, çутçанталăка чĕрĕлетме, этемлетме пĕлнинче, çавăн пекех

христиан тата ислам тĕнче ăнланăвĕнче курăнать. Çакă пĕтĕмпех асăннă халăхсен ăнĕнче истори пĕлтерĕшлĕ ăс-тăнăн икĕ тĕсĕ, тĕнĕн икĕ тĕсĕ пĕр-пĕрин çине хурăннине кăтартать. Унтан та ытларах, вырăс тĕпчевçи Г. Гачев асăрханă тăрăх, тĕнпе илемлĕх ĕненĕвĕсем нацин идеал пĕлтерĕшне, халăхăн «космо-психо-логос» (нацин çут-çанталăк, хăйне майлă психика тата шухăшлав пĕрлĕхĕ) ăнлавне йĕркелеççĕ, унăн илемлĕх ăс-тăнĕн аталанăвĕ çине витĕм кӳреççĕ.

Пĕтĕмĕшле каласан Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен литературин йĕркеленĕвĕнче халăх сăмахлăхĕ тата унăн кулленхи йăли-йĕркипе пурнăçĕ тарăн йĕр хăварнă. Ку тăрăхри халăхсен литературишĕн ыр-усал тĕнĕ (язычество) пысăк пĕлтерĕшлĕ. Анлăн илес пулсан, ыр-усал тĕнĕ вăл – этемĕн ĕлĕк-авалтан килекен тата каярахри пĕтĕм тĕнче шайĕнчи тĕнсен никĕсĕнче выртакан тĕнчекурăм, ĕненӳ, йăла-йĕрке. Идеологиллĕ, философиллĕ тата тĕн хаклăхĕн пĕрлĕхĕ пек вăл халăхсен кулленхи тĕнчекурăмне йĕркеленĕ, культурăпа илемлĕх (эстетика) йăлисен никĕсне выртнă.

Авалхи ыр-усал тĕнĕн пытарăнчăк пĕлтерĕшĕ пулнă, вăл çутçанталăка турă вырăнне хурса пуç çапнипе çыхăннă. Унтан та ытларах, кунта авалхи çыннăн пĕтĕм ăс-халĕ, çутçанталăх пирки мĕн пĕлни пуçтарăннă. Çавăнпа та çынна çутçанталăкăн, космосăн пĕр пайĕ пек пăхни, турăсен аталаннă пантеонĕ пурри, календарлă йăла-йĕрке халăхсен ыр-усал тĕнчекурăмне кăна мар йĕркеленĕ, вĕсен литературисен илемлĕх никĕсĕ те пулса тăнă.

Паллах, халăхăн философиллĕ тĕнчекурăмĕн никĕсĕнче унăн турăпа тĕн курăмĕ çеç выртмасть. Çавăн пекех кунта хуçалăх форми те, социаллă сийсем те, пурнăçăн общесвăлла йĕрки те пĕлтерешлĕ. Акă, Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсем çĕр ĕçĕпе (чăвашсемпе марисем), вылăх-чĕрлĕх (тутарпа пушкартсем, удмуртсем), пăлан пăхса (коми) пурăннă. Социаллă пурнăçĕ патриархаллă тата йăх хутшăнăвĕсем çинче аталаннă. Вĕсен пурнăç философийĕ ĕçе, çутçанталăка юратни, аслă ăрусене, халăх йăли-йĕркине хисеплени çинче никĕсленнĕ. Çак сăлтавпах кăмăл-сипет хаклăхне çĕр, вăрман, шыв (юханшыв) урлă кăтартма тăрашни те çыхăннă. Тен, çавăнпах пулĕ Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен литературинче çутçанталăкпа выльăх-чĕрлĕх (уйрăмах лаша сăнарĕ тутурпа пушкăрт сăмахлăхĕнче) урлă кăмăл-сипет тасалăхĕпе вăйне, ырăпа усал, чыслăхпа чыссăрлăх кĕрешĕвне сăнарлаççĕ. Çакнашкал туртăм ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче Г. Ибрагимов пултарулăхĕшĕн, ХХ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Ю. Скворцов, А. Гилязов, Г. Баширов, М. Карим, А. Хакимов хайлавĕсемшĕн курăмлă пулса тăнă.

Ĕçсемпе ыйтусем

*** *Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсене чĕлхине, тĕнне тата мĕн ĕçпе пурăннине кура мĕнле ушкăнсене пĕрлештерме пулать?
2. Халăх мĕн ĕçпе пурăнни унăн илемлĕ литературинче мĕнле палăрăнать? Тĕслĕхсем илсе парăр.
3. Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен литературисен пĕрешкел тата уйрăм пулăмĕсене палăртăр.

◊ *Реферат теми*

Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен литератири çурални (*Мари (çармăс), мордва (ирçе-мăкшă), тутар, пушкăрт, удмурт, коми литературисенчен пĕрне суйласа илĕр*).



Пушкăрт литературы

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Пушкăрт халăхĕн сăмах пултарулăхĕ ытларах халăх сăмахлăхĕнче аталаннине пăхмасăрах унăн çыруллă литературы XVI ĕмĕртенех йĕркелене пуçланă, çапах та XIX ĕмĕр варриччен ал вĕççĕн çырнă формăпа çеç çӳренĕ. Çак литературăра чи малтанах поэзи икĕ тĕп юхăмпа – обществă пурнăçне çутатакан тата тĕнпе мистикăлла енпе аталаннă. XVIII-XIX ĕмĕрсенче пушкăрт литературин аниче Т. Ялсыгул (1763-1837), Гали Чокрый (1826-1889), Шамсутдин Заки (1825-1865), Гибатулла Салихов (1794-1867) çыравçăсем ĕçленĕ. Вĕсем ытларах чухне мусульман тĕнне мухтакан сăвăсем хайланă.

XIX ĕмĕрти пушкăрт литературин тĕп паллисем хушшинче, пĕр енчен, илемлĕ пултарулăхра реализм паллисем çуралса çирĕпленни, халăх пурнăçĕнче илемлĕ сăмах витĕмĕпе пĕлтерĕшĕ ӳсни, илемлĕх туртăмĕ тата обществăлла шухăшлав аталанни пулса тăнă. Унăн тепĕр енĕ XIX ĕмĕрти пушкăртсен пысăк йышĕ тутарсен медресĕнче (пĕтĕмĕшле вăтам шкул тата мусулмансен тĕн семинари пĕлтерĕшлĕ вĕренӳ заведенийĕ) вĕреннипе çыхăннă. Кунта вĕренекенсем тĕрĕк чĕлхиллĕ хайлавсемпе, авалхи тутар литературипе, паллашнă. Çавăнпа та çак медрессенче вĕреннĕ пушкăрт çыравçисем пушкартла мар, тĕрĕксен кĕнеке чĕлхипе çырнă.

Çавăнпа пĕрлех пушкăрт илемлĕ сăмахлăхне тĕпчекенсем палăртнă тăрăх, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пушкăрт литературине тутарсен Г. Тукай, Г. Ибрагимов çыравçисен витĕмĕпе аталаннă. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕнче феодаллă йĕркесене хирĕçлекен, çыннăн шалти ирĕклĕхне тата нациллĕ харпăр хăй хисеплевне çĕклекен шухăша аталантарнă. Çакă пĕтĕмпех, паллах, пушкăрт литературин аталанăвĕ çине витĕм кӳнĕ, мĕншĕн тесен халăхăн илемлĕ шухăшлавĕн тăрăмĕ тӳремĕнех тĕнчекурăма палăртакан наци чĕлхипе çыхăннă.

Сайфи Кудаш (*Кудаш Сайфи Фаттахович, 1894-1993*) – тутар тата пушкăрт поэчĕ. Пушкăрт енчи вăтам хресчен тутар çемйинче çуралса ӳснĕ. Пĕрремĕш хайлавĕсене вăл 1913 çулта Г. Тукайпа М. Гафури витĕмĕпе çыра пуçланă. Çак вăхăтри Кудаш сăввисенче халăх асапланнин, патша пусмăрлăхне хирĕç тăнин («Тĕнче», «Хăçан вĕçленĕши»), правăсăр хĕр арăмсене хĕрхеннин («Салима», «Телейсĕр Муслима») мотивĕ янăрать. 1916 çулта «Кармак» (Оренбург) журналта унăн тĕн çыннисене, тĕне, тĕн йăли-йĕркине хирĕçле калакан шӳтлĕ сăввисем пичетленеççĕ. 1918 çулхи революцисем вăхăтĕнче сăвăç наци ирĕклĕхĕн темине аталантара пуçлать. XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчен пуçласа С. Кудаш хăй пултарулăхĕнче социализм идейисене мала кăларса соцреализм меслечĕпе анлă ĕçлет («Малалла», «Пĕттĕр вăрçă», «Тутар буржуазийĕ», «Сутăнчăксене»).1930 çулсен варринчен пуçласа С. Кудаш пĕтĕмпех литература ĕçне куçнă. Вăл пĕтĕмпе 80 ытла кĕнеке çырнă. Вĕсенчен нумайăшне ытти чĕлхесене куçарнă.

Мажит Гафури (*Гафуров Габдельмажит Нургаиевич, 1880-1934*) – пушкăрт тата тутар сăвăçи, фольклорисчĕ, драматургĕ, пушкăртпа тутар совет литературин классикĕ. Вăл вĕрентекен çемйинче çуралса ӳснĕ. Унăн нацилĕхĕ пирки пĕр пĕлтерĕшлĕ килĕшӳ çук. Хăшĕсем (Л. Камаева) ăна тутар çынни, теприсем (Р. Кузеева) кальсер-табын пушкăрт йăхĕнчен тухнă тесе палăртаççĕ.

Кĕçĕн классене пĕчĕк Мажит ашшĕ патĕнче пĕтерет. 1893 çулта ăна кӳршĕ ялти медресе вĕренме яраççĕ. Анчах çак çулах пулас çыравçăн ашшĕпе амăшĕ вилсе каяççĕ. Çакна пăхмасăрах М. Гафури вĕренӳ çулĕнчен пăрăнмасть. Вĕренӳрен ирĕклĕ чух ылтăн çăвакансем патĕнче вăй хурать. Каярах Казахстан çеçен хирĕнче вĕрентекен пулса ĕçлет, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пуçтарать. Шăпах çак çулсенче вăл вырăс литературипе те кăсăклана пуçлать.

Хăйĕн пĕрремĕш сăввине Гафури 1902 çулта çырнă. 1904 çулта Оренбург хулинче унăн «Çĕпĕрти чукун çул, е наци выранĕ» ятлă пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухнă. Пĕрремĕш вырăс революцийĕ М. Гафури тĕнчекурăмне чылай улăштарнă. Çапла унăн «Пирĕн кунсем»,

«Икĕ кайăк», «Пуян» сăввисенче социаллă сийсен çивĕч хирĕçтăрăвне кăтартнă. Сăвăç тĕнчекурăмĕн тарăн улшăнăвĕсене «1906 çулăн 1907 çула панă халалĕ» тата «1907 çул хуравĕ» сăвăсенче уйрăмах курма пулать.

М. Гафурин пушкăрт халăхĕн сăмахлăхне пуçтарас тата тĕпчес ĕçри тÿпи пысăк. Çапла 1910 çулта вăл «Заятуляк тата Хыухылу» пушкăрт эпосĕн пĕр вариантне пичетлесе кăларать. Октябрьти Аслă революци хыççăнхи тапхăрта çыравçă Пушкăрт республикинче хаçат-журнал («Пирĕн çул», «Ирĕклĕх», «Кĕрешÿ», «Хĕрлĕ çул», «Хĕвел тухăç чухăнĕсем», «Урал», «Пушкăртсан», «Çĕнĕ ял») кăларассине йĕркелесе ярас ĕçре нумай вăй хурать. М. Гафури граждан вăрçи çулĕсенче çырнă хайлавĕсен тĕп теми паттăрлăх, хăйне хĕрхенмесĕр революцилле ĕçлени пулса тăнă. 1925 çулта унăн рабочисемпе хресченсем революциллĕ кĕрешĕве хутшăннине кăтартакан «Хĕрлĕ çăлтăр» ятлă драма кун çути курать.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Мажит Гафури

Савăнăç сăвви

Саламласшăн паян эп тăван халăха,
Ирĕке тухнипе саламласшăн ăна.
Аслă çул халь пире мал енне йыхăрать.

Савнă халăхăм халь çĕнĕллĕ пурăнать.
Эп телейлĕ тинех – тин çуралнă ача
Тĕнчене юратса çакнашкал савăнать.

Килсе çитрĕç вĕсем – эпир кĕтнĕ кунсем.
Кашни кун халь – уяв, çут телей – кашни кун.
Саламлатăп сана, савнă халăх, чунтан.
Кур-ха, кур: еплерех хĕпĕртет манăн чун.

Эс калемĕм, васка пĕтĕмпех хут çине
Пуласси ячĕпе тăрăшса куçарма.
Тĕттĕм каç вĕçленет – çĕнĕ кун хĕмленет.
Уçă сывлăш, вĕрсем – хĕн-хура тĕп тума!

Савăнар-ха, туссем, чĕререн савăнар!

Йывăр пулчĕ пире хăтăлма сăнчăртан.
Халь ĕçе пикенер, ывăнмасăр ĕçлер!
Еплерех çутă кун хĕмленет, ав, малта!

Çук малта тек чăрмав, çук хĕн–хур тек малта.
Çутă ĕмĕт пире вăй-хал парĕ ялан.
Аслати сассипе кисретсе тĕнчене,
Ирĕк саврĕ сана, ырă халăхăм ман.

Ĕненетĕп: тÿпе, çук, пăрахмĕ пире!
Çутă ĕмĕт-тĕллев пулĕ пирĕн асра.
Сая ямăпăр тек пĕр куна та эпир.
Ĕçлеме пикенер – çук хакли вăхăтран.

Аслă çул халь пире мал енне йыхăрать.
Асаппа терт патши чĕтремест ăнсăртран.
Эп те, Габдельмажит,ав, юрлап савăнса,
Çак телейлĕ куна чĕререн савнăран.

(В. Тургай куçарнă)

Ĕçсемпе ыйтусем

Проект

Пушкăрт литературин XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи аталану çул-йĕрĕ (Батыр Валид, Ахтям Ихсан, Салям Галимов, Хасан Мухтар, Имай Насыри çыравçăсенчен пĕрин пултарулăхĕ тăрăх) *(пĕччен çын тĕпчевĕ).*



Коми литературин

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Коми литературин Уралпа Атăлçи тăрăхĕнчи ытти сăмахлăхсемпе танлаштарсан чылай ерипен аталаннă. Пĕр енчен, пĕтĕмпех йĕркеленсе çитнĕ илемлĕх пулăмĕ пек вăл Октябрьти революци хыççăн çеç калăпланнă. Тепĕр енчен илсен, революцичченхи аталану çулĕ унăн самай вăрăм. Çапла, енчен те хĕвел тухăç Европăри финн-угр халăхĕсен, удмуртсен, коми-пермяк, мордва тата мари литературисем виçĕ-тăватă вунăçуллăх хушшинче пĕтĕмпех йĕркеленсе çитнĕ пулсан, коми литературин йĕркеленӳ çулĕ революцичченхи тапхăрта çеç çур ĕмĕр ытла пулнă. Профессионаллă коми литературийĕ çурални те ытларах импровизациленĕ поэзипе, чи малтанах туй хӳхлевĕсемпе, çыхăннă.

XIX ĕмĕрти коми çыравçисем коми чĕлхипе те, вырăсла та çырнă. Çак тапхăрта коми чĕлхипе çеç ĕçленĕ çыравçăсем хушшинче В. Куратова, П. Клочкова, П. Распутина, В. Чисталаева, В. Лыткина палăртмалла, вырăсла çеç М. Истомин, С. Пантелеев, Ф. Филиппов, К. Жаков, И. Чисталев çыравçăсем çырнине асăнмалла. Унтан та ытларах, XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче халăх хушшинчен тухнă авторсен пысăк йышĕ хăйсене тивĕçтерекен мелсемпе усă курса хăйсен литературине çуратма хăтланнă. Вĕсенчен пĕрисем çак тĕллевпе вырăс литература йăли çине тайăнаççĕ, теприсем тăван халăхĕн фольклорĕпе усă кураççĕ, виççĕмĕшсем хăйсен хайлавĕсем валли материалпа темăна чиркӳ литературинчен уçлаççĕ.

Коми литературине никĕслекенĕ, пĕрремĕш сăвăçи Иван Куратов (1839-1875) пулса тăнă. Хăй пурăннă вăхăтра унăн темиçе сăвă çеç пичетленнĕ. Çапах та шăпах унăн сăввисенче халăхăн илемлĕ философиллĕ тĕнче курăмĕ вăйлă палăрнă. И. Куратов пултарулăхне тĕпчекенсем кăтартнă тăрăх, вăл зырянсене христианла çутта кăлараканĕ Стефан Пермский, ыр-усал тĕнĕн чӳк пуçĕ Пама, вăрман çынни Ягморт пирки калакан халапсемпе усă курнă. Çавăн пекех вăл халăх каларăшĕсемпе ваттисен сăмахĕсене, çивĕч те кĕскен каланисене пуçтарнă. Вĕсенчен нумайăшĕсем унăн хайлавĕсене кĕнĕ.

Каллистрат Жаков (*Жаков Каллистрат Фалалеевич, 1866-1926*) – коми-зырян хушшинчен тухнă вырăс философĕ, этнографĕ тата çыравçи. Унăн литературăри, ăслăлăхри тата вĕрентӳри ĕçĕ-хĕлĕ Санкт-Петербургри психоневрологи институчĕпе (1908 çулта уçăлнă) çыхăннă. Кунта вăл 1908-1917 çулсенче вĕрентекен пулса ĕçленĕ, 1911

çулта профессор ятне илнĕ. 1917 çул хыççăн К. Жаков Юрьевра, 1921 çултан вара Рига хулинче пурăннă. Çыравçă Рига хулинчех вилнĕ, 1990 çулта унăн вил тăприне Сыктывкар хулинчи Тĕп масар çине куçарнă.

К. Жаков вырăсла çырнă. Унăн пĕрремĕш хайлавĕсем – сăввисем, очеркĕсемпе калавĕсем Петербургра XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пичетленнĕ, «Çурçĕре Пама Бурморта шыраса» (1905) очерксен кĕнеки тӳрех анлă сарăлнă. Çыравçăн пĕлтерĕшлĕ хайлавĕсен шутĕнче çавăн пекех «Пурнăç тытăмĕ витĕр» (1914) автобиографиллĕ философиллĕ повеçе тата вăтам ĕмĕрсенчи коми пирки калакан «Биармия» (1916) эпикăлла поэмăна асăнмалла.

Николай Попов (*Попов Николай Павлович, 1901-1971*) – коми драматургĕ тата литература критикĕ. Граждан вăрçине хутшăннă. Мускаври журналистика институтне пĕтернĕ. Н. Попов Коми пролетари çыравçисен пĕрлĕхне йĕркелекенсенчен пĕри пулнă. 1937 çулта ăна репрессиленĕ, 1955 çулта ырă ятне тавăрнă.

Н. Поповăн пĕрремĕш хайлавĕсем хушшинче «Кам айăплă?», «Пурăнсан – юратăн» (иккĕше те 1924 çулта пичетленнĕ), «Вĕлтрен ачи Нина» (1928) пьесăсене палăртмалла. «Кам айăплă?», «Пурăнсан – юратăн» пьесăсенче драматург революцичченхи коми ял пурнăçĕн пĕтĕм хура енĕсене сăнласа парать. «Вĕлтрен ачи Нина» пьесăра автор ашшĕсĕр çуралнă хĕр ачан пурнăçне кивĕ пурнăçăн тĕшмĕшлĕхĕ наркăмăшланине кăтартать.

Н. Попов пултарулăхĕн çĕнĕ тапхăрĕ 1956 çул хыççăн пуçланать. Çак çулсенче вăл «Вăйлă хумсем» (1969) пьеса, «Этем чĕри» (1957), «Çуллахи кăвайт умĕнче» (1960) калавсем, «Наста» (1961) повесть, «Чăнлăха акакансем» (1957), «Вĕрентекен – коммунист» (1958) очерксене çырать. Унăн хайлавĕсен никĕсĕнче пурнăçри кăткăс, драмăла лару-тарусем выртаççĕ, вăл çынсен йывăр шăписене тĕпчет.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Серафим Попов

* * *

Пикенчĕ вăрман ылтăн тум тăхăнма.
Пилеш çакса ячĕ кĕрен шăрçасем.
Пуçларĕç хурсем ушкăна пухăнма,
Кĕçех кăнтăра çул тытаççĕ вĕсем.

Çапах та шеллетĕп эп иртнĕ куна.
Кăштах пушăрах пек халь манăн чĕрем…
Эс мĕншĕн тата çунтаратăн чуна,
Ман савнă пахчам, каласам, ĕнтрĕкре?

Ыран ирхине пуçлăн, ак, йăл кулма –
Пĕркенĕ шап-шурă юрпа Çĕр-анне.
Ыран пуçлĕ кӳлĕ пăрпа хупланма.
Çапла сывпулашĕ санпа кĕркунне.

Текех сасă памĕç ĕсчен чĕкеçсем,
Текех чăрмантармĕç сана ирхине.
Ан тив, вĕçсе кайччăрах хуркайăксем,
Эс алă сулса ăсатсам вĕсене.

(В. Тургай куçарнă)

◊ ***Реферат теми***

Серафим Алексеевич Попов (1913-2003) – пултарулла коми поэчĕ.



Мари (çармăс) литературин

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Çармăс чĕлхипе çырнă пĕрремĕш текстсем (сăвăсем, мухтав сăввисем) XVIII ĕмĕрте çапăнса тухнă. Ку вăл Раççей ăслăлăх академийĕ хатĕрленĕ кулленхи пурнăçпа историне тишкерекен ĕçсем пулнă. 1907-1913 çулсенче Хусанта тухса тăнă «Мари календарĕ» кăларăмра çармăс авторĕсен хайлавĕсем пичетленнĕ, ытларах чухне сăвăсем. Каярах драмăпа проза хайлавĕсем те çапăнса тухаççĕ.

Шăпах çак çулсерен тухса тăнă кăларăмра чи малтанах С. Чавайн, В. Васильев, Г. Эвайн (Кармазин), Г. Микай сăввисем кун çути курнă. Вĕсен хушшинче революцичченхи тапхăрти пултарулла çыравçă **Сергей Чавайн** (*Чавайн Сергей Григорьевич, 1888-1937*) пулнă, малашне вăл мари литературин аталанăвĕнче ун никĕсне хываканĕ пулса танă. Хăйĕн «Раща» сăввине С. Чавайн 1905 çулхи раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче Хусанти учительсен семинаринче вĕреннĕ тапхăрта çырнă. Каярахри тапхăрта çак куна çармăс илемлĕ литератури çуралнă кун тесе йышăннă.

Çармăс илемлĕ литературине çуралса аталанма пулăшнă çыравçăсем хушшинче çÿлерех асăннă çыравçăсемсĕр пуçне Н. Мухина, П. Глезденĕва, Т. Ефремова (Удюрминскине), В. Мухин-Савина, А. Конакова, П. Эмăш (Григорьева) тата ыттисене палăртмалла. Вĕсен хайлавĕсен никĕсенче халăх сăмахлăхĕн йăлисем выртаççĕ, çавăн пекех вĕсем çармăс чĕлхи çине вырăс çыравçисен (А. Пушкин, Н. Некрасов, А. Кольцов, Л. Толстой, К. Ушинский тата ыт.) хайлавĕсене куçарнă.

Çармăс литературине аталанма çавăн пекех çармăс чĕлхипе тухса тăнă пĕрремĕш хаçатсем те («Çар хыпарĕсем», «Шуçăм», «Хĕрлĕ хĕвел», «Вятка» тата ыт.) пулăшнă. Акă, 1927-1932 çулсенче «Çармăс ялĕ» хаçат Мусквара тухса тăнă. 1920 çулсенче вара илемлĕ литература альманахĕсемпе журналĕсем («Çĕнĕ пурнăç», «Сухаçă», «Сасă» тата ыт.) туха пуçланă. Çакă пĕтĕмпех литература аталанăвĕшĕн пархатарлă пулăм пулнă.

Çармăс литературине 1930 çул вĕçĕсенче пирĕн çĕршывра пуçланнă политикăлла репрессисем пысăк сиен кӳнĕ. Çапла 1937-1938 çулсенче национализмшăн айăпланса С. Чавайн, В. Мухин-Сави, О. Ипай, Ш. Осып, Я. Ялкайн, Н. Тишин, А. Эшкинин, Г. Эвайн тата ыт. тĕрмене, Й. Кырла, А. Эрыкан, И. Одар, Н. Игнатьев тата ыт. лагере ăсаннă. Тĕрĕссипе репресси çулĕсем çармăс литературинчи чи пултаруллă çыравçăсене çавапа çăлнă пек пĕтернĕ, литература аталанăвне чылай чарса лартнă.

Олык Ипай (*Степанов Ипатий Степанович, 191-1937*) – çармăс сăвăçи, прозаикĕ, драматургĕ, журналисчĕ тата куçаруçи. Ялти шкула пĕтернĕ хыççăн педагогика техникумне (1930) пĕтернĕ, икĕ çул хушши Мускаври кинематографи институтĕнче вĕреннĕ, анчах чире пула вĕренсе пĕтереймен. 1933 çултан вăл «Çамрăк коммунист» хаçат сотрудникĕнче, 1935-1937 çулсенче «Çĕнĕ вăй» журналăн яваплă секретарĕнче ĕçленĕ. Сăвăçăн пурнăçĕ 1937 çулта татăлнă, ăна ытти çармăс çыравçисемпе пĕрле суя айăплавпа арестленĕ те персе вĕлернĕ.

О. Ипай хăйĕн литературăри тата журналистикăри ĕç-хĕлне 1920 çулсен варринчен пуçланă, малтан юрă сăввисен авторĕ тата ял корреспонденчĕ пек чапа тухнă. Ултă çул хушшинче унăн сăвăсен 9 кĕнеки тухнă. Çармăс литературин историне вăл сăвăç-çĕнетӳçĕ (новатор) пек кĕнĕ, çармăс поэзийĕнче силлабика-тоника сăвă хывăмне аталантарнă. Çавăн пекех çармăс поэзине çĕнĕ жанрсемпе (сонет, терцинсем, триолет, газель, рубаи) пуянлатнă. О. Ипай çырнă хайлавсем хушшинче «Айтар», «Кашкăр», «Янай – Аргемблат ывăлĕ» поэма-юмахсене, «Актуган» халапа, «Чоткар паттăр пирки çырнă юрă» эпикăлла поэмăна (С. Чавайн, Шабдар Осып çыравçăсемпе пĕрле çырнă), «Ылтăн шурăмпуç» драмăна, «Пурнăç» сăвăлла романа асăнмалла.

Никон Игнатьев *(Игнатьев Никон Васильевич, 1895-1941)* –туçи марисен прозаикĕ, сăвăçи, куçаруçи, драматургĕ тата редакторĕ, туçи марисен литературине пуçарса яраканĕ. 1920 çултан вăл Козьмодемьянск хулинче пурăннă, «Хĕрлĕ ĕç» хаçатăн редакторĕнче ĕçленĕ. 1922 çулта Н. Игнатьева пичетленсе тухнă статьясенче национализм вăйлă тесе айăпланă та партинчен кăларнă. 1924 çултан вăл «Çармăс ялĕ» хаçатăн сотрудникĕ пулнă, Мари кĕнеке издательствин туçи марисен уйрăмĕнче, 1930 çултан журнал редакторĕ пулса ĕçленĕ. 1937 çулта ăна айăпсăр айăпласа арестленĕ, вунă çуллăха тĕрмене лартнă. Лагерьте вăл вилнĕ.

Хăйĕн пĕрремĕш хайлавĕсене Н. Игнатьев 1919 çулта çырнă. Вăл сăвă, поэма, пьеса жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ. Унăн хайлавĕсен тĕп

тематики çармăс халăхĕн пурнăçĕ пулса тăнă. Унăн «Хурçă çил», Савик», «Тăван çĕршыв» романĕсемпе «Комсомолка», «Кивви вилет» повеçĕсенче шăпах çак тема мала тухать. Н. Игнатьев пуринчен малтан туçи мари чĕлхи çине А. Пушкин, Л. Толстой, М. Горький çыравçăсен хăш-пĕр хайлавĕсене куçарнă.

Никандр Лекайн (*Лекайн Никандр Сергеевич, 1907-1960*)– çармăс прозаикĕ тата журналисчĕ, Мари Республикин пĕрремĕш халăх çыравçи. Хăйĕн пултарулăх çулне 1927 çултан çармăс ялĕн пурнăçĕ пирки калакан очерксемпе пуçланă. Пĕрремĕш калавĕсем 1929-1930 çулсенче «Çĕнĕ вăй» журналта кун çути курнă, каярах «Сакăр арăм» повесть çырнă.

Н. Лекайн хăй хайлавĕсенче нумай темăсене çĕкленĕ: граждан вăрçипе НЭП («Тимĕр вăй» роман), Аттелĕх вăрçи («Аслă вăрçă çулăмĕнче» роман), çармăс хресченĕсем Столыпинăн çĕр реформи тапхăрĕнче çĕршĕн кĕрĕшни («Мăн асаттесен çĕрĕ» роман). Н. Лейкан çавăн пекех ача-пăча хайлавĕсем те çырнă. Вĕсен шутĕнче «Ылтăн пĕрчĕ» повесть, «Тĕлĕнмелле лепĕш», «Хăмла çырли пахчи» хайлавсен пуххисене палăртмалла.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Сергей Чавайн

Пĕчĕк вăрман

Пур пирĕн тăрăхра пĕр пысăк мар вăрман.
Вăл кӳлĕ хĕрринче, ăна таçтан куран.
Унта хăватлă йывăçсем ӳсеççĕ,
Чечекĕсем чуна çĕклентереççĕ.
Ир пуçласа каçчен унта юрлать саркайăк.
Унта пурне те питĕ-питĕ лайăх.
Тăп-тăрă шыв юхать шăнкăртатса,
Çеремĕсем ем-ешĕл, тап-таса.
Эп юрататăп пĕтĕм чĕререн
Çак тăрăха, вăл тĕчере пĕрре.
Çак вăрмана касса тĕп тăвакан
Ылхан сăмахĕ илтетех манран.

(В. Тургай куçарнă)

Ĕçсемпе ыйтусем

♣ ***Вулама сĕнетпĕр***

Марийская литература // Энциклопедия Республики Марий Эл / Отв. ред. Н.И. Сараева. Йошкар-Ола, 2009. С. 172-174.



Мордва (ирçе-мăкшă) литератури

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Мордва литературин аталанăвĕ питех те хăйне майлă. Çапла хăш-пĕр тĕпчевçĕсен шучĕпе, мордва литератури вырăс алфавичĕ çинче çуралнине шута хурса унăн пуçламăш тапхăрне фольклорлă, мифологиллĕ, чиркÿ хайлавĕсене тата словарьсене, çавăн пекех мăкшăпа ирçе чĕлхисем çине тунă куçарусене кĕртмелле, урăхла каласан XVIII ĕмĕртен пуçламалла. Çак шухăша А.П. Феоктистовăн «Мордвасен çырупа литература чĕлхисен йĕркеленĕвĕн историйĕн очеркĕ» монографинче палăртнă. Кунта мордва халăхĕн нации литературин çăлкуçĕ пулса тăнă пичетленсе тухнă пĕрремĕш илемлĕ текстсене тишкернĕ. Çак шухăшах ытти литература тĕпчевçисем те çирĕплетеççĕ, вĕсем мордва халăхĕн сăмахлăхне илемлĕ пултарулăх аталанăвĕнчи пĕлтерĕшлĕ чикĕ пек пăхаççĕ.

Çакна пăхмасăрах мордва литературин пуçламăшĕ чи малтанах 1905-1907 çулсенчи революцине тата вырăс çырулăхĕпе çыхăннă. Мордва халăхĕ хушшинчен тухнă пĕрремĕш çыравçăсем хăйсен туйăмĕсемпе шухăшĕсене, халăхăн хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсене вырăс чĕлхипе уçса панă. Çакă, паллах, нации çырулăхĕн аталанăвĕпе тачă çыхăннă: çак тапхăрта мордва халăхĕн çырулăхĕ çуралнине пăхмасăрах официаллă сарăлман. Çакнашкал сăлтавсене пула 1917 çулхи революциччен мордва литературинче вырăсла çыракан çыравçăсен чылай пысăк ушканĕ йĕркеленнĕ (М. Герасимов,В. Бажанов, А. Завалишин, А. Дорогойченко, Д. Морской, З. Дорофеев).

Максим Бебан (*Бябин Максим Афанасьевич, 1913-1986*) – мăкшă-мордва сăвăçи, прозаикĕ, педагогĕ, мордва литературинчи юптару жанрне никĕслекенĕ. Пулас çыравçă ялти шкула (1926), Саранск хулинчи педтехникума (1931), куçăмсăр майпа Мордва педагогика институтне (1939) пĕтернĕ. Тĕрлĕ вăхăтра М. Бебан «Çĕнĕ пурнăç» район хаçачĕн литература сотрудникĕ (1931-1934), мордва çыравçисен Союзĕн секретарĕ (1934-1935), «Колхоз пурнăçĕ» журналăн яваплă секретарĕ (1935-1937), вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ (1939-1941) пулса ĕçленĕ. Аслă аттелĕх вăрçи çулĕсенче Кăнтăр-Хĕвел анăç фрончĕн Ковель станцийĕнче чукун çул управленийĕн çар комендантчĕн пулăшаканĕ пулнă. Çартан вăл капитан званийĕпе таврăннă.

М. Бебанăн «Микита-тракторист» ятлă пĕрремĕш сăвви «Мăкша чăнлăхĕ» хаçатра 1930 çулта пичетленнĕ. Çак çулсенчи сăвăсенче вăл колхозлă мордва ялне мухтаса çырнă. Çыравçă литературăри нумай жанрсемпе тухăçлă ĕçленĕ: поэма («Мĕн пирки юрлаççĕ шăхличсем», «Аса илӳсем», «Хулари мăкшă хĕрне», «Каçхи поездсем» тата ыт.), юптару («Манăн çуркунне», «Шăхлич тата сăпса», «Ăвăс пылĕ», «Ылтăн мăйăр» юптару пуххисем), очеркпа калав («Хĕвелпе пĕрле» кĕнеке), повесть (ачасем валли çырнă «Хĕрлĕ тăри»), роман («Çурхи кайăксем»), пьеса («Леш тĕнчерен тарни»). Çавăн пекех М. Бебан нумай вырăс тата тĕнче литературин классикĕсен хайлавĕсене (А. Пушкин, М. Лермонтов, И. Тургенев, Н. Некрасов, С. Есенин, А. Блок, А. Полежаев, Леси Украинки, Т. Шевченко, У. Шекспир) мăкшă чĕлхи çине куçарнă.

Макар Евсевьев (*Евсевьев Макар Евсевьевич, 1864-1931*) – ăслăхçă, халăха çутта кăлараканĕ, вĕрентекен. Ирçе халăхĕ хушшинчен тухнă. Унăн ячĕпе мордва çырулăхĕнчи, нацин харпăр ăнланăвĕнчи çĕнĕ утăмĕ çыхăннă. М. Евсевьевăн ăслăлăхри кăсăклантаракан ыйтусем нумай енлĕ пулнă: мордва чĕлхи, фольклорĕ тата этнографийĕ. Калаçу чĕлхине тĕпчесе вăл «Мордва халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем» ятлă ĕçе çырнă, мăкшăпа ирçе чĕлхи валли букварьсем хатĕрленĕ.

Октябрьти революци хыççăнхи улшăнусене М. Евсевьев хапăл туса йышаннă. Шăпах çак тапхăрта вăл мордва культуришĕн, çав шутра мордва илемлĕ сăмахлăхĕшĕн те, пĕлтерĕшлĕ ĕçсене çырса хатĕрленĕ, пичетлесе кăларнă. Вĕсен шутĕнче «Мордва-вырăс словарĕ», «Мордва грамматики», «Ăслăлăх мăкшă грамматики», «Мордва халăх туйĕ», «Терюшев пăлхавĕ», «Мордва юрри», «Мăкшă туйĕ», «Мăкшă юррисемпе тупмалли юмахĕсем», «Кĕске мордва грамматики» тата ыт. те.

Василий Коломасов (*Коломасов Василий Максимович, 1909-1987*) – ирçе прозаикĕ, сăвăçи, драматургĕ тата куçаруçи. Пĕрремĕш сăвви 1931 çулта пичетленнĕ. Литературăна прозаик тата драматург пек кĕнĕ. Унăн литературăри кулăш туртăмĕ пĕрремĕш прозăлла хайлавсенчех («Прокопыч» калав, «Яхим Лавгинов» повесть) вăйлă палăрнă. Каярах шăпах çак хайлавсенчен çыравçăн пĕтĕм пултарулăхĕн тĕп хайлавĕ – «Лавгинов» романĕ (1941-1956) çуралнă. Романăн тĕп теми – мордва ялĕнче колхоз йĕркелени, хресченсене колхоз йышĕнче çĕнĕ пурнăçа хăнăхтарасси. Çак роман мордва литературин ылтăн фондне кĕнĕ. Ăна 1962 çулта лента çине ӳкерсе телевиденипе кăтартнă. Хайлава вырăсла та куçăрса пичетленĕ. В. Коломасов болгар çыравçисен хайлавĕсене ирçе чĕлхи çине куçарнипе те паллă. Вăл Н.

Гоголь, Г. Гейне, М. Шолохов хайлавĕсене те тăван чĕлхи çине куçарнă.

Никул Эркай (*Иркай Николай Лазаревич, 1906-1978*) – мордва сăвăçи, прозаикĕ, драматургĕ тата куçаруçи. Литература ĕçне XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсен вĕçĕнчен пуçланă. Унăн «Çĕр çĕнелнĕ» ятлă пĕрремĕш сăвăсен пуххи 1932 çулта пичетленсе тухнă, каярах очерксемпе калавсен пуххи («Тымарĕсем çĕрнĕ») пичетленнĕ. 1936 çулта унăн мордва халăхĕн историйĕ пирки калакан «Ратор пирки юрă» поэма тухать. Çак тапхăртах çыравçăн ачасем валли çырнă юмахĕсемпе калавĕсем, «Теприн валли шăтăк ан алт» ятлă пьеси кун çути курать.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Никул Эркай

Тăрнасем

Тăрнасем пирĕн çийĕн вĕçеççĕ,
Шăрçа пек тăсăлса, хумханса.
Ман чунра ĕмĕтсем хĕмленеççĕ,
Аякка-аякка йыхăрса!
Тĕнчере çук кунпек тек асамлăх.
Илтнĕçемĕн тăрна сассине,
Ӳсĕр мар эп, анчах питĕ ӳсĕр,
Тăрнасем сасă панă чухне.
Эп пуçлатăп, чуна йăпатмалăх,
Несĕлсен авалхи юрине.
Хам халран кайнине пач сисмесĕр,
Тинкеретĕп сенкер тӳпене

(В. Тургай куçарнă)

Ĕçсемпе ыйтусем

***** ***Вуланине сӳтсе яватпăр***

1. Мордва литературипе Уралпа Атăлçи халăхĕсен ытти литературисен хушшинче мĕнле пĕрпеклĕхсем тата уйрăмлăхсем пур?
2. Ирçе тата мăкшă çыравçисем XX ĕмĕр пуçламăшĕнче мĕнле темăсемпе проблемăсене хайлавра сăнарланă?
3. «Мордва литератури», «ирçе литератури», «мăкшă литератури» текен терминсене ăнлантарса парăр. Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур?



Тутар литературы

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Кăшт урăхларах çулпа тутар литератури аталаннă: мусульман тĕнне пула унăн çырулăх та, хĕвел тухăç литературипе çыхăну та пулнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи тапхăрта вăл тутар çырулăхĕнчи кĕнекесен темиçе ĕмĕрхи пĕлӳпе хăнăхăвне эткере илнĕ. Çавăнпа та тишкеререх пăхсан кунта хĕвел тухăçĕнчи классикăлла литература йăлине (ытларах Фирдоуси, Низами, Джами, Сараи, Гали, Навои çыравçăсен ячĕсемпе

çыхăннă), çавăн пекех хĕвел тухăçĕнчи фольклор çăлкуçĕсен витĕмне («Пин те пĕр каç кĕнеки», «Ходже Насретдин пирки калакан халапсен кĕнеки», «Авиценне пирки калакан халапсем» тата ытти халăх поэзийĕн тĕслĕхĕсем) курма пулать. Унсăр пуçне XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче, Çутĕç (Просвещени) тапхăрĕнче, тĕрĕк чĕлхиллĕ литературăсенчен чи малтан шăпах тутар литератури Хĕвел тухăç халăхĕсен илемлĕх хăнăхăвне тата Раççейпе Хĕвел анăç литературисене хăйĕнче пĕрлештернĕ.

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, XIX ĕмĕрĕн вĕçĕнче тутар обществинче çавăн пекех вăтам азинчи тĕн схоластикине (вăл çĕр çинчи пурнăç яланлăх мар тата кĕске тесе вĕрентнине çĕкленĕ) тата мистикине хирĕç, европа культурипе ăслăлăхĕшĕн кĕрешÿ пуçланнă. Çакнашкал литература ытларах чиркÿпе тĕнĕн консервативлă çыннисене хирĕç тăнă. Çапах та çакна палăртмалла: тутар литератури тĕнпе тачă çыхăнура тăнин тарăн историллĕ тымарĕсем пур. Ислам, тĕнче тĕнĕсенчен пĕри пулнă май, пурнăçăн пур енĕнче те хăйĕн вĕрентĕвĕн пăхăнăвĕнче тăма хистенĕ: кăмăл-сипетпе культурăра та, социаллă пурнăçпа политика тĕлĕшĕнче те. Çавăнпа та мусульман тĕнĕ литературăна хăйĕн витĕмĕнчен кăларма, унăн ирĕклĕ те урăхла шухăшлавне чăтма пултарайман. Çакă пĕтĕмпех XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи тутар литературишĕн мусульман тĕнĕ, пĕр енчен, малта пыракан пулăм (çырулăх, хĕвел тухăç литературипе çыхăнни), тепĕр енчен, чарса тăракан туртăм (илемлĕ шухашлавăн çирĕп канонĕ, хайлавсен тематика ансăрлăхĕ) пулса тăнине кăтартать.

Фатих Амирхан (*Амирханов Мухамметфатых Зарифович, 1886-1926*) – тутар çыравçи тата публицисчĕ. Унăн пурнăçĕ ăс-хакăл шыравĕпе, иккĕленÿпе, шанчăк пĕтнипе пуян. Çыравçă Раççейри революциллĕ улшăнусене вăйлă шаннă, Февральти революцине хапăл туса йышăннă. Сывалми чирлĕ пулни (унăн икĕ урине те шалкăм çапнă), 1914-1918 çулсенчи Пĕрремĕш тĕнче тата граждан вăрçисем, Атăлçи тăрăхĕнчи выçлăх Амирхана чылай кисрентернĕ, мистицизм патне илсе çитернĕ. Çакă вара ун илемлĕх тĕнчинче мĕн виличченех юлнă.

1905-1907 çулсенче çыравçă Мускавра тухса тăнă «Çамрăксене пăхса ÿстересси» журналта секретарь пулса ĕçленĕ, 1907 çулта вара вăл Хусанта эрнесерен тухса тăратакан хаçата йĕркеленĕ. 1912-1917 çулсенче Амирхан «Хĕвел» ятлă национализмла хаçата тытса тăнă, илемлĕ литература тата кулăш журналĕсенче пичетленнĕ. Шăпах çак тапхăрта çыравçă Габдулла Тукай сăвăçпа туслă пулнă.

Ф. Амирханăн малтанхи калавĕсем хаçатра пичетленнĕ, вĕсенчен пĕрремĕшĕ – «Уяв умĕнхи каç курнă тĕлĕк» – 1907 çулта кун çути курнă. Кунта тĕнпе çыхăнман халăх уявне, çак уявра социаллă тата халăхсем хушшинчи килĕшӳлĕхе сăнласа панă. Унăн хăш-пĕр хайлавĕсенче, сăмахран, 1909 çулта пичетленнĕ «Фатхулла пурнăçĕ» повеçре, тĕн çыннисенчен хаяррăн кулнине курма пулать. Ку хайлавра тутарсен телейлĕ те савăнăçлă кун-çулĕ пирки калакан пурнăçа кĕме пултарайман ĕмĕте (кунта культурăпа техника аталанăвĕ, тĕн суйлавĕн ирĕклĕхĕ хăй вырăнне тупнă) сăнарланă. Çыравçăн революципе наци çĕкленĕвĕн тапхăрĕнче тутар мусульман çамрăкĕсем кăмăл-сипет шыравне кăтартакан хайлавĕсем уйрăмах анлă сарăлнă. Уйрăмăн «Хаят» повеçне, «Çул юппинче» романне, çавăн пекех «Танмаррисем» драмине палăртмалла. Çак хайлавсен никĕсене ытларах чух авторăн пурнăç пулăмĕсене тата кăмăл-туйăмĕсене хунă. Вĕсенче вăл иккĕленекен, шухăшлакан тата канăçсăрланакан çамрăксен тĕнчине, чи асамлă ĕмĕтшĕн те çак çамрăксем ĕненӳрен, хăйсен халăхĕн йăли-йĕркинчен пăрăнма хатĕр маррине уçса панă. Çапла майпа Амирхан ерипен наци хаклăхĕ, обществăри лăпкăлăхпа килĕшӳлĕх идеи патне таврăннă. Çыравçă пур япалара та илемпе килĕшӳ шыранă, çавăнпа та вăрă-хурахлăха, юхăнчăклăха, тивĕçсĕр çăмăллăха, юхăнтăрса янă палăксене, ертсе пыракансен сипетсĕр тыткаларăшне кураймасăр тата тарăхса çырнă.

Габдулла Тукай (*Тукай Габдулла Мухамедгарифович, 1886-1913*) – тутар сăвăçи, литература критикĕ, публицист, куçаруçă. Пулас сăвăçăн ачалăхĕ йывăр пулнă: пилĕк уйăхра чухнех вăл ашшĕсĕр юлнă, тăваттă тултарсан вара амăшне çухатнă. Ăна ют çынсем пăхса ӳстернĕ.

Тукайăн пĕрремĕш пултарулăх хăнăхăвĕ 1904 çулта ал вĕççĕн кăларакан «Çĕнĕ ĕмĕр» журналта пулнă. Çак вăхăтра вăл Крылов юптарăвĕсене тутарла куçарнă, Пушкинпа Лермонтов поэзийĕпе кăсăкланнă. Унăн пĕрремĕш таса тутар чĕлхипе çырнă паллă хайлавĕ А. Кольцовăн «Мĕн çывăратăн эс, хресчен?» сăввин куçарăвĕ пулнă, ăна 1905 çулта «Хресчен тĕлĕкĕ» ятпа çапăнса тухнă. Унсăр пуçне 1905 çулхи революци юхăмĕ çинче туха пуçланă тутар хаçачĕсемпе журналĕсенче («Шухăш», «Çĕнĕ ĕмĕр», «Çĕмрен») Г. Тукайăн сăввисемпе статйисем йышлă пичетленнĕ, вĕсенче вăл революци çĕкленĕ çивĕч темăсене çутатнă.

1907 çулта сăвăç хăй ку таранччен вĕреннĕ медреса пăрахса каять, унăн «ирĕклĕ пурнăç» пуçланать. Çак тапхăрта вăл «Шурале», «Пар лаша», «Тăван çĕре», «Каймастпăр!» ятлă сăвăсем çырнă, вĕсенче Тăван çĕршыв темине çĕкленĕ. Çак çулах Тукай Хусана пурăнма куçать,

пĕтĕмпех пултарулăха путать. Кунта вăл питĕ хăвăрт литература ушкăнĕсене кĕрет, «Реформа» хаçат тавра пуçтарăннă çамрăксемпе (Фатих Амирхан) çывăхланать. Хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне çак тапхăрта сăвăç «Çиçĕм», «Шевле» ятлă кулăшпа питлев журналĕсене халаллать. 1908 çул тĕлне Тукайăн поэзи тата очеркпа публицистика хайлавĕн ярăмĕсен пысăк йышĕ çырăннă. Унăн «Кĕрхи çилсем», «Пусмăр», «Дача», «Мĕн çитмест ялти çынна?», «Халăхсен шанчăкĕ...» пек сăввисем Туркай хăйпе пĕр вăхăтра пурăнакан çынсене – халăх ĕçĕшĕн кĕрĕшекенсене – чун чĕререн кăмăллланине кăтартаççĕ. 1911-1912 çулсенче çырса пичетленĕ сăвăсемпе çул çӳрев очеркĕсене сăвăç хăйĕн тăван, çуралнă енĕнче – Заказанье ялта пулса курнă хыççăн çырнă. Вĕсенче чăн пурнăçа кăтартнă, автор та халăх хӳтĕлевçи пек сăнарланнă. Çак тапхăртах Г. Тукай, хăйĕн сывлăхĕ япăхланнине пăхмасăрах, çул çӳреве тухса каять (Астрахань, Атăлçи, Уфа, Петербург, Троицк, Казахстан). Çул çӳревре вăл хăйĕн юлташĕсемпе тата ытти халăхсен пултарулăх çыннисемпе (Маджит Гафури, Сагит Рамиев сăвăçсем, Нариман Нариманов азербайджан çыравçи, Мулланур Вахитов революционер) курнăçать.

Габдулла Туркай пултарулăхĕ тутар литературишĕн пĕлтерешлĕ пулăм, малашнехи аталанăвĕшĕн чĕрĕ çăлкуç пулса тăнă. Вăл илемлĕ литературăна реализмпа халăхлăх юхăмĕпе аталанма майсем туса панă.

Зариф Башири (*Башири Зариф Шарафутдинович, 1888-1962*) – тутар сăвăçи, куçаруçи, публицисчĕ тата этнографĕ. Хайлавĕсене тутар, узбек, уйгур, çавăн пекех пушкăрт тата вырăс чĕлхипе çырнă. Пĕрремĕш хайлавĕсем медресра вĕреннĕ çулсемпе тӳр килеççĕ. Çапла, 1905 çулта «Хусан хыпарĕ» хаçатра унăн пĕрремĕш сăввисем «Сывă пултăр ирĕклĕх!», «Дума патне чĕнсе калани» пичетленеççĕ.

1908-1910 çулсенче унăн сăвăсен сакăр пуххи пичетленсе тухнă («Асăнмалăх», «Сăвăсем», «Çурхи хĕвел» тата ыт. те). Илемлĕ пултарулăхпа танах сăвăç ăслăлăх анинче те ĕçленĕ. 1909 çулта З. Башири «Чăвашсем» тата «Мещеряксем» (XVI ĕмĕр вĕçĕччен йĕркеленсе çитнĕ тутарсен этнографи ушкăнĕ) этнографиллĕ очерксем çырса пичетленĕ. 1911 çулта çыравçă «Чăваш хĕрĕ Униççе» повесть çырса кăларать. 1913 çултан вăл Капал хулинче (паянхи Казахстан çĕршывĕнче) пурăнать, вĕрентекен пулса, хаçат-журнал редакцийĕсенче ĕçлет. 1920-1930 çулсенче З. Башири Вăтам Ази патшалăх университетĕнче (Ташкент хули, Узбекистан) узбек тата уйгур чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çак тапхăртах Хусан хулинче «Узбек литератури», «Уйгур литератури», «Чăваш литератури» (куçарăвĕ тата ум сăмахĕ З. Баширин) хайлавсен пуххисем çапăнса

тухаççĕ. Çак кĕнекесен тĕп тĕллевĕ тутар вулаканĕсене наци литературисемпе паллаштарасси пулса тăна. 1938 çулта çыравçăна «халăх ташманĕ» тесе арестленĕ, 1948 çулчченех вăл малтан ГУЛАГра, кайран ссылкара пулнă. 1956 çулта кăна унăн ырă ятне тавăрнă.

Муса Джалиль (*Залилов Муса Мустафович, 1906-1944*) – тутар сăвăçи тата журналисчĕ, çар корреспонденчĕ. Совет Союзĕн геройĕ. Сăвăç 10-11 çултах сăвă çыра пуçланă, анчах вĕсем сыхланса юлман. Пĕрремĕш сыхланса юлнă сăввине вăл 13 çулта çырнă. 1931 çулта М. Джалиль МГУн литература факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Вĕреннĕ вăхăтра вăл Варлам Шаламов студентпа пĕр пӳлĕмре пурăннă, каярах Шаламов ăна халалласа «Муса Залилов студент» ятлă калав çырнă (1972 çулта пичетленсе тухнă).

1931-1932 çулсенче М. Джалиль ачасен тутар журналĕсен редакторĕ пулса ĕçленĕ. 1933 çултан – Мускавра тухса тăракан «Коммунист» тутар хаçачĕн литературăпа искусствă пайĕн пуçлăхĕ. 1934 çулта унăн хайлавĕсен икĕ пуххи кун çути курнă: комсомол темипе çырнă «Орденонослă миллионсем» тата «Сăвăсемпе поэмăсем».

1941 çулта сăвăçа Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Аслă политрук званийĕнче вăл Ленинград тата Волховск фрончĕсенче çапăçнă, «Паттăрлăх» çар хаçачĕн корреспонденчĕ пулнă. 1942 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче М. Джалиль йывăр аманнă та тыткăна лекнĕ. Тыткăнра та сăвăç тăшмансене хирĕç вăрттăн кĕрешме пăрахман, совет салтакĕсене концлагертен партизансем патне тарма пулашнă. 1943 çулхи август уйăхĕнче фашистсем темиçе çĕр çынна арестлеççĕ, вĕсен шутĕнче М. Джалиль те пулнă. Сăвăçа Моабит тĕрмине лартаççĕ. Темиçе уйăх хушши асаплантарнă хыççăн ăна 1944 çулхи августăн 25-мĕшĕнче пуçне касса вĕлереççĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Зариф Башири

Чăваш хĕрĕ Униççе

Повесть (сыпăк)

IV

Пирĕн ялтан хĕвел тухăçĕнче, кунти чăвашсен чĕлхипе каласан, кай енче, пĕр тăват-пилĕк çухрăмра Хăвăл Çырма текен пысăках мар чăваш ялĕ пур, унăн çĕрĕсем пирĕн ялăн çĕрĕсемпе чикĕ тытса тăраççĕ. Хăвăл Çырма улăхĕ, – эх, улăхĕ! – сарăлса выртать.

Пирĕн ял – Чутай – Кĕтне шывĕ тăрăх ларса тухнă. Ялăн икĕ енĕпе тăсăлса каять ем-ешĕл улăх. Çуллахи кунсене аса илсе калаçнă чухне ку таврари çынсем – чăвашсемпе тутарсем кăна мар, чул çуртсем хушшинче чунĕсем хытнă хула çыннисем те – Хусантисем те,

Шупашкартисем те – ытла нумай сăмах çапнипе чĕлхисем типсе кайнипе таплаттарса калаçаççĕ.

– Чутай çыннисем Кĕтне улăхĕнче кайăк-кĕшĕк, шывĕнче пулă тытнипе ырлăх кураççĕ, çатма тулли ăшаласа çиеççĕ, – теççĕ вĕсем.

Чăнах та, пирĕн Чутай тавралăхĕнче илемлĕ çанталăк, пĕр-пĕр ученăй çынсене ырлăх тăвасшăн шухăшласа кăларнă пек. Çĕр пичĕ çырансăр-варсăр тип-тикĕс,– çăмарта ил те кустар! Çуллахи вăхăтра, июнь-июль тĕлĕнче, çарансенче, çын кĕрсен, çын курăнми чавкапуçпе шурут ашкăнса ӳсет.

– Çава туртса илме çук, – теççĕ утă çулакансем.

Шурă, сарă, сенкер, хĕрлĕ чечексем чипер хĕрсем тĕрленĕ пурçăн палас çинчи пек лараççĕ. Хăшпĕр вырăнсенче вара çу варринче лапкăшпе, хăмач çитĕ витнĕ пек, хĕп-хĕрлĕ хурăн çырли, çĕр çырли, пĕрлĕхен сарăлса выртать. Таврари ял халăхĕ Чутай уй-хирĕсене мухтаса юрлать.

– Вĕсен хĕрлĕ питлĕ, çӳхе туталлă хĕрĕсем те хăйсен анлă улăхĕнчи пиçсе çитнĕ çырла пек, – теççĕ.

Йывăç та сахал мар. Шыв хĕрринчех йăмрасем кашласа лараççĕ. Хăмла çырли, хĕрлĕ хурлăхан, çĕмĕрт, пилеш, палан пиçсен вара ял халăхĕ пухса пĕтереймест.

Пула тытма килнĕ ачасем те, каçма çинчи кĕпе чӳхекен инкесем те, шыв хĕрринчи çерем çинче пуса саракан хĕрсем те, утă çулма килнĕ каччăсем те ытараймастчĕç Кĕтне шывне.

Пирĕн тарăн-çке Кĕтне,
Вак чул сарнă хăй тĕпне.
Кăтартать вăл çынсене, –
Йĕп ӳксен те – йĕпсене.

Кĕтне улăхĕнчи ырă шăршăллă, хĕрлĕ чечексене пуринчен ытла Униççепе эпĕ таптанă ĕнтĕ. Пирĕн ачалăх, чечексем çинче вĕçсе çӳрекен шурă, сарă, хĕрлĕ лĕпĕшсем пек, çак улăхра выляса, кулса иртсе кайрĕ.

Хăвăл Çырма ялĕн çĕрĕсем пуçланса каякан вырăнта, пĕр юшкăнлă кукăрта, пирĕн аттен çимĕç пахчи пурччĕ. Унта ĕлĕк пирĕн асаттемĕр – Тажи – 15-16 тĕпрен тăракан панулми пахчи ĕрчетнĕ, анчах çак тавралăхри пĕртен-пĕр сад-пахчннчен ашкăнма юратакан çынсем çĕмĕрсе-хуçса пĕтернипе халĕ улăх хĕрринче тункатасем кăна тăрса юлкаланă. Аттен пахчи те улăхра пĕртен-пĕр пахчаччĕ.

Атте хамăр пахчана сыхлама пире Униççепе иксĕмĕре хушнăччĕ. Эпир ирпеле, ыйхă тăрансан, хĕвел чылай çӳле кайсан тин пахчана каяттăмăр, апата вара кăнтăрла çитнĕ-çитмен таврăнаттăмăр. Эпир кăнтăрларан кайиччен хайхи пĕр-икĕ сехет те иртсе каятчĕ. Каçпа

каллех хĕвел аниччен таврăнаттăмăр. Хамăр çук чух пахчана вăрăсем кĕрсе йăлт таптаса çăрса пĕтеретчĕç. Тĕрĕссипе каласан, эпир унта пахча сыхлама мар, улăхра уçă сывлăшра выляса çӳреме çеç кайнă. Унта выляма лайăхчĕ. Мĕн чухлĕ шыва кĕмен-ши çав Кĕтнере? Пула тек чăматтăмăр-чăматтăмăр та шывран тухса юрра яраттăмăр. Чаракан çук. Килте ун пек ирĕк çукчĕ. Анне эпир юрланине илтес-тăвас пулсан, алхапăлах ятласа илет.

– Аçу-аннӳ умĕнче çăвар карса юрлама намăс мар-и сире? – тет.

Аслă улăхра çăвара уçма чаракан çук... Кăкăр тулли тухакан вăйлă сасă аякка-аякка каять те каялла таврăнать, юн тымарĕсене хускатса кăтăклать. Ырă шăршăллă, тĕслĕрен чечексенчен пуç кăшăлĕсемпе мăй çыххисем туса тăхăнатпăр та, еăмсана тутлă шăршă кăна кĕрсе çӳрет вара.

Кĕтнере пулă тытасси хăй мĕн тăрать тата! Лăпкăн юхса выртакан Кĕтне шывне вăлтана ăман е шăрчăк тирсе яратăн та вăлта хулли çине куç илмесĕр пăхса ларатăн. Акă хайхи вăлта хускалма тытăнэть... Мĕнле пулă кĕрĕ-ши? Пысăкраххи кĕрсе вăлта çиппине татмĕ-ши?

Çапла шухăшласа ларнă çĕртех хыпма пикенет. Вăлтана часрах туртса кăларатăн та ху хыçна ешĕл çерем çинелле ывăтса яратăн. Пӳрнерен кăшт вăрăмрах пулă хĕвел çинче кĕмĕл пек ялтăраса сиккелесе выртать. Пăхса тăма мĕн тери савăнăç!

– Çакна хут çине ӳкерсе илесчĕ, – тет Униççе.

Çапла пулă тытса ларнă вăхăтрах:

– Эй, карма çăварсем, пахчăра ачасем кĕнĕ-çке! – тесе кăшкăрни илтĕнсе каять.

Эпир иксĕмĕр вăлтасене пăрахатпăр та пахчаналла чупатпăр вара. Аркисене çарăкпа хăяр тултарнă ачасем хӳме урлă сике-сике каçаççĕ те тара параççĕ.

Ваттисем пире ятлатчĕç:

– Пилĕк пуслăх усси, вунă пуслăх сиенĕ тенĕ пек, пилĕк-ултă пулăшăн пахчăра çаратма паратăр-и, э? Эх, карма çăварсем...

– Çавăн чухлĕ пурлăха ача-пăчана шанса панă, тăмсай! – тесе хăшĕ-пĕрисем аттене вăрçса илетчĕç!

Кантăк Сарттинĕпе Тикĕт Минлебай ачисем нихçан та пахчана вăрра кĕместчĕç, анчах пахча-çимĕçне вара вăрра кĕрекенсенчен те ытларах çиетчĕç. Вĕсем мана илĕртме тесе, тӳпетейĕсем тулли ешĕл пăрçа е лаша хĕлĕхĕ, е тимĕр вĕçлĕ патак илсе килетчĕç. Кантăк Сарттинĕ пĕр хутаç пăрçа шĕкĕлчесе хыпать те:

–Эх, тутлă та! – текелесе ларать.

Эпĕ сĕлехе юхтарса пăхса тăнине курсан:

– Ме ӗнтӗ, эс те çисе пăх, хапсăнса ан тăр! – тесе ман еннелле пӗр ывăç пăрçа тăсать.

Илме тесе аллăма кăна тăсап – пăрçине каялла туртса илет:

– Э, çук! Хăяр е çарăк парсан çеç, – тет.

Эпӗ, ухмахӗ, вара пӗр ывăç пăрçа пуçне пӗрер хăяр е çарăк парса кӳпӗнтереттӗм мурсене. Вӗсем мана илӗртме ухăсем туса килетчӗç. Сарттинӗ уххипе персе яратчӗ те:

– Пăх-ха, епле, хытă каять, э! – тетчӗ. – Кун пек ухă никам та тăваймасть, – тетчӗ.

Йӗппи çӳлелле вӗçсе хăпарать. те, пӗкӗ пек çул çырса каялла анать.

– Кунпа кайăк тытма та пулать. Анчах кайăк тытнă чух хытă ярас пулмасть. Кайăкăн чӗринех пырса тăрăнать.

– Пӗр кайăк та пулин тытса курнă-и-ха?

– Икӗ кайăк кăвакал тытрăм ӗнтӗ эпӗ. Çав тери мăнтăр... Кайăк кăвакал тытма лăпкă çанталăк кирлӗ. Паян кун çиллӗрех çав ухă йӗппине айккинелле илсе каять...

– Çапла çав, – тетчӗ Фазл Хисаметдинӗ, – эпир кайăк кăвакалсене пӗрле илсе таврăнаттăмăр.

– Апла пулсан, парса хăвар мана...

– Миçе хăяр, миçе çарăк паратăн?

– Пӗлместӗп.

– Çирӗм хăяр та вунă çарăк пар та – ухă санăн.

– Ытла йӳнӗ ыйтатăн, ухмах! – тет Фазл Хисаметдинӗ ăна хирӗç. – Пуян Хасян ачине парсан, пӗр сăмахсăр пилӗк пус парать!... Çирӗм хăярӗ икӗ пус та вунă çарăкӗ пӗр пус çеç тăрать-çке. Пурӗ те виçӗ пуслăх çеç, ухмах.

– Сахал пулсан та, юрӗ ӗнтӗ. Каланă сăмах – персе янă ухă. Чăвашсем те: «Ут вӗçерӗнсен тыттарать, сăмах вӗçерӗнсен тыттармасть», – теççӗ.

Унтан Униççе еннелле çаврăнать:

– Çапла-и, чипер хӗр? – тет.

Униççе çемçелсе:

– Ан калаçса тăр ӗнтӗ, –тет мана.

Кантăк Сарттинне каллех аркă тулли хăяр, çарăк тиесе яратăп.

Çапла кирлӗ-кирлӗмарпа улталатчӗ пире.

Униççене шапа хупахӗсемпе илӗртетчӗ.

– Епле лайăх! Çип çине тирсе сулă вырăнне алла çыхма та, тухъя çине тирме те юрать, – тетчӗ.

Эпир çимĕç пахчине çапла сыхлаттăмăр. Кӳршĕ-аршăсем те, анне те ялан аттене:

– Пĕр-пĕр шанчăклăрах çынна хурал тытсан, пахча-çимĕç сутса мĕн чухлĕ укçа тума пултаратăн эсĕ, – тетчĕç.

Атте пахча çимĕçĕнчен усă курайманнишĕн пăшăрханмастчĕ:

– Эпĕ вăл пахча-çимĕçне укçа тăвассишĕн мар, халăха вĕрентме тĕслĕх пултăр тесе ӳстеретĕп. Халăх çĕрĕ-çке вăл. Малтан вăрласа сиймĕç. Пыра-киле хăйсем те пахча тытса çимĕç ӳстерме тытăнĕç, – тетчĕ.

– Тăмана! – тесе алă сулатчĕ анне.

Эпир Хăвăлçырма хирне сыхлакан Сантăр ачипе –Çимукпа паллашса-туслашса кайрăмăр, тин вара пирĕн пахча хураллас ĕç пăртакçă йĕркене кĕчĕ.

Пĕррехинче Унийçепе иксĕмĕр хӳшĕре йӳçĕтнĕ хăярпа çăкăр çисе лараттăмăр. Тулта такам кăшт ӳсĕрсе илни илтĕнсе кайрĕ.

– Кам унта? – кăшкăртăм эпĕ. Тухсах пăхрăм та карта çумĕнче – Çимук. Вăл карта хĕрринчен тытнă аллисем çине янахĕпе тĕреннĕ те хăйĕн çивĕч хура куçĕсене ялкăштарса кулса тăрать:

– Мĕнле пурăнатăн, тусăм? Пахча сыхласа пулать-и? Ачасем тарăхтармаççĕ-и?

Палласса эпĕ ăна тахçанах паллана, анчах хире-хирĕç тăрса калаçманччĕ. Вăл манпа ăшшăн шăкăл–шăкăл калаçни кăмăла кайрĕ. Çимук мана мĕн ачаран пĕрле ӳснĕ тантăш пекех туйăнса кайрĕ.

– Мĕншĕн унта тăратăн? Кунта кĕр, Çимук! – терĕм.

Вăл турткаланса-туса тăмарĕ, хӳме урлă вăшт кăна сиксе каçрĕ.

– Çăмăл та иккен эс, Çимук!

Хӳшĕрен Унийçе те тухрĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе чăвашла калаçрĕç.

– Аван пурăнатпăр-и?

– Аван! Питĕ те аван!

Çапла эпир Çимукпа туслашса кайрăмăр. Эпир ирхине пымассерен вăл яланах унтаччĕ, пахча сыхлама вара пире вăл канаш паратчĕ.

– Вăйă тесе пахча çинчен манса каяс пулмасть, – тетчĕ вăл. – Эпир унта-кунта пăрăнсан, Унийçе юлтăр. Унийçе кайсан, хамăр юлăпăр.

Унийçе килĕшесшĕн мар:

– Манăн пĕччен çӳрес-и?

– Акă çапла тăвăпăр эппин. Эсир кайсан, эп хам юлăп. Хутран-ситрен каймалли çĕре иксĕмĕр кайса килĕпĕр. Çапла-и, Унийçе?

Унийçе кулать.

– Капла тесен, килĕшме пулать! – тесе алă çупать Унисçе. Çимук пире ятласа та илчĕ:

– Çав Кантăк ачисене эсир мĕншĕн хăяр-çарăк тиесе яратăр. Вĕсем паракан япаласене эпир хамăр та тăватпăр.

Вара Çимук пĕрер картуз ясмăк-пăрçа тултарса килетчĕ:

– Акă, çиййĕр, тăраничченех çиййĕр. Ку япала пирĕн хирте хир тулли. Вăл хăй нихçан та йăрансем хушшине каймастчĕ, пиртен те хăяр-çарăк тавраш нихçан та ыйтмастчĕ. Парсассăн та çăкăрпа кăна çиетчĕ, юлашкине курăк хушшине пытарса хуратчĕ.

Çимук пире чăваш халап-юмахĕсене те каласа паратчĕ. Унăн кашни сăмахĕ вырăнлă. Вăл калаçма ăстаччĕ, пур юмахăн шухăшне те ăнлантарса пама тăрăшатчĕ.

Хăшпĕр çĕрте вара: – Çапла-çке вăл, – тесе вĕçлесе хуратчĕ.

– Пурăннă, тет пĕр ялта пĕр пуян чăваш. Вăл лавкка уçса сутă тăвакан мар, çĕр хуçи пулнă тет. – Çапла пуçласа яратчĕ вăл юмаххине, юлашкинчен вара: – Пирĕн чăваш халăхĕ суту-илӳ ĕçне хутшăнмасть, – тетчĕ.

Пирĕн атте те: – Пилĕкшер çĕр киллĕ чăваш ялне пырса кĕрсен те шăрпăк илеймесĕр чуну тухать, – тетчĕ. Чăвашсем хăйсем вара шăрпăк илме те таврари вырăç е тутар ялне чупаççĕ. Чăваша ăна ĕç пултăр. Вăл вăрман касать, вутă турттарать. Тырпул хума, выльăх-чĕрлĕх усрама çурт-йĕр çавăрать: кĕлетпе вите тăвать. Вĕсем упа пек, шав вăрманпа çапăçаççĕ.

Эпир Çимукăн ырă кăмăлне хăвăртрах туйса илтĕмĕр. Вăл тăлăха юлнă, амăшĕн малтанхи ачи пулнă. Амăшĕ, вăл çуралсан, виçĕ çул çеç пурăннă, вилнĕ, ун ашшĕне авлантарас тесе темĕн чухлĕ те тимлекен пулнă.

– Пултарулăху, ĕçченлĕхӳ пур, çамрăк-ха. Мĕнле авланмасăр ĕмĕр ирттерĕн? – тенĕ.

Анчах та Сантăр килĕшмен:

– Çимук пепкеме – савнă Праскин пĕртен-пĕр парнине – амаçури аллине парассăм çук! – тенĕ.

Тăхăр çул хушши ĕнтĕ ашшĕпе ывăлĕ иккĕш кăна пурăнаççĕ.

Сантăр хăй апат пĕçерет, çурт ăшчикне те хăй тасатса тирпейлесе тăрать, кĕпе-йĕм çуса саплама та çынна йăлăнмасть. Пурне те хăй тăвать.

– Ун патне кĕрсен, тусан пĕрчи кураймăн! –теççĕ ман атте-аннесем. Çимук çиййĕнче килте тĕртсе тунă улача кĕпе çеç пулин те, яланах таса та шăлса çыпăçтарнă пек ятуллă. Уринчи шур тăла чăлхи те, çăпати те тап–таса.

– Ман атте хĕллехи вăрăм çĕрсенче çăпата, пушăт пушмак туса, чей-сахăрлăх укçа тăвать, – тетчĕ Çимук.

Ун ашшĕ çак хир хуралне те Çимука пăхса ӳстерессишĕнех кĕрĕшнĕ.

Çимук çу каçиччен улăхри уçă сывлăшра çӳресе, шыва кĕрсе, çирĕп сывлăхлă ӳстĕр, ялти ашкăн ачасемпе выляса усала ан вĕрентĕр, тенĕ вăл, унран ĕçчен те ырă, ăслă çын ӳстерме тăрăшнă.

Çимук пĕр-пĕр кирлĕ мар ĕç тăвас пулсан, вăл ăна çапса, хĕнесе хăратман, хăтăрман.

– Ывăлăм, кирлĕ мар ĕç туса аннӳн чунне ан кӳрентер, ан пăшăрхантар, – тенĕ.

Çимуксенчен вунпилĕк çухрăмра Елчĕк ятлă пысăк пасарлă ял пур. Çав яла земствă пĕр пысăк больница лартнă. Праски хĕр чухне çак больницăн столовăйĕнче ĕçленĕ. Качча кайсан, ăна ĕçленĕ çĕртен ярас мар тесе, Сантăра та больницăнах ĕçе вырнаçтарнă.

– Çимук тутарла калаçма питĕ те ăстаччĕ, ăна никам та: – Ку чăваш ачи, –тесе каламĕ.

– Аçта вĕрентĕн тесен, вăл:

– Эпĕ пилĕк çул хушши çак улăхра хурал тăратăп. Ялан тутар хушшинче, – тетчĕ.

Михаля ятлă пĕр чăваш çирĕм çул ытла ĕнтĕ пуян Ахим патĕнче тарçăра пурăнать, йĕркеллĕ тутарла калаçаймасть. Çавна шутлатăп та:

– Çимук тутарла ăста тĕрĕс калаçни хăй ăнла-пуçлинчен, тăрăшнинчен килет, – тетĕп эпĕ хам ăшра.

Хăш чухне вăл хитре çавăрттарса вырăсла юрăсем юрлатчĕ, сăвăсем калатчĕ. Вырăс сăмахĕсене тури тутарсем пек «ăзнакум», «учĕнь» тесе пăсса каламастчĕ.

Пĕррехинче эпир Çимукпа хамăр пахча çумĕнче калаçса ларатпăр. Пирĕн пата пĕр пысăк хура лаша кӳлнĕ вăтам çулсенчи пĕр чăвашпа хамăр ял тутарĕсем килсе чарăнчĕç. Вĕсенчен пĕри сăмахсерен «ăзнаш» тесе тăрать. Ялта ăна хăйне те «Саккунçă Йăмăттин» тетчĕç. Кампа та пулин пĕр–пĕр япала çинчен калаçма тытăнсан, вăл тӳрех:

– «Ăзнаш Йăмăттин», тесе пуçласа каятчĕ. Тепĕр тутарĕ те пирĕн ялах; Мĕтĕркке Паттинĕ текен пĕр йăваш кăна çын.

Пирĕн пата çитсе чарăнчĕç те виççĕшĕ те çĕлĕкĕсене хывса сывлăх сунчĕç:

– Аван пурăнатăр-и?

– Пит аван, Апус пичче! – терĕ Çимук.

Хайхи чăваш, сăран алси ăшĕнчен пĕр хут татăкки кăларчĕ, ăна Çимук енне тăсрĕ.

– Эпĕ Паттин пиччене лаша сутнăччĕ те хутне вулаттарса пăхма çын тупаймарăм. Йăмăттин пичче те вуласа параймарĕ.

– Мĕншĕн Петяна вулаттармарăн?

– Килте çукчĕ-ха вăл, Елчĕке кайнă.

– Вуласа парас апла, – терĕ те Çимук, вулама тытăнчĕ.

Эпĕ вăл шăкăртаттарса вуланине ăнтан кайса пăхса тăтăм. – Çимук вырăсла та аттерен кая мар пĕлет иккен, – терĕм.

Çимук хута вуласа тухрĕ, ерипен тутарла ăнлантарма тытăнчĕ.

– Сакăр çулти кастарнă хура лаша, çилхи сылтăм енче выртать, мăйĕн сулахай енче шурă паллă пур...

Çимук ăнлантарса пынă май лешсем хут çинче кăтартнă лашан паллисене пăхса пычĕç. Юлашкинчен Йăмăттин вуçĕнчи çĕлĕкне аллине тытса хăяккăнах лартрĕ, кăкăрне каçăртса:

– Ăзнаш, тĕрĕс çырнă, – терĕ.

Çимук ман çине пăхса куç хĕссе илчĕ. Вĕсем кайсанах вăл пуç сулкаласа тăчĕ-тăчĕ те тăрăхласа кулса ячĕ.

– Саккунçă пиччӳ кусене халь пĕрер пулăштух илтерет ĕнтĕ. Ĕçĕ ытла пысăк пулчĕ-çке: – Ăзнаш, тĕрĕс çырнă, – терĕ Çимук. – Апус пичче пирĕн ял чăвашĕ вăл. Эпир шкула унăн Петя ятлă ывăлĕпе пĕрле çӳретпĕр. Тăрăшакан ача.

– Çимук, эс шкула та çӳретĕн-и?

– Ăзнаш так! – тесе хучĕ вăл кулса.

Çимуксен ялĕнчен инçех мар, пĕр ултă çухрăмра Аслă Таяпа ятлă пысăк ял пур. Унта пилĕк çул вĕренмелли вырăс шкулĕ уçнă. Уçăлнă çулсенче вĕренекен пит сахал пулнă.

– Мĕне кирлĕ пире вĕренни! Пирĕн ачасем пĕрех тиек пулас çук! – тесе чăвашсем ачисене вĕренме яман.

Хăвăлçырмара хĕрĕх кил. Çав хĕрĕх килтен пĕр Абуспа Сантăр çеç ачисене хут вĕрентеççĕ.

– Кăçал виççĕмĕш класа куçрăм ĕнтĕ, – тет Çимук. – Атте пилĕк çулĕпех вĕрентесшĕн: – Пысăка тухăн, тет, вулăсра писарь тавраш пулăн, тет.

Çимук хăйĕн учительницисене вара мухтаса та пĕтерейместчĕ.

– Ытарма та çук çав. Çав тери ырă кăмăллă та çепĕç чĕлхе-çăварлă. Эпир унăн сăмахĕсене хăлхасене тăратса итлесе ларатпăр. Вăл пире пĕр-пĕринпе лайăх, килĕштерсе пурăнма вĕрентет.

– Чăваш-и вара хăй?

– Чăвашне чăваш мар та, чăвашла лайăх пĕлет. – Чăваш – ĕçчен те тӳрĕ кăмăллă халăх. Анчах вĕсене тĕттĕмлĕх пĕтерет. Эсир хăвăр вĕренсе тухсан вĕсене те çутта кăларăр, тĕрĕс çул кăтартса парăр, тет.

Çимук, пĕр-пĕр ĕç çинчен калаçу тапратса ярсан яланах тенĕ пек хăй учительницине аса илетчĕ, шухăш тĕрĕс иккенне пĕлтернĕ вăл:

– Тетя Валя çапла калать, тетчĕ. Тетя Валя апла каласан, ку ĕç çинчен урăхла калаçма та юрамасть.

Пирĕн туслăх кунран-кун ӳссе пычĕ. Эпир улăхра тĕрлĕрен вылямалли япаласем тăваттăмăр, пуринчен ытла хут-кĕнекепе йăпанса ирттереттĕмĕр. Çимук вырăсла букварьпе вырăсла çырнă ача-пăча калавĕсем илсе килетчĕ. Унăççе ешĕл çерем çинче, çав кĕнекесем çине пăхса, сехечĕ-сехечĕпе ӳкерчĕксем тăватчĕ. Çимук ăна вырăс саспаллисемпе паллаштаратчĕ.

Çапла эпир улăхра виçĕ çул хушши çу кунĕсене пĕрле ирттертĕмĕр. Утăсем çулса пĕтерсен, хирти тырпула пуçтарнă вăхăта пирĕн çимĕç пахчинче те сыхламалли япаласем пĕтетчĕç. Вара эпир улăхран хамăр яла Чутая – таврăнаттăмăр, Çимук – Хăвăлçырмана.

Киле таврăнсан, чылайччен, вара тем çитмен пек, улăха тем юлнă пек туйăнатчĕ. Унăççе те йывăррăн сывлатчĕ:

– Халĕ Çимук ăçта-ши, мĕн ĕçлесе çӳрет-ши, пирĕн пата вăл пĕрре те килмĕ-ши ĕнтĕ? – тетчĕ.

Çимук та пире манса пурăнмастчĕ, хутран-ситрен те пулин киле-киле каятчĕ, хĕлле канмалли кунсенче, каникулсенче пирĕн патра Çимук икшер каç хăнара пулатчĕ, пире халапсем ярса, кĕнекесем вуласа паратчĕ, Унăççе тунă ӳкерчĕксене куратчĕ.

Çимука аттепе анне те юрататчĕç, тăван вырăннех хуратчĕç. Вăл килсен, анне ун ятне юри чей вĕрететчĕ, çу-хăйма хĕрхенмесĕр лартатчĕ. Ирхине эпир çывăрса тăнă çĕре çуллă пĕлĕм-икерчĕ ĕлкĕртетчĕ. Хăна çумĕнче хамăр та хăна пулаттăмăр. Çавăнпа Çимук асрах тăратчĕ:

– Ку эрнере Çимук килĕ-ши? – тесен, анне те кулатчĕ вара. – Пĕр лашана пула çĕр лаша шыв ĕçет тенĕ пек, сире çу-хăйма аса киле пуçларĕ-и-мĕн? – тетчĕ.

Унăççе хăй халăхне юрататчĕ, кам та пулин чăвашсене хурласа калаçнине илтсен, хурланатчĕ.

Хăвăлçырма чăвашĕсем утă çулма пиртен пĕр-икĕ кун маларах тухрĕç. Улăхра хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Сарлака хулпуççиллĕ патвар каччисем чашлаттараççĕ кăна утта. Ем-ешĕл кăпăшка утти вĕсем хыççăн хăю пек выртса пырать. Çĕнĕ çынсемпе çамрăк хĕрĕсем юрла-юрла утă тавăраççĕ. Ватăрах чăвашсем кăвăрчак пек типсе кайнă утта виçĕ йӳплĕ йывăç сенĕксемпе капансем çине парса тăраççĕ. Кĕтне шывĕ хĕррине чĕртнĕ вучахсенче чĕрĕ йăмра туратисемпе çирĕк турачĕсем

йăсăрланса выртаççĕ. Çилсĕр лăпкă çанталăкра вĕсен тĕтĕмĕ улăх тăрăх таçта çитех сарăлать.

– Мĕн тери илемлĕ вăхăт! – тетчĕ Униççе.

Вăл кунхине Çимук пирĕн пата килмерĕ. Вăл та утă çулакансемпе пĕрле ĕçлерĕ пулас!..

Эпир чăвашсем хĕрсе ĕçленине чылайччен пăхса тăтăмăр.

– Эх, çанталăкĕ паян! – терĕ Униççе, таврара хĕрӳ ĕç, унта чăн-чăн пурнăç!

Вăл хӳшше кĕрсе хут-кăранташ илсе тухрĕ те ешĕл çерем çине майланса ларчĕ.

– Пĕр-пĕр лайăх ӳкерчĕк туса пулмĕ-ши?

Çапла йăпанса ларса, эпир кăнтăрлана апата кайма та мансах кайнă. Пайтах вăхăт иртсен, атте персе çитрĕ:

– Ачасем, эсир мĕн туса ларатăр халиччен? Аннĕр унта кĕте-кĕте те ывăнчĕ. Яшки те сивĕнсе кайрĕ пулĕ ĕнтĕ. Пырăр хăвăртрах!

Эпĕ сăлтав шыраса тупрăм:

– Пахчана çын кĕрĕ терĕмĕр, – терĕм.

– Кам кĕтĕр?

– Утă çулакан чăвашсем...

– Çук, ачасем, – терĕ атте, хăй кулса илчĕ, – чăвашсем вĕсем çын пахчине кĕмеççĕ, çын япалине вăрлас йăла çук вĕсен!

– Илтрĕн-и, – тесе Униççе сиксе тăчĕ те ман ума пырса тăчĕ, савăннипе аллисене çăпăр-çăпăр çупса ячĕ, – атте мĕн терĕ? Чăвашсем вăрламаççĕ, темест-и?

– Чăвашсем, – терĕ атте, – пĕр-пĕр чăкăлтăш этем тепĕр çынна тиркесе вăрçнине илтсен: – Çитрĕ ĕнтĕ, çав тери ан ятлаç, вăл сан сурăхна тытса пусман-çке, – теççĕ.

Униççе вĕçсе каяс пек савăнчĕ.

– Атте мĕн терĕ, илтрĕн-и? – терĕ каллех мана.

Киле таврăнсан та канлĕ ларма пĕлмерĕ, улăхра хăй тунă ӳкерчĕксене хăй умне сарса хучĕ, апатне чăмлать, çав вăхăтрах ӳкерчĕкĕсене тӳрлетсе, вĕсене аллисемпе пĕрре куç умне илсе, тепре аяккарах тытса пăхкалать.

Пĕррехинче эпир чей ĕçсе ларатпăр. Атте килте çук. Пирĕн пата пĕр вăтăр-вăтăр пиллĕкри çын ыйткалама кĕчĕ. Çийĕнче пĕрмеллĕ сăхман, пуçĕнче кивĕ картуз. Вăл алăкран кĕнĕ-кĕмен тутар чĕлхине пăсса:

– Ыйткаласа çӳреттĕм те, мĕн те пулин пулмĕ-ши? – терĕ.

Эпир: «Ку вырăс тутарла та пăртак пĕлет иккен», – тесе шухăшларăмăр.

– Тутарла та пĕлен-ха, – тесе анне çăкăр касма тытăнчĕ.

– Ăçтисем эс? – терĕ ыйткалакан çине шăтарас пек пăхса ларакан Унйççе.

– Чеменсем...

Унйççе сак çинчен сиксе анчĕ те ыйткалаканпа анне хушшине кĕрсе тăчĕ:

– Анне, çăкăра кĕлĕмçĕшĕн сая ан яр! – тесе кăшкăрсах каларĕ, анне аллинчи çăкăрпа сахăра ярса илчĕ те каялла ĕлĕкхи вырăнне кайса хучĕ.

Эпир ним калама та аптраса тăратпăр.

– Мĕн хăтланатăн эс, Унйççе? – терĕ анне.

– Хăтлансан та килĕшет, – вăл ыйткалакан умне пырса тăчĕ те ыйтрĕ.

– Эс чăваш апла?

Ыйткалакан та шалт аптраса кайрĕ, пĕр хĕрелчĕ, пĕр шуралчĕ, вара пуçне лашт чикрĕ, тухса каймах тытăнчĕ.

– Чăваш-çке, чăваш... – терĕ хăй чĕтрекен сассипе.

– Мĕн питпе ыйткаласа çӳретĕн? Намăссăр, кĕççепит!

– Чирлĕ çын эп... ĕçлейместĕп... хăрах аллăм ним те тытаймасть. Чăлах... Унăн хăрах алли, чăнах та сусăрланнă: пӳрнисем хытса кайнă, ал тунийĕ те типшĕм, шăмми çеç. Унйççе ăна-кăна асăрхамасăрах:

– Килĕнте кам пур вара? – тесе ыйтрĕ.

– Никам та çук.

– Кам патĕнче пурăнан?

– Аттерен юлнă хăлтăк-халтăк пӳртре.

– Çĕрулми пахчи пур-и? Ялăрта кĕтӳ çӳретмелĕх улăх-çаран пур-и?

– Пур!..

Ыйткалакан алăк патнелле туртăнать.

Унйççе пирĕн çине пăхса илчĕ те татах хăйĕнне перет:

– Пурăнма пӳртӳ пур, улма лартма пахчу пур, выльăх валли улăх-çаран пур... Кахал эс, сĕмсĕр. Ялăрта сана çапла калама ырă çын та çук пулĕ. Ял çыннине пуçтарма кăларса янăшăн намăсланмаççĕ те-ши? Хурлансан, намăса пĕлсен, çак çынна йĕркене кĕртнĕ пулĕччĕç. Пыр, килне таврăн, капла, килĕрен–киле çынна култарса ан çӳре!.. Ку сан ĕç мар. Чăваш ятне ярса ан çӳре.

Ыйткалакан тухса кайсан та, Унйççе хĕрсе кайса калаçма тытăнчĕ:

– Çамрăккине те çамрăк та, хам ĕмĕрĕмре чăваш ыйткаласа çӳренине курманччĕ. Асатте-асаннесем: – Ыйткаласа çӳрени вăл пĕр

çыншăн çеç мар, пĕтĕм халăхшăн намăс япала, – тенĕ. Пирĕн ялта пулсан, тем тесен те çапла çӳретмеççĕ. Ун пек чăлах, суккăр, тăлăх, ача-пăчасăр ват çынсем пирĕн ялта çук-и? Пурăнаççĕ-çке, выçă та мар, çарамас та мар. Вăрă вăрлани пекех начар япала вăл пуçтарса çӳрени.

Униççе пăртак шухăша кайса тăчĕ те йăпăрт-япăрт тумланса тухса кайрĕ.

Нумай та тăмарĕ, кула-кула чупса кĕчĕ.

– Хайхи ман ыйткалакан пĕр виç кил урлă кайрĕ те Теке Девлетсен умне чарăнчĕ, пĕрре малалла, тепре хыçалалла çаврăнса пăхать. «Кĕрем-ши, кĕрем те маар-ши?» –тесе иккĕленсе тăрать пулас. Эп пăхса тăнине курчĕ те тăваллах улăхса кайрĕ. Çаврăнса пăхмассерен алăпа юнатăп. Мĕн ялтан тухса кайичченех пăхса тăтăм.

Атте килсе кĕчĕ:

– Мĕн эс, хĕрĕм, пушарти пек каллĕ-маллĕ парăлтатса çӳретĕн? Униççе мĕн пулни çинчен каласа парсанах:

– Тĕрĕс! – терĕ атте Униççене тӳрре кăларса. – Пур çын та хăй хырăмне хăй ĕçлесе тăрантармалла! Ĕçлейменнисене патшалăх пăхма тивĕçлĕ!

Униççе тата та ытларах савăнчĕ:

– Илтрĕр-и?

– Ăслăскерĕм ман, ылтăнăм, каçăр сăмсаллăскерĕм, – тесе анне Униççене пуçĕнчен лăпкарĕ.

Эпĕ вунпиллĕк тултартăм. Пĕвĕм те тăсăлчĕ. Униççе вунвиççĕре çеç пулин те, манран нумаях пĕчĕккĕ марччĕ. Вăл ӳснĕçемĕн хӳхĕмленсе пырать. Унăн çурта пек тӳрĕ пĕвĕ-сийĕ, вăлта хулли пек авкаланса тăракан çинче пилĕкĕ такама та савăнтарать, илĕртет. Уйăх пек çап-çаврака хуратутлăрах кĕрен пичĕ-куçĕ, хуп-хура та çăра куçхаршийĕ, вăрăм куçхăрпăкĕсемпе çĕмĕрт пек хура куçĕсем кам чĕрине йăпатмĕç! Кулнă чух курăнакан шап-шурă шăлĕсем, хăйне хăй сăпай тыткалани ун чун илемне тата та ытларах ӳстерет.

– Ĕçчен, ăслă хĕрача, – тесе мухтаса илетчĕ атте Униççе хăй килте çук чухне те.

Униççен куçĕсенче салхулăх, ачашланас килни сисĕнсе тăратчĕ. Вăл çак тарана çитиччен аттерен пуçне никам ачашласа юратнине те курман. Юратасса ăна анне те юрататчĕ, анчах вăл ăна çеç мар, хамăр ачасене ачашламастчĕ. Пăхас енĕпе нимĕн те калаймăн, лайăх пăхатчĕ, вăхăтра ĕçтерсе-çитеретчĕ, çуса тасататчĕ. Çемçе чĕлхепе ăшă сăмах каласси, лăпкаса юратасси çукчĕ вара. Çавăнпа Униççе ытларах атте çывăхĕнче пулма тăрăшатчĕ, унăн ăшă сăмахĕсемпе киленетчĕ.

Вăл хăйĕн хисепне хаклас енĕпе те ытти хĕрупраҫсенчен уйрăлса тăратчĕ. Пиччĕш патне кайса килсен вара, лере хăшпĕр чăваш хĕрĕсем хăйсене хăйсем чарусăр тыткалани, тирпейсĕр пулни çинчен тарăхса каласа паратчĕ.

Вунвиҫҫĕ тултарнă çĕре Унисçе тутарла вулама, çырма вĕренсе çитрĕ, тутарла кĕнекесене юратса ăнлансах вулатчĕ.

Пĕррехинче эпир Унисçепе иксĕмĕр панулми пахчинче пĕр вăрăм кăна калав вуласа тухрăмăр. Ытларах вăл вуларĕ, эпĕ итлесе тăтăм. Унисçе вуласа тухсан, чĕнмесĕр ларчĕ-ларчĕ те йывăррăн сывласа ячĕ:

– Хăçан чăвашла çакăн пек кĕнекесем пулĕç-ши?

– Сан пек хут пĕлекен чăваш хĕрĕсем ытларах ӳсе пуçласан...

Вăл ман çине пăхса ăшшăн кулса илчĕ:

– Ан вăтантар-ха!.. – тет.

Вунтăватта çитнĕ ятпа, атте ăна вăл çуралнă кун тухъя çĕлеттерсе пачĕ. Тухйине шур пир çине лаппипе шăрçа, йĕри-тавра 10-15 пуслăх кĕмĕл тенкĕсем çакса çĕленĕ. Тухйин икĕ енче усăнса тăракан икĕ хăлхи те çавăн пек тенкĕсенченех. Пĕчĕккĕ чухне атте парса хăварнă вунă пуслăх кĕмĕл укçине те Унисçе тухйин çамки çине çакса ячĕ.

– Ку тенкĕ – парне, – аса илчĕ вăл.

Куçкĕски умĕнче юсанма тесен, каçсах каятчĕ вара:

– Халь чăваш хĕрĕ пекех пултăм пулĕ ĕнтĕ? – тесе ыйтатчĕ манран.

– Мĕн эс çав таранччен тум пирки аташатăн?

– Эй, талтам! – Пире пĕрех тутар каччисем илес çук, мĕн тесен те чăваш чăвашах пулать ĕнтĕ. Атте-аннесенчен, асатте-асаннесенчен юлнă йăлана тытасах пулать, тиркеме юрамасть.

Кăна вăл шахвăртса каланине эпĕ унăн куçне пăхсах сисрĕм. Вăл хăйĕн халăхне чунтан-чĕререн юратать.

Пĕртен-пĕр ывăл ача пулнипе мана атте-анне питĕ ачашлатчĕç. Тутарăн çемьере аслă ывăлне йăмăкĕсем «Мулла[1] абый», «Деӳ[2] абый», «Тети абый» тесе чĕнес йăла пур. Пирĕн те йăмăксем мана «Тети абый» вырăнне «Талтам» тетчĕç. Унисçе те вĕсем хыççăн «Талтам» тетчĕ. Анчах та Унисçе пĕчĕк ача пек «талтам» тенине юратас килми пулчĕ манăн.

– Пăрах мана «талтам» тесе чĕнме!

– Мĕн тесе чĕнес?

– Мĕнле чĕнсен те юрать! «Митта» тетĕн-и, «Митрафан» тетĕн-и, «Паллюк» тетĕн-и – пурпĕрех. «Талтам» теме çех пăрах.

[1]Аслă.
[2]Лайăх.

Вара вăл мана «Заркай» теме тытăнчĕ, Капла чĕнни хама та килĕшрĕ.

Унççе килнĕренпе эпĕ Хисамукпа, Сеннипе вылями пултăм. Астăватăп, пĕрре эпир Унççепе иксĕмĕр улăха кайма тухрăмăр. Пире хирĕç таçтан Хисамукпа Сенни çĕр çĕмĕрсе кирлĕ-кирлĕ мар сăмахсемпе палкаса килеççĕ. Эпир, вĕсемпе хирĕç пулас мар тесе, урамăн тепĕр енне каçрăмăр. Анчах та вĕсем пире курса ĕлкĕрчĕç пулмалла, васкасах пирĕн паталла утма тытăнчĕç. Хисамук çитрĕ те мана хулпуççинчен çапса чарчĕ, Сеннийĕ ума пырса тăчĕ. Унççе малалла утрĕ.

– Çапла! Пĕр шăршлă чăваш хĕрне пула ĕлĕкхи тусусене те мантăн пулать?

– Ваçукăн хура пӳртне хăçан хăтана каян-ха?..

– Пире те туй каччи туса илсе кайăн... Чăваш хура пӳрчĕн хăрăмлă пĕренисем çине таянса ларма чăпта витĕнсе пырăпăр!..

Çиллĕмпе иккĕшне икĕ енне сирпĕтсе ятăм та тара патăм. Пăртак кайрăм та:

– Юрĕ, – терĕм каялла çаврăнса. – Лаша вăрлама пырăр. Чăвашсем тытăç те çамкăрсене шĕлепкесĕр пăтапа пăталĕç... – терĕм.

Вĕсем акăш-макăш усал сăмахсемпе кăшкăрса юнаса юлчĕç.

Улăха çитиччен Унççе çине пĕрре пуç çĕклесе пăхмарăм. Хăй мĕн шутларĕ-ши ĕнтĕ – пĕлместĕп. Катари йывăçсем хушшине çитсен чарăнтăмăр та, куç хӳрипе кăна Унççе çине пăхса илтĕм. Вăл çĕрелле пăхнă та курăк тăррисене чĕпĕтет. Куçĕсем шывланнă...

– Йĕместĕн пуль-çке?

– Йĕрĕн те çав!..

– Мĕншĕн тата?

– Чăваш теççĕ те, ним вырăнне те хумаççĕ...

– Эй, Унççе, – терĕм эпĕ, ăна лăплантарма тăрăшса, – савăн эс çав тирпейсĕрсем чăваш марришĕн!

Вăл пуçне çĕклерĕ, ман çине пăхрĕ. Унăн питçăмартийĕсем тăрăх куççуль шăпăртатса юхса анчĕ. Сылтăм аллине ман хулпуççи çине хурса, ун çине пуçне хучĕ:

– Çапла, Заркай!... – тесе ассăн сывласа илчĕ. – Заркайăм! Мĕн тесен те тутар чăваша юратмасть ĕнтĕ... Çавăн пекех...

– Мĕн çавăн пекех? – ыйтрăм эпĕ тĕлĕнсе, – çавăн пекех чăваш та тутара юратмасть, çапла-и?

Вăл нимĕн те чĕнмерĕ, çумарах тĕршĕнчĕ те тухйине хывса хăй арки çине хучĕ. Унăн çӳç пайăркисем ман питĕме ачашшăн кăтăклаççĕ.

Çичĕ çул ĕнтĕ пĕр килте пĕрле выляса ӳсрĕмĕр. Анчах вăл нихçан та ман çума капла тĕршĕнекен марччĕ. Ку мана савăнтарчĕ, чуна темле ыррăн туйăнса килчĕ. Эпĕ ăна сылтăм алăпа хуллен кăна пилĕкĕнчен ыталарăм.

– Унăççе, мĕн тери чипер эс, пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла – тесе калассăм килчĕ, хăяймарăм.

– Епле ăслă эсĕ, – тесе каласа хутăм. Унтан хам çумарах çупăрласа илтĕм те вăйпа чăмăртарăм. Вăл туртăнмарĕ, хăй ман çума ачашшăн йăпшăнчĕ.

Çак самантра манăн чĕрере халиччен пулман туйăмсем çуралчĕç, хăйсен çуначĕсем çине илсе лартнă пек чуна çĕклерĕç. Эпир киле таврăнма тухсан именнипе тата вăтаннипе пĕр-пĕрин çине пуç çĕклесе пăхаймарăмăр, пĕрер сăмах чĕнме те хăяймарăмăр. Çĕрле эпĕ нумайччен çывăраймарăм, куçхупанкисем йывăрлансан та, ыйхă килмерĕ. Пуçа пĕр шухăш хыççăн тепри килсе тăрать. – Хăçан çав чăваш хĕрне качча илетĕн, хăçан хура пӳрте çĕнĕ кĕрӳ пулса кĕретĕн эсĕ? – тесе ыйтаççĕ шухăшсем. Кама илетĕн? – тесе пуçа минретеççĕ вĕсем. Хăвăн çывăх тус-тантăшна-и? Унăççе йăмăкна-и? Улăхра Унăççене ачашланă чухнехи туйăмсем çĕнĕрен чĕрене пырса хĕссе каяççĕ.

Мĕншĕн апла-ха ку?..

Сарра йăмăкăма та Унăççене юратнă пекех юрататăп. Кунне темиçе хутчен тытса чуптăватăп... Анчах Унăççене савса ыталанă туйăмсем пĕрре те йăмăксене юратнă туйăмсем пек мар? Мĕншĕн ку туйăмсем пуçа çавăраççĕ?

(З. Стеклова куçарнă)

Муса Джалиль

Вилĕме

Пĕр хут çеç мар сана сив тыткăнунтан
Ман тиврĕ хăтăлма.
«Пĕтрĕм иккен!» – тесессĕнех, шăпа
Пуçлать мана çăлма.

Санпа эп хатĕр пулнă кĕрешме –
Вăй-халăм çитнĕ чух.
Кам – паттăр, уншăн çакă пурнăçра
Пачах хăрушлăх çук.

Эс – «Сан юрру тинех вĕçленчĕ!» – тен,
Йĕкĕлтешсе, мана.
Эп – пурнăçа саватăп ытларах,
Тарăхтарса сана!

Санпа, пĕлетĕп, вилĕм шӳтлеме
Пачах та юрамасть.
Тата, туятăп, кун пек ир вилме
Шăпам ирĕк памасть.

Мана, мĕн, йăлăхтарнă-и?
Е чăрсăрлăхăм ман?
Çук, çук, вилес килмест-ха питĕ ир!
Пурăнмалла-ха ман!

Тăвăлсенчен пытарăнма пулать,
Пулать шăп пурăнма.
Эп – яланах вăй виçрĕм тăвăлпа,
Пĕлмерĕм парăнма.

Халь, çутă шанчăкăм, хăпсам манран,
Мансам тахçанхине!
Курсам: тăлларĕç тимĕр сăчăрпа
Салтак аллисене.

Туятăп эп: тул çутăличчен
Ман тивĕ куç хупма.
Эп вилĕп, хамăн халăха савса,
Савса çĕршывăма!

Çакна пула сан сивĕ ытамна
Эп лекрĕм пĕрре мар.

Анчах та вилĕм, пĕл, пĕлсем – сана
Юри эп шыраман.

Тен, çак мухтавлă çулсăр урă çул
Кĕтет хăшне-пĕрне?..
Чăн-чăн арçын вара кун пек чухне,
Çук, ямастех ятне.

Кĕçех эп сӳнĕп, çăлтăр пек, – мана
Урăх шăпа паман.
Вилетĕп эп, савса çĕршывăма,
Савса халăхăма!

(В. Тургай куçарнă)

Ĕçсемпе ыйтусем

Проект

Пуç тайса тав тăватпăр... (Муса Джалиль пурнăçĕпе пултарулăхĕ тăрăх) *(ушкăнла тĕпчев).*



Удмурт литератури

Литература пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем

Удмурт чĕлхипе çырнă илемлĕ литература хăйен тымарĕсемпе XVIII ĕмĕре каять, унăн никĕсĕ пĕрремĕш фольклор пуххисемпе вырăс çыравçисен куçарăвĕсем пичетленсе тухни пулса тăнă. Пĕрремĕш çыравçăсем хушшинче хăйсен хайлавĕсене вырăсла çырнă Г. Верещагина, И. Васильева, И. Михеева, И. Яковлева, Кедра Митрея, К. Герда палăртмалла. Чи малтан пичетленсе тухнă удмурт литературин хайлавĕсем шутне Г. Верещагинăн «Сарă кăвак кăвакарчăн» сăвви тата М. Можгинăн «Таркăн» баллади кĕрет.

Ашальчи Оки *(Векшина Акилина Григорьевна, 1898-1973)* – 1920 çулсенче уйрăмах паллă пулнă пĕрремĕш хĕрарăм удмурт сăвăçи. Çавăн пекех вăл куç тухтăрĕ, фронтра пулнă тухтăр (медицина службисен капитанĕ) пек паллă. Унăн пĕрремĕш сăввисемпе калавĕсем 1918 çулта удмурт хаçачĕсенче пичетленнĕ. 1928 çулта «Çул айккинче» тата «Мĕн пирки юрлать вотяк (удмурт) хĕрĕ» ятпа пĕрремĕш сăвăсен пуххисем кун çути кураççĕ. 1933 çулта сăвăç репресси айне лекет, ăна

националистсемпе çыхăннă тесе айаплаççĕ. Çакăн хыççăн Ашальчи Оки пултарулăх ĕçĕнчен пăрăнать.

Кедра Митрей (*Корепанов Дмитрий Иванович, 1892-1949*) – удмурт сăвăçи тата вĕрентекенĕ. Пултарулăх çулĕ çине Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче тăнă. Ăна 1914 çулта çара илнĕ, Инçет Хĕвел тухăçĕнчи Благовещенск хулинче хĕсметре тăнă. 1917 çулхи революци тапхăрĕнче обществăлла ĕçе сăвăç хастар хутшăннă, «Аслати» ятлă хаçат кăларса тăнă, удмурт халăхĕ, çĕнĕ пурнăç, удмурт чĕлхин аталанăвĕ пирки статьясем çырнă. Граждан вăрçи çулĕсенче Кедра Митрей Иркутск хулинче пулнă, Çĕпĕрти партизансен юхăмне хутшăннă, Кольчак майлисем патĕнче тыткăнра та пулнă.

1920 çулта çыравçă тăван тăрăха таврăннă, виçĕ çул хушши халăхăн вĕрентӳ пайĕн ертӳçи пулнă. 1921 çулта Кедра Митрей удмурт çĕрĕ Раççейпе пĕрлешнине халалланă удмурт поэзийĕнчи пĕрремĕш «Паттăр Пилеш кайăкĕ» ятлă историллĕ поэмăна пичетлесе кăларнă. 1929 çулта вара унăн удмурт литературинчи пĕрремĕш роман пулса тăнă «Йывар пусмăрлăх» ятлă хайлавĕ кун çути курнă.

1938 çулта Кедра Митрея айăпсăр айăпласа арестлеççĕ, 8 çуллăха, 1946 çулччен, тĕрмене хупаççĕ. Ирĕке тухни икĕ çул иртсен, 1948 çулта, сăвăçа каллех репрессилеççĕ. Кедра Митрей ссылкăра Новосибирск облаçĕнче 1949 çулта вилет. Унăн ырă ятне 1956 çулта тавăрнă.

Кузебай Герд (*Чайников Кузьма Павлович, 1898-1937*) – удмурт сăвăçи, прозаикĕ, драматургĕ, куçаруçи, удмурт наци культурин хастар пуçаруçи. Вăл çавăн пекех В. Адями, К.П. Герд, К. Гэрд, И. Сюмори хушма ятсемпе пичетленнĕ.

Герд вырăсла тата удмуртла çырнă. Хăйĕн пĕрремĕш сăввисене вăл 12 çулта удмурт фольклорĕн витĕмĕпе çыра пуçланă. 1915 çулта вара, учительсем хатĕрлекен семинаринче вĕреннĕ чух, «Семинар калемĕ» ятлă ал вĕççĕн çырса тăнă журнал йĕркелет, çак журнала «Кунашкал-унашкал», «Такам урăххи», «Нумайăшсенчен пĕри» тата ытти хушма ятсемпе хăйĕн сăввисемпе калавĕсене те кĕртет. Октябрьти революцичченхи тапхăрта вăл «Шошма çийĕн» (вырăсла çырнă), «Вăрçă», «Канăççăр çын», «Онтон пăлхавçă» поэмăсене çырнă.

Революци хыççăнхи вăхăтра К. Герд нумай пичетленнĕ, хăй пурăннă вăхăтрах унăн «Кĕслеçĕ», «Чечекленекен çĕр», «Пусма картлашки» ятлă хайлавсен пуххисем тухнă. Çак вăхатри сăвăсенче вăл рабочисен пурнăçĕпе ĕçĕ, ял хуçалăхне механизацилени пирки çырнă. «Ялти çил-тăман» сăввинче вара колхозсем тăвас ĕçре пулса иртекен пусмăрлăхпа пуçтахлăха хирĕç тăнă.

1919 çулта Елабуга хулинче уйрăм кăларăмпа унăн икĕ пьесы пичетленнĕ: «Çутă çула» (авторĕ пек К.П. Чайников хушамата кăтартнă) тата «Свидетельсем» (хайлав авторĕ пек К. Герд ята кăтартнă). 1922 çулта К. Гердăн пĕрремĕш сăвăсен пуххи «Кĕслеçĕ» ятпа çапăнса тухнă. Кунта удмуртсен пуян фольклор йăлисем сăвăç çине витĕм кӳни вăйлă курăнать. Унăн романтикăлла поэзийĕ тарăн социаллă улшăнусем пулса иртекен тапхăрта пурăнакан çыннăн тĕнчекрăмĕпе кăмăл пăлхавĕсене кăтартса парать. Герд ачасем валли те çырнă. Унăн çамрăк вулакансем валли çырнă çĕр ытла сăввине тата халăх сăмахлăхĕн мотивĕпе йĕркеленĕ «Упасем» поэмине палăртмалла. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли сăвăç «Ăшă çумăр», «Çĕнĕ çул» вулав кĕнекисем хатĕрленĕ, пилĕк вĕренӳ кĕнекине, çавăн пекех Л. Толстой, П. Замойский, В. Бианка хайлавĕсене куçарнă.

К. Герд удмурт халăх сăмахлăхне хастар пуçтаракансенчен пĕри пулнă, уйрăмах халăх юррисене. 1920 çулсенче вăл халăх юррисен «Малмыжск удмурчĕсен юррисем», «Удмурт юррисем» кĕнекисене пичетлесе кăларнă. Литература институтĕнче вĕреннĕ çулсенче сăвăç фольклористикăпа уйрăмах тимлĕ ĕçленĕ, фольклор хайлавĕсен темиçе пуххине каларнă.

Хăйĕн пултарулăхĕнче К. Герд лирикăн пĕтĕм жанр пуянлăхĕпе усă курнă – пысăках мар лирикăлла сăвăсенчен пуçласа романпа баллада таранах. Удмурт поэзине вăл çĕнĕ поэзи формисене – сонет, триолет, тĕрлĕ верлибр тĕсĕсем – кĕртет. Унăн пултарулăхĕ удмурт литературин малашнехи аталанăвĕ çине пысăк витĕм кӳнĕ.

Илемлĕ хайлав вулавĕ

Кузебай Герд

Эпир акатпăр

Эпир акатпăр та акатпăр…
Вырмашкăн пирĕн хыççăн тухĕç ыттисем,
Хавхаланса та савăнса, хире.
Эпир акатпăр та акатпăр!

Ешĕл калча пек пирĕн сăмахсем.
Кĕçех хумханĕ ылтăн тĕслĕ тырă,
Вылянĕ вăл çилпе çул икĕ енĕпе.

Ешĕл калча пек пирĕн сăмахсем.
Эпир акатпăр та акатпăр…
Вырмашкăн пирĕн хыççăн тухĕç ыттисем –
Е çыхĕç çирĕп кĕлтесем вĕсем,
Е таптĕç ешĕл калчана…

Хăямата!
Эпир акатпăр та акатпăр…

(В. Тургай куçарнă)

Ĕçсемпе ыйтусем

¤ ***Пултарулăх ĕçне тăватпăр***

«ХХ ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи удмурт литературин тумхахлă çулĕ» темăпа пысăках мар эссе çырăр.

ТУПМАЛЛИ

Илемлĕ литература аталанăвĕн историйĕнчен. *Кӳртĕм сăмах вырăнне*.....4
ХХ ĔМĔРЧЧЕНХИ ИЛЕМЛĔ СĂМАХ ПУЛТАРУЛĂХĔ……...……..…..8
Чăваш халăх сăмахлăхĕ.....8
ХХ ĕмĕрченхи чăваш литературин ум историйĕ.....15
ЧĂВАШСЕН ПРОФЕССИЛЛĔ ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРИ ЙĔРКЕЛЕННИ……..…17
ХХĕмĕр пуçламăшĕнчи литература пултарулăхĕнчи илемлĕх шыравĕсем…….....17
ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи литература çитĕнĕвĕсемпе çĕнĕлĕхĕсем….....19
Константин Петров. Тайăр. Роман-хроника……..22
ĔМĔР УЛШĂНĂВĔН ЛИТЕРАТУРИ……....49
Константин ИВАНОВ (1890-1915).....49
Шуйттан чури. Трагеди…….....56
ÇЕÇПĔЛ Мишши (1899-1922).....61
Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути. Сăвă…….....69
Йывăр шухăшсем. Сăвă……..70
Килсем часрах, чăваш поэчĕ! Сăвă……..…..70
Тăван çĕршыв, е сан та вăю пĕтрĕ? Сăвă…….....70
Чăн чĕрелнĕ. Ирĕклĕ çырнă сăвăсем…….……..……....71
ЧĂВАШ ДРАМАТУРГИЙĔН МАЛТАНХИ УТĂМĔСЕМ……73
Иоаким Максимов-Кошкинский. Сатурпа Илем. Драма…….....81
Федор Павлов. Ялта. Драма…….....107
ЛИТЕРАТУРĂРИ ИДЕЙĂПА ЭСТЕТИКА КĔРЕШĔВĔ.....132
ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧАПА ÇАМРĂКСЕН ЛИТЕРАТУРИ ÇУРАЛСА АТАЛАННИ.....136
Уйăп Мишши. Ачалăх кунĕсем. Повесть…….146
Александра Лазарева. Санăн çитмĕл çичĕ тус. Калав……...154
Николай Ишентей. Шăнкăрч урокĕ. Калав…….....161
Людмила Смолина. Сăпка юрри. Сăвă…….....163
Людмила Николаева. Сылтăм тата сулахай. Сăвă……...……....163
ЧĂВАШ КУЛĂШПА ПИТЛЕВ ПРОЗИН ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔХĔ.....165
Иван Мучи. Кăшкăру пали. Калав……171
Иван Мучи. Килти экзамен. Калав…….…..……173
1930-1950-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ ДРАМАТУРГИРИ ИДЕОЛОГИ ВИТĔМĔН ÇИТМЕНЛĔХĔСЕМ.....176
Петр Осипов. Айтар. Драма……...….181
Николай Айзман. Кама савать – çавна каять. Комеди……....……202
ЛИТЕРАТУРА ПУЛТАРУЛĂХĔНЧИ ВĂХĂТПА УЙРĂМ ÇЫН ТРАГЕДИЛĔХĔ…….....220
Виктор РСАЙ (1906-1970).....220
Сăхман айĕнчи ача амăшĕ. Калав……..…..225
МИТТА Ваçлейĕ (1908-1957).....231
Тайăр. Поэма-ярăм……..……..237
ВĂРÇĂ СИНКЕРЛĔХĔ ЛИТЕРАТУРĂРА.....243
1940-мĕш çулсенчи литературăри вăрçă поэтики: вăхăтпа çынсен паттăрлăхĕ тата синкерлĕхĕ.....243
Максим Данилов-Чалтун. Лизавета Егоровна.Калав…...……..……...248
Вăрçă синкерлĕхĕ чăваш литературинчи хĕрарăм прозинче.....254

Валентина Элпи. Пулас кинсем. Роман……..…….....258
Ева Лисина. Арçын Хĕветура. Калав……...…280
ИЛЕМЛĔ ПУЛТАРУЛĂХРИ НОВАТОРЛĂХ.....297
Петĕр ХУСАНКАЙ (1907-1970).....297
Хушка хумсем. Сăвăлла ярăм…….……..303
Леонид АГАКОВ (1910-1977).....305
Разведчик Джингали. Калав……..…...311
Пурте дипломлă! Калав……..……..320
ЧĂВАШ ПОЭЗИЙĔНЧИ ХУРА ÇĔР ЮРĂÇИСЕМ.....329
Яков Ухсай. Кĕлпук мучи. Поэма……..……..….335
Алексей Воробьев. Ялта. Сăвă…….....340
Алексей Воробьев. Хирти тĕлпулу. Сăвă……...……..341
ХАЙЛАВ ПОЭТИКИНЧИ ХАЛĂХ ТАТА ЭТЕМЛĔХ ЭТИКИ.....343
Александр КĂЛКАН (1912-1988).....343
Тилĕ. Юптару…….……..347
Йытăпа кушак. Юптару……..……....347
Мĕтри КИПЕК (1913-1991).....350
Çамрăк сунарçăсем. Калав……..…….……353
ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ХĔР АРĂМ СĂНАРĔН ИДЕАЛĔ……...……..361
Александр Артемьев. Алтăр çăлтăр (Çăлтар çумăрĕ). Повесть…….…...….366
Хветĕр Акивер. Çапса çумăр çăвать. Калав……....……..391
АТĂЛПА УРАЛ ТĂРĂХĔНЧИ ХАЛĂХСЕН ХХ ĔМĔРĔН ПĔРРЕМĔШ ÇУРИНЧИ ЛИТЕРАТУРИ.....409
Пушкăрт литератури.....411
Мажит Гафури. Савăнăç сăвви. Сăвă……..…..……..413
Коми литератури.....414
Серафим Попов. Пикенчĕ вăрман ылтăн тум тăхăнма. Сăвă……....……415
Мари (çармăс) литератури.....416
Сергей Чавайн. Пĕчĕк вăрман. Сăвă…….……..418
Мордва (ирçе-мăкшă) литератури.....419
Никул Эркай. Тăрнасем. Сăвă……..... 421
Тутар литератури.....421
Зариф Башири. Чăваш хĕрĕ Униççе. Повесть……..…..…425
Муса Джалиль. Вилĕме. Сăвă…….……...…..439
Удмурт литератури..... 440
Кузебай Герд. Эпир акатпăр. Сăвă……..……....442

Учебное издание
ТĂВАН ЛИТЕРАТУРА
РОДНАЯ ЛИТЕРАТУРА

10 класс
Учебное пособие
для общеобразовательных организаций
На чувашском языке

Автор-составитель
Мышкина Альбина Федоровна

Редактор ...
Художник ...
Использованы иллюстрации …..,
а также из свободного доступа сети Интернет

Художественные редакторы ..
Технический редактор ...
Корректоры ...
Компьютерная верстка ...

Общероссийский классификатор продукции
Подписано к печати .. Формат … Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс.
Печать офсетная. Усл. печ. л. … Тираж … Заказ ...

КĔНЕКЕРИ ТЕРМИНСЕН ЧĂВАШЛА-ВЫРĂСЛА СЛОВАРĔ

А

Алçыру – рукопись.

Ă

Ăн – сознание; **илемлĕ ăн** – художественное сознание.
Ăн айĕ – подсознание; **ăн айĕнчи** – подсознательное; **харкăм ăн** – индивидуальное сознание, самосознание.
Ăнлав – понятие, термин.
Ăнсăртлăх – случайность.
Ăслăлăх – наука.
Ăсчах – ученый.
Ăшри диалог – внутрений диалог.
Ăшри монолог – внутрений монолог.

В

Вăйлату – градация.
Виçе – размер (стихотворный).
Вулавçă – читатель.

Ĕ

Ĕнерӳ – настрой.

И

Икĕ йĕркеллĕ сăвă – двустишие, дистих.
Илемлĕ – художественый.
Илемлĕх – художественность.
Илемлĕх мелĕ – художественный прием.
Илемлĕх тĕнчекурăмĕ – художественное мировоззрение.
Илемлĕх туйăмĕ – чувство прекрасного.
Илемçĕ – художник (творец).
Ирĕклĕ сăвă – свободный стих (верлибр).

Й

Йăла–йĕрке сăмахлăхĕ – обрядовый фольклор.
Йĕкепĕрлĕх – подстрочник.
Йĕркеленӳ – организация.

К

Калав – рассказ.
Калавçă – рассказчик.
Калу – повествование; **йăла калăвĕ** – бытовое повествование; **тӳрĕ калу** – прямое повествование.
Калуçă – повествователь.
Карт – стопа.
Кăмăл–хавал – характер.
Кĕвĕ – мелодия, музыка.
Курăм – видение; **тĕнче курăм –** мировидение.
Куçкур, куçкурăм – видение.
Куçса çӳрекен сюжет – бродячий сюжет.
Кӳртĕм – введение.

Л

Лартăм – постановка; **спектакль лартăмĕ** – постановка спектакля.

М

Мел – способ, средство, прием.
Меслет – метод (творческий).
Мехел – потенциал.
Мухтав сăвви – ода.

Н

Несĕл (рет) – род (литературный).

П

Палăрту – выражение.
Пăтăрмахлă – авантюрный.
Пĕрлĕх – целостность.
Питлев – сатира.
Пултарулăх – творчество.
Пуплев – речь.

С

Састаш – рифма.
Сăвă хывăм– стихосложение.
Сăмахлă культура – словесная культура.
Сăмахлăх – словесность.
Сăнар – образ; **сăнарлăх** – образность.
Сăнлав – воплощение.
Сăрăллă ӳнер – живопись.
Сикчĕ – цензура.

Ç

Çавра – строфа.
Çемĕ – ритм.
Çĕкленӳлли – возвышеное.
Çуркам – слоговая группа.
Çутăлăх – просветительство.
Çыра, çырса кăтартни – описание.

Т

Тавлăк – фаза, цикл.
Талккăш – пространство.
Тан сыпăклă сăвă – силлабика, силлабический стих.
Тан сыпăклăх – изосиллабизм.
Тăрăм – состояние; **чун тăрăмĕ** – состояние души.
Тăрăхлав – ирония, насмешка.
Тĕмсĕлӳ – созерцание; **тĕнче тĕмсĕлӳ** – миросозерцание.
Тишкерӳ – анализ.
Тытăм – структура.

У

Уйланăш – баллада.

Ӳ

Ӳкĕт – нравоучение.
Ӳнер – искусство.

Х

Хавха – пафос.
Хайла – творить; **хайлав** – произведение.
Хаклав – характеристика, рецензия.
Халăхлăх – народность.
Харкам, харкамли – индивидуальное.
Харкамлăх – индивидуальность.
Харкамлу – персонификация.
Харкамçă – герой; **лирика харкамçи –** лирический герой.
Харпăр ăнланăвĕ – самосознание; **нацин харпăр ăнланăвĕ** – национальное самосознание.
Хăй евĕлĕх – своеобразие.
Хăй хаклăх – самоценость; **хăй хаклăхлă** – самоценый.
Хире–хирĕçлĕх – контрастность.
Хирĕçлев – оппозиция.
Хирĕçлетӳ – антитеза.
Хирĕç тăру – конфликт, противоречие.

Ч

Чăнлав – документальность.
Чĕрĕлӳ – возрождение.

Ш

Шаймăклă – приключенческий.
Шалти – внутрений; **шалти тĕнче** – внутрений мир.
Шута ӳкни – рассуждение.
Шухăш – мысль; **шухăш тыту** – замысел; **шухăш тĕвĕленĕвĕ** – завязка.
Шухăшлав – мышление.
Шухăшласа кăларни – вымысел.

Я

Ярăм – цикл, серия; **лирикăллă сăвăсен ярăмĕ** – цикл лирических стихов.